К 89

Владимир Кузьмин

# Çурах-ха эс, савниçӗм



Национальная библиотека ЧР
4-047730

К84.09(=Чув)
К89

Владимир Кузьмин

# Çуирах-ха эс, савниçĕм

Повеçсем



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2015

УДК 821.512.111
ББК 84 (2Рос=Чув) 6—4
К 89

**Кузьмин В.П.**
К 89 Çумрах-ха эс, савниçĕм: повеçсем / В.П. Кузьмин. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2015. — 287 с.
ISBN 978-5-7670-2315-8

Çĕр çинчи Чăваш Ен текен тăрăхра тем ятлă ял та, темле çын та туллиех. Ĕмĕрсен тапхăрĕсенче вĕсем таканари шыв пек чӳхенсе тĕнче хумне хутшăнаççĕ, унталла-кунталла çапăнса хăйсен кăпăкне кăлараççĕ, хăйсен аталану хăватĕнче ят-сумлăн пурăнаççĕ, малашлăхне хăйсемех татса параççĕ, этемлĕхĕн савăнăçĕ-аташăвĕнчен, хуйхи-суйхинчен шит те уйрăлмаççĕ. Хĕвелĕ Хурăнсăр ял халăхĕ çине те пĕрешкел пăхать: çап-çутă çутатса, ăшăтса-ачашласа. Çав вăхăтра Турпановсен пысăк çемйинче те мĕн кăна пулса иртмест-ши?

Ч-4473о

УДК 821.512.111
ББК 84 (2Рос=Чув) 6—4

Национальная библиотека Чувашской Республики

ISBN 978-5-7670-2315-8

© Кузьмин В.П., 2015
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2015

Проверено 05 ОКТ 2017

# Çырах-ха эс, савниçĕм

Ашшĕпе ывăлĕ пĕр урапапах чупаççĕ.

Чăваш халăх каларăшĕ

## 1

— Эй, ырă çынсем! Пулăшăр!

Хĕл куççульне юхтарса пĕтерме пуçланă Киремет çырминче хăйăлтирех вăйсăр сасă мĕскĕннĕн илтĕнет:

— Тархасшăн, пулăшăр кам та пулин! Вилетĕп...

Тавралăха чĕрĕлĕх кĕртнĕ çур хăйĕн хăватлă шавĕпе хăпартланса ним пулман пекех тулли савăнăçпа ашкăнать. Этемĕ, выльăхĕ-чĕрлĕхĕ, хурт-кăпшанки — пурте, пурте çут çанталăк тапхăрĕн çурăлса чечекленекен аталану ытамĕнче. Чуччу, тĕнче сехечĕ пек вăхăт шутласа, пĕр çеммĕн хăйăклатать. Миçе шаккарĕ-ши вăл? Турпан Пантелейĕ шутламасть-ха ăна. Çырмана сукмакпа чиперех анчĕ. Шырлан урлă хунă пĕренерен ури ярт шуса кайрĕ те, аялалла шаплатнине сиссе те юлаймарĕ. Халĕ вăл, лапрана кĕрсе ӳкнĕскер, сивĕпе халран кайнине пула ниепле те çĕкленеймест, хурăн пĕренесем çине тĕмсĕлсе пăхса выртать. Урисене шăнăр туртнипе йывăррăн ахлатса илет те пĕтĕм вăйне пухса татах кăшкăрам пекки тăвать:

— Эй, илтет-и кам та пулин? Çăлăр!..

Ял та, хăйсен Киреметкасси те йăлтах çурхи каç имлĕхĕпе ирĕлсе кайнă-ши? Ма никам та унталла-кунталла утмасть-ши? Пĕр çын чунĕ пулсанччĕ хăть. Çапах та... выртсан-выртсан хăлхана юрă сасси кĕнĕ пек туйăнчĕ. Акă çав сасă çывхарсах-çывхарсах килет... Турпан Пантелейĕ куçне уçса пăхрĕ те сылтăм çыранран ыталанса анакан ватă çынсене палласа илчĕ: Перун Пименĕпе Усламçă Прухăрĕ.

Авăннă хăмла шалчи пек кĕлеткипе силленсе вăрăммăн пусса утать Перун Пименĕ. Сухаллă янахне, шăртлă măйăхне сылтăм аллипе шăла-шăла илет. Çăра харшăсем айĕнчи кушак аçинни пек куççем чалтăртатса хĕм сапрĕç. Ялан-

хиллех лапчăк сăмсин сулахай çунатти кăлт-кăлт сикет. Ĕçсен çапла пулать унăн.

Сылтăм аллипе ăна хулĕнчен Усламçă Прухăрĕ çатăрласа тытнă. Каска пуканĕ пекскер ун çумĕнче аран ĕлкĕрсе кăлтăртатса пырать. Чалтăркка шĕвĕр сухалĕ кăвакарнă. Мăкăрăлса тухса тăракан пит çăмартийĕсем шыçса хĕрелсе ларнă.

Эс те пуян, эп те пуян,
Эс те чее, эп те чее —
Иксĕмĕр те эпир пĕр ялтан.
Пирĕнтен пуянни, пирĕнтен чейи
Никам та çук, —

çырмана янраттарать хулăн сассипе Перун Пименĕ. Ун хыççăн Усламçă Прухăрĕ кашни сăмахне татса юрлать:

Вĕлтрен хаяр, вĕлтрен хаяр,
Вĕлтрен хаяр теееççĕ.
Алпа тытмасан, таптамасассăн
Вĕлтрен пĕртте хаяр мар... —
Çапла пуль, Пимен кум.

Пĕрене кĕпер тĕлĕнче чарăнчĕç те вĕсем Турпан Пантелейне асăрхаса аллисене пĕр-пĕринчен вĕçертрĕç.

— Куратăн-и, кум. — Усламçă Прухăрне айăкран кăлт тĕртрĕ Перун Пименĕ. — Ха-ха-ха! Пирĕн Пантелей — тур панă телей турă панинех тупнă. Ха-ха-ха!

— Хи-хи-хи! Епле çиет Мăнкун пăттине Турпан пан, — ихĕрчĕ Усламçă Прухăрĕ. — Тавсье! Юрла пирĕнпе. Ĕлĕкрех мĕнле шăрантараттăнччĕ...

— Мăшкăлласа тăриччен ална часрах тăсса парасчĕ, — хăйăлтатса тухрĕç халсăр çын çăварĕнчен сăмахĕсем. — Ухуху-ху, шăнса кӳтрĕм.

Перун Пименĕ хурăн пĕрене çине хăпарса тăчĕ те аялалла йĕрĕнчĕклĕн пăхса шăл витĕр курайманлăх çумăрĕ пĕрĕхтерме пуçларĕ:

— Ха вăл, пулăшу ыйтать. Ак çакна тăсса памалла мар-и сана, антихриста? Чиркӳ чанне антарнăшăн турă çапла айăпларĕ сана! Вырт шăнса! Киреметпе ытакланса! Вил çак Киремет çырми тĕпĕнче!

Айккинче кускаласа çӳрекен Усламçă Прухăрĕ çăтмаха лекнĕ пек хĕпĕртесе шăлне йĕрчĕ:

— Хи-хи-хи! Пурнăç... Шăпа... Акă вăл ăçта турă пани.

Курать те вăл çӳлти атте пире, курать кам мĕн тунипе туманнине. Пименпа Прухăра пĕтерсе тĕп тăватăп терĕн пуль. Çу-ук, çут тĕнчене вилме çуралман-ха эпир — Перуновсемпе Усламовсем. Ял чиркĕвне хуптарса Пимен кума ĕçсĕр тăратса хăвартăн. Мана Масар тăвайккине чуллă çĕр çине хуса ятăн. «Пуппа единоличник — халăх тăшманĕсем» — тесе çухăраттăн. Хи-хи-хи! Колхоз... Ху турăн ăна — хăвах пăчлантăн акă унпа. Мĕн усси унран — ял халăхне те, патшалăха та тăрантарайман ушкăн хуçалăхĕнчен! Ушхуç-уçхуç-выçхуç. Çав выçхуç юхтаракан сысна лапринче выртатăн халĕ асапланса. Хи-хи-хи! Юрласа вырт халĕ хăвăн çамрăклăх юррине. Ай манса та кайрăн-и? Аса илтерес мар-и? Итле.

Турпан Пантелейĕ чĕнмерĕ, иккĕшне те хаяррăн пăхапăха илчĕ çеç. Мĕскĕн çынран Усламçă Прухăрĕ чунĕ каничченех мăшкăллас терĕ пулас, саркаланса юрласа ячĕ:

Кĕмĕлтен кĕпер хывтарăттăм,
Юписене пăхăртан ларттарăттăм,
Ылтăнран ăракатка тыттарăттăм.
Ылтăн ăракатка айккине
Ултă куçлă çăлсем чавтарăттăм,
Ултă куçлă çăлсем таврашне
Ултă улма йывăççи лартăттăм...

— Çитет, кум, — чарчĕ ăна Перун Пименĕ. — Хăйĕн юррине юрласа пĕтерчĕ вăл халь. Çӳлти турă мĕн панипе çырлахтăр. Мĕн кĕтмеллине кĕтсе илнĕ, кĕмĕл кĕпер те хывтарнă авă колхозра, пăхăр юпа та ларттарнă, ылтăн ăракатка та тыттарнă, çăл алттарса улмуççи те ларттарнă... Куç умĕнчех пуянлăхĕ. Авă кун-çул кĕперĕ урлă каçса шăпа шăтăкне шăпах майлашăнса выртнă коммунизм тăвакан. Савăн ĕнтĕ çĕнĕ пурнăç керменĕнче. Аминь.

Шырлан тепĕр енне каçнă туссем каллех ыталанчĕç те çаврăнса пăхмасăрах хăйсен юррине малалла тăсса тайкаланса уттарчĕç:

Пире усал, пире усал,
Пире усал тееççĕ.
Тарăхтармасан, çиллентермесен
Эпир пĕртте усал мар.

— Эх, йытăсем... Çĕр ятне çĕртме çуралнăскерсем... А-ах, ыш-ы-ыш, — тарăхнипе ним тăваймасăр хăй тĕллĕн калаçрĕ Турпан Пантелейĕ, малалла туртăнса пăхрĕ, анчах

кĕлетки итлемерĕ, аллисем те, çыхса янă тукмаксем пек, вырăнтан хускалмарĕç.

«Тăн çухатас марччĕ, пĕр-пĕр ырă чунлă çын килсе тухĕ-тухех», — тесе шухăшларĕ вăл çырана мекеçленсе хăпаракан путсĕрсем еннелле тинкернĕ май.

Киреметкассинчи чуччу çаплах вăхăт шутлать. Ахăртнех, ун çинче ярăнакан каччăпа хĕр пĕр-пĕрин кусĕнчен çурхи ăшă кулă сăрхăнтарса илсе чунне кантараççĕ пуль. Йăмра айĕнче выляса-чупса ахăракан яш-кĕрĕм кĕрлевĕ çырмана юхса анать. Ача-пăча янрани вĕçе-вĕçе килет. Мĕн тăвăн, çут çанталăкăн, унпа пĕрлех этемĕн те, хăйĕн вăхăчĕ-çке. Ниçта шăнăçайми хавхалану кашнин чун-чĕрине чĕрĕ шыв сапса вăратнă. Ăçтан-ха килте ларăн, лăпкăн çывăрăн? Çав вăхăтăн çыхăнуллă тымарĕ тăрăх пĕтĕм чĕрĕ чуна, ÿсен-тăрана çĕр сĕткенĕ йăрласа хăпарать. Никам тытса чарайми, никам çĕнтерейми хăват кĕрлет пурнăç тымарĕнче. Авă, Турпан Пантелейĕнчен инçех мар, хытнă юшкăна шăтарса симĕс курăк сăмсаланнă, вĕсем хушшинче — кукша пуç чечекĕ. Перун Пименĕпе Усламçă Прухăрĕ атăпа çăрса иртнĕ тĕлте аманнă тунасем пусăрăнса лапчăннă. Çĕр вĕсене те, ăна та хăй çумне çыпăçтарнă. Вĕсен те, унăн та çĕртен уйрăлса хăпма вăй-хал çитмест. Нивушлĕ вĕсем те чĕрĕлеймĕç? Нивушлĕ вăл та çĕкленеймĕ? Куçра куççуль пĕвеленчĕ, тулса çиелтен тăкăнса кайрĕ, шапăр-р юхса анчĕ сысна лапри çине... Пите пĕçертсе, сухала йĕпетсе хăварчĕ те... типрĕ. Кĕрлесе тапса тăмасть иккен ватă çын кĕлеткинче çăлкуç.

Киремет çырминчи шăплăх, Киреметкассинчи шав Турпан Пантелейне ачалăха, çамрăклăха, ÿссе аталанса çитнĕ вăхăта пĕтĕмпе-пĕтĕмпе тенĕ пекех аса илтерчĕç. Çыннăн çут тĕнчепе сывпуллашас умĕн çавнашкал тертлĕ самант пулать тенине илтнĕскер, вăл, вилесрен хăра-хăрах, майĕпен кустарчĕ асĕнче хăйĕн кун-çул урапине пурнăç çулĕпе...

Турă саккунне вĕренсе йăлăхнă ачасем уçă сывлăша сирпĕнсе тухрĕç. Икĕ пуçлă йывăç чиркÿ умĕнчи анлă лаптăкра чупма шикленчĕç. Чÿречерен пачăшкă курма пултарать. Сивĕ куçлă, хаяр сăн-питлĕ, хура çăра сухаллă Ваççили атте питĕ хĕрхенÿсĕр çын. Тÿрĕ лармасассăн та, мĕн ыйтнине тĕплĕн каласа памасассăн та, кĕлле-мĕне ыт ахальтен тусассăн та хăлха пăрма шутсăрах ухутă. Прихут

шкулĕнче вĕренекенсем çавăнпах унран вăрттăн «хăлхапăран» тесе мăшкăллаççĕ. Ывăлĕ, Пимен та, хăрать унран.

Тăсланкă, хыткан Пименпа кук тĕрриллĕ, лутака, Прухăр тата тăлпан кĕлеткеллĕ Пантелей пĕр вăрăм парта хушшинче лараççĕ. Прухăр — Усламçă Çитăрĕн ачи. Пантелей ашшĕ, Турпан Павăлĕ, вĕсем патĕнче тарçăра ĕçлет. Хăйсем мĕнле тата хăш вăхăтра туслашса кайнине чухламасть те виç шĕвĕр, куллен шкула çӳреççĕ, выляççĕ, хушăран... çапăçса та илеççĕ. Пачăшкăпа лавккаçă хăйсен ачисене чухăн ачипе çӳреме чарса пăхнă-ши, чарса пăхманши, ăна пĕлме хĕн, анчах туслăхĕ вĕсен çултан-çул çирĕпленсе пырать. Ваççили атте вĕсене уйăрса лартмасть, пĕчĕкскерсен кăмăл-туйăмне хуçма шутламасть пулас.

Шкул нушинчен ирĕкленнĕ туссем урам тăрăх чупрĕç. Çула май Прухăр вĕсене лавккана чĕнчĕ. Пантелее те шушкă-пĕремĕк е сахăр-канихвет лекекенччĕ. Киремет çырминче выляма ирĕклĕ те, çавăнпах Пименпа Прухăр ялан Пантелей пурăнакан Киреметкассине туртăнаççĕ. Лавккана кĕрсе тухнă хыççăн вĕсем тӳрех ял хыçĕнчи çав хăрах урама васкарĕç. Киремет çырми урлă ăмăртмалла чупса каçрĕç. Пантелей малта, ун хыçĕнче Прухăр, хыçалта Пимен пыраççĕ.

— Хурăн шывĕ ĕçес килет-и? — ыйтрĕ Пантелей.

— Эс пурак лартса хăварнă-им? — çырма хĕрринчи вата хурăн еннелле пуçне сĕлтсе кăтартрĕ Прухăр.

— Ирех çакнăччĕ, хальччен тулса тăкăнса та кайнă пуль.

Хуралса ларнă хытă хупăллă хурăн тăрăх пакша пек хăвăрт чакаланса хăпарчĕ те Пантелей тулли савăта илсе анчĕ, хĕрринчен сыпса пăхнă хыççăн Пимена тыттарчĕ.

— Хи-хи-хи! Киремет хурăнĕн юнне ĕçекен пуп ачи. Çылăх, çылăх пулчĕ сана, — эхлетсе ĕçекен Пименран сиккелесех кулма пуçларĕ Прухăр.

— Выçлăх, ĕçсе ярасран сехĕрленсе ӳкрĕн те, çавăнпа хăратан, — савăта Прухăра тыттарчĕ Пимен. — Ме, кӳп. Ах, тутлă, çылăхран темиçе хут сиплĕрех.

Прухăр, хурăн шывне лăнкăртаттарса ĕçсе ячĕ те: «Ме, çак», — тесе савăта Пантелее тыттарчĕ.

Хăрăк тăрăллă хурăнран инçех мар юман юпа çумне хăмапа çапса тунă часавай пур. Ачасем унта çитсе курмасăр хăвармарĕç.

— Ай турух! Киремете мĕн чухлĕ парне панă Мăнкун ячĕпе! — тĕлĕннипе куçне чарса пăрахрĕ Пимен. — Пирĕн чиркÿри пекех.

— Атьăр, тутанса пăхар çатма икерчине, ман хырăм выçать, — терĕ Пантелей. — Чăкăт та пур.

— Ха, вак укçасем те пур... — куçĕсене йăлтăртаттарчĕ Прухăр.

— Тытса хуçлатса лартать ак киремет е шăтăка сиктерет, — хăратрĕ Пимен.

Çав вăхăтра Пантелей кашнинех çатма икерчипе чăкăт валеçсе пама ĕлкĕрчĕ ĕнтĕ.

— Çийĕр, ан хăрăр. Наркăмăшлă мар пуль, вĕлермĕ.

Пантелей çăвар тулли чăмлать. Ăна курса ыттисем те икерчĕпе чăкăта пĕтĕрттерчĕç.

— Каласа парас-и сире асаннерен илтнине? — хырăмне шăлса илчĕ Пантелей.

— Мĕн çинчен?

— Кала, кала.

Пантелей мăн çын пек пулса тусĕсене çапла ăнлантарчĕ:

— Тахçан ĕлĕк-авал çак çуртра, икĕ çырма хушшинче, сĕм вăрман пулнă. Унта Турпан ятлă чăваш паттăрĕ пурăннă. Вăл пусмăрçăсенчен тарса килсе хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле вăрттăн çĕрте йăва çавăрнă, ял пуçарса янă.

— Пирĕн яла-и? — ыйтрĕ Прухăр. — Ма тата Турпан ятлă мар пирĕн ял — Хурăнсăр?

Пимен ун карттусне куçĕ таранах пусса лартрĕ.

— Итлеме пар-ха. Шкулта та çавах эс, тулăксăр хăтланан.

Хăйне чарса лартнăшăн кÿренме шутламарĕ те Пантелей, мĕн пĕлнине малалла каларĕ:

— Турпан чăваш йăваш пулман. Хăйсене тытма килнĕ патша тарçисене хирĕç вăрçă пуçарнă. Анчах кайран салтаксем ярса вĕсене аркатса тăкнă — кама вĕлернĕ, кама катăркăна янă. Турпан ялĕ вырăнĕнче вара ав çав хурăн çеç тăрса юлнă. Хăй паттăррăн çапăçса вилнĕ тĕлте Турпан чунĕ сыхланса юлнă. Çав чун халĕ те пурăнать, вăл питĕ хăватлă, тем тума та пултарать. Унран хăраса часавай лартнă. Ăна юрама тесе çынсем кунта апат-çимĕç, укçа йăтаççĕ, вилĕмсĕр чуна пуççапаççĕ.

— Ай, хăрушă кунта, усал сывлăш явăнакан çĕрте, —

сехӗрленсе ӳкрӗ Пимен. — Киремет вӑл — усал сывлӑш вырӑнӗ тетчӗ атте те. Эс, Пантелей, Турпан киремет йӑхӗнчен апла...

— Патшана хирӗç пынӑ чӑваш киреметӗнчен тухнӑскер, — саралнӑ сайра шӑлне йӗрчӗ Прухӑр.

— Эх, лӗпӗртисем! Эсир — хӑвӑр усал киреметсем, — парӑнасшӑн пулмарӗ Пантелей. — Пирӗн Турпан аслӑ асатте тӗрӗслӗхшӗн кӗрешнӗ. Тахçанах вилнӗ пулсан та ячӗ юлнӑ унӑн. Ун сывлӑшӗ ячӗпе Киремет уйӗ, Киремет хурӑнӗ, Киремет çырми, Киремет çӑлкуçӗ пур. Киременткасси те пур. Эх, пӗлместӗр-ха эсир...

— Мӗн пӗлместпӗр? — тӗлӗнчӗ Прухӑр.

— Сирӗн кас çинчен-и? — йӗкӗлтерӗ Пимен.

— Паллах, — çӗнтернӗн пуçне каçӑртрӗ Пантелей. — Ма та ма-а! туса тӑратӑр сурӑхла. Итлӗр малалла. Салтаксем Турпан аслӑ асаттене вӗлернӗ хыççӑн ун ялӗнчен юлнӑ çынсем çырма леш енне каçса тепӗр ял çавӑрнӑ. Турпан пӑхаттир нуши тек килсе ан çаклантӑр тесе çӗнӗ яла Хурӑнсӑр ят панӑ. Турпан йывӑçне Киремет йывӑçӗ теме пуçланӑ. Ялта унтанпа хурӑн ӳстермен. Кайрантарах пирӗн асаттесем кунта куçса ларнӑ та урам пуçласа янӑ. Киреметкасси теççӗ ӑна. Ӗлӗкхи ятпа Турпан теме те юрать. Ӑнлантӑр-и халь эпӗ мӗншӗн Киремет хурӑнӗн шывне ӗçме те, часавайри çатма икерчипе чӑкӑта çиме те хӑраманнине? Мӗншӗн тесен вӗсем пурте пирӗн Турпан аслӑ асаттен хӑватлӑ сывлӑшӗпе сывлаççӗ. Вӑл паттӑр пулнӑ. Асанне калать: «Çав ват хурӑн имлӗх-сиплӗхӗпе эсӗ те пӑхаттир пулӑн-ха», — тет.

— Эп çапах киреметрен хӑратӑп. Атте пӗлес-тӑвас пулсан-и паян мӗн хӑтланнине... — чӗтреме ерчӗ пуп ачи.

— Эй тата! — терӗ Прухӑр. — Киремет усал сывлӑш вырӑнӗ çеç пулсан мӗн хӑрамалли. Сывлӑш — çын-им? Икерчипе чӑкӑтне çисе ятӑмӑр — ни пуç шавламасть, ни вар ыратмасть. Вилмерӗмӗр. Нухратне те хӑварар мар... Сывлӑша ӑна укçа мӗн тума кирлӗ. Аттене кайса парар та... — вак кӗмӗл укçасене йӑпӑр-япӑр пуçтарчӗ те вӑл шӑлавар кӗсйине чӑмтарчӗ.

— Сана, Прухӑр, пурпӗрех çылӑх пулать, — чышкӑ кӑтартрӗ çывӑх тусне Пимен.

— Турӑ саккунӗ мӗн вӗрентнине мантӑн-им? Вӑрлани пулать вӗт ку? — хыпӑнса ӳкрӗ Пантелей.

Аллине кĕсьерен кăларма хăраса тăракан Прухăр ахăлтатсах кулса ячĕ.

— Ухмахсем эсир! Камăнне вăрлатăп эпĕ?

— Киреметĕнне! Турпан аслă асаттенне! Кăларса хур хăй вырăнне укçана!

Прухăр тапса сикрĕ. Киремет çырми тĕпĕнче Пантелей ăна хуса çитрĕ. Иккĕшĕ тытăçса ӳкрĕç. Парăннă Прухăр сăмсине нăшлаттарса Пимен хыççăн сĕнкĕлтетрĕ, каялла çаврăнса чĕлхе кăларса кăтартрĕ.

— Хăвăр киреметех пуçна çитĕр санне!..

Пантелей Прухăр кĕсйинчен тухса ӳкнĕ вак укçасене пуçтарчĕ те çырма улăхĕнчи симĕс курăк çинче пĕр хушă хускалмасăр выртрĕ. Несĕлĕн, паттăр чăвашăн, Турпан киреметĕн ырă сывлăшĕпе сывлас терĕ-ши? Ăна панă парнене усламçă ачинчен туртса илсе усăллă пĕр ырă ĕç тунăшăн хĕпĕртерĕ-ши? Укçасене вăл каллех часавая хăй вырăннех кайса хучĕ.

Куçĕсем вăраххăн уçăлнă май Турпан Пантелейĕ умĕнчи ачалăх тĕнчин сип-симĕс кавирне такам пуçтарса илчĕ. Пурте таçта вĕçсе çухалчĕ. Ун умĕнче каллех — сысна лаприпе тулнă çырма, виçĕ хурăн пĕрене, тĕттĕм каç... Кĕлетке пĕлми пула пуçларĕ ĕнтĕ, çук пекех, темле, çĕрпе хутăшса кайса унăн уйрăлми пайĕ пулса юлнăн туйăнать, пуç мими çеç çивĕччĕн ĕçлет, пурнăç çулĕ тăрăх этем урапине малалла кăлтăртаттарать.

Çырмари кĕлет умĕнчи лаштра йăмра айне вăййа тухнă хĕрсем чечек карти пек куçа йăмăхтарса, пуçа минретсе хăйсем патне асамлă туйăмпа туртаççĕ. Кĕлет сакки çине ларнă Усламçă Прухăрĕ тальянккăна туртать-туртать те сиксе тăрса çинçе сассипе юрласа ярать:

Атьăр вăййа пуçлар-и те
Вăй кĕввине калар-и?
Вăйă кĕвви пĕр сумлăх та,
Пирĕн вăйă çĕр сумлăх...

Хур аçи пек каçăрăлса, шукăль тумĕ тăрăх куç айĕн пăхкаласа мăнкăмăллăн утса кĕрет вăйă картине Перун Пименĕ. Пĕр кана çăмăллăн ташласа илет те вăл вăрçăра вилнĕ Вар Варсунĕн Варварине вăр-вар кăна пилĕкрен çавăрса тытать. Хĕр вăтаннипе ниçта кайса кĕрей-

месĕр çухăрса ярать, каччăран вĕçерĕнесшĕн тапкалашать.

Урине çăпата сырнă, тăла йĕмпе пир кĕпе тăхăннă кашта пек йăрăс пӳллĕ Турпан Пантелейĕ таплаттарса çитет те хĕре пуп ывăлĕнчен туртса илсе каллех вăйă картине кĕртет. Тутине тăснă Пимен, шур куçĕсене çавăрттарса вăкăр пек пăхать Пантелей çине, анчах урăх ашкăнма хăяймасть, купăсçă çумне кайса ларать те чĕлĕм туртса ярать.

Лаштра йăмра яш-кĕрĕме хăй тавра çавăрать, сиктерет, хĕрсемпе каччăсен çепĕç юррине итле-итле тураттисемпе лăстăртатса ташлать. Вĕçĕ-хĕррисĕр анлă тӳпере уçă тĕнче вăййи йăлкăшать. Çав çĕрпе пĕлĕт хушшинчи çыхăнури савăк çемĕпе килĕшӳллĕн пĕр-пĕрин чĕри таппине туйса куçаççĕ Варварипе Пантелей та симĕс «кавир» тăрăх. Чĕнтĕрлĕ пир кĕпе çийĕн çакнă хĕрлĕ саппун, пурçăн тутăр, тĕрлесе çыхнă çăм нуски, сăн курăнакан калуш... хушăран хушă вăрт çаврăнса пăхнипе йăлкăшса çунакан хăмăр куçсем, тӳрĕ сăмса, йăл кулнипе шап-шуррăн тухса тăракан тан ретлĕ шăлсем, сулахай пит çăмартинчи пĕчĕк путăк, вĕçне кĕрен хăю янă вăрăм та тулли çивĕтсем... Пантелейшĕн вĕсем пурте çывăххăн, пурте илемлĕн курăнаççĕ, пурте çурхи варкăшлă туйăнаççĕ. Варвари те йĕкĕтĕн çирĕп те пиçĕ кĕлеткине, карттус айĕнчен тухса тăракан çырă çӳç пайăркине, çиçĕмле çиçекен кăвак куçне, тăрăхларах питне, тин çеç палăрма пуçланă мăйăхне, кăвакпа пĕветнĕ пир кĕпине, хура тăларан çĕлетнĕ йĕмне, тăхăр пушăтран тунă çăпатине курса çав териех савăнать-ши? Каччă хăйĕнчен вĕçертсе аяккалла сирменнине шута илсен — хĕр чĕри те унпа пĕрех пĕр юрра юрлать пек. Çавăн сассине ĕнерет Пантелей, хĕрӳлĕхпе хĕрнĕ çирĕп алла хыттăнрах та хыттăнрах пăчăртать. Хĕр те ун аллине çавнашкал хăватпах хĕстерет. Икĕ çамрăк чун тĕнче чĕлхипе сăмахсăр калаçать...

Нарт-нарт! турĕ те хут купăс кĕрхи пĕвери кăвакал сассипе — тăрук шăпланчĕ.

— Прухăр, ма калама чарăнтăн? — Кала ĕнтĕ. Юрлас килет. Ташласчĕ хăть тепĕр ташă та пулин... — ӳкĕтлеме пуçларĕç хĕрсем купăсçа.

— Çимĕк вăййине пуçласа панă сире кĕçĕр, çитет сиксе, купăсçă ывăннă, — Прухăр вырăнне хурав пачĕ Перун Пименĕ. — Эй, кил-ха кунта, Пантелей!

Хӗре аларан вӗҫертмесӗр тӑракан Пантелей шӳтлесе илчӗ:

— Пӗччен е иккӗн. Хӗре туртса илӗр те...

— Кил, кил, сӑмах пур. Пӗччен лайӑх пулать. Пантелей юлташӗсем умне васкамасӑр пырса тӑчӗ.

— Мӗн-ха?

— Ҫимӗк сӑри ӗҫме чӗнетпӗр, — хӑлхаран пӑшӑлтатрӗ Пимен.

— Пирӗн пата, — хушса хучӗ Прухӑр.

— Хӗрсене пӑрахса хӑварсах-и?..

Сӑмахне каласа пӗтерме памарӗҫ ӑна юлташӗсем, вӑрвар ик хул хушшине хупрӗҫ. Ачаран пӗрле ӳснӗ тантӑшсене кам чӑрмантартӑр-ха хӑйсем мӗн шут тытнине пурнӑҫламашкӑн? Варварирен уйрӑлас килмесӗрех тантӑшӗсемпе таплаттарчӗ вара Пантелей. Каялла ҫаврӑнса хӗре пуҫ сӗлтсе хӑварасси ҫеҫ юлчӗ унӑн.

Усламҫӑ Ҫитӑрӗсен килӗнче никам та ҫук. Вӗсем уявсене ялан Перунсемпе паллӑ тӑваҫҫӗ те, паян та унта кайнӑ.

— Хамӑра улах пулать, — терӗ Прухӑр. Хӑй ҫав хушӑрах мӑн тирӗк йӑтса сакайне анчӗ. Кӗҫех вӑл унтан кӑпӑклӑ сӑра ӑсса тухрӗ. Сӗтел ҫине ӗҫмелли-ҫимелли тултарса лартрӗ. — Сӑхсӑхар та пуҫлар кумпание.

Техӗмлӗ ҫӑра сӑрапа смирновски эрех самаях пуҫ патне пычӗ пулас, каччӑсен чӗлхисем лӑнчӑрах сӳтӗленсе кайрӗҫ.

— Хамӑр юлташ пулмасан-и сана, Пантелей... Эх!.. — пӳрнине маччаналла тӗллесе кӑтартрӗ Перун Пименӗ. — Тахҫанах ҫӳлти патшалӑха ӑсатмалла.

— Мӗншӗнне пӗлетӗн-и? — ыйтрӗ кил хуҫи.

— Ма пӗлместӗп, паллах, пӗлетӗп. Мӗншӗн ку таранччен ҫапса пӑрахманнине те пӗлетӗп.

— Мӗншӗн?

— Вӑю ҫитмест. Халсӑр эс ман ҫумра, Пимен. Пустуй лӗпӗртетсе лариччен... Тав сана!

— Пустуй мар, Пантелей! — сӑра куркине сӗтел ҫине так! лартрӗ Пимен. — Миҫе хутчен каҫартӑм сана, мӗскӗне. Паянхишӗн вара... юлашки хут каҫаратӑп! Тек ан сӗкӗннӗ пултӑр Варвари ҫумне...

Прухӑр куркасене ҫӗнӗрен тултарчӗ.

— Эх, ҫав Вар Варварине, ӑна... — ӗнсине кӑтӑрт-кӑтӑрт

хыҫса илчӗ вӑл. — Вӑйӑ картинче варкӑш ҫил кӑларса таш-лакан вӑр-вара... Ҫавӑн пиҫ хӑва пек авкаланакан кӗлет-кине курассишӗн ҫеҫ, ҫавӑн йӗс шӑнкӑрав пек сассине илтессишӗн ҫеҫ каяс килет ман купӑс калама. Варвари пулмасан...

— Ак тата тепри сиксе тухрӗ ҫӗр тӗпӗнчен, — пӗҫҫине шарт! ҫапрӗ Пимен. — Тӗнчене ан култар-ха эс, лутака утаман. Мӗн, пукан ҫине тӑрса чуптӑвас тетӗн-им ӑна?

— Тути-мӗнӗ кӗҫӗтсен хӑех пӗшкӗнет. Хи-хи-хи! — пулчӗ хурав.

— Сан куласси! — тарӑхса кайрӗ Пимен. — Ман кунта чӗре вутпа ҫунать. Ярса пар-ха луччӑкӑн смирновскине. Чашлаттарам тепӗр черкке ӑш-чике. О-о-о-ох! — Шӑрттан татӑкӗ хыпса чӑмласа ячӗ те вӑл Пантелей еннелле ҫав-рӑнса ларчӗ. — Ырӑпа калатӑп сана пака. Хӑп Варвари-рен. Атте мана авлантарса хӑй вырӑнне хӑварасшӑн. Эпӗ пурпӗрех пуп пулатӑп. Варварие качча илсе унран пуп арӑмӗ тӑватӑп.

Пантелей те парӑнмасть:

— Ҫук, пуп пулаймастӑн. Халӑх турра ӗненме пӑрахать. Тӗн суя пулнине ӑнланса ҫитет. Совет влаҫӗ хӗсет сире. Хупатпӑр сирӗн чиркӳсене. Кӗҫех! Халӑх хутла вӗренет. Ялӗпех ҫутта тухатпӑр. Сирӗн те, Прухӑр, шалчу тулчӗ-ха. Эсир те лавккапа, арманпа сывпуллашрӑр... Ман атте те тинех ӗнтӗ авмасть сирӗншӗн пилӗкне. Пурте ирӗкре халь. Варвари те. Пусмӑрласа качча илеймӗн таса хӗре. Хӑй кама кӑмӑллать, ҫавна савать. Ҫавнах — качча та тухать.

— Сана-им? — мӑшкӑлласа ыйтрӗ Прухӑр.

— Мана-и унта, урӑххине-и, куҫ курӗ, анчах... сана та, сана та качча каймасть вӑл, — иккӗшне те кӑкӑртан тӗллесе каларӗ Пантелей.

— Курӑпӑр-ха унта кам кама качча илнине. Салтак ячӗ тухнине манар мар. Сан хӑвӑн хӗрлӗ влаҫна сыхлама кай-малла. Аҫу хӑй патне кавалерие чӗнсе янӑ ҫырӑва вулат-тартӑн-ҫке. Кӗҫех сывпуллашатӑн та ак ялпа... Варвари пирӗн алӑра тӑрса юлать... — витлешрӗ Пимен.

Танташӗ хӑй умӗнче мӑшкӑл сӑмахӗсемпе хӑсса ларнӑ-нах туйӑнчӗ Пантелее, тек вӑл чӑтма пултараймарӗ, тӑчӗ те алӑк патнелле таплаттарса утса кайрӗ, каялла ҫаврӑнса ҫапла каласа хӑварчӗ:

— Сире, паллах, совет влаçĕ кирлĕ мар. Эсир шуррисене кĕтетĕр. Анчах та... кĕтсе илеймĕр пурпĕр ĕлĕкхине! Эпирех çĕнтеретпĕр! Эпирех хуçа пулатпăр çак çĕр çинче. Пăчланатăр эсир халăх пушмакĕ айĕнче.

— Курăпăр-ха, халăх кама ытларах юратĕ, кама пуççапĕ, — шăлне йĕрсе юлчĕ пуп ывăлĕ.

Турпан Павăлĕ Граждан вăрçине килтен пĕртен-пĕр лашипе тухса кайсассăн Пантелейсем нушине курмаллипех курчĕç-çке. Юрать-ха кӳршĕсем пулăшрĕç ака-суха тума. Салтак юрри юрласа чупма та урхамах кирлĕччĕ те ĕнтĕ... Çав вăхăтра пар лаша кӳлсе Перун Пименĕпе Усламçă Прухăрĕ çитрĕç.

— Атя, лар, вĕçтертĕмĕр хĕрсем патне, тутăр пуçтарма!

Пĕрне-пĕри пайтах чĕре патне лартнă пулин те, çамрăклăх хĕрĕвĕ часах сĕвĕрĕлет çав. Пулăшуран ютшăнас темерĕ Пантелей. Вар Варсунĕн Варварийĕ те арча тĕпĕнчен вĕр çĕнĕ пурçăн тутăр кăларса пачĕ. Çав çывăх тутăра салтак ачи çиелерех кăларса пыма тăрăшрĕ.

Măн урам ял халăхĕпе тулнă. Хурăнсăр Аслă уничерен хăйĕн ачисене вилĕмпе çĕнтерĕве хирĕç хурлăхлăн кăларса ярать. Салтак юрри кашнин чунне кĕрсе, чĕрине лăскаса куçĕнчен вĕри куççуль юхтарать. Хĕрсен ушкăнĕнче авă Варвари тăрать, шурă тутăр вĕçĕпе хушăран куçне шăлса илет. Пантелей ун умĕнчен алă сулса иртрĕ. Уйрăлас килмест унран, пĕччен хăварас килмест ăна каччăн. Хĕрĕн те чунĕ салтак ăшĕнчех пуль... Анчах та... урапа çине хăпарса ларнă Пантелей аяккалла, инçенелле кайса кĕçех курăнми пулчĕ.

Пантелей ашшĕ çапăçнă çĕрех, Хĕвел тухăç фронтне, лекрĕç хурăнсăрсем. Павăл Турпанов разведка взводне ертсе пырать. Ывăлне вăл хăй патне илтерттерчĕ. Чăваш ачисем нумайччĕ. Фронтра кăларакан чăвашла хаçата эртелпе пухăнса вулатчĕç вĕсем. Дивизи начальникĕ Чапаев тетчĕç. Паттăр командир пирки тем тĕрлĕ ырă-усал халап çӳретчĕ. Анчах Пантелее ăна хăйне курма май килмерĕ.

Чапаев вилнĕ хыççăнхи кĕр кунĕсенче питĕ хаяр çапăçусем пуçланчĕç. Хĕрлисен те, шуррисен те çухату нумай пулчĕ. Тиф çавапа çулнă пек çулчĕ салтаксене. Пĕр çапăçу хыççăн ашшĕне Пантелей Шур Атăл çыранĕнчи чуллă çĕре пытарса хăварчĕ, ăна кĕçех ашшĕн взводне шанса пачĕç.

Шурă казаксен Урал çарне çапса аркатнă хыççăн Турпановсем Днепр çывăхне шур поляксене хăваласа яма çитрĕç.

Вăрçа кайиччен умри Киремет имлĕ-симлĕ çăлкуçĕнче юлашки хут çăвăннăранпа Шур Атăлăн сивĕ, Каспи тинĕсĕн тăварлă, Днепрăн ăшă шывĕсемпе чӳхенчĕ чăваш каччи. Виçĕ хутчен аманчĕ. Вилĕме парăнмарĕ. Тĕреклен-се, пиçсе çирĕпленсе таврăнчĕ çамрăк командир тăван ялне. Сарлака кăкăрĕ çинче Хĕрлĕ Ялав орденĕ çиçет. Чунĕ юрлать. Чĕри кăкăртан сиксе тухасла тапать.

Виçĕ çул курман ачине Хурăнсăр хăйĕн Аслă униче алă-кĕнчен хурлăхлăн кĕртсе ячĕ. Урамра шăп. Пурте вилсе пĕтнĕ тейĕн. Пӳртсенче выçлăх хуçаланать. Симĕс сĕлĕ çулĕ килрен киле Вилĕм çавăтса çӳрет.

Пантелей масар енчен килекен çынсен мĕскĕн ушкăнне хуса çитрĕ. Салтака курсан пурте чарăнчĕç. Вăл та тăчĕ, çывăх çынсене палларĕ, тăван-хурăнташĕсем, кӳршисем... Анчах мĕншĕн пĕри те çавар уçмасть-ши?

— Кама пытартăр?

Шăммипе тирĕ çине пир кĕпе уртса янă шуранка хĕрарăм сулкаланса çывхарчĕ те Пантелей мăйĕнчен уртăнса йĕрсе ячĕ:

— А-ах, шăллăм, таврăнтăн пать-ха, сывах эс. Паллаймарăн-им мана?

— Палласа илтĕм-ха та... Сире курнипе хама хам темле пулса кайрăм-çке.

— Аттепе пĕрлех сана та чиркӳре асăнтартăмăр. Кивçенле. Виçĕ пăт тырă памалла халь Ваççили аттене. Выçлăх пулсан пуп пуять тесе ахальтен каламан çав.

— Тăхта-ха эс. Мĕнле капла? Мана. Мана аттепе пĕрле асăнтартăр-и? Мĕншĕн? Нимĕн те ăнланмастăп, — аккăшне вĕçертсе аллисене сарса пăрахрĕ Пантелей.

— Эс вăрçăра вилнĕ текен сăмах тухрĕ те... Чĕрех-ха. Тавах турра сана тĕрĕс-тĕкел çавăрса çитернĕшĕн.

— Кама кирлĕ пулнă-ши вара ку камит?

— Чухлама пултаратăн. Çав Перунсемпе Усламçăсенех... Анне те çук ĕнтĕ тек...

— Анне?! Чăнах-и? А-а-а-ах!

— Çапла çав, тăлăха тăрса юлтăмăр. Эс аттене пытартăм тесе çырнăччĕ. Эпир халь аннене пытартăмăр. Виçĕм кун

куçне хупрĕ. Вĕçĕмсĕр аса илсе выртрĕ сана. Çулĕ вăрăм та, ĕлкĕреймерĕн пуль çав. Виçĕ çула кĕтнине виçĕ куна маларах çитеймерĕн. Ах, шăллăм, анне те çуккă халь, атте те... Мĕнле пурăнас. Ах-ха-хай.

Кутамккине макăракан аккăшне хывса тыттарчĕ те Пантелей урам тăрăх чупнă пек васкаса утрĕ. Масарти çĕнĕ вилтăпри çине выртса нихçан макăрманнине пĕрре чун пушаниччен макăрчĕ. Тăчĕ те ӳсĕр çын пек килнелле сулланчĕ. Вăрçăран яла илсе çитернĕ çĕнтерӳ савăнăçĕ таçта кайса кĕчĕ тăлăх чунăн.

Тусанлă çулпа тăрантас килет. Пантелейпе танлашсан «тпру!» тенĕ паллана сасă илтĕнчĕ. Лаша тăпах чарăнчĕ. Çĕре сиксе аннă Перун Пименĕ тӳрех хыткан тăсланкă аллине тăсса пачĕ те:

— Таврăннă ятпа саламлатăп сана, — терĕ. — Хуйхи те пĕрлех килчĕ тата. Аннӳн тăпри çăмăл пултăр. Аттене калăп, укçасăр-мĕнсĕрех асăнтăр ырă çынна. Унтан Пантелей хăй çине мар, тăрантас кăрманĕнче питне тутăрпа хупласа ларакан Варвари еннелле куçне тăрăнтарнине сисрĕ те сĕререх хушса хучĕ: — Çĕнтертĕмĕр пулать-ха апла тăшмана...

Хуйхăпа çилĕ капланăвне кăштах сирсе янă хыççăн Пантелей шăл витĕр сăрхăнтарчĕ:

— Çĕнтертĕмĕр. Анчах... сире мар. Сирĕнпе кĕрешмелле пулать-ха. Сахал мар.

— Ай турух, эс орденпах килнĕ-иç! — мăшкăлласа тăчĕ Пимен. — Пурне те пачĕç пуль ку Хĕрлĕ Ялава?

— Хĕрлĕ ялав айĕнчисем пурте тивĕçлĕ ăна. Сан йышшисен вара... ун çине хăрах куçпа пăхма та намăс.

— Ай тур-тур, виçĕ çул курман. Вăл пур — виçĕ сăмах путлĕн каламасть. Атя-ха хамăр пата, аннӳн виç кунхине асăнса, туй пулнин виç кунне паллă туса виç курка ĕçер, турă калашле. Сăваплă пулар. Турра çиллентерер мар.

Варвари чăтаймарĕ, тăрантас çинчен сиксе анчĕ те ялалла чупса кайрĕ. Пимен лашине çавăрчĕ. Пантелей те кăрман çатанĕнчен çакланма ĕлкĕрчĕ. Хăшăлтатса чупакан таркăнпа танлашсан пĕррех пушăпа туртса çапрĕ Пимен Варварие. Лешĕ çухăрса ярса çĕре тӳпех кайса ӳкрĕ. Пантелей чăтаймарĕ, пуп ывăлне мĕнпур вăйран айăк пĕрчинчен паклаттарчĕ те сиксе анчĕ.

Тусан çинче йěрсе выртакан хěре Пантелей çěклесе тăратрě, унăн вараланнă кěпине силлесе тасатма пуçларě.

— Суять вăл, путсěр. Ых, чун илли! — йěре-йěре каларě Варвари. — Нимле туй та пулман. Нимле виçě кун та çитмен. Кěççе пит! Çак виçě çул хушшинче пусмăрласах çитерчěç ěнтě Усламçă Прухăрěпе иккěшě. Эп санах кěтнě, Пантелей. Санах. Эс вилнě тесе каларěç те вěсем... Ах, хамăр выçăпа вилетпěр. Виçěм кун, аптранă енне, çав усалсен серепине лекрěм. Чиркěве ěçлеме кěтěм. Шăллăмсем симěс курăк яшкипе шыçăнса кайрěç, анне вырăнпа выртать. Ах, турă, ăçта кайса чикес-ши пуçăма? Намăс сан умăнта. Эс пур-çке, пур. Вилмен. Мана Пимен катаччи чуптаратăп тесе вăйпах лартса тухрě. Çилампах арăм тăвасшăн. Эп санах кěтрěм. Санах, Пантелей. Ěнен, эпě таса, сан умăнта та, турă амăшě умěнче те. Каçар мана, ухмах пуçа. Эй, турă...

Пантелей Варварие кăпка çӳçлě пуçěнчен ачашла-ачашла лăплантарма тăрăшрě.

— Ěненетěп сана, шанатăп, чунăмçăм. Эпě хам та сан сăнарупа хăпартланса пурăнтăм çак çулсенче. Ăçта кăна çитермерě пуль вăрçă çулě, сан ал тутрине çухатмарăм, пите шăлса илеттěмччě те унпа, эсě мана ачашланăнах туйăнатчě. Акă вăл, кур-ха, — йěкěт кěсйинчен вěт пиртен тунă тутăра кăларса кăтартрě. — Пěр кěтессине «П», тепěр кěтессине «В» тесе тěрленě.

Варварин хыткан пит-куçěнче тинех ăшă кулă палли йăлкăшса илчě. Çав вăхăтра вěсем патнелле тусан мăкăрлантарса тăрантас çывхарчě.

— Паянтан эс ман юлташ мар. Тăшман! Киремет тыттăр хăвна та, пулас арăмна та! Çавăншăн кěлтăватăп паянах. Антихрист! — çухăрса иртсе кайрě ларкăч çинче ларса пыракан Пимен.

Пантелейпе Варвари аран аяккалла сиксе ӳкме ělкěрчěç.

— Ан хăра урăх, Варвари. Халě эпě сан çумăнта ěнтě. Яланах пěрле, — терě хěр çумнерех çыпçăнса тăлпан кěлеткеллě кавалери командирě.

комсомолец

Ял историйěнче чиркӳре венчет[illegible] пěрремěш мăшăр пěрлешрě. Пантелей Турпанов комсомолец Хурăн-

Национальная библиотека
Чувашской Республики

сăрта каччăсемпе хěрсене хăй тавра пуçтарчě. Хěрлě улахра вăхăт хěрӳ иртет.

Пěр каçхине Варварисен пӳртне Чулхулара суту-илӳ ěçне вěренекен Усламçă Прухăрě купăспа пырса кěчě. Чăлха çыхакан, тěрě тěрлекен хěрсемпе çамрăк хěрарăмсем, çăпата тăвакан яшсем хăлха тăратсах Пантелее итлетчěç.

— Çамрăксен коммунистла союзěнче халě, — тет вăл, — çур миллион çын, эпир те, хамăр ялти ячейкăри пилěк çын, çавсен ретěнче. Пирěн Ленин çулпуç çирěммěш çулта комсомолăн виççěмěш съездěнче мěн каланă-ха? Сирěн, çамрăксен, коммунизм обществи тăвас пулать тенě. Çавăнпа кашни каччăн, кашни хěрěн çав ěçе хутшăнмалла. Пирěн тěп ěç вара — пěтěм çамрăк ăрăва пěлӳ парасси, воспитани парасси тата ăна аталантарса пырасси пулса тăрать. Пур ěçре те типтерлě, тăрăшуллă, кăтартуллă пулма, çěнěлěхшěн кěрешме, мěнпур йывăрлăха çěнтерме, коммунизмла ăмăрту йěркелесе яма, пěтěм ěçе пěр çěре пěрлештерме чěнет Владимир Ильич. Эпир — малта пыракан ушкăн. Пирěн пурне те çěнělле тумалла. Апла пулсан вěренмелле, вěренмелле, нумай вěренмелле, кěнеке вулама та, хут çырма та, тырă ӳстерме те, пӳрт-çурт тума та, çамрăксемпе ěçлеме те. Пурнăç тума — коммунизм тума — вěренмелле.

Алăкра итлесех пěтерчě юлташěн сăмахне Прухăр, унтан купăсне сак çине лартрě те кěсйинчен хутпа чěркенě канихветсем кăларса хěрсене валеçсе тухрě.

— Хěрлě улах ачисене хěрлě хула парни, — кулкалать хăй. — Мěнле тěп-тěрěс тăн пама пěлет сире Пантелей. Чăнах та вěренмелле пирěн, хастар ěçлеме, пуян пурăнма вěренмелле. Çавăнпа сире, каччăсем, хам пата чěнетěп. Çитет çăпата калăпěпе аппаланса. Мастерской уçатăп. Тирсăран тăвăпăр, ată-пушмак ăсталама пуçлăпăр. Кооператив пулать. Çěнě пурнăçăн çěнě политики çапла тума хушать. Чухăнлăхпа выçлăхран сăмах-чěнӳпе çăрăлса тухаймастăн. Япала кирлě, апат-çимěç кирлě халăха. Унсăрăн нимěнле коммунизм та пулмасть. Нишлě коммунизм никама та кирлě мар. Пěлетпěр ěнтě, хулара унта ялтинчен лайăхрах уçаççě куçа-пуçа.

— Революци пěтрě-им вара пирěн?

— Ленинах хушнă-ши çапла тума?
— Каллех усламçăсем пуç çĕклеççĕ-им?
— Çĕнĕрен тарçа кĕрĕшмелле-и?
Ыйту çине ыйту сиксе тухрĕ. Пантелей хăй пĕлнĕ пек, Прухăр хăй шутланă пек ăнлантараççĕ çамрăксене.
— Ан хăрăр, пире те çăмăллăх пулать-ха. Налук тӳлесе татнă хыççăн эпир те, хресченсем, ытлашши юлнă тыррапулла, аш-пăша пасарта сутма пултаратпăр, — терĕ Турпанов.
Çутă пăч сӳнчĕ.
— Краççын пĕтрĕ пулас, — хыпăнса ӳкрĕ Варвари. — Ямалли урăх çук. Ялĕпех сăрăхтарса пуçтарса килнĕччĕ. Эп хăйчикки тухса шырам-ха пӳрт умне.
— Ак сана çĕнĕ пурнăç, çутă пурнăç, ăçталла çул кăтартать — хăйчикки патнелле, — тесе кулкаласа Прухăр тĕттĕмрех купăсне хыпашласа тупрĕ те ял ачисем пĕлмен кĕвве калама пуçларĕ, çинçе сассипе вырăсла юрласа ячĕ:

Ехал из ярмарки ухарь-купец,
Ухарь-купец, молодой удалец...

Хăйчикки тупăнчĕ, анчах типĕтнĕ хăйăи пулмарĕ. Тĕттĕмре пуплекелесе пурте майĕпен килсене салана пуçларĕç.
— Мĕнле, килĕшетпĕр-и? — ыйтрĕ вĕсенчен Прухăр. — Хĕр упраççем, сире валли те ĕç тупăнать. Ман патра эсир шăпах Пантелей каланă пек тăрăшса ĕçлесен пĕтĕм ĕçхĕле пĕрлештерсе тулăх пурăнма вĕренĕр. Ленин ухмах мар. Вăл самана таппине туять. Паян эпир те, Усламовсем, кирлĕ иккен. Пирĕн суту-илӳ ĕçĕ те — çĕршыв çăлăнăçĕ. Юрлама та, ташлама та хамах вĕрентĕп сире. Çĕнĕлле. Кăмăлăр пулсан — пырăр ыранах. Шухăшласа пăхăр.
Никам та ухутах Прухăр умне пырса тăмарĕ. Пантелей вара ăна çапла каларĕ:
— Ирĕклĕх сывлăшĕпе сывлакан çамрăксем, Прухăр, сан хыççăн утмĕç. Эс хăвăн суту-илӳ ĕçне хăвнашкаллисемпех ту. Вăл — коммунизм ĕçĕ мар, капитализм йышши япала. Эпир хамăр пуçланă ĕçех тăвăпăр. Паян тĕттĕме тăрса юлтăмăр пулин те, ыран пурпĕрех çутта тухăпăр. Вăхăт нушине курас пулать, чăтас пулать.
Прухăр та парăнма шутламарĕ.
— Итле, тусăм, — терĕ лăпкăн, — эсĕ пĕртте йăнăш-

мастăн. Парти политикине лайăх ăнланатăн. Анчах асту, пире, революци вăйĕпе пусарнăскерсене, революци тунă ăслă-пуçлă çынсемех тепĕр хут хăйсем пуç çĕклеттерчĕç, пирĕн куçа эмел ярса çĕнĕрен уçрĕç. Пирĕн ума халĕ çĕнĕ хĕвел сиксе тухрĕ. Епле çутатать вăл Раççей çийĕн, э? Атте тăрса ларас пулсанччĕ... Продотряд çара кучĕ персе вĕлермен пулсан-и ăна... Совет влаçне вăл ун чухне памасăр тăнă вунă пăт тырăран паян çĕр вунă хут ытларах усă кӳме пултарнă пулĕччĕ. Çапла, çутă çуталать те сӳнет пирĕн умра, çуталать те сӳнет... каллех ялкăшса каять. Эх, епле!

— Мĕн кулянан-ха тата савăннă хушăрах? — тĕртсе илчĕ ăна Пантелей Турпанов.

Темиçе хут ассăн сывласа илнĕ хыççăн Прухăр сылтăм аллине юлташĕн хулпуççийĕ çине хучĕ.

— Эх, — терĕ вара, — пурнăçăм лайăхланасса шанатăп. Чулхула купцисем пĕтмен-ха. Тымарĕ çирĕп вĕсен. Аттене манмаççĕ. Ун ячĕпе мана пулăшаççĕ. Анчах... суту-илӳпе пуянлăх хĕвелĕ çеç-çке ман умра. Пурнăç хĕвелĕ çутатмасть. Сан вара... сан, Пантелей, пурнăç хĕвелĕ те, телей хĕвелĕ те хăвпа юнашарах. Лашасăр, ĕнесĕр, çĕтĕк-çатăк пурăнатăн пулин те, манран эсĕ пин хут, мĕльюн хут пуянрах та телейлĕрех пек. Сан — Варвари пур.

— Мĕн, халĕ те манаймастăн-им? Чăнахах юрататăн-и вара эсĕ ăна? — кăсăклансах ыйтрĕ Пантелей. — Эп ку пустуй, йĕкĕлтесе кăна калаçать пуль тенĕччĕ сана. Пимен уншăн мĕнле çулăмпа çуннине пĕлетĕп-ха. Эсĕ вара...

Прухăр чăннипех калать иккен.

— Варварие курас тесех ятарласа килтĕм. Пĕрре пăхса илсе те пулин чуна кантарас килчĕ. Анчах... çутă сӳнчĕ. Турă çапла асап кăтартать ĕнтĕ мана. Эх...

Тĕттĕм каç. Варвари пӳртре. Прухăр çаврăнса утрĕ те купăсне туртса ячĕ.

Çав сасă илтĕннĕ пекех туйăнчĕ Турпан Пантелейне. Чăн та, хăлхана купăс сассиех кĕрет. Чуччу хăйклатнипе хутăш нăртлатать те нăртлатать. Вăйă пĕтмен-мĕн. Лачакара выртакан ватă çыннăн вăй пур-ха, тăн пур. Кунталла килекен çеç никам та çук. Ирĕксĕрех асаилӳпе хăпартланса çĕклеме тивет кăмăла.

Çĕнĕ пурнăç тăвасси çĕнĕ çăпата тăвасси мар иккен. Пăтранать, арканать, пĕтĕрĕнет тавралăх. Пĕтĕм çĕршыв ахлатать. Йывăр ăна. Мĕнле çĕклемелле, мĕнле майпа ура çине тăратмалла хаяр вăрçăсем хыççăн. Мĕнлерех уттармалла нумай мĕльюнлă халăха социализм çулĕ тăрăх. Ленинăн коопераци планĕ майĕпен çĕнĕ юн юхтарса кĕртетха çĕршыв артерине. Капитализмран социализма куçнă хаяр тапхăрта хулапа ял çыннин пултарулăхĕпе питĕ пĕлсе усă курмалла-мĕн. Çынна халĕ пĕрлешсе ĕçлеме те, патшалăхăн пĕчĕкрех предприятийĕсене тара илме те, хăйĕн хуçалăхĕнче тавар туса сутма та, лавкка-хупах тытма та ирĕк. Пултар çеç. Çав ирĕклĕхпе усă курса ĕнтĕ Усламçă Прухăрĕ атă-пушмак мастерскойĕ, лавкка уçрĕ. Революци хыççăнхи çуркунне Турпан Павăлĕсем татса янă ашшĕн Киремет çырминчи пĕвине çĕнĕрен пĕвелеттерчĕ.

Хурăнсăрпа Чулхула хушшинчи çула тапăртатсах такăрлать Прухăр. Купăс кала-кала юратнă юррине тăсать:

Ехал из ярмарки ухарь-купец,
Ухарь-купец, удалой молодец.

— Эс «ухарь-купец» мар, «Прухăр-купец» тесе юрла-ха малашне, — кулчĕ унран пĕррехинче Пантелей.

— Ма юрлас мар, юрлас. Кун пек тата вăйлăрах. Мĕн, эпĕ купца мар-им? Аттерен пурпĕр irттеретĕп. Эх!

Ехал из Нижнего Прухăр-купец,
Ухарь-купец, удалой молодец.

Çавăнтанпа вăл ялта Прухăр — ухăр-купец ят илчĕ. Кĕçех Чулхуларан майра хĕрĕ тупса килчĕ. Арăмĕ лавккара суту тăвать. Киремет çырминчи шыв арманĕ çĕрĕнкунĕн авăртать, авăра шыв сиктерет, Прухăр енчĕкне укçа юхтарать.

Çĕнĕ политика вăйĕ чăн та хăйĕнне турĕ, ялпа хулана çывăхлатрĕ, рабочипе хресчен çыхăнăвне çирĕплетрĕ, çĕршыв тĕрекне вăйлатрĕ. Çав хушăрах социализм утти те малаллах шурĕ, капитализм палли те тепĕр хут сăмсаланчĕ. Иккĕшĕн хушшинчи унчченхи пек мар урăхларах майлă хирĕçӳ-тытăçу хĕрсе çитрĕ. Прухăр та хăйĕн юррине юрлама пăрахрĕ. Турпан Пантелейĕсем ĕнтĕ çĕнтерӳ ялавне тата çӳлерех çĕклерĕç. Ун айне Усламçăсемпе Перунсем тăма килĕшмерĕç-ха.

Перун Ваççилийĕ хăй йӳтесе çитиччен ывăлне Шупашкара илсе кайса пачăшка вĕрентме ĕлкĕрчĕ, хыççăнах авлантарчĕ. Ахаль Пимен мар ĕнтĕ вăл халь — Пимен атте. Тăсланкă, вăрăм сухаллă, хулăн саслă пачăшкă. Тăрхала пичĕ, туртса тăснă пек, пушшех вăрăм курăнать.

Хушаматне кам панă-ши вĕсене? Ахăртнех, вырăс пупĕсем. Чăвашăн унашкал хушамат пулман. Пантелей каярахпа тин кĕнекере вуласа пĕлчĕ ун пирки. Перун вăл авалхи славянсен тĕп турри — çумăр, çиçĕм, аслати турри пулнă-мĕн. Ун сăнарĕ Илья-пророка куçнă. Христиансен шучĕпе, Илья-пророк пĕлĕтре вут-çулăмлă урапа çинче кĕрлеттерсе çӳренĕ. Хресченшĕн вăл çăлăнăç та, инкек кӳрекен те пулнă. Чиркĕве çӳрекен ял çынни унпа пуп урлă çыхăну тытнă. Пупа вăл ĕненнĕ, ун хăватне шаннă. Ваççили атте хыççăн ывăлне те ял çинче Илья-пророк тетчĕç.

Вак хуçалăхсене пĕрлештерме пуçланă çулхине Пантелей коммунистсен партине кĕчĕ. Колхозĕ ниепле те пĕр тĕвве тĕвĕленеймест. Пухăнать те саланать, пухăнать те саланать. Виççĕмĕш хутĕнче тин йĕркеленсе кайрĕ.

— Йăнăш çулпа утатăр эсир, — ихĕрчĕ Усламçă Прухăрĕ. — Йĕркеллĕ ĕçлесе пурнăç тунă вăтам хресчен вăйĕпе пĕрлешӳллĕ хуçалăх йĕркелесшĕн. Сирĕн хăварăн, çĕтĕкçатăксен, мĕн пур? Мĕн, лаша патăн-и эс, Пантелей, колхоза? Ĕне-и? Кĕлет-сарай-и? Çерçи те çук сирĕн килĕнте. Пире хĕсесшĕн тата... Эх, чухăн хуçа. Мана кĕртесшĕн тата унта... Шиш! Сирĕншĕн тар тăкнă, сирĕншĕн мул пухнă пуль эп. Çу-ук, илеймĕр манран нимĕн те, хуçаланаймăр ман пурлăхпа.

Çамрăк председатель Турпан Пантелейĕ ăна чăнах та хăйсен çĕнĕ эртелне илесшĕн, унăн атă-пушмак мастерскойĕпе, шыв арманĕпе пĕтĕм яла усă куртарасшăн.

— Пурте пĕр вăя пухăнсассăн эпир никам çĕнтерейми çирĕп чăмăра пĕрлешетпĕр. Пирĕн колхоз пуян пулĕ, пурнăç тулăх пулĕ, — чĕнсе калать Пантелей.

— Çу-ук, килĕшместĕп. Хăвăр туса пăхăр-ха малтан пирĕнни пек пуянлăх. Мĕн хака ларĕ вăл! Эпир ăна ак çак алăсемпе, ак çак пуçпала тунă. Памастăп такама, темле йăхтăр-яхтăра. Ман вăл, ман!

Пĕр каçхине Хурăнсăрта пушар тухрĕ. Усламовсен ată-

пушмак мастерскойĕнчен кăмрăкпа кĕл, шыв арманĕнчен чулĕ кăна тăрса юлчĕ. Айăплин вĕçне-хĕрне тупакан пулмарĕ. Хăйсемех çунтарса-татса янă текен сас-хура ял хушшинче яланлăхах çирĕпленсе юлчĕ.

Турпановсем Прухăр — ухăр-купеца кулаксен шутне кĕрттермесĕр хура çавра çилрен çăлса хăварчĕç. Ăна Усламов ăнланасшăн пулмарĕ, пытанса пурăнакан шалти хаяр çиллине пусармарĕ, Перун Пименĕпе пĕрле Пантелее тавăрмалли çĕр те пĕр сăлтав шырарĕ. Вĕсене вăл Варварипе пурăнни пушшех çырлахтарма пултараймарĕ. Ун çумне тата пурнăçри хирĕç тăру саманчĕсем çĕнĕрен хушăнчĕç.

«Халăх ăс-тăнне урăлтаракан» сывлăш хумĕ Хурăнсăра капланса килсен Турпановсем ăна вĕре-вĕре татах вăйлатса ячĕç.

— Хупмалла чиркĕве! Ял хушшинчи тĕн сĕрĕмне сирсе ямалла. Чиркӳ çуртĕнче культура çурти çутса «Интернационал» юрламалла! — тесе пыр хыртарсах кăшкăрать Пантелей. — Парти сăмахне, правительство хушнине итлер, хамăрьялсем. Районтан килни ирĕк панă чухне атьăр аркатар Перунсен ултав йăвине!

Чиркӳ лаптăкне пухăннă халăх ай кĕрлет, ай шавлать, тинĕс хумĕ пек пăтранать. Пимен атте кĕлĕ кĕртнĕ чухнехи тумпа, аçам пек анлă çанăллă, ура пуçне çитекен вăрăм стихарь тăхăннă, сулахай хулпуççийĕ урлă ансăр вăрăм хăю çакса янă, пуçĕ çине бархатран çĕленĕ тăрăхла калпак пусса лартнă, пилĕкне тутăр çыхнă, аллинче — вĕтĕ сăнчăрлă пăхăр кадило, çунакан ладан шăрши сăмсана кăтăклать. Пĕлтĕр аçа çапса çунтарнă мăн хурăн çумĕнче тăракан тăсланкă пачăшкă хура юпа пек хăрушшăн курăнать. Вăл сассине тата хулăнлатса Турпан Пантелейне çĕнтересле мĕкĕрет:

— Турă чурисем! Çак сăваплă çурта хамăр асаттесен ашшĕсем турă сывлăшĕпе сывлама туса лартнă. Ăна христианство вĕрентĕвне пуçласа янă пĕрремĕш чи аслă апостолсем Петĕрпе Павăл ячĕпе светить тунă. Вĕсен сăваплă чунĕсем халĕ те пирĕнтех. Турă аттемĕр вĕсене паян леш тĕнчерен çакăнта антарчĕ. Вĕсем — пирте. Христос — пирте. Эпир Турăпа тавлашма çуралнă-и? Ун саккунĕсене хирĕçлетпĕр-и? Вĕсенчен аслăраххи кам пур-ши? Турăпа ун саккунĕсене курайман, вĕсене кӳрентерекен антихристсене

ан итлĕр! Шуйттан хушакан шухăша хăвăрăн чунăртан хăваласа кăларăр! Тӳсĕмлĕ пулăр. Леш тĕнчери çутă пуласлăх ячĕпе чĕнетĕп, турă керменне аркатса çылăха ан кĕрĕр, çуралнă чухне турă панă туйăма ан çухатăр. Кам Турра хирĕç тăрать — çавна хăрушă суд кĕтет. Шыва çак чиркӳре кĕнĕ турă чури тĕн керменне тискерле варалама чукмар йăтса ан кĕтĕр ун алăкĕнчен. Аминь! Аминь! Аминь! Христос ячĕпе, Петĕрпе Павăл апостолсем ячĕпе кĕлтăватăп. Аминь...

Ян-н! янраса кайрĕ сасартăк пуç тăрринче пысăк хăрушлăх çинчен пĕлтерсе мăн чан сасси. Ян-н! ян-н! Кĕçех ăна пулăшма вăтаммисем, кĕçĕнреххисем хăйсен уйрăм сассипе чăнчанлатса-чăнкăлтатса васкарĕç. Халăх шăп пулса ĕмĕртен хăнăхнă çывăх кĕвве тăнласа итлеме пуçларĕ.

Ян-н! Чăн-чан-н! Чăнкăл-л-чанкăл-л-чан-н! Мĕнпур хăвачĕпе, мĕнпур илемĕпе, мĕнпур янравлăхĕпе пĕр хăпартланса та, пĕр хурланса та, пĕр тарăхса калаçрĕ чиркӳ ку таранччен хăйне юратса, хăйне шанса, хăйне ĕненсе пуççапнă, кĕлтунă çĕр çыннисемпе.

Пуçĕсене каçăртса çӳлелле пăхакан хресченсен куçĕ-пуçĕ чалхăрса кайнине, ушкăн майĕпен-майĕпен хухса пынине пăлханса сăнаса тăчĕ Турпан Пантелейĕ, чиркӳ лаптăкĕнче юлнă вун-вун икĕ арçын ниçталла та хускалманнине курчĕ те ял совет председательне Асат Петĕрне кăлт тĕртрĕ чавсипе:

— Пĕччен мар иккен-ха эпир. Авă безбожниксен-атеистсен отрячĕ. Пирĕн хыççăн вута кĕме те, шыва сикме те хатĕр маттурсем. Камантă парасса çеç кĕтеççĕ.

— Тавай, камантлăр! — хушрĕ сăран тужурка тăхăннă район представителĕ.

Асат Петĕрĕ аллине сулчĕ те... пурте тапранчĕç. Малта Турпан Пантелейĕ пырать. Пимен атте пăталанă Христос пек аллисене саркаласа чиркӳ алăкне хупласа хучĕ.

— Кĕртместĕп! Çылăхран хăрăр...

— Пăрăн çул çинчен, ултавçă нӳхреп куç! — кăшкăрчĕ те Пантелей пачăшкăна вăйпах аяккалла сирчĕ.

Пимен аттен сылтăм аллинчи хĕресĕ çĕре шаплатрĕ. Çийĕнчех ăна Асат Петĕрĕ вĕр çĕнĕ çăпатипе таптаса хăварчĕ. Пачăшкăн сулахай аллинчи кадилинчен ладанĕ юхса тухрĕ... Кĕлĕ çулăмĕ пăч сӳнчĕ.

Ян-н, чăн-чан-н! Чăнкăл-л-чанкăл-л-чан-н! Чăнкăл-л-чанкăл-л-чан-н! Чăн-н-чан-н! Чан-н! кĕрлет, шавлать çӳлте.

Ансăр пусма тăрăх çӳлерех те çӳлерех улăхрĕ Турпан Пантелейĕ. Темшĕн ăна çак пусма картлашкин вĕçĕ çук пек, вăл чăмăр пуçлă чиркӳ тăррине кăна мар, çӳл тӳпене, анлă уçлăха, леш тĕнчене çитиех тăсăлнă пек туйăнать. Нумай саслă янравĕ те кăтра пĕлĕтсем хыçĕнчен вĕçсе аннăн илтĕнет. Пантелей хăюллăн хăпарать. Акă уçă шăтăк. Акă хăма урай. Чансем. Чан çапакан. Вĕрен вĕçĕсене икĕ аллипе те çавăрса тытнă Усламçă Прухăрĕ пĕрре сулса ярать те, ян-н! янăрать мăн чан, тепре туртать те хăй патнелле — чăн-чан-н! туса илет, пилĕкĕнчен çыхнă вĕрене икĕ аллипе пусса карăнтарать те, чăнкăл-л-чанкăл-л-чан-н! юрласа яраççĕ кĕçĕннисем.

— Чарăн! — кăшкăрчĕ Пантелей çумне хăпарса тăнă Асат Петĕрĕ. — Çитет минретсе халăха!

— Тархасшăн, тăхтăр кăштах, — йĕрсе ярасла ыйтрĕ чан çапакан. — Бах ку. Эпĕ вĕт Чулхулара та чан çапнăçке. Пĕр вырăс вĕрентнĕччĕ. Тепĕр çаврăм çеç юлчĕ. Сывпуллашу кĕвви. Итлĕр ак, тăнласа...

— Ян-н-чăн-чан-н-чăнкăл-л-чан-н-чан-н-чан-н...

— Тем пахлатса тăрать, тупнă пăх-пах! — терĕ те Асат Петĕрĕ пĕчĕк пурттипе вĕрене качлаттарчĕ. Юлашки хут ян-н! туса мăн чан шăпланчĕ. Кач! тутарчĕ тепре. Чăн-чан-н! туса сассине татрĕ вăтамми. Кач! Чăнкăл-л-чăнкăл-л-чан-н! сывлăша вĕçсе çухалчĕ кĕçĕн чансен уçă кĕвви.

Вĕрен çаклашкисене вĕçертсе аллисене вĕрсе илчĕ те Усламçă Прухăрĕ майĕпен пилĕкĕнчи вĕренне салтрĕ, унтан тин тарăхуллă куçĕнчен шăпăртатса юхса аннă куççульне шăлса типĕтрĕ.

— Ухмахсем эсир, — терĕ вара çĕрелле сурса. — Халăх ĕмĕтне, халăх кăмăлне касса татакансем. Çӳлти атте те, çĕр айĕнчи аттесем те, çĕр çинче пурăнакан этемсем те сире ку çылăхшăн нихçан каçармĕç. Çĕр чăтайми усал ĕç тăватăр...

— Пăрăн çул çинчен! Пăрăн, Прухăр — ухăр-купец, — аяккалла тĕртрĕ ăна Турпан Пантелейĕ. — Саншăн усал пек туйăнать пуль, пирĕншĕн — ырă ĕçех. Çӳлтен хушнă ĕç. Эпир коммунизм тăватпăр. Коммунизмпа тĕн вара пĕр

варлă мар. Çавăнпа чаратпăр Пименсене малашне халăх хушшине усал сĕрĕм сарма.

— Сана-и, сана çиччас юсатпăр! — юнарĕ Прухăра ял совет хуçи. — Колхоза кĕместĕн эс. Пире пулăшмастăн. Единоличник — халăх тăшманĕ. Çĕпĕрсĕрех çĕртетпĕр ак сана...

Чиркӳ чанĕсене антарса района леçсе панă хыççăн платниксем ĕçе тытăнчĕç. «Çылăха-мĕне çухатнă» хресченсем чиркӳ пуçĕсене пăсса антарчĕç, çурта çĕнĕрен тăрăларĕç, шалта урăхлатса сцена турĕç. Хурăнсăрта клуб уçăлчĕ. Турпан Пантелейĕ ĕмĕтленнĕ пекех, унта культура çурти çеç мар, вучахех çунма пуçларĕ. «Интернационал» та, халăх юрри-такмакĕ те янăрарĕ. Çамрăксем спектакль лартма пикенчĕç. Майĕпен хăнăхрĕ ял çынни унта çӳреме.

Ял совечĕпе колхоз правленийĕ единоличниксене Масар тăвайккине çĕр уйăрса пачĕ. Авалхи тĕнпе пурăннă чухне унта ял масарĕ пулнă тет. Ялтан виçĕ çухрăм аякра, чуллă çĕр çинче, унчченех курăк çеç ӳстернĕ. Акă хайхи «вырăнти Çĕпĕр нуши» тинех килсе çапрĕ Усламçă Прухăрне те. Йĕре-йĕрех, турра пуççапа-пуççапах уçмалла пулчĕ вĕсен çĕнĕ çĕре, авалхи несĕлсен лăпкă та сăваплă вырăнĕнче тырă акса ӳстермелле пулчĕ. Чухăнлăха тăрса юлнă лавккаçă, усламçă ачи, ĕнерхи нэпман пурнăç нушине Масар тăвайккинче кăшласа вăл мĕн тути каланине туйрĕ.

Хăшĕсем чăтаймарĕç, ирĕксĕрех кĕчĕç колхоза. Усламçă Прухăрĕ çеç правлени еннелле утмарĕ, кĕлетки йăмшакрах пулин те ăшĕ-чикĕ хаяр унăн, çирĕп кăмăллă вăл.

Турпанов колхозĕ вăй илчĕ, ял çыннисене ура сыртарчĕ, çăкăрлă турĕ, çĕнĕ пӳрт-çурт ларттарчĕ. Турпан Пантелейĕ вĕсемшĕн тур панă телей вырăнĕнчехчĕ. Çавăнпах пуль ăна куçранах Пантелей — тур панă телей тетчĕç.

Ним тума аптранă Перун Пименĕн чиркӳ хупăннă хыççăн ирĕксĕрех колхоза кĕме тиврĕ. Унашкал прихутсăр тăрса юлнă пачăшкăсем Чăвашра сахал мар пулнă-çке. Епархи пурне те ĕç тупса парайман.

Вăтăр çиччĕмĕш çулта Перун Пименĕпе Турпан Пантелейĕн арăмĕсем пĕр кунтах ывăл çуратса пачĕç. Усламçă Прухăрĕн те арăмĕ кĕçех çăмăлланчĕ, упăшкине ывăл парнелерĕ.

Арман пĕвине колхоз темшĕн пĕвелемерĕ. Çырма тĕпĕ

ҫеремленсе ларчӗ. Ҫыранӗсем тем сарлакӑш. Киреметкасси енче, ӗлӗк Киремет уйӗ тенӗ вырӑнта, тем пысӑкӑш уҫӑ лаптӑк. Часавай юхӑнса ҫӗрсе пӗтнӗ. Ӑна юсаса тӑракан тупӑнмарӗ, ун патне парне йӑтакан та сахалланса юлчӗ. Киремет хурӑнӗ те ватӑлса ҫӗре тӳнчӗ. Пантелей аслӑ аслашшӗне Турпана асӑнса ун ҫумне тепӗр хурӑн лартса ӳстерчӗ.

Киремет ҫырмине икӗ ҫыранӗпех тата хӑйсен умӗнчи ҫерем лаптӑкӗпех улмуҫҫи ларттарчӗ Пантелей.

— Ку сад — ҫӗнӗ пурнӑҫ сачӗ, хамӑр ачасен ячӗпе лартнӑ сад пултӑр, — хӑпартланса калаҫрӗ халӑх умӗнче председатель. — Арман пӗвинчен тӑварах, Киремет ҫӑлкуҫӗ тапса тӑнӑ тӗлте, пӗве пӗвелӗпӗр.

Улмине тутанса кураймарӗ Турпанов. Вӑрҫӑ тухнӑ уйӑхрах вӑл фронта лекрӗ.

Турпанов майор нимӗҫ эшкерӗсен ҫӗрӗ ҫине ӑйӑрпа паттӑррӑн, ҫӗнтерӳллӗн пырса кӗчӗ. Унччен вара, тӑватӑ ҫул хушшинче, мӗнле кӑна вут-ҫулӑм витӗр тухса мӗнле кӑна хӗн-хур тӳсме май килмерӗ-ши? Хаяр тӑшман та вӗлереймерӗ ӑна, Перун Пименӗпе Усламҫӑ Прухӑрӗ ылханни те тӗп тӑваймарӗ — Хурӑнсӑра чӗрех таврӑнчӗ. Одер шывӗнче питне ҫунӑ хыҫҫӑн вӑл хӑйсен умӗнчи ҫӑлкуҫ шывӗпе чун каниччен ҫӑвӑнчӗ. Анчах та тӑван ҫӗр имлӗхӗ унӑн ӑшри вут-ҫулӑмне сӳнтерeймерӗ. Колхоз юхӑнӑҫ лачакине путнӑ. Киремет ҫырминчи сада юхӑнтарса пӗтернӗ. Унта-кунта сыхланса юлнӑ хуҫӑк е хӑрӑк улмуҫҫи тунисем чӗрене пырса тӑрӑннӑ пекех туйӑнаҫҫӗ. Килте арӑмӗ вырӑнпа выртать — хӗрӗх пӗрремӗш ҫултанпах.

— Ҫыру ҫине йӑлтах ҫыраймарӑм, — шуранка пичӗ ҫине куҫҫуль тумламӗсем шӑратса кӑларчӗ Варвари. — Ах, сана кӗтни, Пантелей, Граждан вӑрҫине шутласан, пӗтӗмпе ҫичӗ ҫул кӗтрӗм сана... Ун чухне эпӗ сывӑччӗ, халӗ... Ура ҫине тӑрса санпа юнашар ытакланса утӑттӑм, санпа ӑмӑртмалла чупӑттӑм, санпа урай кашти авӑнмалла ташлӑттӑм. Ҫук ҫав... тем пӑталарӗ... Юрать ачасем пур та.

— Ан кулян, чунӑм, эпӗ пур халӗ, — арӑмӗн пичӗ ҫинчи куҫҫульне чуптуса типӗтрӗ Пантелей. — Чӗрӗлӗн-ха. Ман хӑватпа ура ҫине тӑратӑнах эсӗ, Варвари.

— Тӑрасчӗ те ҫав, анчах... темле ҫав, — ҫӑлӑнӑҫ те-

лейӗпе йӑлкӑшаççӗ чирлӗ хӗрарӑмӑн хӑмӑр куçӗсем. — Ытла нумая тӑсӑлчӗ. Çынсем калаççӗ, упӑшкӑвах пӗтерчӗ сана теççӗ. Ытла асрӗ çав, никама та уяса тӑмарӗ теççӗ. Чиркӳ хуптарчӗ, Усламçӑ Прухӑрӗсене Масар тӑвайккине хӑваласа ячӗ, Киремет çырминче сад ларттарчӗ, Киремет çӑлкуçӗнчен шыв пехлерӗ... тата тем те пӗр калаççӗ.

— Пустуй япала вӑл! — алӑ сулчӗ Пантелей.

— Темле çав, чунӑм. Эс итле. Перун Пименӗ сана, мана та ӗнтӗ, ылханса Шупашкар чиркӗвне кайсах ятарласа кӗлӗ тутарнӑ тет. Пирӗн кил таврашне халӗ те тухатса тем те пӗр килсе пӑрахаççӗ. Шухӑшла-шухӑшла пуç та арканса каять ӗнтӗ. Çавсен ылханӗ те çитрӗ пуль, киремет те тытрӗ пуль тетӗп. Тем парни те парса пӑхрӑмӑр киремете. Юмăç карчӑк та чӗнтӗмӗр. Уссийӗ пурпӗрех çуккӑ-çке, Пантелей.

— Хытӑ шӑннӑ пулас эс, кӗлеткӳне витӗрех илнӗ. Çавӑн хыççӑн аптӑрарӑм тесе çырнӑччӗ. Астӑватӑп.

Варвари сылтӑм аллипе упӑшкин тӗреклӗ хулпуççийӗсене хыпашларӗ, мӑйӑхлӑ питне ачашларӗ.

— Ара, вӗçекен çерçи ӳкетчӗ те... Тарла-тарла çӗр чаватпӑр та кунӗпе каçпа хытӑркаса выртатпӑр. Сӑр тӑрӑхне çитеймерӗ вӑл усал нимӗç, асапне кӑтартса хӑварчӗ. Юрать эп чӗрӗ-ха, вилекенсем те пулчӗç унта... Халь çапах, эсӗ пур та, чун юрланӑ пек. Виç тумлам эрех сыпнипех ӳсӗрӗлсе кайрӑм. Тен, сана курнипе-ши... Эс юрланине хӑçантанпа илтмен. Юрласа пар-ха хӑвӑн юратнӑ юрруна? Колхоз тунӑ çул хӗрлӗ улахра юрланине.

Пантелей пуçне çӗклерӗ, пӗчӗк пӳрт ӑш-чиккине пӑхса çаврӑнчӗ, кӗтесре ларакан çӗтӗк-çатӑк купӑсне асӑрхарӗ, туртӑнса ӑна илчӗ те ӗнӗрсе калама пуçларӗ, уççӑн юрласа ячӗ:

Кӗмӗлтен кӗпер хывтарӑттӑм...

— Пулӗ-ха, пулӗ малашне, пурте пулӗ, Пантелей, халь вӑрçӑ чарӑннӑ, — лӑплантарчӗ арӑмӗ хурланса юрлакан упӑшкине.

— Çавӑншӑн çӗнтертӗмӗр ӗнтӗ, Варвари. Пуçа усар марха. Авӑ ачасем килеççӗ. Эх, ачамсем! Хыçалта чупаканни, пӗчӗкки, Михала пуль-ха.

— Хĕрлĕ кĕпепе-и?
— Аха.
— Апла ҫав чарусăр. Хăвнах хывнă.

Тепĕр кунне яла тухсан правлени патĕнче Пантелей Перун Пименне тĕл пулчĕ. Пимен сухалне каснă, кĕске мăйăх хăварнă. Пит ҫăмартийĕсем самай туртăннă, сăмси ҫумĕпе тарăн йĕрсем палăраççĕ. Куҫĕ пушшех чееленнĕ. Чĕлхи ҫивĕчленнĕ, сĕрсе калаҫнă май кашни сăмахĕ ҫине пыл сĕрнĕ пек наркăмăш хурса пырать.

— Фашист текен нимĕҫне хăй йăвинех леҫсе ятăр пулать апла. Йытă пекех хаяр теççĕ те... Чăнах-и? Куртăн-и хăть пĕрне те пулин ху куҫупа?

— Каккуй йытă патĕнче унта, сирĕнтен пин хут хаяртарах, — кулса ячĕ Пантелей. — Хĕҫпе те турарăм, карабинпа та шĕкĕлчерĕм. Йăвине вара... пурпĕр аркатрăм.

— Эсĕ, ачи, аркатма маçтăр-ха. Ай, маттур. Ха, орден ҫине орден... медалĕсем... Награда валеҫнĕ ҫĕрте пулнă пуль эс...

— Унтах ҫитеймерĕм те, анчах вилĕм валеҫнĕ ҫĕрте пулса савăнтăм вара, Пимен. Фашистсене сутрăм-сутрăм та ăна хама валли хăварма мансах кайнă.

Пимен та чăтаймарĕ, хулăн сассипе урама янратса ячĕ:

— Ха-ха-ха! Ытла та чухăн сутуҫă апла эсĕ. Вилĕмсĕр тăрса юлнă. Ха, уру та, аллу та вырăнтах. Ҫынсем, хăшĕсем, хăрах урасăр, чăлах... Телей тупнă эс вăрҫăра.

— Эсир тата мĕн тупрăр-ши ку вăрҫăра? Иртнинче лайăх хăтăлса юлнăччĕ, — тарăхма пуҫларĕ Пантелей.

Перун Пименĕ тутине чалăштарса йĕрĕнчĕклĕн каларĕ:

— Турă панине. Сирĕн ҫапăҫмалла пулнă. Пирĕн сире тăрантармалла, тумлантармалла пулнă. Хамăр выҫă тăрса юлса йăлтах фронта ăсатса пурăнтăмăр. Мĕн, начар усрарăмăр-им сире унта? Ҫимелли ҫитнĕ, ĕҫмелли ытлашшипех пулнă пуль. Итле, Ҫӳлти Турă кашнинех хăй вырăнне вырнаçтарса тухнине ан ман. Сана хĕҫ тыттарчĕ, мана — ҫурла. Пĕр ĕҫех турăмăр-иҫ. Мĕн, кăмăлсăр-им?

— Пит кăмăллă. Мана Турри шутсăрах хисеплет. Граждан вăрҫинче те, хальхинче те алла хĕҫ тыттарчĕ. Сире, сире... Мана ҫурла тыттарчĕ тесе ан епресе тăр. Ҫурла тытса курман-ха ку таранччен аллуна. Кладовщикре, унта... Лаша таканĕ туртса татмалли арҫынсене, сире, вăрҫă вăхăтĕнче

хĕрарăмсем хушшинче хĕртĕнсе ашкăнма Турă хушнă пуль ĕнтĕ. Пĕлетпĕр-çке! Прухăр мĕнле майпа салтакран çăлăнса юлнине те лайăх пĕлетпĕр. Чулхуларан таврăннă-и-ха вăл?

— Курман-и вара эсĕ ăна? Иртнĕ эрнерех килнĕччĕ-çке. Турă хушнă ĕçех тунă вăл та. Апат-çимĕç базинче ĕçлерĕм тет. Чутах пуççăр юлаттăмччĕ тет. Нимĕç хурчки пăрахса хăварнă кучченеç вĕсен складнех кĕрсе ÿкнĕ тет. Юрать çав вăхăтра вăл хулара пĕр генерал арăмĕн ура тупанне кăтăкласа выртрăм тет. Вăт, пурте эпир пĕр ĕç тунă — вăрçă ĕçĕ. Пире те авă медаль пекки пачĕç. Патшалăх наградиех. Санне те, манне те пĕр япаларанах шăратса тунă пек туйăнать.

— Пĕр металранах теççĕ. Анчах та...

— Пĕлетĕп эсĕ мĕн каласса, — чарчĕ ăна Пимен. — Пире эсĕ эпир вăрçа каяйманнишĕн тĕкесшĕн, хăвăн орден-медаль нумаййипе мухтанасшăн.

— Тĕрĕс мар-им? Тылри, ялти йĕке хÿре эс. Медаль мар сана, ак çакна памалла пулнă та... — мăнă чышкине чăмăртаса ун сăмси умнех тытса кăтартрĕ Пантелей.

Перун Пименĕ куç айĕн пăха-пăха сăмаххисене çупа сĕрнĕ пек сĕрчĕ:

— Вăрçма вĕреннĕ çыннăн ун вăрçасси ĕнтĕ, ала кĕçĕтсех тăрать пуль çав. Çапăçса-тытăçса эсир унта ĕçлеме те маннă, тем. Медаль тенĕрен... Çитĕ-çке пире кунпала та. Тимĕр татăкки хырăм туттиех мар. Патшалăх тăхăнтартнă кителÿ çĕтĕлсе пĕтсен çакса та çÿрес килмĕ-ха ак наградусене. Çăкăр кирлĕ халь, тумтир. Хирĕлсе тăриччен кала, колхозах юлас тетĕн-и?

— Ăçта каятăп ĕнтĕ эпĕ, çĕр çынни. Правление ĕç ыйтма килетĕп.

— Э-э, çаплах пуль. Сĕтел тулли ачу-пăчуна, çемçе кăрманти маткуна пăрахса хăварса каймастăн ĕнтĕ. Вĕсене пурне те ура çине тăратмалла вĕт. Тăвату çул курманни Варварие те. Шăммипе тирĕ анчах юлнă, пичĕ шур çип пирĕ пекех пулса кайнă тенине илтнĕччĕ те. Çÿлти Турă курать çав вăл, пĕлет. Ăна нихçан та ытлах кÿрентерме кирлĕ мар. Пирĕн ĕнтĕ çĕр çинче нуша куракансемшĕн кĕлтăвасси çеç юлать. Турă малашне те çаплах пулăшса пытăр сире, Пантелей...

Ял халăхĕ Турпан йăхĕнчи паттăр çынна чăтăмсăррăн кĕтнĕ иккен. Пантелее каллех председателе суйларĕç. Колхоз хирĕнче çăкăршăн кĕрешесси вăрçă хирĕнче тăшманпа çапăçасси пекех йывăррине туйса тӳсрĕ фронтовик. Пурте йăхтăр-яхтăр, нимĕн те çитмест. Арçын вăйĕ сахал. Патшалăхĕ ыйтать, нумайрах тырă, çĕр улми, аш, сĕт...

Салтакра пĕрле çапăçнă вырăс юлташĕ, подполковник, Турпанова Мускава чĕнчĕ. Вăл грузовик тупса пама шантарать. Лешĕ хушнă пекех хатĕрленсе тухса кайрĕ колхоз хуçи тĕп хулана. Хăйпе пĕрле шофер илчĕ. Пĕр катка пыл, шăрттан, шăратнă çу çул уçрĕç. Вĕр çĕнĕ пек ЗИСпа çиçтерсе çитрĕç Турпановсем яла. Ура çине майĕпен çĕкленекен пĕрлешӳллĕ хуçалăхшăн виçĕ тонна япала турттарма пултаракан автомашина юмахри пек çăлăнăç урапиехчĕ ĕнтĕ. Анчах нумая пымарĕ ку савăнăç. Председателе прокуратурăна чĕнтерчĕç. Колхоз пурлăхне саккунсăр салатнăшăн хупасса хупмарĕç ăна, принуд парса, хăратса сехĕрлентерсе пĕтерчĕç. Кун хыççăн парти райкомĕнчен пырсах председательтен кăларттарчĕç Турпанова.

Эх, мĕн тери пысăк ĕмĕтчĕ Пантелей Павловичăн! Киреметри сада çĕнетесшĕнччĕ. Ферма çурчĕсем çĕнĕрен лартасшăнччĕ. Шкул çурчĕ тума вăрман кастарнăччĕ. Фельдшер пункчĕпе лавкка валли пурасем пураттарнăччĕ. Патшалăхĕ йывăçне татах хытарчĕ. Кирпĕч-пĕрене вырăнне саман ятлă япала килсе кĕчĕ чăваш ялне те. Улăмпа тăм хутăшĕнчен хурăнсăрсем хĕртмен кирпĕч çапма пуçларĕç.

Председательтен кăларнă хыççăн Пантелей колхоз ĕçне кашни кунах хутшăнать. Вĕсем çаврака пысăк шăтăка вĕтетнĕ улăмпа тăм яраççĕ те варринчи юпаран кăкарнă лашасемпе ăна çăраççĕ. Ырхан янаварсем часах ывăнаççĕ, вара арçынсем шăлавар пĕççисене чĕркуççирен çӳлерех тавăрса хăйсем çăрма тытăнаççĕ.

— Тур пулăштăр! — илтĕнчĕ çурăм хыçĕнче паллană хулăн сасă. — Этем чурисене сăвап пултăр.

Çаврăнса пăхрĕ те Пантелей хăйсен çывăхне çитсе тăнă Перун Пименĕпе Усламçă Прухăрне курчĕ.

— Хи-хи-хи! — кулса ячĕ Прухăр. — Ай лайăх япаларан тăватăр та коммунизм керменне. Саман самани те çитрĕ пать. Салам пултăр пурне те!

Пантелей чĕнмерĕ, малалла çăрчĕ. Ĕççĕр аптăранă-

скерсем кунти çынсем тарăхса кăшкăрса пăрахнипе аяккалла шурĕç.

— Çав çĕлен-калтасем пĕтерчĕç сана. Çавсемех çăхав янă прокуратурăна машина пирки...

Миçе хутчен илтмен-ши Турпанов çав хĕрхенӳ сăмахĕсене? Акă халĕ те кĕчĕç вĕсем ун хăлхине...

— Çавсемех...

Пĕр çулхине уяр çанталăк çĕре-шыва типĕтсе лартрĕ. Уйри тырă-пулă хĕвел айĕнче çунчĕ. Аптăраса çитнĕ халăх авалхи йăлана аса илчĕ. Киремет çырминче çумăр чӳкĕ тума Перун Пименĕ пуп тумне тăхăнсах тухрĕ. Килĕрен çу, сĕт, кĕрпе, çăкăр пуçтарчĕç. Çырма хĕрринче така хуранĕпе пĕçерчĕç те пăттине кашнинех валеçрĕç. Пимен чӳк кĕлли турĕ, ун хыççăн Киремет çăлĕнчен ăснă «çумăр чӳкĕн» шывĕпе çывăхра тăракансене сирпĕтрĕ, вара аллине хĕрес тытса пĕвене утса кĕрсе кайрĕ. Пурте ун хыççăн шампăлтатрĕç. Кĕменнисене шыва тыта-тыта печĕç. Çапла киремечĕ те, вырăс турри те арпашăнса кайрĕç кунта.

«Çырлах, вутăш, çырлах! Турă пире çумăр парах, тархасшăн, парах!» — янăрать çырма туллин Перунов сасси.

«Илья-пророк çумăр çутарать! Илья-пророк тырăллă тăвать!» — тесе çухăраççĕ çыннисем.

Йĕп-йĕпе исленсе пĕтнĕ ял халăхĕ хавас кăмăлпа саланчĕ. Каçалапа чăнах та анăç енче пĕлĕт хуралчĕ, йăлт-ялт çиççе, хăлтăртатса-кĕмсĕртетсе хăй çывхарни çинчен аякранах пĕлтерчĕ çумăр. Çӳпçерен тăкнă пек тăкрĕ, аслати çĕре кисретрĕ. Тăрнст-т! тутарчĕ те çывăхрах, Киремет йывăççи çумне лартнă Пантелей хурăнĕ çурăлса анчĕ.

— Ах, хăратăп-çке эп, Пантелей, — пăшăлтатрĕ типнĕ тутипе Варвари. — Эс вăрçăра чухне Киремет çăлкуçне аçа çапнăччĕ. Халь хурăна... Ытла пархатарсăр вырăнта пурăнатпăр-çке эпир...

— Ун пек мар-ха, Варвари, инкек-синкекĕ вăл пĕртте киреметпе çыхăнман. Хамăрăн аслă асатте чунĕ пире тытас çук. Эпир ăна усал туман, яланах ырăпа çеç асăнатпăр-иç.

— Пуç та арканса каять ĕнтĕ. Хамăн та ырлăх пулмарĕ те, санăн та хурлăхĕ пуçу çине пăрлă çумăр пекех çуса тăчĕ те. Тем те шухăшлаттарать... Вилĕмĕ те килмест-çке... Тем чухлĕ кĕлтăватăп... Сире нушалантарса пурнап çав. Хĕле кĕрсен çирĕм çул çитет те эп çак усал чир тыткăнне лекни...

Тата çирĕм çул пурăнчĕ Вар Варсунĕн Варварийĕ. Сакăр вун пĕрремĕш çулхи çуркунне тин куçĕсене хупрĕ.

Масартан Турпан Пантелейĕ чи юлашкинчен тухрĕ. Тарăн шухăша путса пычĕ çӳллĕ, пĕкĕрĕлнĕ, кăвакарнă сухаллă ватă. Ял çулĕ çине пăраннă май çамрăклăх вăхăчĕ аса килчĕ. Шăпах çак вырăнта тĕл пулнăччĕ вăл Перун Пименĕ катаччи чуптарма лартса тухнă Варварие. Хĕре чарусăр аллинчен туртса илнĕччĕ... Акă халĕ те...

Тусан мăкăрлантарса килекен çăмăл автомашина тăпах чарăнчĕ. Алăкран Пимен йăраланса тухрĕ.

— Ăсатрăр апла. Йывăр тăпри çăмăл пултăр.

— Тавтапуç.

— Çылăхлă йăх сирĕн, Пантелей. Турпанран пуçласа — ачусем таранах. Киремет йăхĕ. Пурнăç йĕркине хирĕçле пыратăр. Турă панă телее таптатăр. Ял илемĕпе — Варварипе те — ырă кураймарăн. Ахалех сая ятăн. Эх, манпа пурăннă пулсан-и вăл, нихçан нимĕнле киремет те тытмастчĕ ăна. Эпĕ çеç мар, Турă та каçармасть сана, антихриста. Хăвна та хăçан та пулин хутлатса лартĕ-ха. Тĕнче карти ăшĕнче унта пурте хăй вырăнĕнче. Юрĕ, Шупашкара çитсен ывăлăм ĕçлекен аслă чиркӳре çурта лартăп Варваришĕн.

— Ан чăрманăр. Чунĕ ун пурпĕрех санра мар — манрах. Çирĕм пĕрремĕш çулта ак çак çул çинче тăрантасран анса тарнăранпах манпа юнашар утать. Курмастăн-им, халĕ те çумрах-çке. Айта, вĕçтер хăвăн çулупа, Илья-пророк.

— Эх, Пантелей — Тур панă телей... Чăнах та пур иккен Турри. Ман сăмаха итлерĕ. Пачĕ сана телей. Хĕрĕх çул савăнтарчĕ арăмран.

— Кай кунтан ман çул çинчен! Тасал! Турă панă-и мана телей, халăх панă-и... Сан мĕн ĕç пур!

Руль умĕнче ларакан ывăлĕ вăраммăн кăшкăртсан тин Перун Пименĕ мăкăртатса уйрăлчĕ.

— Аçа çапманскер... Киремет хутлатса лартманскер...

Киремет çырми хăй пурнăçĕпе пурăнать, хăй сывлăшĕпе сывлать. Атă айне пулнă чечек пуçне çĕклерĕ. Айлăмра уçă сывлăш капланса йăванать. Кăшт тăварах тулса ларнă Киремет çăлкуçĕ тапса тухасшăн тапăлтатать. Этем кĕлеткине лачака хăй ăшне хытăрах та хытăрах туртать. Турпан Пантелейĕ мекĕрленсе тепĕр хут кăшкăрчĕ:

— Эй, пулăшакан пур-ши!

Тĕттĕм тӳпене çутă çапса анăç енче çиçĕм ялтлатрĕ. Ватă çын кăщкăрнине илтнĕ пекех, кĕç сасси тӳпе тăрăх вĕçсе килчĕ: халтăр-р... Хăй тĕнчепе, тĕнче унпа калаçнăнах туйăнчĕ çак самантра Пантелее. Хăлхара çаплах чуччу, хут купăс, çамрăксен сасси. Варварипе иккĕшĕ çур çĕрччен чуччу ярăннăччĕ тахçан... Тахçан... Миçе çул çук ĕнтĕ вăл? Саккăр çеç-и. Нумай та мар пек, анчах Пантелейшĕн... ĕмĕр тăршшĕ пекех. Юлашки вăхăтра вăл арăмне ялан садра курать. Варвари улмуççисем хушшинче чупать пек. Кулать, аллинчи улмипе илĕртет. Хăй патне чĕнет. Пантелей çумĕнчех Пименпа Прухăр та аллисене хĕрлĕ улма еннелле тăснă...

Вăранса каять те Пантелей, аптăранă енне, арăмĕ çăтмахах лекнĕ пуль тесе те шухăшласа илет. Паян пушшех куç умĕнчен каймасть вăл. Çакăнта, хăйсем лартнă садрах, йăпанса çӳрет, Пантелей юррине юрлать:

Ултă куçлă çăлсем таврашне
Ултă улма йывăççи лартăттăм...

Хăй ултă ача çуратса ӳстерсе хăварма пултарнине пĕлтерет-ши ку? Пурте сывах, пурте çемьеллĕ. Пĕри тĕп килте юлчĕ, ыттисем саланчĕç. Кĕçĕнни, Михали, ытларах ăша хыптарчĕ. Райсовет хуçи вăл. Виçĕм кун çеç колхозра пулчĕ. Тĕлĕнтерсех пăрахрĕ. Унăн ачи, коммунист, район пуçлăхĕсенчен пĕри, ялта чиркӳ уçтарчĕ. Халăх ыйтать имĕш. Община йĕркеленĕ тет. Перун Пименĕн Мирунĕ пачăшка килчĕ. Çĕнĕрен Культура керменĕ лартрĕç те клуб тăррине пăсрĕç. Ĕлĕкхи пек, икĕ çавракa пуçлă чиркӳ капланчĕ Хурăнсăр варринче.

— Куртăн-и, каллех уçăлчĕ чиркӳ! — пуçне каçăртса пăха-пăха çухăрчĕ Усламçă Прухăрĕ. — Асат Петĕрĕпе иксĕр мана вăрçăччен Бах композитор музыкине каласа пĕтерме памарăр. Хальхинче чараймăр! Асат Петĕрĕ тахçанах хăйĕнне тупрĕ, леш тĕнчере тамăкра айланать пульха. Сан... сан та влаç çуккă тек. Виличчен пурпĕр янраттарса юлатăп чиркӳ чанĕсене. Çав сасса илтнипе чăтаймасăр чĕрӳ çурăлса кайтăр мар-и сан...

Тĕнче тепĕр майлă çаврăнса кайнă пекех туйăнать Пантелей Павловича. Хăй çулĕпе тĕп-тĕрĕс пыракан унăн кĕçĕн

ывăлĕ чиркӳ уçтарнипех çырлахмасть, колхоза та салатма ирĕк парать. Пĕрисем фермăна, теприсем бригадăна арендăна илеççĕ. Масар тăвайккинчи пĕтĕм çĕре Усламçă Макарĕ тара илнĕ...

Пухура хытах каларĕ çав Турпан Пантелейĕ:

— Ак çак алăпа тунă колхоза салатма памастпăр! Çын çитмен çĕрте, тен, кирлех те пуль вăл, аренда тени. Анчах та пирĕн вара — ял тулли халăх. Ма мăшкăллатăр вĕсенчен! Ма йĕркеллĕ ĕçлеттерместĕр вĕсене? Ма çав сысна ферминчен тислĕк шывĕ юхтарма чармастăр?! Куçпа курсах навус ăшне путмалла мар ĕнтĕ. Колхозах вăйлатмалла. Вăл пирĕн халăх тĕрекĕ пулнă. Кооператор, арендатор... хăйшĕн, хăйĕн хырăмĕшĕн, хăйĕн интересĕшĕн çеç çунать вăл. Уйăхне пиншер, çĕр пиншер, миллионшар тенкĕ майлаштарассишĕн кăна хĕмленеççĕ вĕсем. Хак ӳстерсе, халăх шучĕпе пуясшăн. Хаçачĕ-журналĕ, телевидени-радиовĕ вĕçĕмсĕр çав укçа хурчĕсене чапа кăларассишĕн ĕрлешет. Эх, юратнă тăван ялсем, коллективизм вăйне, патриотизм хăватне пĕтерсе хамăрăн ушкăнлăх кăшăлне аркататпăр вĕт. Усламçăсем пуç пулса тăрсан мĕн курăпăр-ха. Вĕсен тарçи пулса тăрăпăр-ши? Çавăрттарар-ха пуç мимисене лайăхрах...

— Эсир пурнăçран юлнă, Пантелей Павлович. Сирĕн вăхăтри мар халь, Пантелей мучи. Эсир ятарласа парти программи йышăнсах коммунизм сĕмлĕхĕ пеккине те туса пăхрăр, анчах халăха ытлă-çитлĕ пурнăç туса параймарăр. Сирĕн хут коммунизмĕнчен макулатура купи çеç тăрса юлчĕ. Эпир халь революци тăватпăр, пурнăçа çĕнететпĕр. Кашни çыннăн çĕр пулмалла.

Колхоз председателĕ, Асат Петĕрĕн ачи, Çимун, çапла лĕпĕртетни ăна тарăхтарсах ячĕ. Нивушлĕ вара вĕсем çĕнĕ пурнăç туман. Уншăн икĕ вăрçăра çапăçнă — çĕнтернĕ. Колхоз тунă — ял халăхне çĕкленĕ. Пĕтĕм чун-чĕрене парти ĕçĕшĕн панă. Акă халĕ вĕсене, ватă коммунистсене, пурнăç обозĕнче хăварасшăн. Ай-яй, сарă тутасем, çара кутланса сцена çинче сикнипех, урса кайса шуйттан ташши ташланипех, пыра хыртарса ухмаха тухса каясла микрофон умĕнче мĕкĕрнипех, пĕтĕм йăхтăр-яхтăра халăх пуçĕ тăрне хăпартса лартнипех пулмĕ-ха йĕрке. Чи малтан çирĕплĕх, ăнланулăх, идейăлăх кирлĕ. Йĕркелĕх кирлĕ. Тăрăшса ĕçлес

вырӑнне кунӗн-ҫӗрӗн пухӑнса шавласа ҫухӑрнипе ҫӗнетӳ туни те сывлӑша вӗҫме пултарать. Улшӑну, ҫӗнетӳ... Тӗнче те, этемлӗх те, уйрӑм ҫын та вӑл ялан улшӑнура — вӗҫӗмсӗр ҫӗнӗлӗхре. Пӗри ватӑлать — пӗтет, тепри аталанать — ҫӗнелет. Паянхи йывӑрлӑх, паллах, пирӗн шӑл витмелли япала мар. Сирӗн, ҫамрӑксен, малалла ямалла эпир ку таранччен мӗн туса панине. Унчченхине пылчӑка таптамалла мар, ҫак тапхӑртан кӑна ҫӗнӗ пурнӑҫ тума тытӑнмалла мар. Мӗн пуррипе ҫырлахса эпир мӗн тунине ҫӗнетмелле. Анчах... ытла вӗҫӗмсӗр шӑл йӗрместӗрши эсир, ытла ҫав тери мухтанса шавламастӑр-ши, ытла ҫӑмӑлттайла улӑштарасшӑн мар-ши эсир халӑх пурнӑҫне? Тем, ӗрӗхме пуҫланӑ ӑйӑр тӑвайккирен ӳхӗрсе хӑпарса каяймасть-ха... Ай-яй, пире обозра хӑварасшӑн. Туса пӑхӑр-ха хӑвӑр эпир ку таранччен мӗн-мӗн тунине... Мӗн тухӗ...

Пухуран тылӑ витӗр тылласа кӑларнӑ пек ҫемҫелсе тухрӗ Турпанов. Хытӑ пӑлханнипе унӑн кӗлетки сив чир силлесе пӑрахнӑ чухнехилле чӗтрекен пулчӗ, ура вӑйӗ лаштӑрах кайрӗ. Киремет ҫырмине ансан ҫавӑнпах пуль яка пӗрене ҫинче тытӑнса тӑраймарӗ. «Ах, ку шуҫланчӑк пурнӑҫа...» — тесе калама ҫеҫ ӗлкӗрчӗ.

Вырт халӗ шӑпланса. Чуччу та вӑхӑт шутлама пӑрахрӗ, хут купӑс та макӑрмасть, яш-кӗрӗм те шӑплӑх кӗтесӗсене саланнӑ пуль. Ҫиҫӗм ҫеҫ ҫуттӑнрах та уҫӑмлӑрах ялтлатать, аслатиййӗ хыттӑнраххӑн та хӑрушӑраххӑн ахӑрса тӗнчене кисретет... Ҫав шавра тахҫан ҫамрӑк чухне хӑлхана кӗрсе юлнӑ кӗмӗл сасӑ уҫҫӑнах илтӗнсе кайрӗ: чан-н! Чӑн-чан-н! Чӑнкӑл-л-чанкӑл-л-чӑнкӑл-л-чан-н!!!

Михаил Пантелеевич Турпанов Шупашкартан нихҫан та ырӑ кӑмӑл ҫӗклемӗпе таврӑнман. Кам та пулин ҫуната хуҫатех. Ытла тӗлӗнмелле-ҫке Чӑваш Республикине ертсе пыракан хӑш-пӗр пуҫлӑхсенчен. Этемле пуплес чухне пӗрмай йытӑлла вӗреҫҫӗ. Вырӑнӗсем ҫавӑн пек-ши? Йӗрки ҫавнашкал-ши? Тараватлӑн, шӑкӑл-шӑкӑл, уҫӑмлӑн калаҫсан хавхалану такам чӗрине те ӑшӑтса ҫунатлантарӗ. Пыра хыртарса, мекӗрленсе ҫухӑрнине итленӗ хыҫҫӑн, паллах, тарӑху туйӑмӗ ҫеҫ вӑйланать, курайманлӑх сӗмӗ ҫуралать. Паян та...

Аслă Канаш сессийĕнче чиперех итлесе ларчĕ. Докладра вĕсене икĕ хутчен ырласа асăнчĕç.

Ял нуши-терчĕшĕн çунсах хумлă-хумлă хура-хăмăр çăра çӳçĕ сăрланă пек кăвакарса ларчĕ ĕнтĕ, çаврака çирĕп пит çăмартисенче йĕрсем тарăнланчĕç, нерв системи те хушăран ахальтенех алхасма хăтланмасть пуль. Ял çынни çĕр çинче хуçа пулса савăнтăр тырă-пулă ӳстерсе, аш-какай туса халăха тăрантартăр, çут çанталăк панă ырлăхпа телей курса пурăнтăр — пĕртен-пĕр çак тĕллевшĕн вăй-хала хĕрхенмесĕр, вăхăта шеллемесĕр ĕçлет Михаил Турпанов райсовет пуçлăхĕнче. Ялсене асфальтлă çулпа çыхăнтарассишĕнех ĕмĕрне вунă çул чакарчĕ пуль. Пĕр йĕрпе тăсас пулсассăн çав çулсене, шăпах Шупашкара кайса килмелĕх — ик çĕр аллă çухрăм. Кашни колхозра пĕр-пĕр завод е фабрика цехĕ уçассишĕн хăшкăлнине аса та илес килмест унăн. Мĕн чухлĕ пуçлăхпа тытăçман-ши? Хуланалла туртăнакан çамрăксене кăштах тăллама пулăшаççĕ-ха вĕсем. Çапах ялшăнах, колхозшăнах хыпса çунмаççĕ-çке предприяти хуçисем. Цех уçнипех çырлахаççĕ. Социаллă аталану çулне нихăшĕ те уçасшăн мар. Ялти йӳнĕ ĕç вăйĕ вĕсемшĕн мĕн ырлăх мар! Турпанов вара çав заводсемпе фабрикăсен укçи-тенкипе ялсенче клубсем, больницăсем, ача сачĕсем, магазинсем тутарасшăн, çулсем юсаттарасшăн. Тĕрĕссипе, халĕ вĕсем ял çыннисене колхозран шутсăр çăмăл майпа туртса илчĕç. Çирĕп планпа ĕçлекен рабочи колхоза пурпĕрех пулăшаймасть-çке. Хĕрсĕр е каччăсăр тăрса юлнă хăш-пĕр ялсемшĕн çеç усăллă пек çак йĕрке. Михаил Пантелеевич шучĕпе, ял индустрине урăхларах аталантармалла. Хресчен хăй çĕрĕ çинче çитĕнтернĕ çимĕçне сутма хатĕрлесе çитертĕр. Консерв цехĕсем, ытти пĕчĕк заводсем лартмалла, тĕрлĕрен артельсем уçмалла. Хаклă апат-çимĕçе пĕтĕмпех хулана ăсатса çуррине çĕртсе яма, юхăнтарма памалла мар. Коопераци юхăмĕпе аренда хутшăнăвĕсем вăй илнĕ тапхăрта шăпах ĕнтĕ пĕчĕк предприятисем ытларах усă пама кирлĕ пек. Вĕсем хăйсем çапла тăвасшăн та. Районта патока завочĕ пур. Вăл колхоз территорийĕнче. Мĕншĕн ялах памалла мар ăна? Кăçалтанпа виçĕ хуçалăх çыннисем çĕре, техникăна, пурлăха тара илчĕç. Патшалăх пулăшнипе кăна айланкаласа пыраканскерсем, малашне хăйсен вăйĕпе çăкăрлă пуласшăн.

Анчах тӗп хула пӳлӗмӗсенче тыр-пул ӳстерекен ҫӗн палкавҫӑсем ял хуҫалӑхне пӑтратмалли ҫӗнӗ йышши алтӑр шутласа тупнӑ. Ҫав алтӑрпа пӑтратса вӗсем колхоз-совхоз хуранӗн тӗпӗнчи тутлӑ ҫӑмаха ытларах ӑсса илесшӗн курӑнать. Экономика, укҫа, хӑй хаклӑх шавне республика ҫийӗн ҫил-тӑманла ҫӗклесе, чылай хуҫалӑха хӑйсен шантару ылтӑнӗн хӑйӑрӗпе шӑлса лартма та ӗлкӗрнӗ. «Кукуруза», «Рапс», «Ҫӗр улми», «Ясмӑк», «Чӗкӗнтӗр», «Купӑста», «Ҫырла», «Кӑмпа», «Вӑрлӑх» ятлӑ наукӑпа производство тытӑмне туса хунӑ. Вӗсене вун-вун пилӗкшер ученӑй ертсе пырать-мӗн. Колхозсемпе совхозсен ҫав тытӑмӑн кантурне укҫа хывса тӑмалла. Районти агрокомбината та пар, хуҫалӑх расчечӗпе ӗҫлекеннисене те... Ял ҫыннин каллех кӗрӗк арки йӑваласа лармалла пулать-и?

Пӗр пуҫлӑ бюрократи ҫуртне аркатмасӑрах юнашар ҫӗн палкавҫӑсен вунӑ пуҫлӑ керменӗ ҫӗкленчӗ. Ай хӑпартаҫҫӗ ял хуҫалӑхне, ай вӗҫтереҫҫӗ ҫӳлелле... Ҫӗнӗрен-ҫӗнӗ алтӑр, ҫӗнӗрен-ҫӗнӗ кермен тупӑнать хресченшӗн. Хутаҫӗ ҫеҫ тулмасть унӑн, хытса, ҫӗтӗлсе пырать.

Ҫак ыйтусем пирки шухӑшласа тӑнран каять Турпанов. Чӑтаймасть те, канашлу-семинарта е пленум-пухура пулемет пек тӑкӑртаттарса илет. Ҫук, паян калаҫаймарӗ вӑл, сӑмах ыйтнӑччӗ, черечӗ ҫитмерӗ.

Сесси хыҫҫӑн, яланхи пек, «пӗр виҫ минутлӑх» тытса хӑварнӑ «тӑнкӑрукра» Чӑваш Ен премьерӗн заместителӗ Хушкин ӑна бюрократ пушшипе питрен сисӗмлех «ҫатлаттарчӗ».

— Пирӗн хисеплӗ Михаил Пантелеевич район канашне ертсе пыракансенчен чи ватти, вунӑ ҫул ытла тӑрмашать ӗнтӗ, ҫапах эпир мӗн-мӗн хушнине ним пӑркаланса тӑмасӑр тӳрех итлеме вӗренсе ҫитеймерӗ-ха. Ҫӗнӗлӗх тапхӑрӗ те, революцилле шухӑш улшӑнӑвӗ те витересшӗн мар унӑн хулӑн тирне. Акӑ эпир ял хуҫалӑхне нихҫан пулман ҫӗнӗлӗхсем кӗртсе пыма тӑрӑшатпӑр. Вӑл пире ура хурать. Хӑйсен районӗнчи пӗр хуҫалӑха та наукӑпа производство системисене кӗрттермерӗ. Эпир ҫав вӑхӑтрах татах та ҫӗнӗлӗхсем йӗркелесшӗн, сӑмахран — «Колорадо нӑрри» пӗрлешӳ. Мускав ученӑйӗсене чӗнесшӗн. Пӗтӗм малашлӑх халӗ пирӗн — ҫав енче кӑна. Ял хуҫалӑхне наука шайӗнче ертсе пыма пӗлмелле ӑна...

Чӑтса пулмарӗ, каҫару ыйтсах сиксе тӑчӗ те Турпанов хӑвӑрт-хӑвӑрт каласа хучӗ:

— Ҫынна вӗрентме питӗ лайӑх. Пӗрре колхоза е района кайса хӑвӑрӑн туса пӑхасчӗ мӗн те пулин. Институт пӗтернӗренпех ҫӗр ҫинче чаваланатпӑр-ха эпир, эсир вара... практика вӑхӑтӗнчисӗр пуҫне... ялта ӗҫлесе курман. Комсомол, парти, советсен ӗҫӗ... Ҫӗнӗлӗх тетӗр. Ҫапла, пурнӑҫ тытӑмӗ питӗ меллӗ пулса пырать сирӗн — вӗрентӳ йӗрки. Ман сӗнӳ пур. «Колорадо нӑрри» пӗрлешӳ тӑватпӑр терӗр. Ку питӗ лайӑх пек. Чӑваш халӑхне сӑтӑрҫӑ нушинчен хӑтармалла. Ертсе пыма килӗшетӗр-и ҫавна хӑвӑр? Эсир ҫапах та — наука кандидачӗ, министр пек шутланса тӑратӑр. Вӑт, пулса пӑхӑр-ха пӗрре нӑрӑ министрӗ, пӗтерсе тӗп тума пулӑшӑр-ха хресчене ҫав тӑшмана, ҫавӑн чухне вара эсир чӑн-чӑн ял хуҫалӑх паттӑрӗ пулӑр. Атту пӳлӗмрен тухмасӑрах виҫӗ орден, икӗ медаль илтӗр: пилӗк ҫуллӑхсене ӑнӑҫлӑ вӗҫлессишӗн те, хӗллехи тапхӑрта выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем туса илессипе паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн та...

Премьер заместителӗ ҫакӑн хыҫҫӑн хӗремесленсе кайсах шалкӑм ҫумӑрӗ тӑкрӗ Михаил Пантелеевич пуҫӗ ҫине, чӗринчен тӗллесех наркӑмӑшлӑ сӑнӑсем печӗ.

Питӗ пӑлхануллӑ иртрӗ Турпановшӑн виҫӗ минутлӑх пӗчӗк канашлу. Ун хыҫҫӑн хура «Волгӑна» ларчӗ те вӑл Шупашкартан такам хӑваланӑ пек ҫӗмренле тухса вӗҫтерчӗ.

Виҫҫӗмӗш ҫул ӗнтӗ вӑл шоферсӑр пурӑнать. Ҫавна май ӗҫтӑвкомра пӗр ҫын чакарчӗ. Пай пуҫлӑхӗсене кӑна мар, кантурта ӗҫлекенсене пурне те тенӗ пекех машинӑпа чупма вӗрентесшӗн, шоферсен курсне ҫӳретсе вӗсене правасем илтерет. Шутласан, тӗлӗнет вӑл, Шупашкарта кӑна мӗн чухлӗ личнӑй шофер. Пысӑк пуҫлӑхсен арӑмӗсем, амӑшӗсем-хунямисем, ачисем, мӑнукӗсем ҫавнашкал личнӑй шоферпа усӑ кураҫҫӗ. Парти обкомӗн пӗрремӗш секретарӗ валли пилӗк ҫӑмӑл автомашина уйӑрнӑ, вӗсемпе виҫӗ шофер чупать. Черетпе. Пӗри ҫулра чухне иккӗшӗ картла ҫапса лараҫҫӗ. Аслӑ Канашра та ҫавӑн пекех. Премьер заместителӗ патӗнче миҫе шофер тарҫӑра пулманши? Патшалӑх укҫине, халӑх укҫине бюрократсем ҫапла хаклаҫҫӗ — хӑйсемшӗн хаклаҫҫӗ.

Машинӑна вӑл ҫӑмӑллӑн тытса пырать. Сессири хӗрӳ

калаçу, премьер заместителĕ лĕпĕртетни тата иртнинче тăван килĕнче пулни хутăшса пуçра пăтранчĕç.

— Эсир тĕрĕс мар ĕçлетĕр-ши, ывăлăм, е эпир ĕлĕкхи пек чаваланма манса кайрăмăр çак çĕр çинче, йăлтах аптрамалла, — куçран витĕр пăхса ытарлăн каларĕ ун чухне ашшĕ, Пантелей Павлович. — Кĕçех тăхăр вунна çитетĕп. Курманни юлмарĕ пуль. Паянхи кун та ытлашши хĕпĕртесех сикмелли çук. Хаçатпа радио шав çĕклесен те... халăх кăмăлĕ хуçăкрах. Уçă мар. Тем çитмест. Кĕрхи нӳрĕ çанталăк пек.

Шоферта ĕçлекен пиччĕшĕ машинине кил умне тăратса пӳрте васкаса кĕчĕ те ашшĕн сăмахне тăп чарăнсах итлесе тăчĕ, вара шăллĕ хуравлама ĕлкĕриччен шакăртаттарса хучĕ:

— Мĕн вăлтмалли унта? Эпĕр айăплă-и? Эпĕр, хушсан, çӳлтен чип-чипер йĕркелесе пырсан, тем тума та хатĕр. Алăра пĕр ĕç пирĕн. Эсир вара... Ан çиллен те, шăллăм, ытла улпутланса кайрĕç пуçлăхсем, халăхран уйрăлчĕç, халăх шучĕпе пуйма пуçларĕç. Халĕ те, çĕнетӳ вăхăтĕнче те, çав-çавах-çке. Хуçа пулнă та — пуçа каçăртнă. Пуçне хăйĕнне арпа çеç тултарнă-ха — хывăх вĕçтерет. Хывăхпа хырăм тăранать-и? Хăйсем пĕрмаях шăлĕсене йĕреççĕ. Шăлйĕрен вăл, тем тесен те, çăмăлттай çын. Унашкалли яланах хăй халăхпа пĕрле пулнă пек, халăхшăн тăрăшнă пек кăтартать, кут хыçĕнче вара... хăйшĕн, хăйĕн çемйишĕн, хăйĕн тăванĕ — юлташĕшĕн çеç тăрмашать. Хăйсене — тĕшши, халăха — хывăхĕ. Эх, пирĕн Вăрнар тăрăхĕ пĕтĕм Чăвашĕпе кĕрленĕ вĕт, атте, хăй вăхăтĕнче!

— Çапла пулмасăр. Вăрçăччenex ура çине тăнăччĕ... Халĕ вара ӳкес пек сулланатпăр...

— Районĕ те, колхозĕ те пирĕн хӳрене юлчĕç. Йăлтах пуçпа ĕçлеме пĕлмен пуçлăхсем пĕтереççĕ. Патшалăхĕ укçине лавĕ-лавĕпе тăкать пирĕншĕн, эпир вара... Паянхи çак пăтăрмахшăн эсĕ те айăплă, шăллăм, эсĕ те...

Михаил Пантелеевич пиччĕшĕпе ашшĕне тавăрса каламалли витĕмлĕ сăмах шырарĕ, пуç «хултăркăчне» çавăрттарчĕ-çавăрттарчĕ те кулса ячĕ:

— Ку сăмахпа хырăм тăранмĕ. Сĕтел хушшине ларарха часрах. Атту иртенпе çăвара çăкăр тĕпренчĕкĕ яман. Тӳрех семинартан. Канашлуран канашлăва çеç ярăнса

çӳретпĕр. Агропром комитечĕ пире эртелпе пухса пĕрмай çаран çулма, тырă вырма, тислĕк тăкма, юр тытма тата тем тума та вĕрентет. Паян хамăр яла авă пӳрт тума вĕренмешкĕн килтĕмĕр. Пĕтĕм республикипех. Мĕнле пек, э? Эсĕ, пичи, мана мар, ав çавсене, шупашкарсене, ятла.

— Эп сире пĕрлех пушăпа çатлаттаратăп, — пиччĕшĕ аллисене çуса шăллĕпе юнашар сĕтел хушшине хăвăрт вырнаçрĕ, арăмĕ лартса панă турилккене ун умнерех шутарчĕ.

— Этем çăкăрпа çеç тутă мар тенине те тахçантанпах пĕлетпĕр ĕнтĕ, — кăххăмлатса илчĕ çав хушăра ашшĕ. — Тĕрĕс, канăçлăх та, чун кантармăш илем-силем те кирлĕ çынна хăй вăхăтĕнче. Анчах чи малтан... çынна, эппин, çăкăр-тăварах, аш-пăшах кирлĕ. Пурте ав тӳрех алла кашăк тытасшăн. Çăкăр пур — пурнăç пур. Çăкăр çук та — эс ху та çук тĕнчере. Хамăр хырăма тăрантармалăх та туса илейместпĕр ăна, пурнăç пуçламăшне, ылтăнпа улăштарса та ют çĕртен сĕтĕретпĕр. Намăс мар-и? Эх, тем çăраççĕ, тем пăтратаççĕ, тем эксперименчĕсем тăваççĕ ял хуçалăхĕнче.

— Çук, шăллăм, улшăнмасть лайăх еннелле пурнăç, хресченĕн те, рабочин те. Акă тутанса пăх-ха çак кăлпассие. Шупашкарта черет тăрса туянтăм паян. Пĕрер-икшер татăк лекет ĕнтĕ пире. Кĕпĕртеттерсе ярăпăр та, алю, ыран каллех туян. Мĕнпе? Çĕр грамм кăлпассилĕх ĕçлесе илеетĕп-и-ха кунне е ĕçлесе те илейместĕп. Аш-пăш çеç мар, стройматериалĕ те — пурте капашсăр хаклă пирĕншĕн, ял çыннишĕн, укçа çитмен çыншăн. Мăнтарăн хула çыннисем те «хут татăккипе» тăранса пурăнаççĕ. Ашĕ, кăлпассийĕ, сахăрĕ, кĕпе-йĕм çумалли порошокĕ, супăнĕ, сигаречĕ, спички, тăварĕ — талонпа. Кĕçех çак сывлăша сывлама та, çак çĕр çине пусма та талон кирлĕ пулать пуль, тупата. Кам айăплă-ши уншăн?

Пиччĕшĕпе ашшĕн сăмахĕсем Михаил Пантелеевичăн чĕрине йĕппе тирнĕ пекех ыраттарчĕç. Ылтăн хакĕпе танлашакан кăлпасси татăкĕ те пыра ларчĕ. Район пуçлăхĕçке вăл. Апла пулсан çĕнетӳ тапхăрĕн паллисем район совечĕн ĕçĕнче халăха савăнтарма пултараймаççĕ-ха.

Тăван Хурăнсăрта кăна мар, районти е республикăри çĕршер ялта пулса иртме пултарать кунашкал калаçу. «Кам

айăплă-ши уншăн?» текен ыйту ăна çеç мар, ытти пуçлăхсене те, çав шутра Чăваш Ен премьерĕн заместительне те, такам та тӳрремĕнех пама пултарать. Ку калаçу мĕншĕн аса килчĕ-ха? Ахальтен мар. Тĕрĕс калаçу ку, пурнăç калаçăвĕ. Çавăнпах пуль куçранах каларĕç ăна. Çĕршыв пăтранăвĕпе аталанăвĕнче вăл чăнах та ку таранччен ял çынни умĕнчи парăма татайман-ха.

Çак шухăш ăна ялалла туртрĕ. Шоссерен пăрănса Хурăнсăра тӳрĕрен тухма шутларĕ вăл. Каллех ашшĕпе, пиччĕшĕпе чун каниччен пуплес килчĕ унăн. Калаçмалли вара нумай. Хăйсен ял канашĕн сессийĕнче пулса иртнĕ тавлашу та асран каймасть.

Патшалăх çĕрĕ советсен аллинче пултăр. Ял канашĕ вара ăна усă курма колхоза патăр, усă курас текен çынсене арендăна патăр, туянас текенсене — суттăр. Ĕмĕрлĕхе. Çĕр çинче çуралнă çын çĕр хуçи пултăр. Халăхра амалнă çак шухăша хурăнсăрсем те ăнланнă пек. Анчах... пурте пĕрешкел мар. Унăн ашшех урапине урăхла чуптарать.

— Пилĕк çуллăха, вунă-аллă çуллăха çĕр каса-каса илесшĕн халь хăш-пĕр пуçтах çынсем, — тет вăл. — Нумай кирлĕ вĕсене. Ыттисенчен ытларах. Пуян пурăнасшăн. Укçа миххипе вылясшăн. Усламçă Прухăрĕн ывăлĕ Макар та авă ял çĕрĕ çине кĕлеткипех хăпарса выртасшăн. Масар тăвайккинчи аллă гектара алла çавăрса та илчĕ. Вунă çул хушши пуять те ĕнтĕ унпала, кайран пăрахать. Çапла вакласа пĕтерĕпĕр-ши вара эпир вăтăрмĕш çулсенче пĕр çĕре пуçтарнă, халĕ лайăх пусă çаврăнăшĕ туса çитернĕ колхоз çĕрне? Нивушлĕ пуçа каялла лартрĕç пирĕнне? Малалла пăхса мар, суккăр куçпа каялла пăхса утатпăр вĕт, тăвансем! Эсĕ, Михала, хамăрьялсене çĕрпе астарса йăнăш тăватăн. Пирĕн колхоз ахаль те вăйлă. Эх, эпир купаланă çурта тĕпрен ишĕлтерсе питĕ пысăк йăнăш тăватăн. Вуншар çул çирĕп ларнă вăл çурт. Унта эпир çĕнĕлле пурăнма вĕреннĕ, хăнăхнă. Ял çынни пĕр çемьене чăмăртанса çирĕпленнĕ. Пăсмалла мар ăна, юсаса çĕнетмелле çеç. Ун вырăнне кашни хăй тĕллĕн çурт лартма тытăнсан... Кашни хăй хырăмĕшĕн çеç ăшталанма пуçласан... Темле асарписер ку. Туршăн та, патшалăха аялтан хăлтăклакан ăнланмалла мар усал вăй. Çын хыççăн ан сик, Михала. Тем

хушакан та пулнӑ пулӗ те... Пуҫпа шухӑшла малтан. Итле мана, ваттине... — шывланнӑ куҫӗсене шӑла-шӑла каларӗ Турпанов.

Ашшӗне ун паян курмаллах, лӑплантармаллах ӑна. Ахаль те тарӑхса, вӗчӗхсе ывӑнчӗ пуль. Тӑвайкки хӗрне ҫитсессӗнех вӗсен ялӗ Хурӑнсӑр куҫ умне ывӑҫ тупанӗ ҫинчи пек тухса выртать. Йӑмраллӑ урамсем ҫырма тӑрӑх тӑвалла чӗп-чӗррӗн тӑсӑлаҫҫӗ. Шифер, хӗҫ тимӗр витнӗ пӳртсем хушшинче чиркӳ пуҫӗсем, ҫӳллӗ тата лутрарах йӗпсисем ҫинчи хӗрессем йӑлтӑртатса илчӗҫ. Ял ҫав тӗн ӳкерчӗкӗсӗр ҫур ӗмӗр ытла пурӑннӑ. Кӑҫал вӑл каллех пӗлӗтелле кармашрӗ, кивӗ никӗс ҫинчи тымартан чӗрӗлчӗ. Уншӑн Перуновсем ҫине тӑчӗҫ. Халӑх авалхи никӗсе хӑех хӑй пӗлнӗ пек ҫӗнетрӗ. Колхоз та халӑх хывнӑ никӗсех. Пурнӑҫ никӗсне хывтараканӗ Пантелей Павлович Турпанов та уншӑн пуҫӗпе тӑрать. Ӑна та тӗрев парса пулӑшаканӗсем пур. Анчах... сахалтараххӑн. Ҫамрӑксем — кооперацишӗн, арендӑшӑн. Ҫӗршыв ҫийӗн йӑсӑрланакан тӗтре вӗсене ытларах чыхӑнтарать-ши? Ҫав тӗтре хыҫӗнче йӑлтӑртатакан ылтӑн тӗслӗ укҫа антӑхтарса ярать-ши? Е халӑхӗ илӗртнӗ кимӗ ҫине ӑнланнӑ-ӑнланман кӗрсе ларса ҫӗнӗлӗх хумӗ ҫинче ярӑнма юратнӑран-ши?

Масар тӑвайккинчен анаталла йӑрлаттарса анать хура «Волгӑпа» райсовет ӗҫтӑвкомӗн председателӗ Михаил Пантелеевич Турпанов. Тем аса илсе сулахаялла, юман рашчи еннелле, ытларах пӑха-пӑха илчӗ вӑл. Усламҫӑ Прухӑрӗсен, единоличниксен, ҫӗрӗччӗ авалхи масар лаптӑкӗнче... Унтан та, кунтан та шырлансем тӑсӑлаҫҫӗ халӗ ҫырма тӗпнелле. Ҫул хӗррипе те. Сиссе те юлаймарӗ Михаил Пантелеевич, машина чалӑшса, ишӗлекен тӑпрапа юхса, юхса анчӗ те... хытӑ тӑм ҫине тӑнклатса ларчӗ. Сулахай чӗркуҫҫи чӑтма ҫук ыратса кайрӗ. Машина сулахай енӗпе шырлан хӗррине выртрӗ, сылтӑм ураписем сывлӑшра ҫаврӑнса тӑчӗҫ. Турпанов мекеҫленсе сылтӑм енчи алӑкран тухрӗ те ҫӗре сиксе анчӗ, анчах ури чиксе килнипе айлатса илчӗ, уксахлакаласа тавралла пӑхса ҫаврӑнчӗ. Пӗччен хальлӗн тухасси пирки шухӑшламалли те ҫук. Хӗвел те авӑ: «Ирччен!» — тесе кулнӑн кӳршӗ ял хыҫне паппа тума кӗрсе выртрӗ. Унӑн ҫакӑнтах ҫӗр каҫмалла-ши? Шухӑшларӗ-шухӑшларӗ те багажникран кӗреҫе кӑларса ҫӗр чавма пуҫларӗ,

ывӑнса ҫитсен ҫерем ҫине ларчӗ. Ял енчен «жигули» килнине курсан савӑннӑ пек те пулчӗ.

— Салам, Михаил Пантелеевич! — машинӑран тухса ун патнелле ҫывхарчӗ Усламов, шултра та сайрарах шӑлӗсене сарлакан кӑтартса епрерӗ. — Ҫӗр юхан-суранне сиплетӗн пать? Ҫапӑ вырӑнне патшалӑх машинипе усӑ куратӑн-ха апла. Эрозие хирӗҫ кӗрешмелли кунашкал ҫӗнӗ меслете шупашкарсем вӗрентсе ячӗҫ-им?

Турпанов тӑрса ӑна алӑ пачӗ.

— Мӗн шӑл йӗрен! Пулӑшасчӗ. Айта пӗрле чаватпӑр. Иккӗн икерчӗ ҫиме те лайӑх теҫҫӗ.

— Сӗтел хушшинче ҫеҫ лайӑх вӑл. Васкатӑп. Ман Канаша ҫитсе ҫӗвӗҫе лартса килмелле. Ял инҫе мар вӗт. Трактор илсе кил те...

— Тен, персе хӑваран мана ял пуҫне ҫитиччен?

— Каҫар, Михаил Пантелеевич. Пулӑшаймастӑп. Ҫӗвӗҫ кӗтет. Кӗрӗк ҫӗлемелле. Хӑвах пӗлен. Ман вӗт оборот тумалла. Начар ӗҫлесен эпӗ те ҫак шырлана, сулнӑка, сирпӗнсе юлатӑп...

Ҫӳлтен анакан тепӗр «жигули» вӑрӑммӑн кӑшкӑртрӗ, кӗҫех ҫитсе те чарӑнчӗ. Алӑк чӳречинчен тӑрхала питлӗ, лаптак сухаллӑ Мирун атте пуҫӗ курӑнчӗ.

— Сывлӑх сунатӑп! Мӗн кампанийӗ тӑватӑр? — ыйтрӗ Перун Пименӗн ачи. — Тур пулӑштӑр.

— Турӑ вырӑнне эсӗ ху тухса пулӑш-ха? — чӗнчӗ Турпанов. — Кӗреҫе пур-и?

— Кӗреҫи пур та, анчах... вӑхӑт ҫук, Михаил Пантелеевич. Каҫхи кӗлле васкатӑп-ҫке. Пӗрле илес сана, вырӑнӗ те тупӑнмасть. Епархи хӑнисем, арӑм... Эпӗ унта, ялта, камран та пулин калаттарӑп. Килсе кӑларса парӗҫ ырӑ ҫынсем. Эй Турӑ, васпати! Ҫӳлти Атте усалтан сиртӗрех сана...

Пӗр машини аналла, тепри тӑвалла ӳхӗрчӗҫ. Турпанов пӑхмарӗ те вӗсем еннелле, кӗреҫене алла илчӗ те ӗҫе пикенчӗ.

Чуллӑ-тӑмлӑ ҫӗре кӗреҫе ҫӗҫҫи аран илет. Ӗшентерчӗ. Чавмалли нумай-ха. Айлӑма уҫӑ сывлӑш капланчӗ. Каҫ чатӑрӗ майӗпен тавралӑха хупласа пычӗ. Чиркӳ тӑрри аран ҫеҫ курӑнакан пулчӗ. Ял ҫийӗн электричество ҫути ялкӑшрӗ. Вӑхӑтпа шутласан халиччен пулӑшу килмеллех. Ахӑртнех, пуп никама та калаттарман.

«Эх, хамăрьялсем, пĕрле ӳснĕ тантăшсем. Чунсăрсем. Çынна инкекре пăрахса хăварма юрать-и çапла? Кашни хăйшĕн çунать, пĕрин çĕвĕç патне васкамалла, теприн — каçхи кĕлле. Пĕрле чавнă пулсан эртелпе тахçанах кăларнăччĕ ĕнтĕ машинăна. Анчах... пĕрин те кăмăл пулмарĕ. Каçа хирĕç пăрахрĕç те хăварчĕç Масар тăвайккине. Кула-кулах. Мăшкăлласах».

Хыçалти ларкăч çине хăяккăн кĕрсе ларчĕ те вăл шухăша путрĕ.

Куç умĕнчен тантăшсем вĕлтĕртетсе чупса иртрĕç. Ăçта васкаççĕ вĕсем? Аха, Михала хăй те вĕсемпех. Уроксем хыççăн сумкăсене киле пăрахса хăварчĕç те ялтан тухса чупрĕç, ывăнсан утса кайрĕç.

— Саншăн каллех пĕçерккĕ лекет ĕнтĕ пире, — терĕ тутине тăсса Макар.

— Мĕншĕн? Аттешĕн-и? — куçне хĕсерех пăхса ыйтрĕ юнашар пыракан Михала.

— Паллах, аçушăн, — хыткан питне сăтăрса илчĕ Мирун. — Пантелей пичи колхоза кĕртнĕ пулсан Макарсем халь нуша та курас çук. Пирĕн атте те кăшт ĕçсенех: «Ах, çав Турпан Павăлĕн ывăлех пĕтерчĕ пире», — тет.

Михала та çулташĕсене ăнлантарма тăрăшать:

— Ан суй! Макарсен ашшĕ вăл хăй ирĕкĕпе колхоза кĕмен. Единоличник вăл. Çавăнпа сире колхоз пулăшмасть. Сан аçу та ав, Мирун, пуп пулнă. Чиркӳ хупăнсан колхоза кĕнĕ-çке вăл, ма Макарсен ашшĕ кĕмен тата? Кам айăплă уншăн?

— Пĕлместĕп кам айăплине, — терĕ салхуллăн лутра Макар. — Атте пурпĕрех кураймасть сире, Турпан йăхне. Пирĕн телее Турпан киремечĕсемех туртса илчĕç тесе вăрçать.

— Мана та санпа çӳретесшĕн мар килтисем, Михала, — пĕлтерчĕ Мирун.

— Ан çӳрĕр апла. Шкулта та пĕрле ан ларăр, вĕренме те пĕрле ан вĕренĕр... Пымастăп та сирĕнпе.

Мирунпа Макар хыçала тăрса юлнă Михалана ик енчен çавăтрĕç те тусанлă çулпа малалла вĕçтерчĕç. Кĕпер урлă каççан тăвалла хăпарма йывăр. Çутра Усламçă Прухăрĕсен çĕрĕ. Хуппала картласа тунă, улăмпа витнĕ лупас çумĕнче Прухăрпа арăмĕ ясмăк кăклаççĕ.

— Тур пулăштăр! — терĕ çывăха çитсен Мирун.

— Тавтапуç, ачамсем. Ак çакăнта, хамăрпа юнашар тăрăр, — чĕнчĕ вĕсене Макар ашшĕ. — Михалана каллех илсе килтĕр-ха апла...

— Ах, çав ашшĕн чĕлхине ăна! — вăрттăн юнарĕ упăшкине Чулхула майри. — Ача-пăча мĕн пĕлет вăл? Пирĕншĕн вĕсем айăплă-и? Килех, кил, Михала, пĕрле ĕçлĕпĕр.

Турпан Пантелейĕ тăрантаспа çӳретчĕ. Пĕррехинче Михала, ашшĕ кăнтăр апачĕ хыççăн çывăрса кайсан, хура тур лашапа Масар тăвайккине кĕрлеттерсе çитрĕ.

— Сире пулăшма килтĕм! — савăнса пĕлтерчĕ вăл. — Тăварса кӳлер плугне.

Çĕрне сухаласа пĕтернĕ хыççăн, каç пулттипе, Михала килне кайма тухрĕ.

— Тем пекех пысăк спаççипă сана, ачам, — тав турĕ ăна Прухăр. — Аçуна та мухтав. Ак çак шăмă ани çинче усранăшăн. — Шыв çĕре çурса аннă хыççăн çиеле тухнă шит тăршшĕ шăмă татăккине аллинче сиктеркелесе илчĕ те вăл шăл витĕр сăрхăнтарса каларĕ: — Авалхи несĕлсен юлашкийĕсенчен тырă ӳстерсе çăкăр çитернĕшĕн.

Прухăр пиччĕшĕн сăмаххисем пирки Михала яла çитичченех шухăшласа пычĕ, ача ăнлавĕпе пурпĕрех вăлтса каланин тупсăмĕн вĕçне тухаймарĕ. Хăранипе пушшех чĕтреме ерчĕ. Ашшĕ ăна лаша вăрласа тарнăшăн пĕремĕк-канихветпе кĕтсе тăманнине пĕлет-çке. Хĕрхенес килчĕ унăн Усламовсене. Çĕрне туртса сухалаççĕ, туртса сӳрелеççĕ те... Йăлтах алă вĕççĕн тăваççĕ. Ытларах Макара шалккă пек. Кутран пушă е хулă лексен те халĕ вăл ĕçне тунă ĕнтĕ — тусне, единоличник ывăлне, колхоз лашипе пулăшса панă.

Турпанов машинăран тухрĕ, хăй сисмесĕрех рашча еннелле пăхса илчĕ. Усламçă Прухăрĕсен ани пулнă тĕлте темле вăйсăр çутă йăлтăрт-йăлтăрт туса туххăмрах сӳнчĕ. Çынсен чунĕсем çĕр айĕнчен тухса пĕр-пĕринпе юмахлаççĕ, сăваплă вырăн вăл тетчĕç ялта ĕлĕкрех Масар тăвайккинче çавнашкал çутă курăнсан. Шăмăран тухакан фосфор çути пулнă-ши вăл? Мĕн-ши? Анчах халĕ те çан-çурăм темле çӳçенсе кайрĕ Турпановăн. Акă каллех йăл-йăл туса туххăмрах пăчланчĕ. Эх, хăш-пĕр çынсем унта кайма хăраса тăратчĕç. Усламçăсен вара ирĕксĕрех тырă-пулă, çĕр

улми, пахча çимĕç акса-лартса ӳстермелле пулнă масар çинче. Выçă вилес килмест вĕт çыннăн! Хаярри питĕ хаяр хăтланнă та ĕнтĕ патшалăх йĕркине пăхăнасшăн пулман хресченсемпе, мĕн тăвăн, вăхăчĕ çавнашкал килсе тухнă.

Эхлетсех чаврĕ Турпанов. Урапасем çаплах çĕре перĕнмеççĕ-ха. Хытах пусăрăнса ларнă иккен. Ывăнса çитсен çерем çине ларчĕ. Сулахай урана хытах çаптарнă пулас, чĕркуççи тĕлĕнче малтан сурнă пек çеçчĕ, майĕпен вăл çунма, талккăшпе ыратма пуçларĕ, шыçса кӳпшекленсе пырать авă. Пусма та йывăрланчĕ. Шалтан тем чикет. Куçа хупса та пăхать вăл, пурпĕрех умран çухалма пĕлмест Усламçă Прухăрĕ. Аллинчи шăмă татăккине сиктерет те сиктерет.

Ял енчен чан сасси вăйсăррăн вĕçсе килчĕ. Тин таçта кайса кĕчĕ Макар ашшĕ. Ун вырăнне сухаллă, яштака кĕлеткеллĕ çап-çамрăк Мирун тухса тăчĕ. Каçхи кĕлĕре мар вăл, Саратов хулинче, Революци площадĕнче, шурă кăвакарчăнсем хушшинче.

Вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн вĕсен çулĕсем уйрăлнăччĕ: Макар суту-илӳ техникумне, Мирун музыка училищине, Михала ял хуçалăх механизаци институтне вĕренме кĕчĕç.

— Эс кунта, Саратова, мĕнле майпа лекнĕ? — тĕлĕнсе алă пачĕ Михала хăйсен ял ачине курсан. — Юрлама килмерĕн пуль те... Сассу вăйлăччĕ.

Перун Мирунĕ ача чухнехи тусĕ çине ытарлăн пăхса илчĕ те:

— Каласан кулса вилмелле, — терĕ. — Эсĕ пĕлетĕн, Шупашкара эпĕ хамăн чун туртнипе, анчах атте-анне ирĕкĕсĕр вĕренме тухса кайрăм-çке. Аран-аран кĕркелерĕм. Эпĕ купăс, баян мĕнле ăста каланине хăвах астăватăн. Училищĕре баян класне лекрĕм. Вĕренетĕп çапла музыка ăсталăхне. Каçпа Атăл çыранне тухатпăр. Хĕр... купи-купипех. Пединститут хĕрĕсем тӳрех паллă, хăйсем мĕн вĕренеççĕ — çавăн çинчен пакăлтатаççĕ. Пир тĕртекенсем тумтирĕпе уйрăлса тăраççĕ. Ушкăнăн-ушкăнăн акăшсем пек юхаççĕ тăвалла та аналла. Ялтан килнĕскерсем эпир ютшăнчăкрах çав. Ман хамăн та хăюлăх çитмест кампа та пулин паллашма. Турă курчĕ пулас, ман ума та тăпах çитерсе тăратрĕ пĕр пикене. Эс ĕненес те çук камне.

— Питĕ чаплă çын, пĕр-пĕр пысăк пуçлăх хĕрĕ-и? — тĕлĕнсе ыйтрĕ Михала.

— Чаплинчен те чаплин хĕрĕ. Шупашкарти Введенски собор настоятелĕн, аслă пупăн эппин, кĕçĕн хĕрĕ.

— Чăнах-и? Мĕнле майпа паллашрăн?

— Шутламан-туман çĕртен. Хамăр патра концерт кăтартнăччĕ. Унта хула çыннисем яланах çӳреççĕ. Эпĕ икĕ ари янраттартăм, «Игорь князь» оперăран. Вĕçĕнче ман паталла кăпка сарă çӳçлĕ, тутине хĕретнĕ, чăп-чăмăр питлĕ, ытарлă кĕлеткеллĕ хамран лутрарах пĕр чиперкке тăклаттарса пырать. «Лара, Лариса пулатăп», — терĕ аллине тăсса. Хăйпе пĕрле уçăлса çӳреме чĕнчĕ. Вырăсла-чăвашла хутăш калаçать хăй. Ăна ман баритон питĕ килĕшнĕ. Утсан-утсан Атăл тăрăх йывăççем хушшипе çӳлеллех хăпарса кайрăмăр. Хайхискер собор тĕлне илчĕ те тухрĕ мана, шала та кĕртсе кăтартрĕ. Чиркӳ хорĕнче юрлама чĕнчĕ. Пуçăм та арпашăнса кайрĕ вара майĕпен. Килĕшрĕм, акă Ларăпа юрлама пуçларăмăр. Хĕр мана ашшĕпе паллаштарчĕ. Эп тахçанхи пуп ачи пулнине пĕлсен вăл тӳрех каларĕ: «Сан, ачамккă, аçун ĕçне малалла тумалла, ун çулĕпех утмалла, унсăрăн каçарма çук пысăк çылăх пулĕ таса Турă умĕнче».

— Малалла мĕнле?

— Кун хыççăн ялта аттепе анне мана алă çинче çĕклесе çӳременни çеç! Хăйсем клуб еннелле пăха-пăха сăхсăхаççĕ: «Аттеçĕм-турă, эсĕ пирĕнпех, ывăлăма пулăшнăшăн сана ĕмĕр-ĕмĕр тав...» Ман пуçа йăлтах çавăрса ячĕç. Пăрахмалла пулчĕ музыка училищине.

— Ан калаç. Чăнах-и? Музыкант пулаттăнчĕ вĕт. Ялта кăна мар, таврара пирĕн пĕр вĕреннĕ купăсçă çук. Эх, яла таврăнса музыка шкулĕ уçаттăнчĕ. Ухмах эс...

— Итле, Михала. Пурччĕ ман малтанах унашкал шухăш. Хăвах пĕлетĕн, Турра эпĕ ачаранах ĕненмен. Тен, ăна атте хăй те ĕненмест, чăннипех Турра ĕненекен пупĕ те сахалтарах пуль. Мана çапла туйăнать. Хăнăхнă йăла, укçашăн ĕçлемелли ĕç кăна пуль тетĕп. Пионера, комсомола кĕтĕм. Килтен çакса янă хĕресе ман мăй çинче курнă-и эсĕ хăçан та пулин?

— Асăрхаман.

— Ăна эпĕ хапха алăкĕн çурăкне хĕстерсе хăвараттăм

та пӳрте кӗнӗ чухне ҫакаттӑм. Ҫав Ларӑпа ашшӗ пуҫа минретсе яман пулсанах... Килӗшрӗм вара тӗн шкулне вӗренме каймашкӑн.

— Тӗн шкулне? Семинарие-и? Ан култар-ха.

— Чӑнах, Михала. Ларӑпа пӗрлех килтӗмӗр. Вӑл чиркӳ хорӗн дирижерне вӗренет. Регент пулать.

— Эсӗ тата кам пулатӑн семинари хыҫҫӑн?

— Священник.

— Пуп апла. Сухаллӑ ултавҫӑ-и? Турра ӗненмен тетӗн. Суятӑн. Ӗненнӗ эс. Пионер та ячӗшӗн, комсомолец та ячӗшӗн ҫеҫ пулнӑ. Умра ҫӑтмахри пек ырӑ пурнӑҫ ҫути курнӑ-курманах училищӗпе те, комсомол билечӗпе те ҫӑмӑллӑнах сывпуллашнӑ.

— Турӑ никама та хӑй тӗллӗн шухӑшлама чармасть, Михала. Мана халь эс ултавҫӑ, хӑть те мӗн тесе кала — халь тин эпӗ хамӑн ӗмӗтрен пӑрӑнмастӑп. Пупсенчен халӑх ӗмӗрӗпех кулса пурӑннӑ пулин те, хӑй пурпӗрех чиркӳ еннелле туртӑнать.

— Халӑх-и? Халӑх пӗтӗмпех мар, уйрӑм ҫынсем туртӑнаҫҫӗ.

— Ҫук, халӑх. Халӑх ӑсӗнче вӑл Турӑ ӗненӗвӗ. Кайса кур-ха эс, чиркӳсенче тӗн уявӗсем вӑхӑтӗнче кӑна мар, ахаль чухне те халӑх ҫапса хӗстернӗ пек. Апла тӑк халӑх тем ыррине, темле чун уҫҫине кӗтет пуп сӑмахӗпе кӗллинчен. Тен, пуп тӗрӗссинех те каламасть пуль, анчах, ман шутпа, нихҫан та улталамасть вӑл. Мӗншӗн тесен священник, ҫынсен ыйтӑвне тивӗҫтерсе, вӗсене ӑнлантарса ӗнентерме ҫеҫ тӑрӑшать. Халӑх кӑмӑллӑ юлать унпа. Апла тӑк, кирлӗ ҫын вӑл пурнӑҫра. Халӑх пуҫӗнче, пуҫӗ тӑрринче тӑракан асамлӑ ҫын. Ултавҫӑ тесе эс мана ан кӳрентер...

Анлӑ лаптӑкра калаҫса ҫӳренипе вӑхӑт иртни те сисӗнмерӗ, хырӑм выҫса кайрӗ, ӳпке-пӗвертен пӗҫернӗ вӗри пӗчӗк кукӑльсене пилӗкшер илсе ҫирӗҫ те ҫӑкӑр квасӗ ӗҫсе ӑша кантарчӗҫ.

— Сан хӑвӑн ӗҫсем мӗнле пыраҫҫӗ, Михала?

— Аванах. Вӗренетпӗр. Ҫӗр ӗҫне. Тӗрлӗрен машинӑсене. Ялти трактористсем валли кӗнеке куҫартӑм. Чӑвашла лайӑхрах ӑнланмалла пултӑр тетӗп-ҫке. Ӑсталӑха ӳстермелли курс е шкул пекки уҫатӑп каникулта. Вӗсемпе пӗрле ӗҫлес килет.

— Эсӗ ӗнтӗ, аҫу пекех, ҫӗртен уйрӑласшӑн мар.

— Мӗн, тӗн сывлӑшӗпе тӑрантаратӑн-им халӑхна? Ҫӑкӑр кирлӗ ӑна, чи малтан — ҫӑкӑр. Санӑн ҫук турру пур, санӑн пуш сӑмаху пур — хырӑм тутти кирлӗ. Эсир ҫынна ҫӗртен уйӑрасшӑн, ҫӳлти патшалӑхри ырлӑхпа астарса ҫырлахтарасшӑн. Эпӗ вара ӑна ҫӗр ҫинчех телей кӑтартасшӑн. Акӑ пӗр тӗслӗх. Икӗ улмуҫҫи тейӗпӗр. Пӗри чанккама хунаса ӳссе кайнӑ — улми ҫук. Теприн улми йӑтӑнса анас пек шӑкӑри, тураттисем ҫӗр ҫумне ҫитиех усӑннӑ. Хӑшӗ усӑллӑрах?

— Паллах, пан улми нумаййи.

— Ҫапла ҫав. Ҫӗр усӑллине хӑй ҫумнерех туртать, усӑсӑррине — хӑвалать. Иксӗмӗрӗн те ҫавнашкалах. Эсӗ — сывлӑшра, эпӗ — ҫӗр ҫинче. Эсӗ — хӑмпӑ, эпӗ — ҫимӗҫ. Халӑх пуҫӗ тӑрринче тӑрса эсир ун ҫине пушӑ сӑмах купи ҫеҫ купалатӑр...

— Юрӗ, эпир тавлашса вӗҫне-хӗрне ҫитеймӗпӗр, — терӗ Мирун Перунов. — Опера итлес килет-и?

— Кӑштах ӑнкартма пуҫларӑм-ха. Кунта килнӗренпе кайкаласах тӑратӑп. Паян та хавасах театра пыма, — килӗшрӗ Михала. — «Иван Сусанинччӗ-и» унта, а?

— Ҫавӑ, Глинкӑн ылтӑн-ахахӗ. Эпир Ларӑпа кашни вырсарни кун пулатпӑр опера театрӗнче.

— Сире семинарире ҫирӗп тытаҫҫӗ-и? Мӗнле, йывӑр-и вӗренме?

— Ай-яй, музыка училищинчипе танлаштарсан — тӗрме. Ирӗкех ямаҫҫӗ. Канмалли кунсӑр пуҫне хулана та тухма май ҫук. Вӗренмелли питӗ нумай. Тем те пӗлес пулать.

— Пирӗн те мӑй таранах-ха вуламалли, занятисене хатӗрленмелли. Пашкаса ҫеҫ ларатӑп.

— Эсир пурпӗрех ирӗклӗ ҫынсем. Пирӗн уйрӑм йӗркеҫке — пӑхӑну-итлев йӗрки. Пиллӗк ҫурӑра акӑ ирхи кӗлӗ пуҫланать. Саккӑрта — ирхи апат. Сӗтел хушшине лариччен те, кашӑк хурсан та кӗлӗ тумалла. Тӑххӑртан иккӗ ҫурӑччен уроксем. Кӑнтӑр апачӗ хыҫҫӑн хамӑр тӗллӗн урокcене хатӗрленетпӗр, пӑхӑнса пурӑнма, аслисене итлеме хӑнӑхатпӑр, унтан хорта юрлатпӑр. Каҫхи апат тӗн кӗнекинчи пӗр-пӗр текста сасӑпа вуланипе иртет, каҫхи кӗлӗ те... Вун пӗрте пӗр харӑс ҫывӑрма вырттараҫҫӗ.

— Салтакри пекех апла сирĕн.

— Темле, унта пулса курман.

— Çара эп те кайман та, кинора курнипе тата çынсем каланӑ тăрăх çапла пек. Мĕн вĕрентеççĕ вара?

— Тем те. Пĕрремĕш класа вĕренме кĕнĕ чухне славян чĕлхипе такăнмасăр вулама пĕлмеллеччĕ тата вырăсла пĕр йăнăшсăр çырмаллаччĕ, унсăр пуçне çирĕм ытла кĕлĕ пăхмасăр каламаллаччĕ.

— Пултартăн-и пурне те?

— Паллах. Унсăрăн мана илместчĕç те. Лара ашшĕ айяй лайăх экзамен тыттарчĕ Шупашкарта. Хăй вăл Загорскра академи пĕтернĕ. Ăслă, пултаруллă çын. Унччен Хусанта философи вĕреннĕ тет университетра. Мана кунта малтан хам училищĕре вĕренни нумай пулăшрĕ. Музыка пирĕн мĕн вĕренсе тухичченех яланхи предмет шутланать. Бассене епле аталантараççĕ, пĕлесчĕ сан! Вырăссен авалхи юрă йĕркине питĕ лайăх пуçа хыватпăр. Вырăс чĕлхисĕр пуçне грексен, еврейсен авалхи чĕлхине тата е акăлчанла, е нимĕçле, е французла вĕрентеççĕ. Тĕн предмечĕсем, истори, философи... Тĕн предмечĕ вара — çынлăх, тимлĕх, кăмăллăх туйăмĕсен чăнлăхĕ.

Чĕркуççийĕ туртса ыратнипе айлатса илчĕ те Турпанов ура çине тăчĕ, кăштах çĕр чаврĕ. Урапасем тинех лаклатса анса ларчĕç. Машина тӳрленчĕ, тухасса вара... Ял енчен Тур Амăш çырми тăрăх чиркӳ чанĕн сасси ян! та ян! туса вĕçсе килет. Çиçĕм çиçнипе тавралăх çуталса каять те пăч тĕттĕм пулса ларать. Аслати авăтнă сасă Масар тăвайкки çумне çитсе çапăнать. Тĕнче хăй сывлăшĕпе сывлать, хăй чĕлхипе калаçать, хăй кăмăлĕпе савать, хăй хăвачĕпе ташлать. Çĕрпе пĕлĕт хушшинчи этем те çав ырлăх-хурлăхпа уйрăлми çыхăнура явăнать. Кашни çын çав çыхăнура хăй уйрăм тĕнче — ăнланса пĕтме çук тĕлĕнмелле субъект. Пĕри никам ирĕкĕнчен килмен тата никама пăхăнман чăнлăхшăн кĕрешет, тепри этем ăс-тăнĕнче кăна паларса тăракан юхăма юхтарать.

Мĕн калать-ши, мĕне ĕнентерет-ши çак вăхăтра Хурăнсăр чиркĕвĕн пупĕ Мирун Турра ĕненекенсене? Çынлăх, тимлĕх, кăмăллăх туйăмĕн чăнлăхне-ши е çӳлти патшалăх ырлăхĕн пулăмĕсене-ши?

Саратоври тĕлпулу хыççăн нумай шыв-шур юхрĕ. Ми-

хаил Пантелеевич тăван ялне инженер пулса таврăнчĕ. Питĕ савăнăçлă самантчĕ. Пурнăç экзаменĕ машинăпа трактор станцийĕнче пуçланчĕ. Сормоваран чăвашсене пулăшма килнĕ Давыдов инженер унăн пĕрремĕш вĕрентекенĕччĕ. Пултарулăха курса, ăсталăха асăрхаса сĕнчĕ-ши çак пархатарлă вырăс хăй кайнă чухне ăна тĕп инженера лартма — калама хĕн, анчах пилĕк çул вăл çав çăмăл мар вырăнта ĕçлерĕ. Машинăпа трактор станцийĕ хыççăн юсавпа техника станцийĕн директорĕ те, «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕн управляющийĕ те пулчĕ. Çирĕм çул техникăпа аппаланса, вунă çул район советне ертсе пырса халăхшăн усăллă ĕçех турĕ-ши вăл?

Перун Пименĕн Мирунĕ Саратовран священник ятне илсе килчĕ. Шупашкар-Чăваш епархийĕнче этем кăмăлĕн, чунĕн тасалăхĕшĕн, ирĕклĕх сывлăхĕшĕн кĕлĕ туса халăхшăн усăллă ĕçех турĕ-ши?

Мирун атте пĕррехинче Турпанов патне ятарласа пычĕ.

— Нумай пулать сана курманни, Михаил Пантелеевич, — сĕтел хушшинчен тухса хирĕç утса пыракан пӳлĕм хуçине çирĕп аллисемпе ыталаса илчĕ Перунов. — Тур пулăшса пытăр йывăр ĕçӳнте.

— Турри пулăшать-ха вăл, Мирон Пименович, хамăр кĕлĕ тума пĕлсен, — кулкаласа илчĕ Турпанов. — Анчах пĕлсех çитерейместпĕр курăнать. Итлесшĕнех те мар пулас вăл тата пире, антихристсене.

— Мĕн калаçатăн, Михаил Пантелеевич! Эсир те, эпир те çав этемех.

— Çапли çаплах та, анчах шухăш-кăмăлĕ урăхларах-çке. Эпир — атеистсем. Эсир, теистсем, тĕнчене тытса тăракан пĕр Турă çеç тетĕр. Марксизм-ленинизмпа теологи хушшинче епле пысăк уйрăмлăх.

Тăваткал çăра сухалне якатса илчĕ те Мирун атте лăхлăх кулса ячĕ, вара юлташĕ çине куç айĕн пăхса васкамасăр каларĕ:

— Сирĕн вĕрентӳпе пирĕн вĕрентӳ хушшинче унта тарăн хушăк çук. Тĕн ĕмĕр-ĕмĕр çынна тăрăшса ĕçлеме, харпăр хăйĕн тивĕçне чĕререн туйса тăма, усаллăха хирĕç кĕрешме, пĕр-пĕринпе юлташлă, туслă, тăванлă, тӳр кăмăллă, сăпайлă, таса пулма, çемьене çирĕплетме, ĕçкĕрен пăрăнма

вěрентсе пынǎ. Коммунизм тǎвакансен мораль йǎли-йěркинче те йǎлтах пурччě вěт çаксем?

— Тěрěс. Пур. Вěсене чǎн та этемлěхěн воспитани арчинчен, ылтǎн арчинчен, пěлсе илме тǎрǎшнǎ. Вěсемсěр епле пултǎр-ха, ара.

— Вǎт çапла çав. Эпир те чиркěве пынǎ халǎха этемлěхěн ырǎ енěсене таса тытмашкǎн вěрентсе усǎллǎ ěçех тǎватпǎр мар-и? Тěн шкулě, тěн дисциплини чи малтан мěне вěрентет-ха? Чун тимлěхне. Кǎмǎл вашаватлǎхне. Çыннǎн пурнǎçě вара çак тěкěсем çинче тǎрать. Çын хǎйне тěнчере курма пултарсан вǎл ыттине те çав сǎнара курма вěрентет. Çапла тǎватпǎр та эпир. Турǎш çине çеç мар, çынна хǎй çине те пǎхтаратпǎр. Пурнǎç тěкěрě куç умěнче пултǎр уншǎн. Ун çине эпир те ачашшǎн таса кǎмǎлтан пǎхсан вǎл та пирěн çине çавǎн пекех пǎхать, пире ěненет, шанать. Ěненӳ вǎл темле çирěп япалана та витěрех шǎтарать. Тǎнласах итлетěн-и эсě мана, Михаил Пантелеевич, е ыт ахальтен çеç?

— Питě кǎсǎкланса итлетěп. Хамǎра мěнле витерсе çунтарнине куçпа курса çак хǎлхапа итлетěп.

— Çапла вǎл, тусǎм, халǎх ǎс-тǎнне хěрлě кěнеке çӳлěкěсемпе кǎна пусарма хǎтланни уссине парсах пěтереймерě сире. Эсир, хǎвǎра атеист текенскерсем, ǎслǎ калаçатǎр, тěне, Турра, халǎхǎн авалхи йǎли-йěркине хирěç тем тěрлě майпа та кěрешетěр. Мěн чухлě вǎхǎт, укçатенкě, материал çухататǎр. Анчах уссийě... чěрне хури чухлě те çуккǎ. Мěншěн?

— Мěншěн çук. Пур.

— Тěрěс мар. Пустуй, сывлǎша пушǎлла пени çеç. Мěншěн тесен эсир халǎха ялан улталатǎр. Тǎнла, эпир мар, эсир... улталатǎр. Сǎмах паратǎр — пурнǎçламастǎр. Тем те шантаратǎр — ырǎлǎх кӳрейместěр. Кирлě чухне — чунтан пулǎшмастǎр. Юратмастǎр эсир çынсене. Хǎвǎршǎн, хǎвǎрǎн ырлǎхшǎн, хǎвǎр пурлǎхшǎн чи малтан ытларах çунатǎр. Çын нуши хумхантармасть сире. Йывǎр ěçпе лутǎрканнǎ çыннǎн йěркеллěрех пурǎнас та, кǎмǎллǎн канас та, уççǎн савǎнас та килет пуль. Анчах вǎл çав ырлǎха час-часах кураймасǎр юлать. Тарǎхать, вěчěрхенет, никама шанми, никама ěненми пулать вара. Этемлěх туйǎмě, çынлǎх çитмест сирěн бюрократи керме-

нĕнче. Эпир çын çине йăлтах урăхла пăхатпăр. Унăн ăшри туйăмне лăпкă юхăмлă туйăмпа вăратса çĕклентерме пĕлетпĕр. Пире тĕн шкулĕнче çапла вĕрентнĕ. Ырă кăмăллăх, хĕрхенӳлĕх çитменни, вĕсене тивĕçлипе хаклама пĕлменни сире кăна мар, пире те, тĕн çыннисене, хăй вăхăтĕнче нумай кансĕрлерĕ. Ку енĕпе вара çынсемпе ĕçлемелли нумай-ха. Патшалăх ватă-вĕтĕ, чирлĕ-сусăрланнă çынсем валли нумай ырлăх туса пама тăрăшать. Социаллă пулăшу пур пек курăнать çиелтен пăхсан. Анчах та шаларах кĕрсе пăхсан этемĕн çав танмарлăх чăтлăхне, унта хĕвел çути ӳкменни тӳрех паллă. Хĕвел çути — кăмăл тути — çитмест çав çынсене. Чиркӳ çакна чи малтан асăрхарĕ, инкек-синкек, йывăрлăх тӳсекенсем патне хăйĕн ырă кăмăллă аллине тăсрĕ. Эпир те районти больницăна, ватăсен çуртне тата интернат-шкула хамăр май килнĕ таран пулăшасшăн. Вĕсен хуçисене каласа ăнлантарăр, пире хирĕçлесе ан тăччăр.

— Кун пирки шухăшласа пăхăпăр. Кăмăл турамĕ никамшăн та ытлашши пулмĕ. Ай-яй, епле тăн парать вăл, духовенство çынни, райсовет пуçлăхне, э? Кам та пулин итлесе ларас пулсан-и пирĕн калаçăва... Сире лартас тейĕç ман вырăна, Мирон Пименович.

Перунов йăл кулчĕ, çăра куç харшийĕсене пӳрне вĕçĕпе тĕккелесе илчĕ.

— Район хуçи пулаймăпăр. Советсен ĕçне хутшăнтарсан та пире тем пекехчĕ. Аслă Канаша суйланчĕç-ха пирĕн Сăваплă Патриархпа чиркĕвĕн икĕ иерархĕ.

— Архимандритсем-и?

— Çапла. Архиепископсемпе протоиерейсем патне те черет çитессе шанатăп. Иксĕмĕре, сăмахран, çитес суйлавра пĕр округран район совечĕн депутачĕ пулма кандидата тăратсан мĕн тăватăн?

— Халăх кама ытларах шанасса çеç кĕтетĕп. Унăн шухăш-туйăмĕ, унăн хакĕ.

— Çапла пулмалла та. Патшалăхран уйăрнă пулин те чиркĕве ăна обществăран уйăрма май çук, мĕншĕн тесен пурте эпир — çĕр çыннисем. Кĕлĕ тума, Турра ĕненме никама та чарман. Халăха нихăçан та икĕ пая уйăрмалла мар — Турра ĕненекенсемпе ĕненменнисен хушшине хирĕçӳ юпи çапмалла мар. Пĕрле пĕр çĕре сурмалла пирĕн.

Вырăс православи чиркĕвĕн Сăваплă Синочĕ вĕрентнĕ пек пĕр ĕç тумалла пирĕн. Миршĕн кĕрешме, халăхра йĕрке тума, патшалăх умĕнчи тивĕçе совеç хушнă пек чыслăн пурнăçлама чĕнмелле, ĕнентермелле халăха. Ман шутпа, вăл пурнăç çĕнелĕвĕ пĕр япаларан кăна килет — этемĕн чун-чĕре çĕкленĕвĕнчен, кăмăл-туйăмĕ тасалса пынинчен. Пĕр-пĕрне пулăшмаллах пирĕн. Хамăр ял общини ыйтнине пурнăçламаллах. Чиркӳ ĕçне чармалла мар. Пушарнăйсене, санэпидеми тухтăрĕсене эсир юриех тиркешме хушнă пуль. Христианство пин çул тултарнă ятпа ял халăхне панă Турă парнине хăйĕн патне çитерме чарса тăнăшăн сире, тем тесен те, çылăх пулать. Хăрамастăр-и?

— Чипертерех калаç-ха. Вĕсен — хăйсен ĕçĕ. Мана итлемеççĕ. Эпĕ хушма та шутламан.

— Апла-ха. Юрĕ. Çапах та кала-ха пĕр суймасăр? Тарăхнă вĕт эсĕ мана.

— Тарăхнă. Эпĕ çеç мар, районти, ялти çын, чылай çын чунтан тарăхнă клубран чиркӳ тутарттарнăшăн.

— Паллă, сирĕн ытларах ĕçлемелле пулчĕ мар-и? Эпир халăхăн шалти туйăмне вăратса çил-тăвăл çĕклемен пулсан Хурăнсăр çыннисем паян кун та чаплă Культура керменĕ кураяс çукчĕ. Икĕ пысăк ĕç тума пултартăмăр эпир. Община çирĕпленчĕ, хăйĕн çуртне каялла туртса илчĕ. Унта кĕçех çурта çутăлĕ, унта кĕçех чан сасси янăраса кайĕ...

Чан-н! Чăн-чан-н! Чăнкăл-л-чанкăл-л-чăнкăл-л-чанкăл-л-чан-н! килсе кĕрет халĕ, унтанпа çур çул иртнĕ хыççăн, Турпанов хăлхине чиркӳ янравĕ. Çиçĕм ялтлата-ялтлата, аслати хăлтăртата-хăлтăртата илет. Вăйлă çумăр çывхарать пулас. Ыратнине чăта-чăта чавать район хуçи. Тухасшăнах вăл çак çĕр тыткăнĕнчен. Моторне тапратса кĕрлеттерсе пăхрĕ. Машина малалла куçма шутламасть-ха. Руль çине пуçне хучĕ те вара шухăша кайрĕ. Усламов аса килчĕ. Канашран тахçанах таврăнчĕ пуль ĕнтĕ вăл. Юриех кунтан, тӳрĕрен, тухмарĕ вĕт, тавра çулпа çирĕм икĕ çухрăм çаврăнчĕ ĕнтĕ. Бензинне хĕрхенмесĕрех. Ма килес мар-ха çакăнтан?

Кăçал Усламов ун патне темиçе те çитрĕ.

— Тусăм, Михаил Пантелеевич, — йăлăнчĕ вăл тилĕлле, — самана улшăннă чухне пулăш мана. «Çĕнĕ пурнăç» ятлă кооператив йĕркелесшĕн.

— Мĕн тăвасшăн-ха унта?

— Тир-сăран тăватпăр. Атă-пушмак, кĕрĕк, çĕлĕк çĕлетпĕр. Маçтăрĕсем те во! мĕнлисем пур. Аллă иккĕн. Ирĕк парсамăр?

Усламов суту-илӳ техникумĕнчен вĕренсе тухсан райпотребсоюзра база хуçи пулнăччĕ. Ял хуçалăх институтĕнче заочнă вĕренсе инженер-экономист дипломне илчĕ. Сахал мар çавăрттарчĕ суту-илӳре. Ултав серепинчен çăмăллăнах майлашăнса тухса шăвăнчĕ те колхоз председателĕнче ĕçлесе пăхрĕ. Патшалăхран укçа кивçен иле-иле курăмлă япаласемех тума пултарчĕ. Юлса пыракан колхоза тăвалла туртса хăпартнипе, обществăлла çурт-йĕр нумай лартнипе, ялта водопровод тунипе палăрчĕ районта. Ăста йĕркелӳçĕ, тĕп экономист, тĕп инспектор... Ăçта кăна çитмерĕ-ши вăл çакăн хыççăн? Пур çĕртен те хӳрине вараласа, анчах капкăна лекмесĕр шăвăнса тухать. Питĕ хĕрӳллĕн тытăнать Усламов пур ĕçе те. Çынсене тӳрех тĕлĕнтерсе пăрахать. Пуçлăхсем те ăна ырлама пуçлаççĕ. Хăйĕн пурнăç ырлăхĕн карти умне çитет те вара ултав алăкне яриех уçса ярать. Кама та пулин чике тăршшĕ лартмасăр чунĕ канмастех унăн. Черетлĕ ĕç хăйне услам пама тытăнсан çăварне хăлха таранах карса ахăлтатать. Тĕп тĕллевĕ, ĕмĕчĕ çавă çеç. Халĕ акă вăхăчĕ вĕсем валли шăпах вырăнлă килсе тухрĕ. Ĕлĕкхи нэпмансен тымарне пулăхлă шĕвек йăкăртатса юхса анчĕ те, йăхĕсен йывăççисем çĕнĕ папка кăларма пуçларĕç, вырăнăн-вырăнăн ахăрса ешерсе, чечекленсе кайрĕç. Усламçă Прухăрĕн Макарĕ те районта кăна мар, республика тулашне çитиех сарса ячĕ çăмлă аллисене.

— Мĕн, илтмерĕн-им, Михаил Пантелеевич?! — тепĕр хут хыттăнрах ыйтрĕ Усламов. — Бизнес тăвасшăн.

— Илтрĕм-ха, хăлхасăр мар, анчах... шухăша кайрăм. Ачи эсĕ питĕ тавçăруллă, хĕрӳ, сана çавнашкал интереслĕ ĕç кирлине пĕлетĕп. Самана вăхăчĕ хăех тĕл килтерчĕ пуль сана коопераци юхăмĕпе. Иксĕр те пĕрне-пĕри йăл кулсах алă патăр.

— Мĕн хăранă пек турткалашса ларатăн тата. Махинатор мар эпĕ, комбинатор çеç. Ĕç юррине çыхăнуллă пĕрлештерме, килĕшӳллĕ янраттарма пултаратăп. Честнăй усламçă, пĕр сăмахпа каласан, паянхи кооператор. Çĕнĕ

пурнăç тума пулăшакан. Пĕлетĕн-и, патшалăха пиртен мĕн чухлĕ пулăшу пулать? Хамăр республика бюджетне çулталăкра виçĕ миллион услам пама палăртатпăр. Халĕ тир тутарма мĕн чухлĕ çын Хусана йăкăртатать. Малашне ман пата йӳнĕрех хакпа тутарма, çĕлетме çӳрĕç. Заказ халех майĕ таран. Мастерской лартма çĕр лаптăкĕ тата стройматериал кирлĕ. Пире ирĕк парăр çеç, ыттине хамăрах майлаштаратпăр. Тупата, ялта хамăр шутран ача сачĕпе коммуналлă мунча лартса паратăп. Лавкки те хамăрăн пулать.

— Аçунтан вунă хут та ирттертĕн капла эсĕ, Макар Прохорович. Çакна пĕлесшĕн. Кала-ха, Шупашкарта кĕрĕк кооперативĕпе мĕншĕн ăнмарĕ сан? Панкрута тухмарăн пуль те.

Усламов пуçа пăркаласа кулса ячĕ те çамкине шаккаса кăтартрĕ:

— Çак ăс кутамккине мĕн тума туса панă-ши мана аттепе анне? Панкрут пулма-и? Çу-ук. Ку таранччен çут пăр çине çара кутпа ларса курманччĕ-ха. Эпĕ çавăрттарнă укçа миххисем чухлĕ эсĕ, тем тесен те, хăвăн кантурăнта хут купи çавăрттарса курманах. Итле, ман унта ательене пăхăнмаллаччĕ. Хăвах пĕлетĕн, Усламçă Макарĕ ирĕке юрататъ. Хăй хуçа пуласшăн.

— Саккунĕ пур та ĕнтĕ, хирĕçлеймĕп, ыйтăвне ĕçтăвком ларăвне кăларăпăр. Мастерской тума вара хальлĕхе май çук. Титула кĕртмелле малтан. Унта, çав списокра, сан объектусăрах тем те пур. Тăхта. Хăвăн пултарулăхна кăтарт. Эсĕ хăвах тем те çавăрттарма пултаратăн. Миххи-миххипе укçупа перкелеш. Выля. Вилсен пурпĕрех пĕрле илсе каяймастăн.

— Виличчен ырă курса юлас. Маншăн хĕпĕртесе атте хăйĕн ĕмĕрне тăстăр. Масар тăвайккинче ясмăк яшки çинине астăватăн-и?

— Халĕ пулсанччĕ вăл. Акмаççĕ вĕт нихăш колхозра та.

— Колхозсем акмаççĕ тăк — эпир акатпăр. Тара илнĕ аллă гектар çĕр çинче хамăр кооператив çыннисемпе ясмăк та, хура тул та ӳстеретпĕр, утар туса вĕлле хурчĕ ĕрчететпĕр, пĕве пĕвелесе пулă хуçалăхĕ йĕркелесе яратпăр. Пире хамăра та, колхоза та, патшалăха та усă пулĕ. Сан аçусем «ссылкăна ярса», алăпа сухалаттарсах тырă ӳстерттерчĕç те пире унта... Вилмерĕмĕр эпир те. Чĕрех юлтăмăр.

Сатту халӗ хамӑр тара кӗрӗштеретпӗр ҫынсене. Колхоз хамӑра тара парать. Трактор, лаша тата ыттине те туянатпӑр та... Халӑха пуйтаратпӑр. Халӑхшӑн тӑрӑшатпӑр. Ҫынна ӑна ирӗклӗ ӗҫлеме, ирӗклӗ суту-илӳ тума, ирӗклӗ пурӑнма, ирӗклӗ туйма майсем туса памалла. Паянхи самана пире хӑй алӑ тӑсса парать. Тавах ҫав ырӑ чунлӑ этемсене пире уҫӑмлӑх уҫса панӑшӑн.

— Ан кӳрен те эс, Макар Прохорович, Мускаври ӑслӑ ҫынсем уҫнӑ ҫул пурпӗрех сан ҫулу мар. Такӑнатӑн эсӗ унта, пурпӗрех вӗҫне ҫитиччен чупса тухаймастӑн. Сан вӑйхӑвату, сан чӑтӑмлӑху ҫитмест патшалӑх палӑртнине пурнӑҫламашкӑн. «Ҫӗнӗ пурнӑҫ»... Ятне пӗлсех панӑ-ха. Эпир мар, эсир тӑватӑр пать ҫӗнӗ пурнӑҫа. Пире ӗнтӗ хаҫачӗжурналӗ, телевиденийӗ-радиовӗ мӗн кӑна каласа вӑрҫмасть-ши? Йӑнӑш ҫулпа пыратпӑр иккен. Ленин кӑтартнӑ ҫултан пӑрӑннӑ пулать эпир. Ирӗклӗ кооператорсен социализмӗ тин пуҫланать...

— Так, так, шухӑшлаттарать-ха апла. «Кооперации ҫинчен» ҫырнӑ статйинче мӗн каланӑччӗ-ха Владимир Ильич? Астӑватӑн-и?

— Эс, мӗн, мана экзамен тыттарма килтӗн-им? Пӗлетпӗр. Итле. «Строй цивилизованных кооператоров при общественнной собственности на средства производства, при классовой победе пролетариата над буржуазией — это есть строй социализма», — шакӑртаттарса пачӗ Турпанов вырӑсла.

— Ленин ҫӗршыври мӗнпур ҫынна кооператива пӗрлештересси ҫинчен аса илтерсе тӑнӑ. Мӗне пӗлтерет вӑл? Эппин, производствӑпа суту-илӳрен пуҫласа йӑла службиӗ, наука, культура, искусство тата тем таранах — пӗтӗм общество пурнӑҫне ҫав юхӑма кӗртсе ямаллине пӗлтерет. Эсир вара ирӗксӗрлесе колхозсем тунӑ та, халӑхран укҫа шӑйӑрса илмелли потребительсен кооперацине ячӗшӗн йӗркелесе янӑ та... «социализм турӑмӑр!» тесе трибуна умне тухса тӗнче илтмелле кӑшкӑрнӑ. Производство пурлӑхӗ ҫинчен Энгельс мӗн каланине те, социализмӑн тӗп шухӑшӗ пирки Ленин мӗн вӗрентнине те маннӑ.

— Эсӗ пролетарилле патшалӑх малтанлӑха кӑна производство пурлӑхӗпе пуҫ пулса тӑма пултарни ҫинчен Энгельс каланине аса илтӗн-и?

— Паллах. Майĕпен ҫав пурлăхпа хуҫа пулма пăрахса Ленинăн коопераци шухăшне пурнăҫа кĕртнĕ пулсан-и? Производство пурлăхĕ халăх аллине куҫнă пулĕччĕ, вара классен экономика никĕсне аркатмалли майсем ытларах тухса тăратчĕҫ, пролетариат пуҫ пулса тăрас май та кирлех марччĕ. Коопераци ĕҫне ушкăнпа демократи никĕсĕ ҫинче ертсе пыратчĕҫ пуль. Пĕрлешсе пурлăх-ырлăх тăвакансем вара хăйсен вăйне, пурлăхне, ĕҫне никама та ярса илтермĕччĕҫ.

— Кооперацин ушкăн интересĕнче кашни ҫын интересĕ тивĕҫлĕ шайра пулмаллине аса илтересшĕн ĕнтĕ эсĕ.

— Тĕрĕс. Пĕтĕм халăхпа патшалăх интересĕнче уйрăм ҫын интересĕ тĕтреллĕ курăнать. Кооператорсен вара... уҫăмлăн. Хамăн интерес мана умри шанăҫа курса тăнипе «Ҫĕнĕ пурнăҫ» кооператива халăх интересĕсемшĕн тухăҫлă, усламлă тытса пыма вăй парса тăрать. Усламҫă пулма пĕлес пулать, Ленин каланă пек культурăллă усламҫă пулма пĕлмелле. Суту-илӳ ĕҫĕ вăл — чăн-чăн искусство пек ҫепĕҫ те туртăмлă ĕҫ.

— Эсĕ кунта чееленетĕн. Сан «Ҫĕнĕ пурнăҫу» патшалăха вăй илтермелли кооператив мар. Вăл — хăвна пуйтармалли фирма. Патшалăх урлă ертсе пырас пулсан, чăнах та, эсĕ калани пурнăҫланмалла. Халĕ кунта сирĕн хăвăрăн интересĕрсем малта. Ĕненместĕп, шанмастăп эпĕ унашкал кооператорсен малашлăхне.

— Ывăннă эс пĕр ҫĕрте ĕҫлесе. Вырăн улăштармалла сан. Вунă ҫул хушшинче сан чунна бюрократи кишĕклесе пĕтернĕ. Вĕрен манран ĕҫлеме, ман пек пурăнма. Куҫса юл хальтерех урăх ĕҫе. Унсăрăн пурнăҫ сана хăех аяккалла сирсе хăварать. Авă епле шăлать вăл халĕ ҫĕршывра партипе советсен ĕҫĕнчи бюрократсене! Вăраннă халăх хăйне валли ирĕклĕх сывлăшĕ шырать. Авă хамăр ялта уҫтартăр вĕт чиркӳ, нимĕн те тăваймарăр. Вырăнти влаҫсем пулăшнипех ҫĕршывра икĕ пин ытла прихут хушăннă терĕҫ. Акă хамăр ялтах кооператив та уҫтаратăр. Мирон Пименович та ял халăхĕшĕнех ĕҫлет, Макар Прохорович та... Эсĕ те — Михаил Пантелеевич. Халăха пуп та, кооператор та, райсовет хуҫи те кирлĕ.

— Кирли — кирлех пуль, анчах... кам — мĕншĕн? Эсир ҫынсене пăтрататăр. Пирĕн вĕсене пĕтĕҫтермелле. Эсир

улталатăр. Пирĕн тĕрĕслĕх тупса ĕнентермелле. Эсир шантаратăр. Пирĕн туса памалла. Пирĕн патах утать халăх. Ытларах. Пирĕннех пур ĕçе те йĕркелесе ертсе пымалла, пирĕннех халăх ырлăхĕшĕн кунĕн-çĕрĕн тăрăшмалла. Мĕншĕн тесен пĕтĕм власть — Советсен аллинче. Сирĕн алăра мар. Сирĕн сăмах пылак, çул — шуçлак. Пирĕн сăмах йӳçĕ пулсан та тĕрĕс, пирĕн çул тумхахлă пулсан та пурпĕрех тĕрĕс çул. Унпа утакан халăх нихçан та такăнмĕ, кирлĕ çĕрех çитĕ. Пирĕн çулсем вара... ачалăхра пĕр пулнă пулин те майĕпен юпленсе, уйрăлса кайрĕç. Кашниех уйрăм çулпа утатпăр. Кашниех уйрăм шухăшкăмăлпа пурăнатпăр. Пĕр чĕлхе тупаймăпăр нихăçан та. Иксĕре те пулăшма пултарнă таран пулăшрăм. Пулăшас та çук та. Чунĕ çавнашкал ĕнтĕ пирĕн, Турпансен... Хамăр интереса халăх интересĕпе, патшалăх интересĕпе улăштар-нă та...

— Эсир — чаплă çынсем. Сирĕн çапла пулмалла та. Хăвăр чуна халăха патăр пулсан хăвăр та унран мĕн илмеллине илнĕ-çке.

— Кала-ха, мĕн?

— Ят илнĕ-илтнĕ. Пĕлетĕн-и, ят — ырă ят! Сан яту çапах та маннинчен хытăрах янăрать: районта та, республикăра та. Аçун та ячĕ мĕнлерех, Пантелей — Тур панă телей. Халăх панă ят. Вăйлă.

— Хăвăрăн начар-им? Прухăр — ухăр-купец тесе хăвăнтан та кулатчĕç ача чухне. Халĕ ĕнтĕ...

— Лайăх хушаматах ман та. Мухтанмалли ятах. Илья-пророк тени те хăватлă вĕт, э? Перун Пименĕн Мирунĕ Турă хăвачĕпе ял клубĕ çине аслатиллĕ çумăр çутарса мĕнле сӳнтерчĕ культура вучахне. Сиссе те юлаймарăмăр. Хăвăрах пулăшрăр çав вучах вырăнне çурта çутмашкăн. Мирон Пименч Шупашкарти хваттерĕнчен тăван ялне автомашинăпа çăмăллăн вĕçтерсе çитет те тум улăштарса Мирун атте пулса тăрать. Халăх ăна пуççапать. Вăл — ялта, чиркӳ общининче чи хисеплĕ çын. Çĕршыв политикине ăнланатпăр-ха лайăххах. Халĕ, хула çыннисене яла таврăнма мĕнпур майсем туса панă ылтăн тапхăрта, пирĕн мĕншĕн юлас-ха пурнăç чуппинчен? Тăван ял имлĕхĕ пире те туртать.

— Эсир, ачисем, пултаратăр-ха. Темле юхăм, темле

çĕнĕлĕх чуппи çумне те хутшăнма-çыпçăнма, ун вăйĕпе усă курса юлма пĕлетĕр. Турă пани пурах сирте.

Ашшĕ пекех çемçен хи-хи-хи! тесе кулса ячĕ Усламов.

Ăçтан илтĕнет-ха çав сасă халĕ те? Михаил Пантелеевич радио янă-çке. Такам темле постановкăра питĕ тăрăшсах кулать. Ăна илтес мар тесе вăл приемника чарса лартрĕ. «Нивушлĕ тухаймăп, — шухăшларĕ вăл çирĕппĕн. — Шырлана анса кайнă тесе пуçа усас мар. Ял кулли пулма çуралман. Лармалла мар çак тапăра. Чавмалла, çул уçмалла, пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн те пулин малаллах куçмалла. Паянах аттепе курса калаçса Вăрнара çитмелле. Ирпе ирех ĕçтăвком ларăвĕ ирттермелле. Ял ыйтăвĕпе. Çирĕп малашлăх палăртмалла, пурнăç таппипе пымалла. Район халăхĕн пурнăçне танатана кĕртсе ӳкермелле мар».

Анчах та хальлĕхе Турпановăн хĕпĕртемелли сахалтарах-ха. Председатель куçĕ умĕнчен хĕрӳ пурнăç ӳкерчĕкĕсем вĕлтлетсе иртрĕç.

Район ял хуçалăхĕн пурлăхпа техника никĕсĕ иртнĕ çулсенче палăрмаллах ӳсрĕ темелле. Ку пĕр енчен савăнтарать те, тепĕр енчен... хурлантарать те. Ял хуçалăхне нумай укçа-тенкĕ хывнă ĕнтĕ, анчах унпа туллин усă курса пĕтерейместĕ. Çĕршыв ĕнси çинче сăрă хурт пек ларма хăнăхнă колхоз пуçлăхĕсем патшалăх ырлăхĕпе усă курса та аталанса юласшăн мар. Ял хуçалăх продукцийĕ сутнăшăн пустуй нумай хушса тӳлени вĕсене ĕçченлĕхе мар, юлхавлăха вĕрентет. Пурпĕрех «тупăш» пур-çке вĕсен, пурпĕрех укçине те, премине те малта пыракан хуçалăх пуçлăхĕсемпе специалисчĕсен шайĕнчех илеççĕ те... Çĕнетӳ тапхăрĕ çак танмарлăха пĕтерменшĕн сӳрĕксене ылхансах вăрçас килет Турпановăн. Чĕрепе туять çак танмарлăх хурне, анчах пĕрре çавăрттарса янă та кăлтăрмача Мускавра — çавăнать те çаврăнать вăл пушăлла. Патшалăх укçине тăрăшса ĕçлемен начар хуçалăхсене парса пĕтерни тыр-пул тухăçне те, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессине те ӳстерме пулăшмасть, вĕсен хăй хаклăхне çеç хăпартса ярать. Çав хуçалăхсене салатса ярса хресчен хуçалăхĕсем туса хурсан лайăхрах пулмалла. Колхозсем аш-какай туса илессине чакарнă-и, сĕт сахалтарах суса илеççĕ-и, тыр-пул начар ӳстереççĕ-и — кашни çавнашкал тĕслĕх пиччĕшĕн сăма-

хӗсене аса илтерет: «Эп сире пӗрлех пӗр пушӑпа ҫатлаттаратӑп». Ҫав хуҫалӑхсем кая юлнишӗн, паллах, вӑл та, райӗҫтӑвком председателӗ, айӑплӑ. Вӗсене пулах ҫынсен сӗтелӗ тулли мар.

Хуҫалӑхсем вӑраххӑн аталанни, ҫынсем укҫа-тенкӗ сахал ӗҫлесе илни, пурӑнма, ӗҫлеме, канма тивӗҫлӗ майсем ҫукки ял халӑхне хуланалла тартать. Тӗплӗнрех шухӑшласа пӑхрӗҫ те вӗсем — тӗлӗнчӗҫ. Юлашки вунӑ ҫул хушшинче районти ялсенче халӑх йышӗ вун пилӗк процент чакнӑ. Ӗҫлекенсен йышӗ хухать. Вун сакӑр ҫултан пуҫласа ҫирӗм тӑватӑ ҫула ҫитиччен кашни пин хӗрарӑм пуҫне пин те тӑват ҫӗр арҫын тивет. Хӑрушӑ цифрӑсем вӗт кусем! Уяр кун аслати авӑтнӑ пекех янӑрарӗҫ вӗсем сессире. Ҫыншӑн, унӑн пуласлӑхӗшӗн ытларах та ытларах тӑрӑшмаллине, унран хаклӑрах та кирлӗрех ӗҫ хальлӗхе районта ҫуккине палӑртрӗҫ депутатсем.

Шухӑшлать те шухӑшлать Турпанов, чӑн та, район канашӗ, унӑн ӗҫтӑвкомӗ, ял совечӗсем ялсен социаллӑ аталанӑвне вӑхӑтра кирлӗ хак паман. Колхозсенчен ҫуллен ытларах та ытларах продукци ыйтнӑ, ял ҫынни мӗнле сывлӑшпа сывлать, мӗнпе савӑнса пурӑнать — халӑх нушисем хыҫала тӑрса юлнӑ. Районти аллӑ сакӑр ялтан вӑтӑрӗшӗнче медицина пункчӗ ҫукки те, ача сачӗсене тӗп усадьбӑсенче кӑна уҫни те, пӳрт-сурт лартма пулӑшманни те, ҫынсене, уйрӑмах хӗрарӑмсене, ҫулталӑк тӑршшӗпех ӗҫлеме услови туса паманни те, комплекслӑ йышӑну пункчӗсем ячӗшӗн кӑна уҫни те, вунултӑ ялта магазин ҫукки те, клубсемпе культура ҫурчӗсем чӑн-чӑн культура вучахӗ пулса тӑманни те, фермӑсенче ал вӗҫҫӗн ӗҫ хуҫаланни те пӗрлех хӗтӗртеҫҫӗ ӗнтӗ ҫамрӑксене тӑван вырӑнпа сывпуллашма. Халӑхра иккӗлле шухӑш ҫуратма та ҫак пӑтӑрмахсемех пулӑшаҫҫӗ пуль ҫав.

«Пирӗн тӗллев — коммунизм!» тесе сӑмахпа каласа та, пысӑк сас паллисемпе ҫырса та вӗҫӗмсӗр чӗнтӗр, ҫав вӑхӑтрах хӑвӑр пире илӗртӳллӗ ҫулпа пуш кутамкка ҫактарса ҫаруран, выҫӑ хырӑмпа уттартӑр. Хӑҫан улталама пӑрахатӑр халӑха», — ним вӑлтмасӑр куҫранах каларӗҫ Турпанова иртнинче Малтикаса пухуирттерме кайсан. Пухӑвне кивӗ лаша витинче ирттермелле пулчӗ. Мӗн тавӑрса калӑн ӗнтӗ ҫакӑн хыҫҫӑн вӗсене?

«Механизаци ĕмĕрĕнче фермăра алăпа ĕне суса ларма, çĕклемпе апат йăтма, кĕреçепе тислĕк хырма ухмах марха эпир, хулана кайсан улт-çич сехет ĕçлетпĕр те савăнса кулса çеç çӳретпĕр». «Гектартан вун ик центнер тырă илнипех хырăма тăрантараймасть пирĕнне колхоз, халĕ Сталин вăхăтĕнчи мар, нуша капкăнĕ лартман пирĕн ума, укçа ытларах кирлĕ, хула çеç хальлĕхе пире тивĕçтерет». «Çӳç вăрăмланса кайрĕ, сухал пупăнни пек, телевизора темле юсаттармалла». «Йышăну пункчĕ йышăнмасть çав пире, ăна эсир ялшăн мар, отчетшăн, хăвăршăн уçнă пуль». «Çăкăр сутмаççĕ, кирпĕч, хĕç тимĕр таçта туянмалла»...

Мĕн чухлĕ çивĕч ыйту параççĕ ялта. Йăлтах — ĕçпе йăла ыйтăвĕ. Пурте — вырăнта татса памаллисем. Татса параканни е татса парас текенни кăна таçта. Паянах тивĕçтермелли те, ыран тумалли те пур вĕсем хушшинче. Сăмахран, фермăсенчи ĕçе çăмăллатма пулмасть-ши? Кашни колхозра çурт-йĕрпе коммуналлă служба йĕркелеме кам тытса чарать? Ял канашĕсен территорийĕнчи экономикăпа социаллă аталанăвĕн планĕсемпе лайăхлатса пымалла-çке-ха халăх пурнăçне. Анчах... камăн? Кам уншăн яваплă — çавăн. Вăл шутра — Михаил Пантелеевичăн та.

Социаллă ыйтусемпе йăла сфери ĕнтĕ вăл яланхиллех чи малти вырăна тухса тăнă. Ахальтен мар районти агропромышленность комплексне аталантарма уйăрнă укçатенкĕн утмăл процентĕ çавăнта каймалла. Çав виçĕ миллионпа хуçалла усă курма пĕлмелле çеç. Район канашĕнче ăна председательпе пĕрлех ытти яваплă çынсем те лайăх пĕлеççĕ, çапах... Ял çыннисене тивĕçтерсе тăрассин шайĕ пурпĕрех хуларинчен начартарах пулса пырать. Палăрмаллах пĕчĕк вăл. Ял çине çав-çавах авалхилле пăхаççĕ.

Тем тĕрлĕ йышăну та пур темелле ĕнтĕ ял çыннин пурнăç шайне çĕклес тĕлĕшпе. Вĕсем пурнăçланса пыманни çеç ун умне чаркăч хыççăн чаркăч кăларса тăратать. Вĕсене сирсе яма е вĕсем урлă сиксе каçма пултараять-иха паянхи ял çынни? Çак ыйтусем тăнран яраççĕ Турпанова. Ун пек чухне вăл эртелпе, халăхпа калаçать, канашлать. Вырăна тухса çӳренĕ хыççăн çурт-йĕр тăвас ыйту пур çĕрте те çивĕч пулнине курса-туйса ăнланчĕ. Çавăнпа «Çурт тума çăмăл-и?» ыйтупа райĕçтăвкомра тĕлпулу ирттерчĕ.

Харпăр хăй валли çурт тума тытăннă çынсемпе строительство материалĕ уйăрса парассишĕн яваплисем хушшинче уçă калаçу пулса иртрĕ. Ку мероприяти мĕн чухлĕ те пулин пулăшу парасса шанать вăл.

Çĕнĕ çурт-йĕр лартасси — хăйне майлă проблема. Çав вăхăтрах пушанса юлнă пӳртсемпе усă курасси — тепĕр йышши кăткăслăх. Виç çĕр çирĕм пилĕк пӳрт шутласа кăларчĕç унашкаллисене районĕпе. Татса памаллах ку ыйтăва та.

Пĕчĕк ялсен аталанăвне халĕ райĕçтăвкомра уйрăмах тĕп вырăна хума шутлаççĕ. Çапах та пушă пӳртпе ял ыйтăвĕ — районăн кăна мар. Пĕтĕм республика, Раççей проблеми вăл. Пуçпа тараннӑн шухăшламасăр, хулари академиксем сĕннипе, çӳлтен хушса, ирĕксĕр йышăнтарса ял пĕрлĕхне аркатма пуçланă аслă пуçлăхсен пысăк йăнăшне халĕ ăспа кăна юсама пулать, кашни ялта ферма, машинăсен паркĕ, клуб, магазин, йышăну пункчĕ, ача сачĕ, фельдшер пункчĕ уçмалла, кашни яла асфальт сарнă çулпа çыхăнтармалла, кашни ял çынни çине этемле, хресченле пăхмалла.

Социаллă танмарлăха халăх хушшинчен çум курăкне тымарĕ-мĕнĕпе тăпăлтарса кăларнă пекех тасатмалла. Çапла шухăшлать, çав майпа тăрăшать те Михаил Пантелеевич пурнăçа çĕнетӳ аслатийĕ кĕмсĕртеттернĕ вăхăтра. Çав аслати кĕрлевĕнче хăйĕн сассийĕ те пуррине, çилтăвăлра çуначĕ тĕрекленнине туять-ши? Çĕнетӳ çуначĕ ытти çынсен те ан усăнтăрччĕ, çирĕплентĕрччĕ тесе мĕн-мĕн тумаллине куллен палăртать.

Унăн хăйĕн яланах мĕнле те пулин интереслĕрех, çĕнĕрех, йывăртарах ĕçпе аппаланас килет. Ачаран хăнăхнăран-ши ку? Чун-чĕринче ашшĕ-амăшĕ çав сӳнми кăвара чĕртсе хăварнăран-ши? Ачалăх шаймăклăхĕ халĕ те асрах. Ак çакăнта, умри пĕчĕк юхан шывра, ишме Усламçă Макарĕпе Перун Мирунне хисте-хистех «сулă флотилийĕ» тутарнăччĕ. Хăй мĕн шутланине, мĕн ĕмĕтленнине унăн темшĕн-çке ыттисене те тутарас килет, çав шухăшпа нумайрах çынсене хавхалантарса чĕртес килет. Çав кăмăлпах ялта картинăсен галерейи уçтарчĕ, тăмран савăт-сапа тăвассине йĕркелесе ячĕ, çил арманĕсене юсаттарчĕ. Шупашкарта «Шывармань» опера курнă хыççăн унăн ĕлĕкхи

пекех Виçĕ Çавал тăршшĕпе шыв арманĕсем çавăрттарас шухăш çуралчĕ.

Анчах та ăна лăпкăлăх ытамĕнчен ниепле те хăтăлайман пуçлăхсемех тăнран яраççĕ. Çав чир вĕсен хушшинче ытла та шала кайнă. Вăл мĕнпур интереса кăшлать. Сӳрĕклĕхпе мăранлăх кăшăлĕнчен чи малтан пирĕн хамăрăн хăтăлса тухмалла, ун хыççăн халăха та уçă çул çине кăлармалла. Лăпланса ларма май çук, ĕçлемелле, çĕнĕлле ĕçлемелле тесе вĕрентет те çав вăл хăйне пăхăнаканĕсене...

Лар халь лăпкăлăхпа сӳрĕклĕх, мăранлăх лачакинче. Тыткăнра. Асат Петĕрĕн ачи, колхоз хуçи, çаврăнăçуллăрах пулнă пулсанах Масар тăвайккине шырлансем çисе каяс çукчĕ. Куç курмасть-ши çĕр суранне? Турпановсем е шупашкарсем килсе пӳлсе парасса кĕтеççĕ-ши?

«Эх, пуласчĕ кашни хуçалăх пуçĕнче ăслă, чунлă хуçа. Халăх тахçанах çăкăрлă, ашлă-пăшлă тулăх пулмалла та çав, — шухăшларĕ вăл тарăхнипе йăм çăра çӳçне икĕ аллипе шăлса. — Никам та килсе туса памасть ырлăха. Начар, питĕ начар ĕçлетпĕр-ха эпир хамăра шаннă çĕрте, телей çӳлтен çăлтăр пек ӳкессе кĕтетпĕр. Çĕр туйăмĕ, çăкăр тути, хресчен ăс-хакăлĕ çитсех каймасть. Çут çанталăка сыхлассишĕн, çĕре упрассишĕн, таврари сывлăх тасалăхĕшĕн кĕрешместпĕр. Эпĕ те çав пурнăç тĕллевĕшĕн — кашни çын ăс-тăнĕнчи экологи шухăшлавĕ çĕнĕлле аталантăр тесе çине тăмастăп курăнать. Çавăншăнах хамăн та терт курма тивет. Çирĕпрех ыйтманшăн, çирĕпрех пулманшăн».

Чавать, чавать Турпанов... Тӳпе ик еннелле çурăлса кайнă пек çуталать те, пуç тăрнех хăватлă вăй халтăртатса анать. Пĕшкĕннипе уçăлса кайнă пилĕке йĕпе «пăрçасем» шапăр-р! çитсе çапăнчĕç. Уксахласа утса çаврăнчĕ те вăл машина тавра руль умне кĕрсе ларчĕ, хăватлă мотора кĕрлеттере пуçларĕ. Акă тинех тапранчĕ! Унтан каллех ларчĕ. Улаттара-улаттара кăларчĕ те «Волгăн», ывăнса çитнĕскер çамки çинчи тарне аллипе шăлса тасатрĕ. Çумăр витререн тăкнă пек чашлаттарать. Тата мĕн амакĕ пулчĕ? Пăх-пах-пах! турĕ те мотор чарăнса ларчĕ. Стартер çине пусса хăйăклаттарса пăхрĕ, çук, тапранмасть. Пăхса илчĕ те малалла зажигани уççине сулахаялла пăрса хучĕ. Бензин йĕппи нуль çинче ташлать. Хытă пăлханнипе вăл

Шупашкарта бензин ярса тухасси çинчен вуçех маннă иккен.

Çут çанталăк алхасать, пурнăç ташлать. Выçă «Волга» вырăнтан тапранаймасть, унăн аманнă хуçи вăйсăр халпа тимĕр читлĕхре тул çутăласса, пулăшу килессе кĕтсе ларать. Çумăр чарăнсан та çуран утас пирки шухăшламалли те çук. Шыçнă чĕркуççи хутланмиех пулса ларчĕ.

Ялт! çиçрĕ те çиçĕм, çав самантрах хăнăхнă шавра çывăхрах, тăварах, тăр-рăнст-т! тутарчĕ. Çĕр кисренсе илчĕ. Масар тăвайкки тăрринче тĕттĕмлĕхе çурса мăн çурта çутнă пек çутă йăлкăшрĕ. «Аçа çапрĕ. Усламçă Прухăрĕн йăмрине», — вĕлтлетсе илчĕ пуçра. Ăна вăл хăйсене çавăнта çĕр касса панă хыççăн лартнăччĕ. Турпанов лайăх астăвать пĕччен йывăç мĕнле асаппа ӳснине. «Юнашарах — юман рашчи. Мĕншĕн вăрмана мар, уйрăм ларакан йăмрана тĕллерĕ-ха аçа? Вăл унта кирлĕрен ӳсменрен-ши? Пĕрпĕччен, тăлăххăн ларнăран-ши? Çапрĕ те çунтарчĕ. Пĕтерчĕ. Вăрман вара юлчĕ. Вăрман кашлать. Вăл — вăйлă. Унăн пĕр-пĕр йывăçне аçа çапсан та ытлашши паллах мар. Те пĕлсех, те аташса алхасать çут çанталăк вăйĕ... Пурнăçра та çавнашкалах пуль çав. Халăха нимле вăй та хуçаймасть. Пĕччен çын, Усламов йышши, ун çумĕнче пурпĕрех хăçан та пулин пурнăç аçи айне пулса çунса каять», — тесе шухăшларĕ Михаил Пантелеевич тăвайккинчи мĕскĕн йывăç юлашкийĕ еннелле пăха-пăха илнĕ май.

Хыçалтан темле вăй пырса çапнипе машина майĕпен малалла куçма пуçларĕ. Руле тем чухлĕ пăрчĕ, пăрчĕ Турпанов, анчах ниепле те машинăна итлеттереймерĕ. Çӳлтен юхса анакан çумăр шывĕ ăна каялла çавăрса айлăма çитерсе лартрĕ. Вăйсăр тимĕр купине тата ун ăшĕнчи халсăр этем çурине ялтăр-р! çутатса пăхать те çӳлти хăватлă вăй кăмăллăн халтăртатса кулса ярать.

Этем çурин çамки тарларĕ. Пуçри тахçантанпа канăç паман шухăшĕ чĕлхене анчĕ. Итлемен руль çине ӳпĕннĕскер вăл сасăпах калаçрĕ: «Эх, пурнăç, ытла та пăтрануллă-çке эсĕ, этемлĕх аталанăвĕнче мĕн-мĕн кăна пулса иртмест, эпир те мĕн кăна курмастпăр пуль. Совет обществине йĕркелесе тытса пынă вăй та, коммунистсен партийĕ, авă Усламçăсен йăмри пĕтнĕ пекех кĕлленчĕ, тĕнче тĕттĕмлĕхĕнче çухалчĕ. Черет советсен патне те

çитрĕ. Çут çанталăк вăйĕ мана та, советсен пĕр пуçлăхне, малалла ямарĕ, ума чаркăч лартрĕ. Эх, тек ĕнтĕ манăн аманнă урхамахăм вăйсăр вырăнтан урăх тапранаймĕ. Пăкки шаннă советсен вырăнне те çĕнĕ моторлă, хăватлă ертӳçĕ-локомотив кирлĕ».

Турпан Пантелейĕ çиçĕм çиçсе ямассерен куçне хупать. Хăлхара аслати сасси кĕрлет. Пуç çине, кĕлетке çине, мăшкăлланă пекех, Илья-пророк пĕлĕтрен чашлаттарса шыв тăкать. Умра акă тем кĕрлеме пуçларĕ. Куçа уçса пăхрĕ те вăл çиçĕм çутинче хăй патнелле капланса килекен хăватлă вăя асăрхарĕ. «Пĕвене татса кайнă пулас», — шухăшласа илме ĕлкĕрчĕ старик.

— Пулăшăр! — хăйăлтатса тухрĕ вăйсăр сасă чĕре тĕпĕнчен.

Шыв пуçĕ кĕрлесе, сысна лапăрккине тасатса çывхарать, акă вăл Киремет çырминчи лачака танатине леĸнĕ çынна вăйлă таппипе çĕклерĕ те малалла çавăрттарса кайрĕ, арман пĕви пуçне çитсе çапăнса ăна çӳлелле ывăтса хăварчĕ.

Усламçă Çитăрĕсем ĕлĕк тарăн та сарлака çырмана çĕр хăпартса вăрăм пĕвеленĕ пулнă. Пĕве пуçĕ дамба пек тăсăлса выртать. Ун çийĕн çул тунă. Çав çулпа çамрăксем анаççĕ.

— Çын. Çын выртать!

— Кам-ши?

Электричество хунарĕпе çутатса пăхрĕç.

— Турпан Пантелейĕ...

— Чĕрех-ши?

— Куçне уçрĕ...

Ватă çын тăрасшăн пулчĕ, анчах хускалнă-хускалман айлатса пуçне çĕрелле усрĕ.

— Атьсем. Ырă çынсем. Тархасшăн, пулăшăр... — пăшăлтатрĕ тути.

— Çиччас, çиччас. Акă йăтатпăр та...

— Тăхтăр-ха кăштах, — терĕ Турпан Пантелейĕ вăйсăррăн.

— Мĕн пулчĕ? Мĕскер-ха тата?

— Сулахай кăкăр кĕсйине чиксе пăхăр-ха, тархасшăн? Хамăн алă çĕкленмест. Пур-ши? Вырăнтах-ши?

— Мĕн? Укҫа-и? — тесе пĕри пиншак кĕсйинчен ҫут хутпа чĕркенĕ пĕчĕк кĕнеке туртса кăларчĕ.

— Укҫа мар...

— Ҫакă-и? Ҫутат-ха эс лайăхрах! А-а... Паспорт. Турпанов Пантелей Павлович, 1900 ҫулхи июнĕн 15-мĕшĕнче Хурăнсăр ялĕнче ҫуралнă... Тутăр ҫыхнă, чăвашла тумланнă темле чиперкке ҫамрăк хĕрарăм сăн ӳкерчĕкĕ...

Йĕкĕт сăмахĕсене итлесе выртакан сивĕпе шăнса хытăрканă ватă ҫын куҫĕсем чăл-чăл чĕрĕлчĕҫ.

— Пур-ха апла эсĕ, Варвари, ҫумрах-ха, чунăмҫăм. Тавах Турра. Пурнатпăр. Пĕрлех...

Масар тăвайкки еннелле иртсе кайнă ҫумăрăн аслати сассийĕ Турпан Пантелейĕн сăмаххисемпе хутăшса янрарĕ.

Киремет ҫырми кĕрлет.

Киремет ҫырми чĕрĕ сасăпа шавлать.

*1989, 2014.*

Çĕрпики

*Кашни çыннăн художник чунĕ пулсан,*
*кашни çын хăйĕн ĕçĕнче савăнăç тупсан*
*тин тĕнче телейлĕ пулĕ.*

Огюст Роден

## ПĔРРЕМĔШ ПАЙ

### 1

Ăшă çу ытамĕнче капăрланса ешĕрекен уйсем вакун чӳречинчен татти-сыпписĕр хыçалалла юлса пыраççĕ. Акă ĕнтĕ пуйăс пысăках мар станцие, Апнеркăна, çитсе чарăнчĕ. Вăрмантан тухсанах, хĕвел тухăçĕнче аякри тăван ялти йăмра тăррисем куçа курăнса кайрĕç. Унта çитме Уравăш ялĕ витĕр ултă çухрăм пулать. Хаваслă туйăмпа çĕкленсе утать Микулай Караваев тусанлă çулпа. Тăвайккирен хăпарсанах — ланкашкаллă вырăнсем. Вăрçăччен кунта фосфорит кăларнă та, вĕсем çавăнтанах юлнă, кайрантарах çеремленсе ăшăхланнă. Вырăнĕ утса ывăннă çынчен ларса канма меллĕ.

Вăл кунта чарăнса тăмарĕ. Акă Уравăш чиккинчен иртсен тăван ял çĕрĕ пуçланчĕ. Астăвать-ха, Тăмпуç çырми таврашĕнче унччен нимĕн те йĕркеллĕ ăнса пулман. Курха ĕнтĕ, халĕ мĕн тери хӳхĕм сад сарăлса ларать кунта. Чикĕре ӳсекен хурăнсемпе акацисем те Çĕрпел каччине пуç тайса кĕтсе илнĕн, авăк çилпе хумханакан ыраш уйĕ те илĕртӳллĕ кĕвĕ кăларнăн, сад енчен тутлăран та тутлă шăршă вĕçсе килнĕн, сывлăш нихçанхинчен те тасарах та уççăнрах пек, пуçа перĕнесле вăшлатса иртекен чĕкеçсем чĕвĕлти сассипе çепĕççĕн саламланăн туйăнчĕ.

Çырма хĕрне çитсен Микулай чăматанне лартрĕ те çерем çине тăсăлса выртрĕ, çемçе курăк имлĕхĕпе чун каниччен рехетленсе йăванчĕ, ача чухнехинчен пуçласа çак самантчен хăйĕн пурнăçне аса илчĕ.

Микулай ялтан вăрттăн тухса тарма укçа кăштах пухнăччĕ ĕнтĕ. Çитсă кĕпипе сатин шăлаварне, çулла Петрав ĕçкинче такам манса хăварнă кивĕ карттусне тăхăнчĕ,

урине пир тăла чĕркесе çĕнĕ çăпата сырчĕ, шкула çӳренĕ кĕнеке хутаççине ӳкерчĕкĕсене, унтан пашалупа услам çу тата сарайĕнчи йăваран виçĕ çăмарта илсе чикрĕ.

Сукмакĕ анкарти хыçĕнченех пуçланать, сĕлĕ ани витĕр кукăрăлса иртсе урапа çулĕ çине тухать те Сунар шывĕ урлă каçса Канашалла каять. Микулай станцие çитиччене çуран утрĕ, хăракаласа йывăç вокзала кĕчĕ, пĕр кĕтессе кукленсе ларса пашалупа çу çирĕ те билет туяннă хыççăн перрон çине тухса пуйăс килессе кĕтме пуçларĕ. Чĕри хăйĕн тем вăрланă е темле усал ĕç тунă çыннăнни пек шиклĕн кăртлатса тапать. Ăна халь-халь акă ашшĕпе амăшĕ чупса çитсе ярса тытассăн туйăнать. Çав самантрах вăл каялла çаврăнса пăхать те кăштах лăплананçи пулать.

Пĕр шухăшласан, тимĕрçĕ лаççинче тĕтĕмпе чыхăнса тарланă ашшĕ, ял хыçĕнчи хире махорка касма тухнă амăшĕ, чиркӳ çуртĕнчен шкул тума кайнă аслашшĕ Микулай Канашрине тавçăрас та çук-ха. Шăллĕ, Ваççук, Укахвипе Антуна пăхать пулĕ. Амăшĕ Микулая хăйне те пĕчĕккисене асăрхама хытарса хăварнăччĕ, паллах, ывăлĕ мĕнле вăрттăн шухăш тытнине пĕлмен çав ĕнтĕ вăл. Микулай та чее хăтланчĕ: пуç ыратни çине ярса вырăн çинче выртса юлчĕ. Уя хăйпе пĕрле илсе кайсан ача махорка шăршипе пушшех аптăрĕ тесе амăшĕ шеллерĕ ăна. Сĕтел çине çырса хăварнă хута вуласа пăхнă хыççăн каçпа пурте хыпăнса ӳкеççĕ акă. Ун чухне Микулай ялтан таçта аякра пулать. Авă епле хăвăртлăхпа тăкăртаттарса пырать вăл: хăваласа çитесси çинчен ан та шухăшла. Пуйăс çине пуçласа ларнăскер, хăй çав тери савăнса кайнă, чӳречерен куç илмесĕр пăхкаласа пырать.

Шупашкара çитсен пурте пуйăс çинчен анчĕç. Микулай та вакунран тухрĕ. Станцире вокзалпа темле лутра хуралтăсемсĕр пуçне урăх нимех те курăнмасть. Хули ăçташи тата? Çакă çеç-ши Шупашкар? Инçех мар автобус килсе чарăнчĕ. Ку машинăна Микулай кĕнекере курнă ӳкерчĕк тăрăх çеç пĕлет-ха. Акă ĕнтĕ автобуса çынсем ларма тытăнчĕç.

— Пичче, калаймăр-ши, художниксен училищине мĕнле каймалла? — ыйтрĕ Микулай автобуса кĕме пуçтарăннă пĕр арçынран.

— Художество училищине-и? — хĕрхеннĕ майлăрах

пăхса илчĕ лешĕ çăпата сырнă ача çине. — Атя кĕр ман умран, Хĕрлĕ площаде çитетпĕр те, кăшт çеç утмалла.

Автобус ланкашкаллă çулпа уй тăрăх халтăртатса пырать. Кĕçех аякри чул çуртсем чӳречерен курăнма пуçларĕç.

— Художник пуласшăн-ха апла? — темле иккĕленнĕ майлăрах сасăпа ыйтрĕ хайхи çын ачаран.

Микулай сăмсине нăш туртса илчĕ, пуçне çĕклемесĕрех именчĕклĕн каларĕ:

— Пуласси килет те... экзаменне темле тытăп çав. Те кĕрейĕп-ха.

— Каламăн-и, мĕн-мĕн ӳкеретĕн? — татах ыйтрĕ арçын.

— Тем те.

— Охо, маттур-çке эс. Пур-и-ха çумăнта мĕн те пулин? Кăтартмăн-и?

— Пурри — пур...

Микулай пĕр пĕлмен-палламан çынна ӳкерчĕкĕсене кăтартас килменнипе пир сумкине хăй çумнерех пăчăртаса тытрĕ, çапах та лешĕн çине айăпа кĕнĕ майлăраххăн та пăхса илчĕ.

— Ан ятлăр та, малтан ман вĕсене училищĕри учительсене кăтартас килет...

— Ку та аван, — йăл кулса илчĕ арçын.

Темиçе чарăну, унтан автобус темле ик-виçĕ хутлă çуртсен айккисемпе хĕвеле хирĕç çаврăнса кĕтесри киоск çывăхĕнче чарăнса тăчĕ.

— Çитрĕмĕр те акă Хĕрлĕ площаде, — хулпуççинчен кăмăллăн лăпкаса илчĕ Шупашкар çынни. — Халĕ çав парк çуммипе ав çавăнталла, Атăл хĕррипелле, кай. Унта, Хресчен çуртĕнчен инçе мар, ак ку еннерех, — тепĕр икĕ хутлă çурт. Тӳрех çавăнта кĕр. Телей сунатăп. Чим-ха, хушаматна каламастăн-и? Пĕлсе юлам, кам пĕлес пур, тен, хăçан та пулин чаплă чăваш художникĕ пулăн та, хаваспах аса илĕп кайран...

Малалла утса кайма тăнă ача тăпах чарăнчĕ.

— Ой, мĕн тери спаçип сире, Караваев-ха эпĕ. Ырă çын эсир, — хăйĕн чунне ачашлакан туйăмне пытарма пултараймарĕ Микулай.

Унтан вăл йĕри-тавра тимĕр карта тытнă парк çумĕпе

«Союзная» тесе ҫырса палăртнă урам тăрăх чупса кайрĕ, пĕчĕк кĕпер урлă каҫса тăвалла хăпарчĕ. Атăлăн ҫутă кăвак ытамне курсан унăн куҫĕ алчăраса кайрĕ, вăл ҫавăнтах аялалла вирхĕнсе анчĕ, тусанлă пит-куҫне ҫуса илчĕ те сывлăшра йынăша-йынăша явăнакан чарлансемпе шывра ишекен пăрахутсене, кимĕсене пĕр хушă сăнаса тăчĕ. Ҫырана улăхсан хăйне кирлĕ ҫурта вăрах шырамалла пулмарĕ, урисемпе лап-лап пусса кăшт ӳпĕнерех утакан хăй ҫулĕсенчи каҫăр сăмсаллă лутака арҫын ачаран ыйтрĕ те, лешĕ ăна училище алăкĕнченех кĕртсе ячĕ.

Ӗлĕкхи мăнастир ҫуртĕнче вĕренӳ класĕсем те, пурăнмалли пӳлĕмсем те пĕрлех-мĕн. Комендант хăйне кăмăллăн йышăннăшăн хĕпĕртенĕ Микулай кĕҫех пĕр шавлă пӳлĕме пырса лекрĕ. Хĕрĕхĕн-аллăн та пур пулас шалта. Кравать айне выртнăскер, кун каҫиччен ывăннипе вăл часах тĕлĕрсе кайса кăтăш пулчĕ.

Микулай кĕлеткине нӳрĕ ҫапнипе вăранса кайрĕ, аллипе йăпăр-япăр хăй йĕри-тавралла хыпашласа пăхрĕ: ун айĕнче чăнах та кӳлĕ! Ҫывăхрах ахăл-ахăл! кулкалани илтĕнет. Куҫне шăлкаласа уҫрĕ те вăл шăл йĕрсе тăракансем хушшинче тӳрех ĕнерхи лутака ачана палласа илчĕ. Ҫӳҫне «чĕрĕпле» кастарнă ашкăнчăк, тĕссĕр ҫутă куҫĕсене сĕмсĕррĕн йăлтăртаттарса ун ҫинелле симĕс чейникрен шыв юхтарса тăрать. Тарăхса кайнă Микулай ҫав самантрах ялт сиксе тăчĕ те ăна ура хурса палт кăна урайне ҫавăрса ҫапрĕ. Чейникĕ кĕмсĕртетсе аяккалла сирпĕнсе кайрĕ.

— Ювеналий, ан парăн! Вĕрент-ха ăна кама пуҫҫапмаллине! — урисемпе тапăртаттарса ҫухăрашрĕҫ юлташĕсем.

Урай ҫумне пăталанă пек персе хĕстернĕ «тăшманне» Караваев кĕлеткипе пĕтĕрĕнсе ҫаврăнма та, аллисемпе ҫапкаланма та памарĕ. Хăйĕнпе тантăш ачасем хушшинче Микулая ҫĕнекен ялта пулманччĕ-ха.

— Вăюпа мухтанас килчĕ-им? Асту ак, хăвăнах макăрмалла пулĕ. Куккине каласа парсан... — ыратакан айăкне хыпашлакаласа пăрăнса кайрĕ «паттăр».

— Юсов куккăшĕ сана пурпĕр училищĕне илтермест. Кĕрсен те «иккĕ» айĕнчен тухаймастăн. Пуҫу пур пулсан халех каҫару ыйт Ювеналирен, хутаҫҫунта мĕн тутли пур, хăнала, ан хĕрхенсе тăр, — сĕнчĕ пĕри.

Караваев йёпе шăлаварне туртса тӳрлетрĕ те вĕсене чышкă çеç кăтартрĕ:

— Ханттарсем валли манăн пĕр кучченеç кăна. Курăпăр ак кам-камне!

Çапла паллашрĕ Микулай Караваев училищĕне килсе çитнĕ пирвайхи талăкрах Ювеналий Юсовпа. Ку хăйне мĕншĕн çавнашкал сĕмсĕрле тытнине те пĕлчĕ: унăн куккăшĕ, чăнах та, кунта ĕçлет иккен.

Вокзалран пĕрле ларса килнĕ, Хĕрлĕ площадьрен училище еннелле çул кăтартса янă çынна экзаменра курсан Микулай пĕрре савăнса кайрĕ, тепре хăраса ӳкрĕ. Çав çын шăпах Юсовăн куккăшĕ-мĕн. Вăл кăтралатнă кăпăшка сарă çӳçлĕ тулли хĕрарăмпа тата сухал ӳстерсе янă ватах мар арçын хушшинче ларать. «Ку — аслăраххи пулас, пĕтрĕм», — сивĕ çапнă пек çӳçенсе илчĕ Караваев.

— Ну, мĕнле, халĕ кăтартатăн-и ĕнтĕ ӳкерчĕкӳсене, — куç хӳрипе кулса Микулай çинелле тинкерсе пăхрĕ Юсов куккăшĕ. — Ирт-ха, кил-ха эппин кунтарах.

Караваев аванмарланнипе ним калама та пĕлмерĕ, пиçиххипе пилĕкрен çыхнă кĕпине туртса тӳрлетрĕ те пир сумкинчи ӳкерчĕкĕсене типтерлĕн сарлака сĕтел çине кăларса хучĕ.

Микулайăн акварельпе, кăранташпа, тушьпе ӳкернĕ картинисене аслă экзаменатор пĕрерĕн-пĕрерĕн тинкерсе пăхса хăйпе юнашар ларакан хĕрарăмпа арçынна кăтартса пычĕ. Çав хушăрах вĕсем хăйсен хушшинче Микулай ăнлансах пĕтермен сăмахсемпе вырăсла пуплесе илчĕç. Экзамен йышăнакансене Караваев ĕçĕсем килĕшрĕç пулас, хăшне-пĕрне çывăхран е катаранах та тытса темиçешер хутчен сăна-сăна пăхрĕç. Вĕсене хăшĕ ытларах кăмăла кайнине те туять ача. Суйласа илнĕ ӳкерчĕксенче вăл амăшĕ çурлапа тырă вырнине, тăпачăпа авăн çапнине, пӳртре пир тĕртнине, тĕрĕ тĕрленине, ашшĕ тимĕрçĕ лаççинче, аслашшĕ верстак умĕнче ĕçленине кăтартса панăччĕ. Вĕсем хушшинче хăйсен пӳрчĕ умĕнчи çăра туратлă лаштра йăмра та пур. Вăрахчен сăнаса пăхкаланă хыççăн экзаменатор Микулая хулпуççинчен хуллен лăпкаса илчĕ, унтан ăна куçĕнчен пăхса çапла каларĕ:

— Маттур, Караваев, чăнах та Турă пани пур санăн. Экзамен валли ятарласа сĕннĕ сюжет тăрăх та питĕ аван

ӳкернӗ, кусем те — ҫавӑн пекех. Ҫут ҫанталӑка лайӑх туйни, ӑна сӑнарлӑн уҫса пама пӗлни сисӗнет. Сӑрӑсемпе, уйрӑмах хӗрлӗ, сарӑ, кӑвак тӗссемпе, ӑста выляма пултарнӑ пек туйӑнать... Мӗн-ха ӗнтӗ, ӑнӑҫлӑх кӑна сунмалла пулӗ.

Хӗрлӗ, сарӑ, кӑвак тӗссем... Ҫак виҫӗ тӗс хӑйшӗн малашне чӑн-чӑн пурнӑҫ илемӗ пулса тӑнине Микулай Караваев училищӗре вӗренме пуҫласан тин пӗтӗм чунӗпе тавҫӑрса илчӗ. Ӳкерчӗк, живопись, композици урокӗсенче пайтах пуҫа ватса тарлама тиврӗ-ха унӑн. Кубик, шар е кӑкшӑм, пӑхсассӑн, — ахаль япаласем ҫеҫ. Ӳкерме тӑрсан ав мӗн те пулин йӑнӑш тӑватӑнах, вӗрентекенрен ӳпкелешӳ сӑмахӗ илтетӗнех. Этем кӗлеткине ӳкернӗ чухне шайлашу мелӗсемпе усӑ курма пӗлмерӗн пулсан алла киҫтӗк те тытма кирлӗ мар.

Ҫуллӑ сӑрӑсем тупса илме питӗ хӗн. Тата сутӑн илме укҫи те ҫук. Стипенди хырӑм тӑрантармалӑх кӑна ҫиткелесе пырать. Кил инҫе пирки унтан пулӑшу кӗтме шутламарӗ те Микулай. Ашшӗ пӗр-икӗ хутчен килсе кайрӗ-ха. Малтан таркӑн ачине шыраса ҫитнӗччӗ. Ывӑлне Каравай Пракухӗ чӗн пиҫиххипе ҫунтарсах яла хӳтерсе таврӑнма шутланӑччӗ. Микулай училищӗне чип-чиперех кӗнине пӗлсен тин майӗпен лӑпланчӗ. Унтан Хресчен ҫурчӗн столовӑйне илсе кӗрсе тӑраниччен апат ҫитерчӗ, кӑшт укҫа парса хӑварчӗ.

Укҫи-тенки шутсӑр хытӑччӗ ҫав вӑхӑтра. Сӑрӑ мар — киҫтӗк те туянаймастӑн. Ҫуллӑ сӑрӑ тивӗҫменрен-ши е ялти шкулта вӗреннӗ чухнех малтан акварельпе ӳкерме пуҫланӑран-ши — Микулай училищӗре те ытларах акварельпе ӗҫлерӗ. Темиҫе кунлӑха яла таврӑнсан вӑл чи малтанах кӳршӗ ачисемпе пӗрле Туҫи рашчине пакша тытма кайрӗ. Янгорчин Йӑванӗн Ваҫки, Кӗҫтенттин Йӑванӗн Ваньки тата Каравай Пракухӗн Микулайӗ мӗн пӗчӗкренех питӗ туслӑ ӳсрӗҫ, пӗр-пӗринчен уйрӑлма та пӗлместчӗҫ темелле. Ванькӑсен ашшӗ ҫул хӗрринчи арманта ҫӑнӑх авӑртатчӗ те, туссем час-часах кунта выляма килетчӗҫ, ҫил лӑпкӑрах чухне арман ҫунаттинчен ҫакланса ҫӳлелле хӑпарса кайма пикенетчӗҫ. Вӗҫес килетчӗ. Ванька пӗчӗкренех уксахчӗ, ҫапах вӑйӑсенче вӗсенчен юлмастчӗ.

Тусанпа сапмалла вылянӑ е пӗвере йыт пуллилле ишнӗ вӑхӑтсем тахҫанах хыҫа юлнӑ ӗнтӗ. Ялти тулли мар вӑтам

шкул хыççăн Ваçкă Янгорчин тăватă çухрăмри Уравăша саккăрмĕш класа çӳреме пуçларĕ, Ванька Костин Çĕрпӳ хулинче библиотекаре вĕренме тытăнчĕ, Микулай Караваев художество училищине кайрĕ.

Тĕл пулнă ятпа вĕсен калаçмалли темĕн чухлех, выляс та, ашкăнас та килет. Микулай юман çине улăхса кайса вĕр çĕнĕ шăлаварах çурса пăрахрĕ. Пакшине тытасси пулмарĕ, лесник хăй ярса илчĕ вĕсене. Çапах та сăлтавне пĕлсен вăл ачасене шеллерĕ те пулас, хăй персе тытнă виçĕ пакшаран пĕрне Микулая парса ячĕ.

Пакша тĕкĕ çемçе, шыва лайăх туртса илет. Сăрра хут çине çăрарах та илемлĕрех хурса пыма пулать ун çăмĕнчен майлаштарнă киçтĕкпе... Çавăнпа ĕнтĕ акварельпе ĕçлекенсем сысна шăртĕнчен тунине килĕштермеççĕ. Пакша çăмĕнчен Микулай хăйне валли çеç мар, училищĕре вĕренекен юлташĕсене парнелеме те темиçе киçтĕк хатĕрлерĕ.

Акварелĕн живопиçри вырăнне халĕ аван пĕлет ĕнтĕ Караваев. Унăн хăйĕн те лирикăллă çепĕç кăмăл-туйăмлă, çутă та уçă сăн-сăпатлă ӳкерчĕксем ăсталас килет, çавсем пирки вăрттăн ĕмĕтленсе пурăнать. Акă вăл чӳречене яри уçса ячĕ те сак çине сăрă курупки хучĕ, куркапа шыв лартрĕ, кăштăркка шурă хут çине вĕр çĕнĕ киçтĕкпе пĕр йĕр турĕ, унтан тепре, татах... Сип-симĕс çеремлĕ йăмраллă урам, лапталла вылякан ача-пăча ушкăнĕ, пĕверен тухса умлăн-хыçлăн çыраналла хăпаракан кăвакалсем, çырма хĕрринчи тăпăлкка йăмра çинелле шухăшлăн пăхса тăракан аслашшĕ кăтра пĕлĕт хушшипе йăлкăшакан сарă хĕвел çутинче чун кĕнĕ пек çуталса пычĕç. Акварель ĕçĕнче йăнăшма юраманнине астуса çамрăк художник питĕ тимлĕ тăрăшрĕ, сăрăсене шăп вырăнлă та виçеллĕ сĕрчĕ, мĕншĕн тесен кунта пĕрре ӳкернĕ йĕрсене хуратса çĕнĕрен юсама пачах май килмест.

Çурăм хыçĕнче аслашшĕ тăнине сиссе Микулай ун еннелле хуллен çаврăнчĕ те, сăнĕ ăшă кулăпа çуталчĕ. Ватă çын мăнукне хулпуççинчен лăпкаса илчĕ.

— Ху çулупах кайрăн пулать-и-ха. Маттур, маттур. Пирĕн йăхра сăрă маçтăрĕ те тупăнчĕ-ха апла. Чăнах та, пурне те пултарать Каравай несĕлĕ, кăкран кăка куçать çав пултару, паркаланса пырать, — терĕ вăл.

Юрататъ аслашшĕне Микулай. Астăвать-ха, пирвайхи

теттесене те ăна вăлах йывăçран ăсталаса панăччĕ. Аслашшĕ саваласа-якатса тунă пĕчĕк урапапа тĕксе çӳренĕ ăна. Микулай хăй те сарайĕнче сава тытма, пуртăпа каскалама унранах вĕреннĕ. Мĕн тĕрлĕ тетте-эреш туман-ши тата вăл сава турпасĕпе çункавран! Çăпата хуçма та ăна аслашшех вĕрентнĕччĕ. Ӳкерчĕксем тума тесен... Кунта ачан пултарулăхне чи малтан асăрхаканĕ Хурăнсурти Пашков пулчĕ. Фронтран аманса таврăннă Иосиф Иванович учительсем çитменнипе ун чухне ялти шкулта ачасене вĕрентетчĕ. Хăй те, ӳкерчĕксем тума юратаканскер, вăл кунта ятарласах сăнарлă искусство кружокĕ уçнăччĕ те, Микулай та вара Пашков «академине» хаваспах çӳрерĕ. Çав тавçăруллă, уçă кăмăллă та канăçсăр чунлă, çивĕч ăс-тăнлă ял интеллигенчĕ сĕнчĕ те кайрантарахпала пĕчĕк Караваева Шупашкарти художество училищине вĕренме кайма. Ашшĕн Микулайран хăйнешкелех тимĕрçĕ тăвасси килнĕччĕ. Апла пулин те лаçра мăлатук çапса ывăннă хыççăн та ывăлĕ алла пурпĕрех кăранташ е киçтĕк тытрĕ. Сунтал çинче туптанакан хĕрнĕ тимĕр ун куçĕнче урăхла тĕспе çиçсе йăлкăшрĕ. Хĕрлĕ, сарă, кăвак тĕссем халĕ ун ăсĕнче пушшех те ытарлăраххăн выляççĕ.

— Ха, мана та сăрласа лартнă тем кунта, — терĕ аслашшĕ мăнукĕ çине ытараймасăр пăхса. — Чим-ха, епле пуçа каçăртса пăхтарнă йăмра çине? Атте-аннене, асаттеасаннене, пĕтĕм йăха-тымара аса илтеретĕн капла.

Микулай ватă çыннăн путса кĕнĕ шывлăрах куçĕнчен ăшшăн тинкерсе пăхрĕ, унтан тин ыйтрĕ:

— Асатте, питĕ пĕлес килет: каласа парайман-и мана хамăр йăх-тымарсем çинчен. Тахçан пĕрре каланăччĕ те эсĕ, халĕ каллех манса кая пуçланă.

Каравай Хĕветучĕ мăнукне хĕвел енчи стена патне çавăтса пычĕ те йăлишĕн тенĕ пек кăххăм-кăххăм ӳсĕркелесе илсе йывăç рамăсенчи сарăха пуçланă тахçанхи ӳкерчĕксем çинелле куçне хĕссе тинкерчĕ. Кам кăна çук-ши кунта!

— Ку акă ман атте Ваçлей Ларlivанч-ха, ăна пĕлетĕн эсĕ, — патша çарĕн салтак тумне тăхăннă хура мăйăхлă, яштака пӳллĕ тăлпан арçын çинелле пӳрнипе кăтартрĕ вăл. — Георги хĕресне туркка вăрçинче илнĕ. Нумай юмахласа кăтартатчĕ вăл хăйсем пăссăрмансене кӳпкени çинчен. Асатте те чĕрĕк ĕмĕрне салтак хĕсметĕнчех иртгернĕ. Ялта

ӑна хисеплесе Лариван Ҫтаппанчӑ тесе чӗнетчӗҫ. Ҫтаппанӗ вара Мир Мирунӗн ывӑлӗ пулнӑ.

— Апла Мир Мирунӗн йӑхӗнчен-ха эпир?!

— Ҫапла, ырӑ йӑхран эпир, мӑнукӑм. Ҫав ӗҫчен те мирлӗ йӑх ятне хамӑрта вараламан, эсир те тасах упрӑр. Шелҫке те, Миров хушамат сыхланса юлайман ҫав.

— Ма тата? — ыйтмасӑр чӑтаймарӗ Микулай.

— Пирӗн, чӑвашсен, ача ҫуралсан хушаматне ытларах чух ашшӗ ячӗпе парасси йӑлара пулнӑ. Ҫавӑнпа хӑш-пӗр килте халӗ те виҫ-тӑват тӗрлӗ хушамат.

— Караваев тени ӑҫтан тухнӑ-ши тата? — каллех ыйтрӗ ача.

— Мӗнле калаҫҫӗ-ха, нуша пылпа кулач ҫитернӗ теҫҫӗ-и? — сухалне шӑлса илсе сак ҫине кайса ларчӗ Хӗветут мучи. — Лӑпах ҫавӑн йышши кулач илсе ҫитернӗ те Ваҫлей Лариванча Чулхулана. Атте унта пӗр хуҫа патне пекарньӑра ӗҫлеме тара кӗрӗшнӗ. Ӗҫлеме ӳркенмен, каланине-хушнине итлекен чӑваш ачине ҫӑкӑр сутти тӑвакан хуҫа хисепленӗ, анчах ӳсерехпе ывӑлӗ вырӑнне хӑйсен Караваев хушамачӗпех салтака панӑ. Хӗсмечӗ вӗҫленсен атте ялах таврӑннӑ, авланса ҫемьеллӗ пулнӑ. Эпӗ, малтанхи ывӑлӗ, ҫуралсан ҫуркуннепе ман ятпа пӳрт умне, ҫырма хӗрне, йӑмра лартнӑ. Халӗ те ӳсет-ха. Ҫӗр ҫула ҫитесси те нумаях юлман. Унччен хамӑн та пурӑнасчӗ-ха.

Ҫапла, хӑй лартнӑ йӑмра пекех ҫирӗп ҫын пулнӑ Каравай Ваҫлейӗ. Хӑлтӑр-халтӑр хура пӳртре, паллах, Чулхулари пек кулач е крентӗл пӗҫерсе курайман вӑл, ҫапах та тӑранса пурӑнмалӑх ҫӑкӑрӗ-тӑварӗ ҫитсе пынӑ. Ҫӗнӗ пурнӑҫ вӑл утмӑл урлӑ каҫсан тин пуҫланнӑ. Революци хыҫҫӑнах Пракух мӑнукӗ ҫуралсан мӗн тери хӗпӗртемен-ши вӑл? Малашне ҫаксем ҫавра ҫӑкӑр хуҫисем пуласса шаннах ҫав ватӑ салтак. Ывӑлӗ, Хӗветут, Ҫӗрпел хресченӗсене пӗр ушкӑна пӗрлештерсен Каравай Ваҫлейӗ колхоз лашисем пӑхма пуҫланӑ. Вӑл вӑхӑтра уйра вӑйлӑ тыр-пул ҫитӗнтерме те, ытти ӗҫе тума та лаша тӗп вӑй шутланнӑ. Ҫавӑнпа ватӑ ҫын колхоз вити патӗнчен татӑлма та пӗлмен. Лашасем лайӑх пӑхнӑшӑн панӑ мухтав грамотисемпе парнисем халӗ те упранаҫҫӗ-ха унӑн. Сехечӗ те паян кунчченех ӗҫлет ав, вӑхӑт таппине пӗлтерсе вӗҫӗмсӗрех пӗр майлӑ сасӑпа тиклетет.

— Хамăр йăха та, кил-йыша та, хăвна ырă тунă пĕр çынна та пурнăçра ан манса кай, мăнукăм. Хисепе хирĕç хисеп, ырра хирĕç ырă тума пĕлсен çеç эсĕ чысра пулăн, — ăс парса шăкăл-шăкăл калаçрĕ Каравай Хĕветучĕ.

Кăнтăрлахи апат хыççăн Микулай Хурăнсура çитсе килме шутларĕ. Хăйĕн юратнă учителĕпе Пашковпа курса калаçасшăн пулчĕ вăл. Анчах лешĕ шăпах тата килĕнче пулмарĕ.

Чул ывăтмалла вылакан хĕр ачасенчен пĕри Микулай çинелле кăн-кăвак куçĕпе тĕсесе пăхса пит тăрăшса тĕпчерĕ:

— Эс кам вара, ман аттене шыратăн?

— Микулай.

— Мĕнле Микулай?

— Караваев. Çĕрпелтен. Иосиф Ивановича питĕ курмаллаччĕ те, ăçта тупма пулĕ-ши ăна?

— Атте уя кайнă, каççăр килмест. Пирĕнпе вылямастăн-и унччен?

— Мĕн ятлă-ха эс? — кулмасăр чăтаймарĕ Микулай.

— Венера. Сикмелле те вылямастăн-и?

— Вăхăт çук çав, чиперккем, тата намăс та мана сирĕнпе тринкки-тринкки сиккелеме.

— Вăхăт тупăнсан килетĕн-и?

— Килĕп, килĕп...

Уйра мар, мастерскойра пулнă-мĕн Пашков, инвалидсене паракан хăйĕн пĕчĕк автомашинине юсанă.

Иосиф Иванович хăй вĕрентнĕ ачаран Шупашкарпа художество училищи тата унта вĕрентекенсем çинчен чылайччен ыйткаласа пĕлчĕ, Микулая итлесе пĕтернĕ хыççăн хаш сывласа илчĕ те хавхалантарса каларĕ:

— Пурнăç çăмăлах мар пулсан та вĕренмех тăрăш, Караваев. Эпĕ те ĕлĕк çав училищĕнех вĕренме кĕресшĕнччĕ те, йăлтах вăрçă таптаса лапчăтрĕ. Куратăн-и, май килмерĕ акă. — Унтан хушса хучĕ: — Мухтаса каламастăп: санран лайăх художник тухма кирлĕ. Чун туять çакна. Асту, ура утать пулсан çитес çĕре çитетĕнех...

Шупашкара таврăннă чухне Караваевăн вĕренес, лайăхран лайăх ӳкерес, мĕн шухăшланине тăвас ĕмĕт пушшех

вăйланса çирĕпленчĕ. Пĕр курсри тусĕсене вăл пакша çăмĕнчен тунă киçтĕксем парнелерĕ. Ювеналий Юсова та сĕнсе пăхнăччĕ, анчах лешĕ тиркевлĕн çеç тутине пăрчĕ.

— Лăпăр-лапăр самоделкăсем кирлĕ мар пире, кукки мана Финляндире тунине тупса парать, — аллипе мăн кăмăллăн сирчĕ вăл Микулай парнине.

Караваев куншăн хытах кӳренчĕ пулин те, сăмах шарламасăр ирттерсе ячĕ.

Пĕр курсри ачасем Юсова, ячĕпе ашшĕ ячĕн малтанхи сас паллийĕсене уйăрса, ыт ахальтен çеç ЮС тесе каламастчĕç пуль çав. Юс Юсов кунран-кун пĕрле вĕренекен юлташĕсенчен юсса пычĕ, хăйне ыттисем умĕнче мăнна хума пуçларĕ, куккăшне шанса чапа тухмалли çăмăл çул çине тăчĕ. Вăл ĕнтĕ час-часах вĕрентекенсен ури хушшинче пăлтăртатса çӳрекен пулчĕ, пуринчен ытла республикăри е хулари пысăкрах пуçлăхсен портречĕсене ӳкерме тăрăшрĕ.

«Пурнăçпа искусство чиккине çитмесĕр никам та хăйĕн тĕллевне пурнăçлаймасть». Итали скульпторĕ тата живописецĕ Буонарроти Микеланджело вун улттăмĕш ĕмĕрте каланă çав питĕ ăслă сăмахсене Микулай Караваев кун кĕнекине шултра сас паллисемпех çырса хучĕ, яланлăхах ăса хыврĕ. Чаплă художник произведенийĕсенчен вăл сăнарсен капмарлăхне, килĕшӳлĕхне, драматизмне чун патне çывăха илме, этем вăйĕн, çыннăн шалти кăмăлĕпе шухăш-туйăмĕн илемне юратма, унăн нихçан сӳнми хăватлă пултарулăхне курма вĕренсе пычĕ.

Яла кайса килмессеренех Караваев училищĕне пĕр-пĕр интереслĕ тарăн шухăшлă ӳкерчĕкпе таврăнать. Иртнинче те акă живопись урокĕнче: «Караваевăн «Пирĕн ял урамĕ» ӳкерчĕкĕ ăста çырнă кĕске калав пекех чун-чĕрене витерет», — тесе хак пачĕç.

Атăл çыранĕсенче ӳкерсе мĕн чухлĕ вăхăт ирттермерĕ-ши вăл тата? Пейзаж та çав тери кăмăла каять ăна. Çут çанталăкпа, тăван йĕри-тавралăхпа унăн чĕрĕ çынпа калаçнă пекех чунтан калаçасси килет. Çапах чи юратни унăн — этем. Çыннăн ăшри туйăмне, хавхаланăвне, ĕмĕт-шухăшне, хуйхи-суйхипе савăнăçне курăмлă, пурне те ăнланмалла ӳкерсе кăтартас тĕллев канăç памарĕ çамрăка Шупашкарта вĕренсе пурăннă пилĕк çул хушшинче. Çыннăн ĕçĕ, хастарлăхĕ унăн пултарулăхĕнче чи кирлĕ тĕп тема вырăнне

çирĕпленчĕ. Экзаменсем тытнă чухне акă ăна ӳкерчĕкпе те, живопиçпе те, композиципе те, ытти предметсемпе те «пиллĕк» паллăран кая лартса пама пĕр вĕрентекен те алă çĕклеймерĕ.

Диплом ĕçĕ валли Микулай «Пăравус машинисчĕ» ятлă картина хатĕрлерĕ. Уншăн вăл ятарласах Канаша кайса килчĕ. Юсова ав училище директорĕн портретне ӳкересси ытларах илĕртрĕ.

— Нимĕн те калаймăн, юс тăк юсах çав эс, Ювеналий, — терĕ ăна куçранах пĕррехинче Караваев. — Пĕлетĕн мĕнле майпа кам кăмăлне юраса училище пĕтермеллине.

— А какшĕ! — хур аçи пек пуçне каçăртса кулчĕ Юсов. — Пĕлес пулать пурăнма. Портрет вăл нихçан та пĕтмĕ, авалхи чаплă çынсен сăнĕсем халĕ те ав тĕнчене тĕлĕнтереççĕ. Сан пăравус машинисчĕ пек примитивсем паян пур та — ыран çук, ӳкерекенĕн ячĕ-шывĕ те унпа пĕрлех манăçать. Пуласлăха ăна витĕртерех курма пĕлес пулать-çке-ха, Каравай...

— Калама калатăн та, Ювеналий, ăнланмастăн: нивушлĕ эсĕ хăвна çав вилĕмсĕр портрет-картинăсене чун кĕртнĕ ăстасен шайĕнче тесех шутлатăн? Паллах-ха, вĕсен ялкăшса тăран çути кирек хăш художникăн юнне те вĕрилентерсе ярать ĕнтĕ, вĕсене курсан кирек камăн та ĕçлес те ĕçлес килмелле. Мана хама та килĕшет портрет теми. Анчах... сан пек йăпăлтатса юрас, ырă пулас тесе сăнсем çырмастăп эпĕ, чи малтанах ĕç çынни çинчен мухтав юрри шăратма тăрăшатăп. Ан хăра, вилсех вилмĕç-ха ман геройсем те. Кăмрăк тусанĕпе витĕннĕ çирĕп те хăюллă питкуçлă çак ĕçчен мана пуйăспа Шупашкара илсе çитернĕччĕ. Вăл пилĕк çул хушши тухма пĕлмерĕ ман асăмран. Халĕ эпĕ ăна хама чугун çулпа илсе килсе пурнăçăн тĕрĕс çулĕ çинех тухма пулăшнăшăн тав тăвасшăн. Манăн та хамăн çавăн пекрех пуласчĕ.

Картинăна экзаменра пысăк хак пачĕç. Портрет выставкăна та лекрĕ. Каярахпа Караваев ăна геройне хăйне парнелерĕ.

Ашшĕ-амăшĕпе аслашшĕн ĕçне сăнласа кăтартнинчен вăй илме пуçланă тĕп тема унăн пултарулăхĕнче, çак картинăра татах аталанса, унччен хинчен те çӳлерех шая çĕкленчĕ. Унтанпа мĕн чухлĕ ӳкермен ĕнтĕ вăл, çапах та

малтанхи ӳсĕм уншăн чылай кайран та чи пысăкки пек туйăнать.

Училищĕрен вĕренсе тухнă çамрăксенчен хăшĕ-пĕри кĕçех шкулсенче черченипе ӳнер урокĕсене вĕрентме пуçларĕ, теприсем художник-оформительсем пулса тăчĕç. Караваевăн малалла та вĕренесси килетчĕ. Мускаври е Ленинградри пĕр-пĕр аслă училищĕне, института чун туртнăччĕ, çапах та хăй тĕллĕн кĕме вăй çитессе шансах пĕтереймерĕ, ыйтса çырма хăюлăхĕ те çитеймерĕ курăнать. Çав çулхине шăпах та Ленинграда пĕр талантлă çамрăка вĕренме яма ыйтнăччĕ. Анчах Караваев унта лекеймерĕ. Куккăшĕ тăрăшса çӳренипе И.Е. Репин ячĕллĕ Живопись, скульптура тата архитектура институтне вĕренме кайма Культура министерстви Ювеналий Юсова сĕнчĕ. Микулая вара кĕçех салтака илчĕç.

Çар хĕсмечĕ çамрăк художникшăн хăйне майлă пурнăç шкулĕ пулса тăчĕ. Кунта вăл вăхăтпа перекетлĕ усă курма вĕренсе çитрĕ, пушăрах самантсем тупăнсанах мĕн те пулин ӳкерме тăрăшрĕ. Çав ӳкерчĕксемпе картинăсен репродукцийĕсенчен хăшĕ-пĕрисем çар хаçачĕсемпе журналĕсенче те пичетленкелерĕç. «Тăванла масар çинчи тупа» картина вара çар художникĕсен Мускаври куравне те тивĕçлĕ пулчĕ. «Халăх кĕрешĕвĕн драматизмне, совет салтакĕн паттăрлăхне, ăрусен иксĕлми çыхăнăвне, малашлăх шанăçне хăйне евĕр уçăмлă, философилле тарăн шухăштуйăмпа ĕненмелле уçса пама пултарнă автор», — тесе çырнăччĕ «Красная звезда» хаçатра пĕр искусствовед çак картина пирки. Паллах, хăй нихçан курман-пĕлмен çынна пĕлĕте çити хăпартса ярас тĕллев тытман ĕнтĕ вăл, хăшнепĕрне ав хытах та критиклесе илнĕ. Çав статья хыççăн Караваев пушшех те лайăхрах ӳкерес ĕмĕт-тĕллевпе хавасланса ĕçлеме тытăнчĕ.

Салтакран таврăнсан Микулай Мускава кайса пăхма шутларĕ. Документсене малтанласах унти В.И. Суриков ячĕллĕ художество институтне ярса пачĕ.

Чăваш çамрăкĕн малашнехи шăпине пĕтĕмпех «Тăванла масар çинчи тупа» татса пачĕ. Экзамен йышăнакан Викентий Матвеевич Стариков профессор теори ыйтăвĕсемпе мар, ытларах çак картина пирки хĕрсе кайса калаçрĕ, унăн

çитменлĕхĕсене хытă шĕкĕлчерĕ. «Пĕтрĕм, çумлать кăна: тĕкне-çăмне те хăвармарĕ»,— сехĕрленсе шухăшларĕ хăй ăшĕнче Микулай. Вăл пăрахса утас патнех çитнĕччĕ, темле çеç чăтăмлăх çитерчĕ.

— Ытлашши тăрăнать тесе ан кӳрен, çамрăк çыннăм, — хĕрелнĕ куçĕсене куçлăхне хывса шăлса илчĕ Стариков юлашкинчен. — Çирĕпрех ура çине тăтăр, шăла çыртса хастар ĕçлетĕр тесе хытăрах каларăм сана, — айккинерех утса кайса картинăна каллех пуçне пăркаласа пăхса илчĕ вăл. Унтан тӳрех хушса хучĕ: — Таланту пур. Шухăша шăпах катан пир çинче сăрăпа чĕртме пултаракан санашкал çамрăк ăстасем кирлĕ пире. Искусство япалине чăмăртаса, унран сăнарлăх вăйĕ хĕмлентерме пултаратăн. Çапла, вăйлă композицисĕр ӳкерчĕк е картина — сăрă купи çеç. Эсĕ — художник.

— Тавтапуç... ырă сăмахшăн, — пĕр хушă ним калама аптраса тăчĕ пĕтĕм çан-çурăмĕ ăшăрхаса кайнă Микулай.

— Çапла, паянтан эсĕ суриковец пулса тăтăн, — тинех кăмăлĕ çемçелчĕ профессорăн. — Сана хам пата мастерскоя илетĕп. Килĕшетĕн пулĕ?

Пăлханса ӳкнĕ Караваев пĕр хушă чĕнмесĕр тăчĕ, унтан пуçне тайса тав турĕ те салтакла вăрт кăна çаврăнса çирĕп утăмсемпе алăк патнелле утса кайрĕ.

Абитуриентсем хушшинче тĕрткелешсе çӳренĕ май Микулай çак пĕтĕм тĕнчипе паллă аслă шкула е Художниксен союзĕн вырăнти организацийĕсем сĕннипе, е камăн та пулин витĕмлĕ алли пулăшнипе çеç кĕме май пур пек ăнланнăччĕ те хытах пăлханса ӳкнĕччĕ. Анчах ку суя сăмах кăна пулнине вăл кĕçех ăнкарса çитрĕ, институт алăкĕсем чăн-чăн талантлă çынсемшĕн пуриншĕн те уçах-мĕн, çав шутра — Караваевшăн та.

Институтра вĕреннĕ çулсем уншăн усăсăр иртмерĕç. Пайтах çĕннине пĕлчĕ вăл çак хушăра, илемлĕх тĕнчин тĕлĕнтермĕш вăрттăнлăхĕсене ытларах та ытларах ăнланса пычĕ. Çунатлă ĕмĕтсен асамлă тыткăнне лекнĕскер хăйне темле чуна тăвăрлатакан йăлмак хытăрах та хытăрах йăлăласа илнине те туйрĕ. Хăйсене ăсталăха вĕрентекен, хăй кăмăллакан Стариков проф ссор хĕрĕ Эмма пĕрремĕш курсрах ăна юрату серепине çаклатрĕ те диплом илнĕ хыççăн

та хăйĕнчен вĕçертмерĕ. Пĕрлешсех те пĕтеймерĕç-ха вĕсем, уйрăлса та каяймарĕç. Вăхăт пушăлла хăлтăртатса иртет.

Акă паян та «Метрополь» ресторанра çур çĕрччен шавласа ларнă хыççăн йĕркеллĕ çывăрса та канаймарĕ Микулай Караваев. Институтран вĕренсе тухнăранпах вăл юлташĕ патĕнче тĕккелешсе пурăнкалать-ха. Лешĕн хваттерĕ пысăк. Микулай валли те ав уйрăм пӳлĕм пур. Пĕтĕмпех ямăтти çинче иртĕхсе ыр курать юлташĕ, пуян пурăнать. Ашшĕ Внешторгра ĕçлет, амăшĕ — универмаг директорĕ. Мĕн кăна çук пулĕ вĕсен, пурнăçĕ юмахринчен те чаплăрах темелле. Телейĕ çеç çук шеремет çыннисен: пĕртенпĕр ывăлĕ пăсăлса кайнă. Художество институтĕнче Микулайпа пĕрлех вĕренчĕ-ха вăл, диплом та илчĕ, ячĕшĕн илемлетӳ мастерскойне ĕçе вырнаçрĕ те хăйне пĕтĕмпех ирĕке ячĕ. Кашни кун ĕçкĕ çине ĕçкĕ, савăк каçсем... Ĕçлесе илнĕ е аякран тупкаланă укçи-тенкине Микулай хăй те сисмесĕр тăкса-салатса пĕтерет, ун хыççăн вара юлташĕ шучĕпе пурăнать. Лешĕ, уçă кăмăлласкер, ăна-кăна нимĕн те шутламасть, уншăн нимĕн те хĕрхенсе тăмасть. Хусах пурнăç савăккăн юхса иртет. Профессор хĕрĕ те, Эмма, вĕсемпе пĕрлех тилĕ хӳри пек çапкаланса çӳрет. «Ăçта кайса çĕтрĕ-ши унчченхи çирĕплĕх? Каплах тайкаланма тапратсан ним мар çĕре хаплатса ӳкме пулать. Текех ура çине тăрасси те пулмĕ, çаплипех пĕтĕн. Юсов йышшисемшĕн савăнăç кăна ку. Çук-ха, юрамасть капла, епле пулсан та хама хам алла илмеллех, кăтартса памаллах кам камне! Çапла та-ха вăл, анчах... вăй хавшать, кĕлетке ленчешкеленет, йывăрлăха çĕнтерсе ĕçлес килми пулса пырать». Канăçсăрлантарать çак шухăш ăна.

Ирхине Микулай илемлетӳ мастерскойне ĕçе кĕрсе тухрĕ те мухмăр чĕртме тӳрех Кивĕ Арбатри сăра барне кайрĕ. Кунта ăна тепĕр художник тĕл пулчĕ. Эрмен коньякне çĕршер грамм тĕпленĕ хыççăн çак çатăлти ĕçкĕç аллисемпе хăлаçлана-хăлаçланах модернизм юххине юхтарма пуçларĕ, унтан кĕçех поп-арт («пурне те ăнланмалли искусство») патне çитрĕ. Илемлĕ сăнарлăх саккунĕсене пăхăнмасăр живописçри, скульптурăри тата графикăри ĕмĕртен çирĕпленнĕ мелсене сивлесе ним çыхăнусăр майлаштарнă, куçа мĕн курăннă çавна чыхса тултарнă лăпăр-

лапăра чунĕпе чăтма та пултараймасть Караваев. Ку тата хăйĕн абстрактлă ăнланăвĕсемпе хăлхана йăлăхтара пуçларĕ. Çавăнпа унăн пĕртте çак модернистпа павраса тăрас килмерĕ, хăвăртрах унран хăпса кайса уçă сывлăшра уткаласа çӳрес килчĕ. Лаврушин тăкăрлăкне çитсен тин вăл хăй паян Третьяковкăна кайма шутлани çинчен аса илчĕ.

Мускав юхан шывĕ патĕнчен пăрăнсан Микулай пĕр тапхăр ватă тирексемпе çăкасене ытараймасăр пăхса пычĕ. Сип-симĕс ешерекен йывăççем чуна уçăлтарса янă пек пулчĕç. Галерея патне çывхарса пынă май вăл унăн хуçи çинчен мĕн пĕлнине аса илчĕ. Чăнах та, искусство паттăрĕ пулнă Павел Михайлович Третьяков. Хăй пир-авăр усламçи пулин те вăл ĕмĕр тăршшĕпе вырăс художникĕсен картинисене пухса пынă, вилес умĕн вĕсене Мускав хулине парнеленĕ. Акă вăл — Третьяковсен авалхи çурчĕ, Лаврушин тăкăрлăкĕнчи вуннăмĕш çурт. Пăх-ха ĕнтĕ, епле капмаррăн сарăлса ларать вăл эрешлĕ тимĕр карта хыçĕнче. Шалта, çирĕм улттăмĕш залра, Третьяков портречĕ те пур. Тĕлĕнмелле ăста ӳкернĕ иккен ăна чаплă Репин. Çак портрет умĕнче Караваев сахал мар пĕр тĕлĕнсе те ăмсанса пăхса тăнă. Третьяков паллă художниксене, çав шутра Илья Ефимовича та, Раççейри мухтавлă çынсен сăнĕсене историшĕн, вырăс халăхĕшĕн ӳкерттерсе юлма тăрăшнă. Вĕсене вăл ĕмĕр-ĕмĕрлĕхе упраса хăварнă. Çавна пула Микулай та паян ытти нумай-нумай çынпа пĕрле илемлĕх тĕнчин аслă керменне кĕме пултарать, искусствăн яланхи чĕрĕ те вĕçĕмсĕр улшăнса тăракан сăнне çĕнĕрен курать.

Галерейăн аллă пĕр залĕнче те пулнă вăл. Миçе хутчен-ши? Ăна астумасть, астума та пултараймасть. Кашнинчех вăл унтан ӳсĕр çын пек тайкаланса тухать. Пуçĕ вара тĕрлĕ шухăшсен кĕрешĕвĕпе минреме тытăнать. Хăй Мускавра çак таранччен пурăнса та пĕр путлĕ картина та ӳкерейменшĕн тарăхнипе-куляннипе чунĕ вĕчĕхсе йĕрет унăн, чĕри пăчăртанса ыратать. Юлташĕсемпе искусство çинчен пустуй пакăлтатса, киçтĕкпе кирлĕ-кирлĕ мар япала сăрласа хаклă вăхăта усăсăр çунтарать мар-и? Пуçĕнче,чăн та, темле сĕрĕм еверлĕ япала явăнать тейĕн. Пĕр уçăмлă, таса, çулăмлă шухăш та тĕвĕленеймест. Çĕкленеймест алă хăюллăрах шухăш патне. Çук, çитеймест вăл унта. Профессор хĕрне тем тĕрлĕ те — лартса та, тăратса та — ӳкерсе

пăхрĕ ĕнтĕ вăл, анчах çав-çавах Эммăн чуна илĕртмелле портречĕ пулса пĕтеймест. Пир çине ирĕксĕртен витĕннĕ сăрă вара пурнăç тĕкĕрĕнче тĕксĕммĕн курăнать. Ахальтен мар ĕнтĕ Микулайăн хăйĕн ĕçне куçпа та курас килми пулчĕ. Çавăнпах-тăр вăл паян çакăнти кермене çул тытрĕ.

Шала иртсен Микулай хăй сисмен çĕртенех вун улттăмĕш зала çитсе кĕчĕ. Пуçне ерипен çĕклерĕ те куçне чармакласа пăхрĕ. Ун умĕнче — Саврасов «куракĕсем». Чун-чĕрене тыткăнласа хумхантаракан çак картина хăй вăхăтĕнче тăван çĕршыв живописĕн çĕнĕ йĕрне уçнă, лирикăллă пейзаж пуçламăшĕ пулнă. Ахальтен мар ĕнтĕ художник пултарулĕхĕн чи çӳллĕ тӳпи шутланнă вăл. Миçе мĕльюн çын киленмен-ши унтанпа Кострома тăрăхĕнчи çав лăпкă кĕтес илемĕпе? Ниепле те вăрахчен куç илме хăяймасăр иртеймест ун патĕнчен Караваев. Тĕссен килĕшĕвĕ уйрăмах ытла та вырăнлă пулса тухнă. Хăмăр кăвак тата шурă кăвак тĕссем çутăпа тата тĕксĕм вырăнсен ылмашăвĕпе пĕрлешсе ӳкерчĕке пушшех пурнăç чĕрĕлĕхĕ кĕртеççĕ. Мĕн чухлĕ вăрах пăхать, çавăн чухлĕ ытларах та ытларах туять Микулай çĕнелекен çĕрĕн, çурхи çанталăк сывлăшĕн сиплĕ техĕмне. Хăлхана чиркӳ чанĕн сасси, кураксен шавĕ килсе кĕнĕ пек. Тăван ял, пӳрт умĕнчи çырма, çырмари йăмрасем куç умне туха-туха тăраççĕ. Чĕре сиксе тухасла кăртлатса тапма пуçлать. Халех, çак самантрах юратнă тăван вырăнсене çитсе унти çут çанталăк илемĕпе чун каниччен киленес килет. «Саврасов пек ӳкересчĕ, хам мĕн курнине чĕррĕн ун пекех, сăнарласа кăтартасчĕ. Çавăнпа яла, яла кăна тухса вĕçтермелле. Çуркуннен чунне «Кураксем килнĕ» картинăринчен кая мар уçса кăтартмалла. Хăçан-ши? Умра ирĕклĕх курăнмасть-ха. Пĕтĕм алăурапах çыхланса лартăм ку Мускавра. Хулари эрешмен картийĕ пур енчен те карса илсе чăлхантарчĕ».

Шухăша путнăскер, вăл пуçне чиксе тепĕр еннелле утса кайрĕ. Яланхи хăнăхнă йăлапа хальхинче те вун саккăрмĕш залра чарăнса тăчĕ, хăйне такам хулĕнчен хуллен пырса тытнипе шартах сикрĕ.

— Сывă-и, Микулай!

Куçне мăчлаттарса пăхрĕ те Караваев хăй умне юмахри пек пĕр кĕтмен çĕртен тухса тăнă Янгорчина ыталаса илчĕ, сухаллă янахĕпе темиçе хутчен тусĕн питĕнчен сĕртĕнчĕ.

— Вăт тĕлпулу та вара, — сывлăш çаврăнă май кăшт аяккарах туртрĕ ăна Караваев. — Эсĕ ăçтан, мĕнле майпа килсе тухнă кунта, Ваçкă? Охо, депутат иккен-ха. Сессире апла. Çапла-и?

— Тĕрĕсех. Эх, ялан вăхăт çитмест. Кашнинчех Третьяковкăна килсе курма шутлаттăм, мĕн тăвăн-ха, май килмест ниепле те. Паян чăтса пулмарĕ, тухрăм та килтĕм акă. Телейне пăх та Мускава кай тесе ахальтенех каламан пуль çав. Акă санпа та тĕл пултăм. Урăх чухне шыраса та тупаяс çук. Таçта çухалтăн эсĕ, çыру та ямастăн, яла та пырса курмастăн. Тем ĕçлетĕн ĕнтĕ. Вăрттăн ӳкерсе пурăнмастăн пулĕ? — йĕплесе илеймесĕр чăтаймарĕ Янгорчин.

Караваев тăваткал сухалне ывăçĕпе çатăрласа тытрĕ, тусĕ умĕнче аванмарланнипе ĕнсине хыçса иленçи турĕ те унтан тин çурăк сасăпа каларĕ:

— Куç кĕреттĕн те, вăрттăн та ӳкерместĕп. Киçтĕк сăрă тĕсне тупаймасть. Киçтĕк вĕçĕнче пурнăç ташши кĕрлеместь. Тăвăлсах çитрĕм. Сана курманни те, Чăвашра пулманни те миçе çул... Хам та пĕлместĕп, тем лăпăртатса пурăнатăп çут тĕнчере. Тин кăна-ха Саврасов «куракĕсемпе» киленсе кил шухăшĕпе вĕçрĕм. Ăшра ял туйăмĕ çуралнă пек пулчĕ. Ӳкерес килсе кайрĕ, ирĕклĕн, анлăн çырас килсе кайрĕ. Киçтĕкпе сăрăсем çеç кирлĕ халь. Çакăнтах сăрă çине сăрă хума, йĕр хыççăн йĕр тума тытăнмалла.

— Тытăн çав, тытăн, тусăм, — çурăмĕнчен çупăрласа лăпкарĕ ăна Янгорчин. — Ак çакăн пек хӳхĕм картинăсем çыр. Кур-ха, сăна Шишкинăн «Ырашне»? Мĕн тери илем унта! Тырри тата мĕнле, чăн ылтăн! Хырĕсем епле капмар! Ытарма çук янкăр тăрă тӳпе. Тырă пуссине кукăрăлса кĕрекен урапа çулĕ — пурте, пурте çаксем хамăр ял хыçне аса илтереççĕ. Ырашĕ те, хырĕсем те, урапа çулĕ те... Паçăрах, сана куричченех, утас килсе кайнăччĕ çав çулпа. Темиçе кун хушшинчех тунсăх пусса çитерчĕ. Савăнас, хĕпĕртес килет тăван çĕр пуянлăхĕшĕн. Атя, тусăм, иксĕмĕр пĕрле утăпăр çав çулпа. Ял кĕтет сана, Çĕрпел. Тăван ен çынни кĕтет. Ӳкерттересшĕн эпĕ сана, нумайнумай ĕç тутарасшăн. Çавăнпа мĕнле те пулин курса калаçасчĕ тесе шутларăм. Шырамасăрах шăп кирлĕ çĕрте тĕл пултăмăр ак. Атя, кĕрсе кай çав çулпа. Кĕр те нихçан та ан пăрăн унран. Ялта картина галерейи уçăпăр. Ăна сан

ĕçӳсем пуçласа ярĕç. Самаях пысăк та хӳхĕм кермен тума тытăнтăмăр. Унта картинăсем валли те зал пулать.

Караваев пăлханнипе ăна нимех те татса калаймарĕ. Шишкин картинисем умĕнче вăрахчен чарăна-чарăна тăнă май аслă художник пултарулăхĕ çинчен чылай тĕплĕн каласа пачĕ. Василий Иванович ăна самантсерен пӳлкелесе те илчĕ:

— Кур-ха, ку сана Хурăнсур вăрманĕнчи хырлăха аса илтермест-и? Еплерех çуталса лараççĕ вĕсем хĕвел пайăркисем ӳкнипе. Ха, кусем тата каснă лартнă Туçи рашчинчи юмансем пек. Астăватăн-и, иксĕмĕр унта çырлана кайсан çумăр айĕнче епле йĕпентĕмĕр?

Ваçкă çăвар тулли тикĕс те тӳрĕ шăлĕсене кăтартса кăлтăртатса кулкаласа илет, пуçне ухса хура хăмăр çӳçне каялла ывăтать, аллисемпе саркаланса калаçать. Сăмахĕсем илĕртӳллĕн, ĕненмелле, шанчăклă тухаççĕ. Тыткăнлакан чĕлхи кăмăла уçать, хăй патне туртать. Унăн калаçăвне такам та ирĕксĕрех хутшăнмалла, вăл каланине итлемелле, шантарнине ĕненмелле. Караваев ăна залсем тăрăх кăтартса çӳрерĕ, хушăран хăш-пĕр картина пирки кăштах тавлашса та илчĕç. Янгорчин сăнарлă искусствăна йăлтах ăнлансах пĕтереймесен те ăна пĕтĕм чунтан юратни сисĕнет. Ахальтен ĕмĕтленмест пуль хăйĕн тăван Çĕрпелĕнче те илемлĕх тĕнчи уçма. Юлашки залсене курса пĕтернĕ чухне тусĕ Микулая сăмсаран шакканă пекех хытарса каларĕ:

— Куратăн-и, çынсем епле ĕçлеççĕ? Хамăр вăхăтри художниксем те авалхи йăласене питĕ ăста аталантарса пыраççĕ. Тиркемелли çук, пурте маттур. Пĕр экспонат çитеймест-ха кунта.

— Пушă вырăн курмастăп-çке, — тавçăраймарĕ ентешĕ.

— Эпĕ чăваш халăх художникĕ Николай Караваев чаплă ӳкернĕ картина пирки калатăп, — ун çинелле тăрăхланă майлăрах кăн пăхса илчĕ Янгорчин.

— А-а, — терĕ Караваев йăл кулса, çавăнтах сăнĕпе тĕксĕмленчĕ. Намăс пулса кайрĕ ăна çак самантра тусĕ умĕнче. Пурнăçа ку таранччен пушăлла ирттерсе пыни ăна хăйне тарăхтарчĕ.

— Эсĕ мана капла галерейăран тухиччен СССР халăх художникĕ те тăвăн-ха, академика та çитерсе лартăн, — шӳте шӳтпех тавăрма пăхрĕ вăл.

— Юрамасть-им? Эсӗ мӗнрен катӑк-ха ыттисенчен? Талантсӑр теме чӗлхе ҫаврӑнмасть. Пашков та калатчӗ. Пӗлетӗн-и, эсӗ училищӗре вӗреннӗ чухне ӳкернӗ «Пирӗн ял урамӗ» картинӑна вӑл аҫунтан ыйтса илсе Хурӑнсур клубне ҫакса хучӗ. «Ку картина вӑл пирӗншӗн, «Шурӑмпуҫ» колхоз ҫыннисемшӗн, — тет хавасланса, — шурӑмпуҫ ҫӑлтӑрӗ пекех ҫутӑ, ҫывӑх». Мухтансах мухтанать санпа вӑл, сана ай ырлать. Мускавран таврӑнмассеренех: «Микулай Караваева курмарӑн-и унта?» — тесе ыйтать. Хальхинче хӗпӗртеттерме пултаратӑп ӗнтӗ. Ав мӗнле хисепре эс, Микулай де Каравай. Кам ӑсласа тупнӑ куна, ӑна пӗлместӗп те, — ялта ҫаплах калаҫҫӗ сана.

— Ан та кала-ха, — хӗрелсе кайрӗ Караваев. — Капла эсӗ мана ҫӳл тӳпене ҫитиех хӑпартса яратӑн мар-и? Ӗлӗк ӑна чаплӑ ҫынсене уйрӑмах хисеплес тесе хушамат умне итальянсем «да», французсем «де» сӑмах татӑкӗ палӑртса хунӑ: Леонардо да Винчи, Оноре де Бальзак... Питӗ янравлӑ!

— Санӑн яту та чаплӑн илтӗнет тӗнче культурин питӗ паллӑ маҫтӑрӗсем хушшинче. Ху темле шутлатӑн та, эпӗ ак эсӗ яла таврӑнасса, ҫав ята чӑннипех тивӗҫессе шанатӑп-ха. Таврӑн Чӑваш енне, Микулай. Хӑвӑн пӗтӗм талантна парса ӗҫлесен тӑван халӑх сана темле ятпа та чыслӗ. Уншӑн чунна парса тӑрӑшас пулсан ҫеҫ тулькkӑш. Ӑнлантӑн-и? Атя кайрӑмӑр халь ман пата. Хӑна ҫуртне. Апата.

Чуна тӑвӑрлакан тунсӑх таҫта вӗҫсе ҫухалчӗ Караваевӑн. Тусӗпе калаҫни, кулни, шӳтлени, юнашар утни уншӑн халӗ тӗнчере чи ырри пек туйӑнчӗ.

Василий Иванович «Российӑра» пурӑнать. Номерӗ, чӑнах та, чаплӑскер. Арӑмӗпе телефонпа калаҫса илчӗ. Кунта киличчен кӑшт маларах ҫеҫ Гали виҫҫӗмӗш ывӑл ҫуратнӑ-мӗн. Пурин сывлӑхне те ыйтса пӗлчӗ, пурне те Микулайран салам каларӗ.

Тумбочка ҫинчи хаҫата тытнӑ Караваев «В.И. Янгорчин депутат сӑмахӗ» тесе ҫырнине асӑрхарӗ. Ӑна вӑл ҫав самантрах куҫӗпе йӗрлеме пуҫларӗ.

— Каҫар, шухӑшламанччӗ те. Ав мӗнле иккен, — тӗлӗннипе, хӑйне хӑй шанмасӑр тенӗ пек, хулпуҫҫийӗсене сиктерсе илчӗ Микулай. — Ара-ҫке, вӑйлӑ ҫӗклерӗн хамӑр

колхоз ятне. Авӑ епле, пӗтӗм ҫӗршыв, тӗнче умӗнче мухтатӑн «Шурӑмпуҫне». Тата... ҫунтарса та илнӗ-ха хӑшӗсене.

— Юрӗ-ҫке, ытлашши ан мухтаса тӑк, Микулай. Халӑхӑн суйламаллах пулнӑ-ҫке-ха кама та пулин — вӑт суйларӗҫ... Халӗ хӑть вилсе вырт та — манӑн вӗсен шанчӑкне тӳрре кӑлармаллах. Паллах, вӗсемшӗнех тӑрӑшса май килнӗ чух усӑ курас терӗм хамӑр парламент трибунипе.

— Хӑватлӑ, пӗтӗм Раҫҫей, пӗтӗм ҫӗршыв анлӑшӗпе кирлӗ ыйтусем...

— Мӗн-ха, каласах терӗм чӗлхе ҫине килнӗ сӑмаха. Чӑн та, нуши ишсе тухмалла мар нумай. Акӑ ҫӗнӗ йышши сортсем пиркиех калаҫатӑп. Пирӗн ҫӗршывра вӑйлӑ пулакан тӗш тырӑпа ҫӗр улми сорчӗсем пур. Хӑй вӑхӑтӗнче генетикӑна ҫул памасӑр лакса лартӑмӑр пулин те хастар селекционерсем ҫӗнетсе пачӗҫ пире. Анчах вӗсене халӗ мӗнле пӗлетпӗр, ҫапла ҫеҫ тупкалатпӑр. Кунсӑр пуҫне агротехникӑна та лайӑххӑн пӗлсех пӗтерместпӗр. Ҫавӑнпа Вӑтам Атӑл тӑрӑхӗнче тӗш тырӑ сорчӗсем ҫӗнетекен, туллин усӑ курма вӗрентекен наукӑпа тӗпчев институчӗ кирлех. Химиксем те ял хуҫалӑхӗ умӗнче парӑмра. Ялта автотранспорт ҫитмест. Юсама запас пайӗсем ҫук. Вун икӗ автомашинӑран ҫуррине халех хӑть тимӗр-тӑмӑра яр. Сӑмахран, акӑ хӑҫантанпа ӗҫлет сирӗн Мӗтри ЗИСпа. Юрать-ха аҫу тимӗрҫӗ, пултарнӑ таран пулӑшкаласа пырать. Фермӑсене комплекслӑ механизацилес пирки миҫе ҫул шавлатпӑр ӗнтӗ. Ӗне сумалли чаплӑ установкӑсем, апат валеҫмелли, сӗт юхтармалли-сивӗтмелли-тасатмалли хатӗрсем, шыв пӑрӑхӗсем ҫитмеҫҫӗ. Уй-хир ӗҫне ҫӑмӑллатмалли машинӑсем те пур енчен те тивӗҫтерейменҫҫӗ. Ял ҫынни валли паха пальтосем, костюмсем, модельлӗ атӑ-пушмак лавккасене ытларах илсе пырас пулсан та аванччӗ. Ял культурине ӳстерме пирӗн пурсӑмӑрӑн та, ҫав шутра санӑн та, питӗ нумай тӑрӑшмалла. Ай-яй мӗнле тӑрӑшмалла!

Янгорчина ним пӳлмесӗр, унӑн кашни сӑмахӗпе килӗшсе, кӑмӑл тулли итлесе ларчӗ Микулай.

— Халӗ ак мунча кӗртетӗп сана. Атя уҫӑлтарар ҫанҫурӑма кӑштах. Финсен типӗ пӑслӑ мунчинче ӑшалам. Кун хыҫҫӑн, тен, чӑвашӑн хура мунчинче те ҫӑвӑнса ҫапӑнас килӗ.

Караваев кула-кулах унпа килӗшрӗ.

Çапах та Янгорчина çывăх вăхăтрах тăван яла таврă-нас пирки шантарса каланă хыççăн та Микулай йăпăр-япăрах Мускавран çăрăлса тухаймарĕ. Пĕр çакланнă сере-перен хăтăласси çăмăлах мар иккен. Чăваш енне вăл тепĕр темиçе çултан тин таврăнчĕ.

## 2

Акă выртать халĕ вăл çĕр кавирĕ çинче киленсе. Куç ыратакан пуличчен тӳпене тĕсесе сăнарĕ, тĕнче уçлăхĕнче халиччен курăнман сăнар шырарĕ. Тăчĕ те ура çине... улмуççисен аялти тураттисене хуллен сире-сире хăй патнелле хĕрсем юрласа хăпарнине курчĕ. Пуçĕсене утмăл турат кăшăлĕ тăхăннă. Çил çӳхе кĕписемпе вылять. Çак самантрах вара художник пуçĕнче пулас картина çуралчĕ, сюжетне пуянлатса, хĕрсен сăнарне вăйлатса-витĕмлетсе çитермелле çеç. Çавăн пек ĕмĕтпе хавхаланса Караваев тăван ялĕ еннелле утса кайрĕ. Хĕрсемпе калаçма та, паллашма та хăймарĕ. Сисмелле мар вăрттăн çуралнă шухăш-туйăм çĕкленĕвĕ чун-чĕрене çупăрласа илсен тин вăл хăй мĕнле йывăрлăха кĕрсе ӳкнине ăнланчĕ.

Мĕншĕн сулахайрине те, сылтăмрине те мар, варринчине иленчĕ-ха унăн куçĕ? Кам хушнипе? Кам хĕтĕртнипе? Пĕр кĕтмен-туман çĕртен куç шăрçине çаптарккă пек сыпçăнчĕ кăлкан çӳçлĕ, кăвак куçлă, йăрăс пӳллĕ пике. Темшĕн унăн çав хĕре ыттисенчен хитререх, асамлăрах, романтикăллăрах кăтартса парасси килчĕ. Мĕн тери хăватлă иккен вăл тăван çĕр, тăван кĕтес, тăван халăх вăйĕ. Мускавра темиçе çул пурăнса та ăнăçлă ĕçлейменскер кунта акă пĕр уйăхрах вăл «Шанман чечексем» картинăна ӳкерсе пĕтерчĕ. Шупашкара та пĕрлех илсе кайрĕ ăна. Ун чухне кунта Аслă Октябрь утмăл çул тултарнă ятпа шăпах курав йĕркелетчĕç. Караваев хăйĕн çĕнĕ картинине çавăнта сĕнсе пăхрĕ те, жюри членĕсем ăна пурте килĕштерсе йышăнчĕç.

Картинăна галерейăна кайса çаксан Микулай пĕр хушă ăшра тем çитмен канăçсăрлăхпа çӳрерĕ, çав хĕрĕн сăнарне вăрттăн та пулин курса илсе чуна кантарасшăн кашни кун унта кĕре-кĕре тухрĕ. Ăна чи лайăх хайлавсен шутĕнче Мускава ăсатсан Микулай хĕре хăйне курăп-ши тесе

яла кайрĕ. Анчах практикăри студенткăсем Шупашкара таврăнма та ĕлкĕрнĕ иккен.

Пулас агрономсене общежитисем тăрăх шыраса ҫӳреме Микулая аван мар пек туйăнчĕ те пĕтĕм вăхăта ĕҫлесе кăна ирттерчĕ. «Шанман чечексем» ăна хăйне ҫеҫ пăлхантарман иккен, искусствоведсемпе художниксене те шухăша янă. Унтан картинăна кĕҫех тата Мускавра та кăтартнă. Кун пирки ăна хăйĕн юратнă профессорĕ Стариков ҫырса пĕлтерчĕ.

«Санра пысăк талант пытанса пурăннине тахҫанах туйнă эпĕ. Вăл уҫăлса ҫитессе те чăтăмсăррăн кĕтнĕ. Мускавра эсĕ суккăр кушак ҫури пек пурăнтăн, тухаймарăн тĕнче ҫутине. Сана, чăнах та, ял эмелĕ, ял сим пылĕ кирлĕ пулнă-мĕн. Саврасов хăйĕн вĕренекенĕсене ҫут ҫанталăк ытамне хăвалана пекех, сана та хăй вăхăтĕнче хăюллăнах ҫапла хăваламалла пулнă. «Шанман чечексем» вара «Тăванла масар ҫинчи тупаран» чылай ҫӳлерех шайра. Юрататăп-ҫке эпĕ сана, Николай, хам ачана савнă пекех саватăп. Малашне те ăнăҫу сунатăп. Суриковец ятне тивĕҫлипе тыт», — тесе ҫырнă Викентий Матвеевич.

Ҫĕрпелте ун пирки вăл, сăмах май тенĕ пек, тусĕ умĕнче те «мухтанса» илчĕ.

— Сан «Шанман чечекӳсем» чĕрĕ те-ха ҫав, нихҫан та шанас ҫук, ман улма сачĕ хăрса ларчĕ, пĕтрĕ. Сивĕ хĕле пула, — кулянса каласрĕ Янгорчин. — Ҫамрăк улмуҫҫисем лартсан пĕчĕк ачана пăхнă пек тăрăшса ҫитĕнтернĕччĕ. Халĕ акă йăлтах ҫĕнĕрен пуҫăнма тивет.

Василий Иванович ăна ялах чĕнет. Караваев хальлĕхе тесе Шупашартах тĕпленчĕ-ха. Ҫапах та чунĕ пурпĕрех Ҫĕрпелнеллех туртрĕ.

Пуйăс ҫинчен ансан Караваев яла яланах сад витĕр тӳрĕ ҫулпа тухма юратать. Ҫурхи илемпе киленсе хĕпĕртӳллĕ туйăмпа утса пырать вăл. Тăмпуҫ ҫырмине ҫитсен йывăҫ лартакансене асăрхарĕ, вĕсем патне пырса кĕреҫе ыйтрĕ. Сад хуралҫи ăна ҫĕнĕ авăрлă кĕреҫе тыттарчĕ. Ҫамрăксем субботника тухнă иккен. Микулай та пикенсех шăтăк чавма пуҫларĕ. Ушкăнри пĕр хĕрне вăл тӳрех паллаcа илчĕ. Хайхи студентка-практикантка-ҫке ку — «Шанман чечексен» тĕп сăнарĕ!

— Сывлăх сунатăп, Турă пулăштăр, — терĕ шӳтлесе Караваев.

— Эсир хăвăр турă пулсан пулăшаканĕ тупăнчĕ те, — йăл кулса илчĕ çав чиперкке.

— Турри — турă мар та, вăлах кăтартса ячĕ пулас-ха ку çулпа шăп сирĕн пата килме.

Хĕрсем кулкаласа аяккалла саланчĕç. «Шанман чечек» çеç хăй вырăнĕнчех тăрса юлчĕ, именчĕклĕн калаçма тытăнчĕ:

— Николай Прокопьевич, астăватăр-и, пĕррехинче пире ак çакăнта, кивĕ садра, ўкернĕччĕ. Ăçта-ши çав картина халь?

— Мускавра.

— Мускаврах-и? — тĕлĕннипе куçне чарса пăрахрĕ хĕр. — Питĕ курас килетчĕ...

— Эсир курман та-и ăна?

— Çук çав. Пирĕн хĕрсем Шупашкарта картинăсен галерейинче курма ĕлкĕрнĕ-ха, мана аван мар пек туйăнчĕ.

— Камран? Мĕншĕн?

— Нимшĕн те мар-ха, — куçне аяккалла тартрĕ хĕр. — Сирĕнтен аван мар терĕм...

— Мĕн, çав териех хăрушă-и эпĕ?

— Çук-ха, уншăн мар. Питĕ лайăх çын эсир...

— Халĕ тата мĕншĕн тармарăр? — кулса илчĕ Каравaев. — Хĕрсем эпĕ килсе тухсанах саланчĕç-çке?

— Пĕлместĕп... темшĕн...

— Эсир мана ятпа та чĕнме пултаратăр. Микулай тейĕр, — хĕрĕн тăмпа вараланнă аллине тытса чăмăртарĕ вăл.

— Юрĕ эппин, тавтапуç, Микулай пичи.

— Тен, мучи?

— Эй, Турă, тем те калаттарăр эсир мана. Чăн та, ку сухалпа, тен, Микулай мучи те теме юрĕ.

— Хăвăрăн кăмăл.

— Эп сире астăватăп. Пĕррехинче пирĕн пата аттене шыраса пынăччĕ. Сирĕн куçăр пирĕн Миркăнни пекчĕ. Вăл кушак тахçанах ватăлса вилчĕ. Симĕс куç çути...

— Иосиф Иванович хĕрĕ пултăр-и эсир? Калап-çке Пашковсен сăнĕ пур пек туйăнчĕ. Венерăччĕ-и-ха?

— Çавă.

— Ун чух ача кăначчĕ, халĕ ав епле ўссе кайнă. Агрономра ĕçлетĕр-ха апла?

— Ялтах юлас килчĕ. Василий Иванч яла та хула пекех

культурăллă тăватпăр тет те, пурăна киле хула майри те пулса кайăпăр-ха.

Хĕр кула-кулах çĕр чаврĕ. Микулай та эхлеткелесе пĕрлех ĕçлерĕ. Акă шăтăк хатĕр те. Унта вĕсем тислĕк, минераллă им-çам, кĕл хутăшĕ тултарчĕç. Венера хунава тытса тăчĕ. Микулай кĕреçепе тăпра ячĕ, йĕри-тавра тап-таса хытарчĕ. Акă ĕнтĕ йывăç ларчĕ те. Улмуççипе пĕрле Караваев хăйĕн юратăвне çапла çурхи тăпрана варăнтарчĕ-ши? Ӳсмешкĕн, чечекленмешкĕн шăварчĕ-ши лартнă хыççăн?

## 3

Василий Иванович чӳречерен пăхрĕ те йăмрасем хушшипе Венера Пашкова çывхарса килнине курчĕ. Хĕрĕ такама та килĕшмеллескер ĕнтĕ. Пĕвĕ-сийĕ, утти, кăмăлĕ мĕне тăрать. Венера колхоз шучĕпе ял хуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухрĕ, агрономра ĕçлерĕ, халĕ ак уй-хир цехне ертсе пырать. Çĕнĕ çĕрте те ĕçĕ ăнăçать-ха унăн, анчах йăнăшсем те тукалать. Çынсенчен яланах çирĕп ыйтаймасть, халăхпа ĕçлеме мелне те пĕлсех çитеймест. Çамрăк çав.

Унăн хăйĕн те малтанах, председателе суйласан, пуçĕ та çаврăнса каятчĕ. Ятлă-сумлă ватăсемпе те сахал мар канашласа пăхнă. Унсăр епле пултăр-ха. Пӳрт-çурт тытма та ăс-пуç кирлĕ теççĕ халăхра. Колхозĕ вара — çич çĕр киллĕ пысăк хуçалăх. Калатчĕ-ха кукашшĕ: «Халăхран мала та ан иртсе кай, кая та тăрса ан юл, ялан унпа пĕрле пул», — тетчĕ. Çакна яланах астуса тăчĕ Василий Иванович, астуса ĕçлерĕ. Аслă пĕлӳ илнĕ агроном çукки ĕçе самай тăллантарса пычĕ. Ун вырăнне те уйсем тăрăх хăйĕнех чупма тиврĕ. Çынсемпе пĕрле суха турĕ, тырă акрĕ, вырчĕ, йĕтем çинче михĕ те йăтрĕ. Малтан «ку колхоз ачинчен нимех те пиçес çук» текенсем те иккĕленме пăрахрĕç.

— Вăт ку хуçа, — терĕ пĕррехинче Каравай Хĕветучĕ. — Чăн-чăн çĕр çынни.

— Çук-ха, çынниех мар, çĕр хурчĕ кăна, Хĕветут мучи, — лайăхмарланчĕ председатель. — Çын пуличчен пайтах çăкăр çĕртмелле-ха. Çĕртме вара çăкăрне тума вĕренсе çитмелле. Пулсах пĕтмест-ха тем. Питех йывăрланаймасть çак пучах.

Караваев сухалне чӗтретсе кулса ячӗ те ҫапла каларӗ:

— Эс, Ваҫкӑ, тӳрех пуясшӑн мар-и тем. Васкакан васана ӳкнӗ тенӗ. Ан васка. Кашни япаланах хӑйӗн вӑхӑчӗ пур. Эпир сана шанатпӑр, ывӑлӑм. Ҫӗре кӗриччен пӗр кӗлте тырринчен пӗр ҫавра ҫӑкӑр пӗҫернине те курӑп-ха.

Янгорчин ӑҫта ҫитнӗ, ҫавӑнта ун ӗҫӗ йӳнеҫсе пыратчӗ. Анчах пур ҫӗре те чупса ӗлкӗрейместӗн, пӗччен хӑлаҫланнипе пурне те тума ҫук. Ҫамрӑк шӑм-шак та ывӑнать. Партбюро ларӑвне ҫывӑрса юлнӑшӑн Ванька Костин хытах мӑкӑрлантарса илнӗччӗ-ха ӑна.

— Эс мана ан ҫиллен, Ваҫкӑ, — ӑшшӑн калаҫрӗ кайран тусӗ. — Иксӗмӗр те ҫамрӑк-ха эпир. Партие те пӗр ҫулта кӗтӗмӗр. Эсӗ — председатель, эпӗ — секретарь. Пӗр-пӗрне ӑнланса, пулӑшса ӗҫлер. Тавай бригадирсенчен, ферма заведующисенчен, специалистсенчен ытларах ыйтма пуҫлар. Ун чухне хамӑра та ҫӑмӑлрах пулӗ.

Улӑштарчӗ вӑл ҫакӑн хыҫҫӑн хӑйӗн ӗҫ меслечӗсене. Халӗ Пашков ӑна та ҫине тӑрсах ҫапла пулма вӗрентет.

Акӑ ӗнтӗ хӗре Микулай Караваев тӗл пулчӗ. Калаҫса татӑлнӑ та пулӗ-ха вӗсем! «Мӗн тери лайӑх арӑм пулмалла Микулая ватӑрах тесе тиркемесен». Ваҫкӑ хӑй те часах авланаймарӗ. Ванька Костинпа иккӗшӗ колхоза ура ҫине тӑратассишӗн ҫунса ҫӳренипе ҫемье чӑмӑртасси ҫинчен те манчӗҫ. Ялта вӗсене «ватӑ хусахсем» тесе тӑрӑхлама та тытӑннӑччӗ. Юрать-ха, тупӑнчӗҫ вӗсем валли чипер хӗрсем. Янгорчин арӑмӗ те Галя качча пыриччен Венера пекех ытармалла марччӗ, халӗ те тепӗр пикерен кая мар.

Часах Микулай урам урлӑ каҫса вӗсен хапхи умӗнче чарӑнчӗ. Хӑнана Василий Иванович пӳртре вӑрах тытмарӗ, мунчана илсе кайрӗ.

— Пӗлесчӗ сан, Микулай, ҫак ҫуртсем мӗн тери асаплантарчӗҫ мана, — тусӗн куҫӗнчен пӑхса илчӗ Янгорчин. — Виҫӗ комисси килсе тӗрӗслерӗ, анчах...

— Мӗн тесе чакаланчӗҫ? — пӳртпе мунча ҫине куҫӗпе йӗрлесе пӑхса илчӗ Караваев.

— Пӗлетӗн вӗт-ха Кӗве Хӗритунне. Ҫавӑ ҫӑхав хыҫҫӑн ҫӑхав ҫырать. Янгорчин пӳртлӗх пӗренене колхоз тыррипе улӑштарса илнӗ иккен-ха... Никӗслӗх юманшӑн ферма сыснине тӗкнӗ... Мунча пурине вӑкӑрпа улӑштарнӑ... Ҫи виттилӗх шӑвӑҫа пылпа сӗрсе илнӗ... Платниксене ахаль

ĕçлеттернĕ... Транспортшăн тӳлемен... Татах тем те пĕр унта, пурне те аса илсе те пĕтерес çук. Хăть пĕр сăмахĕ те пулин тĕрĕс пуласчĕ.

— Нимĕн те тума май çук-им вара вăл Кĕвене?

— Мĕн тăватăн-ха? Хупса лартаймастăн. Хĕнесе те тăкаймастăн. Шăтарать те шăтарать вăрттăн.

Кил картинчен пахчана кĕрсен Янгорчин çăл патĕнчи тулли витрене пĕшкĕнсе йăтрĕ.

— Вĕсем хăйсен ĕçне тăвĕç, эпир — хамăрăнне, — терĕ кĕлеткине тӳрлетсе. — Шутласан, тен, çут тĕнчере кĕве те кирлĕ пулĕ. Кĕве Хĕритунĕ те ахальтен çуралман ĕнтĕ. Пурте лайăх, ырă кăна пулсан тĕнче хăрах енлĕ çеç аталанать. Хирĕçлӳ, кĕрешӳ кăна пире малалла кайма пулăшать, лăпкăлăхран çăлать. Çăвăнар-ха пĕрех хут эппин, кирĕкрен тасалса çан-çурăма уçăлтарăпăр, вăй илĕпĕр.

Вĕсем улмуççисем хушшипе утса мунча умне çитрĕç. Мунчине Василий Иванович тăрăшсах тунă. Пысăк. Икĕ пӳлĕмлĕ. Умĕ те аслă. Унта хывăнма, канма, чей ĕçме меллĕ.

— Астăватăн-и пирĕн кивĕ пӳрте, Микулай? — ыйтрĕ хуçи хăнаран.

— Çак мунчаран пысăк та марччĕ.

— Юри пурине унпа виççе пураттартăм. Аслаçу кулать: «Эс мĕн, Ваçкă, килӳнте кив пурнăç палли хăварас терĕн-им?» — тет. «Хамăр ку таранччен мунча пек тăвăр пӳртре пурăннине мунча кĕнĕ чух та пулин аса илесчĕ», — тетĕп. Кил-çуртне çĕнĕлле çавăрма та председательте ĕçлеме пуçласан вуннăмĕш çулне тин тытăнтăм. Малтан фермăсене, йĕтемсене йĕркене кĕртрĕм. Икĕ ял хушшине Культура керменĕ каплантарса лартрăм. Шкул турăм. Пекарня уçрăм. Ача сачĕн никĕсне хыврăм. Йăлтах хамăр вăйпа.

— Укçине çавăн чухлĕ ăçтан тупрăн?

— Пайтах кирлĕ пулчĕ, — хулăнрах тути хĕррисене сиктерсе илчĕ Янгорчин. — Çĕртрен. Тĕрĕссипе — çĕртен. Çĕр пачĕ йăлтах. Гектартан вунă центнер тырă тухнăччĕ эпĕ колхоза килнĕ çул. Председателе суйланă тĕле вун пиллĕке çитрĕ. Унтан ӳссе, ӳссе пырса çирĕмрен иртрĕ, вăтăра кармашрĕ... Хĕрĕх-аллăпа калаçатпăр халĕ. Махорка та, хăмла та нумай тупăш пачĕ.

— «Чăваш хăмли, чи хăватли. Ячĕ кайрĕ таврана...» — шăппăн юрласа илчĕ Караваев.

— Пашковсен кĕрекинче юрлатпăр пулĕ-ха куна хăçан та пулин, — тусне куç хĕссе илчĕ Янгорчин. Микулай ассăн сывласа шăпланнипе усă курса вăл çавăнтах малалла каласса кайрĕ: — Ленинград облаçĕнчен пĕр чăматан «гатчинский» сортлă çĕр улми тултарса таврăнтăм. Ачасем манран мĕн те пулин кучченеç е парне кĕтеççĕ. Уçса кăтартрăм та — арăм кăмака хыçнелле пăрăнса кайрĕ, ывăлсем алă сулса урама тухрĕç. Гектартан виç çĕр-тăват çĕр центнер çĕр улми илме тытăнсан вара арăма ятарласах шоколад туянса патăм. «Ку, — терĕм, — ленинградсен «иккĕмĕш çăкăрĕнчен» тунăскер. «Пăрах-ха мăшкăллама, колхозупах супатăн. Кил-çурт пирки хăть кăшт та пулин шухăшласа пăхасчĕ. Кĕç-вĕç йăтăнса анать-иç пÿртÿ? Ху патна таçтан темле çын та килет, пĕрне те киле хăнана чĕнейместĕн, колхоз столовăйĕнче апатлантаран», — тесе мăкăртатать.

Черетпе çапăнса тухнă хыççăн Янгорчин кула-кулах аса илчĕ:

— Венгрсем килнĕччĕ те республикăна, сан пата пырса курасшăн терĕç. Хирĕçлемерĕм. Аслаçупа калаçса татăлтăм та вара инçетри хăнасене сирĕн патăрта йышăнтăм. Хĕветут мучи кайран: «Çитет яла култарса, ларт станлăрах пÿрт», — тесе хăтăрса та илчĕ. Обком секретарĕ те ятларĕ. Çавăн хыççăн тин йăшăлтатма пуçларăм. Кĕве Хĕритунĕ: «Ял улпучĕ Янгорчин таврара çук пÿрт лартать...» — тесе çырнăччĕ Шупашкара. Обком секретарĕ çав çăхав пирки ман пата Мускава шăнкăравларĕ: «Тин çеç пĕлтĕм: кил-çуртна çĕнетме тытăннă-ха апла. Саламлатăп. Çĕнĕ пÿрт уявне чĕнме ан ман», — терĕ. Ун чухне эпĕ унта Верховнăй Совет сессине кайнăччĕ. Кĕрер-и, атя тепрер çапăнар. Астăватăн-и иксĕмĕр тахçан пĕрле мунчара хĕртĕннине?

— Хама эсĕ тип мунча мĕнле кĕртнине те, пурне те астăватăп, — мускуллă хулĕсене сăтăркаласа илчĕ Караваев. — Манман ăс-пуçри пурнăç кирĕкне тасатма пулăшнине. Тавтапуçах сана уншăн, пулăшрăн куça уçма.

— Çапах та, тем, уçăлсах çитеймен пек-ха куçу, тепре ăшаламалла мар-ши тетĕп. Ун чухне, тен, ял çинчен аса илĕн. Мĕншĕн çаплах куçса килместĕн?

— Кăштах вăй илме ирĕк пар-ха Шупашкарта, — тусĕн куçĕнчен пăхрĕ Микулай. — Ура çине тăрам, вара хам

пĕччен те мар, ушкăнпах персе çитĕпĕр. Пысăк ĕмĕт пур-ха.

Вĕсем çăвăнса тухнă çĕре Янгорчин арăмĕ мунча умне тăм чӳлмекпе сăра лартса хăварнă-мĕн. Василий Иванович тумланичченех куркасене тултарчĕ.

— Тыт-ха, тусăм, ăша кантарар, нӳхрепрен ку.

— Тавтапуç, мунчи яланах тутлă пултăр.

## 4

Ялта пурăнса пуçра капланса тĕвĕленнĕ шухăшне пир çине куçарса пĕтерсен Караваев чӳрече умне пырса тăчĕ. Янкăр хĕвел çутинче çӳлтен Атăлăн мăнаçлă ытамĕпе йăлăм вăрманĕ ал тупанĕ çинчи пекех янк курăнаççĕ. Раççей çĕрĕн çак капмар та анлă юхан шывĕ мĕн ĕлĕкрен художниксене хăй патне илĕртнĕ. Микулая та вăл вун тăваттăра чухнех, Шупашкара чи пуçласа килсенех, куç пăвнă пек тыткăнланăччĕ. Çав юрату унăн кунсерен вăйланса пырать, ăна хумхантарать, хавхалантарать е тата алă усăнма тытăнсан сиплет те вăл ăна.

Мускавран Шупашкара пуçĕпех таврăнсан та Николай Прокопьевич Атăл хĕррине анса питне ун шывĕпе çурĕ. Вăл уншăн юмахсенче асăнакан чĕрĕлĕх шывĕ вырăннех пулчĕ, пĕтĕм чуна, кăмăла уçса ячĕ. Çав хăватпа пуçларĕ те Караваев хăйĕн Чăваш çĕршывĕнчи çĕнĕ пурнăç тапхăрне. Раççейри Художество фончĕн республикăри уйрăмĕнче ăна валли йĕркеллĕ вырăнах тупăнчĕ.

Чăваш художникĕсем юлашки çулсенче çанă тавăрсах ĕçленĕ-мĕн. Вăл вĕсен произведенийĕсемпе ăшшăн ăмсанса паллашрĕ. Унтан хăй те вара тăтăшах ялта, стройкăра, Атăл çыранĕнче çухалса çӳрерĕ, пĕрех май ширарĕ, шухăшларĕ, лăш курмасăр ĕçлерĕ. Мускавра тата Атăл тăрăхĕнче ирттернĕ куравсенче унăн ĕçĕсене лайăх хак парса ырларĕç.

СССР Художникĕсен союзĕн членне илнĕ хыççăн Караваев пушшех те çине тăрса ĕçлеме пикенчĕ. Вăл сĕннипе кĕçех союз правленийĕнче художниксем ушкăншарăн ялсене тухса çӳрес ыйтăва пăхса тухрĕç. Тĕпрен илсен, пурте пекех ырларĕç-ха ку сĕнĕве. Юсова çеç вăл пĕртте килĕшмерĕ. Малтанах вăл ыттисем калаçнине куç айĕн пăхса

итлесе ларчӗ, унтан мӑн кӑмӑллӑн ура ҫине тӑчӗ те чӗрӗпӗнни пек пуҫне пӑркаласа типпӗн кӑххӑмлатса ӳсӗрчӗ, сӑмахӗсене сӗререх калаҫма тытӑнчӗ:

— Вӑхӑта пустуй ирттерни ҫеҫ ку. Картинӑна мастерскойран тухмасӑр та чаплӑ ӳкерме пулать. Ҫын ӗҫне-хӗлне фотограф ӳкерсе илнӗ пек тунӑ япаларан ӗмӗрне те шедевр пиҫмен, пиҫмест те. Ҫавӑнпа эпӗ ку сӗнӳпе килӗшместӗп, — чурӑссӑн хирӗҫлерӗ вӑл.

Караваев ун шухӑшне пӗлнӗ-ха, вӑл ҫапла каласса кӗтнӗччӗ те. Чӑнах та, йӑнӑшмарӗ иккен. Ювеналий Серафимович училищӗре вӗреннӗ чухнех йӑпӑлтатса-юраса чапа тухасшӑн ҫунатчӗ. Директор портретӗнчен пуҫласа пысӑк ӗҫри миҫе ҫын портретне ӳкермен-ши вӑл хӑй пурнӑҫӗнче? Ахальтен мар ӗнтӗ ун портрет галерейи пӗтӗмпех пуҫлӑхсен сӑнӗсемпе тулса ларнӑ. Ӗлӗкхи патша таврашне ҫывӑх тӑнӑ художниксен йӑли-йӗркине хӑйӗн пурнӑҫӗн тӗллевӗ туса хунӑ. Юсов хӑй институтра вӗрентет. Ӗҫ вырӑнӗ те, чапӗ те пур пек ӗнтӗ унӑн, чӑн-чӑн художник чунӗ кӑна ҫук. Ҫавӑнпа килӗштермест те ӑна Караваев, ун шухӑшӗпе те килӗшме пултараймасть.

— Пурнӑҫ саманчӗсене искусство чӗлхипе курӑмлӑн ҫутатса парса сӑнлама шухӑшламан ҫын вӑл, Ювеналий Серафимович, ман шутпа, — художник мар, — терӗ ҫавӑн чухне Караваев. — Вӑл — халӑхран уйрӑлнӑ, ӗлӗкхи академизм сӗрӗмӗпе минренӗ ремесленник ҫеҫ. Ҫӗнӗ пурнӑҫ тӑвакан ҫыннӑн паттӑр сӑнарне чӑнлӑхӑн меслечӗ ыйтнӑ шайра, аталану шайӗнче, кӑтартса памалла — акӑ мӗнле пулмалла пирӗн тӗп тӗллев. Ӑна эпир пӳлӗмсенче, мастерскойсенче кӑна ларса ниепле те пурнӑҫлама пултараймастпӑр. Пирӗн мастерской колхозра, заводра, стройкӑра пулмалла. Пирӗн таса тивӗҫ — искусствӑна халӑх хушшине ӗненмелле ҫитересси.

— Ав еплерех иккен, — кулам пек турӗ Юсов тута кӗтессине хӑрах еннелле усӑнтарса. — Эпир, Караваев шучӗпе, художник мар, халӑхран уйрӑлса кайнӑ академистсем иккен-ха. Ӳкерме пӗлместпӗр, мастерскойра питӗрӗнсе ларатпӑр ҫеҫ пать. Эппин, республикӑри тава тивӗҫлӗ художник ятне мана ним ахальшӗнех панӑ пулса тухать. Малтан звани-степеньсем илсе пӑх-ха эсӗ, шӑлу витейӗ-и е ҫук-и унта? Чармастпӑр, кайса ӳкер те кӑтартса пар пире

ырă тĕслĕх. Мĕн тухĕ. Пирĕн халĕ училищĕре, институтра, Художество фондĕнче тар кăларса ĕçлемелле. Ял тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳреме ăçта-ши вăхăчĕ?

Караваев та хирĕç чĕнмесĕр тăраймарĕ, ăна куçранах каларĕ:

— Эх, Ювеналий Серафимович, пĕлместпĕр пуль тетĕрши эсир мĕнле майпа хальхи картлашка çине улăхса тăнине? Юрĕ, вăл-ку пирки тавлашса чĕрре кĕрсе вăхăта ирттерер мар. Çапах та калатăп: сирĕн пек ӳкерме юрамасть халь пирĕн. Пурнăç чăнлăхне ĕç çыннин кăмăл-туйăмĕ витĕр çутатса парас пулать. Чăнлăха пурнăçпа çывăхлатмалла. Аса илĕр-ха эппин Репин каланине. Çĕр çул каяллах вăл: «Хресчен халĕ хăй судья, çавăнпа пирĕн унăн интересĕсене ӳкерсе кăтартса памалла», — тенĕ. Малта пыракан искусство хыпарçи ун чухнех пурнăçăн тĕп вăйĕ халăх тесе шутланă. Ахальтен-и тата Петербургри Художество академийĕнче вĕренекенсем иртнĕ ĕмĕрте картинăсенче куç умĕнчи чăн пурнăçа ӳкерсе кăтартма шутланă. Иван Крамской ертсе пынипе вун тăватă художник ушкăнĕ пуçарнă çĕнĕлĕхе — реализм шкулĕн халăх хушшинчи паттăрлăхне — пĕтĕм тĕнче пĕлет. Çав «пăлхавçăсен» ĕçĕсене халăх паянхи кун та ывăнмасăр, йăлăхмасăр пăхса киленет. Хамăрăн чăваш художникĕ Кокель Петербургра, Харьковра тĕнче курăмлă ĕçсем тунине аса илер-ха тата...

Юсов каллех унран тăрăхласа кулма пăхрĕ.

— Мĕн тата, хăвна «чăваш Крамскойĕ» вырăнне шутламастăн пулĕ те, Караваев? Эсĕ революци тăвассăнах пек туйăнать чăваш искусствинче. Пăлхав çĕклесшĕн мар-и тем пирĕн хушăра? Ытлашши пит чапа тухса каясран хăрамастăн-и?

— Эп кунта ним çĕннине те каламарăм, Ювеналий Серафимович, — лăпкăнах тавăрчĕ Караваев. — Ĕмĕр каяллахи ырă йăлана совет художникĕсем, вăл шутра чăвашсем те, çирĕммĕш-вăтăрмĕш çулсенчех малалла тăснă, халĕ те тăсаççĕ. Çĕнĕ пурнăç паллисене эпир хамăр шур сухалсен çĕкленӳллĕ ĕçĕсенче те аван куратпăр. Художникпа ĕç çыннин пурнăçĕ пĕр çыхха çыхăнмалла. Сирĕн чухăн картинусенче вара, Ювеналий Серафимович, тĕп геройсем халапсенчи çемçешке «паттăрсем» хăраххи, ытла та çĕртен

уйрӑлнӑн, сывлӑшра кӑна вӗҫнӗн курӑнаҫҫӗ. Халӑх ӗненмест вӗсенчи суя пурнӑҫа.

— Хӑвӑн ӗнентерсе пӑхасчӗ-ха малтан. Икӗ-виҫӗ япалапах Художниксен союзне кӗрсе кайрӑн та... Иртерех илтӗмӗр пулас хамӑр рете сана, «вӗрентекене»... Передвижниксем хыҫҫӑн ан сик эсӗ. Вӗсем, ой-ой, мӗнле талант пулнӑ. Кӑтартса пар-ха пӗрре Крамской «пӑлхавҫисем» тӗлӗнтернӗ пек куҫса ҫӳрекен куравсем йӗркелесе... Ун чухне вара сан умӑнта, тен, эпир те ҫӗлӗк хывӑпӑр. Хальлӗхе ку — пуш сӑмах ҫеҫ. Мастерскойран тухса ӳкернӗ япала вӑл, тепӗр хут ҫирӗплетсех калатӑп: шедевр мар, эскиз кӑна.

Вӗсен калаҫӑвӗ ыттисене те йӳпсӗнтерчӗ пулас, хӑшӗпӗри хӑйсем хушшинче пӑшӑлтатса илчӗҫ. Чӳрече ҫумӗнче ларакан Няманов чӑтаймарӗ, Юсов еннелле сиввӗн пӑхса илсе ҫапла хушса хучӗ:

— Хӳрере ҫапкаланса пыма хӑнӑхса кайнӑ эпир. Пурнӑҫ шавӗнчен, сиккинчен вутран хӑранӑ пек хӑратпӑр, пӑчӑ мастерскойра пуҫа минрететпӗр, ӗнерхи кунпа мухтанатпӑр. Ҫӗршывӑн аслӑ стройкисенче, ялсенче художниксен пултарулӑх ушкӑнӗсем тахҫанах палӑрчӗҫ. Пирӗн мӗншӗн вара кӗрешӳ таппинчен юлса пымалла-ха?

Паллах, вӑхӑт никамшӑн та ытлашши мар. Манӑн та хамӑн тӗп ӗҫрен уйрӑлас килмест. Атьӑр-ха вӑхӑтпа ӗҫе укҫапа кӑна виҫер мар. Укҫа мар, кунӗн-ҫӗрӗн тертленнӗ вӑхӑт, халӑх хушшинче тупнӑ ӑнӑҫлӑ сӑнар пурнӑҫ сӑнарӗ пуянлатать искусствӑна. Тӗп ӗҫ пултӑр вӑл пирӗн. Ҫавӑнпа манӑн Николай Прокопьевичпа пӗрле ӗҫлес кӑмӑл пур. Хӑй хирӗҫлемесен...

— Эп паянах уйрӑм ушкӑн йӗркелеме пуҫлатӑп. Алексей Михайловича унта хаваслансах йышӑнатӑп. Кӑмӑл тӑвакансем пур-и тата? — Караваев пурне те куҫран пӑхса ҫаврӑнчӗ.

Юсов куҫӗсене ҫиллессӗн ҫиҫтерсе тарӑхса-мӑртӑхса ларчӗ. Ыттисем хулпуҫҫийӗсене сиктеркелесе илчӗҫ. Утмӑлалла ҫывхаракан Григорий Саввич Ушкин хуллен тӑчӗ те Караваева пырса алӑ тытрӗ.

— Ку шухӑш пирӗн пӗлтӗр-виҫӗм ҫулах ҫуралнӑччӗ. Пуҫаракан ҫеҫ кирлӗ пулнӑ иккен. Акӑ тупӑнчӗ те вӑл. Тавай пӗрлешер эртеле. Ушкӑнпа ӗҫлеме тытӑнар. Ӑҫта пӗрлӗх — унта вӑй.

Тепĕр кунне Караваев патне Семен Самлировпа Павел Палнаев çамрăксем пырса кĕчĕç.

— Эсир яла ĕçлеме кайма художниксен ушкăнĕ йĕркелетĕр терĕç те, мĕнле, пире те илеймĕр-ши, Николай Прокопьевич? — именчĕклĕн ыйтрĕ Самлиров.

— Алексей Михайловичпа Григорий Саввич хирĕç пулмасан — эпĕ хаваспах, — кулкаласа тавăрчĕ Караваев.

— Вĕсем хăйсем сĕнчĕç пире, — хĕпĕртесе ӳкрĕ Палнаев. — Тин кăна калаçрăмăр.

Портрет маçтăрĕ, çут çанталăк юрăçи, чăвашăн авалхи йăли-йĕркине хисепсĕр юратакан Лев Викторович Климов çав вăхăтра шăпах отпускран таврăнчĕ. Çак ăслă та ăшă кăмăллă, çаврака сăн-питлĕ, çепĕç чĕлхе-çăварлă вăтам çулсенчи йăрă çынпа Микулай хăй Мускавра пурăннă чухнех сывăх паллашнăччĕ. Климов ун чухне Пĕтĕм Союзри курава «Çĕр суранне сиплекен» картина тăратнăччĕ. «Огонек» журналта та пичетленĕччĕ ăна.

Çут çанталăк куççульне симĕс йывăç-курăкпа шăлса типĕтекен шăнăрлă алăллă, юмарт чунлă чăваш çыннин сăнарĕ шухăшлаттаракан, ырришĕн, тăван тавралăх илемĕшĕн кĕрешме кирли çинчен аса илтерсе хистекен кĕрешӳçĕ вырăнĕнче пулса тăчĕ. Художникăн пурнăçри гражданла хастарлăхĕ вăйлине Караваев тӳрех ăнланчĕ. Мускавра Лев Викторовичпа иккĕшĕ темиçе каç вăрахчен калаçса ларнăччĕ, пĕрле ĕçлес пирки ĕмĕтленсе шухăшланăччĕ. Халĕ ак çав вăхăт çитрĕ. Климов хаваслансах «чăваш передвижникĕсем» çумне хутшăнчĕ.

Ушкин çыннăн шалти кăмăл-туйăмне, тĕнчине чуна витермелле тарăннăн та ăста сăнласа кăтартнипе палăрса çитнĕ; Няманов ят илнĕ график, живописçре ытларах этюд йышши картинăсем ӳкерме юратать, çав хушăрах ăна чи пултаруллă художник-оформительсенчен пĕри, чи вăйлă геральдик тесе те шутлаççĕ. Ушкинпа Нямановăн иккĕшĕн пултарулăхĕнчен те пурнăç хаваслăхĕпе мал ĕмĕт туйăмĕ вăйлăн тапса тăраççĕ.

Çапларах çуралчĕ тин çеç йĕркеленĕ «Пучах» бригада. Художниксен союзĕн правленийĕ çак пуçарăва ырларĕ, бригадăна ертсе пыма Караваева шанчĕ.

Малтанах çак ушкăн эрни-эрнипех хула çывăхĕнчи колхозра ĕçлесе пурăнчĕ, унтан таврăннă хыççăн пулас кар-

тинăсене мастерскойсенче чылай хушă илемлетсе пуянлатрĕç те ĕçе вĕçленĕ хыççăн вĕсене ăçта ӳкерме пуçланă, чи малтан çавăнта кăтартса пăхма шутларĕç. Курава ял çыннисем питĕ нумаййăн пуçтарăнчĕç, хăйсем пĕлнĕ-паллана çынсен катан пир çине ӳкернĕ сăнĕсене ватти-вĕттимĕнĕпех пĕр тĕлĕнсе те савăнса пăхрĕç. Çакăн хыççăн вара бригада Çĕрпеле çул тытрĕ. «Пучах» ушкăнне «шурăмпуçсем» питĕ савăнса çăкăр-тăварпах кĕтсе илчĕç. Культура керменĕнче чи малтанах кашни художник хăйĕн ăсталăхне кăтартма пултарчĕ. Микулай та унччен ӳкернĕ картинисемпе тăван ял çыннисене çакăнта пуçласа паллаштарчĕ.

Художник ĕçĕн чи аслă хаклавçи çивĕч туйăм-сисĕмлĕ çын пулнине Николай Прокопьевич чи малтанхи куравсене йĕркелесенех чунĕпе ăнланса пычĕ. Кураканӑн тĕпчевлĕ куçĕнчен нимĕн те пытараймастăн. Художник ӳкерчĕкĕсенче унра хăйĕнче тата юлташĕсенче унччен шухăшра та пулман паллăсене асăрхани тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтерчĕ ăна. Çавна кура вара Караваевăн хăйĕн те паянхи çыннăн пурнăçри хавхаланăвне, ăс-тăнпа шухăшкăмăл пуянлăхне пĕтĕм чун-чĕре хĕрӳлĕхне парса тата та тарăнраххăн та ĕненмеллерех уçса кăтартас килет.

Ялта курса çӳренĕ май Караваев час-часах иртнипе хальхине танлаштарать. Ют çĕршывсенчи халап-юмахсен геройĕсене ӳкерме килĕшмен «вун тăватӑ пăлхавçă» передвижник халăх хушшине кайса чăн пурнăçран илнĕ чĕрĕ картинăсем шăрантарнă, çав вăхăтри çут çанталăка ĕç халăх пурнăçĕпе вилĕмсĕрлетнĕ, çавăнпа хăйсем те, вĕсем çумне каярахпа хутшăннă ытти талантлă художниксем те, вилĕмсĕр пулса юлнă. «Пучах» ушкăнĕнчи художниксен пулас сăнарĕсем те — ĕçлекен, ырлăх-пурлăх тăвакан çынсем. Вĕсем чи малтанах хăйсен ĕçĕпе, шухăш-кăмăлĕпе, çутӑ ĕмĕчĕсемпе илемлĕ. Вĕсем уйра, фермăра, машинăсен паркĕнче, йĕтем çинче хăйсен тулли пурнăçĕпе пурăнаççĕ. Ку ĕнтĕ, Юсов сӳпĕлтетнĕ пек, эскиз çеç мар, ку хăй — вĕресе тăракан пурнăçăн чи кирлĕ саманчĕсем.

Çурхи илем кăмăла çĕклет. Колхозниксем Май уявне уйра — хĕрӳ ĕçре irттерни те хула çыннишĕн питĕ интереслĕ. Художниксем вĕсене тимлĕ сăнаса çӳресе кашни хăйне кирлĕ йĕр, сюжет хĕлхемĕ шыраççĕ, тупаççĕ те.

Çĕнтерӳ кунĕ тĕлне тырă акса пĕтерчĕç. Масар çумĕн-

чи уçă лаптăка, Культура керменĕпе парк çывăхне, Çĕрпел, Хурăнсур тата Тукай çыннисем яланхи пек мар капăр тумланса тухнă. Вĕсем хушшинче фронтовиксем уйрăмах палăраççĕ. Ирхи хĕвел вĕсен кăкăрĕсем çинчи орден-медальсене йăлкăштарать. Колхоз председателĕ Янгорчин фронтра пуç хунисене лартнă палăк историйĕпе паллаштарать.

— Пирĕн тĕллĕн ырă çын тупăнчĕ. Эсир пĕлме кирлĕха ăна, Шупашкарти Чапаев музейне илемлетнĕ Брынтина. Калаçса пăхрăм та вĕсемпе, турткалашса тăмарĕç, палăк туса пама килĕшрĕç. Нумай тăрăшрĕç. Куратăр-и, мĕн чухлĕ çĕр турттарса купаларăмăр? Виçкĕтеслĕх майлă палăк лартма сакăр çĕр кубометр раствор кĕчĕ. Çамрăксем талăк ытла канмасăр ĕçлерĕç. Мĕнлерех пулса тухнине кĕçех куратпăр акă. Шел, хăйсем килеймерĕç, — терĕ председатель пуçĕпе сĕлтсе палăк еннелле кăтартнă май.

Митинг вун пĕрте уçăлчĕ. Виçĕ метр çӳллĕш постамент варринче капмар япала çӳлелле мăкăрălса курăнать. Ăна витнĕ хĕрлĕ хăмача ерипен сирсе уçнă хыççăн куç умне хĕвел анăçнелле талпăннă салтакăн çӳллĕ те тăлпан кĕлетки тухса тăчĕ. Ăна тимĕр-бетон виçкĕтеслĕхĕн мал енне шăпах питĕ меллĕ вырнаçтарнă. Умне «Çĕршывăмăр, ачасемпе аннесен куççулĕ витĕр эсĕ мĕнпур чĕррине вилĕме хирĕç хӳме пек кăларса тăратма хавхалантарнă» тесе çырнă сăмахсене Микулай сасăпах вуларĕ.

Тухса калаçакансене итленĕ хушăра Караваев палăк умĕнче тăракан фронтовиксене чылайччен тимлĕн сăнаса пăхрĕ. Чĕррисем... Хаяр çапăçусенчен вилĕме çĕнтерсе тухнисем... Çав паттăр салтакăн ĕçĕсене малалла туса пыракансем, хальхи мирлĕ пурнăçа тĕреклетекенсем... Тĕрлĕ çулсенчи çынсем вĕсем, пĕвĕ-сийĕпе те тĕрлĕрен. Çапах та пурте — туя çине таянса тăракансем те, алăсăр-урасăррисемпе сыввисем те — пуçĕсене тӳрĕ тытнă, малалла çивĕч куçпа тинкерсе пăхаççĕ. Шăпах çав самантра çуралчĕ те Караваев пуçĕнче «Çĕрпелсем Çĕнтерӳ уявĕнче» ятлă пулас картинăн тĕп шухăшĕ. Пĕрин сăнарĕ те ĕмĕрне куç умĕнчен каймĕ тек, паянах пир çине ӳкерĕнме тытăнĕ.

Ванька Костина фронтра пуç хунисен списокне вуласа пама хушнă. Вăл хурлăхлă сасăпа кашнин хушаматне, ячĕпе ашшĕ ятне уççăн янăраттарса каласа пычĕ, ик çĕр са-

кăр вунă паттăра аса илчĕ. Вĕсен хушамачĕ-ячĕсене çырса хунă мрамор хăмасене çав паттăр салтак тавра вырнаçтарнă. Вĕсем хушшинче Микулай мучăшĕ Ксенофонт Федотович Караваев та пур. Чĕрĕ юлнă пулсан вăл та ĕнтĕ çак фронтовиксемпе юнашарах тăмаллаччĕ. Халĕ вăл çак чул палăкра çеç ĕмĕр-ĕмĕр асра.

Акă ял халăхĕ вĕсен ячĕпе палăк уçрĕ, ун умне темĕн чухлĕ чĕрĕ чечек çыххи хурать, пытару кĕвви тăвăнтарса хурлантарнипе куçран куççуль кăларать. Палăкăн хăрах енче çак сăмахсем: «Сире, Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пынă вăрçăра пуç хунă мухтавлă ывăл-хĕрсене». Сăмахĕсем ирĕксĕрех куççуль витĕр вуланаççĕ, анчах çакăншăн никам та пĕр-пĕринчен вăтанмарĕ. Шкул ачисем янратакан «Орленок» юрă пурин чунне те çӳçентерсе ячĕ. Совет Союзĕн Гимнĕ çав самантрах пурне те кĕлеткисемпе тӳрлетсе тăратрĕ. Аслă Çĕнтерӳ кунне «Шурăмпуç» колхозра çав хĕвеллĕ кун пĕтĕм халăхпа пĕр хурланса та мăнаçланса уявларĕç.

## 5

Микулай Культура керменне кĕрсе Ванька Костинпа калаçкаласа илчĕ те мăн çулпа уялла тухса утрĕ. Арман патĕнченех ырашпа кукуруза уйĕсен чикки пуçланать. Çанталăкĕ аванах тăрать-ха кăçал. Çумăрĕ вăхăтрах çукалать. Кукуруза пуссинче ретсем хушшине кăпкалатса трактор çаврăнса çӳрет. «Беларусь» кабининчен Хурăнсурти Малаш Аркашĕн ывăлĕ Илюш пуçне кăларса пăхрĕ те тракторĕ Микулайпа танлашсан газ хушрĕ. Тăрпаран çăра хура тĕтĕм палкаса тухса çӳлелле вĕçсе саланчĕ.

Çак каччă ашшĕне Микулай лайăх пĕлет. Аркаш кĕнеке вулама шутсăр юрататать. Хăй çичĕ класс кăна пĕтернĕ, çапах темĕнле ыйтупа та тавлашма пултарать. Кашни тĕл пулмассерен Микулайпа та вăл искусство пирки дискусси пуçлать. Модернистсене Аркаш сура-сурах вăрçать, вĕсене чăх чĕрнипе сăрмаклакан анра-сухрасем тет. Пуçĕ ĕçлет унăн. Çынни тăнлăскер те, сывлăхĕ начартарах-ха. Хăтсăр техникăпа ĕçлесех шăнса пăсăлнă вĕсем, çав çулсенчи трактористсем.

Ывăлĕ те хăй пекех маттурскер. Механизаци технику-

мӗнчен вӗренсе тухнӑ. Караваева Василий Иванович унӑн сӑнне ӳкерме сӗннӗччӗ те, Илюш хӑй умӗнче ларнӑ чухне вӑл унран юриех ыйтрӗ:

— Мӗн, техникум дипломӗпе те сана лайӑххах вырӑн тупса параймаççӗ-им?

— Мана, Микулай де Каравай пиччем, вӗренни çемçе пукан валли мар, уйра ӗçлеме кирлӗ. Пӗлӳ пурри тракторпа комбайн ларкӑчӗсене çӳлерех çӗклет, капла умрине курма çӑмӑл, — терӗ вӑл. Çийӗнчех кулкаласа хушса хучӗ: — Института куçӑмсӑр вӗренме кӗресшӗн-ха тата.

Акӑ ума çап-çамрӑк сад тухса тӑчӗ. Аллӑ гектар çинче улмуççи, чие, слива, хура хурлӑхан, шӑлан ешерет... Микулай анаталла анса пӗве хӗррине тухрӗ. Пӗви икӗ юплӗ. Вӗсем садваррипе тӑвалла тапса хӑпарнӑ. Вӑрӑмрах юппин вӗçӗнчерехре пӗчӗкçӗ кӑна утрав пур. Сӑмсахӗнче — шыва кӗмелли вырӑн. Пӗве хӗрринче хӗвелпе хӗртӗнекен тата шыва кӗрекен çамрӑксем хушшинче Венера курӑнса кайрӗ. Вӑл чечеклӗ купальникпа, çӳçне майласа тӑрать. Хӑй çинелле пӑхакан паллана çынна асӑрхасанах хӗр шыва чупса кӗрсе утрав еннелле ишсе кайрӗ. Кӗçех Караваев та кӗпипе шӑлаварне хывса пӗвене сикрӗ, аллисемпе пӗтӗм вӑйран авӑсса хӗр патнелле çывхарчӗ. Акӑ Венера пӗчӗкçӗ утрав çине тухрӗ, аллисене çӗклесе карӑнса илсе каялла çаврӑнса пӑхрӗ, хӑй патнелле çывхаракан Караваева асӑрхаса утрав хӗррине кукленсе ларчӗ, çара пӗççисене вӑрӑм çӳçӗпе витсе пуçне чӗркуççийӗсем çине хучӗ. Микулай та утрав хӗррине ишсе çитрӗ, ывӑç тупанӗпе çатлаттарса хӗре шывпа сирпӗтрӗ. Венера чӗнмерӗ, куçӗпе çеç кил, лар юнашар тенӗ пек çепӗççӗн йӑл кулса илчӗ. Çӗркаç паркра çӳресе тӑраниччен çывӑрайманнипе унӑн куç айӗсем кӑшт тӗксӗмреххӗн курӑнаççӗ пулин те çаврака пит çӑмартисем çав-çавах анис улма тӗсӗпе куçа ачашлаççӗ. Халӗ çирӗм пиллӗкре ӗнтӗ хӗр. Хӑй калашле, «ватӑлать» те. Караваевшӑн вара вӑл тин çеç çурӑлса çитӗнекен чечек пек туйӑнать.

— Ырӑ кун, Микулай мучи! — сӑмахӗсене шӑнкӑрав сасси пек уççӑн янӑратса аллине тӑсрӗ пике. — Шӳтлесе çеç калатӑп, ан кӳренӗр.

— Мӗншӗн кӳренес-ха, хамах вӗрентрӗм-çке сана Ми-

кулай мучи теме. Тата тӗрӗссине те тӗрӗс: сухалӗ кӑвакарма пуҫланӑ мучи. «Алла туя тытиччен авлан...»

Венера юрласа пӗтерме памасӑр ун тутине аллипе хупларӗ. Микулай хӑйне хӗрӗн ҫемҫе ӳчӗ перӗннӗшӗн хӗпӗртерӗ ҫеҫ. Венера вӑтанса кайрӗ пулас, куҫне аяккалла тартса ура ҫине тӑчӗ те утрав варринчи пӗр мӑшӑр хурӑн патнелле утса кайрӗ. Микулай та унран юлмарӗ.

— Эх, хурӑнӑмсем, — тем аса илнӗ пек шӑппӑн каласа хучӗ хӗр. — Вӑтам шкул пӗтерес умӗн, ҫуркунне, класӗпех асӑнмалӑх тесе сада йывӑҫ лартма килнӗччӗ. Илюш Малашов ҫавӑн чухне мана кимӗпе ярӑнтарчӗ. Кайран ак ҫак утрав ҫине тухса пӗр шӑтӑка ятран икӗ хунав чиксе хӑвартӑмӑр. Ҫавӑнтанпа утравне те Юрату утравӗ теес килетчӗ. Курӑр-ха, епле парка ҫитӗнеҫҫӗ вӗсем. Кӑтрисене яма та ӗлкӗрнӗ. Темшӗн ҫак ҫамрӑк йывӑҫсем мана хӑйсен ачалӑхӗнчен уйрӑлакан арҫын ачапа хӗр ачана аса илтереҫҫӗ.

Микулай килӗшнӗ пек пулса сӑмах чӗнмесӗр пуҫне сӗлтрӗ, хӑй ҫапах та ӑшӗнче ҫапла шухӑшларӗ: «Ҫак ешерекен садри, пӗве хӳринчи ҫӗр лаптӑкӗ камшӑн-ши — маншӑн е Илюшшӑн ҫывӑхрах? Икӗ ҫамрӑкӑн юрату утравӗ ҫине ура ярса пусса эпӗ кӗтмен хӑна е тӑшман вырӑнӗнче пулмарӑм-ши? Мӗншӗн-ха тата Венера «авланас» сӑмаха калаттарасшӑн пулмарӗ? Тен, вӑл манпа ача вӑййи кӑна вылять? Илюша асаплантармасть-и? Хӑй халӗ те кукуруза пусси еннелле пӑхать. Пӗлмест мар ӗнтӗ кам унта ӗҫленине. Ҫӗркаҫ та ӗҫрен таврӑннӑ чухне Илюшӗ ним маршӑнах масар ҫумӗнчи парк витӗр иртмерӗ пуль. Хурӑнсура кайма тӳрӗрех ҫул та пур-ҫке. Мӗншӗн-ха пӗр сукмак ҫинчех хирӗҫ пулмаллаччӗ? Паллӑ, кӗвӗҫсех кӗвӗҫет Илюш. Мӗн тӑвӑн ӗнтӗ, шӑпа темелле-ши куна? Эпӗ те Венерӑпа пӗрле улмуҫҫи лартрӑм-ҫке. Ҫав йывӑҫ та ӳсет халӗ: юрату йывӑҫӗ. Авӑ пӗчӗк пулсан та кунтанах курӑнать. Венера та ҫаврӑнса тӑчӗ, унталла пӑхать. Вӑл та улмуҫҫи ҫулҫисемпе шӑпӑлтатса вылянине тӑнлать-ши? Хама илтӗннӗ пекех туйӑнать те ку сасӑ — кӗрет-ши ун хӑлхине? Кунта — икӗ хурӑн, унта — пӗр улмуҫҫи...»

— Николай Прокопьевич? — ҫумрах илтӗнсе кайрӗ шӑнкӑрав сасӑ. — Эсир ма апла питӗ пӑхатӑр пирӗн хурӑнсене? Тем ӳкерес шухӑшпа мар пулӗ? Сюжетне хамӑн парас мар-и эппин?

Микулай çавăнтах хĕре пилĕкĕнчен ыталаса тытса хăй çумнерех туртса илчĕ те янкăр тăрă тӳпе пек таса куçĕнчен тинкерсе пăхрĕ.

— Кала, тем пекех хĕпĕртенĕ пулăттăмччĕ.

— Темле, те килĕшет вăл сире. Ман шутăмпа, картина çапларах пулмалла пек. Чуллă-сăртлă утрав. Варринче хурăнсем ешереççĕ. Çырана катрам хумсем пыра-пыра çапса кăпăк кăлараççĕ. Тӳпе çиçĕм çиçнипе çурмалла хуçкаланса çурăлнă. Çав çутăра, мăшăр йывăç хушшинче, — Юрату вил тăприйĕ. Ун умĕнче хура пĕркенчĕклĕ хĕр пуçне чиксе тăрать.

— Пурнăçранах илнĕ пулас та, анчах ăна ӳкерме манран киçтĕк тытасси те пулаймĕ, алă та çĕкленес çук. Ытла та пысăк трагеди кунта.

Венера çерем çине хĕртĕнме выртрĕ. Микулай куклен-се унăн ылтăн шывĕ тĕслĕ çутă сарă çӳçне ачашшăн çупăрласа илчĕ.

— Эпĕ сире ӳкерттерес тесе мар, ахаль çеç каларăм. Ытла пит пăхатăр та хурăнсене... Калăр-ха, ма пит кăмăла кайрĕç вĕсем сире?

— Мăшăрлă пулнăран. Епле аван иккĕшне юнашар ӳсме. Пĕччен, хăр тăлăххăн мар.

— Йăнăшатăр. Çын куçне пĕрле курăнсан та — пурпĕр вĕсем тăлăх. Пуртă пулас тăк çакăнта — эпĕ халь пĕрне ним мар качлаттарса пăрахмаллаччĕ. Пурте курччăр, пĕлччĕр хурăн пĕччен ӳснине. Сюжечĕ вара... Вун пиллĕкре чухнех эпир пĕр-пĕрне ачалла юратнă. Пĕр парта хушшинче юнашар ларattăмăр. Институтра чухне те каччă тупма шутламарăм. Яла таврăнсан пушă вăхăта Илюшпа çеç ирттерме тăрăшрăм. Сад çĕнетме те пĕрлех тухнăччĕ. Иксĕмĕр улмуççи лартнине курнă-ха вăл, темшĕн çывăха пыма хăяйман, мана сирĕн патран алăран çавăтса илсе кайма пултарайман. Манăн хамăн та пăрăнма хал çитмерĕ. Темле вăй çыхса хучĕ çав шăтăк çумне. Унччен малтан сире хамăр хĕрсемпе кивĕ сад пĕви çыранĕнче тĕл пулнăччĕ. Çавăн чухнех эсир ман асра юлтăр. Тĕлĕкре те куртăм. Тепре тĕл пулсан вара хама хам пачах алла илеймерĕм. Малтан пит кăмăла кайман симĕс куçăр та, тăпăлкка сухалăр та, çемçен тухакан кăмăллă сассăр та çав тери çывăх пек туйăнчĕ. Аякран кăшкăрса чĕнекен Илюш сас-

си чуна тăвăрларĕ çеç. Каçхине вăл мана иксĕмĕр юнашар ĕçленĕшĕн кĕвĕçсе тем те каласа пĕтерчĕ. Çавăн чух вара юратура темле çурăк пурри чи пуçласа палăрчĕ. Майĕпен çав çурăк сарăлса-сарăлса пычĕ те кайран çурăлсах кайрĕ. Икке пайланчĕ юрату. Ман енчи пайĕ пĕтрĕ пулас. Хăрах енчи пурăнсан та кама мĕн парĕ ĕнтĕ вăл? Çавăнпа çавнашкал сюжет сĕнтĕм те сире...

Караваев çерем çине хĕрпе юнашар тăсăлса выртрĕ, хăй умĕнчи курăка аллипе шăлкаласа айккинелле сирчĕ. Унăн Венерăна пĕтĕмпех итлесе пĕтерес килчĕ, çавăнпа ыйтрĕ те:

— Çавăн пек юратнă качча пăрахса тĕрĕс тунă-ши эсĕ, Венера?

— Тĕрĕс тесе шутлатăп. Мĕншĕн-и? Пĕрне-пĕри юрататпăр тесе хамăра хамăр улталаса пурăннă вăхăт вăл пирĕншĕн сисмесĕрех иртнĕ. Эпир ун чухне ним йывăрлăх та туйман: тĕл пулнă — пупленĕ, уйрăлса кайнă — çыру çырнă. Пурте лайăхчĕ. Хавхалануллă, çунатлă сăмахсемпе таçта çитиех вĕçнĕ. Пĕрлешнĕ пулсан вара? Качча тухсан тин сире тĕл пулнă пулсан? Юрату, чăн-чăн юрату, ман шутпа, пурпĕр килетчех пулĕ. Вăйлă юрату вăл ĕмĕрте пĕрре çеç пулать теççĕ. Çук, Илюшпа иксĕмĕр хушăра пирĕн чăн-чăн юрату пулманах. Сире чи малтан курнă кунах ман ăшра темле тăвăл кĕрлеме пуçларĕ. Халĕ те чарăнмасть вăл. Итлесе пăхăр ĕненместĕр пулсан...

Микулай хăлхине хĕр кăкăрĕ çумне тытрĕ. Чĕри чăнах хăвăрт та хыттăн талтлатса тапать.

— Чăрсăрлăхĕпе те сивĕтрĕ вăл мана хăйĕнчен. Пĕррехинче çапла килех пычĕ. Аттепе анне кӳрше хăнана каçнăччĕ. Мăнкун эрниччĕ. Хăйĕнчен эрех шăрши перет. Мана пĕрмай сирĕнпе тĕкет. «Çав сухаллă мучукаx качча тухатăн ĕнтĕ. Туя чĕнетĕн-и-ха хăть?» — тесе мăшкăллать. Ларсан-ларсан ӳсĕрскерне тем шухăш пырса кĕчĕ хайхи, çавăрса тытрĕ те мана пилĕкрен: «Качча кайиччен выляса юлам хăть, ват хусаха ăна лутăрканă хĕр те пырĕ-и», — тесе аллисене ирĕке яма пуçларĕ. Эпĕ пĕр хăраса та тарăхса кайрăм. Пĕррех чышрăм çакна питĕнчен, аллинчен çатăрласа çыртрăм. Тин тăна кĕчĕ ача. Мана ӳкĕтлеме, лăплантарма пуçларĕ. Хӳтерсех кăларса ятăм вара. Çĕрĕпе куç хупмарăм эпĕ çав каç, пĕрмай сире аса илсе выртрăм. «Ни-

колай Прокопьевич пěртте унашкал мар-çке», — тесе иксěре танлаштартăм. Çыннăн культура шайě хěрарăма мěнле хисепленинчен килет тесе ахальтен каламан çав ěнтě. Илюшăн культура мěлки те çук. Ěç чури кăна вăл. Çавăн чух çурăлса арканчě те ман юрату. Çав куççульлě хăрушă каç пытартăм эпě ăна ав çак икě хурăн хушшине.

— Халě мěнле-ха, Венера? Унчченхи юрату вилчě, çěнě юрату çуралчě терěн. Манăн та çуралчě вăл. Шăпах иксěмěр çав улмуççи лартнă чухне. Енчен те пирěн сада тепěр шартлама сивě килсе çунтарса ярсан вара? Унашкалли çут çанталăкра кашни çирěм-вăтăр çул хушшинчех пулса иртет теççě, — хěре куçран чăр-р пăхрě Караваев.

Хěр каллех Микулай куçěнче тем шырарě, ун çинелле тăранаймасăр пăхрě.

— Пěлместěп, сивěпе пěтерě-и, çук-и Хěл Мучи пирěн улмуççине, анчах эпě ăна нихçан та кěтместěп.

— Кěтер мар, Венера. Нихçан та сивěпе шăнса ан пăрлантăр пирěн юрату, пěлетěн-и: нихçан та! Ăмăртмалла ишер-и? Пěве пуçне тухиччен.

Унтан иккěшě те харăс сиксе тăрса шыва шампăртаттарса кěчěç. Киленичченех ишрěç, вылярěç, шывран тухсан çемçе тусан витнě сукмакпа пěрлех ял еннелле утса кайрěç. Илюш трактор кабининчен пуçне кăларса аллипе хăлаçлансах тем çухăрчě. Пěр-пěринпе шăкăл-шăкăл калаçса пыракан савăнăçлă Венерăпа Микулай çеç ăна курмарěç, вăл кăшкăрса каланă сăмахсем те вěсен хăлхисене кěмесěрех юлчěç.

## 6

Председатель ирěк панипе машинăсен паркěпе сěт-çу ферми хушшинчи пěр пушă çурта художниксен «Пучах» ушкăнěн вăхăтлăх мастерскойě туса хучěç. Юлташěсем Шупашкара кайнăччě те, ку хушăра Караваев унта хăй кăна ěçлерě. Вăл темиçе кун каялла çеç-ха «Çěр пики» картина ӳкерме пуçланăччě. Мастерскоя пěр ирхине пырса кěчě те тěлěннипе шаках хытса кайрě. Алăкě яриех уçă, çăра çакмалли урлашка тимěре темпе хирсе хăйпăтнă. Шалта ытлашши нимех те тустарман. «Çěр пикийě» те хăй вырăнěнчех. Киçтěксемпе сăрăсем тата палитра ниçта та курăнмарěç.

Кун пирки художник çийĕнчех Янгорчина пĕлтерчĕ те, тарăхса кайнă Василий Иванович айăплисене хăй шырама пикенчĕ. Çав кунах вĕсен йĕрĕ çине ӳкнĕ вăл. Малаш Илюшĕ ялти чи шаймăкрах ачасене ĕçтерсе ӳсĕртнĕ те «Микулай де Каравай» ӳкерекен картинăна çурса тăкма, ӳкермелли сăрăсемпе хатĕр-хĕтĕрсене пĕвене кайса пăрахма вĕскĕртсе янă, çавна тунă хыççăн каллех ĕçтерме пулнă. Çакна ачасем хăйсемех пĕр пытармасăр каласа пачĕç. Микулай хĕремесленсе кайсах ятлаçакан Янгорчина пӳлсе вĕсемпе лăпкăн калаçма тытăнчĕ:

— Илтнĕ-и сиртен хăшĕ те пулсан Санти Рафаэль ятне? — ыйтрĕ вăл çамрăксенчен.

— Ху кăна пĕлетĕн тетĕн-и? — хăюллăн чĕрре кĕчĕ Малашов. — Тупнă ухмахсене. Кирлех пулсан пĕтĕмпех калама пултаратăп. Итали художникĕ, скульпторĕ. Вун улттăмĕш ĕмĕрте пурăннă. Чи паллă картини — «Сикстинская мадонна». Мĕн, манса кайрăн-им культура университетĕнче хăвах лекци вуласа панине? Мĕн тесе тĕпчемелле пулчĕ халĕ? Е пире тăр ухмахсем тесе шутлатăн-и?

— Пачахуншăн мар, Илюш. Асра юлнă, питĕ аван. «Мадонна» историйĕ пирки пĕлетĕр-и тата мĕн те пулин?

Ку ыйтăва никам та хуравлакан пулмарĕ, пурте хулпуççийĕсене çеç сиктеркелесе илчĕç. Пӳлĕмре пĕр хушă каллĕ-маллĕ уткаласа çӳренĕ Микулай Илюш тĕлне çитерехпе тăпах чарăнса тăчĕ.

— Юрĕ эппин, хамах каласа парам, — терĕ вăл çӳçне шăлса илсе. — Искусство çинчен пĕлни аван-ха, паллах, ăна чĕрепе туйма, чунпа ăнланма пултарни вара — темиçе хут та лайăх. Эсир ĕнер пуçтахланса хитре мар хăтланнă ĕç мана шăпах Рафаэль картинине аса илтерчĕ. Чăн та, «Сикстинская мадонна» унăн чи чаплă ĕçĕсенчен пĕри пулнă. Чăвашла ăна «Турă Амăшĕ» тейĕпĕр. Рафаэль кунта этемĕн пĕр кăлтăксăр таса, чи илемлĕ те сăваплă сăнарне тĕплесе кăтартса панă. Анчах картинăна ӳкерсе пĕтериччен кăшт маларах унăн хуларан вăхăтлăха кайма тивнĕ. Çавăнпа усă курса Рафаэлĕн генилле пултарулăхне ăмсанса кĕвĕçекен художниксем ăна пĕтерсе тăкма шут тытнă. Çавăнпах вĕсем, Илюш хăраххи, урамри çапкаланчăксемпе Турра хытă ĕненекенсене ĕçтерсе ӳсĕртнĕ те вĕсене: «Рафаэль пĕтĕм хулипе паллă авантюристкăна ӳкерсе

чапа кăларать», — тесе ĕнентернĕ. Аскăнчăк хĕрарăма Турă Амăшĕ пек сăнарласа кăтартнăшăн тарăхса кайнă çынсем вара мастерскоя кĕпĕрленсе пырса кĕнĕ. Çав самантрах лутăркаса-çурса таптаса тăкма хатĕр пулнă вĕсем çак картинăна. Карса хунă çӳхе чаршава пĕр художникĕ сирсе уçнă та... вăл хăй те, шавласа кайнă ушкăн та çăварĕсене карса пăрахсах шак хытса тăнă. Вĕсен умне тĕлĕнмелле чипер те ытарайми илĕртӳллĕ хĕрарăм сăнарĕ тухса тăнă. Çапла вара усал алăсем лăштăрах усăннă, чăн-чăн искусство хайлавĕ ултава сирсе хаярлăха çĕнтернĕ.

— Йăлтах ăнлантăмăр, Николай Прокопьевич, — айăплăн сăмахлама пуçларĕç ĕнерхи шаймăксем. — Пĕтĕмпех çак Малаша пула лайăх мар хăтлантăмăр. Вăл та çавăн пек усал шухăш тытнă мĕн те, эпир çапах та сирĕн картинăна çурса тăкма хал çитереймерĕмĕр, Пашковсен Венерин куçне курсанах урăлса кайрăмăр. Хитре, ырă хĕр вăл. Ой, намăс пире сирĕн умăрта, Николай Прокопьевич. Каçарăр пире, тархасшăн. Эх, ухмахсем... Асту, Илюш, лекет-ха пирĕнтен сана куншăн, — илтĕнчĕç сасăсем.

Караваев вĕсем çине ытарлăн куç ывăтса илчĕ те çапла хушса хучĕ:

— Ĕçре пурсăр та маттур эсир. Тата, чи аванни, художник чунĕ те пур иккен-ха сирĕнте. Куна вара халь ăнланса илтĕм. Тавтапуçах сире картинăна тĕкĕнменшĕн.

Кĕçех ачасем аванмарланса правлени çуртĕнчен шăппăн тухса кайрĕç. Янгорчин Илюша тăхтама хушрĕ.

— Кала, Николай Прокопьевич япалисене пĕвене пертерсе кама хур тăвасшăн пултăн? Ăна-и? Çук, ăна мар, пире пурсăмăра та, пĕтĕм колхоза, хур турăн эсĕ хăвăн йĕксĕкле ĕçӳпе. Çавна асту: киçтĕкпе те сăрăпа çеç ӳкермен Караваев «Çĕр пикине», ăна вăл пĕтĕм чун-чĕри витĕр шăратса кăларса ӳкернĕ, — çамрăк тракториста тăн пама тăчĕ Василий Иванович.

— Малашне те пирĕн хушша кĕрет пулсан пуçне те шыва татса перетпĕр! — сăмахĕсене шăл витĕр сăрхăнтарса каларĕ те Малашов алăка хыттăн шалтлаттарса хупса пӳлĕмрен тухрĕ.

Председатель ăна çавăн пек сĕмсĕрленсе хăтланнăшăн явап тыттарасшăнччĕ, анчах Караваев ун пек хăтланма сĕнмерĕ, Илюша пуриншĕн те каçарчĕ.

Çĕрле Венерăна Хурăнсура ăсатнă хыççăн Микулай хуллен шăхăркаласа килне таврăнатчĕ. Пĕве пусĕ патне çитерехпе çурăм хыçĕнчен йăпшăнса пырса ун çине сасартăк пĕр тăруках иккĕн сиксе ӳкрĕç. Çапах та Микулай çухалса каймарĕ, ăслайлăн ярса тытса пĕрне çĕре çавăрса çапрĕ, теприне шывалла шампăртаттарчĕ. Хыçран хăвалакан пулмарĕ. Аяк пĕрчи самаях ыратни тата хăлхи шавлани çывăрма выртсан та часах иртсе каймарĕ.

Ирпе вăл машинăсен паркне пычĕ. Илюшăн пичĕ-куçĕ кăвакарса ларнине асăрхасан хăйне çĕр варринче камсем çулăхнине вăл тӳрех ăнланса илчĕ. Йĕкĕт шурă куçĕпе чалăшшăн пăхса илсе ун патĕнчен аяккалла пăрăнса кайрĕ. Кураймасть халĕ ăна Малашов, хĕрне туртса илнĕшĕн каçарма пултараймасть. Микулай Венерăна ирĕксĕрлесе çӳретмерĕ-çке-ха хăйĕнпе, ун пек тума та пултараймасть вăл, тата... майĕ те çук.

Тепĕр кунне Караваев председательпе Шупашкара ларса кайрĕ. Çĕнĕ ĕмĕтпе хавхаланса таврăнчĕ вăл кунта: пуçра анлă панорамăллă «Чăваш юмахĕн чăнлăхĕ» картина çырас шухăш пиçсе çитрĕ те, çак кунсенчех унпа ĕçлеме тытăнасшăн. Вăл паянхи ĕçченсем юмахри паттăрсем пек пулса тăнине чăн пурнăçран илнĕ чĕрĕ сăнарсем урлă кăтартса çырасшăн. Картинăри персонажсем хушшинче Малаш Аркашĕн ывăлĕ Илюш та пур. Вăл Венерăна тивĕççĕр кӳрентернĕ, хăйне те тарăхтарнă пулин те Микулай ăна çĕр ĕçлекен паттăрсен ретнех тăратать, япăх çынсен шутне кĕртмест. Техникăна питĕ аван ăнланакан, ĕçшĕн чунне паракан мал ĕмĕтлĕ çак йĕкĕт колхозра шăпах хăй вырăнне тупнă. Пурăна киле, кам пĕлес пур, тен, юратура та каçалăкĕ уçăлĕ.

«Венера хăйĕн юратăвне яланлăхах пытарнă пек каларĕ те, анчах вилнех-ши вăл? — иккĕленсе шухăшларĕ Караваев. — Ытла та вăрах юратнă-çке вĕсем. Тен, йăнăшать çеç хĕр? Тен, сӳннĕ пек туйăнать анчах ăна çав кăвар?»

«Çĕр пикине» ӳкерсе пĕтерме тесе Караваев хулари мастерскоя илсе килчĕ. Союз правленийĕ хушнипе çамрăк художниксен выставкине йĕркеленĕ çĕре хутшăнма тиврĕ те — ку картина патне часах таврăнаймарĕ. Çав ĕçрен пушансан каллех вăл Çĕрпеле çул тытрĕ. Ялта пĕр-икĕ портрет ӳкерчĕ кăна, пĕр юлташăн тивĕççĕр ĕçĕсене пăхса тух-

ма кворум çитменнипе ăна партбюро ларăвне чĕнсе илчĕç. Пĕрре ал айне лекнĕскерпе усă курса юлас терĕç-ши, Караваева партбюро енĕпе ытти ĕçсем те хушрĕç. Вăл вара эрнипех хуларан тухаймарĕ, юратнă хĕрĕшĕн те хытах тунсăхласа çитрĕ.

Мастерской алăкне уçса ярсан ăна хăйне хирĕç кĕç-вĕç Венера чупса тухассăн туйăнчĕ. Анчах ура сасси пулмарĕ, сăмсана çуллă сăрă шăрши çеç килсе çапрĕ. Ӳкерме пуçланă картина умĕнчи çӳхе чаршава сирсен çав шăрша уйри шăркана ларнă çĕнĕ тырă шăрши çĕнтерсе илнĕ пек туйăнчĕ. Ун умĕнче — Чăваш пики, Çĕр пики, Шанман чечек. Аха, картинăра акă мĕн çитмест иккен-ха: çутă. Йĕри-тавралăха черченнĕн йăлкăштарса çемçен кăтартакан çутă тĕс çитмест хĕр сăнне. Караваев плащне пукан хыçне уртса ячĕ те хыпăнсах киçтĕк тытрĕ, кирлĕ сăрăсене тупса ĕçе пикенчĕ. Пушшех те çутăрах, уçăмлăрах, илемлĕрех кăтартас килет-çке унăн хăйĕн юратăвне.

## ИККĔМĔШ ПАЙ

### 1

Микулай Караваев иртенпех мастерскойра. Кĕçех апат вăхăчĕ те çитет ĕнтĕ, анчах вăл çак хушăра киçтĕкпе пĕр пĕчĕк йĕр те пулин тăваймарĕ-ха. «Çĕрпелсем Çĕнтерӳ уявĕнче» ятлă пысăк ĕç куракансемшĕн тĕп шухăшĕпе те, сюжет аталанăвĕпе те, витерӳлĕхĕпе те вĕçленсе çитнĕ картина темелле. Ăна художник ялта та, Шупашарта та пĕлтĕрвиçĕм çулах кăтартрĕ. Фашистла Германие çĕнтернĕренпе хĕрĕх çул çитнине паллă тума хатĕрленнĕ вăхăтра «Раççей» куравра та пулчĕ вăл. Ăна пысăк специалистсем те ырларĕç. Анчах хăйĕн произведенийĕнче темскер çитейменнине художник çав-çавах чунĕпе туйрĕ.

Акă вĕсем, çĕнтерӳçĕсем, тĕрлĕ çулхи çынсем, чĕррисем, иртнĕ вăрçăра пуç хунă паттăрсене чысласа лартнă палăк умĕнче, çӳллĕ вырăнта, пĕр ретре тăраççĕ. Пурин сăн-питне те Аслă Çĕнтерӳ хĕвелĕн чуна ăшăтакан çути çупăрланăн туйăнать. Уява пуçтарăннă çынсем çине вĕсем çав питех те тертлĕ кунсене йăлтах-йăлтах аса илнĕ пек тарăн шухăшлăн пăхаççĕ. Вĕсен хыçĕнче — алла пăшал

тытса çирĕппĕн малалла пăхакан салтак кĕлетки. Постаментăн виçĕ енчи гранит хăмасем çине ик çĕр сакăр вунă хушамат çырса хунă, вĕсем хушшинче Çинахван Караваев ячĕ те пур. Виçĕ ялтан шăпах çавăн чухлĕ çын пурте çак салтак пекех хĕвел анăçнелле — Аслă Çĕнтерӳ енне нимĕнле йывăрлăхсене пăхмасăр малалла та малалла талпăннă, анчах та çав чаплă куна кĕтсе илеймен. Палăкпа юнашарах — Çĕрпелпе Хурăнсур масарĕ. Çĕнтерӳ кунне паллă тунă май кашни кил çынни ем-ешĕл йывăç ăшне путнă сăваплă вырăнта вăрçăран таврăнайман çывăх тăванне ваттисен йăлипе çулленех асăнать. Микулай та кунта пĕрре кăна пулман.

«Микулай шăллăм, — тĕлĕкĕнче илтрĕ вăл ыйхăран вăранас умĕн Çинахван мучăшĕн палламан сассине, — мĕншĕн-ха эсĕ чĕррисене çеç мухтав юрри юрласшăн? Элле, эпир пулăшман-им вара Çĕнтерӳ уявне çывхартма? Элле, эпир мар-и уншăн хамăр пурнăçа та шеллемесĕр юн тăкса пуç хунă? Эпир, салтак тумне хывса курайманнисем, тивĕç мар-им-ха вĕсемпе пĕрле тăма?»

Темле ытла та ăнланса çитме çук курăм иккен вăл тĕлĕк. Юрĕ, тахçан тĕл пулнă, калаçнă çын тесен — урăх сăмах-ха. Ăна вăл астуса юлма пултарнах. Микулай вара мучăшне куçпа та курман-çке, илтнĕ кăна ун çинчен. Çинахван вăл çуралнă чух çар службинче пулнă, унтанах вăрçа кĕнĕ те тахăш çапăçуран чĕррĕн тухайман. Тĕлĕкре те мучăшĕ Микулайпа чип-чиперех калаçрĕ, картинăра мĕн çитменнине те аса илтерчĕ. Ун сассипе ыйхăран вăранса кайрĕ вара Микулай, тăрса тумланнă-тумланман мастерскоя васкарĕ. Пуçра мĕнле кăна шухăш явăнмарĕ пулĕ кун хыççăн, пĕри ав, Илья Глазунов художник пултарулăхĕнчи çунатлă шухăш вĕçевĕ майлăраххи, аранах тĕвĕленчĕ. Унăн тĕлĕнмелле ĕçĕсенче Караваев паянхи пурнăç паллисемпе иртнĕ вăхăта çыхăнтаракан мĕнле те пулин уçăмлă йĕр курать. Мĕншĕн шырамалла мар-ха Микулайăн та çавнашкал йĕрсене? «Чĕрĕ паттăрсем. Атакăна ăнтăлакан салтак. Анчах... мĕнле сăнар? Епле майпа уçса памалла-ха ăна? Хăçан?»

Вун çиччĕн вĕсем — вăрçă паттăрĕсем. Кашнин сăнарне уйрăммăн уçса пĕтĕмĕшле картина-портрет, сюжетлă-тематикăллă картина тума тăрăшрĕ Караваев темиçе çул

хушши пиҫӗхнӗ шухӑшран. Вӗсен кашниннех – хӑйне майлӑ кун-ҫулӗ, терчӗ-асапӗпе савӑнӑҫӗ. Вӑрҫӑран йывӑр аманса таврӑннисем те пур вӗсем хушшинче. Хурӑнсурти Пашковах ав туйи ҫинче йывӑррӑн тайӑлса кӑна утса ҫӳрет. Хӑй ӳкернӗ картинӑри Иосиф Иванович куҫӗпе тӗл пулсанах Микулая Венера аса килчӗ. Ытла та ытармалла мар чипер хӗр ӳстернӗ-ҫке вӗсем Укҫине инкепе иккӗшӗ.

Акӑ вӑл фронтовиксенчен уйрӑлса тепӗр картина патне утса пычӗ, ҫӳхе карра кӑшт сирчӗ те... ун умне тӑп-тӑп йӑрӑс пӳллӗ, савӑнӑҫлӑ сӑн-питлӗ Венера тухса тӑчӗ. Хӗр сап-сарӑ тулӑ пуссинче хӗвел тӳпенелле йӑлкӑшса хӑпарнине сӑнать. Сулахай аллинче пиҫсе ҫитнӗ шултра тулӑ пучахӗ. Сылтӑммине пилӗкне тытнӑ. Вӑрӑм ҫивӗтне ҫил чӳхентерсе вӑркӑштарать. Тӑпӑлкка кӑкӑрӗсем сывлӑша ҫурса ҫул уҫаҫҫӗ тейӗн. Утмӑл турат чечекӗ пек кӑвак куҫӗсем темле ытарлӑн та ӑшшӑн тинкерсе пӑхаҫҫӗ. Венерӑн тӳрӗ сӑмси пӗтӗм пит-куҫа илӗртӳллӗ илем кӳрет. Кӑшт хулӑнрах тути ҫемҫен ейӗлнипе вӗтӗ шӑлӗсем чӑлт шуррӑн курӑнаҫҫӗ. Хӗр сӑнарӗнчи темле сӑмахпа каласа пама та пӗлмелле мар асамлӑх Микулая авалхи грексен халапӗнчи тинӗс кӑпӑкӗнчен пулса кайнӑ Венера-Афродитӑна та, Леонардо да Винчин «Джокондине» те аса илтерет. Унра вӑл, Пашков хӗрӗнче, вӗри туйӑмлӑ юрату ӑшшине те, ытарма ҫук илӗртӳллӗ илеме те, пурнӑҫӑн черчен савӑнӑҫӗпе хӑватлӑ таппине те — пурне те пӗрле курать.

Мӗншӗн-ха ӑна ҫак сӑнар ҫавнашкалах пӑлхатса ячӗ? Мӗншӗн вӑл Венерӑра ҫеҫ тупрӗ-ха ҫав уйӑрайми пӗр пӗтӗм те тӗлӗнмелле килӗшӳллӗ ырӑ енсене? Пӗр хӗр те, унӑн чи малтанхи юратӑвӗ Эмма Старикова та, ун чунӗнче ҫакӑн пек тулса тӑкӑнакан ачаш туйӑмсем вӑратайманччӗ. Венерӑна пӗрре курсах ӑшра унччен нихҫан та пулман вӑрану туйӑмӗн вӗри кӑварӗ пырса ҫапнӑччӗ.

Пӗлме ҫук, ыттисемшӗн, тен, Венера та ялти ҫамрӑк хӗрсенчен нимпех те уйрӑлсах тӑмасть пулӗ. Тен, уншӑн, Микулайшӑн, ҫеҫ вӑл кӑмӑлӗпе те, кӗлеткипе те, куллипе те, пичӗ-куҫӗпе те никампа-нимпе танлаштарма ҫук чи илемлӗ те хӳхӗм хӗр пулӗ. Караваевшӑн вӑл — чӑн-чӑн ҫӗр пики. Ахальтен мар картинине те ӳкерме пуҫласанах «Ҫӗр пики» тесе ят панӑччӗ.

Ҫапах та мӗнле шухӑш вылять-ши хӗр пуҫӗнче?

Камшăн вăрттăн та ачашшăн кăртлата-кăртлата тапать-ши унăн канăçсăр чĕри? Ăçтан пĕлĕн-ха, тен, ахальтен çеç çӳремест-ши Венера Микулайпа? Чунĕпе çав-çавах Хурăнсурти Илюш Малашова парăнман-ши вăл?

Караваев Малаш Аркашне те, ун ывăлне те питĕ тăрăшса ӳкерчĕ. Чылай куравра пулнă «Механизаторсем» картинăра вăл хаваслă та хастар сăнлă Илюша ушкăн варринче малти планра сăнарласа кăтартнăччĕ.

«Çĕр пикине» майĕпен çеç çӳхе чаршавпа карса хурса Микулай тĕкĕр умне пырса тăчĕ. Тĕкĕр тĕрĕссине калать теççĕ те, эппин, мĕнлерех çын-ши Микулай хăйне Илюшпа юнашар тăратас пулсассăн? Малашов çамрăк, вăйлă, юнĕ вĕресе тăракан йĕкĕт. Микулай хăй шучĕпе те — «мучи». Вăл куçĕ айĕнчи йĕрсене, кăшт тăртанчăкрах пит çăмартийĕсене, тăваткал сухалне, тăнлаври кăвак çӳç пайăркисене тĕрткелесе илчĕ. Çамки тăрринчен хыçалалла тарса пыракан сайралнă çӳçне якатрĕ. «Хам çĕр пики вырăнне хуракан хĕр кампа танлаштарать-ши мана? Мĕнлерех сăнар вылять-ши ун куçĕ умĕнче? Чи килĕштернĕ, юратнă çын тесех шухăшлать-ши вăл? Хăйĕн черчен çамрăклăхне, хĕрарăм кун-çулĕн пуласлăхне шанса пама хăрамасть-ши ват хусаха?»

Çак шухăшпа Микулай пӳлĕмĕн тепĕр пуçнелле утса кайрĕ, вăрăм сĕтел çине тайăнтарнă картина умĕнче чарăнчĕ. Сухаллă янахне сулахай ывăç тупанĕпе хупласа чылайччен сăнаса тăчĕ вăл хăй мĕн ӳкернине. Умра тулă кашласа ларать. Пучах тинĕсĕ. Ял урамĕ курăнать. Анкартисем патнелле пиçсе çитнĕ тырă пусси витĕр ансăр сукмак тухать. Вĕсен тĕлĕнче кăтра пĕлĕтсен ушкăнĕ çакăнса тăрать, пĕр хушăкĕнчен хĕвел йăлкăшса пăхать. Тăван тавралăх. Çĕрпел ялĕ хыçĕнчи çак вырăн Янгорчин пурнăçĕпе уйрăлми тачă çыхăннă. Василий Ивановича нумай пулмасть-ха района куçарчĕç те, вăл халĕ парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕнче ĕçлет. Район пуçлăхĕ.

Ку картинăна Караваев «Шурăмпуç» колхозăн çĕнĕ председателĕ Юрий Ильич Андреев ӳкĕтленипе ӳкернĕччĕ. «Вăл, Янгорчин, колхоза ура çине çирĕп тăратрĕ, халăха çăкăр-тăварлă турĕ. Çавăнпа та эсĕ ӳкернĕ картинăна эпĕ Василий Иванча мĕнпур колхозниксен ячĕпе тав туса парнелесшĕн», — терĕ.

Ěçě тиркемелле пулмарě пек-ха. Иртнě эрнере Шупашкара килсен Юрий Ильич ятарласах мастерскоя çитсе курчě. Картина ятне те тупнă: «Кěрхи тулă пиçнě чух» тесе калар», — сěнчě вăл.

Микулай картинăна ылтăн сăрăллă рамăна вырнаçтарса анлă катан пир татăкěпе типтерлěн чěркенě вăхăтра алăка такам хуллен шакканă сасă илтěнчě. Пырса уçрě те — ку çын шăпах тата хальхинче те Андреев пулса кайрě. Председатель çуллахи çӳхе костюмпа, шурă кěпепе, галстукпа, çăмăл пушмакпа. Вăл сывлăх сунса алă тытрě те шурă карттусне хыврě, шěвеле пуçланă çӳçне майěпен шăлса илчě, куçěпе васкамасăр мастерскойри картинăсене йěрлесе çаврăнчě, хайхи тулă пуссине шырарě пулас ěнтě.

— Эсир, тем, чěркесе те хунă пулас ăна, — терě Юрий Ильич. — Каçарăр та, маларах калама маннă кайнă...

— Мěн пулнă тата? — ун çинелле куçне çěклерě Караваев.

— Пěлетěр вěт-ха, тулă пусси çумěнче виçě çил арманě пур, çавсене те сăрласа хурасчě.

— Кирлех-ши армансем? — иккěленчě художник. — Вěсем сюжета улăштарса тěп шухăшран пăрса яраççě. Ятне, тен, улăштарма та пулě. «Сукмак» темелле мар-ши ăна? Анкарти хыçěнчи тулă пуссинчен мăн çул çине пурнăç сукмакě тухать...

— Çук, çук! — яхăнне те килěшмерě Андреев. — Йăнăшатăр. Тулă пусси кунта тěп сăнар. Тата ял пуçěнчи пекарня кěнěччě-и унта? — хыпăнчăклăн ыйтрě вăл.

— Кěнě, кěнě, пур, Юрий Ильич.

— Апла пулсан аван. Тулă пулнă. Тырă вырнă. Арман авăртнă. Çăкăр пěçернě. Хырăм тутă. Ěçле те кан, юрла, ташла, савăн. Çапах та арман кирлех. Пурте пур — арман çук.

— Пěркунах аса илтермеллеччě, тинех ěлкěрейместěп. Çуллă сăрă час типмест...

— Эппин, кайран та пулин ӳкерме ан манăр. Юрать-и?

— Юрě, юрě, — кула-кулах килěшрě Микулай. — Çула май ман хваттере кěрсе тухăпăр. Тумланмалла, парнесем илмелле. Çуралнă кун ячěпе Ваçкă валли спорт хатěрěсем туянтăм-ха. Икě-виçě пăт та таять пуль. Хул-çурăмне çемěçтертěр кăштах.

Вăрăм çул часах вěçленчě. Шупашкартан тухсан вěсем

сехет çурă ытларах кайрĕç-и те, Хурăнсур вăрманне çитсе кĕчĕç. Мĕн тери чуншăн çывăх çак вырăн. Кунта çырлана е мăйăра мĕн чухлĕ чупман пулĕ ача чухне Микулай. Ёшне тавра йывăççисене юри çапла ятарласа лартса ÿстернĕ тейĕн. Ял енчен пырса кĕнĕ çĕрте — юманлăх, кăнтăр енче — ăвăслăх. Вĕсем хушшине çăка вăрманĕ саркаланса кĕрсе ларнă. Унта-кунта хыр-чăрăш, хурăн, вĕрене, каврăç, хурама, шĕшкĕ ÿсет. Вĕçен кайăк сасси чуна килентерет.

Янгорчин председательте ĕçлеме пуçланăранпах колхоз çак ĕшнере Акатуй ирттерет. Паян та таврари халăх савăнать авă. Ĕçпе юрă уявне Василий Иванович çемйипех килнĕ. Шупашкар хăнипе тĕл пулсан унăн кăмăлĕ пушшех çĕкленчĕ пулас, калаçса пĕтерейместь. Юрий Ильич вĕсене сцена çине улăхма васкатать.

Ял паттăрĕсене чысланă хыççăн Андреев хăйсен ентешне, райкомăн пĕрремĕш секретарьне Янгорчина, çуралнă кун ячĕпе саламларĕ те ылтăн рамăллă пысăк картинăна пурин еннелле те çавăра-çавăра кăтартса:

— Ку акă — «Шурăмпуç» колхозникĕсенчен. Яла таврăннă чухне нихçан та çак сукмака ан манăр, Василий Иванович, — терĕ.

Янгорчин, тен, аванмарланса-и, парнене хăюсăррăн алла илсе тытрĕ. Хăй вырăнне кайса тăрсан вара ун куçĕ умĕнчен тахçанхи вăхăт ÿкерчĕкĕсем вĕлтлетсе иртрĕç. Астăвать-ха, ача чухне çав анкарти хыçĕнчи сукмакпа вăл армансем патне выляма тухатчĕ. Çав сукмакпах Уравăшри вăтам шкула утатчĕ. Çав сукмаках ăна мăн çул тăрăх ял хуçалăх институтне илсе çитерчĕ. Каярахпа, агрономра, колхоз председателĕнче ĕçленĕ çулсенче, çав сукмак тăрăхах сĕрĕшсе ÿсекен çĕнĕ тырă шăршипе киленсе утатчĕ. Хăйне СССР Верховнăй Совечĕн депутатне суйласан та вăл Мускаври сессие кайма çак сукмакпа аслă çул çине тухатчĕ. Райком çуртне те ăна çав сукмаках çитерчĕ.

Çук, манмасть, манма шутламасть тата пултараймасть вăл пулса çитнĕ тулă пуссинчи пурнăç сукмакне. Чăнах та, вăл паян ăна савăнтарчĕ те, хурлантарчĕ те. Председатель халăх ячĕпе панă парнене алла илнĕ самантра унăн пырне темле хытă чăмакка капланса хăпарчĕ. Хăйне çапла сума сунăшăн тав тунă чухне те сасси кăшт чĕтренерех тухрĕ.

Каç сĕмĕ киличченех халăх вăрман уçланкинчен саланмарĕ. Караваев киле çитнĕ çĕре амăшĕ ĕне сунă та ĕнтĕ. Ывăлне вăл кăпăклă ăшă сĕт сĕнчĕ. Микулай амăшне тав туса ăна витре хĕрринченех ĕçрĕ. Унтан пахчана тухрĕ те улмуççисем хушшипе утса сад вĕçнех çитрĕ. Акă — унăн сукмакĕ. Çак сукмакпа вун тăваттăри Микулай килтен вăрттăн тухса кайнăччĕ, Шупашкара çитнĕччĕ, пурнăç çулĕ çине тухнăччĕ. Халĕ те вăл çак сукмакпа чун савнă хĕрĕ патне васкаса утать. Венера ăна паркри хурăнсем айĕнче кĕтет. Пурнăç çулĕ çине тухнăскер, çемье çулĕ çине тухайĕ-ши Микулай çак сукмакпа? Çавна кăна вăл хальлĕхе уçăмлăн татса калаймасть.

## 2

Караваев киле таврăннă вăхăтра Сунар тăвайккинчи Туçи рашчи çийĕн хĕвел пайăркисем пĕлĕтелле хĕмленсе кармашма тытăннăччĕ. Улăхри çуллахи лагерьте электростанци ĕçлеме пуçларĕ. Унта халĕ ирхи сăвăм пуçланать. Ялта çине-çинех автансем шарлаттарса авăтаççĕ.

Ирхи савăк сасса тăнласа тухăçалла пăхса тăчĕ-тăчĕ те Микулай йăмра айĕнчи хăма сак çине пырса ларчĕ, пуçне аллисемпе çатăрласа тытрĕ.

«Эх, Венера, — куçĕсене çĕрелле пăхса ассăн сывларĕ Микулай. — Чун савнă Çĕр пикиçĕм, манăн ытарайми «Джокондăм». Мĕншĕн-ха çав териех çунтаратăн эсĕ ман чĕрене? Мĕншĕн кашни самантрах аса килсе ăша пĕр вĕçĕмсĕр вăркаттаратăн?»

Караваев хăй темиçе çул каялла Парижа кайсан Луврти картина галерейинче пулнине аса илчĕ. Унта вăл Леонардо да Винчи пилĕк çĕр çула яхăн каялла Флоренцири Джокондо хуçан хитре арăмне Мона Лизăна çав тери чаплă ӳкернĕ картина оригиналĕ умĕнче, такам куç пăвнă пекех, тĕлĕннипе шак хытса тăнăччĕ. Тепрехинче çак шедевра вăл Мускаври Сăнарлă искусствăсен музейĕнче курнăччĕ. «Мона Лиза Джоконда» картинăна кунта ун чухне ятарласах Парижран илсе килнĕччĕ. Темиçе сехет черет тăрса та ăна вун пилĕк çеккунт хушши çеç курса илнĕччĕ. Лувр ахахне кашни çынна çав вăхăт чухлĕ çеç пăхма ирĕк панăччĕ. Джокондăн асамлă куçĕ, вăрттăн кулли, ăшри ырă

кăмăлĕ, вилĕмсĕр чипер сăнĕ чĕрĕ çын пек ĕмĕрлĕхех асра юлнăччĕ.

«Ун чухне эсĕ, Венера, ман ĕмĕтре те çукчĕ-ха. Курманччĕ те эпĕ сана çитĕннĕ хыççăн. Çапах та çавнашкал асамлă сăнар куç умĕнчи тĕтрелĕхе сирме пуçланăччĕ ĕнтĕ. Яла таврăнсан акă вăл чĕрĕлчĕ, хăйĕн пĕтĕм илемĕ-илĕртӳлĕхĕпе куç умне тухса тăчĕ», — хăйпе хăй сăмахсăр калаçрĕ Караваев.

Пĕр касă çил вĕрнипе лаштра йăмра кăтра çулçисемпе вăштăртаттарса илчĕ. Тем самантран калинкке кăриклетсе йынăшнă сасă илтĕнсе кайрĕ. Микулай пуçне çĕклесе пăхрĕ те хăй патнелле тăклаттарса утса килекен аслашшĕне асăрхарĕ. Ватă çын кăххăмлатса илчĕ, Микулай çумне пырса ларчĕ.

— Ай, тем хуйхă тупăнмарĕ пулĕ те, мăнукăм, — хытанка аллине ун хулпуççийĕ çине хучĕ вăл. — Чӳречерен пăхатăп та, паçăртанпах тем шухăша кайса ларатăн.

— Çук-ха, ыйхă вĕçрĕ тем, асатте. Тухрăм та — ларатăп акă ним тума пĕлмесĕр, — кулам пек турĕ Микулай.

Мучи ун çинелле темскер шухăша кайнă пек пулса майĕпен сăнаса пăхрĕ, унтан каллех ӳсĕрсе илчĕ.

— Пăхатăп, пăхатăп та — сана курсан чун савăнса каять, мăнукăм. Тавах-ха Турра, маттур йĕкĕт пулса ӳсрĕн эсĕ, хамăр ăрат ятне ямастăн. — Унтан вăл, те калас, те калас та мар-и тенĕ пек, пĕр хушă сăмах чĕнмесĕр ларчĕ. — Çакă кулянтарать-ха мана: вăхăчĕ пиçсе çитнĕ пулсан та хăраххăнах пурăнатăн. Ма вара çаплах авланмастăн? Хĕрĕ тесен, сан пек ятлă-чаплă çын валли вĕсем тупăнмаллах пек. Сăну-пуçу та тиркемелле мар, аллу-уру çыпăçуллă. Вăхăчĕ ав сисмесĕрех иртсе пырать. Ватта юлсах кайиччен авланмаллах пулĕ сан, мăнукăм. Пĕччен çыннăн мĕн усси унăн? Пурнать. Вилет. Ячĕ тесен, юлаканнин — юлать, юлманнин — юлмасть. Ни хăйне, ни ял-йыша, ни патшалăха усă памасть хăй хыççăн ача-пăча хăварман çын. Уйри юпа пекех пĕччен вăл, хăр тăлăх. Авлан, Микулай, хам çĕре кĕриччен сан ачусене те курса юлас килет. Мĕнле калаççĕ-ха, йывăç тымарĕпе, этем тăванĕ-хурăнташĕпе тытăнса пурăнать теççĕ-и. Итле, мăнукăм, ват çынна. Ват çын пил-пехилне пӳсĕр çимĕ.

Аслашшĕ сăмахĕсем Микулая пушшех те шухăша ячĕç.

Çулсем иртсе пынă май çемье тăвас ыйту чи кăткăсси те чи шухăшлаттараканни пулса тăчĕ. Вăл хăçан татăлса пĕтесси хальлĕхе пĕртте паллă мар-ха. Хăлхара — çывăх çыннăн сасси:

— Пăх-ха, Микулай, куратăн-и ав çав çӳлерехри турата, — йăмра варринелле аллипе тăсса кăтартрĕ аслашшĕ. — Эс çуралсан шăтса тухнăччĕ вăл. Халĕ ав епле парка. Унран аялараххисем Укахвин, Ваççукăн, Мĕтрин, Çинахванăн, Пракухăн. Саннипе юнашарах, кăшт çӳлерех, Антун турачĕ те ӳсме пуçланăччĕ те, хăрса ларчĕ вăл. Çапла пĕр хăрăк турат тупăнчĕ-тупăнчех. Антунĕ хăй те ашшĕ-амăшне хывмарĕ, эпир каланине хăлхине чикесшĕн пулмарĕ те, мĕн тăвăн-ха ĕнтĕ, эртел сăпкинчен те тухса ӳкрĕ çын.

Шăллĕ çапкаланчăка тухнăшăн Микулай та хытă пăшăрханать. Мĕн чухлĕ вĕрентмен, ăс паман пуль ăна. Вăл пур — çав-çавах хăйĕннех тăвать. Тем шырать, тем ытлашши кирлĕ ăна пурнăçра. Тӳрĕ çулпа утма пĕлмест, кĕтӳрен уйрăлнă выльăх хăраххи ялан таçта айккинелле пăрăнса пăхать.

— Тĕрĕс те калана пулĕ çав: çемье ассисĕрех пулмасть, — хаш-ш! хуйхăрчĕ аслашшĕ. — Пĕр çĕрĕк пан улми çĕр панулмине çĕртнĕ тет.

Çынсем сурăхĕсене кĕтĕве хăвалама тытăнсан вĕсем сак çинчен тăчĕç. Хапха патне тĕнкĕлтетсе çитсен Каравай Хĕветучĕ пуçне чалăштарса çӳлелле пăхса илчĕ. Чӳрече çумне çапса хунă хăма татăкĕ ăна чылайранпа канăççăрлантарать. Ун çине хĕрлĕ сăрăпа «Кунта «Шурăмпуç» колхозăн хисеплĕ колхозникĕ Федот Васильевич Караваев пурăнать» тесе çырнă сăмахсем курăнмиех пула пуçланă, вĕсене витĕр куçлă çын та аран çеç вуласа ăнланмалла.

— Вăт эс, Микулай, ак çакна чипер йĕркеллĕрех туса пар-ха, — туйипе тĕллесе кăтартрĕ вăл çӳлелле. — Илле Юрккине кала: ан мăшкăллатăр ватă çынсенчен. Колхоз пире хисеплет пулсан ята та шултра сас паллисемпе çырса кантăк рамкăна кĕртсе лартмалла.

Киле килмессеренех Микулай çав хăма татăкне улăштарас пирки шухăшлать, кайран ав тĕрлĕ вак-тĕвек ĕç хушшинче манăçа тухать. Ялти хисеплĕ колхозниксен сăнĕсене вĕсем ӳкерсе панăччĕ-ха. Ӳкерчĕксем Культура керме-

нĕнче çакăнса тăраççĕ. Пӳрт çумне те ӳкерсе çакма пулать вĕт-ха вĕсене. Копи тумалла та «кунта çав-çав пурăнать» тени çумне сăнне те вырнаçтармалла. Аслашшĕ каланă пекех, кантăк рама та пăсас çук. Вуласа та, курса та камне тӳрех пĕлмелле пултăр. Вывескăсене пурне те пĕр пек тăвас пирки вăл паянах Юрий Ильича аса илтерĕ.

Кил хушшине кĕрсен Микулай амăшне хирĕç пулчĕ. «Пилĕк ача ӳстерсе те кин уссине курса пулмарĕ», — тесе мăкăртатса вăл вите çывăхĕнче кавлесе тăракан ĕне патнелле пушă витре йăтса утса кайрĕ. Авланнă пулсан, тен, Микулай арăмĕ амăшне кăшт-кашт пулăшкалатчĕ те пуль. Халĕ вăл киле килсен хăй те ăна ытлашши ĕç кăна тупса парать. Пурăнаççĕ виççĕн пенсионерсем: аслашшĕ, ашшĕ, амăшĕ. Тăвата ывăлран пĕри те килте çук. Аслине, Мĕтрине, уйăрса кăларнă. Шоферта, трактористра ĕçлекенскер, хăех вăл вăйлă кил-çурт çавăрнă, ачи-пăчи сак тулли. Ваççук вăтам шкул пĕтерсенех килтен тухса кайрĕ. Икĕ академи пĕтерсе контр-адмирала çитрĕ. Атом вăйĕпе ĕçлекен карапппа шыв айĕнче ишет. Яла сайра хутра çеç килкелесе каять. Укахви малтанах ялта чăхсем пăхатчĕ, Хурăнсурти Кĕпитун Молякова качча тухрĕ те халĕ унта сысна ферминче ĕçлет. Шăллĕ, Антун, авланнă, виçĕ ача ашшĕ. Анчах хăй тулăксăррине пулах килте йӳнеçсе пурăнаймарĕ. Колхоз ĕçне йĕркеллĕ тухмасть, ытларах ĕçсе-супса кăна çӳрет. Ăна курса арăмĕ те çавах: иккĕшĕ те пĕр калăппа хуçнă çăпата пек пулса кайнă. Малтанах пĕрмай вĕсем аслашшĕне те, ашшĕ-амăшне те эрех валли укçа тупса пама анратнă. Чипер вăйпитти çынсене епле-ха апла ашкăнтармалла? Ача-пăчана мул париччен ăс пама хушнă тенине пĕлмен мар Караваевсем, кайран хытарнă вара енчĕксене. Антунĕ ятлаçма, вăрçма-çапăçма та хăтланнă, ватăсене пачах уями пулнă. Пĕр килте пĕрле пурăнма май çук пулса çитнĕ. Ашшĕн, Пракухăн, аккăшĕ Хурăнсурта пĕччене пĕр пĕчĕк пӳртре пурăнатчĕ. Çав карчăк вилсен Антун çемйипех унта куçса кайрĕ. Тек ĕнтĕ вĕсене хăйсен килĕнче ятлакан та, ăс паракан та пулман, мĕн тăвас килнĕ — çавна тунă. Ĕçлесе илнĕ укçине ĕçсех пĕтернĕ, ачисене те йĕркеллĕ пăхман. Ял тăрăх пуш параппан çапса çӳренĕшĕнех Антуна çивĕч чĕлхесем Антун-Палтун ят тупса панă. Килте чип-чипер йĕркеллĕ, ватăсене хисеплесе пу-

рăнас чухне пĕчченех Каравай йăхне намăс кăтартать. Халĕ те акă вăл калинккерен çара уранах сулланса килсе кĕчĕ, кĕпине йӳле янă, шăлаварне те тӳмелемен.

— О-о, пирĕн Леонардо да Винчи килнĕ! — пылчăклă аллине тăсса пачĕ Антун. — Микулай де Каравай... Сывлăх сунса пуç таятăп, пичи.

— Салам, ырă ир пултăр, шăллăм, — хăй унпа кăмăлсăррине палăртмарĕ пиччĕшĕ. — Ирех вăйлă çил-тăвăла лекнĕ-çке эс?

— Çил-тăвăл тетĕн-и? О-о! Сан вырăнта халь Ваççук пичи пулас пулсан тӳрех виски туртса кăлармаллаччĕ. Эс вара... хыт кукар... ху та ĕçместĕн, мана та пĕр тумлам памастăн. Кала-ха тата: мĕншĕн-ха сан художникусем ытла мăн кăмăллă, э? «Эп Караваев шăллĕ, мана ӳкерĕрха?» — терĕм те, пĕри, сан пек сухалли, Нямановтеççĕ-и ăна: «Тухса ăсан-ха кунтан, ан кансĕрлесе çӳре, — тесе мастерскойран хулран тытсах кăларса ячĕ. Итле-ха, пичи, мĕншĕн çаплах хисеплемеççĕ сан эртелӳнти маçилăсем мана, э?!

Микулай ӳсĕр шăллĕне аяккалла сирсе пахчаналла кĕрсе кайрĕ. Çав хушăра Антун ĕне сăвакан амăшĕ патне сĕнкĕлтетсе пычĕ. Ула ĕне пуçне пăрса каялла çаврăнса пăхрĕ те хӳрипе çат! çатлаттарчĕ ăна питĕнчен. Ку тарăхнипе ăна пилĕкрен пĕррех чышкăпа таклаттарса чышрĕ. Шартах сикнĕ ĕне тулли витрене урипе перĕнтерсе тӳнтерсе ячĕ. Амăшĕ çĕре лакаах кайса ларчĕ.

— Эй, Турă, ăçтан тупса патăнах мана çакна, — макăрмах тытăнчĕ вăл пĕр тарăхса та кулянса. — Эсех типĕтрĕн мана, эсех, Антун, ĕçпе хăрмарăм... Ах тур-тур...

Кĕçех Микулайпа аслашшĕ те унта чупса çитрĕç, ĕсĕклесе йĕме тытăннă хĕрарăма ура çине тăма пулăшрĕç. Вăкăр пек куç айĕн тирĕнсе пăхакан Антун сĕт кӳлленчĕкĕ çинелле чăртлаттарса сурчĕ. Аслашшĕ чăтма пултараймарĕ, тарăхса кайнăскер, ăна çурăм тăрăх туйипе тăсрĕ. Антун ăна çапма тесе чышкине çĕкленĕччĕ — юрать-ха Микулай çапă купи çине тĕртсе ярса ĕлкĕрчĕ.

— Çыхса пăрахмалла ăна, шуйттана, — терĕ аслашшĕ. — Ме ак урхалăх.

Антун çапма тесе çĕкленĕ патака хăвăрт кăна сулахай аллипе сирсе Микулай ăна сылтăммипе хулĕнчен çатăр-

ласа тытрĕ те пĕр самантрах урапа çине çĕклесе хучĕ, вăл эхлеткелесе тапаланнă хушăра ешчĕк урати çумне çыхса та лартрĕ.

— Эх, тĕнче мăшкăлĕ, — хаш-ш! сывласа илчĕ аслашшĕ. — Кĕçех çĕре çитетĕп, хамăр йăхра кун пеккине пĕрне те курмарăм. Пуçĕпех пăрака ăшне путнă. Мĕн таран намăс çынсенчен, ах, мĕн таран намăс. Ĕçке пулах пĕтрĕ.

Аслашшĕне те, амăшне те хĕрхенес килчĕ Микулайăн. Ара-çке, чип-чипер çыннах ухмаха кăларать çав ĕçкĕ. Антун та малтан тракторпа йĕркеллех ĕçлетчĕ. Арăмĕ фермăра пăру пăхатчĕ. Кĕве Кĕпитунĕпе явăçса кайсах хăйне хăй пĕтерчĕ шăллĕ. Акă халĕ арăмĕ те ав... Упăшкине шыраса çитрĕ-ши вăл кунта? Çӳçне-пуçне сапаласа янă, чĕнтĕрлĕ кĕпи вараланчăк, пичĕ-куçĕ шыçăннă. Кам калĕ ĕнтĕ çак хĕрарăма вăтăрта çеç тесе? Сахалтан аллă çул пама пулать. Хăйĕнчен çывăхра тăмалла мар сăра-эрех шăрши перет. Унччен те пулмарĕ — урапа çинче хăйпе хăй ĕнĕрлесе выртакан упăшкине курчĕ те ӳсĕр хĕрарăм куçне-пуçне чарса пăрахса хăрушла çухăрса ячĕ:

— Хурах! Вĕлереççĕ! Антуна вĕлереççĕ, çăлă-ăр!

Каравай Хĕветучĕ çĕре лач! сурса аяккалла пăрăнчĕ. Микулай шăллĕне çыхнă тĕвве салтрĕ те ним шарламасăр пӳрте кĕрсе кайрĕ. Амăшĕ çеç ахлата-ахлата темскер пăшăлтатрĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ — ӳсĕр Антунпа арăмĕ юрласа та ячĕç: «Тăпăртатса тăрать тур лаши...»

## 3

Радио калаçма пуçларĕ. Пӳртре шăппăн кăна Шупашкар радиостанцийĕн чĕнӳ кĕвви янăраса кайрĕ. Ку Микулая хăй Чăваш çĕрĕн тĕп хулинче пурăннă малтанхи çулсене аса илтерчĕ. Мĕн çав териех хистерĕ-ши ăна тахçанхи? Пӳртĕн урам енчи стенине хупласа тăракан «Пирĕн несĕлсем» картина-ши? Ăна вăл миçе çул сăрлать, тӳрлетет, çĕнетет, тĕрлĕрен пайсем-паллăсем хушса пуянлатать ĕнтĕ. Мăн аслашшĕн аслашшĕнчен пуçласа пиччĕшĕпе йăмăкĕн ачисем таранах пур унта. ЮНЕСКОн Парижри штаб-хваттерĕ валли Илья Глазунов тунă панно евĕрлĕрех пулса тухрĕ вăл. Глазунов хăйĕн картининче совет халăхĕсем тĕнче культурипе цивилизацине аталантарас ĕçре тунă

çитĕнӳсене Тăван çĕршывăн çутта кăлараканĕсен хĕрӳ сăнарĕсемпе кăтартса панă. Караваев хăйсен йăхĕнчи çынсен пурнăçне çĕршыв ӳсĕмĕн тапхăрĕсемпе çыхăнтарма тăрăшрĕ. Вăхăт таппин чĕрĕ йĕрĕ сисĕнсе тăрать унта. Çăпата сырнă, сăхман тăхăннă Мир Мирунĕ, несĕл пуçĕ, хыçалта, аякри çутăра, тырă кунтăкпа акать. Çывхарса килекен аслатиллĕ çумăр пĕлĕчĕсем еннелле пăхса ирхи хĕвел питтинче мăнаçлăн, сарлакан сапать чăваш хресченĕ пиçнĕ çĕр çине тырă пĕрчисене. Ун çывăхнерех, асамат кĕперĕ айĕнче, Çтаппан Мирунч пӳрт лартать, вата салтак Лариван Çтаппанчи тупă патĕнче мăйăхĕсене пĕтĕрсе тăрать. Ваçлей Лариванчпа мăшăрĕ çавра çăкăр тытнă. Умра хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет. Ялавĕ çинче «Мир», «Çĕр çинчен калакан декретсем» тесе çырнă сăмахсем палăраççĕ. Тепĕр енче — йывăçлă ял урамĕ, Каравай Ваçлейĕ çырма хĕрне лартса ӳстернĕ вата йăмра. Хыçри уйра суха пуçпе трактор ăмăртаççĕ. Аслашшĕ, Хĕветут Ваçлейч, хăй ялта пуçласа пĕрлештернĕ колхоз ĕçченĕсемпе пĕрле Май уявне тухнă. Кунтах — масар çумĕнчи палăк, «Тăван çĕршывшăн!» тесе кăшкăрса малалла ăнтăлакан пăшаллă салтак — иртнĕ вăрçăран таврăнайман Çинахван мучăшĕ. Сунтал умĕнче ашшĕ — Пракух. Амăшĕ хĕрнĕ тимĕре йывăр мăлатукпа тӳпкет. Мĕтри пиччĕшĕ машинăпа патшалăх валли тырă ăсатать, хăй кабинăран çӳçне кăларса хаваслăн йăлкăшса кулать. Савăнăçлă сăнлă Укахвие самăр та тĕреклĕ сыснасен ушкăнĕ варринче ӳкерсе кăтартнă. Сулахайра, кăшт аяккарах, кăвак тинĕс хумĕсем çийĕн ярăнса ишекен карап кĕперĕ çинче — Ваççук. Мире, ĕçе хӳтĕлекен моряк сивлек те хăюллă сăнлă. Мĕтри муччăшĕн Мускавра пурăнакан ывăлĕ, ученăй, атом хăватне тĕпчет. Микулай хăй çурăм хыçне вăрăм кăранташпа киçтĕк çакнă та ирхи çĕртме тунă хура уй тăрăх тухăçалла утса пырать. Унран инçе те мар — трактор çинчен анакан шăллĕ Антун. Микулай çак картинăна ӳкерме пуçланă çулсенче Антун колхозра чиперех ĕçлетчĕ-ха. Хĕрĕнкĕрех чухне: «Сана, интеллигента, эпĕр çăкăр çитеретпĕр, пире пуççапмалла сан», — тесе йĕплеме те именсех каймастчĕ пиччĕшĕнчен. Картина çинче хăйне курсан: «Ма мана чи мала ӳкермерĕн? Механизатор вăл — ялти тĕп ĕçчен», — теме те пăхатчĕ. Пĕррехинче тата самаях сыпса лартнăскер тавлашсах кайрĕ.

«Эсĕ яла мĕншĕн пĕрмай йӑркканине ӑнланмасть пуль тетĕн-им? Кунта килсе атте-анне кил-çуртĕнче янттипе пурӑнасшӑн. Асту, эпĕ — кĕçĕнни, кунта эп хуçа. Сан шӑршу та тахçанах тасалнӑ килтен. Авӑ сан çулу анкарти хыçĕнче, тухса уттарах хӑвӑн Шупашкарналла», — тесе лĕпĕртетрĕ.

«Эх, шӑллӑм, ӑнланмастӑн: кам-ши, мĕнле çын-ши эсĕ? Пĕр шутласан, тивĕçлĕ-ши эсĕ çак ятлӑ-чыслӑ йышра пулма? Ӑслӑ, ĕçчен, сӑпайлӑ несĕлсене намӑс кӑтартмастӑн-ши? Ку пысӑк ĕçе эпĕ хамӑр колхоза парнелесшĕн. Янгорчинпа Андреев та ун пирки: «Ку сирĕн пӳртре мар, Культура керменĕнче е пĕр-пĕр музейре çакӑнса тӑмалли картина», — тесе миçе хутчен каламан-тӑр. Çапах та хальлĕхе халӑх куçĕ умне кӑларма иртерех пек-ха. Вĕçнех çитерес. Сана вара, Антун, тасатас пулать кунтан. Сан вырӑнна ӳкермелли маттур тракторист çук мар-ха пирĕн йӑхра. Вӑл — Хурӑнсурти Укахви ывӑлĕ Михала, пĕтĕм районĕпе чапа тухнӑскер. Пĕлтĕр ӑна партие те илчĕç. Çавна кĕртес сан вырӑна. Эсĕ çĕртрĕн, вараларӑн кӑна пирĕн ята», — çапла шухӑшласа хӑй тĕллĕн сасӑпах калаçрĕ Микулай, унтан чӑматанĕнчен киçтĕкпе сӑрӑсем кӑларса картинӑна тасатма тытӑнчĕ. Хӑйĕн сӑнарне те кӑшт улӑштарма шутларĕ вӑл. Кĕлеткине ял еннелле çавӑрмалла, çирĕппĕн унталла уттармалла. Умра Çĕрпел пултӑр, çурӑм хыçĕнче Мускавпа Шупашкар çутисем курӑнччӑр. Çапла çĕнетме шухӑшларĕ ку картинӑна Микулай.

## 4

Салам хучĕсене тепре вуласа тухнӑ хыççӑн Янгорчин тусĕ ӳкернĕ картинӑна кавир çумне çакса хучĕ. Ĕшнере чухнех уншӑн ку парне темрен те хаклӑ япала пек туйӑннӑччĕ. Колхоз ячĕпе панӑскер, вӑл виçĕ ял халӑхĕн чи пысӑк хисепĕ вырӑнне пулчĕ ĕнтĕ. Андреев çакӑн пирки тĕрĕсех те каларĕ пулĕ. «Çапах та хама хам ытлашши мӑнна хумастӑп-и-ха эпĕ? Ĕнерхи сӑмахсене пĕтĕмпе йышӑнас пулсан манран ӑслӑ та пултаруллӑ çын çук та темелле. Пурнӑç вара çав мухтав сӑмахĕсенчи пек мар: вӑл урӑхларах та, ансатрах та. Эпĕ унта каланӑ пур сӑмаха та тивĕçлĕ мар. Çук, Янгорчин, тархасшӑн, пĕлĕтре вĕçме ан

шутла эсӗ, унтан патлатса анма ҫӑмӑл, ҫӗр ҫинчех, халӑх хушшинчех пурӑн, хӑвна ху нихҫан та мӑнна ан хур. Мӗнле ҫуратса янӑ сана аннӳ — ялан ҫапла юл. Ӑс пухса пырасси вара йӑлтах хамран килет. Ӗмӗр пурӑн — ӗмӗр вӗрен теҫҫӗ-ҫке», — хӑйпе хӑй калаҫрӗ Василий Иванович.

Ирхи апат ҫинӗ хыҫҫӑн унӑн тӑван колхоз уй-хирӗ тӑрӑх курса ҫӳресси килчӗ те ҫула пуҫтарӑнчӗ. Калинккерен тухсанах урампа иртсе пыракан Караваева асӑрхарӗ. Микулай та ҫав шухӑша тытнӑ иккен. Вӗсем пӗр-пӗрне алӑ парса кӑштах сӑмахласа тӑчӗҫ те ҫывӑхри тӑкӑрлӑкпа ҫаврӑнса тырӑ пуссине тухрӗҫ. Андреев Микулая хистесе ӳкерттернӗ сукмак пуҫланчӗ. Вӗсем кӑкӑр таран сӗрӗшсе ӳснӗ тулӑ пучахӗсене сӗртӗнсе пӗр-пӗрин хыҫӗнчен утса кайрӗҫ.

— Мӗнле куҫ, мӗнле алӑ вӑл сирӗн, художниксен, — Микулай еннелле куҫ ывӑтса илчӗ Янгорчин пуҫне хыҫалалла пӑрса. — Каснӑ лартнӑ шӑп ҫакӑнти пек ӳкернӗ. Турри хӑй сире ҫавӑн пек витӗр куҫлӑ туса янӑ пулӗ. Курасса куратӑп пулсан та манран акӑ вӗлерсен те ҫавӑн пек чуна тытса илмелле, шухӑша ямалла ӳкересси пулмасть. Мӗн чухлӗ савӑнӑҫ кӳретӗр эсир ҫынна хӑвӑр картинӑрсемпе.

— Кашни ҫын хӑй енӗпе ӑста, Ваҫкӑ. Эсир — хӑвӑр ӗҫӗрте, эпир — хамӑрӑннинче. Пӗр питӗ чаплӑ художник каланӑ пекех, эпӗ пурнӑҫра пуррине ҫеҫ, анчах ыттисем асӑрхасах кайманнине кӑна ӳкеретӗп.

— Кунпа килӗшмеллех. Хӑвӑн картинунта эсӗ ҫакӑнти тулӑ пуссин, хамӑр урамӑн, ял пурнӑҫӗн эпир асӑрхасах кайман тӗлӗнмелле саманчӗсене кӑтартса панӑ. Пирӗншӗн пулсан мӗн ӗнтӗ ку? Уй. Йӑмраллӑ ял. Ахаль сукмак. Художникшӑн ав — чӑн-чӑн пурнӑҫ таппин ҫиҫсе-йӑлкӑшса тӑракан илемӗ. Акӑ ӑҫта иккен вӑл чӑн искусство! Тырра, ӑна, эпӗ те, Андреев та, Венера Пашкова та — такам та ӳстерме пултарать. Ӑста художник пулма вара...

— Мухтах, мухтах ӗнтӗ. Хӑвна ырлама тытӑнсанах тарӑхма пуҫлатӑн-ха та, — тусне хулпуҫҫийӗнчен кӑлт тӗртсе илчӗ Микулай. — Ҫук ҫав, пурсӑмӑр та вӑйлӑ тыр-пул ӳстерме пултарнӑ пулсан ҫӗршыв тахҫанах пуйса каймаллаччӗ, тем, пурте пӗлсех каймастпӑр-ха ҫак ӗҫӗн вӑрттӑнлӑхӗсене. Ҫавӑнпа ҫӗр ҫынни те вӑл хӑйне кура художник. Ҫӗр илемне вӑл урӑхла майлӑ, урӑх енчен курса туять. Алла ҫӑкӑр тытнӑ чух мана час-часах хам уй-хир кӗвви-

не, çĕр хуçин сассине илтсе тăнăн туйăнать. Мускавра чухне çав сасă кĕмен ман хăлхана. Кунта килсен çеç кĕрекен пулчĕ.

— Çук, эсир пурпĕрех пирĕнтен туйăмлăрах. Колхозри виçĕ пин çын хушшинчен те ку таранччен пĕр чаплă художник çеç тухнă-ха. Çут çанталăкра паха металсем сайра хутра тĕл пулнă пекех, пысăк талантлă çынсем те халăхра сахалтарах, шутлă иккен, — хăйĕннех витерме тăрăшрĕ Янгорчин.

Çул çине сукмакпа тухсан вĕсем юнашар утрĕç. Янгорчин аллипе сулса тӳлек çилпе хуллен хумханакан тулă пусси çинелле кăтартрĕ.

— Эс ӳкернĕ çав «мироновская-808» тулă чăнах пуйтарчĕ вара. Шухăшласа пăх, гектартан вăтăршар центнер илеттĕмĕр. Юрий Ильич халĕ «заря» текеннине акма тытăнчĕ. Унăн хĕрĕх-аллă центнер таран тухать. Çынни маттур. Ĕçе пуç тавра шухăшласа тăваканскер. Малтанах шофер пулнăччĕ, кайран хамах ăна бригадира суйлама сĕнтĕм те пысăкрах ĕçе пĕчĕккĕн хатĕрлесе пытăм. Унра пурнăç хуçин чунĕ пуррине туйрăм. Хама района куçарсан ăна председателе суйлама сĕнтĕм. Пĕр çынсăр пуçне пурте шакăриех алă çĕклерĕç. Кĕве Кĕпитунĕ çеç хыçалти ретрен: «Хăйĕн йыттинех кăкарса хăварчĕ», — тесе персе ячĕ. Хăвах куратăн: ав епле çĕмĕрттерет халь Андреев. Манран та ирттерет. Кирлĕ чух вĕрентсе каланă, хутранситрен хамăр хушăра ятлакаласа илнĕ пулсан та хурламалли çук.

Çавăн пек калаçкаласа вĕсем Уравăш чиккине çитнине те сисмерĕç. Клевер пусси хĕррипе сада кĕрсе кайрĕç. Венерăна аса илтерсе Микулай куçне Юрату утравĕнчи икĕ çамрăк хурăнпа çул хĕрринчи улмуççи курăнса кайрĕç.

## 5

Каравай Пракухĕн аслă ывăлĕ Мĕтри Хыçалкас урамĕн вĕçĕнче пурăнать. Салтакран таврăнсан тепĕр çулнех авланчĕ вăл, Тукайри хĕре качча илчĕ те çĕнĕ вырăна уйрăлса тухрĕ.

Виçĕ тонна тиев турттармалли автомашина ун чухне колхозра чи хăватличчĕ. Çӳреме аванччĕ-ха, анчах йывăç

кабини сивĕччĕ. Хĕллехи вăхăтра пайтах хытăркаса шăл шакканă. Рейсран таврăнсан сăра-эрех вĕрилентерсе ĕçни çеç чир-чĕртен сыхлакаласа хăварнă пулĕ. «Кашни кун пĕрер стакан пушата-пушата ĕçме вĕренсе каяс марччĕ тата, алла илмеллех хама», — шухăшланă вăл çынсене вăрмантан йывăç кӳрсе панă хыççăн. Çавăнтан Мĕтри эрех сĕнекенсене хирĕçлеме пуçланă. Хăшĕсем шофера ырă тăвас тесе укçа та тĕкетчĕç. Çук, никамран та пĕр пус илсе курман Мĕтри. «Ĕçленĕшĕн мана ахаль те колхоз тӳлет», — тетчĕ çеç вĕсене. Çавăнпа хăш-пĕр шоферсем унран тăрăхласа Таса Турă чури Мĕтри теме пуçларĕç. Мĕтри station уншăн хытах кӳреннĕччĕ, юрать-ха Малаш Аркашĕ лăплантарчĕ. «Ухмах эс, — терĕ вăл кулса, — çавăншăн çилленетĕн пулсан. Чи чаплă çынсене çеç кĕртнĕ ĕлĕк светтуйсен шутне. Христос тĕнĕнче тĕрлĕ йышши светтуйсем ик çĕр пине яхăн пулнă. Çĕрпел историйĕнче акă чи пĕрремĕшĕ эсĕ пулса тăтăн. Мухтанмалла кăна сан куншăн».

Ача чухне чеччепе чирленĕ пирки Мĕтри пичĕ шатраланса юлнă. Çырă куçне хĕсерех пăхнă вăхăтра шĕвĕр сăмси кăштах сулахаялла пăрăнса туртăнать. Кулнă чухне хулăн тута хĕррисем уçăлаççĕ те — аварие лекнĕ хыççăн ларттарнă çӳлти тимĕр шăлĕсем йăл-ял çуталса илеççĕ. Сăмаха пит ухута çынах мар Мĕтри, вĕсене вăл пĕрчĕн-пĕрчĕн шутланă евĕр хĕрхенсе кăларать. Çавăнпах пулĕ чĕлхиçăварĕ хывăхлă мар, таса тĕшĕ çеç авăртать.

Трехтонкăна килĕштеретчĕ-ха вăл. Уравăш тăвайккинче пĕр ӳсĕр шофер ЗИСа пырса çапăнса инкек туман пулсан арăмĕ те вăл шоферта ĕçленĕшĕн нимĕн те шарлас çукчĕ-ха. Çав авари хыççăн вара Мĕтрие вăл, пуçна çиетĕн тесе, яхăнне те руль умне ларттарасшăн пулмарĕ. Арăмне итлерĕ-ши е хăй те шикленчĕ, пульницаран тухсанах Мĕтри председательпе урăх ĕçе куçас пирки калаçма пуçларĕ. «Кăларса пăрах ку шухăша пуçăнтан, Мĕтри пичи, — ăс пачĕ ăна Янгорчин. — Машина хыççăн сенĕк тытсан, асту, чирлесех каятăн. Куна тĕп-тĕрĕс калатăп сана. Пĕрре техника çумне çулăхрăн пулсан — техникăпах ĕçле. Кăçал колхозра трактористсен курсĕ уçатпăр. Çӳреме тытăн каçхи вăтам шкула. Ăна та, куна та çĕрлех вĕренĕн. Шофертан хальлĕхе кăлармастăп. Кампа ĕçлес вара ман?»

Ун чухне, утмăлмĕш çулсенче, машина-трактор «ямшăкĕ» сахалтарахчĕ çав, кашни механизаторах шутраччĕ. Итлерĕ вара председателе Мĕтри. Рейсран таврăнатчĕ те хул хушшине кĕнеке-тетрадь хĕстерсе тăвалла утатчĕ. Çаплах вăтам шкул пĕтерчĕ, механизатор правине те илчĕ. Вăтăртан иртсен тин ларчĕ вăл трактор çине.

Машинăпа трактор паркĕ уншăн иккĕмĕш килĕ вырăннех пулса тăчĕ темелле. Акă паян та вăл кукăртарах урисене хăвăрт яра-яра пусса анкарти хыçĕпе тухакан сукмакпа, такам хӳтерсе хăваланă пек, унталла васкаса утать. Пĕве пуçĕпе каçма тытăннăччĕ çеç — шыв çинче çуталса явăнакан йăлтăр-йăлтăр шĕвеке асăрхарĕ те тарăхса кайрĕ: «Кам вараланă куна капла?» Пĕвене пĕр тумлам шăршлă шĕвек лектерместпĕр  тесе пухура йышăннăччĕ-çке вĕсем. Тасатнă хыççăн пулă лĕкки те янăччĕ. Пыл чĕресне пĕр кашăк тикĕт лекнĕ-лекнех акă.

Паркра вăл никама та тĕл пулмарĕ. Диспетчер çуртĕнчен тухакан Илюш Малашов çинелле сиввĕн пăхса илчĕ те шалалла иртрĕ. «Ку Таса Турă чурине мĕн пулнă-ши тата? Ирех хаяр сăнлă», — шухăшласа илме ĕлкĕрнĕччĕ кăна Илюш — Караваев каялла сирпĕнсе те тухрĕ.

— Кала-ха, Малашов, пĕлместĕн-и пĕвери шыва кам вараланине? — тӳрех ыйтрĕ вăл.

— Ма манран ыйтатăн? — йĕкĕлтенĕ майлăрах кулчĕ Илюш. — Ну, пит пĕлесех килет пулсан калатăп: сирĕн Микулай де Каравай модернисчĕсем хăтланнă ăна, çуллă-бензинлă лапăрчăкпа хитрелетсе хăварнă. Авă еплерех йăлкăшать хĕвел çинче вĕсен абстрактлă ӳкерчĕкĕ.

— Шӳтлетĕн-и эс е...

— Эп хăçан суйнă сана? Калатăп-иç, художниксем Шупашкар «Москвичне» çурĕç.

Ку сăмахсене хирĕç Мĕтри ним калама та сăмах тупаймарĕ, аллине сулса ассăн сывласа илчĕ. «Эх-ха-хай, хăйсем мĕн туса хунине хăйсем те тавçăрмаççĕ-ши? Пĕр шутласан, вĕреннĕ, ăслă-пуçлă çынсем темелле те...»

Художниксем тенĕрен, хальхинче Мĕтри пĕр шухăшламан çĕртенех хăйĕн механизациленĕ звенипе çирĕм çул каяллах кукурузăпа çĕр улми çитĕнтерсе чапа тухнине аса илчĕ. Пĕлтĕр акă подряд йĕркипе ĕçлесе звенори кашни çын пуçне вăтăр пин тенкĕ чухлĕ çĕр улми пухса кĕртрĕç.

Мĕтри çавăншăн Халăх хуçалăх çитĕнĕвĕсен куравне лекрĕ. Темле художник сăрласа хунă сăнĕ çеç ăна пĕртте килĕшменччĕ. Сăмахран, акă çӳçĕ çӳхе унăн, сулахай еннелле кăна выртать, сылтăм пит çăмарти айĕнче мăн шĕпĕн пур. Тутине чăмăртаса тытас йăла çук. Галстук ĕмĕрне çыхса курман. ВДНХра ав еплерех мăн кăмăллăн пăхса ларать Мĕтри?! Çăра çӳçне каялла янă, пуçне чалăштарнă, пичĕ каччă чухнехи пек яп-яка. Шĕпĕнĕ çук. Тутине малалла тăсса чăмăртанă. Шурă кĕпепе, пăчăр-пăчăр галстукпа, йăрăмлă костюмпа. Палламалла мар. Мускаври пĕр халтурщик укçашăн сăрласа хунă ĕнтĕ. Микулай та, «Пучах» ушкăнĕнчи ытти художниксем те «Шурăмпуç» колхозникĕсене пурнăçра мĕнле — çапла ӳкернĕ, кунта мĕн те пулин хăйсем майлă «саваласа якатнине» пачах курмастăн. Культура керменĕнче курав уçăлсан Мĕтри вĕсене кашнине тимлĕн сăнаса пăхса тухрĕ. Пурте чĕрĕ çын пекех лараççĕ, кашни пĕр сана кĕç-вĕç мĕн те пулин сăмах хушассăн туйăнать.

«Çав пулĕ ĕнтĕ художниксен ăсталăхĕ — çынна чăн пурнăçри пек сăнарласа ӳкересси, унăн ăшри шухăш-туйăмне тарăннăн уçса парасси. Микулайăн «Огонек» журналта пичетленнĕ картининче Илюш та пурччĕ-ха. Ĕçре маттур-ха ачи, тиркемелли-мĕнĕ çук. Çав Венерăшăн кĕвĕçсех ав Микулая тарăхса пурăнать. Халĕ те ахаль кăна павмарĕ-ши вăл художниксем пирки? Сӳпĕлтетет-ха Кĕве Кĕпитунĕ: «Художниксене эпир чапа кăлартăмăр», — тесе янăрашма пăхать. Çук, йăнăшатăн, йĕксĕк. Саншăн килмен вĕсем пирĕн яла. Çынсен чуна парса тăвакан ырă ĕçĕ чĕннĕ вĕсене», — шухăшласа ăшра калаçрĕ Мĕтри.

Мускавран таврăннăранпа Микулай çĕнĕрен çуралнă пекех улшăнчĕ. Çак иртнĕ çулсенче унăн ячĕ час-часах илтĕнкелеме тытăнчĕ. «Шурăмпуç» колхозри паллă çынсене ӳкернĕ картинăсемшĕн кăçал вăл СССР Художество академийĕн кĕмĕл медальне илсе килчĕ. Хăй каланă тăрăх, çав медале çулталăкра вунă çынна, ылтăн медале виçĕ çынна çеç параççĕ-мĕн. Шухăшласан, художниксем республикăрах çĕр ытла та, çĕршывĕпе мĕн чухлĕ пулĕ вĕсем?

— Санпа танлаштарсан начартарах ĕçлетĕп çав, пичи, — тенĕччĕ çавăн чухне Мускавран таврăнсан Микулай. — Санашкал пысăк çитĕнӳ патнех çитеймерĕм. Куна вăл Мĕтри

тухăçлă çĕр улми ӳстернĕшĕн Халăх хуçалăх çитĕнĕвĕсен куравĕн Пысăк ылтăн медалĕпе наградăланă пирки каларĕ.

— Сывă-и, Дмитрий Прокопьевич! — илтĕнсе кайрĕ çурăм хыçĕнче паллана саса.

Ку колхоз председателĕ Андреев пулчĕ. Пĕр-пĕрин аллисене тытса чăмăртанă хыççăн вĕсем кăçал та механизаторсем звенопа ĕçлесси çинчен калаçса кайрĕç.

— Итле-ха, акă мĕн сĕнесшĕн сана, Дмитрий Прокопьевич, — ун куçĕнчен тинкерсе чăр пăхрĕ председатель. — Пĕлетĕп-ха, Илюш ачи чăрсăрне чăрсăр-ха та, ĕçре ӳркенсе тăракан йышшисенчен мар. Ашшĕ пекех ăслăскер тата. Илес теместĕн-и ăна хăвăн звенона?

Караваев ĕнсине хыçкаласа пĕр хушă чĕнмесĕр тăчĕ. Ăна председатель сĕнĕвĕ шухăша ячĕ пулас, сăмаха тӳрех персе ямарĕ, пуç тавра виççе пăхнă хыççăн тин каларĕ:

— Ăнланатăп-ха сана, Юрий Ильич, — терĕ вăл. — Санăн малалла ĕçлеме çамрăксене лайăхрах хăнăхтарас килет. Мĕн ĕнтĕ, эпĕ хирĕç мар. Анчах подряд килĕшĕвĕпе мĕн тăвăпăр-ха? Улăштарма тивет хăш-пĕр йĕркине. Тӳлев пайĕ чакать.

— Ун пирки те шухăшланă эпĕ, Дмитрий Прокопьевич, сăмаха вăл çак самантра пуçа килсе кĕнĕрен персе ямарăм, — карттусĕ айĕнчен тухса кайнă çӳçне майлам пекки турĕ председатель. — Тракторĕпе тата çыннипе пĕрле кукуруза лаптăкне хушса памалла пулĕ тетĕп.

— Ку вара мĕн, хутăш подряд пулать-и? Пире çĕр улми те çитет.

— Çĕр улми çеç пулсан та тап-таса подряд мар ку. Ăна кăларнă чухне хăвăр кăна мар-çке, ытти колхозниксем те ĕçлеççĕ.

— Вăл çапла та, кунта ниепле те хамăр вăйпа ĕлкĕрме çук. Туса паччăр та пире ученăйсем çĕр улми кăларма лайăхрах комбайн, ун чух пулăшмасăрах, сахал йышпах май килтерĕттĕмĕрччĕ.

— Хальлĕхе пурпĕр уй-хир ĕçĕнче аякран пулăшмасăр нимĕн те тăваймастăн. Таса подряд пулман, тен, часах пулаймĕ те ял хуçалăхĕнче. Стройкăри е заводри мар ку. Çавăнпа шыратпăр та йывăрлăхран тухмалли майсем. Тупăнчĕ акă пĕри. Килĕшетĕн апла? Кӳр эппин аллуна! Подряд килĕшĕвĕ пирки кайран правленире калаçса татăлăпăр.

Председатель уйрăлса кайма та ĕлкĕреймерĕ — картишне шăллĕ килсе кĕчĕ.

— Микулай! — ăна курнă-курманах çĕтĕлме тытăнчĕ пиччĕшĕ. — Пĕлетĕн-и, мĕн хăтланнă сан ачусем? Пĕтĕм пĕвене вараласа хăварнă! Сурнă эпир тăрăшни çине! Пĕр тесен, хăлха чикки парса Шупашкара çул кăтартса ямалла вĕсене. Хă, усă туса çӳреççĕ пулать.

Шăллĕ ăна пӳлмерĕ, итлесе пĕтерчĕ те лăпкăн кăна каларĕ:

— Ытлашши ан шăртлан-ха. Пĕлетĕп эпĕ ку историе.

— Мĕн, пĕлетĕп тенипех ирттерсе ярасшăн-и? Çук ĕнтĕ...

— Ĕçĕ ак мĕнлерех пулса иртнĕ. Самлировпа Палнаева ĕнер Шупашкартан юлташĕ лартса килнĕ. Ял тăрăх куркаласа çӳренĕ хыççăн машинине çума шут тытнă. Вăт, вараласа хăварнă вара пĕвене. Айăпне хăйсемех председатель умĕнче йышăнчĕç. Хам та хытах хăтăртăм та, тинех мĕн тăвăн-ха ĕнтĕ. Сире хăвăра та ятламалла. Машинăна çума пырса лартнине куракансем пулнă вĕт-ха?

— Илюш Малашов курнă, ыттисем те асăрханă пулас...

— Апла пулсан мĕншĕн чарман? Пушар хыççăн тин чан çапма кирлĕ те мар.

— Кирлĕ мар кăтартăп-ха ак, — çаплах лăпланмарĕ Мĕтри. — Мана ахаль хушнă тетĕн-и халăх тĕрĕслевне ертсе пыма? Йĕрке тени пуриншĕн те пĕрре пулмалла. Эс хуçи, эс ирĕке янă вĕсене.

Вăл шăллĕ çинелле сиввĕн куç ывăтса хăвăрт ун патĕнчен пăрăнса кайрĕ.

## 6

Каравай Хĕветучĕ ытларах чухне вăхăта садра кăштăртаткаласа ирттерет. Вĕсен килти пахчари вăтăр сотка çĕрĕнчен çуррине ытла улма-çырла йывăççисем йышăнаççĕ. Ĕлĕкрех чухне çити-çитми пурнăçа пула карчăкĕ сахал мар ӳпкелешнĕ ăна, тен, хăлхи те çĕрмех пуçланă пулĕ, анчах пурпĕрех вăл сада юхăнма паман, кашни çул çĕнетсе пынă. Ун чухнехи вăхăтра анкартинче çĕр улми лартса, кантăр ӳстерсе кăна хуçалăхра йӳнеçкелесе пыма май килнĕ-çке. Хуларан аякри ялта садран тупăш илес пирки шухăшла-

малли те пулман. Уйрăм çулсенче улмуççисемпе сливăсем сивĕпе тăнчах хăрса пĕтетчĕç те, Хĕветут мучин ĕçчен аллисене пула тепĕр виçĕ-тăватă çултан каллех вара çамрăк хунавсем ашкăрса каятчĕç. Нумай пулмасть-ха ку тăрăха тепĕр асар-писер хĕлсивви килсе çапрĕ. Колхоз сачĕ те, уйрăм çынсен те хăра-хăра пĕтрĕç. Çапла вара Туçи рашчи енчен вĕрекен усал сивĕ çиле пула Хĕветут мучин хăй ĕмĕрĕнче виçĕ хутчен сад ӳстерме тиврĕ. Юлашки хутĕнче те пайтах вăй хумалла пулчĕ. Ывăлĕпе кинĕ кунĕпе шăтăк чавса аппаланчĕç. Ĕç вĕçленерехпе ывăннă çинчен шухăшламан-туман çĕртенех кĕтмен пулăшу та çитрĕ. Анкарти хыçĕнчи çулпа темле хĕр утса пыратчĕ, вĕсен пахчи тĕлне çитрĕ те чарăнса тăрсах сăмах хушрĕ:

— Вăй патăр сире. Ытла нумай лартатăр та, ывăнтăр та пулĕ. Хамăн та пулăшас мар-и? — сĕнчĕ вăл.

Пракух арăмĕ чăрманма кирлĕ мар, нумай юлмарĕ ĕнтĕ текелесе хирĕçлеме те пăхрĕ. Хĕветут мучи вара урăхларах шухăшларĕ: «Çын ырă кăмăлпа пулăшма шутланă пулсан ма чармалла-ха ăна?»

— Кил, ара, хĕрĕм, ушкăнпа хăвăртрах та пулĕ, кĕр çав алăкран, — терĕ вăл хĕр çинелле ăшшăн пăхса. — Куç витĕрех мар та, паллаймарăм-ха, кам ачи пултăн-ха çак?

— Ара, Хурăнсурти Пашковсен хĕрĕ-иç вăл, Венера, — ун вырăнне хуравларĕ Пракух. — Хамăрăн агроном.

Вĕсем ун чухне тăваттăшĕ пĕрле ултă тĕп улмуççи лартрĕç. Ав епле патвар çитĕнеççĕ халĕ вĕсем. Китайка саралма та пуçланă ĕнтĕ. Кăçал çанталăкĕ лайăх тăчĕ, çумăр вăхăтра çурĕ, хĕвел те çителĕклех пулчĕ. Çавăнпа улмаçырла та пĕлтĕрхинчен шултрарах та сĕтеклĕрех ӳсет.

Хальхинче те Туçи рашчи енчен кукăрăлса килекен çул çинче темле хĕр курăнчĕ. Венерах пулчĕ иккен. Хĕветут мучие асăрхасан вăл аллинчи чечеклĕ тутăрне пуçне çыхрĕ, çӳçне типтерлĕн ун айне майласа чикрĕ. Пĕлет-ха Хĕветут мучи мăнукĕ çак чиперккешĕн ыйхă çухатнине. Хăйсем йĕркеллĕ çураçса пĕтсен хӳхĕм кинех пулмалла та çав, ăнланса çит-ха хальхи çамрăксене.

Эх, яшлăх, яшлăх. Ытла та хăвăрт, ним сисĕнмесĕр иртетĕн-çке эсĕ. Хĕветут мучи те çамрăк пулмасăрах «мучиленсе» кайман, унăн та вăйпитти каччă чухне чун савнă хĕрĕ пулнă. Астăвать-ха, империализм вăрçинчен аманса

таврӑнсан вӑл та ҫак вырӑнта пĕр чиперккепе тĕл пулнӑччĕ. Туҫи рашчи енчен ярӑнса утса аннӑччĕ вӑл кунталла. Ӑна курса Хĕветут та вĕрлĕк карта урлӑ ялт ҫеҫ сиксе каҫса ун умне тухса тӑчĕ. Паллашрĕҫ.

Ҫав ӑш хыптармӑш пике чиркӳ старости хĕрĕ пулчĕ иккен. Ҫавӑн хыҫҫӑн Хĕветутпа иккĕшĕ вӑйӑсенче те, улахсенче те тĕл пулкаларĕҫ. Чӑнласах юрататчĕҫ вĕсем пĕр-пĕрне. Анчах хĕрĕн ашшĕ-амӑшĕ Каравай Ваҫлейĕн ывӑлне, чухӑн ҫын ачи тесе, кĕрӳ тӑвасшӑн пулмарĕҫ, хĕрне, Евтуха, пуп ывӑлне ирĕксĕрлесех качча пачĕҫ. Тепĕр ҫулне вара Хĕветут та мӑшӑрланчĕ. Арӑмĕ ӑслӑ-пуҫлӑ, ҫепĕҫ те тарават кӑмӑллӑ хĕрарӑм пулчĕ те, Хĕветутпа иккĕшĕ ĕмĕр тӑршшĕпех шӑкӑл-шӑкӑл килĕштерсе пурӑнчĕҫ, ачи-пӑчи те пĕринчен тепри ĕҫчен те пултаруллӑ ӳсрĕҫ.

Ват̆а пупĕ вилсен ун вырӑнне ывӑлĕ йышӑннӑччĕ. Ун чухне Караваев ял совет председателĕнче ĕҫлетчĕ, унтан колхоз чӑмӑртарĕ. Пĕррехинче, лӑпах та Мӑнкун эрнинче, яла трактор килчĕ. Чиркĕве пынӑ халӑх та ҫав тĕлĕнтермĕше курма шӑкӑрах ял хыҫĕнчи уя кĕпĕрленсе тухрĕ. Пупĕ кадилӑпа сулласа ҫынсене кĕлле чĕнет, Хĕветут ҫинелле: «Эсех пĕтертĕн мана, эсĕ ман чуна кӑшлатӑн. Ма Турӑ вилĕм ямастех сан пуҫу ҫине», — тенĕ пек сиввĕн пӑхкаласа илет. Кун хыҫҫӑн нумаях пурӑнаймарĕ ҫак пуп, пĕрре ҫапла вирлĕ ĕҫсе лартнӑ та ӳсĕр пуҫпа чиркӳ пахчинчи пĕвене путса вилчĕ. Тӑлӑх арӑм вара тахҫанччен илĕртсе пурӑнчĕ хӑйĕн сӳнми кӑварĕпе Хĕветута.

Чиркӳ сĕрĕмĕ ял ҫинчен сирĕлнĕ ĕнтĕ. Тахҫанхи юрату варкӑшĕ ҫеҫ халĕ те мучин кӑкӑрне ассӑн хашлаттарса сывлаттарать. Венера ӑна хӑйпе пĕрле илсе килчĕ. Акӑ вӑл куҫ умĕнче: йӑрӑс пӳллĕ, ҫаврака пит ҫӑмартиллĕ, кӑлкан ҫӳҫлĕ, утмӑл турат ҫеҫки пек сенкер куҫлӑ. Ах, лешĕ — Евтух — тахҫан курнӑ тĕлĕк пек ҫеҫ-ҫке ҫав, ку акӑ, ҫапҫамрӑкки, ӑна аса илтерет пулсан та пачах урӑх хĕр, урӑх ҫын, урӑх чун.

Мучи алӑкран тухнӑ ҫĕре Венера та ҫитрĕ, йӑл кулса илчĕ те старике ӑшӑн сывлӑх сунчĕ.

— Эс, тен, йĕтем ҫине мар пулĕ? — ыйтрĕ Хĕветут мучи.

— Ҫавӑнта кайма тухрӑм-ха.

— Э, апла пĕрлех пирĕн ҫул, хĕрĕм. Тиркеместĕн пул-

сан — ме ак, астивсе пăх. Ку хамăр пĕрле лартнă йывăç улмисем, — тараватлă сĕнчĕ старик.

Венера кучченеçе именчĕклĕн алла илчĕ, Хĕветут мучие пуç сĕлтсе тав турĕ те пĕчĕккĕн çыртса çиме пуçларĕ. — Питĕ тутлă иккен, сĕтеклĕ, — терĕ вăл, тем аса илнĕн пĕр хушă çĕрелле пăхса тăчĕ. — Манăн питĕ тав тумалла сире, Хĕветут мучи. Мĕншĕнне хăвăр та пĕлместĕр пулĕ-ха.

— Мĕншĕн-ши? — ăнланмарĕ мучи.

— Хамăр колхозрах ĕçлеме юлнăшăн.

— Ăнланмастăп, мĕнле апла?

— Эпĕ вуннăмĕш класра вĕреннĕ чухне экзаменсем умĕн эсир пирĕн шкула пынăччĕ. Кăкăр тулли орден-медальпе... Унччен эпĕ мединститута вĕренме кĕрес шутлăччĕ. Эсир ун чухне хамăр колхоз мĕнле чăмăртанса ура çине тăни, çынсем ĕçре ӳссе пыни çинчен питĕ тĕплĕ каласа кăтартнăччĕ. Астăватăп-ха, аттепе аннене те асăнтăр. Пашковсем пек хресченсем хăйсен ачисене те çĕре юратма, çĕр ĕçне хисеплеме, çĕр пуянлăхне ӳстерме вĕрентеççĕ терĕр. Хăвăр та вĕренме тăрăшăр, ачасем, вĕсенчен, çĕр ĕçне яланах хисеплĕр. Аçăр-аннĕре, тăванăр-пĕтенĕре, пĕтĕм ял-йыша курса çĕр ĕçне хăнăхса алла илĕр, ăна ачăрсене те хăвăр пекех юратма вĕрентĕр терĕр. Вăл сăмахсене эпĕ нихçан та манмастăп... Çĕрĕпех шухăшласа выртрăм вара. «Манран, — терĕм, — те пулать-ха мединститута кĕресси, те пулмасть. Кĕрсессĕн те — те килĕштерĕп-ха врач ĕçне, те килĕштермĕп. Пĕлмен-курман ĕçе пуça чикиччен хамăр çĕр çинчех чакаланам», — тесе шутларăм. Унтан тытрăм та кĕтĕм ял хуçалăх институтне. Халĕ ак куншăн пĕртте кулянмастăп, хам ĕçе юратса тăватăп. Питĕ пысăк тав сире çавăн чухне тĕрĕс ăс панăшăн, Хĕветут мучи...

Çавăн пек калаçкаласа утрĕç ватă хуралçăпа çамрăк хĕр агроном колхоз йĕтемĕ еннелле. Чăнахах та, сахалах пурăнмасть Хĕветут старик çĕр çинче, ялти хăйĕн тантăшĕсем никам курманнине курчĕ тесен те тĕрĕсех. Ĕлĕкхи вăхăтра нихçан та вĕсем çак уйра хĕл каçмалăх тырă туса илеймен. Вăрлăхлăх та аран-аран хĕссе-пĕскелесе хăваратчĕç. Колхоз йĕркелесен те, кустăрмаллă хурçă ут ĕмĕрхи йăрансене сухаласа тăксан та тăруках çĕлен шуса кĕрейми

тырă кашласа ӳсеймерĕ-ха. Гектартан çĕр пăт илесшĕн мĕн таран тапаçланмарĕ вăл хăй председатель чухне, çук, пурпĕрех пулаймарĕ çав чикке çитесси. Çитетчĕ те пулĕ те, вăрçă йăтăнса тухни кансĕрлерĕ. Вăрçă хыççăнхи çулсенче чылай вăхăт Хĕветут Çĕрпелти пиллĕкмĕш бригадăна ертсе пычĕ. Пурĕ хĕрĕх икĕ килччĕ. Шучĕпе илсен сахалтарах пулсан та ĕçĕпе унăн бригади ялан малта пыратчĕ. Хĕрĕх тăххăрмĕш çулта тинех çитрĕ унăн ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ. Бригадăри кашни гектар çĕр тĕлĕнмелле — вун çичĕ центнер тырă пачĕ. Çĕр пăт чиккине парăнтарма ав мĕн чухлĕ тапаçланма тиврĕ. Тепĕр çулне Çĕрпел Хурăнсур тата Тукай ялĕсемпе пĕрлешрĕ. Бригадăсене пысăклатрĕç. Каярахпа кашни ялтах пĕрер бригада туса хучĕç. Каравай Хĕветучĕ, патшалăх палăртнă тăрăх, утмăл пиллĕкре пенсие тухрĕ. Çапах алă усса лармарĕ, платникре ĕçлерĕ, халĕ те акă колхоз йĕтемне хураллать.

Епле-ха тĕлĕнмĕн ĕнтĕ: çав çĕртенех паян кашни гектар пуçне ик çĕр-виç çĕр пăт тырă илеççĕ. Нимĕн те калаймăн, вăйлă çĕкленсе кайрĕ колхоз. Çĕрне вăхăтра та тарăн сухалама, лайăх кăпкалатса çемçетме, калчине апатлантарма, тыррине вырса çапма, тасатма тем тĕрлĕ кăткăс машина та пур. Тислĕкĕпе минераллă им-çамĕ те кирлĕ чухлех. Сорчĕсем епле чаплă тата тыррисен. Йĕркине пĕлмен-вĕренмен çын, паллах, çав хăвата çĕр пуянлăхне куçараймастех. Çак хĕр те агронома тухса тĕрĕс тунă. Вăл çĕре юратать, уншăн тăрăшать, ĕçшĕн çĕр çывăрмасăр хыпăнса çунать пулсан — унран çын пулатех. Каларĕ тейĕр, Хĕветут, — пулатех!

— Пĕр шутласан, çĕр ĕçлесси халĕ сирĕн вăхăтрипе танлаштарсан вунă хут та çăмăлтарах темелле, — шăппăн хушса хучĕ Венера. — Çапах та теприне тем çитмест, тем кирлĕ ăна...

— Тӳр пиленксем йышланса кайрĕç мар-и, — ассăн сывласа илчĕ ватă Караваев. — Хăшĕсем ав тырă хăçан аккине те, хăçан вырса пĕтернине те радиопа кăна пĕлеççĕ. Янттине хăнăхса пыраççĕ. Аллă-аллă пиллĕкри хĕрарăмсемех ав пенси илетпĕр тесе нимĕн ĕç тумасăр килте кăрчама ĕмсе лараççĕ. Ӳркенмесен ĕçĕ такам валли те тупăнать. Ак çакăнта та, йĕтем çинче те, пур. Ĕлĕк эпир кар тухнă та р-рас хырса тăкнă йĕтемсене. Халĕ машина

туса парасса шанса лараççĕ. Ак çакăншăн та, çакна лайăх тасатманшăн та хытă тустармалла.

Юлашки сăмахсем Венерăна та пырса тиврĕç, ахăр, вăл ним калама та аптрарĕ. Чăнах та-çке, сортировка вырнаçтарса лартнă та — çырлахнă. Пĕлтĕрхи ăпăр-тапăра Çĕрпел бригадирĕ пачах тасаттарман. Тыррине вара кĕç-вĕç вырма тухмалла. Çавăнпа хĕр йĕтем хуралçипе тек калаçса тăмарĕ, бригадира шырама васкасах ялалла утса кайрĕ.

## 7

Днепр çывăхĕнче лăпкăн çывăракан Çинахван Караваевăн Киев çывăхĕнчен килсе тухса Микулая пăлхантарса яни ахалех пулчĕ. Чунĕ чăтмарĕ пуль ĕнтĕ вилсе те вилĕмсĕр юлнă харсăр салтакăн, хăйĕн ĕмĕчĕ-шухăшĕ пурнăçа кĕнине курасах, ыттисене те кăтартасах терĕ пуль. Çук-ха çав, тем пек çамкана пĕркелентерсен те ку таранччен те ӳнерçĕн шухăшĕ пĕр çирĕп тĕвве тĕвĕленсе çитеймерĕ. Тата хăватлă Атăл кĕвви те ăна ку хутĕнче пулăшма пултараймарĕ. Ĕç ырантан ырана юлса пычĕ. Халĕ ак унăн çине тăрсах тепĕр пысăк картинăна вĕçне çитермелле. Ĕçлемелли вара кунта та темĕн чухлех!

«Чăваш юмахĕн чăнлăхĕ» картининче вăл хамăр несĕлсен телей уççи ширанă тертлĕ çулĕсене паянхи паттăрсен çĕнтерӳллĕ кун-çулĕпе çыхăнтарса кăтартса парасшăн. Мĕншĕн-ха аваллăхпа пуçа çĕмĕрес терĕ вăл? Паянхи хĕрӳ пурнăçран илсех тем ӳкерме те пулать-çке? Пулать, паллах. Ку енĕпе унăн самаях ăнăçлă ялаласем те сахал темелле мар. Яла кая-кая пурăнса Микулай нумай çынпа çывăхланчĕ, вĕсене хăйсене те искусствăпа çывăхлатрĕ. Çав сăнарсем ăна çак картинăна тунă çĕрте те кирлĕ пулчĕç. Хулара çурт-йĕр хăпартакансемпе, заводсенче хăватлă машина тăвакансемпе, халăх культурине аталантаракансемпе, Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисемпе пĕрле уй-хир ĕçченĕсемпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсем те çак картинăн персонажĕсем пулса тăрĕç. Пурте вĕсем — тăван халăх паттăрĕсем.

Паянхи пурнăç та, малашнехи те иртнипе тачă çыхăннă. Ĕлĕкхи çинчен пĕлмесĕр ӳлĕмхи пирки калаçма йывăр. Иртни хальхи валли, хальхи малаллахи валли çул уçса пыма

кирлĕ. Çавăн чухне çеç общество хăватлăн та сулмаклăн аталанса пыма пултарать. Çак шухăш канăç паманнипе хĕрӳленсе тытăнчĕ те Микулай Караваев хăйĕн çĕнĕ картинипе ĕçлеме. Тема çуралнă хыççăн пĕтĕмпех вăл çав ырми-канми хастар çынсен пурнăçĕпе пурăнчĕ, вĕсен шухăшĕпе шухăшларĕ, вĕсен чĕлхипе калаçрĕ. Кĕçех вара сăрăпа киçтĕк те пĕр кĕвве куçрĕç. Халĕ хăйĕн сăнарĕсене киçтĕк вĕçĕнче уççăнран уççăн курса пырать. Юратнă Репин çумра аса илтерсе тăнăнах туйăнать: «Çыннăн сăнсăпатне, чун-чĕрине, пурнăç хуйхи-суйхине, çут çанталăк туйăмне, самана шухăшлавне сăрă тĕсĕсен килĕшĕвĕпе уçса памалла; çав килĕшӳ ӳкерчĕкĕн кăмăлне, чунне уçса кăтарттăр, музыкăра темиçе сасă килĕшӳллĕ янăранă пекех майлашăнса куракана тыткăнлатăр».

Ялтан килнĕ хыççăн Микулай ир пуçласа каçчен сăрă шăршиллĕ пăчă мастерскойра ăшăрхаса тарларĕ. Шухăшĕ пир çине хăйне кăмăла каймалла ӳкерĕнсе пынăшăн вăл савăнчĕ-ха. Пĕр япалана çеç ниепле те ăнланма пултараймарĕ художник: мĕншĕн-ха хăйĕнчен килмесĕрех картинăна вăйпа хирĕнсе кĕрет Хурăнсурти Малаш Аркашĕн Илюшĕ? Мĕн, çук-им-ха урăх ун пек ăста та ĕçчен механизаторсем республикăра? Паллах, пайтах вĕсем. Унччен урăх районта ӳкернĕ чаплă портрет та пур-çке Караваевăн. Вĕçĕ-хĕррисĕр тăсăлакан сухаланă уй пуçĕнче мăнаçлăн та çутă ĕмĕтлĕн пăхса тăракан хавас сăн-питлĕ, çӳллĕ те тĕреклĕ кĕлеткеллĕ чăваш улăпне куравсенче те ырланăччĕ. Халăхра ырă ят илнĕ тракторист сăнарне кĕрт те яр кăна çав картинăна. Çук çав, темшĕн чун урăх никама та мар, пĕртен-пĕр Илюша çеç ӳкерме ыйтать.

Акă сисмен хушăра куç умне Илюшăн сăнарĕ тухса тăчĕ. Иккĕшĕ пĕрле «Беларусь» кабинине кĕрсе ларнă. Малашов спецовкăпа. Çӳлти тӳмисене вĕçертсе янă та, аялти пăнчăллă-пăнчăллă чечеклĕ кĕпи куçа илĕртмелле хитрен курăнать. Каччă хура çăра çӳçне кĕске кастарнă, сухалне яп-яка хырнă. Ларкăч çинче тӳп-тӳрĕ ларса руле çăмăллăн пăркаласа пырать. Тăваткалрах пит çăмартинче кăшт сисĕнмелле ăшă кулă шăвăнса çӳрет. Рычагне куçаркаланă самантсенче тутине кăштах мăкăртса шăлне çыртать, сăнĕ тĕксĕмленет. Трактора тепĕр хăвăртлăх çине куçарнă хыççăн тип-тикĕс çăра шăлĕсене ейĕлтерсе кулкалать. Çакă

аса кĕрсе юлнăччĕ Илюшпа иккĕшĕ пĕрле çĕр улми пуссинче ĕçленĕ чухне. Акă тата председатель пӳлĕмĕнчи тепĕр самант. «Пирĕн хушша кĕрет пулсан пуçне те татса шыва перетпĕр!» — тесе кăшкăракан Илюш. Пичĕ-куçĕ унăн кĕçвĕç сиксе ӳкесле хаярланса кайнăччĕ. Ку та çаплипех асра юлчĕ.

Çапах та малтанхи, кăмăллă кулă ялкăшнă чухнехи сăнĕ вырăнлăрах, юрăхлăрах. Çав саманта асра тытса сăнара пуянлатрĕ Микулай, хаярлăх йĕрĕсене чун йышăнмарĕ. Начар пулса тухас çук пек туйăнать халĕ Илюш Малашов трактористăн сăнарĕ. Вăл ашшĕн, ялти трактористсен, республикăри нумай-нумай механизаторăн пĕтĕмĕшле паттăр сăнарне уçса пама пултарĕ-ши? Художник шучĕпе — пултармаллах. Картинăна Микулай «Анлă Атăл» курава тăратасшăн. Темле хак парĕç ĕнтĕ критиксемпе куракансем, зонăри талантлă художниксен ĕçĕсем хушшинче темле йышăнĕç.

Картина умне пырса тăрсанах хăлхара трактор сасси кĕрлесе кайнăн туйăнать. Лерен Илюшĕ юлташĕсене хавхалантарса кăшкăрать пек: «Атьăр, ачасем, художниксемпе ăмăртса ĕçлер. Курăпăр: кам кама çĕнтерĕ!» Ун чухне художниксем машина-трактор паркĕнче механизаторсен сĕнĕвĕпе хаваслансах килĕшрĕç, ăмăрту условийĕсем пирки те калаçса татăлчĕç. Тĕп тĕллевĕ — хăш енĕн ĕçĕсем курăмлăрах пулса тухасси.

Халĕ ак ăмăртакан енĕсем мĕнле ĕçленине партком секретарĕ те куçран вĕçертмесĕрех тенĕ пек сăнаса тăрать. Иртнинче механизаторсене сăмах тĕксе те илнĕччĕ-ха Николай Иванович. «Художниксен ӳкерчĕкĕсенче тырă тĕшĕленсе çитнĕ, вырма тухасса кĕтет, пирĕн уйсенче ав тăпăлтарасса кĕтсе çум курăк кашласа ларать. Апла пулсан намăс курас марччĕ, юлташсем», — аса илтерчĕ вĕсене Ванюшин.

Караваев мĕн пĕчĕкренпех пĕлет-ха ăна. Хĕн-тертпе ӳссе çитĕнчĕ вăл. Ашшĕ вăрçăра вилчĕ, ун хыççăнрахах амăшĕ те йывăр чирлесе çĕре кĕчĕ. Çапла вара пĕринчен тепри пĕчĕк виçĕ ачи тăлăххăн ӳсрĕç. Нушаллă пурнăçăн шелсĕр алли Коля умĕнчи хут-кĕнекене ним хĕрхенмесĕр туртса илчĕ. Хырăм тăрантарас, алла кĕнекепе тетрадь вырăнне ачаллах çурлапа тилхепе тытма тиврĕ. Кăштах сывлăш ça-

вăрса ярсан, вăй илерех парсан, вăл çав нуша аллинчи хуткĕнекене каялла туртса илсе каллех парта хушшине ларчĕ. Хăйĕнчен тăватă çул кĕçĕнрех ачасемпе пĕрле çиччĕмĕш класран вĕренсе тухсан колхоз лашисене пăхрĕ. Ялта вăтам шкул уçăлчĕ те, каçсерен тăватă çул унта утрĕ. Çапла вара аттестат илчĕ-илчех вăл. Хăйпе пĕр тантăш юлташĕсем ĕнтĕ институт ромбикĕсемпе те çӳренине курнипе чĕри те пĕрре мар пăчăртанса ыратнă унăн. Малалла вĕренсе юлташĕсемпе тан пуласси килнĕ унăн та, анчах хăпса пĕтейми нушаллă пурнăç кăна çав çула картласа тăнă. Аслă шкула кĕме юларах панăччĕ ĕнтĕ. Çапах та вăл хăй тĕллĕн те пулин вĕренчĕ, нумай вуларĕ, сĕт-çу фермине ертсе пынă çулсенче техникум пĕтерчĕ. Ĕçе яланах тĕплĕ тума юратакан, çын хуйхи-суйхипе нушине ăнланакан, тĕрĕслĕхшĕн чунне пама хатĕр коммуниста кĕçех вара ял совет председательне суйларĕç. Юлашки çулсенче вăл колхозри коммунистсен пуçĕнче тăрать.

Ахальтен аса илмерĕ халĕ Николай Иванович Ванюшин пурнăçĕн уйрăм саманчĕсене Караваев. Партком секретарĕ колхозниксене, уйрăмах тата çамрăксене, яланах тĕрĕс пурăнтарасшăн, ĕçре вăр-вар та тавçăруллă тăвасшăн çунать, чи лайăхрах та пултаруллăраххисене партие илессишĕн тăрăшать. Илья Малашов та коммунист акă. Ванюшин унра этемĕн чи кирлĕ те ырă енĕсене курма пултарнă тăк — вăл çав ята тивĕçлех пулĕ ĕнтĕ. Пĕлесчĕ, мĕнле ĕçлеççĕ-ши вĕсем уйра? Юлса намăс курма юрамастех вĕсенчен. Çавăнпа та хытăрах тимлемелле, хальтерех вĕçлемелле картинăна. Унтан каллех яла, уçă сывлăша, çут çанталăк ытамне...

Самантăн-самантăн кĕвĕçӳ туйăмĕ те хĕсе-хĕсе килет Микулай чунне, ыраттарать вăл ăна, ассăн сывлаттарать, тен, макăртать те-и. Ун пек чухне киçтĕк тытнă алă та лăштăрах усăнать. Илюш çине пăхса тăрать-тăрать те вăл вара вĕчĕрхеннине сирме тăрăшса шăлне çыртсах ĕçе пикенет. Çапла, кĕвĕçӳпе никама та нимĕн те кăтартаймастăн. Вăл ялта Венера çывăхĕнче пурăнать, эсĕ — аякра. Сана пулас картина хăй çумне сăнчăрласа хунă. Илюш, тен, эсĕ асапланнă самантсенче те Венерăна ыталаса-чуптуса йăпанать пулĕ. Паллах, хĕр чармасан ĕнтĕ. Ăна-кăна ăçтан-ха ăнланса пĕтерĕн? Кам пĕлме пултартăр-ха хĕр чĕрин алăкĕ

хăш вăхăтра уçăлса хупăнассине? Ăна юратнă каччи те, тен, хĕр хăй те пĕлсе пĕтереймест ахăр. Шухăшласа пăхсан, пайтах хуçаланнă çав чĕрере Илюш. Венера Юрату утравĕнче каланине ĕненес пулсан халĕ вăл унтан тухса ӳкнĕха. Çапах та Микулай çирĕппĕнех кĕрсе йышăннă-ши çав вырăна? Чăнласах ларать-ши вара вăл хĕр чĕринче? Тек кĕрейместех-ши ун алăкĕнчен Илюш? Ку тĕп-тĕрĕсех пулсан лăпланмалла та ĕçлемелле çеç. Тата мĕншĕн-ха шанмалла мар хĕре? Тем тесен те, ним ахальшĕнех пакăлтатмарĕ пулĕ вăл юрату вылянă пирки. Картина ӳкерме те сюжетне хăех пачĕ. Çук, апла-капла вылямa кирлĕ мар. Кĕвĕçессине айккинелле сирсе хумалла та хĕрӳленсех, çанă тавăрсах, ывăнма мансах ĕçлемелле, нихçанхинчен те вирлĕрех ĕçлемелле. Ăмăртма пултăн пулсан — никам умĕнче те ята ямалла мар!

Тепĕр эрнерен Караваев «Чăваш юмахĕн чăнлăхĕ» картина хатĕр тесе шутларĕ. Чылайччен вăл ăна тĕрлĕ енчен: пĕрре айккинерех кайса, тепре çывăхарах пырса сăна-сăна пăхрĕ. Илюш пит-куçĕнче çеç кăштах çӳхе сăрă йĕрĕ кирлĕ пек туйăнчĕ. Яла кайса килсен куç курĕ терĕ вăл юлашкинчен. Унтан çула пуçтарăнса мастерскойран тухрĕ. Автовокзала çитсе билет илсенех Çĕрпеле çӳрекен автобус килсе чарăнчĕ. Палланă çынсене шыраса унăн-кунăн пăхкаланă хушăра Венера ашшĕ туйи çине тайăнса автовокзалтан уксахласа тухнине курах кайрĕ. Пашков та асăрхарĕ Караваева, ăна курса аякранах аллипе сулкаласа сывлăх сунчĕ. Иосиф Иванович ку яхăнта шофер прави илме тесе Шупашкарта вĕренсе пурăннă иккен.

— Патшалăх ырлăхĕпе усă курса пăхас терĕм-ха, — кулкаласа калаçрĕ вăл. — Юрий Ильич ак ял хушшине тата мăн урама асфальт сартарчĕ те, ватлăхра çӳресе савăнатăп ĕнтĕ «запорожецпа». Ĕçе те çуран лăкăштатма пăрахатăп.

Микулай унăн кăлкан пек çӳçĕпе кĕске сухалĕ, йĕрлĕйĕрлĕ пит çăмартийĕсемпе тăп тытнă тути çинелле ăшшăн тинкерсе пăхса илчĕ.

— Эппин, халь аптăрамастăр ĕнтĕ, права тени кĕсьере, — хаваслăн хушса хучĕ вăл. — Çăмăлтарах пулать.

Автобуса вĕсем пĕрлех кĕчĕç, ларма та юнашарах ларчĕç. Капла пĕр-пĕринпе калаçса пыма майлăрах.

— Автобус çӳрени мĕн тери ырлăх пирĕн ялсемшĕн.

Уншăн пуç тайсах тав тумалла Васли Йăванчăпа Юрий Ильича. Хăв та астăватăн пулĕ-ха, чăн-чăн нушаччĕ ĕлĕкрех Шупашкара çитсе килесси, — туйине чĕркуççийĕсем хушшине хĕстерсе питне аллипе сăтăрса илчĕ Пашков.

— Ара, çав, — автобус чӳречи еннелле пăхса хуравларĕ Караваев, — чи çывăх станцăна тухма та ултă çухрăмччĕ, Канашĕ татах та инçеччĕ. Утрав варринче ларнă пек пурăнаттăмăр.

Ялти тата хулари тĕрлĕ хыпарсем çинчен калаçкаласа пынă май вĕсем район центрĕнчен иртсе кайнине те сисмерĕç.

— Мĕнле-ши, Микулай, эс пĕлме кирлĕ: пама пулмĕши çак çула Янгорчин ятне? — Караваев çинелле куç ывăтса илчĕ Пашков. — Вăл тăрăшман пулсан, калама йывăр, тахçан пулатчĕ-ха вăл...

Çак самантра Караваев Василий Ивановичпа иккĕшĕ «Раççей» хăна çуртĕнче калаçса ларнине аса илчĕ. «Ялах таврăн, ялах! — ӳкĕтлерĕ ăна ун чухне Янгорчин. — Кĕçех асфальт сарса чаплă çул туса пĕтеретпĕр. Мускавран «Чайкăпа» чак! çеç çитсе чарăнăн хамăр униче умне. Сана эпир колхоз пекарнинче пĕçернĕ çаврака çăкăрпах кĕтсе илĕпăр ун чухне». Маттур, каланă сăмаха тытрĕ. Вăл пуçланă ĕçе Юрий Ильич вĕçне çитерчĕ. Пуçараканĕ ĕнтĕ ытларах асра юлать...

— Илтмерĕн-и, Микулай, çак çула Янгорчин ятне памалла тетĕп. Пулăшмăн-и, сана таçта та пĕлеççĕ. Мĕнле, э? — Караваева хулĕнчен тытса калаçрĕ Пашков.

— Илтме илтрĕм-ха, Иосиф Иванович, çавăнпа шухăша кайрăм. Тĕрĕс те калатăн пулĕ эсĕ. Хальхи вăхăтра лайăх çулсăр пурнăç пурнăç-и вăл?

— Янгорчинпа Андреев халăха мĕн ытларах кирлине чунпа ăнланса ĕçлеççĕ. Юрий Ильич авă фермăсенче те, техника паркĕнче те, йĕтемсем çинче те асфальт сартарчĕ. Сирĕн ялтан Тукая çитме те çатма пек çул пулать.

Хĕрсе кайсах калаçнă май Пашковăн сылтăм пит çăмартийĕ кăрт-карт туртăнкалать те, çав самантсенче куç хупанкийĕсем те мăч-мăч хупăна-хупăна илеççĕ. Ытларах вĕренме май килнĕ пулсан, тен, унран питĕ лайăх учитель е чаплă лектор та тухатчĕ. Хĕрӳ чăрсăрлăхĕ ăна салтакра чухне танка хăюллăн тытса пыма, çапăçусенче

çĕнтерме, вăрçă хыççăн уксах урапах машина рулĕ умне ларма пулăшнă. Нумай вĕренмен пулсан та пĕлӳлĕхĕпе тавра курăмĕ те анлă унăн, пур йышши искусствăна та чунĕпе ăнланса юратать: аккордеон лайăх калать, юрлама ăста, ӳкерме те пĕлет. Авă мĕнле пултаруллă çын Караваевăн пĕрремĕш учителĕ. Ăна халалласа картина çырас шухăш та пурччĕ-ха унăн. Хăйсен ушкăнĕнчи тепĕр художник Григорий Ушкин иленчĕ те вĕсем патне çавна пула çеç Микулай ку ĕçе тытăнма тăхтарĕ. Григорий Саввич тăтăшах Пашковсем патне кайса çӳрерĕ, пайтах тăрмашрĕ, юлашкинчен çапах та кăмăла килĕшмелле, тарăн шухăшлă та пурнăç савăнăçĕпе тулнă паха картина çырма пултарчĕ. «Пашковсен çемйинчи уяв» ят пачĕ вăл ăна.

Акă аманнă урине хальхи майлах тăсарах хурса, кĕлеткипе кăшт ӳпĕнерех ларать унта аллине аккордеон тытнă Иосиф Иванович. Юнашар — ватăлас кунĕсенче те чипер сăнне упраса хăварнă арăмĕ Укçине инке. Иккĕшĕн те кăкăрĕ тулли орден-медаль. Пурте илĕртмелле пулса тухнă çак хайлавра: композицийĕ те, сюжечĕ те, сăнарлăхĕ те, сăрăсен шайлашулăхĕ те... Çемьери хаваслă уяв туйăмĕ кашнин сăнĕпе тумĕнчех яр уççăн сисĕнсе тăрать. Пуçне кăштах чалăштарнă Венера çеç темшĕн тунсăхлăраххăн курăнать. Эх, асăрхайман, тупайман Григорий Саввич чăваш «Джокондин» ăшри вут-çулăм çиçсе-ялкăшса тăракан чăнчăн сăнарне. Мĕнех-ха, пултăр-и, тунсăхлăрах тăтăр-и Венера тата ку картинăра. Пурнăçра пурпĕрех вăл урăхларах, çĕкленӳллĕрех, çутăрах. Шăпах çапла ӳкернĕччĕ Микулай ăна хăйĕн «Шанман чечексем» ят панă пирвайхи картининче. Хальлĕхе мастерскойран ниçта та тухса курман «Çĕр пикийĕ» вара пушшех те ытармалла мар илемлĕ курăнать.

Иосиф Иванович каллех Караваев çинелле ыйтуллăн пăхса илчĕ.

— Эсир тĕрĕсех шухăшлатăр, — терĕ юлашкинчен Микулай. — Çул тăвасси çăмăл ĕç мар паллах. Хам хуçалăх ĕçне туса курман пулсан та куна лайăх ăнланатăп. Ара, хăй ĕçĕнче кашни çыннăнах лайăх енĕпе палăрмалла. Унсăрăн...

— Унсăрăн эсĕ те халăх çинче ырă ят илеес çукчĕ.

— Эпĕ — мĕн вăл! Пирĕн ĕçпе çăкăр пулмасть, халăх

тăранаймасть. Эсир акă чăнласах та мухтава тивĕçлĕ. Пĕтĕм пурнăçа эсир, хуçалăх çыннисем, тăватăр. Эпир ак çавна ăнланса хамăр пултарнă таран ÿкеретпĕр çеç. Çул пирки... аван шухăш каларăр. Калаçса пăхма юрать...

— Сисмерĕмĕр те — кĕрлеттерсе те çитрĕмĕр акă. — Ĕлĕк пулсан ним мар икĕ талăк иртетчĕ. Тавах Янгорчинпа Андреева, — туйипе хутаçне алла илчĕ Пашков. — Вăхăт тупăнсан пырса кур хăнана, леш... пире ÿкерекеннипе пĕрле.

Автобус Культура керменĕ умĕнче чарăнчĕ. Тăван ял çĕрĕ çине ансан Караваев хальхинче те ку вырăнсене пуçласа курнă пек майĕпен те тимлĕн сăнаса пăхса илчĕ. Икĕ хутлă правлени çурчĕ. Тепĕр енче — вăтам шкул. Хирĕçех — суту-илÿ комплексĕ. Çывăхрах — ача сачĕ, аптека. Анлă лаптăк варринче — Ленин палăкĕ. Ун йĕри-тавра тĕрлĕ-тĕрлĕ чечек куçа йăмăхтарать. Çак лаптăка тата çав çуртсемпе вĕсен ăш-чиккине Алексей Михайлович Нямановы ытармалла мар ăста илемлетнĕшĕн, хăй ертсе пыракан художниксен «Пучах» ушкăнĕ ял культурине çĕклес ĕçе хастарлăн хутшăннăшăн Караваев ăшĕнче чăннипех те çав тери хĕпĕртесе савăнчĕ.

## 8

Культура керменĕн иккĕмĕш хутĕнчи уçă чÿречерен Ванька Костин сасси илтĕнсе кайрĕ:

— Салам, Микулай! Кĕрсе тухмастăн-и? — кăшкăрчĕ вăл пуçне кăларса.

Караваев та аллипе сулса саламларĕ, йăл кулса пуç сĕлтрĕ те кĕçех алăка уçса малти аслă пÿлĕме иртрĕ, хыпалансах çÿлти хута хăпарчĕ. Сыпăклă икĕ пусмара — вун икшер картлашка, вĕсен хушшине те шутласан шăпах çирĕм пиллĕк пулать. Чĕлхе çине тÿрех çыпçăнчĕ çав цифра, утнă май марш кĕвви пек илтĕне-илтĕне каять: çирĕм пиллĕк! çирĕм пиллĕк! «Тĕлĕнмелле, миçе хутчен пулман пулĕ кунта, анчах нихçан та картлашка шутламанччĕ. Мĕне пĕлтерчĕ-ха вара ку?» А-а, тинех пуçа килсе кĕчĕ. Лăпах кунтаччĕ-çке, çÿлти хутра, вăл Нямановпа пĕрле илемлетнĕ «венчете тăмалли» тата ача ячĕ çыртармалли пÿлĕм. Ялти çамрăксен уявĕ хыççăн тарăхса кайнă Илюш Малашов çап-

лах каланăччĕ: «Эсир те, Каравай мучи, тен, тепĕр çирĕм пилĕк çултан çак пӳлĕме мăшăрланма килĕр. Çапах та, тархасшăн, хальлĕхе Венерăпа иксĕмĕре пĕрлешме ан кансĕрлĕр!» Çакă пăтранать мар-и пуçра? Хăй те çемье тăваймасть те, çапах Илюш ăна та чĕрĕк ĕмĕртен тин авлантарасшăн иккен-ха. Хă, урай чĕриклетнĕ май янăрать те янăрать çав йăлăхтармăш сасă: çирĕм пиллĕк, çирĕм пиллĕк!..

Библиотекăра Костин пĕчченех-мĕн. Вăл юлташне хирĕç тăрса тухрĕ те хаваслансах ун аллине тытса чăмăртарĕ.

— Автобусран тухнă чухнех асăрхарăм. Нивушлĕ кунта кĕмесĕрех киле кайĕ тесе шутларăм, — майĕпен калаçма пуçларĕ вăл. — Пĕлетĕн-и кунта мĕн çырнă? — çавăнтах хаçата саркаласа кăтартрĕ Костин. — Итле, питĕ аван калана: «Çĕр çимĕçне тулăх та техĕмлĕ ӳстерме чуна хавхалантаракан юрă-ташă та, интереслĕ кĕнеке те, илемлĕ живопись те кирлĕ. Çавăнпа художниксен хăйсен картинисене мастерскойсенчен халăх хушшине ытларах илсе тухмалла, анлăрах кăтартмалла вĕсене, çав картинăсенчен галерейăсем уçмалла. Этем çăкăрпа çеç тутă мар. Илемлĕх тĕнчипе çывăххăнрах паллашса унăн татах та лайăхран лайăх ĕçлес килтĕр. Çак тĕллевшĕн вăй хурса тăрăшатпăр та эпир «Шурăмпуç» колхозра...»

— Çын ытлашши пакăлтатса кайсан суйма пуçлать теççĕ, — Костин аллинчи хаçата лутăркаса тытрĕ Караваев. — Пире те ытлашши сăмах çаптарма вĕрентеççĕ ку корреспондентсем. Тапăнчĕç мана иртнĕ эрнере, хирĕçлеме хăяймарăм, çырса патăм вара художниксем партин Апатçимĕç программине пурнăçлас ĕçе мĕнле хутшăнни çинчен. Хутшăнма хутшăнатпăр-ха та, тепĕр чухне ытлашшипех шавласа каятпăр çав. Шутласан, хальлĕхе эпир çăкăрпа чейлĕх те усă тăвайман-ха халăха. Ой, нумай, питĕ нумай сăрламалла пулать пирĕн, Ванька. Фронтовиксене, ĕç паттăрĕсене май килнĕ таран ытларах пир çине ӳкермелле, пуçланă картинăсене те вĕçлемелле. Мĕн кăна çук пулĕ кунта! Тĕп ĕçĕ вара — ял çыннисене çут тĕнчен, пурнăçăн илемлĕ кĕввине чун-чĕре ăшшипе туйма вĕрентесси...

Костин ăна туртсах хăйпе юнашар лартрĕ, аллинчи хаçачĕпе сулкаласа калаçрĕ:

— Ытлашши ан чухăнлан-ха, Микулай. Пурсăмăр та сирĕн пек ĕçлесен колхоз тахçанах пĕлĕте çити çĕкленсе

каймалла. Ӳрĕкрех-ха халь эпир. Пĕр кун тар кăларатпăр та эрнипе çăвар карса çӳретпĕр. Пĕлсе тăратăп: эсир хăвăр сăмаха тытатăрах. Çырса пыратăп-ха эпĕ кунта. Ав пăх-ха çавăнта, — библиотека хуçи художника сылтăм стена еннелле тĕллесе кăтартрĕ.

Караваев стена çывăхнерех пычĕ. Унта пысăк сас паллисемпе «Чăваш художникĕсен ушкăнĕпе «Шурăмпуç» колхоз ĕçченĕсен ăмăртăвĕ» тесе çырса хунă. Килĕшӳре палăртнă пунктсем мĕнле пурнăçланса пынине те йĕркипе паллă тунă. «Пучах» ушкăнĕн çĕнĕ çулчченех нумай ӳкермелле-ха тата картинăсен галерейи валли те çывăх вăхăтрах пӳлĕм илемлетсе хатĕрлемелле.

— Эс мана «Третьяковка» пирки аса илтересшĕн пултăн вĕт, Ванька, çапла-и? — чеен йăл кулчĕ Караваев. — Çавăншăнах ман статьяри пĕр абзаца вуласа патăн ĕнтĕ.

— Маттур, тĕрĕс ăнланнă. Тĕлĕкре те хамăрăн пулас галерейăпах аташатăп.

Микулай тăрса кăштах каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрерĕ, унтан тусĕ патне пырса аллине ун хулпуççийĕ çине хучĕ.

— Ялсенче пĕчĕк галерейăсем уçас пирки иккĕленекенсем те пур-ха.

— Ăслă çынсемех-и вара вĕсем?

— Акă Мускаврах илтнĕччĕ пĕлтĕр. Шупашкарта та Юсов пек скептиксем тупăнкалаççĕ-ха. Вĕсен шучĕпе, эпир, художниксем, «Ял третьяковкисем» пирки пустуй шав кăларатпăр иккен-ха. «Ял çыннин культура шайĕ искусствăна ăнланма хатĕр мар, ялта сăнарлă искусство хайлавĕсем тунсăх тусанĕпе витĕнеççĕ», — тенĕччĕ пĕркун пирĕн «дворец художникĕ» Юсов. Паянхи пурнăçран юлнăскерсем çапла лартаççĕ ку ыйтăва: «Кирлех-ши ялта картинăсен галерейи?» Сан шутупа, мĕнле пек, тусăм?

Хĕрсе кайса калаçнă хушăра иккĕшĕ те пӳлĕме Моляков килсе кĕнине асăрхаман. Костин хуравласа калас тесе çăвар уçнăччĕ кăна, — Кĕпитун çурăк сассипе хăрăлтатса калаçма пуçларĕ:

— Такама пит кирлĕ ялта сирĕн галерейăр? Выртсах макăратпăр пулĕ-ха кунта сирĕн сăрă куписемшĕн? Навуспа тусан ăшĕнче çăрăлнă хыççăн пире сан картинкку мар, çур литр этикетки ăнланмалларах, экс-пултăрăм. Йăлтах пустуй ĕç ку.

— Эс, Кĕпитун, пурне те хăвăнпа ан танлаштар, — ун еннелле сиввĕн пăхса илчĕ Костин. — Енчен те эсĕ ытларах кĕленче ҫинчи картинккăсемпе йăпанатăн пулсан, ан шухăшла пурте хăвнашкал тесе. Пĕлетĕн тĕк, ҫĕршер-пиншер ҫын халĕ культура патнелле туртăнать. Хамăр ача чухнехипе шутласан мĕнле улшăнчĕ унтанпа ял? Паянхи колхозник классикăллă музыкăна та, оперăпа балета та, сăнарлă искусство произведенине те лайăх ăнланать.

— Ытлашши ӳстерсе калаҫан, Ванька, — чĕрре кĕре пуҫларĕ Кĕве Кĕпитунĕ. — Ним ăнланман ҫын вырăнне ан хур эсĕ мана. Ленин искусство ҫинчен мĕн каланине те, парти искусство вăйĕпе ҫыннăн чун хавалне тата ҫӳлерех ҫĕклессишĕн тăрăшнине те пĕлетпĕр. Авă стена ҫине хăвах курăнмалла ҫырса ҫапнă. Ҫапах та... хула халăхĕ, паллах, культурăна ҫывăх тăрать, ял вара... Ҫук-ха, илемлĕх вăрттăнлăхĕсене ăнкарма мар, хальлĕхе ҫăпата сырма та манайман колхозник. Уншăн ĕҫлесе те ҫăвартан курăнichчен ĕҫсе-ҫисе пултăр. Хитре сăмах вăл...

— Каҫар та, экс-йыснаҫăм, — йĕплесе илчĕ Кĕвене Микулай, — сиссе юлайман иккен эсĕ хăвăрт ҫӳрекен «Ял — Искусство» пуйăс кĕрлеттерсе ҫитнине. Ĕлĕк пĕр чăваш Турă телей валеҫнĕ вăхăтра ҫăпата сырса кая юлнă теҫҫĕ те, кунта вара ҫывăрсах юлнă эсĕ. Вăран. Санăн та ырă туйăм тени пулма кирлех.

— Мĕн, эпĕ ăнланмастăп пулĕ тетĕн-и сăнарлă искусствăна? — кӳренчĕ Моляков. — Шалиш. Юрĕччĕ те пурте манашкал ăнланас пулсан, ҫук ҫав. Эпĕ хам пирки мар, ял ҫыннисем пирки калатăп. Вĕсемшĕн ир-ха халь художество галерейи уҫма.

— Ав мĕнле иккен-ха, ял ҫыннисем пирки калатăн пулать, — Кĕве Кĕпитунĕ ҫине йĕрĕннĕ майлăрах тинкерсе пăхрĕ Костин. — Тĕрĕссипе, питне кĕҫҫе ҫĕленĕ эсĕ, Кĕпитун. Мĕншĕн-ха намăс мар сана ял ҫыннисем пирки мĕн те пулин япăх калама. Хăвăн ҫине лайăххрах пăх эсĕ. Эрех лĕрккеме е тата чĕлхепе ҫынна ҫиме пĕлетĕн ĕнтĕ, кунпа килĕшме пулать. Пĕтĕм «культура» та санăн ҫавă ҫеҫ. Ĕҫ тесен, — никамран малтан ыттисен ҫурăмĕ хыҫне йăпшăнма тăрăшатăн. Мĕн, пĕлмеҫҫĕ пулĕ тетĕн-и сана? Пĕле-е-етпĕр... пурнăҫри пуш чечеке. Ҫын илемĕ курăнмасть санра...

Караваев пӗр хушӑ нимӗн те чӗнмесӗр тусӗ ҫинелле сӑнаса пӑхса ларчӗ. Костин васкамасӑр, кашни сӑмаха татса калаҫать. Сасси янравлӑ та уҫӑ. Калаҫнӑ хушӑра типтерлӗн каялла тураса вырттарнӑ хура ҫӳҫне майӗпен шӑлкаласа илет. Тӑрӑхла пит ҫӑмартийӗсем ҫинче — тарӑн йӗрсем. Кӑшт тӑсӑкрах тӳрӗ сӑмса. Ҫинҫе тута хӗррисем чун ҫирӗплӗхӗпе мӑнаҫлӑха палӑртаҫҫӗ. Чӑлт шурӑ ҫирӗп шӑлсем. Янахӗ йӗкӗр. Тӑнлав айккинчи шурӑ ҫӳҫ пӗрчисем хӑлхисем ҫинелле усӑннӑ. Ҫийӗнче — шурӑ кӗпе, йӑрӑмлӑ ҫӑмӑл костюм. Шӑлавар пӗҫҫисенчи тӑрӑхла йӗрсем ҫип ҫапнӑ пек тӳрӗ те ҫинҫе. Тыт та ӳкер пир ҫине ҫак хӑюллӑ сӑнпите, асра юлакан тирпейлӗ те тӑн-тӑн ҫирӗп кӗлеткене. Эппин, мӗншӗн-ха ял культурине ӳстерессишӗн ҫӗрӗнкунӗн ӑшталанаканӑн портречӗ пулас галерейӑра хӑйне тивӗҫлӗ вырӑн йышӑнмалла мар-ха? Андреев та ялти «Третьяковка» хуҫине Костина тӑватпӑр тесе калать-ҫке.

— Мӗн куҫупа ман ҫине ҫисе ярас пек пӑхатӑн? — Моляков мӑрт-март тукаласа тухса кайрӗ.

Костин кулкаласа ура ҫине тӑчӗ.

— Хытах тарӑхрӑм-ха ку Кӗпитуна. Хӑ, тупӑнчӗ тепӗр пултарулли. Эрнере пӗрре питне ҫӑвасчӗ хӑть... Итле-ха, акӑ мӗн пирки калаҫса пӑхас килчӗ санпа, Микулай. Пӗлетӗп-ха, паллах, хуласенчи галерейӑсемпе музейсем пуян. Тем те курма пулать вӗсенче. Ҫитменнине тата, унта куравсем те час-часах пулаҫҫӗ. Пире, ял ҫыннисене, илес пулсан — ӗмӗрте пӗр-икӗ хут лекетпӗр-и унта, ҫук-и. Тепри пур — виличчен те кайса кураймасть. Хамах илем акӑ. Хӗрӗх урлӑ каҫса Мускавпа Ленинградри искусство керменӗсене кӗрсе курман. Вӑхӑт сисмесӗрех иртет, хамӑр та сисмесӗрех ватӑлса пыратпӑр. Ҫавӑнпа хамӑр патра та паллӑрах картинӑсен пуххи кирлӗ пуль тетӗп. Темле пулать ӗнтӗ, уйри ӗҫсене пуҫтарсан Юрий Ильич мана та механизаторсемпе пӗрле Халӑх хуҫалӑх ҫитӗнӗвӗсен куравне илсе кайма шантарать-ха, те пулса пӗтетех ӗнтӗ. Тем пек Третьяковкӑна кӗрсе курӑттӑмччӗ.

— Ку питӗ аван шухӑш. Культура ҫыннисене хура ӗҫ тӑвакансенчен уйӑрма кирлӗ мар, — ырламасӑр чӑтаймарӗ председатель сӑмахӗсене Караваев.

— Уйӑрса пӑхтӑр кӑна, — кулса ячӗ Костин. — Пӗлетӗнҫке пирӗн партком секретарӗ Ванюшин мӗнлерех ҫынне.

Ытла пит шӳтлемеллиех çук Николай Ивановичпа... Хуçалăх хуçи вăл, тем каласан та хуçалăхра ĕçлекене маларах хурать, пирĕн йышшисене тепĕр чухне айккинерех пăрса хăварма та пăхĕ. Янгорчин урăхларахчĕ, ăшĕнче илемлĕх вулканĕ тапса тăрать. Çав вулкансăр Культура керменĕ те, паркпа палăк та, ача сачĕпе пекарня та пулмастчĕ. Илер-ха акă хамăр кӳршĕсене. Уравăшсенех, эппин. Ферма çурчĕсем каплантарса лартрĕç те, эй, мухтанчĕç, эй, шавларĕç хайхи. Çав хушăрах хăйсен ялĕнче ĕçлекен çынни те юлмарĕ, пĕрин хыççăн тепри хулана туха-туха шăвăнчĕ. Халĕ тума тытăнчĕç те-ха клубпа ача сачĕ — каярах юлчĕç. Василий Иванч ку енчен ăслăрах пулчĕ. Культура çуртне те, ача садне те сысна витинчен виçĕ çул маларах тутарчĕ, хыççăнах халăха кирлĕ йăла çурчĕсем те çĕкленчĕç. Ăна çакăншăн çӳлтисем ятлама та пăхрĕç, райком выговор та шаплаттарчĕ. Шухăшласа ил: тĕрĕсси кам енче пулнă тетĕн?

— Янгорчин шухăшлама пĕлет вăл, тавçăрулăхĕ çитет унăн, — килĕшрĕ Костинпа Караваев. — Куçĕпе çеç мар, пуçĕпе те малаллах пăхать. Юрий Ильич та унран ӳксе юлмасть, ял сăн-сăпатне улăштарса унти çынсен культурине çĕклессишĕн чунне парать.

— Ара çав, вĕсем тăрăшнипех икĕ ял хушшинче çĕнĕ урам ӳссе ларчĕ. Колхоз ĕçĕнче ӳркенместĕн пулсан — кĕрех вĕр çĕнĕ хӳхĕм пӳрте, пурăн киленсе. Акă хăвăн йăмăкнах, Укахвиех, илер. Кĕç-вĕç хулана тухса каяс патне çитнĕччĕ. Хваттер пачĕç те, ялтах юлчĕ акă. Яр-ха халь пирĕн çамрăксене ялтан? Яхăнне çук. Вĕренме кайсан та ялах таврăнаççĕ. Эпĕ Венера Пашкова артистка е врач пулать пулĕ тенĕччĕ. Вăл та ав тăван çĕрех юратрĕ. Тата... сана та юратрĕ.

— Чим-ха... — çавăнтах çурăмĕнчен тĕртсе илчĕ тусне Караваев. — Тата айккинелле ан сиксе ӳк эсĕ.

— Пĕртте айккинелле сиксе ӳкместĕп, Микулай. Колхоз «Третьяковкинче» чи малтан ĕçре ырă ят илнĕ çынсен — Янгорчинсен, Пашковсен, Караваевсен — сăнĕсем хăйсен вырăнне йышăнмалла. Вĕсен аллисемпе çĕнелсе илемленет паянхи пурнăç. Ытти картинăсем пулсан та чăрмантармĕччĕç, анчах мĕн тăвас-ха. Эпир Третьяков господин мар çав, унăн вăн, пуян хуçан, вырăс художникĕсен чи лайăх япалисене сутăн илсе пуçтарма май килнĕ.

— А ма кулянатăн тата уншăн, Ванька? Мĕн, пирĕн май çук пуль терĕн-и?

— Музейсен хранилищисенче, Художество фондĕнче тем чухлех тусан çăтать пуль те чаплă картина... Илсе тухасчĕ хăш-пĕрне хамăр галерея валли, кунти сиплĕ сывлăшпа сывлаттарасчĕ. Картинисемшĕн те, хамăршăн та усăллăрах пулатчĕ.

— Юрĕ, Мускава кайсан кĕрсе тухăп-ха кирлĕ çĕре, юлташсемпе те калаçса пăхăп. Парнелеччĕр хăш-пĕр япалисене ял çыннисене.

— Ку вара хăватлă пулатчĕ, — савăнса кайрĕ Костин. Вăл çавăнтах ура çине тăрса Караваева чӳрече патнелле туртса пычĕ.

Шкул çумĕпе Венераваскамасăр утса килет-мĕн. Тӳлек çил варкăшĕ чечеклĕ тутăр вĕçĕпе вылять. Хĕр пуçне тӳрĕ тытнă, урисене çирĕппĕн яра-яра пусать. Хăй савăнăçлă пит-куçлă.

— Ну, хăçан туйăнта ташлатпăр? — кулкаласа ыйтрĕ Костин Микулайран. — Çуркуннеренпех ав ура тупанĕсем кĕçтеççĕ.

— Хăçан Сунар çырминчи рак Туçи тăвайккине улăхса шăхăрать — çавăн чухне, — хуллен тавăрчĕ Микулай.

— Мĕн, мĕскер эсĕ, савăнас чух... Сан вырăнта... — ăнланмарĕ тусне Костин.

— Савăнасчĕ те, темшĕн чун вырăнтах мар, Ванька, — Караваев ассăн сывласа илсе чӳрече патĕнчен пăрăнчĕ. — Пуçра тем тĕрлĕ шухăш та пăтранать. Тата... пĕччен пурнăç та пурнăçах мар. Авлансан... арăма йăпатасси те киçтĕкпе катан пир сăрласси мар пуль, — вăл сарлака çамкине ывăç тупанĕпе сăтăрса илчĕ те тăнлав айĕнчи кăвакара пуçланă çӳç пайăркине пӳрне вĕçĕсемпе пĕтĕрме пуçларĕ. — Ватăлатпăр иккен...

— Мĕн тăвас тетĕн-ха, çулсем хăйсен ĕçне тăваççех ĕнтĕ. Шухăшлас мар çеç кун çинчен, Микулай, тата чунпа ватălma юрамасть, — тăтăрхаллăн калаçрĕ Костин тусне хавхалантарса.

Кĕçех вĕсем урама тухрĕç, çурт хыçĕпе çаврăнса хурăнлăха кĕчĕç. Пĕчĕк пĕве тавра ачасем ларса тухнă, пулă тытаççĕ. Палăк патĕнчи яштака йывăçсем хушшипе сукмак шалалла кукăрăлса кĕрет. Унта çуллахи театр. Ытарма

çук хитре вырăн. Таçта та пулса курнă-ха Караваев, çапах та халăха канма ятарласа тунă кунашкал хӳхĕм кĕтес нихăш ялта та асăрхаман. Пĕр кĕрсен тухас та килмелле мар, хăвна ху темле юмахри тĕнчене килсе лекнĕ пек туятăн. Акă вĕсен чи юратнă вырăнĕ. Венера кĕçĕр те çак хурăнсем айне тухма кирлĕ. Каччи паян таврăнмаллине пĕлет вăл.

Костинсем кунтан инçех мар пурăнаççĕ. Авă вĕсен анкартипе сачĕ те курăнсах лараççĕ. Ванька Микулая хăйсем патне кĕрсе тухма чĕнчĕ. Анчах Караваев килĕшмерĕ, килне васкарĕ. Кĕçех хăйсен сачĕ хыçне те çитсе тухрĕ. Аслашшĕ улмуççисем хушшинче майĕпен кăштăртатса çӳрет.

— Çитрĕн пулать-ха? — кăмăллă сасăпа ыйтрĕ ватă Караваев. — Хам та тин çеç йĕтем çинчен килтĕм-ха. Кĕр тырри пулса çитнĕпе пĕрех ĕнтĕ, кĕçех вырмана та тухмалла.

Аслашшĕпе иккĕшĕ пӳрте пырса кĕрсен амăшĕ хыпалансах апат хатĕрлеме пуçларĕ. Ывăлĕ те пулăшрĕ ăна: çăкăр касрĕ, сĕтел çине чашăк-тирĕкпе кашăк-çăпала пырса хучĕ.

— Аçуна кĕтмĕпĕр, — сĕтел умĕнчи пукан çине пырса ларчĕ Хĕветут. — Вăл тепĕр чухне леренех çисе килекен. Столовăйра аш апачĕ çитереççĕ. Хаклă та мар. Эс мĕн лармастăн тата, Микулай? Нумайлăха килтĕн-и?

— Пурăнасшăн-ха кăштах, — пĕлтерчĕ мăнукĕ.

— Çав леш çурт çумĕнчи хăмана майлаштараймăн-ши хальхинче?

— Юрĕ. Иртнинче каласа хăварнăччĕ-ха эпĕ хисеплĕ колхозниксен сăнĕсене пĕчĕклетсе тума, ячĕсене те çырма каларăм. Юлташсем тунă та пулĕ ку таранччен.

Çисе тăрансан Каравай Хĕветучĕ йывăç кашăка çуласа тасатрĕ те тăм чашăк çумне хучĕ, вара ура çине тăрса ваттисен йăлипе тур кĕтессинелле пăхса илчĕ, пукана кравать çумнерех куçарса лартрĕ, апатшăн кинне спаççипă калама та манмарĕ. Унтан кăххăм-кăххăм ӳсĕркелесе кăштах алăкăн-тĕпелĕн уткаласа çӳрерĕ-çӳрерĕ те тинех калас сăмахне пуçларĕ:

— Шăллуна шăлса ывăтрăн пулать апла... Так, так... Каравай йăхĕнчи пĕр йăх-яха тасатрăн.

— Ун вырăнне эпĕ хамăр Укахвин Мишшине ӳкерсе хурасшăн, — пуçне çĕклемесĕрех пĕлтерчĕ Микулай.

Амăшĕ те хушша кĕчĕ:

— Мĕн чухлĕ куççуль тăкмарăм эпĕ уншăн кулянса. Сирĕншĕн пĕриншĕн те унашкал хуйхăрса курман. Миша ашшĕне ан хывтăрччĕ тесе турăш умне те чĕркуçленсе кĕлтунă. Кĕве Кĕпитунĕ пек пулас пулсан — ăçтан юратас килтĕр-ха ăна. Тавах турра, йăлтах хамăра — Каравайсене хывнă.

— Ачи маттур, нимшĕн те тиркемелли çук. Ӳкерсе хур ăна унта. Туса пĕтер те кайса çак Костин патне. Вăл, тем, ялта Мускаври пек келерей тăвасшăн тет-и çав, — мăнукĕпе юнашар сак çине пырса ларчĕ Хĕветут мучи.

Урамра мотор сасси кар-р! турĕ те кĕçех шăпланчĕ.

— Илле ачи пулчĕ ку, — терĕ ним иккĕленмесĕр аслашшĕ. — Ун машинине сассинчен пĕлетĕп. Илтрĕр пуль: чăх-пах! туса сӳнчĕ.

Микулай сĕтел хушшинчен тухма ĕлкĕреймерĕ — пӳрте чăнах та Юрий Ильич чупса кĕчĕ, сывлăх сунса карттусне пăтана çакрĕ. Апат çиме килĕшмерĕ, пĕр стакан чей кăна ĕçрĕ.

— Эсĕ килнине пĕлтĕм те çула май çаклатса каяс мар-и куна терĕм. Атя кайрăмăр эппин, — терĕ председатель пушă стакана сĕтел çине лартса.

— Ăнланмастăп, ăçта каймаллаччĕ-ши? — нимĕн те пĕлеймерĕ Микулай.

— Кӳршĕ яла, туя. Хамăрпа ăмăртакан колхоз хуçи авланать, сана та илсе пыма каласа ячĕ.

Кĕтмен хыпара илтнĕ Караваев пуçне пăркаласа илчĕ.

— Тĕлĕнмелле çын эсĕ, Юрий Ильич. Шăтăр-патăр килсе кĕтĕн те çавра çил пек асар-писеррĕн илсе тухса каятăн, — хулпуççисене сиктерсе илчĕ Микулай.

— Нумай калаçма вăхăт сахал. Пуçтарăн хăвăртрах, — терĕ вăл кĕскен ĕçлĕ сасăпа аллисене хыçалалла тытса утма пуçланă май.

«Ой, хăçантанпа ялти туйра пулман. Кайса курас», — çак шухăшпа Микулай пушмакĕсене йăпăр-япăр тăхăнса ячĕ. Çав хушăрах кĕçĕрхи тĕлпулу пирки аса илсе асăрхаттарма та манмарĕ:

— Вăрах тăмастпăр. Юрать-и?

— Юрĕ, юрĕ, Николай Прокопьевич. Хĕрпе качча кĕлете хупиччен юрла-юрла ташлăпăр та — унтан килелле, —

Караваева çăмăллăнах хăй майлă çавăрнăшăн кăмăлĕ тулнипе кулса илчĕ Андреев.

Ывăлĕпе чуна уçса калаçса ларма май килменшĕн кăмăлсăрланнă амăшĕ урай варрине тăрса юлчĕ.

— Венера Иосифовнăна та кĕрсе илетпĕр, — терĕ председатель урама тухсан Караваева аякĕнчен кăлт тĕртсе илсе. — Ара, тантăшĕ качча тухать-çке. Хĕрне пĕлетĕн те эсĕ. «Шанман чечексенчен» пĕри, сылтăм енчи.

«Эппин, леш хура çӳçли, лутрараххи...» — аса илчĕ Караваев.

Çăмăл машина хăйсен тĕлне çитсе чарăнсанах Венера хапхаран васкаса тухрĕ, кăмăллăн кулкаласа çывхарчĕ. Машина алăкне уçрĕ те çав самантрах пиçнĕ çырла пек хĕрелсе кайрĕ, тĕрленĕ кĕпе аркине кăшт çĕклесе Андреев арăмĕ çумне кĕрсе ларчĕ.

## 9

Туйне ни авалхилле, ни хальхилле мар тенĕ пек, пачах хăйне майлă ирттерчĕç. Малтан ял советне кайса çырăнчĕç те килне таврăнчĕç. Ун хыççăн çамрăксем колхоз садне тухрĕç. Караваевăн «Шанман чечекĕсем» виççĕшĕ те кунта пулчĕç. Пĕри маларахах качча тухнăччĕ, паян акă сылтăм енчи мăшăрлă пулчĕ.

— Аллу çăмăл сан, Николай Прокопьевич, — кулса илчĕ Андреев. — Сан картинуна выставкăра кăтартнă хыççăн пирĕн пикесене ăмăртмаллах суйлама тытăнчĕç. Асту, кĕçех варринчине те çаклатса кайма пултараççĕ.

Айлăмра хут купăс сасси янраса кайрĕ. Ытти çамрăксемпе пĕрле Караваев та Венерăна ташă картине çавăтса кĕчĕ. Чăваш вальсĕн çеммипе вĕсем симĕс кĕççе пек çерем курăкĕ çинче чылайччен çаврăнчĕç. Çĕр те, тӳпе те, тин çеç çĕкленекен тулли уйăх та вĕсене хăйсемпе пĕрле куçса çӳренĕн туйăнчĕ. Унтан ташла-ташлах майĕпен ушкăнран уйрăлчĕç те çамрăк йывăççем хушшинче курăнми пулчĕç.

Садран тухсан тырă уйĕ пуçланчĕ. Юнашарах — икĕ колхоз чикки. Сылтăмра авă — «Шурăмпуç» сачĕ. Унта вĕсем лартнă улмуççи, инçетре те мар — пĕр мăшăр хурăн. Хăйсене чĕрĕлĕх кун-çулĕ пилленине илтмесĕр туратти-

семпе лăпкăн чӳхенкелесе тĕлĕреççĕ йывăççем. Ирпе ирех хĕрелсе тухакан хĕвеле эреветлĕн пуç тайса саламлаççĕ, пĕтĕм тураттипе ун çути еннелле туртăнаççĕ. Çĕр çинчи çак виçĕ йывăç тĕнчери виçĕ сыншăн савăнăç та, чун асапĕ те. Микулай Караваев, Илюш Малашов тата Венера Пашкова вĕсем пирки виç тĕрлĕ шухăшлаççĕ, вĕсемпе виç тĕрлĕ киленеççĕ. Çĕр çинче çеç мар, кашнин чĕринче ӳсеççĕ юрату йывăççисем.

— Ман паян темшĕн хамăр улмуççи айĕнче ташлас килет, — шăплăха хускатрĕ Венерăн çепĕç сасси.

Тарăннăн сывлакан хĕре Микулай хăй çумне чăмăртарĕ, сухалĕпе питрен сĕртĕнчĕ. Венера та чăтаймарĕ, ăна аллисемпе явакласа илчĕ. Мĕн вăхăт тăчĕç-ши вĕсем çапла пĕрпĕрин хĕрӳлĕхĕпе йăпанса, ăсран кайса? Хуралçă пӳрчĕ патĕнче йытă вĕрсе ярсан тин шартах сиксе тăна кĕчĕç. Уравăш енчен уçă çил вĕрме пуçларĕ. Туçи рашчи хыçĕнче шурăмпуç çути пăлăрчĕ. Алла-аллăн тытăнса, сăмах чĕнмесĕр утрĕç вĕсем, урапа çулĕпе ыраш пуссине кĕчĕç. Ниçта та мар, шăпах çакăнта сарăлса выртнăн туйăнчĕ Караваева Шишкинăн «Ырашĕ». Çук, çук, халĕ вăл Третьяков галерейинче киленмест унăн чаплă ӳкерчĕкĕпе, чăн-чăн тырă пуссипе пырать. Çапах та мĕнле утса тухĕ-ши вăл ял çулĕпе, çĕр çулĕпе? Ăçта çити хăпарĕ хăйĕн пултарулăхĕпе? Çапах та çӳлерех те çӳлерех улăхмалла. Улăхмаллах. Шишкин ăсталăхне вăйлăрах алла илсе çӳлелле çеç тапаçланмалла. Çитмелле тӳпене — ăсталăх тӳпине! Уншăн хумханмалла, юратмалла, шанăçа çухатмалла мар, мал ĕмĕтлĕн пурăнмалла.

Хĕре Хурăнсура ăсатса таврăнсан Микулай пӳрте кĕрес темерĕ, аслăк тăррине улăхса кайса типĕтнĕ симĕс утă çине тăсăлса выртрĕ. Курăк шăрши сăмсана кăтăклать, пуçа уçăлтарать. Ыйхă килмерĕ. Куç умĕнче ĕнерхи туй, Венера... Хăлхара — унăн сасси: «Хăш-пĕр каччăсем хĕр ун килне хăй урипе утса пырасса кĕтеççĕ пулас... Хăюллă çынсене юрататăп». Çак сăмахсем Караваев чĕрине йĕппе тирнĕ пекех ыраттарнăччĕ. Халĕ тепĕр хут чиксе кайрĕç. «Хĕрĕ хăех каччăн мĕн тумаллине аса илтернĕ чухне вăл мĕншĕн çаплах вăтанать-ха? Мĕн тăллать унăн чĕлхине? Çав кӳршĕ колхоз пуçлăхĕ пекех туй кĕрлеттерме пулатьçке? Атте-аннене, асаттене пĕлтер те, Пашковсемпе калаç

та, тăвансене, юлташсене чĕн те... Вара вăл та арăмлă, Венера упăшкаллă пулса тăрĕç. Вăт сана хăюлăх та. Çавна кăмăллать, çавна кĕтет мар-и манăн «Джоконда»? — шухăшласа выртрĕ Микулай.

Кӳршĕре автан авăтрĕ. Кĕçех çырма леш енчен ăна тепри сас пачĕ. Çавăн хыççăнах Караваевсен «горнисчĕ» те сарай ăш-чиккине янраттарса ячĕ. Кашта çинчи чăхсем кăтиклетсе илчĕç.

Микулай аслăк çинчен майĕпен анса сада тухрĕ. Çĕр улми çеçкисене сăтăрса йĕпетнĕ аллипе питне уçăлтарчĕ. Унтан анкарти çумĕнчи çулпа Тукай еннелле чупса кайрĕ, Туçи рашчине хăпарсан каялла таврăнчĕ. Каллĕ-маллĕ çичсакăр çухрăм пулать.

Сывлама хулари пек мар, çăмăл, кăкăр пӳлĕнмест. Чупнăçемĕн чупас килет. Яланхи йăлапа ирсерен уçă сывлăшра киленниуншăн темле эмелрен те хаклăрах пек туйăнать. Çакăн хыççăн кăмăл-туйăм та ытларах çĕкленет, шухăш-ĕмĕт те хăватлăрах çунатланать. Пурнăçри шанăç, ырăлăх хушăнать. Хавхалану культури йĕркеленсе çирĕпленет.

Вăл çитнĕ çĕре килтисем вăраннă. Пурте картишĕнче хăйсен ĕçĕпе аппаланаççĕ: амăшĕ ĕне сăвать, ашшĕпе аслашшĕ урапан кайри тĕнĕлне улăштарма пуçланă. Микулай вĕсене пулăшма пычĕ.

— Куна хамăрах лартатпăр ĕнтĕ, — терĕ пуçне çĕклесе аслашшĕ. — Эс, тем, чăлăм куç хупман пек туйăнать. Çывăрман çыннăн ун усси сахалрах. Выртса кан кăштах.

— Усси ĕнтĕ пирĕнтен, асатте, çывăрсан та, çывăрмасан та çукрах. Пулăшма мар, чăрмантарма килетпĕр, — çапла каласа Микулай кукăр тимĕр илчĕ те тĕнĕлпе уратана çирĕплетме тытăнчĕ.

## 10

Илюш Малашов хăйне звеньевойран кăларнăшăн никама та тарăхмарĕ. Вăл уйри трактора такси вырăнне усă курса ватнăшăн кам-ха айăплă? Венерăна Вăрнар станцине ăсатса таврăннă чухне хурçă ута амантнăшăн кунĕнçĕрĕн намăсланса кулянчĕ. Дмитрий Караваев кутăнлашса тăмарĕ, председатель сĕннĕ хыççăн ăна, нимĕн пулман

пекех, ушкăна йышăнчĕ. «Çветтуй Мĕтри» Илюша Асамат уйне ячĕ.

Трактор ретсем хушшипе çăмăллăн чупать. Малашов хыçалалла пăха-пăха илет те ĕçĕпе кăмăллă юлать, хĕпĕртесе сăвăлать:

Савнă çĕрĕм,
Улăх та вăрманăм,
Хумлă-хумлă анлă уй-хирсем,
Ма сире эп пĕчĕкрен юратрăм,
Ма çунать-ши сирĕншĕн чĕрем?

Тепĕр енче Укахви Мишши ĕçлет. Акă вăл çырма хĕрне çитрĕ те тракторне чарса çĕре сиксе анчĕ, аллипе сулса Илюша хăй патне чĕнчĕ. Вĕсем çырмана анса çăлкуçĕнчен шыв ĕçрĕç. Тракторсем каллех кĕрлеме-çатăртатма пуçларĕç. Ывăннă шăм-шак та тӳрленет, çухалнă шухăш та тупăнать иккен çăлкуç имлĕхне тутаннă хыççăн, сăмахсем хăйсемех чĕлхе çине тухса пычĕç:

Есенина хĕве чикетĕп,
Штурвал тытатăп аллăма.
Çĕн лаптăксем виçсе илетĕп
Татмашкăн хамăн парăма.

Çапла, юрарать Илюш çĕре-шыва. Савать вăл тăван чĕлхене, тăван халăха, хăйне хисеплекен, çĕнĕ çул паракан çынсене. Вăл вĕсем умĕнче яланах парăмра. Тăван çĕр çинче Илюш икĕ урипе те çирĕп тăрать. Сасси ун ахальтен мар уйра та, ялта та хăватлăн янăрать.

Хĕвел аннă тĕлелле вĕсем кукуруза анине кăпкалатса пĕтерчĕç. Умлă-хыçлă «мăтăпăна»* таврăнчĕç. Тракторсене майласа лартнă хыççăн хĕрлĕ кĕтесе кĕчĕç. Шалта тем юмахĕ яраççĕ. Кулă, шав тăрать. Кĕве Кĕпитунĕ мĕн тума килнĕ-ши кунта? Сасси пурне те хупласа хучĕ:

— Охо-хо, пирĕн Парнас çитрĕ. Салам, сăвăç! Пурте шăпăрт! Шăпланăр теççĕ сире! Итлĕр, Парнас Илюшĕ сăвă вулать!

Илюш, ăна курнипе тарăхнăскер, шăлне çыртрĕ. Çав вăхăтрах унăн йĕрĕнчĕк сăн-питлĕ ӳсĕр Молякова янклаттарса ярса стена çумне лапчăтас килчĕ. Пурте хăлхассне чанк тăратрĕç. Самантпа усă курса, Илюш сăвăласа хуравларĕ:

---

* Машинăпа трактор паркĕ.

Çĕлене хăть кунĕн-çĕрĕн сĕтпе тăрантар,
Наркăмăшĕ унăн пурпĕрех чакмасть.

Пӳлĕм кулăпа тулчĕ. Кĕве Кĕпитунĕ ним калама аптăраса Иосиф Иванча тĕртсе илчĕ.

— Поэт поэма шăрçаламан тет. Çавăнпа Пашков лекци вуласа парать.

Иосиф Иванч йăштах тӳрленчĕ, ура çине туясăрах эхлетсе тăчĕ, сылтăм аллине çĕклерĕ те хĕçпе каснă пек тарăхса вашлаттарчĕ:

— Итле-ха эс, Кĕве! Çынран куласшăн та-ха эсĕ, каласа пар-ха: мĕн-ши вăл Парнас? Мĕнпе пуçса çиеççĕ ăна? Çиччас экзамен тыттаратпăр пуçтах автана. Кала эппин, Кĕве!

Кĕпитун кĕтесре йăшаланкаласа ларчĕ-ларчĕ те тутине тăсса мăкăртатрĕ:

— Парнас-и? Поэтсене çапла калаççĕ. Пегас çине утланса Парнас çине улăхать теççĕ. Илтмен-им? Ха, мана вĕрентесшĕн-ха тата. Эп, мĕн, техникум пĕтернĕ, служащи пулнă çын, санашкал кĕнеке-хаçат ăшĕнче çăрăлман. Ха, неуч вырăнне хурать мана Пашков.

— Пегасĕ ăçтан тухнăскер? — уйрăлмарĕ Иосиф Иванч.

— Турă çуратнăскер, — тарăхса тавăрчĕ лешĕ.

— Кала, кала, Парнаспа Пегас çинчен кала, — çинеçине ыйтрĕ ватă çын.

— Кун чухлĕ калана, çитет. Урăх мĕн кирлĕ тата сире? Эсир, мĕн, служащисем-им? Çавах мар-и? Пурпĕрех ăнланмастăр.

Пашков пушшех хĕрсе кайрĕ.

— Эх, Кĕве!.. Çĕр çинче çăрăлакансене ухмах вырăннех хуратăн пуль ĕнтĕ. Ху тăнсăр эс. Тăрпалтай. Пĕлетĕн-и, пире мĕн аталантарать, юрлаттарать? Çĕр. Вăл çĕр — этемĕн. Этем унпа тăранса пурăнать. Этем ăна хӳтĕлет: кăмăлпа та, ĕçпе те, искусствăпа та. Илемлĕ, хитре вăл пирĕн çĕр. Унпа çăрăлма та кăмăллă. Эсĕ вара... Сан ун çинче утса çӳреме те намăс. Парнассем çинчен вара санран лайăхрах пĕлетпĕр.

— Мĕн пустуй павран унпа, Иосиф Иванч? Пуçла-ха юмахна, хамăн та итлес килет. Тахçан вуланă пекчĕ те. Историрен-ха вăл, Греци... — Малаш Аркашĕ çамкине сăтăрса илчĕ.

— Юрĕ, итлĕр апла пулсан...

Юратать Пашков калаçма, çынна ăнлантарма, ĕнентерме пĕлет. Ахальтен мар пĕр вăхăт ачасене вĕрентнĕ. Хăй мĕн те пулин интереслĕ япала çинчен вуланине е илтнине юлташĕсене пĕлтермесĕр чунĕ чăтмасть. Акă халĕ те, Кĕве Кĕпитунне сăмахпа касса татнă хыççăн, васкамасăр ăнлантарма пуçларĕ:

— Парнас вăл — Грецири çӳллĕ ту. Авалхи грексем ĕненнĕ тăрăх, унта Аполлон ятлă турă пурăннă пулать. Вăл Хĕвел турри. Унăн ылтăн пайăркисем тăшмансене ухă йĕппи тирнĕ пек лектерсе çунтарнă. Гомер ĕмĕрĕнче Аполлон пуянсен турри пулса тăнă. Майĕпен Аполлон тĕнĕ Грецирен Рима куçнă. Август император ăна хăйĕн пуçлăхĕ вырăнне хунă, ун ячĕпе Римра храм тутарнă, вăйăсем ирттерме пуçланă. Аполлон лира ятлă музыка инструменчĕпе ăста каланă. Ăна мухтаса тунă çавнашкал статуя та сыхланса юлнă. Лира поэтсен символĕ, урăхла каласан, хавхалану палли пулса тăнă.

Иосиф Иванович самантлăха калаçма чарăннипе усă курса Илюш хăйĕнчен хушса хучĕ:

— Лира ĕнтĕ вăл, мĕнле калас, сисĕм-туйăм саманчĕ, эппин. Лирика, лиризм йăлтах кăмăл сисĕм-туйăмĕ, çĕкленӳллĕ шухăш-туйăм. Çавăн чухне çуралать те ăшра сăвă йĕрки.

— Епле чаплăскер пурăннă хăватлă Парнас çинче, э? — терĕ малалла Пашков. — Халĕ те пур вăл ту — тинĕс шайĕнчен икĕ çухрăм çӳллĕшĕнче. Авă ăçта вăл лира тени. Çавăнпа унта вĕçмешкĕн, поэзи тӳпемне çитмешкĕн, çунатлă урхамах кирлĕ. Урхамахĕ Пегас ятлă. Грексен авалхи асамлă ăйăрĕ. Пегас Зевса, чи аслă турра, ту çине вĕçсе çиçĕм тытса пама пулăшнă. Пегаса каярахпа хисеплесе çăлтăрсен ушкăнне кĕртнĕ. Паян кунччченех çунаççĕ Пегас ушкăнĕнчи çăлтăрсем.

— Эс ху курнă-и вĕсене? — пак персе ячĕ Кĕве Кĕпитунĕ.

— Курнă. Çав çăлтăрсен çутипе хавхаланса-çунатланса сăвă çыратпăр, картинăсем ӳкеретпĕр, аккордеон калатпăр Илюшпа иксĕмĕр. Санашкал пуçа пылчăк ăшне те çĕпреллĕ сăра пичкине чиксе пурăнмастпăр.

Кулă айне пулнă Кĕпитун тинех шăпланчĕ. Çынсем хаваслансах итлерĕç.

— Александри поэчĕсем Пегаса сăвăçсен урхамахĕ вырăнне хума пуçланă. Ун ячĕпе пĕтĕм хавхаланулăх туйăмне çыхăнтарнă. Тĕнчери мĕн чухлĕ сăвăç Пегас çине утланса Парнас тăвĕн тӳпине вĕçсе çитнĕ пуль. Пирĕн Илюш Малашов та утланнă ун çине, курăпăр, ак кĕçех пăхăнтарĕ ăна, вĕçĕ унпа çӳлелле, çитĕ çитмелли çĕре. Шанчăкĕ пур. Акă итлер-ха паян райхаçатра пичетленнĕ сăввине.

Пит кансĕр пулчĕ манăн пурнăç:
Хут вĕренме, çынна тухма.
Анчах тӳп-тӳрĕ пытăм, пăрнăç
Çулпа ямарăм эп хама.

Пашков кĕтеселле хаяррăн пăхса илчĕ те:

— Ӑнлантăн-и халь Парнаспа Пегас мĕнне? — терĕ.

Кĕве Кĕпитунĕ хăй ăссĕн тем мăкăл-мăкăл мăкăртатса алăка шалтлаттарса тухса кайрĕ.

— Илюш, сан сăввусем лайăх. Венера вуласа парать пире вĕсене. Нумайрах çыр. Санпа эпир, хамăр ял поэчĕпе, тивĕçлипех мухтанма пултаратпăр. Мĕнлеччĕ-ха унта? — аса илчĕ Иосиф Иванович. — «Савнă çĕрĕм, улăх та вăрманăм...»

Илюш ура çине тăрсах хумханса вуларĕ:

Хумлă-хумлă анлă уй-хирсем,
Ма сире эп пĕчĕкрен юратрăм,
Ма çунать-ши сирĕншĕн чĕре?

— Хамăр сăвă ку. Хамăр юрă, — çурăмĕнчен лăпкарĕ ăна Пашков. — Итле-итле хавхаланса ĕçлер.

— Хамран та «Çветтуй Мĕтри» тесе ихĕреççĕ те, «Парнас» усал сăмах пуль  тенĕччĕ эп, — пӳртрен тухсан калаçса пычĕ Караваев. — Ырă сăмахах-иç. «Малашран» янравлăрах та илтĕнет. Ку хăть мана та савăнтарчĕ. Хамăр хушăра сăвăç пурри те ырă. Пуян иккен пирĕн халăх. Эс те сăмах ăстиех.

— А эс мĕн шутланă? Пуçа ăна кашнине уйрăммăн лартса панă, пĕрешкел калăпламан, — чеен кулса илчĕ юлташĕнчен Пашков.

## 11

Укахви вите пуçĕнчи пӳлĕме кĕрсе хăма сак çине ларчĕ те аллисене чĕрçи çине хурса шухăша путрĕ. Çамрăклăх аса килчĕ. Машук ятлă тантăшĕпе путекле сиккелесе çӳренĕ

вăхăтра ăна-кăна туйманччĕ-ха вăл. Хĕр пĕвне çитерехпе тин Машук тавра каччăсем пыл хурчĕ пек явăннинчен тĕлĕне пуçларĕ. Унăн вара вăйă картинчен тăр пĕчченех таврăнма тивет. Киле çитсен тĕкĕр умĕнче çаврăна-çаврăна тăнран кайрĕ. Пӳ-сипе яштака пулин те, хитрелĕхпе Турă пӳрмен ăна. Хур çăмарти евĕр тăрăхларах тухса тăракан пит çăмартисем, сарлака тăрăллă лапчăкрах сăмса, хулăн тута хĕррисем, симĕс куçсем.

Куляннипе вăрттăн йĕрсе те пăхрĕ, явкаланчăк чипер тантăшне кĕвĕçрĕ те...

Амăшĕ çакна сисрĕ пулас, ăшшăн лăплантарса каларĕ:

— Ан кулян, хĕрĕм. Кашни çын вăл хăй çĕр çинче пурăннипе хитре. Илемпе мар пулсан ĕçӳпе, кăмăлупа ырă ята тивĕçлĕ пул.

— Ах, аннем, калама кăна çăмăл. Эсĕ ав мĕнле чипер. Куçусем çĕмĕрт пек хуп-хура. Питӳ вăр çавракa. Кĕлеткӳ те, урусем те пăхма мĕне тăраççĕ, — амăшĕн кăкăрĕ çине пуçне хурса пăшăлтатрĕ Укахви.

Амăшĕ пуçĕнчен ачашласа йăпатрĕ:

— Çӳçӳ те аçунни пекех çемçе, çамку та аçунни пекех сарлака, кĕлеткӳ те унăнни пекех. Йăлтах аçуна хывнă, пурнăçра та унран ӳксе юлмăн-ха, Каравай йăхне намăс кăтартас çук.

Лăпланнă Укахви вара тек хуйхăрма шутламарĕ. Экзаменсем тытнă кун, каçалапа урама тухсан, нихçанхинчен хаваслăрах юрласа ташларĕ. Машук хыççăн каччăсем чупнăшăн тĕлĕнми пулчĕ. Амăшĕ каланине аса илчĕ: «Тиллĕн тирĕ хăйĕншĕнех тăшман пулнă тет, хĕр хитрелĕхĕ те тепĕр чухне çавнашкал пулса тухать».

Укахви фермăна чăх пăхма кĕчĕ, Машук правление шут ĕçне вырнаçрĕ. Кĕçех пĕр вĕçкĕн киномеханика качча тухрĕ те телейне çеç кураймарĕ, вăрман чечекĕ пекех хăвăрт шанчĕ. Типрĕ. Ĕçекен упăшка çамрăк арăма пĕчĕк ачипе тăлăха хăварчĕ. Янгорчин сĕннипе Укахви техникума кайса кĕчĕ, вĕренсе тухсан ферма заведующийĕ пулчĕ. Анчах... нумайлăха мар. Ун тĕллĕн пуç çине пĕр вĕре çĕлен вĕçсе анчĕ.

Хурăнсурти Моляковсен Кĕпитунĕ пулчĕ уншăн çав ылханлă çĕлен. Кĕве йăхĕ таврара мĕн авалтанпах усалпа паллă пулнă. Çĕнĕ пурнăçчен вĕсем Сунарта шыв арманĕ-

сем тытнӑ. Пуян Кӗвесем патӗнче Укахвин мӑн аслашшӗ Васли те тарҫӑра тар юхтарнӑ. Совет влаҫӗ ҫулӗсенче Кӗвесене кулак тесе айӑпларӗҫ. Кайран, чылай вӑхӑт иртсен, Ҫӗпӗртен ачисем яла таврӑнчӗҫ. Финанс техникумӗ пӗтернӗ Кӗпитун пӗр хушӑ районта ӗҫлерӗ. Шукӑль тумланатчӗ. Чӗлхи ӗнтӗ, ай-яй, ним мар ҫынна виҫӗ пуспа сутӑн илет. Хӗр вӑл айвантарах ҫав, ҫуллӑ сӑмаха тутлӑ ҫӑмах вырӑнне хурать. Хурӑнсур клубӗнче паллашнӑ хыҫҫӑнах Укахви ӑна ытараймарӗ, ун майлӑ ҫаврӑнса кайрӗ.

Пракухпа Варвари инке хӑйсен пӗртен-пӗр хӗрне Кӗве Кӗпитунне качча пама хирӗҫчӗ. Аслашшӗ те пӳрнипе юнасах асӑрхаттарчӗ: «Тем, йӑнӑшатӑн пек туйӑнать, мӑнукӑм. Ытла ҫынна ҫиме юратакан йӑх. Шутсӑр лайӑх пӗлетӗп эпӗ вӗсене. Телей пуласса шанмастӑп. Туяп эп, ват ҫын. Тен, тӑхтатӑн качча тухма?»

Ҫынна итлет-и хӗр ун пек чухне? Кам ҫӑварлӑхлама пултартӑр-ха яшлӑх хӗрӳлӗхне? Качча кайма хатӗрленнӗ хӗре тытса чариччен ҫӑвакан ҫумӑра чарса лартма ҫӑмӑлрах тет. Юрату ултавӗн сывлӑшӗпе антӑхса кайнӑ Укахви те вӑрттӑн качча тухрӗ. Упӑшкин икӗ питлӗхне майӗпен туйса пыма пуҫласан тин вӑл хӑй мӗн тери йӑнӑшнине ӑнланчӗ. Ача ҫуралсан пӗр хушӑ чирлесе выртрӗ. Пульницаран тухсан ӑна тепӗр хура хыпар ҫапса хуҫрӗ. Кӗпитун ун тантӑшӗ патне ҫӳреме пуҫланӑ иккен. Машук хӑй те пытармарӗ. Ӗҫсе ҫӳрекен упӑшки уншӑн арҫын ячӗ ҫеҫмӗн. Кӗпитуна кӑмӑллать. Ҫакӑн хыҫҫӑн Укахви тантӑшӗнчен кӑна мар, упӑшкинчен те сивӗнчӗ. Ҫемье арканчӗ. Ывӑлӗ, Миша, шкула каятчӗ ӗнтӗ. Укахви ашшӗ килне каялла таврӑнма шутламарӗ. Нуша урапи ҫине кил-йыш хирӗҫленине пӑхмасӑр хӑпарса ларчӗ-ҫке. Намӑс. Колхоз вӑл вӑхӑталла пурӑнмалли ҫуртсем лартма тытӑннӑччӗ. Янгорчин пӗр хваттерне Укахвипе ачине партарчӗ. Тӑлӑх арӑма тӑлӑха хӑвармарӗҫ. Ҫавӑнтанпах икӗ ял хушшинчи Ҫӗн урамра пурӑнаҫҫӗ.

Кӗве Кӗпитунӗ те, Каравай Укахвийӗ те урӑх ҫемье йӗркелемерӗҫ. Кӗпитун, райфора хирӗҫсе-вӑрҫса пӗтнӗ хыҫҫӑн ӗҫсӗр тӑрса юлчӗ. Ялта ӑна колхоза йышӑнчӗҫ, правленире ӗҫ тупса пачӗҫ. Ҫук ҫав, унта та пӗрмай тем чакаланчӗ. Ун шучӗпе, председательпе бухгалтер колхоза ҫаратаҫҫӗ, хӑйсем ҫеҫ пуяҫҫӗ. Ҫынра нихҫан та ыррине ку-

расшăн мар, ялан ăна çурăм хыçĕнче таптасшăн. Кĕç Шупашкара, Мускава пуçлăхсене тем тĕрлĕ хурласа-тиркесе çырнă ятсăр çăхавсем вĕçе пуçларĕç. Пĕлчĕç усалăн аллине. Правленирен тухса ӳксен Кĕве пушшех те хаярланчĕ. Сирпĕтет те сирпĕтет таса çынсем çине наркăмăш. Аптăрарĕç ĕнтĕ усалпа.

Укахви тĕлĕнет: мĕн тупнă-ши Машук ун çумĕнче? Упăшки виличченех вăл хăй çумне туртатчĕ те, арçын кирлĕрен-ши? Уншăнах çав икĕ пите, путсĕре юнашар лартмалла-ши?

«Эх, Машук, Машук, хитрелĕхӳ сан пустуях сая кайрĕ, манран тем пек чиперкке пулсан та пурпĕрех телей кураймарăн. Ман хуть сăнăм-пуçăм та чаплах пулман-ха, пĕччен пурăнма Турриех çырнă пуль. Эс ĕнтĕ арçынпах пурăнатăн. Пурăн. Мана кирлĕ мар унашкал вĕре çĕлен. Анчах йĕркеллех мар-ха санăн. Чирлетĕн. Ĕçкĕпе ашкăнатăн. Çавăнпа сăну ват карчăкăнни пек халь. Хамăн сăнпитпе танлаштармастăпах. Ытла хуралса, тĕксĕмленсе лартăн. Кĕпитун та кĕçех пăрахать акă. Вара эсĕ никама кирлĕ мар сĕтĕрĕнчĕк пулса юлатăн. Юл, юл. Ылханатăп сана. Эс хăвăн хитрӳпе яла тĕлĕнтернĕ вăхăтра та эпĕ хам илемсĕрришĕн пайтах макăрнă. Кайран та саншăнах куççуль тăкмалла пулчĕ. Халĕ йĕместĕп. Ăнланатăп, пĕлетĕп, телей тенине эсĕ те, Кĕпитун та тупайман. Эс колхозра пилĕк авса ĕçлемерĕн, ĕçпе ятлă пулаймарăн, урăххипе кăна... Кĕпитун усалпа санран та ытларах чапа тухрĕ. Эпĕ халь, пĕччен пулсан та, хама хам сирĕнтен темиçе хут телейлĕрех тесе шутлатăп. Ман юратнă ĕç пур, юратнă ĕçре савăнăç пур. Эпĕ пурпĕрех хитререх халь...»

Çак шухăшпа ăшра калаçса лараканскер, вăл асăрхаман та ферма слесарĕ Малаш Аркашĕ витене килсе кĕнине.

— Эп хам пуринчен те малтан çитрĕм пуль тесе... Манран маларах вăранакан кайăк та пур-иç? Мĕн, пĕччен ыйхă килмест-им?

Ура çине йывăррăн çĕкленнĕ хĕрарăм Аркашăн кушак аçинни пек çуталса кайнă куçĕнчен шăтарасла пăхрĕ, хăйне шухăш тĕнчинчен пăрса янăшăн ăна вăрçса тăкас килчĕ унăн, çиллине ирттерсе ячĕ те лăпкăн тавăрчĕ:

— Ахаль чухне кĕтсе те кĕтсе илейместĕн сана...

— Мĕн, эсĕ вара чăннипех кĕтетĕн-и мана? — сарлака тутине пушшех те сарса пăрахса ытарлăн кулса ячĕ Аркаш. — Юрать-и, паян, мĕн, каçпа пырас-и калаçкаласа ларма?

— Каçпа мар, ир кĕтетĕп эпĕ сана, ухмах! — ахăлтатса кулчĕ Укахви.

Малаш Аркашĕ хăмăр куçĕпе хĕрарăма нихçан курман çынна сăнанă евĕр тĕрĕслесе тухрĕ, аллине ун патнелле тăсрĕ, тытма хăяймарĕ, пуçне чалăштарса çӳлелле пăхрĕ те:

— Пĕлетĕн-и эс, Укахви, çӳл тӳпере миçе çăлтăрне? — терĕ.

— Эп хăпарса шутламан. Эс, мĕн, çĕрĕпех çăлтăр сурăним? Çавăнпа çывăрмасăрах персе çитнĕ пуль-çке.

— Эс ан кул. Шутлакансем пирĕнсĕрех пур. Астрономсем çăлтăрсене сакăр вун сакăр ушкăна пайланă. Çĕрле пĕлĕтре ахаль куçпа икĕ пин çурă çăлтăр курма пулать тет.

— Вĕсен ĕçĕ çав. Пирĕн хамăрăн ĕç. Кала-ха, мĕн тума кирлĕ пулчĕ халь сана кунта çăлтăр?

— Хă, мĕн тума... Выляма... Çăлтăрсемпе выляççĕ вĕт. Хă, мĕн тума тет. Тытма... Çăлтăр тытма... — Çак сăмахсемпе Малаш Аркашĕ кăвак тĕслĕ халатне хывса пăтана çакма пуçланă Укахвие пилĕкрен ячĕ илчĕ.

Укахви вăйлă кĕлеткипе пĕррех туртăнчĕ те вăшт çеç çаврăнса Аркаша тĕртсе ячĕ. Малаш кĕтесри улăм купи çине чаштăртатса лаплатрĕ.

— Çăлтăр тытасшăн-ха апла? — хĕрелнĕ питне ывăç тупанĕпе шăлчĕ Укахви. — Арăмун саппунĕпе витĕнсе çӳлелле пăх. Унта сан валли яланах çăлтăр пур. Тытма та пултаран, выляма та пултаран унпа. Ют тĕнче тӳпине ан кармаш.

Малаш Аркашĕ упаленсе ура çине тăчĕ те пиншакĕ çумне çыпçăннă хылчăксемпе улăм пĕрчисене шăлкаласа тасатрĕ, намăс курнăшăн вăтанчĕ пулас, калаçăва урăх еннелле пăрчĕ:

— Пĕлетĕн-и паян эп мĕншĕн ир килнине?

— Пĕлместĕп! Пĕлесшĕн те мар.

— Пĕлес пулать, Укахви.

— Кала, эппин, пит кирлех пулсан.

— Виçĕм кун партпухура эсĕ мана та, Андреева та тĕптĕрĕс ятларăн.

— Ятламан эпĕ, критикленĕ çеç. Сире, ыр çынсене, ма ятлас. Малашне те кунашкалах çăрăлсан вăрçасси те пулĕ, — кăмăлсăр çуталса илчĕç Укахви куçĕсем.

— Эс пухура хытă ăшалантарнине аса илсе вăранса кайрăм, ваçка. Сиксе тăтăм та карчăк çинчен мансах кунта чупса килтĕм.

— Унпа-çке эсĕ çăлтăршăн антăхан. Сик-ха апла пĕлĕтелле, тен, тытăн пĕрне.

— Халь ĕнтĕ паянтан пуçласа кашни ир улттăра çакăнта пулатăп. Кнопкăна пусатăп та транспортер кĕрлеме те пуçлать. Тислĕкне хурса çеç ĕлкĕр. Тракторĕ çук-ха. Ăçташи тракторисчĕ? Ĕнер каларĕ-ха председатель: тислĕке пурин те пĕр харăс тасатма тытăнмалла терĕ.

Сăмах çинех витене Укахви ывăлĕ Миша çитсе кĕчĕ, тӳрех ыйтрĕ:

— Хăçан тислĕк кăларма тытăнатпăр?

— Халех, халех, ывăлăм, — хыпăнса ӳкрĕ амăшĕ. — Кайса пус-ха кнопка çине, Аркаш!

Миша сенĕк йăтса амăшĕ хыççăн утрĕ.

— Ирхи апат çинĕ-и эсĕ? — ыйтрĕ амăшĕ.

— Çинĕ, — суйрĕ ывăлĕ.

— Ма тĕрĕссине каламастăн? — каялла çаврăнса чарчĕ ăна Укахви. — Пĕлетĕп эпĕ сана. Суйма ан вĕрен. Асту, суя çулĕ яланах шуçланкă...

— Çимен, анне, — пуçне чикрĕ ывăлĕ.

— Апла пулсан ме, çырт кăшт та пулин, — çапла каласа вăл ачине саппун кĕсйинчен çăкăрпа сахăр кăларса пачĕ.

— Эс ху та çимен вĕт. Киле те таврăнман.

— Тыт, тыт, маншăн ан кулян. Эпĕ кĕçех киле каяп. Сан кунĕпех ĕçлемелле.

Ывăлĕ çăкăр татăкне çурмаран хуçса сахăрне пайларĕ те амăшне тыттарчĕ.

— Тавтапуç, ывăлăм.

Сысна витинче алă ĕçĕ сахалланнипе Укахвисем кăмăллă. Елĕкхи пек апатне, шывне, тислĕкне алăпа йăтас çук. Çапах навус ыйтăвĕ юлашки çулсенче хытах çивĕчленчĕ. Ĕçлеттерме пĕлмесĕрех транспортерсене çĕмĕрсе пĕтерчĕç. Ирпе, чăн та, вĕсем выльăх каяшне транспортер валашкине купалаççĕ. Виçерен те ытларах пулса каfive

пуль çав. Малашов тăххăрта тин килетчĕ. Вăл ĕçлеттерме тытăнать механизма, тепĕр чухне йывăра пула ванать. Тракторне вăхăтра ярса паманни те чăрмав кӳрет. Тислĕк вите пуçне тулать. Çавăнпа Укахви коммунистсем умĕнче хытах каларĕ: «Фермăна уйрăм трактор кирлĕ. Унпа яланах пĕр çын ĕçлетĕр. Слесаре те иртерех вăратмалла. Çавăн чухне тин пирĕн ĕç чăрмавсăр малалла кайĕ. Тислĕк шĕвекĕ пухмалли шăтăксем тулса ларнă. Миçе çул ĕнтĕ вăл çырмана юхать? Хурăнсур ялне шăршлантарать! Аш-какай фабрики мар, «одеколон» фабрики темелле пирĕн фермăна».

Заведующине выльăх-чĕрлĕх цехне ертсе пыма куçарнăччĕ те, Юрий Ильич Укахвие ун вырăнне лартасшăн. Шухăшлакаланă хыççăн председателе хĕрарăм пат татсах: «Тислĕк тасатса памасăр килĕшместĕп», — терĕ.

Витери тислĕке трактор урапи çине тиесе пĕтернĕ тĕле фермăна Андреевпа Ванюшин пычĕç. Председатель каллех çав ыйтăвах хускатрĕ:

— Мĕн шухăш тытрăн, Укахви акка? Заведующи çук вĕт.

— Турткаланса тăма юрамасть сан, коммунистăн. Пурте шанатпăр пулсан йышăнмаллах фермăна, — хушса хучĕ парторг.

Караваева ура айне пулнă тислĕк муклашкине атă вĕçĕпе тĕртсе сирчĕ те:

— Юрĕ, килĕшетĕп, — терĕ хăюллăн. — Анчах тӳрех пулăшу кирлĕ пулать. Транспортерсемпе йĕрке тăвасчĕ, картишĕнчи тислĕк сăрчĕсене тасатасчĕ, яла шăршлантарма пăрахасчĕ. Кама кĕтсе ларатпăр?

Ку ыйтăва çывăх вăхăтрах правленире пăхса тухма калаçса татăлчĕç.

## 12

Укахви ĕçрен нихçан та халатпа таврăнман, ĕçе те халатпа кайман. Ферма шăршине лерех хăварма тăрăшнă. Тата пĕлтĕр çăвăнса тасалмалли мунча-душ тунă хыççăн таса çӳремесен намăс та. Ял хушшине тухнă чухне йĕркеллĕ тумтир тăхăнман çынсене ачаранах кăмăлламасть вăл. «Капла эсир хăвăра хисеплеместĕр», — ялан аса илтерет вăл пире тусанпа пылчăк ăшĕнче те пырать текенсене.

Тирпейлĕхе Укахви амăшĕнчен хăнăхнă. Ывăлне те вăл типтерлĕ пулма вĕрентет. Тен, çавăнпах-и Миша ытти арçын ачасенчен пĕчĕкренпех уйрăлса тăрать. Акă вăл ирех тăчĕ те кил хушшине тухса хул-çурăмне çемĕçтерчĕ, сивĕ шывпа çăвăнчĕ, шăлне тасатрĕ, хырăнчĕ, «Москва» одеколонпа сапăнчĕ, каçпа якатса хунă шăлаварĕпе таса кĕпине тăхăнчĕ, пушмакне крем сĕрчĕ. Унтан куç кĕски çине пăхса çӳçне турарĕ те турăхпа çăкăр çинĕ хыççăн ĕçе васкарĕ. Урамра тĕл пулакансем халĕ ăна уява кайма тухнă тесе шутламалла. Кайран, уйра тарланă хыççăн, машина-трактор паркне кĕрсе душра е мунчара çăвăнса тасалать, çав капăр тумпах киле таврăнать е тӳрех Культура керменне те кĕме пултарать.

Куншăн Укахви савăнать. Ывăлĕ ĕçе тухса кайнă хыççăн вăл хăй те фермăна васкарĕ. Çитсă кĕпе, хĕрлĕ кофта, шурă пушмак тăхăнчĕ, аллине сехет çыхрĕ. Ялти парикмахерскинче кăтралатнă çӳçне майларĕ, тĕкĕр умĕнче темиçе хут çаврăнчĕ, унтан тин урама тухрĕ.

Икĕ яла çыхăнтаракан Çĕн урам тротуарĕпе çынсем утма та пуçланă. Укахви тĕлне çитсен асфальтлă çулпа килекен «Волга» тăпах чарăнчĕ. Андреев алăка уçса сывлăх сунчĕ те ăна çапла каласа хăварчĕ:

— «Сельхозхими» ерçмест, техника пирки урăх çĕрте калаçса пăхатăп, ырантан тытăнатпăр ĕнтĕ тислĕк сăрчĕсене аркатма.

— Сăмах айне пулас марччĕ, — терĕ те Укахви йăл кулса тăвалла утрĕ.

Хуçасăр çĕрте йĕрке часах пĕтме пултарать çав. Ку вăхăтра апат турттаракансем ялан кухня умĕнче чĕлĕм паклаттарса юмах çапаканччĕ. Халĕ картишĕнче никам та курăнмарĕ. Тислĕк турттарма та трактор килмен.

Укахви витене кĕчĕ, çак кунсенче çăвăрланă амасене пăхса çӳрерĕ. Хаврунь та ав хуçине палласа кăмăллăн нăрăхлатса илчĕ, хăйне çурăмĕнчен лăпканипе канлĕн хускалкаларĕ. Çурисем пурте пĕр кĕтесре çывăрса выртаççĕ. Укахви халат тăхăнса ярса çĕрле пухăннă тислĕке транспортер ленти çине купалама пуçларĕ. Тасатса пĕтернĕ хыççăн сыснасене тепĕр хут пăхса çаврăнчĕ. Хаврунĕ хальхинче хăяккăн выртнă та, çурисем ăмăртса чĕчĕ ĕмеççĕ, пĕри çеç ĕмме çитменнипе нăйкăшкаласа илет. Ăна Уках-

ви пӳлӗме йӑтса кайса сӗт ӗҫтерчӗ, унтан сак ҫине сӗвенсе урисене тӑсса хучӗ, ҫурана икӗ пӗҫ хушшине хупса халатпа витрӗ. Кӗнеке вуласа ҫӗркаҫ сахал сывӑрнӑччӗ, сисмен те, вӑл ҫаплипех тӗлӗрсех кайнӑ.

Сысна ҫури чӗрнипе урасене чавтарнипе тата нӑриклетсе ҫухӑрса янипе шартах сиксе вӑранчӗ вӑл. Куҫне уҫса пӑхрӗ те хӑй умӗнче тӑракан шӑрт сухаллӑ Малаш Аркашне асӑрхарӗ. Тапса ярас тенӗччӗ те, ури ҫитмерӗ. Аркаш пӳрнине ӗмсе мӑкӑртататать:

— Ҫыртать тесе ахальтен каламаҫҫӗ иккен. Шӑллӑ, мур илесшӗ. Пӳрнерен юн кӑларчӗ, явӑл.

— Ара, кам хушнӑ сана аллуна унта яма? Ҫапла ҫав, шӑллӑ эпир, ҫыртатпӑр! — тулхӑрса илчӗ Укахви.

— Эп, мӗн, санпа киленсе тӑтӑм-тӑтӑм та... — пуҫне кӑтӑрт-кӑтӑрт хыҫрӗ Аркаш. — Халат айӗнчи чӗнтӗрлӗ кӗпӳне витсе ярас тесе алла тӑсрӑм ҫеҫ... Сысна ҫури пуҫӗ курӑнчӗ...

— Мӑшкӑллаттарам ак эп сана! — чалтах сиксе тӑчӗ Укахви. — Сухална хырасчӗ, шӑлна-ҫӑварна тасатасчӗ, аллуна ҫӑвасчӗ хӗрарӑм патне ҫывхариччен. Марш, халех тасалнӑ пул кунтан! Трактор килнӗ-и?

— Килнӗ.

— Мӗн, хур аҫи пек хуҫкаланса тӑран? Кай транспортерусем патне. Ак сенӗк илсен...

Аркаш пӳрнине ӗмсе пӳлӗмрен тухса кайма васкарӗ. Укахви сысна ҫурине ачашла-ачашла амӑшӗ ҫумне кайса ячӗ. Кӗҫ транспортер йывӑррӑн тапранчӗ. Кухня та ӗҫлесе кайрӗ пулас, пневмопроводран ирхи апат киле пуҫларӗ.

Фермӑри ӗҫсене майлаштаркаланӑ хыҫҫӑн Укахви Пашковсем патне кайрӗ. Иосиф Ивановичӑн арӑмне, Укҫине инкене, хӑйсем патне пырас пирки ӗнерех Венерӑран пӗлтернӗччӗ. Иккӗшне те вӗсене колхозри хӗрарӑмсен канашне суйланӑ. Укахви ҫав ушкӑна ертсе пырать.

Тырӑ вырнӑ вӑхӑтра колхозра такам валли те ӗҫ пур. Ялта халӗ пенсие тухнӑ хӗрарӑм чылай. Ирӗксӗрлеме юрамасть те-ха вӗсене, ҫапах та ӑнлантарса пӗр-пӗр ӗҫе хутшӑнтарма пулатех. Ытти ҫулсенче те ҫаплах тунӑччӗ: килсем тӑрӑх ҫӳресе кашнинпех калаҫнӑччӗ. Хӑш-пӗр пенсионеркӑсемпе пӗчӗк ачапа килте ларакан хӗрарӑмсем ӗҫкӗ енне сулӑнни Караваевӑна хытах пӑшӑрхантарать. Кун пир-

ки вăл пухусенче те, вырăнти радиопа та сахал мар тухса калаçать. Усси пурах.

Пашковсен тăпăл-тăпăл кил-çурчĕ шутсăр кăмăла каять Укахвие. Пӳртне вĕсем вунă çул каялла лартрĕç. Тăррине хĕç тимĕр витнĕ. Урама крыльца кăларнă. Пĕчĕк пахчара чие ешерет. Вырăсла хапхине кăвак сарă тĕспе сăрланă. Умĕнче тап-таса. Кил хушшийĕнче те çӳп-çап кураймăн. Кашни япалипе ĕç хатĕрĕ хăйсен вырăнĕнче. Крыльцапа çенĕк урайĕ ялан тап-таса, хăш вăхăтра сĕрсе-тасатса ĕлкĕреççĕ тулĕк. Ирĕксĕрех алăк умĕнче атă-пушмакна хыватăн.

Укахви чăлха вĕççĕн шалалла иртрĕ, алăка шаккарĕ. Ăна Укçине инке уçса кĕртрĕ, урине хывмалла марччĕ терĕ, капăр çи витти сарнă диван çине ларма сĕнчĕ. Диванĕ хыçĕнче чечеклĕ кавир çакăнса тăрать. Урайне палас сарнă. Тепĕр пӳлĕм алăкĕнчен эрешлĕ йывăç кравать курăнать. Ют патшалăхран килнĕ стенки ытла та хăй вырăнĕнче, ятарласа калăпласа тунă тейĕн. Тепĕр енчи кĕнеке шкапĕн çӳлĕкĕсем тăп-тулли. Кĕтесре, чӳрече çумĕнче, тĕрлĕ тĕслĕ кăтартакан телевизорпа магнитофон.

— Ачасем калаççĕ-ха: «Анне, эпир чисти хулари пекех пурăнатпăр, пурте пур, пӳрте вĕри шыв кĕмест те, туалет çук ĕнтĕ», — теççĕ. Вăл пӳртрех кирлĕ мар-ха пире. Сивĕ шывне, çăлран уçласа ăсмалла турĕç, кнопка çине пусатăн та... Сатту мунчи çав тери хӳхĕм пирĕн, — сăмах пуçарчĕ кил хуçи хĕрарăмĕ.

— Пурин те сирĕнни пек пулсан никам та каяс темĕ хулана, — хушса хучĕ Укахви.

— Мана асли чĕнет те Шупашкара... Эй, каяппи унта? Кунта ял сывлăшĕ хăй мĕне тăрать!

— Чăн сăмах, Укçине инке, хамăр яла та халĕ майĕпенех хула пурнăçĕ кĕрсе пырать. Кашнин килĕнчех темелле хӳхĕм сĕтел-пукан, музыка инструменчĕ, газĕ, телефонĕ, тĕрлĕ машина, уйран алпа уçлакан та сахал. Урамра çĕрле те çап-çутă. Культура керменне, лавккана тротуарпа кайса килетпĕр. Автобуспа хăть ăçта çити кай. Укçи те сахал лекмест. Хăшĕн-пĕрин кассăра тем илмелĕх те пур пуль...

— Пирĕн ку енĕпе мухтанмаллиех çук, — куляннă пекрех хаш сывларĕ кил хуçи. — Эпир пĕтерсех пыратпăр.

Йышлăн вĕт-ха. Тем те туянатпăр та. Çав мусăк япалисемех пилĕк пинлĕх те. Ара, ачисем юрра-кĕвве юратаççĕ те. Пĕрле пухăнса тĕрлĕ инструмент калама тытăнсан килтех концерт пулса каять. Хамăн та итлес килет.

Караваева вăрах лармарĕ, мĕн сăлтавпа килни çинчен каларĕ те, Укçине инке те васкасах тумланчĕ.

— Паян хамăр урампа тухсан çитет пулĕ. Ман хăмла патне каймалла-ха, — терĕ вăл крыльца картлашкинчен ансан.

Темиçе киле кĕрсе тухнă хыççăн вĕсем Машуксем патне те çитрĕç. Вăл выльăх-чĕрлĕх усрамасть, вĕрлĕкпе картланă кил хушшине курăк пусса илнĕ. Хăлтăр-халтăр пусма картлашкипе хăпарса алăка тĕртрĕç. Шалтан питĕрнĕ. Чӳрече хашаккинчен шаккасан шăв-шав илтĕнчĕ. Кĕç Кĕве Кĕпитунĕ сиксе тухрĕ те мухмăрла сассипе кăшкăрчĕ:

— Машук! Хăнасем килчĕç. Сик тĕп сакайне! Туртса кăлар мĕн пуррине!

Мунча пек пĕчĕк пӳрте кĕрсен кăмăла пăтратса сăмсана çĕрĕк сывлăш пырса çапрĕ. Урайĕнче мĕн кăна сапаланса выртмасть-ши? Вырăнне пуçтарман. Сĕтелĕ таса мар, унта пĕр кĕтӳ шăна явăнса çӳрет. Çӳçĕсене усса янă, лӳчĕркеннĕ сатин кĕпе тăхăннă Машук хура урисене хуçлатса сак çинче ларать. Сăнĕ пăхма та хăрушă. Куçĕ-пуçĕ алчăранă. Тути хĕррисем типсе кăвакарнă. Чĕлхи-çăварĕ аран çаврăнкалать. Вăл питне ывăçĕпе хупларĕ те ӳлесе йĕрсе ячĕ:

— Пĕтнĕ... çын эп. Ук... Укахви. Кĕп... питун сана та суйнă. Ман... на та. Пĕт-нĕ... Вил... лес кил... лет.

Вăл çапла макăрнă хушăра Укахви чӳрече çумĕнче çакăнса тăракан сăнӳкерчĕке сăнаса пăхрĕ. Астăвать вăл ăна хăçан ӳкерттернине. Вăтам шкул пĕтернĕ çул вĕсем Вăрнара кайнăччĕ. Çавăн чухне Машук тантăшне хистесех фотографие илсе кĕчĕ. Иккĕшĕ юнашар ларса сăн ӳкерттерчĕç. Акă вăл, паянхи пекех, сатин кĕпепе. Яштака кĕлетки çинче вăл ытла та çыпăçуллă курăнать. Хулăн çивĕт, кăшт чалăштарнă пуç. Чăп-чăмăр пит çăмартисем тулли...

Укахви ăçталла пăхнине асăрхарĕ те Машук урайне унпа юнашар анса тăчĕ, аллипе хăлаçланса тем калама пикенчĕ, анчах сăмахĕсем ăнланмалла тухмарĕç. Унтан вăл çавăнтах тӳшек çине лап кайса выртрĕ, каллех ӳлеме пуçларĕ.

Тулалла тухса кайнă Кĕве Кĕпитунĕ йĕп пек таçта

çухалчĕ. Чее те ĕнтĕ çав. Укахви ним сăмах та чĕнмерĕ. Укçине каяс умĕн çапла каласа хăварчĕ:

— Эс, Машук, каплах кун çути курмасăр ĕçсен çут тĕнчепе те сывпуллашăн. Намăс та мар-и сана, хĕрарăма?

Уçă сывлăшра кăкăр туллин сывласа илнĕ хыççăн тин Укахви калаçма пуçларĕ:

— Хĕрхенес килет ман ăна, Укçине инке. Пурнăç тăвайманрĕ, шеремет. Малтанхи упăшки кăмăлĕпе аванччĕ-ха, анчах çирĕплĕхĕ çитместчĕ. Хальхи еркĕнĕ... Аса та илес килмест çав путсĕре. Ман чуна та пайтах çинĕ вăл. Унран уйрăлнăранпа çĕнĕрен çуралнă пекех туятăп.

— Асăнар мар иртнине, — хулĕнчен тытрĕ ăна хĕрарăм. — Çамрăклăх йăнăшне кам кăна курман-ши? Ак çак сирĕн кину те, тепĕр арçын тĕлне пулнă пулсан, тен, урăхларах пурăнса каятчĕ. Кĕрсе тухар-ха, мĕнле унта вĕсем.

Антунĕ килте çук. Кĕве Кĕпитунĕ ăна васкаса çитсе таçта илсе кайма ĕлкĕрнĕ. Хĕрарăмсем темле шур шĕвек ĕçсе лараççĕ. Хĕрсех калаçма тиврĕ вĕсемпе.

— Ирĕксĕрлесе сыватсан çеç ĕнтĕ мĕскĕнсене, — терĕ урамра Укçине инке. — Çапах кашниех çын вĕт. Çемьеллĕ, ача-пăчаллă. Пулăшмаллах. Çăлса хăвармаллах вĕсене.

## 13

Çĕрĕпех лӳшкенĕ çумăр ир енне тин чарăнчĕ. Тӳпе карри майĕпен уçăлса пычĕ те, аслати сасси те тамалса шăпланчĕ. Кил хушшине тухнă Микулай куçне тӳрех Туçи рашчинчен улăхалла ураланнă асамат кĕперĕ курăнса кайрĕ. Тин çеç çĕкленекен хĕвел çутинче вăл акăш-макăш илемлĕн йăлтăртатса ялкăшать. Микулай çав самантрах Николай Дубовскойăн асамлă «Асамат кĕперне» аса илчĕ. Çав чаплă картинăра кимĕ çинчи пулăç çăра кăтра пĕлĕтсем хушшинчен йăлкăшса тухакан капăр пĕкĕ рехетлĕн шыв ĕçнине мĕнле сăнанине тĕлĕнмелле ăста ӳкерсе кăтартнă.

Çут çанталăкăн асамлă илемĕ Караваевăн кăмăл-туйăмне те çунатлантарса ячĕ, шухăшне çивĕчлетрĕ. Çинахван мучăшĕ тĕлĕкре каланă сăмахсем аса килчĕç. Манман, манма пултараймасть вĕсене шăллĕ. Акă паянах çитет те вăл

Шупашкара, «Çĕрпелсем Çĕнтерӳ уявĕнче» картинăна çĕнетет — асамат кĕперĕпе вăйлатать. Çĕнтерӳ кунĕ вăл — савăнăç ирĕ. Монумент хыçĕнчи масар çиййĕпе каrăннă асамат ĕмĕр-ĕмĕр йăлкăштăр, çынсен чунне çутатса илем кӳтĕр, чĕрĕлĕх туйăмĕ парса тăтăр. Тинех сăнар çуралчĕ.

Кашта çинчен пĕрин хыççăн тепри вĕçе-вĕçе аннă чăхсем кӳлленчĕксенчен васкамасăр шыв ĕçсе тăраççĕ. Вĕсен варринчи Горнист çунаттисене çат та çат çапса мăнаçлăн авăтса ячĕ. Ула ĕне муклатни, сурăхсем мелетни, витере сысна нăриклетни илтĕнсе кайрĕ. Ырă ир пурне те вăратрĕ. Çĕнĕ кун пуçланчĕ.

Ирхи апат çинĕ хыççăнах Микулай çула пуçтарăнчĕ. Ялпа хăпарма пылчăклă тесе вăл анкарти хыçĕпе утрĕ, паркри хăйсен паллă вырăнне çитрĕ. Хурăнсем айĕнчи йĕпе тенкел. Çил вĕрнипе çулçăсем çумăр пĕрчисенчен тасалаççĕ. Пĕр йывăçĕ айне сарлака çулçăллă шăнкăрав курăкĕ тапса тухнă. Караваев пĕшкĕнсе пĕр çеçкине татса илчĕ.

— Микулай! — илтĕнчĕ çав самантра чуна çывăх çепĕç сасă.

Караваев шартах сиксе вăрт! çаврăнчĕ те хавассăн кăшкăрса ячĕ:

— Венера?! Эсĕ-çке ку?! Ăçтан вĕçсе антăн, чунăм?

— Турă мучи аслати урапи çинчен антарса хăварчĕ, халĕ йĕтем çине васкатăп. Кунтан тӳрĕрех-çке. Çĕркаç кĕтнĕччĕ эпĕ сана...

Микулай чечеке хĕре тыттарчĕ.

— Тархасшăн.

Венера ирхи хĕвелпе сарăлма пуçланă чечеке шăршласа пăхрĕ те тутине тăсрĕ, хыççăнах тунсăхлăн пĕр çаврăм юрларĕ:

— Шăнкрав курăкĕ парне пултăр-и, шăнкрав курăкĕ — уйрăлу. Уйрăлу парнелетĕн-ха апла мана. Тавтапуç.

— Эс ан кулян, ăна пире валли çырман. Пирĕн хамăрăн юрă пур, итле: «Иккĕн лартнă капăр улмуççи пулĕ ĕмĕрех чĕре уççи».

— Эх, мĕн тумалла-ши ку аслатиллĕ çумăра? — рашча енчи хура пĕлĕт татăкĕсем еннелле кӳренчĕклĕн пăхрĕ хĕр.

— Турриех çырман ĕнтĕ иксĕмĕре çĕркаç çакăнта савăнма, — шӳтлерĕ Караваев. — Çут çанталăк пире çеç мар,

такама та кӳрентерчӗ пуль. Унӑн хӑйӗн саккунӗсем ҫав, пирӗнтен килмеҫҫӗ.

— Эх, ку Турӑ, — Венера та кулса ячӗ. — Ӑҫта-ши вӑл? Хӑш ҫӳлӗкӗнче-ши унӑн пӳлӗх кӗнеки? Мӗн ҫырнӑ-ши пирӗн пирки унта? Вуласчӗ. Пӗлесчӗ... Итле-ха, эсӗ хулана кайма тухнӑ-и?

— Ара, ҫав. Тӗлпулӑвӗ те, уйрӑлӑвӗ те ҫакӑнтах пулать ман.

— Тӗлпулу ҫеҫ пултӑрччӗ, Микулай мучи, — терӗ салхуллӑрах сасӑпа Венера. — Ман уйрӑлас килмест. Уйрӑлу вырӑнне ӑсату пултӑр. Ӑсату ҫеҫ. Ӑсату... — Хӗр шӑнкӑрав курӑкне аяккалла ывӑтса ячӗ те Караваева мӑйӗнчен ыталаса тутинченех чуптуса илчӗ, унтан вӑрт! вӗҫерӗнсе ҫерем тӑрӑх чупса кайрӗ.

— Чипер юл, Венера! Эпӗ кӗҫех килетӗп!

Хӗр ун еннелле ҫаврӑнса алӑ сулчӗ те кӗҫех хурӑнсем хушшинче курӑнми пулчӗ.

Микулай сукмак ҫине тухрӗ. Тунсӑхпа савӑнӑҫ пӗрлешсе пӑтранчӗҫ. Костин килни курӑнчӗ. Ванька хӑрах урипе уксахласа кӗлеткине йӑкӑлт-йӑкӑлт сиктерсе пырать. Вӑл алӑ ҫӗклесе юлташне аякранах сывлӑх сунчӗ, ун патне ҫитсен ӑна кермене кӗрсе тухма чӗнчӗ:

— Сана эпӗ ҫӗн юрӑ итлеттерсе пӑхтарасшӑн. Вӑрансанах ҫырса хутӑм.

— Тӗлӗкре ҫуралмарӗ пуль те? Генисен вӗсен ҫапла та пулакан. Шубертпа Мендельсон хӑйсен кӗввисене калanine Шуман тӗлӗкре илтсе выртнӑ тет.

— Ҫук, тӗлӗк хумӗ мар ку. Тахҫанах юхма пуҫланӑ вӑл ман пуҫра, темиҫе уйӑх канӑҫ памарӗ, тинех шӑранса тухрӗ. Акӑ мӗнле! — Костин икӗ аллипе сулласа, тутипе памплаттарса ӗнӗрлерӗ. — Сӑмахӗсене Парнас Илюшӗ ҫырма шантарчӗ. Юрӑҫи те пур.

— Кам-ха?

— Пӗр чиперкке хӗр. Вӑ-ӑн хӑвӑр тӗлелле ҫывхараканни.

Караваев ҫаврӑнса пӑхрӗ. Венера, чӑнах та, вӗсен анкартийӗ патне ҫитнӗ, улмуҫҫисем ҫине пӑхса тӑрать.

— Композиторӗ те, сӑвӑҫи те, юрӑҫи те ялтах иккен. Епле пуян халӑх, Ванька, э?

— Ҫапла, пуян ҫав эпир. Художникӗ те пур. Аякка тухса

кайнисене шута илсессĕн тата кам кăна çук-ши пирĕн?! Çак виçĕ ялта революциччен вăтам пĕлӳ илнĕ çын та пĕрре кăна пулнă. Паянхи кун аслă шкул пĕтернисемех нумай. Наука докторĕ, адмиралĕ, архитекторĕ, врачĕ...

— Çĕр ĕçченĕ! — хушса хучĕ Караваев. — Ĕмĕрĕпе çак çĕр çинче чаваланса тырă ӳстерекен, аш-пăш, сĕт-çу тăвакан çынсем пур пирĕн. Чăн-чăн паттăрсем вĕсем. Тĕлĕнетĕп эпĕ вĕсенчен. Пурăнаççĕ-пурăнаççĕ хавасланса ял лăпкăлăхĕнче, анчах хăйсем мĕн тери ырă ĕç тунине чăннипе туйса мăнаçланма чухлаймаççĕ. Çавăнпа ман колхозниксен сăнарне, вĕсен шалти вăрттăн туйăмĕсене витĕмлĕрех кăтартса парас килет. Çĕклесчĕ вĕсен паттăрлăхне. Чи çӳллĕ вырăна кăларса лартасчĕ. Тĕнчене кăтартса савăнтарасчĕ. Çав телейшĕн эпĕ, Ванька, хамăн чун-чĕрене пĕтĕмпех искусствăна патăм.

Костин хăйĕн юрри çинчен мансах юлташне итлерĕ.

— Нумай вăхăт шырарăм эпĕ пурнăçра хамăн йĕре, сăнарлă чĕлхене, меле, тĕп темăна. Малтантарах куç умне мĕн лекнине, çут çанталăк тĕсне, тĕнче юррине пир çине тӳрех ӳкерсе картинăна хăвăртрах вĕçлес килетчĕ. Васканипе, сăрăпа-тĕспе выляма пĕлменнипе тата пурнăç çине çиелтен пăхнипе ĕç ăнăçаймастчĕ, пултарулăх шыравĕнче пĕр çул, Шишкинăн «Ыраш» анине кĕрекен çулĕ, уçăлнă пекехчĕ. Ун тăрăх утса яла çитрĕм акă, çынсемпе тăтăшрах тĕл пулса калаçрăм, вĕсен ĕçне-хĕлне, хуйхи-суйхине çывăхарах туякан пултăм. Тĕнче илемне хастар та вăйлă çыннăн ăслă пуçĕ, çирĕп алли кăна тунине тинех ăнланмаллипе ăнлантăм. Ĕç темине унччен пĕр-пĕр ĕç тунине ӳкернипе кăтартса пама пикенеттĕм. Халĕ вара ăна этемĕн кăмăл-туйăмĕ урлă сăнлама тăрăшатăп. Кирлĕ шухăш ĕç вучахĕнчен шăранса тухать.

— Картинусене курава тăратсассăнах асăрханă эпĕ сан аллун уйрăмлăхне. Тарăн шухăшлă, çĕкленӳллĕ. Трактористсем, ĕне сăвакансем, сысна пăхакансем, уйра ĕçлекенсем, чăнах та, ĕçлĕн, мăнаçлăн курăнаççĕ. Характерĕсем пит уçăмлă. Кашнин ăшне кĕрсе тухнă пуль ку Микулай тетĕп вара тĕлĕнсе.

— Мухтанса кăтартрăм та ĕнтĕ, эсĕ те ырлатăн мана, — çӳçне аллипе шăлкаласа якатрĕ Караваев. — Портретсенче тупнă пек туйăнать-ха мана хама мĕн кирлине,

анчах тематикăллă картинăсенче... Кунта ой-ой-ой мĕн чухлĕ ĕçлемелле! Чăн та, «Чăваш юмахĕн чăнлăхĕпе» тертленнине аса илетĕп те... Çав тери йывăр хальхи паттăрсене пурнăç çемминче, кĕрешӳ вутĕнче ĕненмелле кăтартса пама.

— Кун пирки эсĕ каламанччĕ-çке мана. Ăна хăçан ӳкерме пуçларăн? — ыйтрĕ Костин.

— Чылай пулать ĕнтĕ, — алă сулчĕ Караваев. — Яла киçтĕк чиксе килнĕреннпех. Композицийĕ чиперех пек, çыннисен сăнарĕсем çеç уçăмлах мар. Пĕр пĕтĕм çыхăну çукрах. Туйăм вăйĕ е, искусство чĕлхипе каласан, экспресси тени çитеймест. Унта эпĕ Илюш Малашова та кĕртрĕм. Çавăн характерне лайăхрах пĕлсе асра хăварасшăнччĕ яла килнĕ пек чухне...

— Тупрăн-и-ха мĕн те пулин ыррине?

— Тупрăм, — тутине чăмăртарĕ Караваев. — Хама валли ăш çунтармăш.

— Хăлхана кĕнĕччĕ-ха кăштах.

— Пытăм-ха ĕнтĕ Илюш патне. Пĕрлех тапрантăмăр. Малтан чĕнмерĕ, трактор рульне йĕркеллех тытса пыратчĕ. Çырма хĕрне çитсен чарчĕ те: «Ну-ка, марш кунтан!» — терĕ. Итлерĕм. Малашов та ман хыççăнах çĕре сикрĕ. «Атя çерем çине», — сĕлтрĕ пуçĕпе. «Мĕн тума?» — ыйтрăм унран. «Вăй виçме!» — куç айĕн сиввĕн пăхрĕ. Килĕшрĕм. Пĕлетĕн эпĕ хăравçă маррине. Çыран хĕррине çитрĕмĕр кăна, ячĕ те илчĕ хайхискер мана пилĕкрен. Сисмерĕм те ун айне пулнине. Çырманалла йăвалансах анса кайрăмăр. Самаях тĕрмешрĕмĕр.

— Хăшĕ çĕнтерчĕ-ха? — кулать Ванька.

— Нихăшĕ те. Аяк пĕрчи халĕ те сурать. Ăш вăркать. Хăйĕннинчен чакакан ача мар курăнать. «Пурпĕр сана хăçан та пулин çĕнетĕпех», — тесе асăрхаттарчĕ.

— Кайран тракторĕ çине лартрĕ-и хăть?

— Лартрĕ. Ним пулман пекех ĕçлерĕмĕр. Вăт сана çыннăн чун хавалĕ. Сăнарлăх куçăмĕ. Кун хыççăн пушшех хастарлатса ӳкерме тивет ăна.

— Санăн та киçтĕкпе кашни сĕрмессеренех çĕнтерӳ пулмасть иккен, — терĕ Костин Культура керменĕнчи мăн зала уçнă май. — Эпĕ те акă çак юрăпа тăнран тухрăм темелле. Атя-ха, итлесе пăх эс ăна.

Ванька сцена çинчи рояль умне ларчĕ те, пӳрнисем кла-

вишсем тăрăх чупса кайрĕç. Пĕтĕм кĕлеткипе çĕкленӳллĕн чӳхенсе, паçăрхи пекех сăмахсăр «ăммăмлатса» кĕвĕ каларĕ вăл, унтан ыйтрĕ:

— Мĕнле пек, ял хăвачĕ, халăх хаваслăхĕ палăрать пек-и?

Музыкăна ытлах ăнланмасть Караваев, çапах та кĕвĕре чун çепĕçлĕхĕпе вăйĕ тапса тăнине туймасăр пултараймарĕ. Вара нумай хушă асаплана-асаплана ăсталанă хайлав чăннипех те çуралнă пулĕ тесех шухăшларĕ, çавăнпа пĕр пытармасăр, ним ӳстермесĕр хакларĕ ăна:

— Янăравлă, чун-чĕрене çĕклентерекен юрă çырнă эс, Ванька. Хĕрӳ туйăмлă. Сăмаххисем çеç лайăхрах пулччăр.

Кермене пĕрре кĕнĕ пек чух Караваев пĕчĕк залра та пулма шутларĕ. Хăйсем тума пуçланă ĕçсене вăл тимлĕн пăхса çаврăнчĕ. Сулахай енче фронтовиксен галерейи пулать. Ăна хирĕç стена çине ĕç ветеранĕсен сăнĕсене вырнаçтараççĕ. Вĕсене ӳкерсех пĕтермен-ха, кĕçех вĕçлемелле ĕнтĕ. Çапла колхозниксемпе çирĕплетнĕ ăмăрту килĕшĕвĕ вăхăтрах пурнăçланать.

— Итле-ха, Ванька, — тусĕ еннелле çаврăнса ыйтрĕ вăл, — вăрçă хыççăн пирĕн ялта миçе фронтовик вилнĕ?

Костин тӳрех хуравлаймасăр тăчĕ, ăшĕнче шутларĕ-шутларĕ те:

— Аллăсем пулать пуль, — терĕ.

— Вĕсен ячĕсем ниçта та çук. Сăнĕсене ӳкерсе çакăнта çаксан... — çӳлелле тĕллесе кăтартрĕ Караваев.

— Ку питĕ аван шухăш, — килĕшрĕ унпа Костин. — Палăк уçнă чухне никама та манмастпăр тесе тупа тунăччĕ. Тĕрĕс, вĕсем те çакăнта ыттисемпе юнашар пулмалла.

Шупашкар автобусĕ çитсе чарăнсан туссем алă тытса уйрăлчĕç.

## 14

Венера тĕлĕкпе аташса тата темле йывăр туйăм канăçсăрлантарнипе ыйхăран вăранса кайрĕ. Юрату утравĕнче Илюш мазутпа вараланнă хура аллине хурăнсем хыçĕнчен ун патнелле тăсать пек. Куçне уçсан та хăрани çийĕнчех иртмерĕ. Микулай аса килчĕ. Тантăшĕ калани хăлхара илтĕнчĕ: «Эх, ăнланса çитме çук асамлă, пытанчăк туйăм ытамне лекрĕм. Хăюллă, йĕркеллĕ качча юратсан чăтай-

марăм, чарăнаймарăм, вăл авланас тесе сăмах пуçарсанах — килĕшрĕм. Туй хыççăн халиччен курман-пĕлмен тĕнче алăкĕнчен кĕтĕм те тинех пурнăç канлĕхĕ ăçта пытаннине ăнлантăм».

Çав асамлă туйăмах ĕнтĕ унăн та. «Эх, çумра пулсанччĕ халь эс, Микулай, сан куçунтан тӳпери çăлтăр çине пăхнă пек пăхăттăм. Анне мана сан валли кăна çуратнă, саншăн çеç пăхса ӳстернĕ тейĕттĕм». Хĕр çӳхе утияла сирсе кăштах вырткаларĕ те урисене пĕрлештерсе урайне анса тăчĕ.

Хĕвел тухнă. Амăшĕ ĕне суса кĕчĕ, витрине урайне лартрĕ те икĕ чӳрече хушшинчи тĕкĕр умне пырса çӳçнепуçне майларĕ, хĕрĕ еннелле çаврăнса ăна çурăмĕнчен лăпкаса илчĕ:

— Хĕрхенес килет ман сана, Венера.

— Мĕншĕн, анне?

— Ват хĕр пулса кайрăн-çке. Сан çулунта эпĕ виçĕ ачаллă пулнă та... Хăçан качча тухса ӳстерĕн-ши пепкӳсене? Пурин те хăйĕн вăхăчĕ...

— Васкакан вакка чăмнă тет.

— Халăх сăмахĕ тĕрĕс те пулĕ. Тулĕк апла-капла ан пултăрччĕ-ха, хĕрĕм. Манăн эсĕ телейлĕ пулнине курас килет. Çак сăн-пуçпа, кĕлеткепе эсĕ такама та савăнтармалла.

— Такамĕ таçта-ха маншăн?

— Кала-ха, — вырăн майлама пуçланă хĕрĕ çине тепре пăхса илсе ыйтрĕ Укçине, — эсĕ Çĕрпелти Каравай Микулайне-и е ялти Малаш Аркашĕн ывăлне ытларах юрататăн?

Минтерсене кăпăшлатса пĕр-пĕрин çине майлаштарса хунă хыççăн Венера вĕсене çи виттипе витрĕ те тĕкĕр çине пăхса илчĕ. Сахал çывăрнăран-ши е юлашки вăхăтра ăш вăркаса çӳренĕрен сăнĕ улшăннă унăн. Тунсăх пуснă çын пек курăнать. «Амăшне мĕн калас ĕнтĕ унăн? Ĕнер те çавнах ыйтнăччĕ вăл. Пĕлтермеллех пуль», — çак шухăшпа вăл аллисене амăшĕн хулпуççийĕсем çине хучĕ.

— Тем тумалла ĕнтĕ, анне. Илюш та пуçран тухса пĕтмест, Микулай та пуçа кĕрсе çитмест.

— Мĕншĕн тата апла?

— Илюша эпĕ мĕн ачаран хăнăхнă. Хăй вăкăр пек ĕçлет, анчах ытла та кăнттам. Халех килĕшӳсĕр тытать те пĕрле-

шес-тăвас пулсассăн мана кăшкăрма та, çапма та вăтанса тăрас çук вăл. Малаш Аркашĕ арăмне хĕненине те курман мар. Ывăлĕ те ашшĕне хывнă тăк... Хаяр вăл, Илюш.

— Аçу ман çине ку таранччен те алă хурса курман.

— Ун пекки пинре пĕр арçын пур-ши?

— Нумай кĕтетĕн, хĕрĕм. Тиркекене тирĕк тĕпĕ тенĕ пек ан пултăрччĕ. Ку хăть, Илюшĕ, çапах пĕлекен ача, ялтискер, пурнăç тумалли çынах. Аçу та хирĕç пулас çук вăл хĕр ыйтсан. Ку, Микулайĕ, темле çав?..

Венера калаçнă хушăрах çăвăнчĕ, тумланчĕ, тĕкĕр умне тăрса майланчĕ. Микулая амăшĕ аса илсен ун еннелле вăртах çаврăнса ним пытармасăр каларĕ:

— Илюшпа танлаштарсан Микулай питĕ вашават чунлă çын. Унпа калаçма та, юнашар ларма та, ташлама та, утса çӳреме те çав тери кăмăллă. Унпа пĕрле чухне эпĕ хама вĕçнĕ пекех туятăп. Ăна тĕл пулсан пурин çинчен те манатăп. Сан пулнă-и, анне, ун пекки?

Укçине каллех тĕкĕр çине пăхса илчĕ, питне аллипе сĕртĕнсе вăрттăн кулчĕ те:

— Пулнă, хĕрĕм, пулнă, — терĕ пуçне чиксе. — Аçуна курсан эпĕ те санашкалах шутсăр хĕпĕртесе кайнăччĕ. Пирĕн пата тур ăйăр кӳлнĕ тăрантаспа кĕрлеттерсе çитрĕ те... Эх!.. Хăй капăр тумланнă, чипер. Аккордеон епле калать тата. Пĕрре курсах юратса пăрахрăм пулмалла. Ларса килтĕм вара. Аттепе анне те хирĕç пулмарĕç. Хамăн телейĕме тупрăм эп. Эс ытла пит нумай шутлан. Атя, кулачпа сĕт çи. Аçу паçăрах машинипе клуба кайрĕ. Унăн пĕрмай васкавлă ĕç.

Кухньăна кĕрсе кашăк-чашăк шакăртаттарнă хушăра хĕрĕ амăшне пушшех пăлхантарса пăрахрĕ.

— Микулая та, Илюша та качча тухмастăп. Килтех пурăнатăп, сирĕнпех.

Апатне çинĕ хыççăн Венера урама тухрĕ. Хĕвел йăмрасен çăра тураттисем хушшипе ăшшăн кулса пăхать. Типсе çитмен çумăр кӳлленчĕкĕсенчен пăрăнса вăл пушмакне вараламасăр тротуар çине кĕчĕ.

Хыçалта мотоцикл кĕрлени илтĕнчĕ. Хĕр тĕлне çитсен Илюш виçĕ хутчен кăшкăртрĕ те чарăнса тăчĕ.

— Кил, лартса каятăп, — аллипе сулчĕ вăл.

— Ой, хăратăп.

— Манран-и?

— «Урхамахунтан» та, санран та. Пĕлтĕр çавăрса çапни те çитет. Чĕркуççинчи шăйрăк халĕ те палăрать.

— Чăнах-и? — кула-кулах аллипе хĕрĕн тапчам пĕççинчен сĕртĕнсе илчĕ вăл.

Венера ăна аяккалла тĕртсе ячĕ.

— Ытла сĕмсĕрленен, Илюш, пĕртте чипер тытмастăн хăвна.

— Юрĕ-çке, юрĕ, шăрчăк курăк. Çилленекен хĕрсене çил вĕçтерсе кайнă тет. Лар, çилпе ăмăртар.

Венера каччă хыçне вырнаçса ларчĕ. Илюш пурпĕрех хăйĕнне турĕ, тапраннă самантра чалăшса хĕрĕн уçăлнă пĕççинчен кăшт та пулин сĕртĕнсе илчех.

Ку мотоцикла Илюша колхоз парнелерĕ. Унран уйрăлмасть: чупать, çĕмĕрет, юсать. Халĕ те ларкăч тыткăчĕн авăрĕ татăк. Çавăнпа хĕр «ямшăка» пилĕкĕнчен çавăрса тытрĕ. Хăçантанпа ыталаман ăна Венера. Тĕл пуласшăн та мар, тарса кăна çӳрет. Караваев яла килсенех унпа курнăçма чупать. Илюш тарăхать, вĕчĕрхенет, иккĕшне те тем туса тăкма хатĕр. Акă паян тинех телей пулчĕ, ĕнтĕ юратнă хĕрĕ хыçрах, вĕри кĕлеткипе качча çунтарса пырать. Парка çитсен хĕр çĕре сиксе анчĕ.

— Тавтапуç, Илюш.

Йĕкĕт ăна тытса чарчĕ:

— Ман санпа калаçмалли пур.

— Итлетĕп.

— Мĕн тупнă эс çав Микулай де Каравай çумĕнче? Ват хусахпа çӳресе намăс куратăн.

— Çынлăх, ăшă кăмăл, илем.

— Илем? Сухал ăшĕнчи рак пек хĕрлĕ тута, симĕс куç... Ан ухмахлан. Нивушлĕ эпĕ унран япăх?

Венера каччăн çивĕч куçĕнчен пăхса каларĕ:

— Пустуй ан хурла çынна. Вăл айăплă мар. Сăпайлăх — чи капăр тумтир тенĕ халăхра. Хăвна эсĕ Караваев пек чипер йĕркеллĕ тытас пулсан сана темле чаплă хĕр те юратсах качча пырĕ.

Илюш пуçне чикрĕ. Венерăн Тукай бригадирĕпе çыхăнмаллаччĕ те, вăл диспетчер пунктне васкарĕ.

Вырмана тухнăранпа эрне çитрĕ ĕнтĕ. Ырашпа кĕрхи тулă тата пăрçапа урпа пĕр вăхăталла пулса çитни самаях

хыпăнтарать. Ĕнер тата кунĕпе çумăр чашлаттарса çурĕ, тăвăл пĕтĕрĕнсе килчĕ, пĕтĕм ĕçе чарса лартрĕ.

Хĕвел çунтарнипе çĕр пăсланать, сывлăш пăчăланчĕ. Акă комбайнсем хăйсен лаптăкнелле çул тытрĕç. Малашов та çав ушкăнра. Мĕтри Караваевпа Укахви Мишши прицепĕсене тĕрĕслесе тракторĕсене тапратрĕç — тырă турттарма хатĕр.

Диспетчер пунктĕнчен тухсан Венера пĕр кана йĕтем çинче тырă тасатакансемпе пĕрле ĕçлерĕ. Хатĕрлев канту-рĕнчен килнĕ автомашинăсене тиесе ярсан хĕр ватă Караваевпа калаçса кайрĕ:

— Мĕнле пурăнатăр, Хĕветут мучи?

— Пĕчĕк ачана — сăпка, ватта туя кирлĕ теççĕ-и-ха? — пуçне чалăштарса ун çинелле тинкерсе пăхрĕ старик. — Тем, сывлăш пӳлĕнекен пулчĕ-ха кăштах. Çак йĕпе-сапана-ши? Эх, ĕлĕкхи сывлăхчĕ. Сутăн илме те, тавăрса килме те çук ăна. Ха, пакăлтататăп та иккен, каçар эс мана.

— Бригадир пулчĕ-и кунта?

Хĕветут мучи аллине лас сулчĕ.

— Эй, унпа... Итле-ха, хĕрĕм, пĕр сăмах пур. Хăçан-танпа ĕнтĕ эпир хуçалăх расчечĕпе ĕçлетпĕр, ĕçе лайăхлатас тесе чек йĕркипе те усă курма пуçларăмăр. Питĕ меллĕ иккен. Кунта пурне те палăртнă: тырă туса илме мĕн чухлĕ тăкакламаллине те, ĕçшĕн тӳлемеллине те. Пĕлтĕрхине шутласа пăхрĕç те... Бригади пирĕн тыррине палăртнинчен нумайрах туса илнĕ, тăкакĕ те аллă пин ытларах пулнă. Çавăн пиркиех никама та преми лекмерĕ. Халăха шалккă. Пирĕн ялсем ыттисенчен мĕнтен начар? Пĕр тăрпалтайшăн эртел айăплă мар. Ĕçсем вĕçленсен калаçса пăхăр-ха бригадирпа. Тен, улăштармалла ăна, ĕçкелеме те юрататать. Хальхи пурнăçра, ачамккă, ертсе пыма çирĕп çын кирлĕ. Вăхăчĕ çапла хушать.

— Уншăн эпĕ те айăплă, — ассăн сывласа илчĕ Пашкова, — халĕ те çав ыйтупах шыратăп-ха ăна. Çирĕпрех тĕрĕслесе тăрасшăн. Текех çынсене яка пăр çине лартса хăварас марччĕ.

— Тырра лайăх алла илсен хавхалантармалли енчĕк тулма кирлĕ-ха, — шултра ыраш пĕрчисене ывăçĕнче сиктерчĕ мучи. — Мĕнле сорт акнă вара эсир, хĕрĕм? Тути те аван. Вăтăр пилĕк центнерсем тухмалла-ха гектартан тесе мухтанать бригадир.

— «Восход-2» ятлă, — ăнлантарчĕ цех начальникĕ. — Туни лутра пирки ÿксе пулмарĕ, çил-тăвăла лайăх чăтса irrттерчĕ.

Каравай Хĕветучĕ тем аса илнĕн сухалне якатрĕ те:

— Малтанах эпĕ цех япалине килĕштерсех кайманччĕ. Пурăна киле тин индустри сывлăшĕ яла килсе çапнине туйрăм. Çăпата пуçĕнчен маларах пăхмалла иккен.

Микулай аслашшĕпе пуплени хĕр чĕрине хускатрĕ. Ĕçре унăн пурте пур: уй-хир цехĕ, чек йĕрки, бригада подрячĕ, хуçалăх расчечĕ, лайăх пусă çаврăнăшĕ, уйсен агропаспорчĕсем... Пучах çĕнĕлле, палăртнă тăрăх, тулать. Колхоз пуять... Пурнăçра çеç нимĕнле çĕнĕлĕх те çук. Кашни уйăнни пек пулсанччĕ юрату паспорчĕ, вара ун çине йĕркипе çырса хумалла: хăçан тĕл пулмаллине те, кама мĕн каламаллине те, туй тумаллине те, епле пурăнса телей курмаллине те...

## ВИÇÇĔМĔШ ПАЙ

### 1

Караваев ертсе пыракан художниксен «Пучах» ушкăнĕ Аслă Çĕнтерÿ хĕрĕх çул тултарнă тĕле пысăк парне хатĕрленĕ. Халăх мĕнле хак парĕ-ши ăна? Юлашки кунсенче Микулай пĕрехмай çакăн çинчен шухăшларĕ. Юлташĕсем те хытă хумханчĕç.

Ирпе май хĕвелĕ таврана ăшшăн çупăрларĕ. Культура керменĕ умне халăх йышлă пухăнчĕ. Хăнасем те çитрĕç. Кĕçех митинг пуçланчĕ.

Тухса калаçакансене итленĕ май Караваев вăрçă ветеранĕсене аса илчĕ. Вĕсем ĕнтĕ кунтах. Сăнĕсене ÿкернĕ вăхăтра вăл хăй те йывăр çапăçусен çулĕсемпе вĕсемпе пĕрлех утса тухнă пек туйрĕ. Çĕр салтак, çĕр пурнăç, çĕр сăнар тухрĕ художниксен алли витĕр.

Колхоз председателĕ Андреев пурне те пĕчĕк зала чĕнчĕ. Сарлака та çÿллĕ стена çинчен паттăрсем ентешле туйăмпа кăмăллăн пăхрĕç. Тăватă рете вырнаçтарнă вĕсене. Пурин те кăкăр тулли орден-медаль. «Пирĕн ĕç тĕрĕс — эпир çĕнтертĕмĕр» тесе çырнин икĕ енче те — Георги лентисем.

Мĕнле кăна сасă илтĕнмест халăх ушкăнĕнчен:

— Каравай Пракухне курăр-ха тата. Пичĕ хĕртнĕ тимĕр пек хĕрлĕ...

— Ашшĕн сухалĕ епле?

Миçе çынна алă тытмарĕ-ши Караваев? Ăна та, ытти художниксене те кашни вĕри чĕререн тухакан тав сăмахĕ каласшăн. Вăрçă темипе ÿкернĕ ытти картинăсем патĕнчен те çын татăлмасть.

— Эсир, Николай Прокопьевич, хăвăр та пĕтĕм ушкăнĕпех паттăрсем пулса тăтăр, — мухтамасăр чăтаймарĕ Янгорчин. — Мухтавлă çынсен кун-çулне сăнарлă искусство чĕлхипе кăтартма пултарни сирĕншĕн те çĕнтерÿ. Ку залра — паттăрлăх! Ăна хамăрăн «Георги залĕ» тесен те йăнăш пулмĕ.

Председатель те ку шухăшпа килĕшрĕ, художниксене хăйсен пысăк парнишĕн хĕрÿллĕн тав тунă чухне Андреев КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕн сĕнĕвне халăха пĕлтерсе каларĕ.

Пашковпа Малаш Аркашĕ тавлашсах кайнă ав.

— Георги залĕ вăл Мускаврa çеç, — тет куçне мăч-мăч хупкаласа Малашов. — Союзсен çуртĕнче. Ак Янгорчинран ыйт эппин. Депутат чухне вĕсем унта патшалăхăн пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçĕсене татса панă. Хăй каланине илтнĕ эп.

— Ленинградра та пур.

— Çук. Мускавпа Çĕрпелте кăна, — хăйĕннех перет Малашов.

— Пустуй ан калаç-ха, Аркаш. Ленинградри Георги залĕнче хам та пулнă эпĕ. Çавăнпа калатăп та сана. Унта та, кунта та ĕнтĕ çар мухтавĕн, салтак паттăрлăхĕн чапĕ. Акă мĕнле мăн ĕç турĕç ÿкерÿçĕсем.

Ку сăмахсем хыççăн Малаш Аркашĕ тек тавлашмарĕ. Лев Климовăн «Тунсăх» картинине пуçа пăркаласах сăнаса пăхма пуçларĕ. Вăрçăран таврăнакан Илле Андреев кутамккине сулахай хулпуççи урлă уртса янă, сылтăм аллине пилоткине тытнă, пичĕ-куçĕ савăнăçлăн йăлкăшать, сарлака кăкăрĕ çинчи орденĕ-медалĕсемпе хĕвел шевли вылять. Кăшт аяккарахри симĕс вăрман, çул икĕ енĕпе хумханакан тырă уйĕсем, умра курăнакан ял çĕнтерÿçĕ салтакшăн мĕн тери тунсăхланине художник чуна тытса илмелле ÿкернĕ.

Картинăри тĕссен килĕшÿлĕхĕ Караваевшăн хитре кĕвĕ

пекех. Авторӑн гражданла, патриотла туйӑмӗ кунта чӑнахах та вӑйлӑ сисӗнет. Ҫапла курать вӑл колхозниксемпе пӗрле юлташӗн чыслӑ-мухтавлӑ ӗҫне.

## 2

Микулай ялтан туп-тулли кутамккапа Шупашкара таврӑнчӗ. Ун ҫыххине салтсанах мастерской шухӑш кӗрлевӗпе тулса ларчӗ тейӗн. Вӑл вара майӗпенех сӑрӑпа та ҫутӑ килӗшӗвӗпе шайлашӑнса сӑнарлӑха куҫса пычӗ. Асамат кӗперӗ хушнӑ хыҫҫӑн «Ҫӗрпелсем Ҫӗнтерӳ уявӗнче» картина тата ытларах вӑйланчӗ, чӗрӗлчӗ. Куравра ку ӗҫе ырласа хак пачӗҫ.

«Чӑваш юмахӗн чӑнлӑхне» те ҫӗнӗрен сӑрӑсем витӗнчӗҫ. Пӗрре тарӑхса, тепре савӑнса юсарӗ Караваев «Шурӑмпуҫ» паттӑрӗн сӑн-сӑпатне. Илюш Малашов сӑнарӗнче ҫирӗплӗх, хастарлӑх йӗрӗсем ытларах хутшӑнчӗҫ.

Юлашки вӑхӑтра художник «Ҫӗр пикипе» уйрӑмах хавхаланса ӗҫлерӗ. Сывлӑшалла ҫунатлӑн ҫӗкленнӗ пек курӑнакан Венера вӑйлӑ тыр-пул ӳстерекен ҫӗрпе, тулӑ пуссипе, хӗвелпе, тавралӑхпа пӗрле чӗрӗлекен ҫут ҫанталӑкӑн уйрӑлми пайӗ пулса тӑнӑ. Пӗтӗмӗшле ҫыхӑнупа шайлашу картинӑна пушшех те вӑйлатать. Ӑна курсан хӑлхана текерлӗк сасси килсе кӗрет, сӑмсана тулли пучахлӑ ҫӗнӗ тырӑ шӑрши кӑтӑклать, пит-куҫа Туҫи рашчи енчен вӗрекен уҫӑ ҫил ҫупӑрлать, чун-чӗре хаваслӑхпа тулать, юрлас килсе каять. Ирӗксӗрех вара Ванька Костинӑн ҫепӗҫҫӗн те савӑнӑҫлӑн янӑракан кӗвви аса килет. Микулай сӑрӑсем хутӑштарса лӑш курмасӑр киҫтӗкӗпе сӑрлать, ывӑннине, хырӑм выҫнине туймасть. Темиҫе каҫ мастерскойрах ҫывӑрчӗ. Ҫутӑпа тӗттӗм вырӑнсен ылмашӑвӗ ӗнтӗ «Джокондӑри» пекех ытарайми илемлӗн, асамлӑн курӑнать. Леонардо да Винчин тӗтрелӗх меслечӗпе усӑ курса вӑл «Ҫӗр пикине» хитрелӗх чунӗ кӗртрӗ. Хӗр сӑнарӗ уншӑн чӗрӗ пекех. Раскладушка ҫинче Штраус вальсӗсене итлесе выртнӑ хушӑра вӑл шухӑш-ӗмӗчӗпе Хурӑнсура ҫитрӗ, ташлакан ҫепӗҫ кӗвӗ ытамӗнче хӑйӗн пикине шырарӗ.

Кӗҫех Мускавра «Ҫӗр тата ҫынсем» курав уҫӑлмалла. Ун валли Караваев «Ҫӗр пикине» суйласа илчӗ. Пӗтӗм Союзри экзамена кайма «Механизаторсем» те тивӗҫрӗҫ.

Тĕлĕнмелле, Шупашкартан унта Юсов та хутшăнать иккен. Ювеналий Серафимович ял хуçалăхĕпе çыхăннă пуçлăхсен портречĕсене тăратрĕ. Темшĕн-çке комисси членĕсем (унта Юсов та пурччĕ) Климовпа Ушкин «Шурăмпуçĕнче» тунă хӳхĕм картинăсене тиркесех çав «турăшсене» ырласа йышăнчĕç.

Авторĕсене те Мускава чĕнеççĕ. Кун пирки Микулай Венерăна çырса пĕлтерчĕ.

Курав уçăлнă кун Караваевшăн пысăк уяв вырăннех пулчĕ. Кунта вăл Суриков институтĕнче пĕрле вĕреннĕ юлташĕсемпе, юратнă профессорĕпе тĕл пулса кăмăл туличчен калаçрĕ. Старикова пуринчен ытла «Çĕр пики» килĕшрĕ.

— Чăннипех хăвăн тĕнчӳне уçрăн эсĕ. Леонардо да Винчин «Джокондинче» эпĕ киçтĕк йĕрĕ те курманччĕ. Ку картина та çавăн пекех яп-яка питлĕ. Ӳкерчĕк мар — чăн чĕрĕ çын. Тыткăнлакан, кăмăла уçса яракан, хавхалантарса çĕклентерекен сăнар. Кăвак тĕспе калама çук ăста усă курнă. Çутăпа тĕттĕм вырăнсен ылмашăвĕ Леонардăнни майлах. Хĕвел куллиллĕ куçĕсенчи вăрттăнлăх «Джокондăра» та, «Çĕр пикинче» те ăсран ярать. Кулли те пĕрешкел вĕсен — хăйне майлă ытарлă кулă. Сăнĕ те вĕçĕмсĕр çĕнелсе хитреленнĕн туйăнать. Хумхануллă, ăслă, тарăн шухăшлă чун пытанса тăрать ытарлă чăваш хĕрĕнче. Ах, куçĕсем епле чĕрĕ — ытарайми илемлĕ куççем! Чăнах та, чун тĕкĕрех. Çынна ӳкерме, унăн чун ăнлавне палăртма ăста вĕреннĕ. Ку ĕçпе эсĕ Пластовсен, Ткачевсен, Шиловсен ретне тăма пултаратăн, — мухтамасăр чăтаймарĕ Викентий Матвеевич.

Микулай куншăн кăштах аванмарланчĕ, çапах та çав хушăрах хăйĕн «Джоконди» çине те вăрттăн пăха-пăха илчĕ. «Тен, чăннинех калать вăл. Профессор пустуй çĕртен ырланине нихçан та илтменччĕ. Куракансем те авă «Çĕр пики» умĕнче вăрах тытăнса тăраççĕ. Темле туртакан вăй пур та пулĕ».

Юнашарах Юсов ӳкернĕ портретсем çакăнса тăраççĕ. Çынсем вĕсем çине çиелтен кăна пăхса иртнине те Караваев асăрхамасăр пултараймарĕ. Епле вĕчĕхет-ши куншăн Ювеналий Серафимович чунĕ?

Караваев Пĕтĕм Союзри тата Раççейри художество выставкинче сюжетлă-тематикăллă ӳкерчĕксем темиçе хут та

кăтартма ĕлкĕрчĕ, анчах «Çĕр пикине» çитекенни пулмарĕ. Ку, паллах, унăн пултарулăхĕнчи çĕнĕ утăм, паллă çĕнтерӳ.

Çитĕнĕвĕ çук мар ĕнтĕ, пур. Çапах та пурнăçра унăн хăйне Турă панине халăха кăтартса ĕнентермешкĕн самаях тертленме тиврĕ. Хисепе тивĕç пулмашкăн нумай вăхăт, канăçсăр ĕç, чăтăмлăх кирлĕ иккен. Шухăшпала, ах, çав тери чаплăн курăнас килет тепĕр чухне. Çук çав, хăв темле çунатланса ĕмĕтленсен те, халăх куçĕ сана хăй вăхăчĕсĕр асăрхамасть, халăх хакĕ сан патна хăй вăхăтĕнче кăна çитет. Вăхăт сыпăкĕ урлă сиксе каçма та, вĕçсе иртме те май çук. Ун урлă санăн хăвăнах çирĕп кĕпер хывмалла. Çав кĕпер урлă каçсан тин пĕтĕм халăх хисепĕ хирĕç хăех чупса килет-мĕн, сана ыталаса илет, çӳлелле çĕклет, ывăтать. Ан ӳк çеç. Ӳксен — аялалла кĕмсĕртететĕн, мăнаçлăх тĕнчине лекетĕн, мăнкăмăллăх чури пулса юлатăн. Унашкал каппайчăка халăх сумламасть. Авă епле çирĕп пулмалла Мухтав тĕнчин уçлăхĕнче художникăн та. Çапла, хисеп патне каçмалли çирĕп кĕпере хывиччен Микулайăн пайтах нушаланмалла пулчĕ. Вăхăт сыпăкĕ урлă çирĕп кĕпер хывса вăл мăн телей патне каçрĕ. Савăнăçлă туять халĕ.

Анчах та «Механизаторсем» илсе килсе хăйшĕн хăй хуйхă тупрĕ. Пăхать те картина çине — чунĕ ыратса каять. Илюш Малашов ăна халĕ те: «Тăхта акă, лекетĕнех ман алла», — тесе калас пек туйăнать.

Çемçе алăсем куçне хупласан тин курми пулчĕ вăл ӳкерчĕксене. Хăйпе кам çапла аташнине тавçăраймасăр пĕр вăхăт çухалса кайрĕ, унтан вăрт! çаврăнчĕ те Эмма Старикован кулăпа çиçекен пит-куçне асăрхарĕ. Пĕрле институтра вĕреннĕ, хула тăрăх ярăнса çӳренĕ хĕр карчăк пекех ватăлнă. Сăрă ăшĕнчи пĕркеленнĕ ӳт, йăлкăшакан ылтăн шăлсем, хытканланнипе шĕвĕрĕлсе юлнă сăмси... Куçĕ çеç çавнашкалах вут-çулăм сапать. Караваева вăл ытти çынсенчен вăтанмасăрах тытса ыталарĕ.

— Ой, Коля, хăçантанпа кĕтетĕп сана, чунăмçăм! Мĕншĕн тӳрех киле пымарăн?

— Вăхăт пулмарĕ, Эмма. Викентий Матвеевича каларăм-çке хăçан çитессине. Пĕлтермерĕ-и?

— Çу-ук. Хăвах пĕлен ăна: пĕрре пуçларĕ тĕк живопись юррине — тĕнчере мĕн пуррине йăлтах манса каять. Хальхинче те çаплах пулчĕ. Эпĕ унран сан пирки ыйтатăп,

вăл пĕрехмай сан картинуна мухтать: «Тепĕр «Джоконда» — чăваш «Джоконди» килнĕ тĕнчене. Кайсах кур, ху куçупа пăхса хакла ăна», — тет. Хăвна та, япалуна та курас килчĕ те вĕçтерсе çитрĕм акă. Так, так... Çакă-и-ха сан «Çĕр пики»? Ха, чăнах та, тупнă эсĕ кунта хăвăн йĕрне. Фантази çитет, философиллĕ шухăш та уççăн палăрать. Çĕр пуянлăхĕ, ĕмĕт вĕçевĕ, тĕнче символĕ. Пĕр вырăнта хытса тăракан кĕлетке мар. Маттур, Коля.

Эммăна итленĕ май Караваев ăна картина пирки ăнлантарса калаçрĕ.

— Ку пĕртте пуçран шухăшласа кăларнă сăнар мар. Чăнчăн çĕр çынни, колхоз агрономĕ, урăхла каласан, эппин, уй-хир хуçи.

Эмма картинăна аякран та, çывăхарах пырса та тимлĕ сăнаса пăхрĕ, пĕр-пĕр кăлтăк шырарĕ пулас, сăрăсен шайлашулăхĕпе ăсталăх енчен нимĕн тупайман енне сăнне те пулин тиркеме тăчĕ:

— Куртăм та... атте ӳстеререх каланă пек туйăнать мана. Нимĕнле Мона Лиза та мар, так, ялти хĕр...

— Мĕн-мĕн? Чим-ха, — хыпăнса ӳкрĕ çавăнтах Караваев. — Кĕвĕçнипе каларăн эсĕ ку сăмахсене.

— Иккĕленетĕп эпĕ. Пулма пултараймасть Чăвашра «Джоконда» пеккисем.

Çак сăмахсемшĕн кăмăлсăрланнă Микулай Эмма çине сиввĕнрех пăхса кулса илчĕ.

— Пур, пирĕн те пур тĕнчене тĕлĕнтерекенсем. Акă Надежда Павлова, сăмахран. Чăн чăваш хĕрĕ вăл.

— Илтнĕ, курнă та эпĕ ăна. Анчах балерина вăл хула хĕрĕ. Чăвашра пĕр çын. Унпа çак агронома ăçтан танлаштарăн? Ял пылчăкĕ-тусанĕ ăшĕнче илемлĕх палăрассăн туйăнмасть.

— Эх, эсĕ те çав... яла кĕнекере те кинора çеç курнă. Пĕлессӳ килсен, чăваш пикисем сцена çинче те, çĕр çинче те тĕнчене тĕлĕнтереççĕ.

— Юрĕ-çке. Çураçнă хĕрӳ пекех питĕ хӳтĕлетĕн хăвăн агрономна. Çавăнпа пире мантăн пулĕ-ха. Çапах та сан «Пикӳ» ман кăмăла кайрĕ. «Реализмла сăнӳкерчĕк» манерĕпе ӳкернĕскер мар. Авă çав «Механизаторсем» те чĕрĕ пекех. Пырса курас, калаçас килет вĕсемпе. Илсе каймăн-и мана, Коля?

Мĕн темелле ĕнтĕ Караваевăн? Шӳтле-шӳтлех вăл профессор хĕрне Çĕрпеле пырса курма чĕнчĕ. Эмма ăна ĕненсе пăрахрĕ те савăннипе çавăнтах ун мăйĕнчен уртăнчĕ, сухалне сирсе тутинчен чуптурĕ.

Çав вăхăтра Микулай хăйсем патнелле çывхарса килекен ентешĕсене асăрхарĕ, Эммăран вĕçерĕнсе вĕсене хирĕç утса кайрĕ.

— Коля, ма ытлахваскатăн? Пысăк театра пыратăн-и кĕçĕр? Ăçта тĕл пулăпăр? — юлмарĕ унран Эмма.

Ăна илтмĕш пулса Микулай пурне те черетпе алă парса тухрĕ, Венера тĕлне çитсен чĕтреме те ерчĕ. Мускав хĕрĕ Пашкова çине шăтарасла пăхса илчĕ те тĕлĕннипе:

— Турăçăм, каснă лартнă хăй пек, — тесе сасăпах пăшăлтатрĕ.

Часах «шурăмпуçсем» «Çĕр пикине» сырса илчĕç.

Эмма кунта хăй ытлашши иккенне ăнланчĕ пулас, Микулайпа театр пирки калаçса татăлнă хыççăнах аяккалла пăрăнчĕ.

Венера Костин çумĕнчен хăпмарĕ, çавăнпа Караваевăн унпа уйрăммăн сăмахлама май килмерĕ. Чылай вăхăтран тин Ванька шăппăн ыйтрĕ:

— Çакă-и сан тахçанхи вăрттăнлăху, Микулай?

— Ăхă, — пуçĕпе сĕлтрĕ тусĕ.

— Ой, чаплă ӳкернĕ те-çке! Куç вĕçертмесĕр пăхас килет.

— Итле, Ванька, тĕрĕссипе каласан ку картинăна эпĕ хам валли кăна тунă, — пĕçерекен питне аллипе сăтăрса илчĕ Караваев. — Никама та кăтартма шутламанччĕ ăна. Анчах... мастерскойра юлташсем асăрхарĕç те курава яма хистерĕç.

— Тĕрĕс сĕннĕ. Кунашкал шедевра кам-ха пытарса усратăр? Халăхра пиçнĕ пултарулăх çимĕçĕ халăх валлиех пултăр. Хĕрне хăйне те кӳрентерме кирлĕ мар. Пĕлесчĕ сан, Венера Иосифовна мĕнле Мускава килесшĕн пулчĕ! Юрий Ильич та чарма хăяймарĕ вара, уйри ĕçсем вĕçленичченех яма килĕшрĕ. Эпĕ те çакланса килтĕм. Тăнла, хĕрӳ ав епле хыпăнса килет те, ме ак сана, эс кунта темле çеçтех майрапа ыталашса тăран.

— Хам та çав самантра çĕр тĕпне анса каяс патнех çитрĕм те, халĕ тин мĕн тăвăн ĕнтĕ?

Караваев ентешĕсене зал тăрăх ертсе çӳрерĕ, вĕсемшĕн экскурсовод вырăннех пулчĕ. Кунти нумай художникăн пултарулăхне, пурнăç çулне пĕлет-çке вăл.

— Ку çулçӳрев маншăн питĕ аван-ха, — терĕ савăнса Костин. — Килнĕ пек чух Третьяковкăна та çитсе курасчĕ. Хирĕç мар-и эс?

Пушă вăхăт пурччĕ те, Микулай вĕсене хаваспах Лаврушин тăкăрлăкне илсе кайрĕ. Унта çитсен галерея çуртне тул енчен пăхса киленчĕç. Костин хăй унччен мĕн пĕлнине çĕнĕлле куçпа курса савăнчĕ. Унтан шалта çӳрерĕç. Çирĕм улттăмĕш залра, Репин пултарулăхне лайăхрах пĕлес тесе, Венера ыттисенчен каярах тăрса юлчĕ. Çавна туйса Микулай та ун çумне пырса тăчĕ.

— Ăнлан, Венера... — хĕре аллинчен тытма пикенчĕ вăл.

— Кай-ха! — кӳреннĕ сасăпа мăрт-мăрт турĕ Венера. — Ак çак картинăри çынна çемйи кĕтмен пекех мана та кĕтмерĕр пулĕ-ха майрупа иксĕр. Эппин, эсĕ те çыр «Кĕтменччĕ» картина. Сюжечĕ паллă. Мускав майри ыталаса чуптунă вăхăтра хăв мĕнле пăлханнине автопортретра кăтарт. Сăрă ан хĕрхен. Тата ман пит-куçа тунсăхлă ан ту. Çиллентер хытăрах, тарăхтар. Талантупа, тен, Репинран та иртсе кайăн... Çапла-çке, эпĕ, ухмаххи, уншăн ялта вилес пек тунсăхласа пурăнатăп, вăл пур кунта урăх юрату тупнă. Эх, эсĕ те çав...

— Санран эпĕ нимĕн те пытарасшăн мар, Венера, — хĕр куçĕнчен айăплăн пăхрĕ Микулай. — Стариков профессор пирки эпĕ тахçанах каланăччĕ-ха сана. Викентий Матвеевич хĕрĕ вăл, пĕрле вĕреннĕскер.

— Ахальтенех майран çакăнмасть, ыталаса чуптумасть ĕнтĕ, театра та тархасласах чĕнмест, — тутине тăсрĕ Венера.

— Пĕччен мар-çке, пĕрле, ушкăнпа пыма ыйтрĕ. Билетсем тупать. Кайса куратпăр-и хамăр Надежда Павлова ташланине? «Ромеопа Джульетта» вĕт. Кăмăл пур-и?

Венера пĕр хушă сăмах чĕнмесĕр Микулайпа юнашар утса пычĕ. Ентешĕсене вĕсем Саврасовăн «Ырашĕ» умĕнче тин хуса çитрĕç.

— Кунашкал картина Шишкинăн анчах пур пуль тенĕччĕ. Ой, мĕн тери пысăк уй ку. Хамăр патри майлах.

Пирĕн кăçал ыраш вăйлă пулчĕ, Микулай. Гектартан хĕрĕх центнер тухрĕ. Çитес çул валли пилĕк çĕр гектар акса хăвартăмăр. Лайăх шăтрĕ. Хăçан пырса куратăн? — тинех çемçелчĕ Венера сасси.

Караваев хăлхаран пăшăлтатрĕ:

— Каçпа Пысăк театрта пулнă хыççăн тата курав вĕçленсен.

Хĕр ун аллине хăех чăмăртарĕ.

Балет пăхнă хыççăн çĕрпелсем хăна çуртне таврăнчĕç. Микулай Венерăпа йывăçсем айĕнче калаçса ларса ир турĕ. Кăнтăрла иртсен Хусан вокзалне ăсатма тухрĕ.

Пуйăс тапранса кайсан ăш вăркама пуçларĕ, пуçĕнче кирлĕ-кирлĕ мар шухăшсем пăтранчĕç. Чун пушанса юлнăн туйăнчĕ. Вăл пĕлекен урамсемпе тăкăрлăксенче нумайччен сулланса çӳрерĕ, унтан Октябрь 50 çул тултарнă ятпа хисепленекен площаде çитрĕ те çынсемпе хутăшса Манежри Выставкăсен тĕп залне пырса кĕчĕ. Кунта темиçе çĕр картина çакăнса тăрать пулин те, Микулай пĕрин умĕнче те чарăнса тăмарĕ, тӳрех чуншăн çывăх кĕтесе васкарĕ. «Çĕр пики» умĕнче халĕ те çын йышлă пухăнса тăнă. Унăн çак самантра вĕсем патне пырса: «Пĕлетĕр-и вăл камне? Манăн юратнă хĕр, калама çук ырă кăмăллă, ĕçчен, тĕнчере çук илемлĕ чăваш пики», — тесе каласси килчĕ. Унтан кăшт аяккарах пăрăнса тăчĕ те куç илмесĕр Венера çине пăхрĕ. Çав вăхăтра ăна Илюш Малашов картинăран тухса хăй патнелле çывхарнăн туйăнчĕ.

Караваевăн та кĕвĕçӳ пур иккен. Тата вăйлах та сисĕнет. Венера халĕ унран аякка та аякка кайса Чăваш ене çывхарса пырать-çке. Ирпе яла çитĕ те машина паркне кĕрĕ, Илюшпа тĕл пулĕ. Çывăхри çын — çывăхриех ĕнтĕ. Куравра та вĕсем юнашарах ав.

Хăна çуртне çитсен апат та анмарĕ, чей ĕçнипех çырлахрĕ. Шухăшласан-шухăшласан Микулай чĕрине: «Эпĕ пурпĕрех телейлĕ-çке, ăна мана çуралнă тăван çĕр, унта ӳснĕ ял пики парнелерĕ», — тенĕ шухăш кăна кăштах лăплантарчĕ. Живопись профессорĕпе Стариковпа тахçан калаçни аса килчĕ.

— Пире пăрахса каяс терĕн-ха апла, — терĕ ун чухне Викентий Матвеевич. — Шел, хăнăхнăччĕ сана.

— Çирĕпех шут тытрăм. Ностальги чирĕ пуçланчĕ.

Тӗлӗкре те ачалӑхпа пӑтранатӑп. Йӑмраллӑ урам, тырӑ уйӗ, ҫил арманӗсем, хырсем, тӑван ҫынсем куҫ умӗнчен кайма пӗлмеҫҫӗ.

— Ман сана кунтах хӑварас килет. Канса пурӑн ялта кӑштах, ӳкер килениччен, кайран Мускавах кил.

— Темле ҫав, питӗ иккӗленме пуҫларӑм. Сӑнарлӑ искусство илемне тӑван халӑх патне ҫитерес, ҫӗр ҫыннине парнелес килет. Ҫав шухӑшпа кӑна пурӑнатӑп халь.

— Ӑнлантӑм. Ӗмӗтӳпе паянхи Антей эсӗ. Ҫӗр турри Гея ҫуратнӑ авалхи паттӑр пекех. Астӑватӑн-и, Ҫӗр амӑш ӑна вӑй парса тӑнӑ. Ҫавӑнпа вӑл ҫӗре перӗнсенех кӗрешӳре ялан ҫӗнтернӗ, эсӗ вара ҫӗр ҫумне тӗкӗнсе кӑна мар, унта тымар ярасшӗн. Ну ҫаплах пултӑр эппин. Тен, тӗрӗс те тӑватӑн. Ҫӗрпе туслаш, ҫӗр ҫыннисемпех пурӑн. Ӑнӑҫу сунатӑп.

Ҫуралнӑ ҫӗршыва таврӑнни Караваева нихҫанхинчен те пулӑхлӑрах ӗҫлеме вӑй-хал кӳрсе тӑчӗ. Ҫак хушӑра вӑл таҫта та пулчӗ: хулари предприятисене тухса ҫӳрерӗ, ял ӗҫченӗсемпе тӗл пулчӗ, пур ҫӗрте те хӑйӗн пулас картинисен геройӗсене шырарӗ, вӗсене художник куҫӗпе тимлӗ сӑнарӗ, эскизсем турӗ, этюдсем ӳкерчӗ, мастерскоя таврӑнсан вара унта талӑкӗ-талӑкӗпе ниҫта тухмасӑр киҫтӗкпе ӗҫлерӗ. Тӑван халӑх, тӑван ҫӗр сывлӑшӗпе сывлани нумай пулӑшрӗ ӑна: ҫут ҫанталӑк панӑ таланчӗпе ырми-канми ӗҫченлӗхне пула вӑл кӗске вӑхӑтрах халӑхра палӑрса ҫитрӗ, ырӑ ят илчӗ. Стариков профессор хальхинче те ӑна художество институтӗнче хӑварма май пурри ҫинчен систерсе каларӗ. Анчах Микулай хӑйӗншӗн ку сӗнӳ вырӑнлӑ маррине йышӑнчӗ те, юратнӑ учителӗ те вара тек кун пирки сӑмах тапратмарӗ.

Халӗ ялта картина галерейи уҫма пулӑшас пулать. Кун пирки Ванька Костин тата тепре те аса илтерчӗ те, каланӑ сӑмаха тытмаллах ӗнтӗ.

СССР художникӗсен союзӗнче, чӑнах та, ӗҫ чиперех майлашӑнчӗ. Институтра пӗрле вӗреннӗ ӳнерҫӗ часах Костин ҫырӑвне те шыраса тупрӗ. Выртакан чул айне шыв юхса кӗмест текелесе вӑл Караваева правлени пуҫлӑхӗсем патне илсе кӗчӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑнах вара выставкӑсен дирекцийӗ ҫӗрпелсене вӑтӑр картина парнелеме килӗшрӗ.

## 3

Андреев Мускава ятарласах машина янӑ. Картинӑсене тиесе яла ӑсатнӑ хыҫҫӑнах Караваев самолетпа Шупашкара таврӑнчӗ.

Ялах каймаллаччӗ те, ҫийӗнчех ниепле те ерҫеймерӗ.

Ку тӗле «Пучах» художникӗсем пурте тенӗ пекех хӑйсен вӗҫлесе ҫитермен ӗҫӗсемпе хулари мастерскойӗсенче аппаланатчӗҫ. Алексей Михайлович Няманов ялсене илем тумӗ кӗртессипе пуҫне ватать. Григорий Саввич Ушкин юбилей выставки хатӗрлет. Климов тӳрех Микулай патне ҫитсе Мускав хыпарӗсемпе паллашрӗ.

— «Шурӑмпуҫӗнчен» халех килесшӗн марччӗ те, партбюро секретарӗ шӑнкӑравласа пӗлтерчӗ. Телеграмма та янӑ. Паян пуху пулса иртмелле. Ыйтӑвӗ, чӑнах та, питӗ кирлӗскер: художникӑн халӑх умӗнчи тивӗҫӗ ҫинчен. Сӑмах та калаттарасшӑн, — пӗлтерчӗ Лев Викторович.

— Ҫапла, кун пирки калаҫмасӑр май килмест, — килӗшрӗ унпа Караваев. — Пирӗн хушӑра та «ирӗклӗх сывлӑшӗпе» сывлас, ӗҫпе кӗрешӳ теминчен пӑрӑнса хӗвел анӑҫӗнчи искусствӑн чунсӑр, туйӑмсӑр йӗрӗпе каймалла текенсем ҫук мар-ха.

Хӑйсене илес пулсан, Климовпа Караваев иккӗшӗ те пурнӑҫ чӑнлӑхне сӑнарлӑ искусство чӗлхипе яр уҫҫӑн та витӗмлӗн кӑтартса панӑ талантлӑ художниксен чаплӑ ӗҫӗсене нимӗнрен мала хураҫҫӗ. Чӑвашра та ҫук мар унашкал хӳхӗм произведенисем. Моисей Спиридонов, Юрий Зайцев, Никита Сверчков, сӑмахран, ҫирӗммӗшпе вӑтӑрмӗш ҫулсенчех пусмӑртан хӑтӑлнӑ чӑваш ӗҫ ҫынни ирӗклӗ саманара пур йывӑрлӑхсемпе чӑрмавсене ҫӗнтерсе ҫӗнӗ пурнӑҫ тунине питӗ ӗненмелле ӳкерсе кӑтартнӑ. Вӗсен жанрлӑ, сюжетлӑ, тематикӑллӑ картинисем тӑван искусствӑна ҫӳллӗ шая ҫӗкленӗ. Яланах хӗрӳ пурнӑҫ сиккинче пынӑ вӗсем. Унтан вӗсем уҫнӑ ҫула ытти художниксем такӑрлатса пычӗҫ. Караваев Мускавран килсенех Николай Овчинников картинисене питӗ ӑмсанса пӑхатчӗ. Анчах ҫакӑ ӑна пулӑшрӗ ҫеҫ, алӑри киҫтӗкпе халичченхинчен хӑюллӑрах та меллӗрех ӗҫлеме хистесе хавхалантарчӗ. Ҫавӑн пекех ҫуралнӑччӗ унӑн Шупашкарта трактор завочӗ тӑвакансене сӑнласа кӑтартнӑ картини. Лӑш курмасӑр ӗҫлерӗ унпа

Микулай, ӳкерсе пĕтерсен тин талăка яхăн çывăрчĕ. Вăранчĕ те катан пир çинчи хĕрсене курнипе кулсах ячĕ. Вĕсенчен кашни хăйне евĕрлĕ, çивĕч шухăш-туйăмлă, асра юлмалла сăнарлă пулса тухнă. Строительсем çĕршывĕпе чап илчĕç, çав хушăрах Караваев художника та мухтава кăларчĕç. Çакăн хыççăн тин Караваев та хăйне пурнăç уттинче Овчинниковсенчен юлман пек туйрĕ.

Çав курав ĕçленĕ кунсенче Караваев час-часах живопись профессорĕ Стариков мастерскойĕнче пулчĕ.

— Сăнарлă искусство тĕнчинче эсĕ «Шанман чечексемпе» палăртăн, — ырларĕ хăйĕн вĕренекенне Викентий Матвеевич. — Халĕ строительсемпе туслашнă. Ку ĕç те аван. Çапах та пĕлес килет: ыран кама ӳкересшĕн-ха эсĕ? Асту, пур çĕре те çитсе çапăнма пуçласан ытлашши сапаланса каяссинчен хăрамастăн-и? Çĕр çыннине чапа кăларас тĕллев тытрăн пулсан çав çулпах кай. Тарăнрах сухаласа паркарах çимĕç ӳстер.

Профессорăн ăслă канашне Караваев асрах тытрĕ, кĕçех вара яла, каллех çĕр ĕçченĕ патне, çитрĕ. Пĕччен те мар, эртелпе.

Юсов пек пысăк пуçлăхсене юрасшăн вĕсен портречĕсене ӳкерсе мар, анлă темăллă произведенисем шăрантарса палăрчĕ вăл юлашки çулсенче. Ювеналий Серафимович çыннăн ĕмĕт тӳпине вăл мĕнле пысăк ĕçрипе тата хăш картлашкана çити улăхнипе хаклать. Хăй те карьера пуснипе çавăнталлах тапаçланать вăл. Çав тĕллевпех «Çĕр тата çынсем» куравпа та усă курса юлма хăтланчĕ. Хăйне питĕ мăнна хуракан пĕр вĕçкĕн критика Мускавран килсен мăй таран ĕçтерсе-çитерсе тем те пĕр мухтанса йăпăлтатнă та, лешĕ Юсов пултарулăхĕ пысăк хак илнĕ тесе тивĕççĕр ырласа пĕтернĕ, Караваева асăнса çеç иртнĕ.

Çавнашкал икĕпитлĕхпе тĕрĕсмарлăхшăн Микулай хытах тарăхрĕ. Парти пухăвĕнче художникăн халăх умĕнчи тивĕçĕ çинчен ыйту сӳтсе явнă чухне вăл чăтаймарĕ, калас сăмаха Юсова куçранах каларĕ.

— Апла эсир йӳтенĕ шăлсăр ватăпа танлаштаратăр-ха мана, Николай Прокопьевич? — чĕрре кĕме пăхрĕ пуху хыççăн Юсов.

— Ман шухăша тĕп-тĕрĕс ăнланнăшăн эпĕ савăнатăп çеç, — лăпкăн хуравларĕ Караваев. — Чăнахах та, шăлсăр

эсир. Сăнарлă искусствăн хулăн хуппине катса унăн идейăпа эстетика тĕшшине халăха тутантараймастăр. Çĕршывăн ку чухнехи ӳсĕмĕсене сюжетлă-тематикăллă картинăсем çеç нумай енлĕн те тĕрĕс кăтартса пама пултарнине ăнланмастăр. Эсир хăвăр ĕçĕрсене çеç мала хуратăр, вĕсене тара тытса мухтаттаратăр. Тĕрĕссипе илсен вĕсем сирĕн хальлĕхе портрет-картина шайне лараймаççĕ-ха. Композицийĕ пурин те пĕрешкел, содержанийĕ чухăн, шухăш вĕçевĕ çук. Сăнарлă сăнӳкерчĕк майлă çеç курăнаççĕ.

— Эсир мар, истори тĕрĕс хак парĕ вĕсене, — куçĕсене сиввĕн çиçтерсе илчĕ Юсов.

— Пустуй сăмах, — аллине сулчĕ Караваев. — Пултарулăх тӳри малашлăх вăхăчĕ мар, кашни сехетре хăйĕн историне çыракан халăх. Çавăнпа паянхи хака тивĕçлĕ ĕçсемех тăвар. Паянхи пурнăçпа пурăнмалла, ыранхине курса ĕçлемелле. Çакă пулмалла мар-и-ха вара пирĕн пултарулăхри тĕп йĕр?

— Манăн хамăн тĕп йĕрĕм пур, — парăнасшăн пулмарĕ Ювеналий Серафимович. — Мана çав йĕр пурнăç тума пулăшнă.

— Эсир, Юс Юсов, — тахçанхине аса илсе каларĕ Караваев. — Ача чухнех ултавлă йĕр çине ӳкме тăрăшрăр та, çав йĕре пулах канлĕ пурнăç турăр, суя чап керменĕ купаларăр. Камсем пуль тетĕр-ха эсир сăрлакан «геройсем»? Вăхăтлăха пысăк вырăнта ларакан каппайчăк бюрократсем, мăнкăмăллăх тĕтринче мухтав сывлăшĕпе пӳлĕннĕ, пуш сăмах çапма юратакан, чапшăн çунакан пуçлăхсем. Акă камсем вĕсем! Паллах, лайăх-ха сана вĕсен хӳттинче пурăнма! Анчах... нумайлăха мар!

Караваев çак сăмахсене каларĕ те тек Юсовпа тавлашса тăмарĕ, ун патĕнчен хăвăрт пăрăнса утрĕ.

## 4

Малаш Аркашĕнчен пурте шалтах тĕлĕннĕ. Çăварĕнчен тухма пĕлмесĕр çакăнса çӳренĕ пирус тĕпне çунтарсах ячĕ-ши е çăтса ячĕ — çук, туртмасть халĕ вăл. Тăрмаланчăк çӳçне те ав каччă чухнехи пек çур пуç хăварттарса кастарнă. Сухалне кашни ир хырать. Сăнĕпе çуталса кайрĕ те, пăхма та кăмăллă. Чи малтанхи хут ферма пӳртне якатнă

шăлаварпа, улăм шлепкепе, çап-çутă тасатнă пушмакпа пырса кĕрсен Укахви Караваева çăварне те карсах пăрахрĕ:

— Ха, тĕнче! Эс, мĕн, паян ĕçлесшĕн мар-и? Хăнана кайма тухмарăн пуль те?

Малаш Аркашĕ курпунне тӳрлетсе тĕксĕмленнĕ тĕкĕр çине пăхса илчĕ, унтан кĕске мăйăхне пĕтĕрем пек турĕ те кăххăм-кăххăм ӳсĕркелесе мăнкăмăллăн калаçма пуçларĕ:

— Ай, эсĕ, Укахви, хăв çеç капăр тумланма пĕлетĕп тетĕн-и? Аркаш культура урапи çинчен тăкăнса юлнă тесе шутлама тытăнманччĕ-и? Çук уш, шалиш, эпĕ те этемех, эпĕ те хамра культура тенине ялав пек çĕклесе çӳреме пултаратăп. — Унтан пӳлĕмре никам та çуккипе усă курса хăюллăнах ыйтрĕ: — Ну, мĕнле, капла килĕшетĕп-и ĕнтĕ?

Укахви кулса ячĕ:

— Ак тĕнче! Кавалер тупăнчĕ те иккен ман. Килĕшмесĕр, капла этем теме пулать хăть. Ăçта кайма тухрăн?

— Хă, хăçан та пулин курнă-и эсĕ мана ĕç вăхăтĕнче таçта йăкăртатса çӳренине?

— Курман та... Ăнланмарăм-ха тем.

— Тоттă çав. Ăнланас пулать: эпĕ ку таранччен те ĕçе сăлтавсăр тухманни пулман. Уяв мухмăрĕ-сухмăрĕпе те — как штык... Паян та... мĕн, леш çав Алексей Михалч ӳкерес пек калаçрĕ те... Кавалер пулма тесен... Итле-ха, пĕччене хăрăнса пурăнатăн вĕт? Эпĕ те карчăксăр тăрса юлтăм. Нивушлĕ арçын ăшши...

Укахви ку сăмахсене илтсен чăхлатсах кулса ячĕ.

— Кай, ан култарах яла! Çынсем пĕлсен тем калĕç.

— Эпĕ мĕн мар, вăрттăн...

— Ак парам сана — вăрттăн! Пшул кунтан!

— Вăт тăк пурнăç: ват пăшала пшул тесе пăрахăçлама пуçларĕç те... — ĕнсине сулахай аллипе хыçса илчĕ Малаш.

— Эс, Аркаш, этем ретлĕ пулас тени лайăх-ха, — шӳтлемесĕрех каларĕ хальхинче Укахви. — Малашне те çапла çӳре, тăрпалтай ан пул, ыттисене те культурăна вĕрент. Курăнакан агитаци вырăнне. Халь эс эрех ĕçместĕн, табак туртмастăн...

— Хĕрарăмсемпе явăçмастăн... Çапла-и? — каласа пĕтерме памарĕ Малаш.

— Ара, çав, хĕрарăмсемпе явăçаймастăн... Çавăнпа сан

агитатор çеç пулмалла, халăх хушшинче чĕлхепе ĕçлемелле. Шухăшлатăп та, тутăр çыхтарса хĕрарăмсен канашне илмелле мар-и сана?

Темиçе хут хăй тăрăх пăха-пăха илнĕ хыççăн Малаш Аркашĕ тĕкĕр умĕпе каçăрălса юнашар пӳлĕме кĕрсе кайрĕ, капăр тумне хывса шкапа çакрĕ, комбинезон, атă, карттус тăхăнчĕ. Вăл каялла тухнă çĕре Укахви çукчĕ ĕнтĕ. Тулта Аркаш тракторне тапратса вите пуçне кĕрлеттерсе çитрĕ, прицепне майлăрах вырăна куçарса лартрĕ, ун хыççăн витери транспортера хута ячĕ. Сысна пăхакансем лента çине тислĕк ывăтма тытăнчĕç. Куна Укахви çине тăнипе-ха Андреев сысна фермине трактор уйăрса пачĕ, ĕçлеме Аркаша хушрĕ. Халĕ вăл кунта тракторист та, ытти механизмсен хуçи те хăех. Кивĕ «Беларуçăн» та пĕлекен алăра усси пурах. Руль умне ларнăранпа Малаш хăй те унчченхинчен çивĕчленчĕ.

Иртнĕ уйăхра районтан пулăшма килсен Малашов фермăран тухма та пĕлмерĕ. Тасатмалли системăна юсанă çĕрте унăн тавçăрулăхĕпе ăста алли питĕ кирлĕ пулчĕ. Çапах та тислĕке çырмана юхма чараймарĕç-ха.

Амасем усракан витере Укахви тислĕк тасатать. Тепĕр кĕреçе илсе кĕçех ăна Аркаш та пулăшма пуçларĕ.

— Эх, Укахвийĕм, Укахви, — шеллесех шеллерĕ вăл эхлете-эхлете ĕçлекен хĕрарăма. — Пăхатăп та, хăвна валли ху инкек шыран эсĕ.

— Куна мĕн пирки эс?

— Ак çакăн пирки.

— Маншăн ĕç вăл. Эпĕ сысна пăхма, витере çăрăлма хăнăхнă.

— Халĕ заведующи вĕт-ха эсĕ. Хуçа, урăхла каласан. Хуçа вара хура ĕç тумасть, камантă çеç парать.

— Камантине итлекенĕ вырăнта пулсан кĕреçе тытмăттăм та, тем килмерĕ-ха çаплах ман пĕчĕк кин. Каллех çывăрса юлнă ĕнтĕ. Уншăн мĕкĕçленме тивет.

— Çавна калатăп та сана. Унран çын тăвасшăн ху эсĕ ăна фермăна ĕçлеме илтĕн. Анчах ненай çав... Манăн карчăк та ав пĕр ĕçме ярăнсан юсанаймарĕ, йăпатса та, ватса та пăхрăм. Паян кун та пурăнмалли çынччĕ. Эх, çав манерсĕр ĕçке-çике... Çавăнпа калатăп та: Антун арăмне те шанма хĕн.

— Ачисене шалккă-çке. Хăйне те тата ĕçпе юсас килет.

Аркаш янахне пĕр хушă кĕреçе аври çине тĕкĕлесе тăчĕ, тислĕк хыракан Укахвин пиçĕ кĕлетки çăмăллăн вылянса хускалнине куç хĕррипе сăнакаласа пăхрĕ те хаш сывласа илсе каллех ĕçе пикенчĕ, çав хушăрах сăмах çаптарма та манмарĕ:

— Хам куçпа куртăм, кинӳ паçăрах Машуксем патне кĕрсе кайрĕ. Хыççăн Антунĕ сĕнкĕлтетсе пыратчĕ. Хальччен кайнă ĕнтĕ вĕсем...

Çакна илтсен Укахви тӳрех ĕçлеме пăрахрĕ. Тарăхнипе пичĕ-куçĕ хăрушла улшăнчĕ.

— Чăнах-и?

— Мĕн тума суяс ман сана? Фермăри ĕç-пуç мана пăшăрхантармасть пуль тетĕн-и? Ушкăн подрячĕпе ĕçлетпĕр-çке.

Ĕç хыççăн вĕсем витерен пĕрлех тухрĕç.

— Туршăн-хĕвелшĕн те, хам ача пулсан, сухăр вĕлтренпех ăшаламалла ку йĕксĕксене, — ятлаçса илчĕ Укахви çиллине çаплах шăнараймасăр.

— Мда, — хирĕç ним тавăрса калама пĕлмерĕ Малашов. — Темле пурăнса ирттермелле вĕсемпе...

— Шӳт-и, çав ĕçкĕ мурĕ арçынни-хĕрарăммине те çавапа çулнă пекех çулать. Юлашки çулсенче хамăр ялтах ав миçе вăйпитти çын вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Чармасан колхозра ĕçлекен çынĕ те юлмĕ, йĕркеллĕ ача-пăча та çуралмĕ. Пĕтĕм халăхпа кар-р! тытăнса кĕрешмелле ку манерсĕр ĕçкĕпе.

— Эппин, атя тытăнăпăр алла-аллăн, утар çавсене хирĕç. Ав кунталла килеççĕ вĕсем! — ял еннелле аллипе кăтартрĕ Малашов.

Чăнах та, лерен тăваттăн çывхараççĕ. Малта Кĕве Кĕпитунĕ Антун арăмне çавăтса пырать, вĕсенчен ик-виç чалăшра Машукпа Антун тайкаланса утаççĕ.

— Аш-какай фабрикин директорĕпе ун çумçаккине Малашов юлташа хĕрӳллĕ салам! — авкаланса илчĕ вĕсем патне çитерехпе Кĕве.

— Çурасем сутаççĕ терĕç те, — саркаланса хăлаçланчĕ Машук.

Хăйне çумçакки тенĕшĕн Малашов çав тери тарăхса кайрĕ, алăри патакĕпе Кĕпитуна пуçĕнчен тыттарса яма та тăнăччĕ, Укахви чарчĕ.

— Кĕве мар, хура çĕлен иккен эсĕ! — шăл витĕр сăрăхтарчĕ Аркаш.

Юлашкинчен Укахви хăй те чăтаймарĕ, карта çинчи самаях вăрăм чĕн татăкне ярса тытрĕ те пĕррех шăллĕне çурăм тăрăх туртса касрĕ. Антун хирĕç тăма хăтланчĕ, анчах аппăшĕ ăна татах темиçе хутчен çине-çинех çатлаттарчĕ. Чарма пынă кинне те çав самантрах туянтарчĕ.

— Тата сире те кирлĕ-и?! — Кĕвепе Машук патнелле талпăнса çывхарчĕ Укахви. — Çӳреттереп мăшкăллаттарса!

Кĕве Кĕпитунĕ, Укахви пĕр çилленсе кайсан мĕнлереххине пĕрле пурăннă чухнех курса пăхнăскер, вăшт çеç аяккалла пăрăнчĕ. Машук таса мар аллисемпе питне хупласа уласах йĕрсе ячĕ:

— Каçар, ан тив мана, Укахви.

Ун патне ыткăнса çитнĕ Укахвин самантрах алли усăнчĕ. Çапах та хĕрарăм чунĕ мар-и, тантăшне хĕрхенчĕ те вăл.

— Нивушлĕ ăнланмастăн, Машук, — чĕререн каларĕ вăл ăна, — пурнăçна çав путсĕр ĕçкĕшĕнех сая яратăн вĕтха. Намăс мар-и хĕрарăм пуçупа çапла нĕрсĕрленсе кайма. Пĕтĕм ял кулать халь кинпе иксĕртен. Пӳрт лартмалла сан, кĕçех ывăлна та авлантармалла. Турă пул, итле мана: пăрах та ĕçме пыр ман пата фермăна.

Аяккарах пăрăнса тăнă Малаш çак сăмахсене илтсен тарăхсах кайрĕ. Караваева каллех вĕсем валли тепĕр кĕсен шырать. Эртел кĕсенĕ. Паян акă Антун арăмĕшĕн ĕçлеме тиврĕ, ыран вара çак епрешкешĕн тар тăкмалла пулать-и? Ытла та йĕркерен тухрĕç ку хĕрарăмсем çăмăл пурнăçа пула. Ĕçекен çынна сыснапа танлаштараççĕ те, сысна, туршăн та, вĕсенчен тасарах. Çак Машук патнех акă çывăха пыма та йĕрĕнмелле. Çăварĕнчен çеç те мар, пĕтĕм кĕлеткинчен темле усал шăршă перет. Пĕтĕмпех сăра-эрех шăрши витĕр çапса лартнă.

Кĕçех Машук тенкел çине тăсăлса выртрĕ те харлаттарма пуçларĕ.

Няманов художник çитсен Аркаш ăна хăлхаран пăшăлтатрĕ:

— Тархасшăн, мана кунта мар, трактор умĕнче ӳкерĕр.

Художник итлерĕ, вите пуçĕнче этюдникне уçса хулăн хытă хут, сăрăсем, киçтĕк хатĕрлеме пуçларĕ.

## 5

Картина галерейи майӗпен майлашӑнса ҫитет те ӗнтӗ. Пӳлӗме кӗрсенех сулахай енче тӑватӑ рете вырнаҫнӑ салтаксен сӑнӗсем чӗррӗн курӑнса каяҫҫӗ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑн вилнисен портречӗсем те вӗсен ҫумӗнчех. Сылтӑм енче — хисеплӗ колхозниксем. Янгорчин портретне унта ӗнер кӑна вырнаҫтарчӗҫ-ха. Василий Иванович хӑйне ӳкерттерес мар тесе чылайччен турткалашнӑччӗ. «Ырӑ мар мана ҫак ятлӑсумлӑ ӗҫченсем хушшинче ларма», — тетчӗ. Аран ӳкӗтлесе ҫураҫтарчӗҫ ӑна. Пит лайӑх тухнӑ хӑй, яланхи кӑмӑллӑ кулли пӗтӗм пӳлӗме ҫутатса янӑн туйӑнать. Хӑйӗн ҫивӗч куҫӗсемпе: «Ырӑ ир пултӑр сире, хаклӑ колхозник тусӑмсем! Паян пирӗн ҫак ӗҫсене тумалла пулать...» — тесе калать тейӗн. Вырӑнти радиопа ҫак сӑмахсене каласа вӑл кашни ир хӑйӗн ӗҫне ҫапла пуҫлатчӗ. Микулай Караваев унри ҫынлӑхпа ырӑ кӑмӑла, хресченле тимлӗхпе ҫирӗплӗхе тата пурнӑҫ хаваслӑхне ытла та тӗрӗс кӑтартса пама пултарнӑ.

Костин художниксемпе тата ял ҫыннисемпе пӗрле Мускав парнисене ӑҫтарах вырнаҫтарсан лайӑх пуласси ҫинчен канашлать.

— Пӗтӗм ҫӗршыв историйӗ-ҫке кунта, — хаваслӑн калаҫать Венера Пашкова. — Халӗ ӗнтӗ кунтах, ҫак кермен-тех, Диксон утравӗ ҫинче те, Челябинскри трактор заводӗнче те, Севан тӑрӑхӗнче те пулса куратпӑр...

— Эс, Венера Иосифовна, кил-ха кунтарах, — хӑй патне чӗнчӗ ӑна Каравай Пракухӗ. — Щербаков художник мӗн ӳкернӗ тетӗн пуль кунта?

— Хӗвел анӑҫ Украина Советлӑ Украинӑпа пӗрлешнӗ вӑхӑта, — тӑруках ӑнланмарӗ ӑна Венера.

— Аҫуна аса илтӗм-ха. Иосиф Иванович, ялти пӗрремӗш танкист, шӑпах ҫав кампание хутшӑннӑ. Кала ӑна, килсе куртӑр.

— Галерея уҫнӑ чух пурне те чӗнӗпӗр, — пӗлтерчӗ Костин.

— Акӑ «Прага, 1945 ҫул» картина. Ӑҫтан манӑп-ха эпӗ ҫав вӑхӑта, — шухӑша кайса калаҫрӗ Пракух. — Хам та хутшӑннӑ-ҫке вӑл хулана ирӗке кӑларма. Тӗрӗсех, унта чечекӗ те, савӑнӑҫӗ те, куҫҫулӗ те — пурте пӗрлех пулнӑ.

Художник çав паллă саманта йăлтах хăй курса тăнă пек ӳкерсе кăтартнă. Чим-ха, Конев маршал вĕт ку?

— Ара-çке, — çирĕплетрĕ Костин. — Тепри бронетанковăй çарсен маршалĕ Рыбалко, ак ку — арми генералĕ Лелюшенко.

— Куна, туршăн та, хамăр фронтовиксен сăнĕсемпе хирĕçех çакăр, — сĕнчĕ Пракух. — Пирĕн ял паттăрĕсем те аслă çар пуçĕсемпе пĕрле пулччăр.

— Акă ман валли те телей сиксе тухрĕ, — хĕпĕртерĕ Костин.

— Ку çӳллĕ картинăна, «Ленинпа Горькие», вулав пӳлĕмне çаксан вырăнлăрах пулмалла. Сулахай кĕтесри чӳрече çумне шăпах вырнаçма кирлĕ, — ырă канаш пачĕ Няманов.

Тепĕр куннех Çĕрпелне Караваев вĕçтерсе çитрĕ, Культура керменĕнче типтерлĕн вырнаçтарнă картинăсене тимлĕн пăхса çаврăнчĕ. Пĕр илем ĕçĕ çеç килĕшмерĕ ăна: Семен Самлиров колхоз механизаторĕсене ӳкернĕ картина. Пăхсан тӳрех пит тиркемелли те çук пек-ха ăна. Мĕн кирли пурте пур темелле унта: хурăнсем çумĕнчи юсав мастерскойĕ, гараж, инçех те мар — комбайнсем, умри планра — механизаторсем. Шел те, çамрăк художник вĕсене шайлашу саккунĕсене тытса пыраймасăр, куçа мĕнле курăннă çапла сăрласа лартнă. Çавăнпа та вĕсем чĕрĕ çынсен мĕлкисем пек çеç пулса тухнă. Мĕтри пиччĕшне эртелтен уйăрса темле чалăшраххăн ӳкерсе хунă. Укахви Мишши стена çумне çыпăçтарнă уйрăм ӳкерчĕк пек курăнать. Малаш Аркашĕн сăн-питĕнче нимĕнле хускану та, çĕкленӳлĕх те сисĕнмест. Тĕплĕн шухăшламасăр ӳкернĕ картина сăнарлă искусство произведенийĕн шайне çитеймен, çавăнпа та Караваев ăна кунтан илтерчĕ.

Костин патне çӳлти хута хăпарсанах чӳрече çумĕнчен Микулай çинелле Ленинпа Горькин кăмăллă куçĕсем ăшшăн пăхрĕç.

— Кĕнеке илме килекен кашни çын тӳрех халь çак чаплă произведение курать, — савăнăçлăн пăхса илчĕ çав картина çине библиотека пуçлăхĕ.

— Ман пуçра та ырă шухăш çуратрăн эсĕ, Ванька,— тусĕн икĕ аллине те тытса чăмăртарĕ Караваев. — Картина нумай халĕ пирĕн, виç çĕртен те иртет, татах хушă-

нать-ха... Пĕчĕк зала пурне те шăнăçтараймăпăр. Галерея валли ятарласа çурт лартма тивет.

— Тĕрĕс, ку ыйтăва правленире хускатмалла. Колхозăн вăй çук мар халĕ. Банкра ирĕклĕ тыткаламалли укçа виçĕ миллионран та иртнĕ, — хавасланса кайрĕ Костин.

— Унччен мĕн тăвăпăр?

— Шухăшламалла пулать.

— Çапла тăвар мар-и? Колхозри кашни бригадăпа фермăра, машинăсен паркĕнче, столовăйра, правленипе ял советĕнче темĕн чухлĕ пушă стена. Çакас мар-и кунта вырнаçман картинăсене çавăнта? Ун чухне пурте халăх куçĕ умĕнче пулĕ.

— Килĕшмеллех унпа: хамăр колхозрах ялан ĕçлекен ӳнер куравĕ пулать, — савăнăçлăн пуçне сулкаларĕ Костин.

...Акă ĕнтĕ сисĕнмесĕрех ял хуçалăх ĕçченĕсен кунĕ те çывхарса çитрĕ. Хĕвел йăлкăшса тухрĕ. Çанталăк тӳлек. Андреев ирхине ирех колхозра воскресник ирттересси çинчен радиопа пĕлтерчĕ.

— Янгорчин çулĕ çине йывăç лартма хамăн та каясха, — кĕреçе хатĕрлеме пуçларĕ Каравай Хĕветучĕ.

— Вăю пулсан айта эппин, — хирĕçлемерĕ ывăлĕ. — Ырă ĕçпе паллă тăвар хамăр праçнике.

Аслашшĕн сăмахĕсем юнашар тăракан Микулая тахçанхине аса илтерчĕç. Пĕрре çапла Шупашкартан килнĕ чухне Пашковах район центрне каякан çула Янгорчин ятне парас пирки сăмах тапратнăччĕ. Микулай ун пирки никампах та калаçаймарĕ. Халăхра акă çаплах калаççĕ те: Янгорчин çулĕ теççĕ.

Воскресника тухнă çынсем хушшинче Караваев хăйĕн ушкăнĕнчи художниксене те — Няманова, Ушкина, Климова, Самлировпа Палнаева асăрхарĕ. Вĕсем ун пек ĕçрен нихçан та ютшăнса тăмаççĕ. Янгорчин хăй те çемйипех тухнă. Авă Венера. Хĕр кăвак куртка, джинс шăлавар, спорт пушмакĕ, çыхнă çăм калпак тăхăннă. Прицеп кăкарнă «Беларусь» кабининчен Илюш ыйтуллăн пăхать. Питомникран кӳрсе килнĕ хунав йывăççене вăл çул тăрăх пушатса тухрĕ. Колхоз садĕнче Микулайпа Венера пĕрле улмуççи лартнăччĕ. Хальхинче апла пулмарĕ. Пĕри пĕр енче, тепри тепĕр енче ĕçлерĕç.

Кӑнтӑрла иртсен ҫынсем Культура керменне уяв чухнехилле капӑр тумланса пуҫтарӑнчӗҫ. Ҫак савӑнӑҫлӑ куна ял халӑхӗ хӑҫантанпа кӗтет ӗнтӗ. Акӑ тинех ҫитрӗ вӑл. Илемлӗх тӗнчин аслӑ алӑкӗ яриех уҫӑлчӗ. Караваев галерея хуҫине Костина хаклӑ хут тыттарчӗ. СССР художникӗсен союзӗ «Шурӑмпуҫ» колхоза ӗмӗрлӗхех картинӑсем парнеленине ӗнентерет вӑл. Вӗсемсӗр пуҫне залра чӑваш художникӗсен паллӑ произведенийӗсем те чылай. Вӗсене колхоз ҫыннисене халалланӑ.

— Уҫрӑмӑрах вӗт хамӑр ялта «Третьяковка»! — савӑнӑҫне ниҫта хураймасӑр ыталаса илчӗ тусне Костин. — Пысӑк ӗҫ турӑр эсир. Халиччен Чӑвашра нихҫан пулман паха ӗҫ. Нимӗнле скептиксем те чарма пултараймарӗҫ пирӗн культура аталанӑвне. Эпирех ҫӗнтертӗмӗр. Ҫавӑншӑн пурсӑра та сире чӗререн тав тӑватпӑр.

## 6

Художниксен «Пучах» ушкӑнӗ Ҫӗрпеленчи тӗп ӗҫӗсене вӗҫлесе пырать ӗнтӗ. Ӑмӑртӑва пӗтӗмлетме те пулать. Хӗл кунӗсенчен пӗринче колхоз председателӗ Андреев Караваева:

— Пучахпа киҫтӗк уявӗ ирттерер пуль, — терӗ. — Эсир пирӗн халӑха илемлӗх тӗнчин алӑкӗпе чӳречине касса патӑр, хитрелӗх енне пӑхма пулӑшрӑр, вӗрентрӗр. Ял пурнӑҫӗ халӗ сирӗнсӗр чухӑн пек туйӑнать. Ҫак ҫулсенче сире ҫынсем хӑнӑхрӗҫ, сирӗнпе туслашрӗҫ, ҫывӑхланчӗҫ. Мӗн чухлӗ картина парнелерӗр. Нимле хакпа виҫме ҫук ӑна. Эсир — пирӗн чи сумлӑ ҫынсем.

Ҫӗр ӗҫченӗсемпе искусство ӑстисен пӗрлехи пухӑвне тӗплӗн хатӗрленчӗҫ. Костин ялти театр артисчӗсемпе каҫсерен репетици ирттерчӗ. Культура керменӗн малти пӳлӗмӗнче ҫӗнӗ картинӑсен куравӗ уҫӑлчӗ.

Караваев унта пырса ҫитнӗ тӗле ҫынсем пухӑнма пуҫланӑччӗ ӗнтӗ. Сӑнарлӑ искусство туртӑмӗ ваттипе ҫамрӑккин чӗрине те хускатнӑ. Ха, епле тӑрӑшса ӑнлантарать хӑйӗн пӗрремӗш учителӗ Пашков кураври ӗҫсемпе паллашакансене:

— Искусство вӑл, тӑвансем, ӑсталӑх, сӑнарлӑх, хитрелӗх. Пӗлетӗр-и ун пирки Лев Толстой мӗн каланӑ?

— Эп тесен, пӗлетӗп те, — куҫне мӑч хупса мухтанса илчӗ Малаш Аркашӗ. — Ыттисем темле. Кала, ӑс пар вӗсене, Иосиф Иванович, эсӗ маҫтӑр вӑл енӗпе, хӑв та ял художникӗ те, итлес.

— Ҫав ӑслӑ ҫын искусствӑна этемлӗх аталанӑвӗн иккӗмӗш хатӗрӗ вырӑнне хунӑ. Пӗрремӗшӗ ӗнтӗ чӗлхе, сӑмах. Ун шучӗпе, искусство вӑл сӑнарлӑ туйӑм урлӑ хальхи вӑхӑтпа кӑна мар, ӗлӗкхипе те, малашлӑхпа та калаҫма май парать...

Вӗсен сӑмахӗсене хӑлхана чикнӗ май Николай Прокопьевич ак ҫапла шухӑшларӗ: «Авалхи классикӑллӑ произведенисемсӗр Ҫӗрпелти галерея чухӑнрах. Подлинниксене тупма май ҫук паллах. Ҫавӑнпа Итали, Франци, Голланди, вырӑс художникӗсен картинисен репродукцийӗсене ҫакмаллах. Вӗсемпе те пулин паллашчӑр ял ҫыннисем.

Кӗҫех пуху та пуҫланчӗ. Караваев президиум сӗтелӗ хушшинчен залра ларакансене сӑнарӗ. Малти ретре Иосиф Ивановичпа арӑмӗ тем пӑшӑлтатса илчӗҫ. Пашков уксах урине малалла тӑснӑ, туйине айккине сӗвентерсе хунӑ. Укҫине инке халӗ те яш чухнехи пекех чипер. Унашкал ватӑлма пӗлмен, ҫамрӑк сӑн-сӑпата нумайлӑха усракан хӗрарӑм сайра тӗл пулать. Вӗсенчен тепӗр енче Малаш Аркашӗ янахне аллипе тӗкӗлесе ларать. Сӑнӗ унӑн яланхи пекех шухӑшлӑ, кӗҫ-вӗҫ тӑрса: «А пӗлетӗр-и эсир, тӑвансем, ӗлӗк... — тесе пӗр-пӗр интереслӗ истори ҫинчен калама тытӑнассӑн туйӑнать. Укахвипе Машук тата Антун арӑмӗ юнашар лараҫҫӗ. Халӗ вӗсем сысна ферминче виҫҫӗшӗ пӗрле ӗҫлеҫҫӗ. Ҫапла вара Укахви хӑй сӑмахӗнчен тухмарӗ, Малаш Аркашӗ умӗнче каланине турӗ-турех. Нумай пулмасть ӑна Чӑваш АССР Верховнӑй Советне те суйларӗҫ. Ывӑлӗ ҫулла авланчӗ, яла ӗҫлеме килнӗ врача качча илчӗ. Караваевсем пурте тенӗ пекех кунта. Аслашшӗ те акӑ Янгорчин ҫумӗнче. Микулай ашшӗпе амӑшӗ, Ҫветтуй Мӗтрипе ывӑлӗ президиум еннелле пӑхса лараҫҫӗ. Антун ҫеҫ Кӗве Кӗпитунӗнчен уйрӑлайман, кунта та иккӗшӗ пӗрле чӳрече ҫумне тайӑнса тӑнӑ. Янгорчин хӑлхаран пӑшӑлтатрӗ:

— Йышлӑн эсир, Ҫавра ҫӑкӑр йӑхӗ, хӑвӑрах ҫур колхоз. Кашни хӑй паттӑр. Пӗри ҫеҫ намӑс кӑтартать. Шутласан, мӗн пек маттур трактористчӗ Антун!

— Ан та кала ҫав, — хаш! сывласа илчӗ Микулай. — Анне те ӑна пула хуйхӑрса вилет.

Пухăва ертсе пыракан Ванюшин сăмах парсан колхоз председателĕ Андреев ура çине тăрса васкамасăр калаçма тытăнчĕ:

— Куратăр ĕнтĕ, юлташсем, иртнĕ пилĕк çуллăхра начарах ĕçлемерĕмĕр эпир, патшалăх умĕнче нихăш енĕпе те парăмра юлмарăмăр. Мускаври Халăх хуçалăх çитĕнĕвĕсен куравĕн хисеп хăми çине те лекме пултартăмăр. Художниксем те Пĕтĕм Союзри, Раççейри, зонăри куравсене хутшăнчĕç, хăйсен паха ĕçĕсемпе вăрçăпа ĕç паттăрĕсене вилĕмсĕр турĕç. Çакăн пек туслă çыхăну пирĕн ял историйĕнче пулманччĕ-ха. Чăвашсен сăнарлă искусство ăстисем çак пуян та савăк пурнăçшăн пирĕнпе пĕрлех аллаллăн кĕрешрĕç. Пирĕн çитĕнӳсенче вĕсен пайĕ те пĕчĕк мар темелле. Вĕсем пире хавхалантарса пычĕç, эпир — вĕсене. Çавнашкал пĕр туслă кăшăлра пирĕн пурнăç илемĕ. Пĕр эртел çыннисем пулса тăтăмăр. Çавăнпа правленипе партком «Пучах» ушкăнри художниксене «Хисеплĕ колхозник» ят парса чыс тăвасшăн. Эсир мĕнле шухăшлатăр кун пирки?

Залри халăх шавлăн алă çупса ячĕ. Сасăлаттарнă хыççăн Юрий Ильич художниксене черетпе хĕрлĕ хăю çакса ячĕ те хушса хучĕ:

— Колхозра тăватă бригада. Пирĕн шутпа, пиллĕкмĕш те пур халĕ. Вăл — художниксен «Пучахĕ». Хамăрăн хисеплĕ колхозниксем мĕнле çитĕнӳ тунине пурсăмăр та куратпăр. Çак ăмăрту кĕнеки çине пиллĕкмĕш бригадăна «пиллĕк» паллă лартса парас килет. Çавна çирĕплетсе сирĕн ятпа алă пусатăп.

Çынсем каллех хыттăн алă çупрĕç.

Караваев ял халăхĕ умĕнче «Пучах» отчетне туса пачĕ.

— Хисеплĕ хамăрьялсем! — терĕ вăл. — Эсир пире хăвăр пата тăванла ăшшăн йышăнса хăвăр чĕресене уçса патăр, ырă кăмăлăра кăтартрăр. Пире искусство тӳпинелле вĕçме хаваслантарса пытăр. Сирĕнпе пĕрле пулнипе эпир те çак пуян çĕр çинче çирĕп тăратпăр, çав çĕртен, çĕр çыннинчен сиплĕ вăй илетпĕр. Поэтсем пек каласан чун юрлать сирĕн хушăра. Тăрăшса ĕçлес, лайăхран лайăх ӳкерес килет. Пирĕн шухăшсем татах та анлă, малашне те вĕсене сирĕнпе пĕрле килĕшӳллĕн пурнăça кĕртсе пырăпăр. Хастар ĕçĕршĕн эпир те сире хамăр енчен «пиллĕк» паллă

лартма калаçса килĕшрĕмĕр. Илемлĕх тĕнчинчи телейшĕн «Хисеплĕ колхозник» ята яланах çӳлте тытма пулатпăр. — Çапла вĕçлерĕ Микулай хăйĕн кĕске сăмахне.

Пуху пĕтсен Каравай Хĕветучĕ художниксене алă тыта-тыта мухтарĕ:

— Вăт, ачамсем, паян эпир илемпе илемлĕх пирки нумай юмахларăмăр. Тĕрĕсех, илемлĕх те çыннăн хăвачĕ. Çав хăват та çĕр сĕткенĕпе ӳсет. Эсир çав сĕткене илме, ун вăйĕпе чаплăланма пултарнăшăн эпĕ темрен те хытă савăнатăп. Тарăн тымар ятăр эсир пирĕн çĕр çине. Çав тымар татах сарăлса паркалантăр. Эппин, пиллĕкмĕш бригада çимĕçĕ тата тухăçлăрах çитĕнтĕр.

Антун та пиччĕшне саламларĕ.

— Эх, Микулай де Каравай... — ассăн сывларĕ вăл. — Мĕн калама пĕлем-ши эпĕ сана? Хăвăн ырă ĕçӳпе эсĕ хамăр йăха çеç мар, пĕтĕм яла, района, чăваш халăхне чапа кăлартăн. Сан картинусем халĕ пĕтĕм çĕршывĕпе паллă. Халăх пăхса киленет вĕсемпе. Эпĕ, пĕр эпĕ çеç...

Микулай шăллĕ çине шелленĕ пек пăхса пуçне сулкаласа илчĕ:

— Кам айăплă тетĕн пуль куншăн? Йĕркеллĕ ĕçлесе пурăннă пулсан сана та пĕтĕм ял хисеплетчĕ те, халĕ мĕнха ĕнтĕ... Уйрăл эсĕ çав Кĕверен, вăран, уç куçна, хăвна ху алла илес пулсан Матви пичче те сана тĕксех ямĕ. Шухăшласа пăх, пĕтĕмпех пĕтнĕ çын мар-ха эсĕ...

Сенкер кăвак тĕслĕ бархат чаршав ик еннелле чăрăлтатса уçăлнă май халăх умне колхоз хорĕ тухса тăчĕ. Умĕнче — баян çакнă Костин. Микулай куçĕпе Венерăна шыраре. Акă вăл пĕрремĕш ретрех, чи варринче, хăй ун çинех тинкерсе пăхать пек.

— Тĕнчере виçĕ япалана юратать Костин, — ăшă куллипе пит-куçне йăлкăштарчĕ райком секретарĕ Янгорчин. — Кĕнекене, живописе тата музыкăна. Çак хора вăл утмăлмĕш çулта йĕркелерĕ те çавăнтанпах хăй ертсе пырать. Кам кăна юрламарĕ пуль унта? Халĕ ав пирĕн вырăна çамрăксем йышăнчĕç. Ванька çук-ха, ывăнма пĕлмест.

Микулай калаçăва хутшăнаймарĕ, Парнас Илюшĕ шăпах концерт пуçланнине çинчен пĕлтерчĕ, унтан кĕçех сцена умнелле Венера Пашкова акăш пек ярăнса утса тухрĕ. Костин рояль умне ларчĕ.

Тепӗр самантранах вара чуна тыткӑнлакан хаваслӑ кӗвӗ ҫаврӑмӗ чӳхенсе илчӗ те, Илюш Малашов сӑмахӗсемпе ҫырнӑ юрра Венера ҫӗкленӳллӗн янӑраттарса шӑратма пуҫларӗ:

Шурӑмпуҫ ҫутипех вӑранаҫҫӗ
«Шурӑмпуҫӑн» маттур ҫыннисем.
Питӗ туслӑн вӗсем тытӑнаҫҫӗ
Уҫӑ кӑмӑлпалан ҫӗн ӗҫе.

Хор мӑнаҫлӑн хушса хучӗ:

Ҫӗрпелпеле Хурӑнсуртан
Ҫӗнӗ Тукайкасси таран
Янрать-ҫке паттӑрлӑх сӑвви —
Телейлӗ пурнӑҫӑн кӗвви.

Юлашкинчен композиторӗ, сӑвӑҫи, юрӑҫи виҫҫӗшӗ юнашар тӑрса халӑха пуҫ тайрӗҫ.

Киле таврӑнсан Микулай чылайччен ҫывӑрма выртмарӗ. «Шурӑмпуҫ» колхозра, чӑнах та, вӗсем Юсовсене хӑйсем умӗнче ҫӗлӗк хывтармалӑхах курӑмлӑ ӗҫ турӗҫ. Ялти кашни кун чӑн-чӑн художник валли пуҫра мӗн те пулин ҫӗнни ҫуратать, вӗсене вӑхӑтра тытса илсе ӑспа чун витӗр шӑрантарса кӑларма кӑна пӗл, вӗҫӗмсӗр аталану йӗрӗ ҫинче пурнӑҫ чӑнлӑхне илемлӗн сӑнарла. Микулайпа унӑн юлташӗсемшӗн халь ҫӗр ҫыннисем пурнӑҫри чи ҫывӑх та тӑван сӑнарсем пулса тӑчӗҫ. Вӗсемпе Караваев тивӗҫлипех мухтанать, вӗсене хӑйӗн аслӑ вӗрентекенӗ вырӑннех шутлать.

Ҫывӑрма выртас умӗн вӑл Малаш Илюшӗ пухура тыттарнӑ япалана портфелӗнчен кӑларчӗ. Чӗркенӗ хутне салтрӗ те тӗлӗннипе шаках хытса тӑчӗ. Ун умне Пукиревӑн «Тан мар мӑшӑрлану» картини тухса выртрӗ. Вун тӑххӑрмӗш ӗмӗрти паллӑ вырӑс художникӗ хӑйӗн картининче пӗр кӑптӑрмӑш сановник питӗ чухӑн хӗрпе венчете тӑнине чуна ыраттармалла уҫса панӑ. Василий Владимирович картини Третьяковкӑра хӑш тӗлте ҫакӑнса тӑнине те астӑвать-ха Караваев. Шухӑша яракан, ӗлӗкхи пурнӑҫӑн танмарлӑхне, чиркӳ ҫыннисен икӗпитлӗхне, этеме ним вырӑнне хумасӑр пусмӑрланине питлекен питех те вӑйлӑ произведени ку. Акӑ ватӑ ҫын ҫумӗнчи хуйхӑллӑ ҫамрӑк пике... Хыҫалта — хӑйӗн телейӗпе ӗмӗрлӗхех сывпуллашакан, сирӗлми хурлӑхпа асапланакан хитре сӑн-питлӗ ҫамрӑк.

Йĕкĕт репродукци хыçне çак сăмахсене çырнă: «Хисеплĕ Микулай де Каравай! Куна эпĕ Мускаврa ВДНХра пулнă чухне ятарласах сан валли туянтăм. Кăштах урлăпирлĕ шухăшласа пăхатăн пуль тесе парнелетĕп. Сана яланах чĕрере тытакан Илья Малашов».

## 7

Сакăр вуннăмĕш çулсен вĕçĕ Караваевшăн этемлĕх шухăшĕпе культурин аталанăвĕ çĕнелсе улшăннă тапхăр пуçламăшĕ пекех туйăнса кайрĕ. Çĕршывпа халăх пурнăçĕнчи хăватлă улшăнусем искусство тĕнчинче те халичченхи лăпкăлăха ним шелсĕр хускатрĕç. Художникпа вăхăт, вăхăтпа художник пурнăç кĕрешĕвĕнче пĕр-пĕринпе яланах чи çирĕп çыхăнура пулмаллине кăтартса пачĕ. Вăл хăй те ĕнтĕ халĕ тарăнраххăн шухăшлакан, хăйĕн çĕршывĕпе халăх умĕнчи тивĕçне пĕтĕм чун хавалĕпе ăнланакан пулчĕ. Чăннипе илсен Микулай унччен те кĕрешӳ айккинче тăман-ха, юлашки çулсенче яланах унăн хĕрӳллĕ аварĕнче пиçĕхсе-туптанса пынă, пурнăçа çĕнетекенсен уттине вăйлатма пулăшнă, искусствăри хăюллă улшăнусенчен сехĕрленекенсемпе, чунне парса ĕçлемен çынсемпе, пуçлăхсене пуççапакансемпе, хăйсене хăйсем мухтаканĕсемпе, чапшăн çунакансемпе пĕр килĕшӳсĕр кĕрешнĕ, халĕ те кĕрешет. Вăл кирек хăçан та хăй мĕн ырри-лайăххине вĕреннине, пĕлнине, пурнăçран илнине тата шухăшласа та кăларнине «Пучах» ушкăнĕнчи художниксене парса пыма тăрăшать. Эртелпе пĕрле чăнлăха, тĕрĕслĕхе çивĕч куçпа хак панă май вăл хăйĕн ĕçĕпе çынсене ырăпа усала витĕртерех курса уйăрма, пурнăçпа çут çанталăкăн çепĕç те килĕшӳллĕ кĕввине чун-чĕрепе ăнланса туйма хăнăхтарать. Искусство чĕлхипелен илемлĕхе çын чунĕ патне çывхартса ăна этемĕн уйрăлми пайĕ туса хурассишĕн çунать. Уншăн суя, ултав, ячĕшĕн тунă ĕç, пултарусăрлăх яланах ют пулнă. Вăхăт хумĕн капланăвне ăша хывса, вĕсем, пĕр чăмăра пĕрлешнĕ художниксем, халăхпа пĕрле ялти тĕлĕнмелле улшăнусем витĕр тухса, çĕнетӳ тĕрĕслевне тивĕçлипе хатĕрленчĕç. Вĕсемшĕн халĕ искусствăри «çĕрчĕтренӳ» хăрушă мар. Караваева та, «Пучах» ушкăнĕнчи ытти художниксене те Чăваш художникĕсен Союзĕнче юлашки

вăхăтра палăрма пуçланă социаллă сӳрĕклĕх, пăтрашуллă йĕркесĕрлĕх, пĕр вырăнта тапăртатса тăни, кивĕлĕх пăнтăхлăхĕ хумхантармасăр тăма пултараймарĕ. Çук, вĕсем çак хирĕçле палăрăмсемпе пĕртте çырлахса ларман. Микулай Караваев вĕсемпе уйрăмах çине тăрса кĕрешнĕ. Анчах та яланах çĕнтерме пултарайман. Нумай çул хушши çынсен ăс-тăнĕнче, ăш-чикĕнче чулланса ларнă кивĕлĕх туйăмĕ паян та çирĕп-ха. Хăш-пĕр çынсен ăшĕнче ăна вулкан пек хăватлă вăй та тӳрех силлесе тăкаймасть иккен. Вăл хăйĕннех тăвать, çутта курмăш, кисренĕве илтмĕш пулса аталану вăйне чарса лартма хăтланать. Мĕншĕн тесен çав вăй, тытса тăмасан, ăна хăйне хупласа лартма, аркатса тăкма пултарать.

Юсов ертсе пыракан комисси «Пучах» ушкăнĕн ĕçĕсене Мускаври курава тăратма килĕшменни Караваева уртарсах ячĕ. Тематика хыççăн хăваласа васкавлă сăрланă, пиçсе çитмен пĕр кунлăх картинăсем ăсатса чăвашсен сăнарлă искусствине намăс кăтартма пултарасси çинчен вăл Ювеналий Серафимовичпа хĕремесленсех тавлашрĕ. Унта Караваев Лев Климовăн «Тунсăх» картинине питĕ тăратасшăнччĕ. Тăван çĕр çийĕн çирĕппĕн утакан фронтовик пĕтĕм çут çанталăка вăратнă тейĕн. Хресченĕн тарăн шухăш-туйăмĕнче мал ĕмĕтпе шанăçлăх кĕвви çиеле тухса пырать. Çутăпа тĕссен килĕшӳлĕхĕнче — чун-чĕре кĕвĕлĕхĕ. Сăнарлăх уçлăхĕнче çав салтак-хресченпе пĕрле малалла вĕçнĕ пек пырас, шухăшлас, хумханас килет. Лев Викторовичăн çак ĕçне Караваев «Çĕр суранне сиплекен» картининчен те маларах хурать. Çапах та хальлĕхе кĕвĕçекенсен ушкăнĕ çиелех тухасшăн-ха. Юсовпа унăн хӳрешкисем кашни утăмрах ура лартма пăхаççĕ. Художниксен пĕр аслă пухăвĕнче Караваев вĕсене ним хĕрхенмесĕр çунтарчĕ.

— Чăваш сăнарлă искусствине чун-чĕрепе парăннă художниксем паянхи паттăрсен ĕçне-хĕлне, пурнăçне анлăн та тарăннăн кăтартса парассишĕн пĕтĕм пултарулăхне парса ĕçленĕ хушăрах, — терĕ вăл, — Юсов юлташ пек уйрăм ӳкерӳçĕсем художникăн гражданла тивĕçĕ çинчен манаççĕ, пуçлăхсем умĕнче темле майпа та йăпăлтатса суя мухтавпа витĕнсе пурăнаççĕ. Вĕсен чĕрисене тахçантанпах ĕнтĕ мăнкăмăллăх тутăхĕпе йăшăклăхĕ кишеклесе çиет. Вĕсем пурнăç кĕрешĕвĕнчен чап хӳми хыçне пытанса мухтава

тухас ёмётпе кăна аслăрах вырăнти уйрăм çынсен портречĕсене ÿкереççĕ. Пултарулăхпа ăсталăх çитеймен пирки унашкал «генисем» хальхи вăхăтри «вилĕ чунсен» тĕссĕр сăнарĕсене куравсене илсе тухаççĕ. Ку, паллах, вĕсен айăпĕ кăна мар, — пирĕн те. Мĕншĕн-ха эпир вĕсене Климовсенчен, Ямановсемпе Ушкинсенчен мăшкăллама ирĕк паратпăр? Куç умĕнчи талантсене асăрхамасăр кури куçа курмăш тăватпăр. Вĕсен пултарулăхне анлăн уçса парсан искусствăри тĕссĕрлĕх çухаласси паллă-çке-ха. Тĕссĕрлĕх çамрăксен ĕçĕнче кăна палăрать тени пачах тĕрĕс мар. Тĕссĕрлĕхе, тĕтрелĕхе илемлĕх тĕнчинче тĕрлĕрен званисемпе наука степенĕсем илсе тултарнă, тахçанхи мухтав хупăлчи айне пулнă искусствăри «вилĕ чунсем» ытларах сараççĕ, сăмахран, пирĕн хисеплĕ Ювеналий Серафимович йышши «классиксем». Вĕсене куçран чăр-р пăхсах хăйсем пирĕн ĕçе сăтăр кÿрсе пыни çинчен каламалла.

Юсов президиум сĕтелĕ хушшинче йĕп çинче ларнă пек йăшăлтатса ларчĕ, Караваева тĕссĕр çутă куçĕпе шăтарасла çирĕ. Хăйĕн тăшманĕ çине вăл çав самантра çÿлевĕç пекех хаяррăн ыткăнĕччĕ... Анчах вăйлă та хăюллă Караваев ăна çамкинчен вĕри те çивĕч сăнăсемпе туйăмлăн витерет. Унăн кашни сăмахĕ хыççăн Юсов çамки çине кантăр вăрри мăнăш тар пĕрчисем пăчăртана-пăчăртана тухаççĕ. Николай Прокопьевич хĕрсе кайсах калать:

— Климовсемпе Ямановсем халăх хушшинче куллене питĕ кирлĕ те усăллă культура ĕçĕ тăваççĕ. Çынсемпе хутшăнса пурăнмасăр, ĕçлемесĕр чун канăçăвĕ çук вĕсен, тарлă та нушаллă ĕçре вĕсем хăйсем çинчен те, хăйсене хÿтĕлес пирки те йăлтах манаççĕ темелле. Тĕрĕссипе вара пултарулăха, таланта, вăл малашне те ан чактăр, ан сÿрĕлтĕр тесен сыхламалла, уншăн кĕрешмелле те. Эсир вара, Ювеналий Серафимович, вĕсен пултарулăхĕ айне вăрахран çурăлакан мина хуратăр, вăл хăвăр хушнипе тата йĕркелесе тăнипе кирлĕ вăхăтра кĕрĕслетсе кайсан каçса кайсах савăнатăр. Çук, кунашкал мар, шăпах «Пучах» ушкăнĕ пек килĕштерсе те пĕр-пĕрне пулăшса ĕçлемелле пирĕн. Йăпăлти чĕлхе çинчи наркăмăшлă сăмах çĕнтерĕвĕ кирлĕ мар чăн-чăн талантсене. Çавăнпа та Союз ĕçĕнче те, унăн аппаратĕнче те татăклă улшăнусем кирлĕ.

Юсов та сăмах კаларĕ. Вăл çĕршыври, республикăри

революциллӗ улшӑнусем, вӗсене тума пулӑшакан пуҫлӑхсем ҫинчен сӑмах хултӑрчине вӑрах ҫавӑрттарчӗ. Кунпа пӗрлех Караваевпа «Пучах» художникӗсене Союз ӗҫӗнчен пӑрӑнса кайнӑ, хӑйсен картинисемпе ахалех ытлашши шавлаҫҫӗ тесе айӑплама пӑхрӗ.

Юсов хальлӗхе вӑйлах-ха. Паллах, пултарулӑхри ӳсӗмсемпе мар, хӑйӗн ҫыхӑнӑвӗсемпе, институтра калӑпласа кӑларнӑ хӑй йышши тӗссӗр те шупка вӗренекенӗсемпе. Ҫапла вара вӗсем тӳррӗн те куҫран каласа Союз правленийӗн ӗҫне критикӑлла тишкернӗ пултаруллӑ Караваев живописеца правленин ҫӗнӗ йышне кӗртмесӗр сирсе хӑварма пултарчӗҫ-пултарчӗҫех.

Караваев нихҫан та пуҫлӑхсене пуҫҫапма, карьерӑшӑн ҫунма тӑрӑшман. Юлташӗсем хӑйне правлени членне суйлама сӗннӗ хыҫҫӑн Юсов ушкӑнӗ унӑн кандидатурине сивлеме вӑй ҫитерсен те вӑл кулянсах ӳкмерӗ. Пуху ӗҫлӗ, тишкерӳллӗ, ҫивӗч лару-тӑрура иртни ӑна хӗпӗртеттерчӗ ҫеҫ. Темле пулсан та тӗрӗслӗх ҫав-ҫавах ҫӗнтерчӗ. Обком секретарӗ хӑйне яланхилле мухтаса ҫиччӗмӗш пӗлӗте ҫити вӗҫтерессе кӑлӑхах кӗтсе ларчӗ Юсов. Секретарь «Пучах» ушкӑнӗн пуҫаруллӑ ӗҫӗ ҫинчен нумай ыррине каларӗ, Юсова асӑнмарӗ те. Ҫакӑ Караваевпа унӑн юлташӗсене хавхалантарса ҫӗнӗ ҫунат хушрӗ. Кӗскен каласан, эппин, ҫав пухура Николай Прокопьевичӑн пичӗ-куҫӗ ҫурхи хӗвел шевлипе ҫуталса йӑлкӑшрӗ, Ювеналий Серафимовичӑн тӗссӗр тӗтрепе писленсе витӗнчӗ.

— Астӑватӑн-и, Юс, ӳнер училищинчи чи малтанхи тытӑҫӑва? — кула-кулах аса илтерчӗ Микулай Караваев Юсова. — «Курӑпӑр-ха, кам — кама!» Камӑн сӑмахӗсемччӗ-ха вӗсем?

Ювеналий Серафимович тарӑхнипе ним сӑмах та калаймарӗ, шӑлӗсене ҫеҫ шатӑртаттарса илчӗ.

## 8

Малаш Аркашӗн ачи института заочно вӗренме кӗчӗ. Инженер пулас ӗмӗт Илюш пуҫӗнче тахҫанах тӗвӗленнӗччӗ-ха. Механизаци цехӗн пуҫлӑхӗ пенсие тухсан ун вырӑнне ӑна лартрӗҫ.

Юлашки вӑхӑтра Илюш самаях улшӑннӑ пек курӑнать.

Ним çукранах чăркăшланма пăрахрĕ. Кĕнеке вуланă вăхăтра вăл хăй ку таранччен халăх хушшинче мĕнле тыткаланине тата мĕнлерех пулсан лайăхрах курăнмаллине танлаштарма вĕренсе пычĕ. Сивĕ сăмах, кăнттамла хăтлану юратăва аяккалла тартса пынине те ăнланма пуçларĕ. Венера унăн сăпайлăхне, хăюлăхне кăмăлланине те туйрĕ. Каравай Микулайĕ çумне кĕвĕçсе вăл кăлăхах ăна çавнашкал кӳрентерчĕ. Мĕнле хĕр чăттăр-ха сĕмсĕрлĕхе? Венера, кăра кăмăллă пулин те, сулнăка тĕртсе ямарĕ ăна, çĕре ӳкме пуçланăскернех кĕлеткипе тӳрленсе тăма пулăшрĕ.

— Сан, Илюш, халь пуринчен те культурăллă, пуринчен те сăпайлă пулмалла, — терĕ ăна пĕр каçхине Венера.

— Мĕншĕн? Цех начальникĕ пулнăшăн-и? — ыйтрĕ йĕкĕт.

— Уншăн та, ыттишĕн те. Итле, сана Николай Прокопьевич ăçта-ăçта кăна çитермерĕ пуль. Сан сăнарупа вăл паянхи механизатор, паянхи ял каччи, паянхи кĕрешӳçĕ мĕнлине те, мĕнле пулмаллине те питĕ витĕмлĕ кăтартса панă. Картинăри çав сăнарăн ятне сан яланах чыслăн упрамалла. Чăтăмлăха хăнăхаймасан пурнăçунта татах та нумай çухатма пултаратăн.

Хĕр мĕншĕн çапла каланине чухлать-ха Илюш. Иккĕшĕ пĕрле калаçса ларнă вăхăтра вĕсем хăйсен унччченхи юратăвне те аса илчĕç. Çавăн ячĕпе лартнă хурăнсем утравра иккĕшĕ те патвар çитĕнеççĕ.

— Йывăçа, Илюш, лартма çеç мар, пăхса ӳстерме те пĕлес пулать.

— Мансăрах шăваракансем пур...

— Чăнах та, кирлех пулсан шăвараканĕсем сансăрах тупăнĕç. Анчах та ман хамăр йывăççене темшĕн-çке пĕрлех пăхас килет. Ан ман хăвăн тивĕçне. Ан тарт телейне. Тытма пĕл. Тытсан — упрама пĕл.

Юрату утравĕнче хăй ытлашши маррине Парнас Илюшĕ çакăн хыççăн тинех ăнланчĕ, сăвă хыççăн сăвă çырчĕ, вĕсене хавхалансах Венерăна вуласа пачĕ.

Çĕнĕ вырăна лартнăранпа Малашов пĕрремĕш çур аки ирттерсе курчĕ. Пуçлăх пуласси трактор-комбайнпа ĕçлесси çеç мар-мĕн. Андреев та çирĕп ыйтать, механизаторсем те хытă çыртаççĕ. Хăш чухне «москвичпа», хушăран мото-

циклĕпе кĕрлеттерсе ҫӳрет вăл колхоз ҫĕрĕсем тăрăх. Чунĕ чăтайман енне тракторпа та ĕҫлесе пăхать.

Ҫурхи хĕрӳ тапхăр вĕҫленсе пырать ĕнтĕ. Садсем шапшурă тум тăхăнчĕҫ. Илюшăн Венерăна та туй тумĕ парнелес килет. Анчах хĕр нимĕн те систерсе каламасть-ха. «Ҫитет пулĕ ача вăййи выляса. Хăюллăрах пулас. Килĕштерсен — пĕрле пулăпăр, сивлесен — хам ҫума кăкарса лартаяс ҫук» — ҫапла шухăш турĕ вăл юлашкинчен.

Тантăшĕсем качча тухнă хыҫҫăн Венерăн та ҫемьеллĕ, ача-пăчаллă пулас кăмăл туйăмĕ вăйланчĕ. Сисет-ха, Малаш Илюшĕ те, Каравай Микулайĕ те уншăн вилсе каяҫҫĕ. Унăн вара иккĕшĕнчен пĕрне татăклă сăмах каламалла.

Микулая ăнсăртран садра тĕл пулнă хыҫҫăн Венера хăйĕн малтанхи юратăвне Тăмпуҫ пĕвинчи утрава «пытарма» шутланăччĕ, Караваева картина валли сюжет та сĕннĕччĕ. Анчах пурăна киле хĕр хăй шухăшĕнчен хăй пĕр тĕлĕнме те хăрама пуҫларĕ. Илюш кăнттамлăхĕшĕн тарăхатчĕ-ха вăл, Микулай сăпайлăхĕшĕн савăнатчĕ. Халĕ акă ăна Малашовах ытларах килĕшнĕ пек. Караваев темшĕн ăна юмахри сăнар майлăрах туйăнакан пулчĕ. Ахаль те вĕсем сайра хутра кăна тĕл пулаҫҫĕ те... Ытла ерҫмен, пушă вăхăтсăр ҫын-ҫке вăл. Яланах пĕрле кино кайса курма та, ташлама-юрлама та, каҫсерен уҫăлса ҫӳреме те май килмест унпа. Мускаври мыскара та асран тухмасть. Надежда Павлова ташланине курма ушкăнпа пĕрле савăнсах кайрĕ-ха вăл, анчах Пысăк театрта пулнă хыҫҫăн та чунĕ вĕҫне ҫитиех лăпланаймарĕ. Чĕрере темле чул катăкĕ пек хытă япала юлчĕ. Ҫапах та Стариков профессор хĕрĕ Эмма Венерăна Микулай савнийĕ пекех туйăнать. Чăн та, тăрăшсах тĕпчемерĕ вăл кун пирки. Микулай: «Эпĕ юратмастăп ăна», — тенипех ҫырлахрĕ. Илюша акă кашни кун ăҫта та пулин куратăнах. Икĕ цех хушшинче ăмăрту килĕшĕвĕ тунă хыҫҫăн халĕ акă пушшех те калаҫмалли нумай. Ҫитменнине тата, вăл Венера хăйне сивленĕ пулин те урăх хĕр тупмарĕ. Микулай мĕншĕн ку таранччен те пĕччен-ха? Кун пирки те ыйтман. Хăйĕнчен чылай аслăрах хусахпа пуплеме те, йăпанма та темле аванах мар пек. Илюшпа вĕсем хушăран тĕрткелешсе илме те пултараҫҫĕ пулсан хĕр Караваевпа пĕрле чухне хăйне хăюсăр тытать. Улмуҫҫи лартнă вăхăтра ҫуралнă юрату уншăн темле сыв-

лăшра çакăнса тăракан ĕмĕтри юрату евĕр туйăнать. Халĕ те çывăхланса, чĕрĕлсе чечекленесшĕн мар-çке вăл. Тĕрĕссипе илсен, çывхарас вырăнне чунран аяккарах та аяккарах тарса пынă пек туйăнать.

Караваев, чăнах та, хăйне питĕ виçеллĕ тыткалама пĕлет. Кăмăлĕ лайăх, ытлашши сăмах вакламасть, каланине итлет. Пур енчен те йĕркеллĕ çын. Юнашар утма та теме тăрать. Çапах та мĕншĕн васкамасть-ха вăл авланма? Тен, чирлĕ? Тен, юрамасть унăн çемьеллĕ пулма? Тен, çавăнпа сехĕрленет пуль? Çапла шĕкĕлчесе ларчĕ Венера хăйсем хушшинчи хутшăнусене.

Амăшĕ, паллах, хĕрĕн хуйхи-суйхине ашшĕнчен ытларах ăнланать. Укçине инкен хĕрне пур енчен те телейлĕ тăвас килет, çавăнпа час-часах аса илтерет те ăна:

— Ыранхи çинчен те шухăшла, ачам. Каравай Микулайĕн мухтавĕпех хĕрарăм ĕмĕрне ирттереймĕн. Хăвăн пек çамрăкки те аса килĕ. Анчах пурнăç урапине ун чух каялла çавăрасси пулмĕ.

Амăшĕн сăмахĕсем Венерăна тарăн шухăша ячĕç. Илюш та куç умĕнчех улшăнса пырать, Микулай та пуçран тухма пĕлмест. Мускавран вăл çыру янăччĕ, кĕçех килмелле ĕнтĕ. Ăна валли Андреев кĕркуннех коттедж туса пĕтернĕ. Качча тухсан Венера унта хуçа пулса саркаланса çеç çӳремелле. Анчах хăçан авланать-ха? Ун пирки вăл шăл шурри те кăтартмасть.

Ăша пусарма тесех хĕр килтен тухса утрĕ. Уйсем тăрăх пăхса çӳрес килчĕ. Çуртрисем йăвă шăтнă. Кĕрхи тулăпа ыраш пуç кăларма пуçланă. Кăçал та тырă вăйлă пулма кирлĕ-ха. Çĕр пуянлăхĕ çине пăхнипе чун уçăлчĕ, юрă та ĕнĕрлесе илчĕ. Хаваслă туйăм ытамĕнчи çĕр пики паллană сасса илтнипе шартах сикрĕ, çаврăнса пăхрĕ те — чăнах та, Илюшах иккен.

— Салам пултăр, Венера! Лармастăн-и?

— Çавăрса çапасран хăратăп, — куç айĕн ăшшăн пăхса илчĕ Пашкова.

— Ан хăра, тек ӳкермĕп нихçан та.

Хĕр ларкăч çине вырнаçасшăнччĕ, анчах каччă ăна хăй умне туртса лартрĕ.

— Хăравçă çын пулас эс, Илюш. Мĕн, ӳксе юласран шикленетĕн-им?

— Уншӑн мар, сан ҫине питӗ пӑхас килет паян, — хӑюлӑх ҫитерсе каларӗ Малашов. — Ҫурӑм хыҫӗнче мар, куҫ умӗнче пултарас килет ман сана.

Венера чӗнмерӗ. Мотоцикл малалла тапранчӗ.

## 9

Микулай Караваев Мускавран таврӑнать. Вакун пӗрешкел силленнипе ӑна ыйхӑ пусса ҫитерчӗ те, сисмесӗрех куҫӗсем хупӑнчӗҫ. Тӗлӗкре вӑл Шишкина курчӗ. Иван Ивановичпа вӗсем Тӑмпуҫ ҫырми ҫывӑхӗнчи ыраш пуссинче, чи ҫӳллӗ хыр тӑрринче пек. Ҫиччӗмӗш пӗлӗт ҫинче Микеланджело, Рафаэль, Леонардо да Винчи вӗсене ытарлӑн пӑхса выртаҫҫӗ.

Караваева чаплӑ вырӑс художникӗ хӑйӗн «Ыраш» ҫулӗ тӑрӑх хӑюллӑн утнӑшӑн, маҫтӑрлӑх тӳпине хастаррӑн улӑхнӑшӑн мухтать. Улӑхра авӑ Пластовӑн утӑ ҫулаканӗсем. Ӗмӗрне ялта пурӑнса ирттернӗ Аркадий Александрович ҫулакансене аллинчи ҫава сассипе хавхалантарса юрлаттарать. Кӗҫ ыраш хушшинчен Воронеж тӑрӑхӗнчи Крамской сиксе тухрӗ. Йӑм хура сухаллӑ, мӑйӑхлӑ, вӑрӑм яка ҫӳҫлӗ, кӑвак куҫлӑ, типшӗм питлӗ хытканрах Иван Николаевич чӑлт шурӑ кӗпе, бархат пиншак тӑхӑннӑ, хулпуҫҫийӗ ҫине ҫава хунӑ. Ун хыҫӗнчен чӑваш тумӗпе капӑрланнӑ Моисей Спиридоновпа Николай Овчинников тата «Пучах» художникӗсем Алексей Няманов, Григорий Ушкин, Лев Климов васкаса утаҫҫӗ. Микулай аслашшӗ те вӗсемпе пӗрлех. Пӗр йӗркене тӑрса тухрӗҫ те вӗсем ҫависене сулса ячӗҫ...

Самантрах ӳкерчӗк улшӑнчӗ. Ыраш ани вырӑнне Шишкинӑн хырлӑхӗ ирхи хӗвел ҫутипе йӑлкӑшса ҫуталчӗ. Упиҫем мӗкӗрсе выляма пуҫларӗҫ. Иван Иванович пӗрре тӳпенелле, тепре ҫӗр ҫинелле пӑхса илет те хавасланса калаҫать:

— Искусство вӑл — вилӗмсӗр, яланах чӗрӗ. Пӗрмай улшӑнать, аталанать, ҫӗнелет. Авӑ ҫав Возрождени генийӗсемпе хамӑрӑн авалхи Русь ӑстисенчен пуҫласа сирӗн ӗҫсем таранах хӑватлӑ, хаклӑ. Ҫынна шухӑшлама, юрлама, пурӑнма вӗрентекен, хавхалантарса ҫунат хушма пулӑшакан ӳкерчӗксене халӑха кӑтартни — хӑюлӑх утӑмӗ. Ҫавӑнпа эсир

Костинпа иксĕр те — паттăрсемех. Санăн «Çĕр пики» Леонардо да Винчин пикипе çывăх. Аллă çула çитнĕ тĕлелле тин тĕл пулнă вăл хăйĕн Мона Лизине. Эсĕ те çамрăклах тупаймарăн хăвăн Венеруна. Леонардо «Джокондишĕн» чунне панă, уйрăлман унран, хăйпе пĕрле Флоренцирен Францие çити илсе кайнă. «Джоконда» пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтернĕ. Ăна вăрласа кайса та пăхнă, анчах Парижри Луврa каяллах тавăрса панă. Миçе ĕмĕр упранать ĕнтĕ вăл этемлĕх культурине пуянлатса. Сан «Çĕр пики» те чапа тухрĕ. Уйăрасшăн мар пулас ăна хăвăнтан. Анчах çухатрăн вĕт Илемпӳне. Вăрларĕç...

Таврара хăрушă сасă янăраса кайрĕ. «Кам вăрларĕ Микулай де Каравайăн «Çĕр пикине»?! Тăрук çут çанталăк тĕксĕмленчĕ. Аслати хăлтăртатрĕ. Вăрман шавларĕ. Кĕреш пек юмансем хушшинчен акă кăвак кашкăр сиксе тухрĕ. Ун çинче патша ывăлĕ Йăван пикепе ларса пырать.

— Ан хăра, Виктор Васнецовăн вилĕмсĕр сăнарĕсем вĕсем, — лăплантарать Микулая Шишкин.

Караваевăн куçĕ тĕтреленчĕ. Кĕçех кашкăр вырăнне мотоцикл пулса тăчĕ. Руль тытнă Малаш Аркашĕн ывăлĕ Илюш хаяррăн пăхса ларать пек. Венера йĕкĕт кăкăрĕ çине пуçне пĕкнĕ...

— Васнецов юмахĕ мар вĕт ку, чăн-чăн пурнăç ӳкерчĕкĕ. Ăçта «Çĕр пики»? Ăçта манăн Венера-«Джоконда?! — темле туртăшса илсе кăшкăрсах вăранса кайрĕ те вăл чĕркенĕ япалине йăпăр-япăр хыпашласа пăхрĕ. Картина çумрахха, никам та тĕкĕнмен. Микулай ăна ялти халăх галерейине парнелет.

Станцире Караваев пуйăсран анчĕ. Ăна илме Андреев çăмăл автомашина янă. Уравăш ялĕ витĕр тухсан вĕсем кĕçех Тăмпуç çырмине çитрĕç. Кунтан вăл Çĕрпеле çуран кайма шутларĕ, çавăнпа шофера картинăна Культура керменне кĕртсе хума хушса ячĕ.

Умра авă ешĕл сад, тăп-тăрă шывлă пĕве, çывăхрах — асамлă Юрату утравĕ. Унта ӳсекен мăшăр хурăнсен тăррисем вăштăр çилпе Хурăнсур еннелле пуç тайнă. Венерăн «Юрату вилĕмĕ» аса килчĕ. Чăннипех каларĕ-ши хĕр ун пирки е каччине вăхăтлăха тарăхнипе кăна?

Венерăпа лартнă улмуççи кăçал тата темшĕн çурăлман. Çыран хĕрринчен «Шанман чечексем» юрласа хăпарнăн

туйӑнчӗ. Варринчине, янкӑр тӳпе пек кӑвак куҫлине, пиҫӗ хӑва хулли пек кӗлеткеллине, ҫурхи хӗвел пек чун уҫҫиллине пуринчен илемлӗрех те ҫӗкленӳллӗ туйӑмлӑрах ӳкернӗччӗ. Унтанпа ӗнтӗ вӑл уншӑн — ӗмӗрӗпех «Шанман чечек», вилӗмсӗр «Ҫӗр пики», юрату, пурнӑҫ.

Сад ҫумӗнченех тырӑ уйӗ пуҫланать. Ун хушшинчи мӑнаҫлӑ ватӑ хырсем юмахри пӑхаттирсене аса илтереҫҫӗ. Вӗсем ҫине ӑмсануллӑн пӑхса илнӗ май ӑна пачӑрхи тӗлӗк аса килчӗ: патша ывӑлӗ Йӑван кӑвак кашкӑр ҫинче... Илюш Малашов — мотоциклпа... «Тӗлӗнмелле, мӗн кӑна курса аташмастӑн пуль тӗлӗкре. Хӑвӑртрах, хӑвӑртрах тӗл пулса калаҫасчӗ Венерӑпа...» Ҫак шухӑш хӗлхемӗпе хӗрнӗ Микулай Караваев тӑван ялнелле ыраш пуссипе васкаса утрӗ.

*1985—1988, 2014 ҫҫ.*

# Вăрланă юрату

*Анне, мана асапланса ма çуратрăн-ши?*
*Атте, мана хавхаланса ма юратрăн-ши?*

## 1

Патшалăх комиссийĕ лайăх паллă лартса панă хыççăн строительсем хăйсен ĕçне тата лайăхрах паллă турĕç. Калуш завочĕн Культура керменĕ хула илемне капăр сăнпа çутатса ячĕ. Тахçантанпах вăрманта вăрттăнланса пытанса ĕçлекен завод калушпа мечĕк те кăларать-çке. Çавăнпа халăхра «калуш завочĕ» ят сарăлнă.

Виçĕ çул тĕрмешрĕ Малышкин управленийĕ Шупашкарăн кăнтăр анăç енче. Тĕрĕссипе — Карсаков прораб участокĕ.

Çырă хулăн çӳçлĕ, сенкер куçлă, кĕске мăйăхлă, çаврака тулли питлĕ, юман кĕрешĕ пек Вася-Василек, Васлей; пуçне сарă каска, кĕлеткине шыв яман курткăпа шалпар шăлавар, урине кирза атă тăхăннă Карсак; сарлака шлепкепе, йăрăмлă костюмпа, çап-çутă пушмакпа çиççе канмалли кунсемпе уявсенче мăнаçлăн утакан сунчăклă Василий Николаевич ĕнтĕ вăл — Карсаков.

Тухăç енчен ӳкнĕ хĕвел пайăрки ăна ăшăтса вăратрĕ. Сарлака ывăç тупанĕпе питне çине-çине сăтăрсан та хăйне ачашлакан ăшă вăйран хăтăлаймарĕ, тĕлĕкĕнчен йывăррăн уйрăлса куçне уçрĕ те сасăсăр йăл кулчĕ. Хĕвел шевли пĕçертни ăна хĕрсем чуптунă пек туйăннă пулас, пит çăмарти кĕçтет, кăтăкланать.

Упăшка тупайман Манька крановщица юрату пылакне сăмсаран сĕрсе хăвармарĕ-ши тесе те шухăшласа пăхрĕ Васлей, анчах туйăм кĕлеткере урăхларах йăшăлтатрĕ. Каска пуканĕ пек Манька сĕмĕ мар ку. Тутари шăршă та ун шăрши мар. Чун хавал хĕрӳлĕхне шăнăçтараймасăр кран кабинине силлентерекен Манькăна тĕлĕкри пикепе танлаштарса пăхрĕ. Çавă Манькăна таçта çити курăнми хӳтерсе ячĕ. Ку туйăм мĕне пĕлтернине ытлашши шута илмесĕрех Васлей хăйне ирхи йĕркене кĕртрĕ. Паçăртанпах сăмсана кăтăклакан

суханпа аш шăршине татах та тутлăлантарса кухньăна кĕчĕ. Арăмĕ çĕр улми ăшаланă. Сĕтел çине çур литр лартнă. Ваçлей пĕр черкке ярса мухмăр чĕртрĕ те арăмĕ çине куç айĕн пăхса тутине култарчĕ, пысăк преми пулать терĕ. Виç уйăх маларах туса пĕтернĕ кермене. Уйăрнă укçа-тенкĕрен хавхалантармалăх пурне те çитет — хуралçă таранах.

Апатланнă хыççăн Ваçлей балкон çине тухса карăнчĕ, ĕнерхи шалу укçине вырнаçтарма каякан арăмне алă сулса ăсатса ячĕ те юманлăха чылайччен сăнарĕ, пирус туртса ячĕ. Хĕвел куçа шартарать, шăпчăк сасси тамалнă, вăрман енчен вĕри сывлăш капланса килет.

Çĕнĕ кермен йывăçсем витĕр курăнмасть. Тӳрĕрен вара вăл кунтан икĕ çухрăмран ытла мар. Утас пулсан кукăрмакăр çул-сукмакпа — виççе те çывхарать. Строительсем пек каласан нуль шайĕнчен — никĕсрен — пуçларĕç кăткăс çурта тумашкăн. Малышкин ăнах шанса пачĕ хĕрĕхмĕш позицие. Ун умĕн хулан пĕр райадминистраци çуртне кăлтăксăр «шăрантарса» лартнă хыççăн трестра ырă ят сарăлчех пулмалла çав унăн. Унччен тунă çурт-йĕр пирки те япăххине илтмен. Хула тăрăх çӳренĕ чухне те вăл хăй лартнă кашни çурт умĕнчен чарăнса сăнамасăр ниепле те иртсе каяймасть, нумай-нумай асаилӳ ытамне кĕрсе ӳкет. Лайăххи те, япăххи те — тем те пулнă. Ялтан хулана çĕтĕк тумпала килсе питте тухнă. Училище, техникум, стройфак. Стройкăра ăна-кăна тăвакан, «тур шывĕ» патне чупакан, каменщик, бригадир, мастер, прораб — ĕç тăвакан. Тĕп ĕçе тăвакан, ĕçе йĕркелекен, çĕршер çул маларах пăхса типтерлĕ, илемлĕ, çирĕп ĕç пурнăçлакан. Никĕсĕ те ан антăр, стени те ан çурăлтăр, кирпĕче тыттармалли ирĕлчĕкĕ те хытсах, çирĕпленсех пытăр, кĕтес тӳрĕ, çăтă, тăрри яка, тикĕс пултăр — çакă унăн тĕп хакĕ.

Каçпа паян кун пирки мухтав шавĕ янăрарĕ. Калуш завочĕ кермен тăвакансене чыслать. Унашкал савăк каçсенче Ваçлей Карсаков миçе пулнă-ши — шутламан, анчах паянхи уяв мĕскершĕн ун чунне канăçсăрлантаратьха, чĕрене йăшкаттарать. Хăма урай тăрăх кумланă май хăйне хăй лăплантараймасть. Ĕçне туса пĕтернĕ, кермен хатĕр, кайса лар та мухтав сăмахне итле, преми-парнине ил, юлташусемпе куç курми пуличчен савăн, киле йĕркеллĕ çит. Урăх никам та ним те ыйтмасть санран, урăх эсĕ,

арăмусăр пуçне паян никама та пит кирлех мар. Çук вĕт, никотин та пусараймасть тапраннă пăлхава. Пуçри усăсăр шухăша сирсе ярас тесе вара вăл Артемьевăн «Салампине» вулама пуçларĕ. Ун пек чухне ялан кĕнеке пулăшать ăна. Пĕчĕклех амăшĕсĕр тăрса юлнă Ваçлей чăваш çыннин хуйхи-суйхине ĕненмелле уçса панă хайлавсене куççуль кăларсах чĕри витĕр сăрхăнтарать.

Арăмĕ чаплă кĕпе, пальто туянса килчĕ. Упăшкине пушмак лартса пачĕ. Шăпах юрăхлă. Хĕсмест.

— Тăхăнса пăхмасăр мĕнле илме пĕлнĕ эсĕ? — кĕнекине пуç вĕçне хурса тĕлĕнчĕ Ваçлей.

— Виç çул пурăнса та упăшка размерне пĕлмесен вара арăму тесе мĕнле курăнас умăнта, — савăнăçне пытараймасăр тĕкĕр умĕнче çĕнĕ тумпа явкаланчĕ арăмĕ.

Măшăрне юрататъ-ха Ваçлей. Хăй каланă тăрăх, çӳпçи май хупăлчиех тупăннă. Ывăл ӳсет вĕсен. Кăмăл-туйăмĕ иккĕшĕн пĕр пекрех. Çапăçса, япала çĕмĕрсе кӳршĕ-арша тĕлĕнтермен, ашшĕ-амăшне (амаçури амăшне) ăш хыптарман. Килти кашăк-чашăка шакăртаттарса куркаланă ĕнтĕ, унсăр епле-ха пурăнан. Кăмăл-туйăм сикки мар-и-ха вăл?

Арăмĕпе калаçнă чухне те пуçра такам хуçаланать унăн. Вăл арăмĕпе мар — такампа калаçать. Аптранипе арăмĕ эс ĕçнĕ пулас-ха тесе шăршласа, кĕленчене тытса пăхрĕ. Лешĕ юрĕ-çке, хăнăхнă эп сана пĕрмай хăвăн кирпĕчӳсемпе тимĕр-бетону çинчен шухăшласа пуçна ватнине, эп кирлĕ мар сана тесе мăртлатса илсен тин арăмне ыталаса илчĕ, ячĕшĕн чуптукаларĕ, ачашланса ун тавра йăпшăнчĕ, каçпа кермене пĕрле кайма чĕнчĕ. Арăмĕ килĕшмерĕ, вăл каçпа амăшĕ патне каять иккен. Ачи унта-çке вĕсен. Кун пирки мирлех калаçса татăлчĕç.

Вăхăт çитерехпе Ваçлей Карсаков хваттерĕнчен васкаса тухса утрĕ. Кермен патне троллейбус-автобуспа çаврăнса каймалла. Çуран, çырма урлă, тӳрĕрех. Такам хыçран хăваланă пек, умра ылтăн-ахах купи кĕтнĕ пек авăстарса пырать вăл вăрăм урисемпе. Чăнкă çыранран чупса анчĕ, тăвалла пĕр утăм тăршшĕ вырăнне иккĕ туса ăнтăлчĕ. Кермен умĕнче кукалесе тăракан юлташĕ, Йăван Павлов, кулкаласа ун чĕрине итлерĕ:

— Сиксе тухать вĕт, мĕн, арăму хыççăн чупать-им? — тесе çурăмĕнчен хытах шаплаттарчĕ.

Бригадира Карсаков хăй арăмне пĕрле чĕнни, анчах вăл ерçейменни çинчен каласа ăнлантарчĕ те шŷте туйса мрамор картлашка çине ярса пусрĕ. Чĕри кăлт-кăлт тăвать. Юлташĕсемпе сăра ĕçнĕ хыççăн пуçĕ пушшех пăтранса кайрĕ, тем шухăшĕ явăнать.

Пуян чысларĕ вĕсене калуш завочĕ. Паха керменшĕн тав турĕç. Ваçлей Карсакова яппунсен телевизорне парнелерĕç. Савăнма концерт, вăйă-ташă хатĕрленĕ. Кермен тул енчен те, шалтан та капăр пулсан уяври халăх кăмăлтуйăмĕ те савăкланĕ тенĕнех хатĕрленнĕ ăстаçăсем.

Кăштах хĕрнĕ Йăван Павлов ăна пĕççисене кăтартса ташлакан хĕр упраççен çара ура илемĕ пирки ахлата-ахлата тăнлантарма тытăннăччĕ, анлă сцена çине çŷхе кĕпине вĕлкĕштерсе «шур акăш» ишсе тухрĕ. Сылтăм аллинчи чечеклĕ тутăрне сулласа, чакăр куçĕпе зала ялкăштарса ячĕ те Ваçлее сывлайми туса лартрĕ. Хăй сисмесĕрех вăл чĕрине ярса тытрĕ, кăштах çĕкленсе малалла ŷпĕнчĕ, юрăç сăмахĕсене виç кун çимесĕр пурăннă хыççăнхи пек çăтма пуçларĕ:

Эпĕ саншăн, эсĕ маншăн
Çуралман-ши тĕнчене?
Эсĕ маншăн, эпĕ саншăн
Çунтарман-ши чĕрене?

Уçăмлă сасă кĕвĕленсе юхать, çепĕç хумлăн çапăнса питкуçа кăтăклантарса ярать, курăнми туртăм çиппине карса лартать юрăçпа Ваçлей хушшине. Баянист выляса кĕвĕ çаврăмĕ тунă хушăра кăкăрне каçăртса сывласа илет те ăрăмçă пике каччă чунне асам çиппи тăрăх хăй ăшнелле туртать:

Эс мана ачашласамччĕ
Пăлхатса ăс-тăнăма.
Çепĕç туйăмăн асамĕ
Килентертĕр чунăма.

— Пăх-ха эс тути-çăварне, — кăлт тĕртет Йăван Павлов. — Сан Манька крановщицуннинчен виç хут пĕчĕкрех.

Ваçлей юлташĕн аллине ыраттармаллах чăмăртаса лартрĕ, çамки çине шăпăртатса тухнă тарне шăла-шăла малалла итлерĕ:

Вут пекех çунать чĕремĕр,
Пирĕнпе юрлать тĕнче.

Юн ялан сиксе вӗретӗр
Юрату хуранӗнче.

— Санах чӗнет ку йӑкӑлти. Васлей, хӑюллан, чуп часрах, на чечек, — хӗтӗртет Йӑван. — Сав Манька ӗнепе намӑс куран.

Тепӗр енче ларакан каменщик та хулпуссинчен сисӗмлех сатлаттарса илчӗ ӑна, ыттисем кулса ячӗс. Пӑлханнипе ахаль те юн тулнӑ пичӗ анис улма пек курӑнакан пулчӗ Карсаковӑн, вара вӑл чӑтаймарӗ, сӗннӗ чечек сыххине силлесе сцена патнелле таплаттарчӗ. Шӑпах ӗлкӗрчӗ. Баянистпа юрӑсӑ пусӗсене пӗке-пӗке каялла утма пуслanӑччӗ. Пӑлханса та вӑтанса, урисене урлӑ-пирлӗ пускаласа сывхарчӗ Васлей вӗсем патне, баянистне алӑ пачӗ, куссран пӑхма именсе чечек сыххине пикене тыттарчӗ, хӑюллӑнтарах кӑххӑмлатрӗ те, саламларӗ:

— Чиперккесӗм, хамӑр строительсен ячӗпе чӗререн тухакан ак сак ӑшӑ салам сире. Мӗнле чаплӑ юрларӑр...

Алӑ супни вӑйланса пычӗ, чарӑнмасӑр чылайччен кӗрлерӗ, шӑхӑракан та, кӑшкӑракан та илтӗнчӗ. Концерта ертсе пыраканӗ юрӑспа баяниста строительсен ыйтӑвне тивӗстерме сӗнчӗ.

Пике алли пӗсертнипе вӗриленсе кайнӑ Карсаковӑн кӗлетки тӑр-тӑр чӗтренсе илчӗ, часрах вара вӑл картлашкапа анса малти рете ларчӗ. Кунтан питӗ усӑмлӑн курӑнать. Сӳхе кӗпе айӗнче хускалакан пӗссен паллипе синсе пилӗкӗ, мечӗк пек саврака пит сӑмартийӗ, хӑмӑртарах хура кус, кӑтралатнӑ сӑра кӗске сӳс, хайхи Йӑван Павлов мухтаса пӗтернӗ тӑпӑлкка тута. Шапа сӑварӗ пек карӑнакан хӑш-пӗр юрӑссен сӑварӗ мар ӗнтӗ, чуптума меллӗ сӳхерех тута, кӑшт касӑртарах хитре сӑмса. Хӑй сине кӑна пӑхса, хӑйне сес юрласа панӑн туйса ларчӗ Васлей семсе пукан ӑшшинче. Ытти юрӑссен юррисем хӑлхана та путлӗн кӗмерӗс, концерт вӗсленессе сес кӗтрӗ вӑл.

Ташша тухсан Карсаков юрӑс пикене асӑрхарӗ. Вӑл хӑйӗн пуслӑхӗпе Малышкинпа саврӑнать. Сӳхе кӗпе варкӑшӑвӗ сӗкленӗ сывлӑш хумӗ сӑмсана кӑтӑклантарса хӑварчӗ, чӗре хыттӑнрах тапма пусларӗ, чун вӗриленчӗ. Хӑй патнелле сывхаракан Манька крановщицӑран хӑпас шутпа вӑл хысалалла чакса-чакса тепӗр еннеллеваскарӗ. Акӑ вальс семми вӗсленчӗ. Ташлакансем ушкӑнсене пус-

таранчĕç. Васлей хĕсĕнсе мала тухса тăчĕ. Ун умĕнчех хайхи пике çамрăксемпе кулкаласа калаçать. Мĕн пулать те мĕн килет тесе ăшра сăхсăхрĕ те Карсаков кĕвĕ пуçланнă-пуçланман хĕр умне çитсе ăна ташша чĕнчĕ. «А-а, эсир-çке ку, хавасах», — тесе хĕр килĕшрĕ. Васлей пике аллине ывăçласа тытрĕ, сылтăммипе пилĕкĕнчен ыталарĕ. Ток çапнă пек кăрт тунине туйрĕ кавалер. Пасăрхи курăнман çип халĕ вĕсене çаврăннă май явакларĕ те явакларĕ, ăнсăртран сĕртĕннĕ кăкăрĕ çунтарса илчĕ. Ташăçсем ăшра вăрттăн шухăшласа-калаçса пĕр хушă куçран пăхаймасăр нушаланчĕç, хĕрĕ чăтаймарĕ, ачашшăн ыйтрĕ:

— Эсир лартнă-и çак çурта?

— Эпир.

— Мĕн тери пысăк уса кӳретĕр халăха.

— Эсир те.

— Юрланипех пурăнаймăн. Пурăнма пӳрт, юрлама-ташлама кермен кирлĕ.

— Юрлакан-ташлакан пулмасан пӳртпе керменĕ те кирлĕ мар.

— Çапах та эсир маттурсемех, паттăрсемех. Ĕмĕр-ĕмĕре юлать сирĕн ĕç-хĕлĕр. Çавăнпа сирĕн умра чуна уçса юрлас килчĕ. Эпир — çырма леш енчен.

— Ăçтан? Хăш театртан?

— Музыка училищинчен. Ыран экзамен-ха. У-у-ух, хăратать.

— Паян экзамен тытрăр. Çавăн пек йышлă эртелпе «пиллĕк» лартса патăмăр. Çиччас ала пусатпăр. Урăх мĕн кирлĕ?

Хĕр çемçен кулса калаçрĕ:

— Эсир ала çупса ала пусни çитмест çав. Нумай тертленмелле.

— Ман пĕр пакăлти юлташăм Йăван Павлов пур. Çавă хăлха çумĕнче чăшăлтатнипех эп сирĕн ята илтсе юлаймарăм. Паллашмаллах пуль...

— Марина Ларина эпĕ. Эсир?

— Васлей Карсаков.

— Вася-Василек пулатăр апла эсир маншăн çак самантран пуçласа. Юрать пуль çапла чĕнме?

— Эп хирĕç мар. Мана çавах. Ăçта пурăнатăр? Общежитире-и?

— Ялта та, хулара та.

— Ак тата?

— Çур ял çур хула урамĕнче.

— Э-э-э, пĕлтĕм, пĕлтĕм. Мир урамĕнче мар-и?

— Çавăнта. Чугун çул хыçĕнче. Хамăр килтех.

— Ай вай-вай, кĕçех çăтса ярать вĕт сирĕн килсене аслă урам. Мотор завочĕ валли мăн çуртсем лартма тытăнатпăр. Ĕçне тума треста укçине те куçарса панă.

— Аннесем те кулянаççĕ. Шалккă. Ачалăх килĕ, сад пахчи пĕтет. Улмуççисем...

— Мĕн тăвăн, хула варрине илемлетме тунă аслă урам ĕмĕрĕпех хулапа ялран тăраймĕ ĕнтĕ. Атту халь пĕр енче чул çурт, тепĕр енче йывăç пӳрт. Хула хăюллăнах таптать яла.

Çапла калаçкаласа вĕсем пĕр-пĕрне хăнăхса пычĕç. Манька крановщица çулса илчĕ-илчех Ваçлее, алăран ямасăр, ирĕксĕрлесе тенĕ пек пурпĕрех ташлаттарчĕ икĕ ташă, кĕçĕр улаха чĕнчĕ. Карсаковăн халĕ ват хĕрпе каймa мар, унпа юнашар та тăрас килми пулчĕ, мана кĕçĕр арăм кĕтет-ха, саняттăй тесе суйрĕ те вăл ăна Маринăсен ушкăнне кĕрсе кайрĕ. Маринăн та тин çеç паллашнă мăнттайран уйрăлас килмерĕ-ши, куçне-пуçне чалкăштарса ун еннелле шикленӳллĕреххĕн те, хăюланса та пăха-пăха илчĕ, унпа татах та ташларĕ, ташă хыççăн хăналанса пуян строителĕн коньякне те тутанса пăхрĕ, шоколадне те астиврĕ, хăйне Вася-Василек ăсатса яма ыйтсан... хăвăрт тем шухăшларĕ те, тăрук килĕшрĕ, ачалла сиккелесе илчĕ.

Телевизор леçме Карсакова стройтрест хуçи хăйĕн «Волгине» пачĕ. «Чиперккӳпе ирччен чупма пултаратăн, Малышкин парни çумне хушнă парне пултăр», — тесе машина алăкне уçса Марина Ларинăна ларма сĕнчĕ, ырлăх сунчĕ.

Акă вĕсем Чапай поселокĕнчен тухса Октябрь кĕперĕ çине йăрлаттарса кĕчĕç. Çурхи садсемпе вăрман шăрши хăвăртлăха çĕнтерсе уçă кантăкран сăрхăнса кĕрет, хăй вăхăтĕнче имлĕ сывлăшпа сывласа юлăр, çур шăрши çуркуннечченех шăм-шака çапать, ăшра юлать тенĕнех чуна уçать.

Калаçу çыхăнмарĕ. Марина Ларина кĕлте пек чечек çыххине пĕççисем çине хунă, икĕ аллипе те çавăрса тытнă.

Васлей шофер çумĕнчи телевизорне асăрхаса пырать. Павлов мичман урамне çитнине сиссе те юлаймарĕç. Карсаковпа шофер телевизора пиллĕкмĕш хутри хваттере кĕртсе лартнă вăхăтра Марина шухăша кайрĕ:

«Мĕн пулчĕ-ха мана паян? Иртенпех канăçсăрланатăп. Пĕртте хам шутланă пек пулса пымасть. Ыранхи экзамен умĕн концерта хутшăнас мар тенĕччĕ — сăмахсăрах килĕшрĕм. Урăх юрă юрлас тенĕччĕ — хам çырнă сăвă-кĕвĕпе сиксе тухрăм, якатса çитерейместĕрех. Валеркăна киле пыма каларăм — хам темле прорабпа ярăнса çӳретĕп. Вун пĕрмĕш троллейбус патне утса тухаймастăмччĕ-ши? Вунă минутра вокзала илсе çитерет. Унтан ансан чугун çул айĕпе тух та — анкарти, сад, улмуççи, кĕтнĕ тĕлпулу вырăнĕ. Мĕнле вăй урăх çул-йĕрпе илсе пырать мана? Хама хам итлейместĕп, хама хам итлеттерейместĕп. Мĕн, арçын çуким урăх? Кунсăр та, Валеркăсăр та ăсатас, калаçас, ыталас текенĕ лăк тулли. Çапах çав Шуркасси ачинех юрататăп. Химкомбинат айне пулнă телейсĕр ял каччинех кĕтетĕп — кашни каç. Кĕçĕр вара... Вуннăра пыма хушрăм, халĕ çур çĕр çитет. Пăрахса та кайрĕ пуль. Çиллине шăнараймасăр тепĕр чух çуранах утакан. Ик хула хушшинчи автобус çӳреме пăрахсан вăл ахаль чухне те ялне тухса чупатчĕ. Халĕ ĕнтĕ комбинат панă çĕнĕ хваттерне çитрĕ пуль. Мĕскершĕн вĕриленсе канăçсăрланатăп-ши?»

Арçынсем подъездран тухрĕç, аллисемпе хăлаçланса тем çинчен калаçса çывхараççĕ.

— Марина, кĕттернĕшĕн каçарăр. Халĕ сире киле ăсататпăр. Хирĕç мар-и? — çума кĕрсе ларчĕ Карсаков.

— Тавтапуç. Хăвăртрах çитесчĕ, — пуçне пĕксе килĕшрĕ Ларина.

Вĕсем ĕнтĕ пушă урампа ӳхĕрттерсе çеç пыраççĕ. Вася-Василек чечек кĕлтине ыйтса илчĕ, каллех Марина аллине сĕртĕнсе хĕмленчĕ. Мир урамне çитсе чарăнсан вырăнтан та хускалма хăрарĕ, çаплах юнашар ярăнас, ярăнас килчĕ унăн, анчах тухмалла, хĕре калитке умне çитиччен ăсатса ямалла.

Шоферĕ Маринăна алăк уçса тухма пулăшрĕ. Ачи вăл кунашкаллине хăнăхнă-ха пуçлăхпа çӳресе, хăйне хăй тытма вĕреннĕ, çул çинче те, ахаль чух та çын калаçăвне хутшăнмасть, кам мĕн пупленине-мухтаннине тăнласа çеç

пырать, хушнине итлет, вăхăтра тăвать, машинăна типтер тытать.

Маринăшăн шофер алли ним пек те туйăнмарĕ, çак упан алли вара, сцена çинче пуçласа сĕртĕнсенех темле хăрушла туйăм кĕртсе ячĕ кĕлеткене. Çав туйăм хуçаланать халĕ ăшра. Туйми тунă асап саманчĕ иртсе кайнă хыççăн, хăйĕнчен хăй вăтанса темиçе сехет каярах паллашнă капăр арçын çине пăхма та хăяймарĕ. Хăйпе мĕн пулса иртнине вăл ăнланчĕ пуль тесе çăварне те уçмарĕ, типсе пыракан тути хĕррисене чĕлхепе çуллакаларĕ. Кĕлеткери çакăн пек алхасу вăхăтĕнче унăн çăварĕ типет, чĕлхи çĕтет.

Сăмсана пырса çапнă юрату шăрши вара Вася-Василека эрехрен те хăватлăрах ӳсĕртсе ячĕ. Туйăм туртăмĕ иккĕшне те пĕрешкел канăçсăрлăха куçарчĕ. Хĕрпе хăйĕн хушшинче пулма пултарас ӳкерчĕкпе ăсра киленсе, шухăш-ĕмĕтне пике ан туйтăрахчĕ тесе вăтанса хĕрелчĕ. Вăл хĕрпе юнашар утрĕ, калитке умĕнче хăйне чараймарĕ, алăкран кĕчĕ, тепĕр алăк витĕр сад пахчине тухрĕ, улмуççи патнелле çывхарчĕ. Хыçалтан шофер кăшкăрнине илтсе çаврăнчĕ те ăна кĕтме ыйтса аллине сулчĕ.

Улмуççи айĕнчи пĕчĕк чуччу ларкăчĕнче темле çын ларать. Вĕсене курнипе чалтах сиксе тăчĕ те вăл хĕре аллисенчен ярса тытрĕ.

— Ирчченех кĕттеретĕн-им эс мана?! Ку тата мĕнле камит? Кам ку?

— Валерка, эс тӳрех вĕри çатма çинчи пăрçа пек ан сиккеле-ха, этемле пул, йĕркипех каласа паратăп, паллаштаратăп та, — тесе хĕр майĕпен качча аллинчен вĕçерĕнчĕ. — Эпир паян «Салютра» концерт патăмăр-çке, сана систереймерĕм, каçар, ытла васкавлă пулса тухрĕ те. Çав кермене тунă Василий Николаевич Карсаков прорабпа паллашрăмăр унта. Вăл мана машинăпа сан патна çитерсе ячĕ. Акă вăл. Тав ту ăна.

Чалăшшăн тăракан йĕкĕтĕн шур куçне Ваçлей тулли уйăх çутинче витĕрех курать. Валерка текенскер тарăхнипе шăлĕсене шатăртаттарса илчĕ. Вăрçас-мĕн пулсан Карсаков унран, йăпшакскертен, хăраса тăрас çук. Сахал мар тăн кĕртнĕ вăл хăй вăхăтĕнче чăркăш-пуçтаха. Ку таранччен ăна ураран ӳкерекенни пулман-ха.

— «Салют» хыççăн салют патăр пуль-ха, ахальтен çав

таранччен çӳрес çук, — чакаланчĕ каччă. — Калуш завочĕ кăларакан ракетăсăрах тупнă эс авăрланă ракета. Суйпике.

— Ухмах эс, хăвна ху йĕркеллĕ тытма пĕлмен лапша, — тесе Ларина ларкăча кĕрсе ларчĕ, урипе тапса ячĕ. — Э-эх! Ярăнтарăр мана!

Ларкăч пăявне маларах Ваçлей ярса тытрĕ, хыттăн сулса ячĕ, чечек кĕлтине хĕр чĕрçи çине хучĕ. Тĕлпулăва килнĕ йĕкĕт те вара чуччăва тепĕр енчен ярса илчĕ. Пĕр-пĕрин çине пăха-пăха иккĕшĕ те чуччу пăявне унталла-кунталла силлерĕç. Ахăлтатакан Марина канлĕн ярăнчĕ. Йывăрăшпа авăнакан турат, те савăннипе, те хурланнипе хăй-йăк, хăй-йăк туса çĕрлехи шăплăха вăратрĕ. Çеçкери сад имлĕхĕнче ишекен виçĕ чĕре виçĕ тĕрлĕ тапрĕ.

— Çитĕ, — илтĕнчĕ Марина сасси. — Ярăнса тăрантăм. Тавах иксĕре те.

Валерка хĕре çанăран туртса аяккалла пăрасшăн пулчĕ, Марина ăна тем каларĕ. Каччи вара мăкăртатса лăпланчĕ. Ыр кăмăллă Вася-Василек та лăпланнăччĕ ĕнтĕ, паян Турă панă пике куçĕнчен тепре пăхса илетĕп те килелле вĕçтеретĕп тесе шутланăччĕ çеç, пӳрт алăкĕ çинче çакăнса тăракан пысăк çăрана асăрхарĕ. «Пӳртĕнче никам та çук пулас, пĕчченех пурăнать-ши?» Карсаков алăк çине пăхнине асăрханă Марина:

— Аннесем хăйматлăхĕн менелникне кайнăччĕ, таврăнайман, уççине те хăварман, хамăн та çук, халь тин ĕнтĕ... — терĕ ыйтуллăн ассăн сывласа.

— Урхамах пур вĕт санăн, ун йĕнерĕ çинче сиксе те çĕр каçма пулать, — каллех чăрсăрланса йĕплерĕ каччă. — Эп çуранах...

Марина унăн çăварне пĕчĕк ывăçĕпе хупларĕ, ăна пӳрнипе юнарĕ:

— Ах, ытла тулăксăр-çке эс. Пуçпа çавăрттарса калаçма пĕлместĕн. Культурăллă çын тетĕн тата хăвна, эп инженер тетĕн. Пĕр химичить тума кăна пĕлетĕн шăршлă комбинатунта. Çынна вĕлермел...

— Шăпăрт! Ун пирки çăварна уç тулĕк. Мана...

— Мĕн, сана... Эс ĕçлен, хими чури, комбинату пур, тĕнчешĕн — çук. Калуш завочĕ пекех вăрттăнлăх купи.

Ăна-кăна илткеленĕ Карсаков çатăлтатса тăракан хыткан йĕкĕт ăçта мĕн кăларнă çĕрте «химичить» тунине тӳрех

ăнланчĕ, хăйĕн вăрттăнлăхне сыхласа хăварассишĕн çине тăнине те туйрĕ. Анчах темле вăрттăнлăх та майĕпен çиеле тухать-çке, упăшки арăмне, арăмĕ тантăшне, тантăшĕ çывăх çыннине «шăпăрт пул, сана çеç хăлхаран пĕлтереп» тесе чунне уçса парать. Чĕрĕ чунăн чĕлхи кĕçĕтсех тăрать çав, пусĕ пăтранать те ыратать. Çӳл тӳперен сăнакан-шыракан та пур. Хальхи саманара нимĕн те пытараймăн, санран лайăхрах пĕлсе тăраççĕ эс мĕнпе аппаланса сывлăхна пĕтернине океан леш енче.

Аптăраса ӳкмерĕ Карсаков, хăйĕн шухăшне пĕлтерчĕ:

— Итлĕр мана, Марина, каччуна Çĕн Шупашкара леçсе хăваратпăр та сире аннӳсен хăйматлăхĕсем патне çитерсе яратпăр. Килĕшмелле-и?

Çапла турĕç те. Çăмăл машина Сĕнтĕрвăрри çулĕпе мĕкĕрсе ӳхĕрет. Çул уçă, яка. Икĕ арçын хушшинче хĕсĕнсе ларса пыракан Марина Ларина шухăшĕпе пăтранать:

«Мĕншĕн маларах тĕл пулмалла пулнă-ха манăн çак Валеркăна? Университетра питĕ лайăх вĕреннĕшĕн-ши, комбинатри вăрттăн ĕçре укçа нумай йăтăнтарнăшăн-ши, икĕ пӳлĕмлĕ хваттершĕн-ши, юмахри пек телейлĕ пурнăç пулать тесе хавхалантарнăшăн-ши, чипер сăнĕшĕн-ши? Мĕншĕн юратнă ăна, Шупашкарта, Атăл хысакĕнче, ăнсăртран тĕл пулнăскерне?

Мĕншĕн сиксе тухрĕ-ха шăпа çулĕ çине çак упа? Пăхаттирле кĕлеткишĕн-ши, калаçнă чухне ăшă кулă парнеленĕшĕн-ши, чечек çыххишĕн-ши, ташăра меллĕн çаврăннăшăн-ши, катаччи чуптарнăшăн-ши?

Мĕншĕн кĕлеткине силлесе пăрахрĕ-ха унăнне сцена çинче ăна пуçласа курнăскер? Акă халĕ те сылтăм айăка кăвар пек çунтарать, каллех паçăрхи туйăма вăратать, чăтăмлăха çапса хуçса хăй еннерех тайăлтарать. Мĕнле туйăм ку, ирпе ирех пуçланнăскер?»

Сулахайран туйăмсăр лĕп ăшă çеç тивет кĕлеткене. Чĕрĕ этем ăшши ĕнтĕ. Нимĕн те шухăшлаттармасть, ĕмĕтлентермест, пачах та асаплантармасть. Урам кукăрĕнче машина çаврăнттарса илсен те сулăнас килмерĕ унталла Маринăн, Вася-Василек хулĕнчен ярса тытрĕ. Тормоз шăхăртса ярсан вăл тĕлĕкри асамлăх асапĕнчен вăранса карăнчĕ, икĕ аллине те икĕ еннелле сарса хучĕ: «Мейĕр, тытăр, хăшĕ вăйлăрах, çавă йăтса кăларать». Валерка та,

Вася-Василек та пике аллине тытса ачашлама пуҫларӗҫ. Кӗлетке канлӗхӗ тамалнӑ май Марина аллисене туртса илчӗ, пурне те тухма ыйтрӗ, алӑкра шофера ҫеҫ алӑ пачӗ.

— Тавтапуҫ сире, Василий Николаевич, сире те, маттур ямшӑка, ӳркенменшӗн, — ҫавраннӑ кӑмӑлне кӑтартса подъезд еннелле ҫавӑтсах хӳтерчӗ шупашкарсене Валерка Янташов. — Кӗрӗр-ха ман пата. Хӑна пулӑр.

Ахаль чухне паллана-палламан ҫын патне кӗрес те ҫукчӗ-ха Карсаков, Марина та чӗнчӗ те, шоферӗ те хирӗҫлеменскер, килӗшрӗ сӗнӳпе.

Карсаков строитель куҫӗпе картлашкаран пуҫласа мачча таранах витӗр куҫпа сӑнаса ӑшӗнче хак парса пычӗ ҫурт тӑвакансене. Тул енче те, шалта та кӑлтӑкӗ тем чухлех. «Ытла та мӑшкӑллатпӑр ҫав ҫынсенчен, хамӑр вара апатне те пит тутлӑ ҫиесшӗн, пит паха тумтир тата ыттине те туянасшӑн, ҫав хушӑрах ҫавсене хатӗрлекен-тӑвакана куҫ хупмасӑрах улталатпӑр, пӗртте совӗҫ ҫук», — калаҫрӗ вӑл ӑшра.

Пӗччен пурӑнакан хусахӑн хваттерӗ епле таса, типтерлӗ, кашни япала хӑй вырӑнӗнче. Чӑкрашма юратсан та, йӗркеллӗ ҫынах пулас. Хусахла пурӑнакан строительсенни пек лӑпӑр-лапӑр ҫук.

Кухньӑра Марина та ӑна пулӑшма пуҫларӗ. Тем те пӗр ӑшӑтса-ӑшаласа сӗтеле тултарса та лартрӗҫ. Ал-ура ҫаврӑнать хӗрӗн. Ахӑртнех, кунта вӑл пуҫласа мар, ытла хӑйне хӑнӑхуллӑ, хӑюллӑ тытать.

Шампань эрехӗ уҫрӗҫ, ура ҫине тӑрса телейшӗн ӗҫрӗҫ. Камӑн телейӗшӗн-ши, калакан пулмарӗ, кашниех ӑшӗнче темле вӑрттӑн пулӑм пирки шухӑшларӗ пулас. Кайма тӑрсан... кил хуҫи Маринӑна ҫавӑрса тытрӗ те:

— Хам юратупа эп хам хуҫа, ниҫта та парса ямастӑп ӑна, никама та, — тесе хӗре ҫемҫе креслӑна лак лартрӗ.

Хӗр килӗшсе алӑ сулчӗ:

— Чипер ҫитмелле пултӑр. Ырӑ кӑмӑлушӑн тав, Вася-Василек. Тепре тӗл пуличчен.

Ҫапах та хӑй тӑрса шоферпа Ваҫлей Карсакова вӗри аллине пачӗ, тӑпӑлкка тутине кулӑллӑн йӑлкӑштарса куҫӗпе пӑталарӗ. Тинкернӗ май Ваҫлей хӗрӗн куҫ шӑрҫисем сарӑлса, пысӑкланса пынине курчӗ. Пике куҫне вӑрттӑн хӗлхем сапса хӑварчӗ те Карсаков алӑкран тухрӗ. Янташов шофера хутпа чӗркенӗ эрех кӗленчи тыттарчӗ. «Эпир

ĕçнĕ-савăннă вăхăтра чăтас пулать шереметсен машина лартиччен».

Васлей çӳлелле пăхрĕ. Пĕртен-пĕр çутă чӳречере хура пуç курăнать. Карсаков çавăрттарса аллине сулчĕ. Урхамах малалла ыткăнчĕ. Кăштах шӳтлекелесе илнĕ хыççăн та шоферпа иккĕшĕн хушшинче калаçу малалла хĕрмерĕ. Хыçалти ларкăчра сарăлса выракан Василий Николаевич кӳтнĕ чунне лăплантарма тăрăшрĕ.

«Мĕнех вара, çынна усал туман. Никамăнне те нимĕн те вăрламан. Вăрламан... вăрламан... Вăрламан-ши? Тата мĕншĕн Марина пуçран тухмасть? Хĕрĕн юн таппийĕ чĕрене çĕнĕлле таптарать. Шăнкăрав сассийĕ хăлхара янăрать. Акăш юххийĕ умран тасалмасть. Чун хавалĕ ют кĕлеткере ăшă кĕтес шырать. Туйăмлă куçĕ ман куçра мĕлтлетет. Арăм та кирлĕ мар халь. Манька крановщица та таçта çăва патнех анса кайтăр. Хăвармалла марччĕ Маринăна, çинех тăмаллаччĕ. Енчен те вăл ман ăшăма кĕрсе хӳтлĕх тупрĕ пулсан... Чун икĕ çынра пулма пултарать-и-ха харăсах? Паллах, çук. Апла тăк эпĕ — вăрă, юрату вăрри. Вăрларăм пулас Шуркасси ачин пĕртен-пĕр юратăвне... Ах, каяллах тавăрса парасчĕ, арăмран та вăтанасчĕ... Анчах... мĕнле, мĕнле майпа, мĕнле вăйпа хӳтерсе кăларас-ха манăн çав туйăма, ирпе тĕнче хăвăртлăхĕпе вĕçсе килнĕ курăнман туйăма ăшран?»

Шупашкара çитсе Етĕрне çулĕ çине тухнине те сисмен. Университет патне çывхарнă май вăл шофера чарăнма ыйтрĕ.

— Ну катаччи чупрăмăр та чупрăмăр вара иксĕмĕр кĕçĕр. Çĕнĕ Шупашкара çитсе салют та патăмăр. Пит аван. Тавах сана. Эпĕ халь çуранах утатăп, — тесе çулташне алă тытрĕ Карсаков.

Тул çутăлса килет. Уйăх Йăлăм енне тайăлнă. Юманлăх шăпчăксен ытаменче. Вĕсен янравлăхĕнче вăл «Салютра» каçса кайса итленĕ шăпчăк сассине уйăрса илчĕ, ăна хирĕç хăй те шăпчăкла юрласа ячĕ. Çурхи ире ытамласа çывăхри çурчĕ еннелле хуллен утрĕ. Хваттерте ăна никам та кĕтекен çук. Ăçта кĕтекен пур-ши? Арăмĕ тĕлĕкре курать-ши? Манька крановщица тепĕр айăкĕ çине çаврăнса выртнă май пуш вырăна ыталаса илет-ши? Е Мир урамĕнчи юлашки сывлăшĕпе сывлакан ялăн хĕрĕ, Çĕнĕ Шупашкара çывăрма юлнă юрăçă-ăрамçă мĕн тăвать-ши?..

## 2

Машина кĕтесре курăнми пуличченех чÿречерен уйрăлмарĕ Марина. Хăнасене ăсатнă Валерка кĕриччен сĕтел çинчи кашăк-чашăка кухньăна йăтма пуçларĕ.

— Çапах та темскер пур сирĕн хушăра, — йăрă куçне чуптарчĕ Валерка. — Тахçанхи мар-и?

— Тахçанхи, тахçанхи, сана тĕл пуличченхи. Эпир унпа çÿренĕ, кĕçĕр те аснă... — чĕри хĕссе лартнипе Марина алăри ывăса вĕçертрĕ, урайне черккесемпе турилккесем ÿксе ваклачĕç.

— Калап вĕт ахальтен мар тесе, тÿрех хумханса ÿкрĕн, — шăлне йĕрчĕ Валерка. — Хĕрсем вĕсем... Чармасан... Ничево! Çапах та телей манра. Парса ямарăм сана. Хăвартăм. Хам патрах. Урăх ниçта та кăлармастăп. Ман арăм пулатăн. Кĕçĕрех. Халех, — пуçне чиксе тăракан çураçнă хĕрне Валерка пырса ыталарĕ, пичĕ-куçĕнчен чуптуса пĕтерчĕ, Марина хирĕçлеменнине кура хăюллансах пычĕ, ăна çывăрмалли пÿлĕме çавăтса кĕчĕ.

Училищĕре экзаменсем пĕтсенех вĕсем пĕрлешме калаçса татăлнăччĕ-ха. Ашшĕ-амăшĕсем те хирĕç мар. Валерка халех унран арăм тăватăп тени çеç малтанлăха хăратса пăрахрĕ. «Мĕншĕн васкать-ха вăл? Икĕ çул кĕтнине темиçе эрне кĕтме çук-ши? Е урăххи пуçса çиесрен хăратьши юрату çуне? Çак прорабах сехĕрлентерсе пăрахрĕ пулас ăна. Унран чĕтресе ÿкрĕ. Унччен усал шухăш кĕмен пуль пуçне. Сăлтавне нихăш енчен те кăтартман. Ытаклашса чуптусах ирттернĕ савăк вăхăта. Кăкăрĕпе выляничĕр пуçне аллине аялалла ярса курман. Пăх-ха ăна халĕ, епле хăюлланса пырать. Мĕн тумалла-ши? Туйчченех хĕрарăм пулас килмест-çке. Хĕр чысĕпех Турă умĕнче пуççапас килет. Ах, ма ĕçрĕм ку кăпăклă эрехе? Керменти коньяк çумне хутшăнса, пăтранса кайрĕ. Ах... Вася-Василекпа юнашар ларса пынă чухнехи асап туйăмĕ килмест-çке. Мĕнле капла?»

Чÿречерен сăрхăнакан шурăмпуç çутинче Валерка васкаса ăшталанать. Кравать çи виттине хуçлатса çакрĕ, утиялне сирсе пăрахрĕ, шăлаварне сиккелесе хыврĕ, савнине чуптăва-чуптăва хывăнтарчĕ: çÿхе кĕпине, аялти йăпăрка кĕпине... кăкăр çыххине салтаймасăр çаклашкине татсах

пăрахрĕ. Вырăн çине ăна вăшт çĕклесе хучĕ те юнашар выртрĕ, тутинчен, чĕри тĕлĕнчен чуптурĕ, хăйĕн трусийĕнчен хăтăлнă хыççăн унăн чĕнтĕрлĕ йĕмĕ çумне сивĕ аллине тăсрĕ, аялалла туртса антарчĕ, мăшăлтатса çӳлех хăпарса выртрĕ...

Çак самантра Маринăн куçĕ ял-л çуталса кайрĕ те лапах хупăнчĕ. Хăй çинче Валерка мар, куç пăвса хăварнă Вася-Василек выртнăн, ăна ĕме-ĕме чуптунăн, çан-çурăмне астарса ачашланăн туйăнса кайрĕ. Сарăлнă пĕççем хушшинче мĕн пулса иртнине сиссе юлаймасăрах ай-й! ай-й! тесе нăйкăшса ячĕ те вăл вăраммăн сывласа пĕтĕм кĕлеткипе карт туртăнчĕ, çӳлте хăшăлтатакан арçынна ыталаса илчĕ. Чĕркуççи çине майĕпен çĕкленсе тăма пуçланă арçын хăйне чечек парнелекен Вася-Василек маррине, кĕвĕçсе чăкрашакан Валерка Янташов пулнине тавçăрса илсе куçне хупрĕ, юнланнă йĕпе пĕç хушшине простынь кĕтессипе хупларĕ, вара хускалмасăр чылайччен выртрĕ, ачалăхне, хĕрлĕхне, Валеркăпа чуптума вĕреннине, амăшĕ арçын айне кĕрсе выртма, хĕрĕм, ан васка тесе тăн панине аса илчĕ. «Хĕртен хĕрарăма куçасси наччасах иккен, темиçе минут каялла çеç кăра чунлă, хăюллă хĕрччĕ, вырăн çинчен тăрать те акă — тепĕр чунлă хĕрарăм пулса утса каять. Уçнă çеремрен çут çанталăк парка хунав, тутă тĕшĕ кĕтет. Пултарайĕ-ши вăл çемьене савăнтарма? Савăклăх, сывлăх парайĕ-ши хăйне çак самантра хĕр чысĕ хамах лекрĕ тесе арăсланла вăйлă туякан арçын?» Шухăш таçта та пырса çапăнать. Ăна-кăна нимех те ăнланса юлаймарĕ-ха çамрăк хĕрарăм, ыратнине çеç туйрĕ.

— Пĕлтĕн-и халь паçăрхи строительпе ман хушăра мĕн пуррине, эпĕ унпа асса пурăннине? — куç айĕн пăхса сисĕмлех тăрăнтарса илчĕ Марина. — Вырăн çине хума пултартăн пулсан çураçнă хĕрне, йăтса тăратма та ан ман çуралнă арăмна, юратнă упăшкамçăм.

Валерка йăпăртатса чупса пычĕ те чуптуса арăмне алă çине çĕклеме пуçларĕ:

— Каçар эс мана. Чăннипех ухмах эп. Чăнах лапша. Пустуй кӳрентертĕм эп сана кĕвĕçсе. Тинех пирĕн савăк пурнăç пуçланчĕ. Çемье пурнăçĕ. Юлашки экзамен хыççăнах çырăнатпăр, урăх пĕр кун та ирттерместпĕр.

— А мĕншĕн тата паянах, пĕрремĕш экзамен хыççăнах мар? Каçхи те, ирхи те пĕрремĕш пултăр.

— Эп хирĕç мар, паянтанах пĕрле пурăнма тытăнмашкăн та хатĕр. Хусах пурнăçĕ во! йăлăхтарчĕ.

Валерий Николаевич Янташов хваттерне те çуркунне этемлĕх аташăвĕн ачашлăхне хуса кĕртрĕ, икĕ юратăва пĕр хушша хупрĕ, арлă-арăмлă савăклăхпа явакларĕ. Упăшки ĕçе тухса кайрĕ, арăмĕ — экзамена.

Музыка училищинчен Марина Ларина питĕ лайăх вĕренсе тухрĕ. Савăнăç каçне вăл Вася-Василека чĕнесшĕнччĕ, ĕçне телефонпа шăнкăравларĕ, чăтаймарĕ, Лакрей вăрманĕ çумĕнчи пĕр пысăк çуртра кантурне шыраса тупрĕ, унтан хурланса таврăнчĕ. Чернобыль инкекĕ хыççăн Карсаковсем Украинăра çĕнĕ хула тăваççĕ-мĕн. Василий Николаевич Славутичран сайра-хутра кăна килсе каять имĕш. Çыру çырма адресне илме те манчĕ. Хăйне çеç манаймарĕ. Пĕрле вĕреннĕ тантăшĕ, «Çăлтăр» ансамбльте юрлама пуçланăскер, виççĕмĕш кавалер тупса янă хыççăн ун патне музыка шкулне пычĕ. Ирĕклĕ вăхăтпа усă курса вĕсем хĕрарăм юмахне ячĕç.

— Эх, Марина, Марина, пĕлетĕн-и эп мĕн тупрăм?

— Ылтăн-и? Ахах-и?

Тутине чăпăрт тутарса пуç пӳрнипе тантăшĕн сăмси тăрăх сăтăрса тухрĕ те:

— Во телей тупрăм! Чăн-чăн арçын! — терĕ.

— Мĕнле çын-ши вăл, чăн-чăн арçын? — ăнланаймасăр хăшкăлчĕ Марина.

Тантăшĕ ăна сывлăш тухми пуличчен пăчăртаса лартрĕ.

— Ак çакăн пекки. Ăнланмалла-и? «Салютра» эс Васçлей упапа паллашнăччĕ-çке, вăт çавнашкалли.

— Курсаччĕ те...

— Ăçта вăл халь сан?

— Вася-Василек-и? Сана чуна уçса калатăп: ман пулман вăл нихçан та, пулаймарĕ... Йĕркеллĕ калаçса та кураймарăм. Çухатрăм. Те качча пулнă вăл, те виççĕ авланнăскер...

— Эх, тăнсăр. Ма хам çавăрса илмерĕм ташланă чухне. Ман алран вăл вĕçерĕнейместчĕ. Çавăраттăм, тĕрĕслесе пăхаттăм. Тен, шăпах юрăхлă калибрччĕ.

— Эс ун пирки мар, хăвăн чăн-чăн арçынну çинчен кала-ха хăвăртрах: негр-и, араб-и, Кавказран-и?

— Чăвашленăк. Хамăрăнах пур пирĕн рысаксем. Чувашскисем — вăш-вашлисем. Шырамалла çеç вĕсене. Эх, туяс пулсанччĕ эс унăн пĕр сеансне — тепре çуралса яшланмалла. Унччен, унччен тата... Чуптунипех ухмаха кăларать. Эп хам та унпа тĕл пуличчен чуптума пĕлмен, пĕр арçын та кăтăклантарса çулламан мана. Ку кĕрешӳçĕ, самбист, во! мускулĕсем, тута хĕррисене хĕртнĕ майăн чĕлхе айне кĕрсе кайрĕ те... авăнтăм та ӳкрĕм эп. Çăвăнса тасалнă хыççăн чуптуман вырăн та хăвармасть кĕлеткере, мана та тута канлĕхĕ тупса парать. Таçта, тĕнче уçлăхĕнче авăна-авăна, явăна-явăна ишнĕ пек, ӳт-пĕве астарса ярса тăна çухатнă пек самант тул çутăличчен тăсăлать. Упăшка пекки ман мĕн унпа танлаштарсан... Çĕтĕличченех çĕтсе вырт вара купарчапа тӳшеке, карусель пек çаврăнса. Арăмĕ те пур çав чупкăнăн. Арăмĕн ăна юрăхлă мар тет. Шайлашăнмасть вĕсен. Тивĕçтерӳ çук. Манах лутăркать. «Российăра» номер туяннă. Ман валли. Хăна çуртĕнче хăналанса пурăнатăп. Укçа ун... миллиарда та çывхарать пуль. Арăмĕнчен уйрăлмасть, мана качча илмест. Намăс иккĕ авланма тет. Асма намăс мар. Ăна та. Мана хама та. Намăссимĕс çылăх тесе çĕр çинчех ар тамăкĕнче кĕл пулмалла-и? Çук, хăвармастăп эп çав типĕтнĕ пулă пек арăмĕ валли нимле ясар туйăмне те. Эх, тĕнче!.. Çуралнăшăн савăнатăп! Ой, пакăлтатса кайрам. Сан хăвăн мĕнле-ха тата арçын йăпатмăшĕ? Упăшку юрлаттарать-и каçхи концертра?

Марина тантăшне итленĕ хушăрах упăшки çинчен аса илсе ăна унăн çав чăн-чăн арçыннипе танлаштарса ларчĕ-ха, кăшкăрса ярсах ӳлес килчĕ, тути хĕррисене чĕтретсе те пăхрĕ, чарăнчĕ, ыйтăва мĕнле хуравласси пирки шухăшларĕ.

— Пурнас пулать ĕнтĕ, пĕрре ăша кĕртнĕскер, пĕрре çырăннăскер... Хырăм юлчĕ. Пăрахас пуль теп. Химикрен çуралнă сусăр пушшех авса хурĕ те кун-çула... Пĕлместĕп. Те сан çулупа каймалла. Çулсем иртеççĕ, хĕрарăм та пулса пăхас килет, чăн-чăн хĕрарăм та пулас килет.

— Итле эс мана, шыра çав хăвăн упа утаманна — Вася-Василекна. Шупашкар Мускав мар — тупатăн.

Ахаль те çунакан кăвар çине тантăшĕ бензин сапса ялкăштарнă пекех пулчĕ ку. Тантăшĕ хĕрарăм канлĕхĕн тӳпине çитнипе мухтанчĕ, унăн чунĕ каç пуласса кĕтсе хур-

ланчӗ. Каллех упӑшки ун ҫумне кӗрсе выртать, каллех вӑл арӑмӗн йӑпанӑвне илесшӗн нушаланать, ӑна астарса ярать те асаплантара-асаплантара йӗртет. Валерки ӳт-пӗвӗпе кӑна мар, ар хӑвачӗпе те хытса-хӑрса пынине сисет. Мӗншӗнне те пӗлет. Ӑна урӑх ӗҫе куҫма та сӗнсе пӑхрӗ ӗнтӗ. Кӑлӑхах. Акӑ паян та вӑл ӗшенсе таврӑнчӗ. Куҫӗ айӗнче — хура йӗрсем. Хӑйӗнчен яланхилле шӑршӑ перет. Хулана вӗҫсе килекен шӑршӑ мар вӑл — урӑхларах, ҫивӗчрех.

— Мӗн нушаланан-ши, Валерка? — пусӗнчен ачашлать упӑшкине Марина. — Пурӑнмалла-ҫке пирӗн, тата нумай ӗҫлемелле. Хӑв мана суннӑ телей пурнӑҫне курмалла.

— Хырӑм ма пӑрахрӑн? — куҫне тарӑхуллӑн йӑлкӑштарать упӑшки. — Ҫынсен арӑмӗсем ҫуратаҫҫӗ-ҫке.

— Ҫаплах ҫуратаҫҫӗ, анчах... камсене? Иртнӗ эрнере каллех пилӗк сусӑр ҫут тӗнчене сиксе тухнӑ. Кама савӑнтарма? Ашшӗ-амӑшне-и? Кама усӑ пама? Ҫӗршыва-и? Кама малалла аталантарма? Чӑваш халӑхне-и, этемлӗхе-и? Ҫав сусӑрсенчен малашне кам тата мӗнле инкек пуласси те паллӑ мар-ха.

— Ҫук, урӑх эп санпа килӗшместӗп, сана ирӗк памастӑп аборта кайма. Ҫурататӑн. Пур-ҫке сывӑ ача та. Йӗркелли те.

— Куҫ курӗ-ха унта, эсӗ йӗркеллӗ ҫӗре куҫсан, сывалсан... ӗлкӗрӗпӗр пӗр-ик ача тумашкӑн. Ватӑ мар. Валерка, тархасшӑн, итле арӑмна. Сан вӑрӑм укҫу та кирлӗ мар, сывлӑху, вӑю кирлӗ. Хӗвел ҫиҫтерсе ташлаттарас килет ман сан сӑнунта. Анне Шупашкарта ӗҫ те тупнӑ сан валли. Инженер вырӑнех. Шалӑвӗ те кунтинчен нумай пӗчӗк мар. Ҫӳреме пулать. Шупашкара ҫитсе килесси мӗн вӑл. Килӗшетӗн-и манпа?

Душра ҫӑвӑннӑ хыҫҫӑн Валерка апата ларчӗ. Хӗрхенсе пӑхать ун ҫине арӑмӗ, сисмесӗрех сывлӑшӗ кӑкӑртан хашлатса тухать. Ӑшаланӑ чӑх тукмаккине упӑшки ирӗксӗррӗн кӑшласа ячӗ те лимон янӑ чее лӗрӗплеттерсе ӗҫрӗ, тарланӑ ҫамкине пукан пусӗнчи ал шӑллипе шӑлса типӗтрӗ.

«Апат ҫиме те вӑй юлмарӗ иккен, сӗтел хушшинчех тарлать, нумаях каяс ҫук». Арӑмӗн шухӑшне сиснӗнех, Валерка Янташов каласа хучӗ:

— Анчах... эпир пулнӑ, пур, пулатпӑрах-ши? Ах... пурӑннӑ май, ҫулсем иртнӗ май пуҫӑмра пӗр ыйту ытла-

рах та ытларах вăйланса çиеле тухса пынине туя пуçларăм, Марина, чунăмçăм, эсĕ — ман юратуçăм.

— Мĕнле ыйту, Валерка, кала. Урăх çиместĕн-и?

— Тăрантăм, — ăшаланă çĕр улми çине хучĕ вилкине упăшки. — Ака мĕн. Этемлĕхшĕн усăллă ĕçех турăм-ши эпĕ çак çутă тĕнчере? Каç та, кăнтăрла та канăç памасть вăл мана.

Калаçăва Марина та хутшăнчĕ.

— Хамăн пуçăм, ăсăм çитнĕ таран хуравне тупса парас-и?

— Тавай, эс ялан ăслă сăмах калакан.

— Пурăнмашкăн çуралнă пулсан, — терĕ арăмĕ, — çыннăн ĕнтĕ хырăм тăрантармалăх, кĕлеткене хупламалăх, хӳтлĕх тупмалăх ăçта та пулин ĕçлемеллех. Анчах ăçта ĕçлемеллине те пăхмалла.

— Эс каллех хăвăн юрруна юрлаттарасшăн-ха мана, çавăнталлах пăратăн, çав нота çинех.

— Паллах.

Валерка тăрса чӳрече умне пычĕ, урамри йывăççене сăнарĕ, янахне чавсипе тĕкĕлесе шухăша кайрĕ, унтан калаçăва малалла тăсрĕ. Ăшра тулнине тасатас терĕ пулас.

— Эпĕ те, этем тĕнчин уйрăлми пĕр пĕчĕк пайĕ, çут çанталăкăн çак йĕркипех пыма тăрăшрăм. Чăваш университечĕ хыççăн «хăрушă» комбината çитрĕм. Эпĕ унта хамăн тахçанхи ĕмĕте пурнăçламашкăн çеç чунтан ăнтăлнă. Мĕншĕн тесессĕн эпĕ химие ачаранах хытă юратнă. Олимпиадăсенче çĕнтернĕ чухнехи хĕпĕртӳ палли халĕ те чĕре çумĕнчех. Мĕн шухăшланине тунă. Ĕçшĕн пĕртте ӳкĕнместĕп. Патшалăх аслă шкулĕ панă пĕлĕве харама ямарăм. Юратнă специальность кăмăла уçнă манăнне. Кайрĕ вара пĕлӳ урапин кустăрми малалла кусса. Вĕреннĕ чухне пуçласа «Химпрома» лекрĕм. Астăватăн-и иксĕмĕр мĕнле паллашнине?

— Атте патне пырсан-и?

— Аха. Аçу пире машинăпа ăсатнăччĕ. Эсĕ те пĕрлех ларса çӳрерĕн. Сан çивĕтӳ, çурăму çинче ташлакан çивĕтӳ, пит кăмăла кайнăччĕ, каярахпа — хăв та. «Химпромра» органикăллă çурма продуктсемпе тата сăрă пĕветмелли имçампа ĕçлекен лаборатори пулса. Вĕреннĕ чухнех манăн пĕветӳ енĕпе хатĕрленĕ наука ĕçне лайăх хак пачĕç. Ка-

ларăм-çке, специальнăçне те, ĕçне те юратнă эпĕ çамрăклах. Çын вĕт тата ытларах пĕлесшĕн, çав пĕлӳпе хавасланса, çĕнĕрен те çĕнĕ тĕпчевсем, сăнавсем тăвать, шырать, тупать те савăнать. Пирĕн шутсăр вăйлăччĕ çамрăклăх хавхаланăвĕ, пурнăç илемĕ йăлтах юратнă ĕçреччĕ.

— Çавăнпа эс авланасси çинчен те манса кайнă, çӳреттĕнччĕ анраса Мир урамĕнче, — çумне пырса тăнă Марина упăшкине ыталаса илчĕ.

— Эпир юлташсемпе авланиччен хими наукисен кандидачĕ пуласшăнччĕ-çке, çавăнпа васкаман, — арăмĕн сапаланса кайнă çăра çӳçне шĕвĕр пӳрнисемпе турарĕ Валерка.

«Халĕ хими кандидачĕ — вилĕм кандидачĕ пулса юлтăр», — таçтан муртан вĕçсе килчĕ Марина патне усал сăмах.

Упăшки хавасланчĕ, унччен арăмне йăлтах пĕлтерменнине чунне уçса каларĕ:

— Эсĕ ачарах пулнă, эпĕ лайăхах астăватăп. Халăх çӳлтен мĕн хушнине Турă сăмахне итленĕ пек итлетчĕ. Пирĕн тĕнчере мала тухмалла-çке, пирĕн этемлĕхе сыхласа хăвармалла. Çавăнпа та чи вăйлă, чи витĕмлĕ хӳтлĕх хĕç-пăшалĕ тумалла. «Химпром» та çак кирлĕрен те кирлĕ, вăрттăнран та вăрттăн ĕçе тытăнчĕ.

— Эсĕ мана ун пирки каламанччĕ...

— Эх, Марина, ытла айван эс. Каккуй сана калама... Пуç яраççĕ вĕт уншăн, тĕп тăваççĕ. Мана халь пурпĕрех... Эс çырт шăлна.

— Апла тăк, ан кала, — кӳренчĕ арăмĕ.

Малалла чăнах та калас-и, калас мар-и тесе Валерка анлă пӳлĕмелле тухрĕ те арăмне чĕнсе илчĕ.

— Никамран та, нимрен те хăрамастăп халĕ эпĕ, хамăн çывăх çынна хамăн вăрттăн ĕçпе паллаштармасăр чун чăтмасть паян. Чун кӳтрĕ. Кăнтăр апачĕ хыççăн сĕтел хушшинчех пуçа хурса кăтăш пулнă та... тĕлĕкре аттесемпе асаттесене, аннесемпе асаннесене, тăван-пĕтене, хамăр ялсене масар çинче куртăм. Икĕ рете тăрса тухнă та вĕсем, эпĕваррипе утатăп, кашнине алă паратăп...

Арăмĕ ой-ой! тесе пуçне пăркаласа илчĕ.

— Ытла аван мар тĕлĕк.

— Ан кулян. Хамăр ялта пулнăран вăл. Комбината эп

ĕçлеме кăна мар, тăван яла — ачалăх килне пурăнма каятăп-çке. Хваттертинчен нумайрах пулатăп эпĕ унта — эрнере пилĕк кун. Шăпах пирĕн Шуркассинче сарăлса ларать вĕт «Химпром». Масара наркăмăшласа. Несĕлсене пĕтерсе. Хамăра кăшласа. Çавăнпа эпĕ макра-макрах ĕçлетĕп. Виççĕмĕш площадка текен çĕрте хăрушăран та хăрушă япала тăватпăр.

— Тахçан аттесем пирĕнтен вăрттăн калаçса ларнă чухне хăлхана кĕнĕччĕ, анчах ăнлансах пĕтмен, — ассăн сывласа ячĕ арăмĕ. — Уй куçлă, вăрман хăлхаллă тени тĕрĕсех пуль çав.

— Манашкал пакăлтатакан тупăнма пултарнă. Этем нервне аркатса, шалкăм çаптарса çынна тăрук пĕтерсе хумалли им-çам хатĕрлетпĕр. Курнă пуль тинĕсри пулăçсем аçам евĕрлĕ тум тăхăннине. Çавăн пек тумпа, противогазпа ĕçлеççĕ. Эпир лабораторире унашкалах мар. Унта ĕçлекен арçынсене вунă çултан, хĕрарăмсене çиччĕрен çăмăллăх параççĕ. Ман та виçĕ çул çеç юлать. Пенсие тухсан вара тĕнче тăрăх курса çӳреме тытăнатпăр.

Марина аллинчи хаçата уçкаласа хупрĕ, анчах куç курни пуçа кĕмерĕ, упăшкин сăмахĕсем хăлхана çурса ячĕç.

— Çын вăл малашнехи кун-çулĕ, ачисен, йăх кун-çулĕ çинчен шухăшлать-и пĕрре ĕçе кӳлĕнсен, — терĕ вара вăл кулянса. — Вăхăтлăх çăмăллăхсемпе хăйне хăй лăплантарса ĕçлесе ирттермех тăрăшса тапаçланать. Кайран чĕрĕ скелет пулса юлать. Этемлĕх тăшманĕн тамăк хураненче çын хăй ирĕкĕпех, савăнсах вĕрет иккен.

Валерка пуçне, хытанка питне сăтăра-сăтăра калаçрĕ:

— Эх, çылăх. Эпир те, хамăра хамăр хĕрхенме пĕлмесĕр, хамăр кама хирĕçле ĕç тунине пуç тавра тăнпа çавăрттарса пăхма васкамасăр этемлĕх умĕнчи çылăха ӳстерсе те ӳстерсе пыратпăр.

— Ĕçĕ пит йывăр-и? Ывăнатăн та. Сывлăшĕ çитмест-и? Хашкаса сывлатăн та, — хĕрхенсе ларчĕ арăмĕ.

Упăшки ăна куçран пăхмарĕ, пуçне чиксе каларĕ:

— Çăтмахри пекех. Йĕрки те çирĕп. Ăçта йĕрке — унта ăнăçу. Технологи дисциплинине çирĕп пăхăнатпăр. Пĕр ушкăн хĕç-пăшал хатĕрленĕ хыççăн вырăнне çуса тасататпăр. Сывлăшне те озонпа пуянлатса сиплентерсех тăратпăр. Чечексем ӳсеççĕ. Кайăксем юрлаççĕ. Вăт çапла

вăл «Химпром» райĕ. Ялĕ те, ĕçĕ те чуна туртать. Анчах ăш вăркать. Темле хăрушлăх туйăмĕ вăйланать. Шутла-ха, Марина, эпир вĕт хамăра хӳтĕлемелли, Тăван çĕршыва сыхламалли хĕç-пăшал мар, хамăра пĕтермелли хăрушлăх хатĕрлетпĕр-çке. Американецсемпе яппунсем ăслă, сывлăхшăн сиенлĕ вырăнта роботсемпе усă кураççĕ, пирĕн «Химпром» çăмăллăхпа илĕртсе чĕрĕ çынна вилĕмпе улăштарать. Ой, хăрушă. Çылăх вĕт, Марина?

— Мĕн каламаллине те пĕлместĕп ĕнтĕ, пуçăм çаврăнать.

— Çылăх. Нихçан никам каçарми çылăх, — сăхсăхса илчĕ Валерка. — Кама айăпламалла уншăн? Камран ыйтмалла? Кам умĕнче сăхсăхса пуççапмалла? Паллах, халĕ ĕнтĕ айăпне никам та йышăнасшăн пулмĕ. Мĕн хушнине çеç пурнăçланă теме пăхĕç пурте. Эпĕ те çаплах шухăшлатăп, — цех, лаборатори пуçлăхĕ, директор таранах. Уншăн чи хуравлисем леш тĕнчере ĕнтĕ. Вĕсем хăйсем хурав тытĕç. Турă умĕнче. Анчах та пирĕн, чĕррисен, çав хăрушлăха хамăр алăпа хатĕрлекенсен, ман шутпа, хамăрăн совесть умĕнче каçару ыйтса чуна лăплантарасси çеç юлать. Эпир мĕншĕн тесессĕн ни Турă умĕнче, ни Этемлĕх умĕнче айăплă мар. Çылăхлă мар...

Арăмĕ çывăрмалли пӳлĕме кĕрсе вырăн хатĕрленине те сисмерĕ Валерка, кил, выртса кан тенине илтсен тин калаçăвне татрĕ. Ытла та кӳтсе çитнĕ вăл, сывлăхĕ йăшнипе, арăмĕ умĕнче юрату йăпанăвĕн айăпне кĕнипе, ачипăчине кĕтсе илейменнипе сасăсăр макăрать чунĕ. Арăмĕ вăл хастарлантармалли эмел хыпнине курнипе чĕтреме ерет, хывăнса упăшки çумне ирĕксĕр кĕрсе выртать.

Качча кайнăранпа та савăк сăпкинче сиктермен вырăн уншăн çакă — «Химпром» им-çамĕ пекех. Кунран-кун, çултан-çул хавшатса, чире ярса, уртарса кĕллентерет çамрăк ӳт-пĕве. Пуçласа арçын тутине астивсе курнă каç аякран вĕççе килнĕ канлĕх туйăмĕ çеç кĕлеткере пытанса пурăнать, ăна хĕрарăм шутĕнчех тытса тăрать. Юмахри пек лăпкă канăçлăх çеç çав вăл. Тантăшĕ хăпартланса каласа панă чăн-чăн арçынна курĕ-ши вăл хăçан та пулин е тĕл пулаймасăрах вилсе кайĕ? Шăпа çулĕ тата ăçта илсе çитерĕши? Эмел те, ним те пулăшайми пулса пырать ĕнтĕ упăшкине. Куç умĕнчех сӳнет.

Ирччен нушаланса асапланнă хыççăн пуç кунтăк пек. Пĕтĕм шăм-шак сурать. Хал çук. Ĕçе те ирĕксĕртен тенĕ пек çеç тухса утрĕ Марина. Сăвă çырма та, юрă кĕвĕлеме те, юрлама та тахçанах пăрахнă ĕнтĕ. Пултарулăхĕ сӳнсе пынине туять, курать вăл, пурпĕрех çулăмланмалли хĕм куç умĕнче йăлкăшмасть.

Ах, мĕн тума кирлĕ пулчĕ-ши ăна юрату? Хăвăртрах тĕл пулса Шуркасси Валерккин йăпăр-йăпăр чупакан куçĕнчен пăхса улмуççи айĕнче ирччен ярăнмашкăн-и? Çĕнĕ хулари вĕр çĕнĕ хваттере концерт туменпе арăм пулса пырса кĕмешкĕн-и? Упăшкана ĕçе чуптуса ăсатса ярса ĕçрен чуптуса кĕтсе илмешкĕн-ши? Вырăн çинче вăтанмасăр упăшкапа ыталанса выртмашкăн-ши? Виличчен пĕрне-пĕри пăрахмасăр пулăшатпăр, улталамастпăр тесе тупа тунăшăн-ши?

Качча кайиччен хавхаланулла шухăш, çунатлă сăмах чăн юрату мар иккен. Çумри каччăн вăйне, хăватне, пултарулăхне ӳт-пӳпе, пĕтĕм кĕлеткепе тутанса тĕрĕслесе пăхмасăр чăн-чăн юрату çавăрса илеймест чун-чĕрене. Çапах туять Марина Ларина (хушаматне пĕрлешсен те улăштармарĕ вăл) юрату хăй таврах явăннине, ĕненет вăл пуррине, кĕлеткере вăйланса чуна ăшăтасса, чĕрене вăратасса, канлĕхре савăнтарасса. Çĕр çывăрмасăр, кунĕн-çĕрĕн кĕтет.

Ăнланмасăр тунă утăм Шупашкар хĕрне куççуль кӳллине кĕртсе ячĕ. Упăшки пурнăç кĕсменне вăйпах авăсрĕ, анчах кимми хăрушă юхăма лексе умри авăралла ишрĕ, халран кайса, кайса пычĕ, арăмĕ кимме вăйлă юхăмран кăлараймарĕ. Чарăнма пĕлмен çавра çил çавăрттарса тăвăл кăларчĕ. Хăрушă вăй туртăмĕ кимме хăй патнеллех çывхартрĕ. Шыв сикки юхтарса авăра сиктерчĕ. Упăшкине çĕр çăтрĕ...

Мăшăрне пытарнă хыççăн Маринăн пуш хваттере кĕрес те килми пулчĕ. Валерка чĕрĕ чухне хăть унпа калаçма, тавлашма, хирĕçме, çураçма, ĕмĕтленме пулатчĕ. Пĕччен тăрса юлсан пӳлĕмсенче мĕлке куçа курăнакан пулчĕ, хăлхана Валерка сасси хăйăлтатарах кĕрсе каять: «Анчах... эпир пулнă, пур, пулатпăр. Пурнăç нумай шухăшлаттарать. Этемĕн хырăм тăрантарассишĕн, кĕлеткене хуплассишĕн тата пуçа хӳтлĕх тăвассишĕн çеç ĕçлемелле мар иккен, вĕсемпе пĕрлех хăвăн тата ыттисен сывлăхĕшĕн те,

хăвăн тата ыттисен ырлăхĕшĕн те, хăвăн тата ыттисен пурнăç илемĕшĕн те, тĕнче илемĕшĕн те ĕçлемелле. Çавăн чухне çеç эпир телейлĕ. Çавăн чухне çеç эпир этемлĕх умĕнче çылăхсăр пулăпăр».

Пӳлĕмрен пӳлĕме пĕчĕк ачасем чупнă пек. Малтанхине вăл амăшĕ ячĕпе Лариса теме пуçланăччĕ, иккĕмĕшне ашшĕ ячĕпе — Хветĕр. «Чунĕсем ăçта вĕçсе çӳреççĕ-ши? Кун çути кăтартнă пулсан вĕсене? Сывах çуралман пулсан та, тен, сусăрах пулмастчĕç. Сываткаласа ӳстереттĕмĕрччĕ. «Химпромра» ĕçлекен ытти çынсем пекех. Ашшĕ те выляса савăнса куратчĕ пепкисемпе. Йăхĕ те малалла тăсăлаймарĕ унăн. Тӳнчĕ, тĕп пулчĕ янташсен несĕл йывăççи. Хамăрăн та темле. Пĕртен-пĕр ача-çке эпĕ. Пичче Венгрире такам ирĕклĕхĕшĕн çапăçса пуç хучĕ. Эп айăплăши Валеркăсен йăхне малалла тăсманшăн?» Çак шухăша вăл хăйĕнчен хăвалать. Тĕп айăпне «Химпромра» шырать, тупать, йĕре-йĕре вăрçать такама хăйсен çемйине телейсĕр çунтарнăшăн, ăна ача-пăчасăр, упăшкасăр тăратса хăварнăшăн. Ун пек нушаланакан, хур куракан çĕршер хĕрарăм çак вилĕм вучахне Шуркасси таврашĕнчи ялсене çунтарса вĕсен масарĕсем çине чĕртме ирĕк панă пуçлăхсене Турă умĕнче ылханать пуль.

Ансамбльте юрлакан тантăшĕ пыра-пыра каять, хушăран ун патĕнче юлса çывăрать. Усламçă-кĕрешӳçĕпе пурăнать вăл. Хитреленсе, çуталса кайнă. Чăнах та, юрату пур, тĕнчере тесе мухтанса та илет. Упăшку вилни çулталăк çитсенех шырама пуçлатпăр ак сан валли те, тупатпăр, чĕрĕлетпĕр тесе ăна хавхалантарма та манмасть.

Хăраххăн тăрса юлнă хитре арăм çине куç хывакансемпе çума çыпçăнакансем те курăнма пуçларĕç. Марина васкамарĕ-ха, никама та чĕри патне çывхартма шутламарĕ, каллех йăнăшасран хăрарĕ. Эп турă калашле виççĕмĕшĕнче тин чăн-чăн арçын тупрăм, ытларах сав, тĕрĕсле тесе тантăшĕ канаш панипе килĕшесшĕн пулмарĕ. «Салют» керменти туйăм ытамĕнчен тухаймарĕ: «Çавă-ши ман чăнчăн юрату, чăн-чăн арçын тени?»

Амăшĕсем патĕнче те Марина канлĕх тупаймасть. Сада тухсан улмуççи чĕрене ыраттарать. Пăявĕ çĕрнĕ хыççăн ларкăчне сарайне кĕртсе хунăччĕ. Амăшĕсем те хуйхăраççĕ хĕрĕшĕн. Уншăн çеç мар. Кунти килсене пĕтереççĕ

иккен. Кĕçех çуртсем лартма тытăнмалла тет. Вĕсен ватă ялĕн юлашки урамĕ çине те чул купи пĕтĕмпех хăпарса выртать. Вăл çуралнă пӳрт арканать, вăл выляса, улма çисе ӳснĕ сад çухалать, йăх йăви пăчланать. Хăмпă пек сарăлса пыракан хула миçе ял çыннине йĕртмерĕ-ши, миçе пин хресчен çемйишĕн хура элчел пулса тăмарĕ-ши?

Музыкăра, поэзире, шкулта ĕçлесе Марине кӳтнĕ чунне кантарать. Хăй мĕн пĕлнине, пултарнине ачасене парать. Асаплана-асаплана çĕнĕ кĕвĕ йĕрри çине ӳкет. Юхса пыракан çемĕ, куççульсĕр макăртса туйăмлăн аталанать, вăй илет:

Анне, мана асапланса ма çуратрăн-ши?
Атте, мана хавхаланса ма юратрăн-ши?
Качча парса, анне, мана ма çухатрăн-ши?
Арçын пулса, атте, мана ма çăлмарăн-ши?

Мăшăр пулса, савни, сана упраймарăм-çке,
Мăйăр татса сар тĕшшине параймарăм-çке.
Сарăм пирки чунăм санран уйрăлмарĕ-çке,
Арăм пулсах сан ятупа пурăнатăп-çке.

Шăпчăк пулса сад пахчине вĕçсе килĕн-ши?
Шанчăк парса пуç тăрринче юр юрлайăн-ши?
Чуччу çинче пĕрле ларса ярăнайăн-ши?
Чăп чуптуса, ыталаса ăшăтайăн-ши?

## 3

Мир урамĕ Шупашкарăн тухăç енчен пуçланать те Иван Яковлев урамне тухать. Аслă урамăн илемĕ çукрах. Заводсемпе базăсем, складсем темиçе çухрăма тăсăлаççĕ. Эгер бульварĕнчен иртсен тин сулахай енче пилĕк хутлă çуртсем курăнаççĕ. Сылтăмра — ялтан юлнă юлашки пӳртсем: хăтлăраххи те, тăйлăк-тайлăкки те пур. Çак вырăна тасатса Карсаковсен нумай хутлă çуртсем лартмалла. Çĕнĕ автовокзал çывăхĕнче тăрхала хĕрлĕ курупкасем ӳсе-ӳсе ларнăччĕ-ха. Унтан çул урлă, тепĕр енне, прораб «хули» куçса килчĕ хула варринчен. Дзержинскипе Ленинград урамĕсем кĕтесленнĕ çĕрте, ĕлĕкхи сăра завочĕ вырăнĕнче, капăр çурт парнелесе хăварчĕç вĕсем хула çыннисене.

Стройка штабĕ — прораб пӳрчĕ — Ларинсен пахчи çумĕнчех. Василий Николаевич ăна ятарласах çавăнта ларттарчĕ. Ытти вакун пӳртсем икĕ ретĕн вырнаçнă. Элек-

тролини, телефон кабелĕ карса килчĕç. Акă пĕрремĕш шăнкăрав янраса кайрĕ. Карсаков телефон авăрне хăлха çумне хĕстерчĕ:

— Смольнăй итлет!

Калаçаканни, управлени пуçлăхĕ Малышкин, кулса ячĕ те хастар прораба çĕнĕ позицире ăнăçу сунса уйрăм кăтартусем пачĕ, çынсен пӳрчĕсем пирки ыйтса пĕлчĕ.

— Пăсаççĕ, турттараççĕ, ыран-виçмине бульдозерсем кĕртсе яратпăр, — терĕ прораб салтакри пек тикĕссĕн те çирĕппĕн.

Ĕç вăхăтĕнче прораб пӳрчĕ чăнах та революци штабĕ пекех. Мастерĕ, бригадирĕ, шоферĕ, электрикĕ, заказчикĕ, тĕрĕслекенĕ, хушу параканĕ хĕвĕшет, телефон шăнкăртатать, тахăшĕ тавлашать, кăшкăрать, намăс сăмахĕ хăлхана кĕрет, чĕлĕм тĕтĕмĕ сывлăша пӳлет. Кĕрлет штаб-хваттер. Тахçан киккирикки хĕрсен персе янăччĕ те Карсаков çапла, кайрĕ вара вăл, халĕ кашнинчех «Смольнăй итлет». Юлашки çулсенче ун пирки пĕтĕм Шупашкар пĕлет ĕнтĕ. Сассине илтсенех кампа калаçнине ăнланаççĕ.

Штаб-хваттерте «революци пуçличчен» ирĕклĕн сывламашкăн тесе Василий Николаевич тулалла тухрĕ, картлашка çинче мăнаçлăн сарăлса тăрать. Славутичра ĕçленĕ чухне Киевра туяннă капăр куртка, якатнă шăлавар, Индире çĕленĕ çутă пушмак тăхăннă, çăварне вăрăм сигарет хыпнă, ирпе кăна кастарнă тăпăлкка çӳçĕ çилпе якалать. Хăнăхнă йăлапа пуçне шăла-шăла тавралăха сăнать. Уйăх çутинче тахçан тĕл пулнă улмуççи ăна çурăлнă чечекĕсене юлашки хут татса юлмашкăн чĕннĕнех туйăнать. Тăварахра хуçасăр тăрса юлнă улма-çырла йывăççисене, хурăнсемпе тирексене, пилешсене йăвантарни аванах курăнать. Унăн юлташĕ, тепĕр прораб, кран вырнаçтарма та ĕлкĕрнĕ. Уçăрах вырăн лекнĕ çав ăна. Карсаковăн ĕç лаптăкĕ тасалман-ха. Улмуççи çинчен вĕçсе килнĕ пыл хурчĕ тапăнчĕ ăна. Сĕмсĕре хăваласа ярасшăн аллисемпе çатăлтатрĕ-хăлаçланчĕ вăл, çапах унран ниепле те хăтăлаймарĕ. Хурт ярханах кăкăр çумне çыпçăнчĕ те кăкăртан аяларах сисĕмлех сăхса илчĕ. Тарăхма та пĕлмерĕ вăл çурхи пыл хуçине. Хăй пĕтрĕ, ăна сăрăлтаттарса шухăша ячĕ:

«Ăçта-ши эсĕ халь, «Салют» керменĕнчи акăшăм, юмахри пикеçĕм? Мĕншĕн кайса ятăм-ха сана эпĕ Çĕнĕ Шу-

пашкара? Хам тупнăскерне çынна патăм. Пăрахса хăвармаллаччĕ те каччине çакăнта, кайтăр пулатчĕ вăл çуранах, хĕре-юрăçа ирччен катаччи ярăнтармаллаччĕ. Хваттер те пушахчĕ. Мĕнехчĕ, хăй килĕшнĕ пулсан. Арăм умĕнче совеçе тахçанах çухатнăскерĕн, тепринпе йăпанма юрамастчĕ-и-ха? Ултав шухăшĕ мана малтан, арăмпа пурăнма тытăнсан, пуçа пырса та кĕменччĕ те... Арăм ача çуратма хатĕрленнĕ, хăй патне çывхарма юраман вăхăтра, кран çине чакаланса хăпаракан Маньккăна темшĕн куç курми пуличченех пăхса тăтăм-çке, ĕç хыççăн кĕпине уçса пăхма тиврĕ. Чăтăмлăха чарайманшăнах. Халĕ те, арăм уйăхра пĕрре канса илнĕ хушăра е ĕçсе лартсан унпах «вирăмайнăланас» килет. Çемьене те пăсмастăп, вăрттăн çыхăнăва та татаймастăп. Эх, пĕри ĕнер, тепри паян пылакрах пек. Нумайрах пурăнсан пылакки те йӳçĕхет иккен. Эп анчах çапла пурăнатăп-им? Тĕнче çавăн çинче тытăнса тăрать. Манăçмасть Марина. Килĕнче кам пур-ши? Кĕрсе ыйтса пăхсан? Эсир пире тĕп тăватăр тесе турчкапа хуса кăларса ярсан? Ку тустару манран килмест-ха та, çын вăл ăнакăна ăнланать-и, халăх кăмăлсăрри палăрать, ятлаçаканни те, бульдозерсене ватса пăрахаканни те тупăнать. Манран килмест те çав, мансăрах йышăннă Шупашкар çумĕнчи ялсене пĕтерсе хума, хулана сарма. Хули вара ытти çĕрти пушанса юлнă ялсенчи яш-кĕрĕмпе тулать. Çырма-çатра тавра йывăç ӳстерес вырăнне хăмаран çапса тунă «шанхайсем» йышланаççĕ. Ĕçлекене хула çăтать, хăй ытамне илет. Чул купи сарăлать, пĕлĕтелле кармашать, тырă пĕрчине асфальтпа хуплать, пин-пин çемьене пăтратса çĕр пин çынна йĕртет. Ку таранччен эпĕ кунашкал усал ĕç туса курманччĕ-ха. Ялан уçă лаптăкра е хула варринче уйăрса панă çĕр çинче кермен, шкул, пульница, пурăнмалли çурт тунă. Акă хальхинче чăваш ялне тĕппипе пĕтерсе, çĕрпе танлаштарса, ун вырăнне никĕс хывса тем пысăкăш çуртсем каплантармалла. Мирлĕ вăрçă мар-и-ха çакă? Марина ашшĕ-амăшĕ, аслашшĕ-асламăшĕ тата авалхи несĕлĕсем мĕн калĕç пире? Анлă урама капăрлатса ял халăхĕн тымарне кăкланăшăн çылăх мар-ши? Эй Турăçăм, кĕлтăватăп сана — эпĕ айăплă мар. Марина, каçар. Эх, туйăмлă пикеçĕм. Алăку та уçă. Ура çеç утмасть. Тем сăнчăрларĕ. Улмуççи айĕнче ярăнакан чунçунтармăш. Курасчĕ сана. Ка-

лаҫасчӗ санпа. Ҫак ҫулсенче хам мӗнле тунсӑхланине пӗлтересчӗ...»

Шухӑшлав ытамӗнче хула шавне илтми пулнӑ Карсаков хӑлхине темле кӗвӗ кӗме пуҫларӗ. Малтанах вӑл радио сасси пек илтӗнчӗ, майӗпен вара вӑйланса, илемленсе тӑлӑх пӳрт енчен вӗҫсе килни паллӑ пула пуҫларӗ. Кӗвӗпе хутӑш ҫинҫе уҫӑ сасӑ, ҫурхи куна уҫӑлтарнӑн, сад пахчине сарӑлать. Юрӑ вылянчӑклӑн Василий Николаевича ытамласа илчӗ. Вӑл вара картлашкапа ҫӗре анчӗ, Ларинсен карти урлӑ сиксе каҫрӗ, улмуҫҫине ҫитсе ыталарӗ. Пӳртрен ӗнтӗ уйӑрса илмелли сӑмахсемех кӗвве пуянлатса ун патнелле вӗҫеҫҫӗ:

Сан сӑнупа чуна тасатрӑм,
Ҫӳретӗп халь куҫа тартса.
Ӑшра телей сунсах ӑсатрӑн —
Малашлӑх ҫулӗ кӑтартса.

Ӑша кӗрсе мана вӑратрӑн,
Йӑлтах мантартӑн канӑҫа.
Теприн ытамӗнчен вӑрларӑн,
Вӑй патӑн ҫутӑ шанӑҫа!

Чавман, ним акса-лартман пахча сукмакӗпе Василий Николаевич пӳрт патнелле чупсах кайрӗ, картлашка умӗнче хашкаса чарӑнчӗ. Пӳртре пианино пӑнлатать. Ун умӗнче ларакан Марина Ларина пуҫне пӑркаласа тунсӑхлӑн юрлать:

Ҫуркуннепе ҫеҫке эп ҫуртӑм,
Улми пулинччӗ кӗп-кӗрен.
Нихҫанхинчен хӑватлӑ туртӑм
Сана чӗнинччӗ кунсерен.

Пӑнтӑр-пантӑр, пӑнтӑр-пӑнтӑр, пӑн-пин-ин-н тутарса пӳрнисене клавишсем ҫийӗн вылятса илнӗ хыҫҫӑн Марина ура ҫине тӑчӗ, ӳпӗннипе ывӑннӑ пилӗкне тӳрлетсе пуҫне ухрӗ, сапаланчӑк ҫӳҫне майларӗ, сылтӑм аллипе кӑкӑрне шӑлса алӑк еннелле ҫаврӑнчӗ. Хура хӑмӑр куҫ шӑрҫисем ыйтуллӑн сарӑлса кайрӗҫ, Вася-Василек куҫӗпе тӗл пулса ҫиҫӗм кӑларчӗҫ. Вут-хӗм иккӗшне те ҫывхартса, ҫывхартса пычӗ те... алӑк урати урлӑ пуҫласа ыталаттарчӗ. Тута хӗрри хӗриччен, пит ҫӑмартисем йӗпениччен, чӗлхисем кӑтӑкланса типиччен, кӗлетке явкаланса кӑртлатиччен сӑмахсӑр, шухӑшлӑн, ӗмӗтлӗн тӗрӗслерӗҫ юрату паллисе-

не. Хĕрнĕ туйăм лаççи хĕм сирпĕтсе хăй ăшшине туртрĕ. Маринăн сылтăм алли алăк шашулккине тем вăхăтра урлă яма ĕлкĕрчĕ. Уйрăлмасăр, чуптусах шалалла кĕрсе пычĕç вĕсем, пуçтарман кравать çумне сĕвенчĕç. Марина хăйне «упа» аяла мĕнле пĕтĕрсе чикнине те сиссе юлаймарĕ, киленӳ алăкне яри уçса ячĕ, вара вăйлă арçынна пăчăртаса виличчен вĕçертмелле маррăн хăй çумне çыпăçтарчĕ, кĕлеткине вĕрилентерсе чăтайми канлĕх парса «ах Турăçăм, ах анне!» тесе кăшкăрттарса янипе, çан-çурăмне имлĕн çемĕçтерчĕ. Çав самантрах «упа» та канăçлăн мĕкĕрсе илчĕ. Аллисене сарса пăрахнă Марина куçне уçма та хăрать. Аллисемпе тĕкĕленсе выртакан «чăн-чăн арçын» каллех хăй ăшне кĕрсе кайнине туйса, вăл ăна тата туйăмлăрах ыталаса илчĕ, канлĕх кустăрмине малалла кусма пулăшрĕ. Вырăн çине тăрса ларсан тин сăмах хушрĕç вĕсем.

— Эпĕ сире, Вася-Василек, «Салют» уявĕнченех кĕтрĕм. Ĕмĕтленнине-шухăшланине каласа та пĕтерееС çук, — куçран пăхаймасăр вăтанчĕ Марина Ларина.

— Кунĕ чăннипех пирĕн кун пулчĕ пулмалла ун чухне. Эпĕ те кĕлеткери асаплăха çак таранччен чăтса пурăнтăм. Тем, Турриех çырнă пуль пире тĕл пулмашкăн, — тесе тăхăнма пуçларĕ Карсаков. — Килӳ-çурту пит шалккă.

Марина простыньпе витĕнсе выртрĕ.

— Мĕн тăвăн ĕнтĕ. Эпир çĕнтерееС çук. Халăх — вăйсăр. Аннесем кĕçех çĕнĕ хваттере куçĕç. Манăн хамăн хваттер пур.

— Упăшкун, ачусен...

Марина тарăннăн сывласа ячĕ те, хăяккăн çĕкленсе, чĕтревлĕ сасăпа каларĕ:

— Упăшка та, ачасем те çук. Пĕчченех эпĕ. Тăр пĕччен.

— Мĕнле-ха капла?

— Упăшкана «Химпром» кăшласа ячĕ. Хăраса унран ача тумарăм. Сусăр ача нушине куриччен...

— Шел, шел, юрату ăнмарĕ апла сирĕн, Марина, — тесе Вася-Василек усăнса тăракан кăкăрне чуптуса илчĕ.

Хĕрарăм карт сиксе ăна шутсăр туйăмлăн чуптурĕ, ачашларĕ, хывăнтарчĕ.

— Турă калашле виççĕ пултăр-и?

— Виççĕ çеç мар, виç çĕр вăтăр виççĕ те, виç çĕр пин...

Куçне хупнă Маринăна йăпату сăпкинче ярăннă пек,

улмуççи айĕнче ăна юратнă каччипе тин çеç паллашнă пĕлмен арçын сиктернĕ пек, Валеркăн алли шăнтса ярас пек, Вася-Василек алли пĕçертсе ярас пек туйăнать. Чăннипех пĕçертет-çке Вася-Василек, антăхтарса ярса вĕçтерет те вĕçтерет хĕрарăма юрату уçлăхне.

— Кӳр-ха, тепре чуптăвам сире, Вася-Василек, — йывăррăн сывласа илсе туртăнчĕ Марина. — Эсир мана вăратрăр, чăннипех хĕрарăм чунне вăратрăр манра. Эпĕ те халĕ хам чăн-чăн хĕрарăм пулнине такама та вăтанмасăрах каласа пама хатĕр. Тин ĕçрĕм эпĕ юрату пылне, юрату имне, юрату шерпетне. Ӳсĕртсех ятăр. Хырăм выçмасть-и? Пĕçерни пур ман. Анне те кĕçех килмелле-ха. Атте вăл университетрах апатланать.

Карсаковваскарĕ. Унăн ĕç нумай. Вăл ĕнтĕ тутă.

— Çĕн Шупашкара пыратăр-и?

— Хăçан?

— Хăçан ирĕкленетĕр — çавăн чухне. Алăк уçă.

— Юрĕ, «Салют» юратăвĕ.

Виçĕ салют парса тухнă Карсаков штаб-хваттерне ирхи хĕвел пек йăлкăшса çитрĕ. Ăна Хайлов кĕтсе ларать. Управленин тĕп инженерне курсанах унăн савăк кăмăлĕ хăрăк турат пек хуçăлчĕ. Чун туртмасть çак чăкăлтăша. Ялан вăл тем усалли шырать, вĕçĕмсĕр кăмăлсăр.

— Ăçта çапкаланса çӳретĕр ĕç вăхăтĕнче?! — сывлăх сунма мансах тĕпчеме пуçларĕ Хайлов.

— Мана хăçан куртăр çапкаланса çӳренине? Хамăн объектра, хамăн ĕç вырăнĕнчех эпĕ, — ала панă май хуравларĕ Карсаков.

Кукăр ураллă Хайлов тапăртаткаласа çаврăнчĕ те прораба кăчăк туртрĕ:

— Килĕр-ха, хăлхаран пĕр сăмах калам?

— Мĕн вăрттăнлăхĕ пур иксĕмĕр хушăра, пурин куçĕ умĕнчех калăр, — терĕ тĕп инженерăн чеелĕхне сиссе Карсаков, мĕншĕн тесен пĕлет вăл хăлхаран пĕр сăмах калап тесе прорабсемпе мастерсене сыпнипе-сыпманнине шăршласа çӳренине. Çавăнпа унран Хайлов-хăлха тесе мăшкăллаççĕ.

Прораб хăйне итлеменнине кура сассине хăпартрĕ:

— Апла тăк управленире калаçăпăр. Начальник умĕнче. Куртăм эсир мĕнле объектран тухнине. Кил хуçисем-

пе тем каварĕ тунă-ха. Сăмакун ĕçтерчĕç пуль-ха, çавăнпа манран хăратăр.

Василий Николаевич тарăхсах кайрĕ:

— Тунă, тунă пултăр! Эп вăл пӳртре мĕн тунипе сирĕн мĕн ĕç пур! Калăр тӳрех, мĕн кирлĕ сире? Пăтратса çӳретĕр, ĕçлеме памастăр.

Тĕп инженер сĕтел пуçне пырса ларчĕ, хăй çине кула-рах пăхакан бригадирсене çухăрчĕ:

— Тухса кайăр! Шăлйĕренсем. Апат тахçанах вĕçленнĕ. Йĕрке çук сирĕн, Василий Николаевич. Пулă пуçĕнчен çĕрет.

— Хăлха вара кутĕнчен çĕрет, — тесе йĕкĕлтесе хăварчĕ Йăван Павлов.

Иккĕшĕ юлсан Хайлов ыйтрĕ.

— Çурт проектне парăр-ха.

— Акă, тархасшăн, — сунтăхран хулăн кĕнеке туртса кăларчĕ прораб.

— Иксĕмĕр тепĕр хут пăхса тухар-ха, мĕнтен пуçламалла...

— Никĕсрен ĕнтĕ, урăх мĕнтен пултăр. Проекта эпĕ мастерсемпе тата бригадирсемпе букварь пекех вĕреннĕ.

— Апла пулсан çиччас тĕрĕслетпĕр. Çапах та эсир хăвăр кам умĕнче ларнине ан манса кайăр, ĕç тăвакан.

— Линейнăй инженер, прораб канцеляри йĕке хӳри умĕнче ларать, — тесе алăк патнелле таплаттарчĕ Карсаков. — Хăвăрах паллашăр. Ман вăхăт çук ача вăййи выляма. Сирĕн те лайăх пĕлмелле. Эсир — тĕп инженер.

— Василий Николаевич! Малышкин умĕнче хурав тытмалла пулать куншăн.

— Тытатпăр: хуравне те, экзаменне те. Çуртне те тăватпăр — сирĕнсĕрех, — хыттăнах каласа хăварчĕ вăл.

Хайлов ялан çапла çĕтĕлтерсе çӳрет çынсене. Кантура çитсен пуçлăхне элеклесе парать. Акă халĕ те шăнкăравлать вăл ун патне, алăк уçса кăшкăрчĕ:

— Василий Николаевич, телефон! Малышкин чĕнет.

Пуçлăх прораба тĕп инженера итлеменшĕн чиперех пăсăрлантарать. Мĕншĕнне ăнлантарса парсан тин лăпланчĕ. Хайлов-хăлха та хăйĕннех тăвасшăн.

— А ну-ка, чĕнĕр-ха кунта мастерсемпе бригадирсене, çурт чертежĕсемпе тĕплĕнрех паллашатпăр, хутлав табли-

цине пĕлнĕ пек пĕлмелле ăна вĕсен те, — мăн кăмăллăн хушу пачĕ вăл.

— Мĕн, пиртен мăшкăллама килтĕр-и эсир кунта? Управлени начальникĕн куçĕ умĕнче пурте тĕплĕн шĕкĕлчесе тухнă эпир ăна. Кашниех ак çак алăри пилĕк пӳрнене пĕлнĕ пек пĕлет...

— Çапах та ман тĕрĕслес килет. Эп — тĕп инженер.

— Эп — прораб. Эп хуравлă ку çуртшăн!

— Субординацие пăхăнмастăр!

— Парап ак субординаци, çиччас чи аялти карта анса ларатăр, — тесе Карсаков Хайлов-хăлхана пуканĕ-мĕнĕпех çавăрса тытрĕ те алăк уçса çĕре лачлаттарчĕ.

Пукан лачăр арканчĕ, тĕрĕслевçĕ кучĕпе лачакана анса ларчĕ. Хайлов-хăлха хăвăрт сиксе тăчĕ те вар тытса кулакан строительсене чышкипе юнаса, Карсаковпа ятлаçса, хыçне аллипе шăла-шăла танкăшрĕ.

Кун пирки кайран Малышкин та шарламарĕ, çакăн хыççăн Хайлов-хăлха хăй те чылайччен килсе курăнмарĕ. Унсăрăнах йĕркипе тикĕс пулса пырать ĕç. Карсаковăн хăйпе виçĕ инженер, бригадирĕсем пурте техникум пĕтернĕскерсем. Чертежне хăйсем çĕнетме, унти йăнăшсене тупма пултараççĕ. Сахал çурт купаланă-и вăл вĕсемпе? Йăван Павлов Хайлова хăртнине лайăх астăвать. Тĕп инженертан хăрамасть вăл. «Эс, Хайлов-хăлха, ку таранччен ху аллупа сарай туса курман. Йăпăлтатса, çынна сутса кантуртах тĕп инженера çитрĕн. Эпир çак алăпа шăратнă укçана сăптăрса пурăнатăн, намăссăр сĕлĕх», — тесе тĕртсех хӳтерсе янăччĕ. Маннă пулас ун çинчен, каллех сĕтĕрĕнсе çитнĕ. Çамрăксене вĕрентесчĕ, вĕсемпе юнашар тăрса ĕçлесе пăхасчĕ пĕрре.

Пианино урăх пăнпанлатмарĕ, кĕвĕ те, юрă сасси те тухмарĕ Ларинсен пӳртĕнчен сад пахчине. Тепĕр куннех вĕсем япалисене тиесе таçта илсе кайрĕç, пӳрт-çуртне пăсса турттарчĕç. Карсаков пулăшма хăйĕн ачисене ячĕ. Кӳршисен те пӳрчĕсем юлмарĕç. Çаралнă пахчасемпе садсем çеç хăйсен усал шăпине кĕтсе çынсене çур шăрши сапаларĕçха. Шупăр тăхăннă чиесемпе улмуççисене касакансем çине пăхса тăнă май Карсакова вĕсем шурă шупăр тăхăннă чăваш пикисене ураран ӳкерсе пынăнах туйăнчĕ. Ваттисем сăхсăхса, пилĕк таран пуç тайса, хĕвел çине пăхса уйрă-

лаççĕ кил выранĕсенчен. Вĕсене курнипе куççуль пăчăртанса тухать. Карсакова çирĕплетсе панă бульдозерсем, хăватлă çĕççисене лак! антарса лартрĕç те хура çăра тĕтĕм кăларса çĕр тĕкме пуçларĕç. Темиçе кун каялла кăна пурăнмалли капăр пӳрт вырăнĕнче яка лаптăк выртса юлчĕ. Маринăпа асамлăх ташши ташланă юрату вырăнĕ шăпах никĕс тĕлне лекет. Кĕçех вĕсем çĕр чавса унта тимĕр-бетон никĕс ярĕç, ун çине çурт купаланса ларĕ. Карсаков хывнă никĕс çинче вĕсен юрату керменĕ хăпарĕ-ши? Акă йывăç касакансем çывхарсах килеççĕ. Вăл вĕсене хирĕç утрĕ, палланă улмуççи тураттинчен сулахай аллипе çакăнса тăчĕ.

— Кăна хăварăр, ачасем, — терĕ лăпкăн.

— Пире пурне те касма хушнă.

— Уншăн эпĕ личнă хурав тытатăп. Авă епле çурăлнă. Çулçи курăнмасть. Кĕркунне улмине çиме килĕр.

Лешсем итлерĕç, ытти йывăççене çаратса тухрĕç. Ытла та пăтăрмахлă пулчĕ Марина Ларина улмуççийĕ. Каллех Хайлов-хăлха пирки. Асăрханă вăл юлнă йывăçа. Шăнкăравларĕ:

— Василий Николаевич, эсир хăрушсăрлăх техникине хăрушла пăсатăр.

— Пулма пултараймасть. Хăш енĕпе? Ăçта? Путлĕн ĕçлеме те тытăнман-çке? — тĕлĕнчĕ прораб.

— Улмуççине мĕншĕн кастармарăр? Шăпах вăл кран çаврăнмалли лаптăка лекет. Тасатăр!

Карсаков шухăша путрĕ. Мĕнле-ха капла, улмуççи çын мар, ун çине мĕн те пулин ӳкес-тăвас пулсан та нимех те мар. Лартăр-и? Атту вĕреннĕ эпир стройка таврашĕнчи мĕнпур симĕс ӳсекене касса тăкма. Пирĕн тĕрĕссипе хулари кашни йывăçа сыхласа хăварассишĕн çине тăмалла. Çĕнĕрен лартни хăçан ӳсет вăл? Çавăн пирки тавлашса кайрĕ Карсаков.

— Касăр! Инструкци, — илтĕнет авăртан.

Çакăн хыççăн килнĕ сĕмсĕр моториста хыçран тапнă пекех хӳтерсе ячĕ прораб. Хайлов управлени пуçлăхĕпе çитрĕ, хăрушсăрлăх техникин инженерне те хăварман. Тăсланкă инженерпа пуклак инженер утасласа виçеççĕ. Малышкин вĕсем çине кулкаласа пăхса тăрать. Кран çаврăнмалли диаметр чиккинчен улмуççи пĕрин пилĕк утăм, теприн вунă утăм шаларах ларать.

— Касмалла! — алă сулчĕ моториста Хайлов.

— Кастармастăп! — улмуççине ыталаса илчĕ Карсаков. — Пĕрле хама та касăр!

Малышкин алă сулчĕ те икĕ инженерне те çăмăл машинипе лартса кайрĕ. Пăтăрмах кунпах вĕçленмерĕ-ха. Хайлов треста пĕлтернĕ, унтан тĕп инженерĕ те, управляющийĕ те Малышкина хĕсеççĕ: «Мĕншĕн хăрушсăрлăх техникине пăхăнмастăр. Штраф кĕтетĕр-им?» Карсаков каллех çирĕп тăчĕ. Хайлов Чăвашстроя çăхав çырнă. Унтан комисси çитрĕ. Пĕрле вĕреннĕ ача Хайлов çатăлтатнине итлесе ывăнчĕ пулас:

— Шăпланăр-ха, — терĕ. — Стройка технологине йĕркипе тытса пырас чухне эсир миçе çынна чăрмантарса тĕп ĕçĕнчен пăрса ятăр-ха? Пĕлетĕр-и мĕн чухлĕ хур турăр, тăкак кăтартрăр? Сире эп хам Малышкин вырăнĕнче пулсан-и, тахçанах линейнăй инженера ямалла, малтанлăха мастерта тĕрĕслесе пăхмалла.

— Институт хыççăн мастер пулса курнă вăл, пăтти пиçмен, — кулса ячĕç пухăннисем.

— Улмуççи ĕçлеме никама та кансĕрлемест. Çуртне туса пĕтерсен ун айĕнче ĕçкĕ тăвăпăр, — çăхав çырнă хут таткине Хайлова персе пачĕ хăрушсăрлăх ĕçĕн пуçлăхĕ. — Кут шăлма кирлĕ пулĕ. Тĕрĕслеме вара сирĕнне, ытти объекчĕсене, урлă-пирлĕ çаврса пăхсах тĕрĕслетпĕр. Хăвăрах чĕнсе илнĕ. Ăнăçу сунатăп, Ваçлей. Улми тутлă пултăр.

Çĕнĕ ĕç пуçласа янă хĕрӳ тапхăрта, строительсем пек каласан, Карсак ыйхă çухатрĕ. Кăнтăрла телефонпа çухăрса та такампа-такампа «тытăçса», кирпĕч хатĕрлесе (май килнĕ чух запас туса) халран кайрĕ. Килĕнче ерçӳ пулмарĕ. Хунькассине тата çуралнă ялне хăнана чĕнчĕç. Арăмĕ те çумрах тытасшăн. Пуçран Марина сăнарĕ тухма пĕлмерĕ пулин те çитеймерĕ вăл кĕтнĕ ăшă вырăна. Участока икĕ сменăна куçарчĕç. Хăлхара — сăвай çапакансен сасси, самосвал-автокран ямшăкĕсен çухăрашăвĕ, урам шавĕ, телефон шăнкăравĕ... Штаб-хваттерте анчахрах Малышкин пулчĕ. Ытлашши сасă хăпартмасть вăл, йĕркипе итлет, ун хыççăн тин хăйĕн шухăшне уçать, мĕн те пулин сĕнет, кирлĕ чух хĕстерсе те илет. Çĕркаç Карсаков пĕр мастера хăй вырăнне хăварнăччĕ. Управлени пуçлăхĕн çур çĕр тĕлнелле мĕн сăлтавпа çитмелле пулнă унта, пĕлме çук,

вăл улмуççи айĕнчи тенкел çинче эрех ĕçсе ларакан строительсене тытнă. «Хайлов пĕлтернине малтанах ĕненменччĕ, халĕ урăхларах шухăшлаттарать. Тилхепене хавшататăн мар-и, ĕçмен строитель тупма йывăр, çапах та ачусене асăрхаттар. Çирĕпрех ыйтма пуçлатăп», — тесе пуç пÿрнипе сăмсаран шакканă пекех çирĕппĕн каларĕ.

Кăмăл хуçăлнă çак самантра алăк ерипен уçăлчĕ те, аллине чечеклĕ сумка тытнă, çÿхе плащ тăхăннă кăтралатнă хура хăмăр çÿçлĕ Марина шăппăн кĕрсе тăчĕ. Çамрăк хĕрарăм куçĕ сапнă шĕл кăвар пысăкăх мар тăрăхла пÿлĕме çутатса ячĕ. Шупка пушмак шаклатнипе Вaçлейĕн чĕри кăрт турĕ те ăна ура çине чалтах сиктерсе тăратрĕ. Пÿлĕм хуçи хăнана хирĕç чупнă пек хыпăнса тухрĕ те... урай варринче юпа пек хытса тăчĕ. Пăлханнипе унăн чĕлхи çĕтрĕ, чĕркуççийĕсем лăштăрах кайрĕç.

— Мĕнле килме пĕлтĕр, Марина? — ытамне çавăрса тытрĕ вăл çинçешке хĕрарăма. — Каçарăр мана, ниепле те май пулмарĕ çитме...

Кĕтмен хăна прорабăн табак шăрши кĕрекен тути хĕррисене чуптăва-чуптăва сисĕмлех çыртса илчĕ аял енчен.

— Асăнмалăх паллă хăваратăп, Вася-Василек, — сумкинчен шурă тутăр кăларса юна шăлса илчĕ хĕрарăм. — Тÿрлениччен мана ан манăр. Ах, чĕрем çунать. Çакăнта, тăван килте иксĕмĕр тĕл пулнă хыççăн путлĕн çывăрса курман. Çĕрĕпе кĕтет сире ман чунăм. Чĕре алăк патĕнче хураллать. Туйăм кĕлеткере йăшăлтатать. Ытла та йывăр-çке, кансĕр-çке мана. Сирĕн сăнарупа, сирĕн хăватупа пурăнма пуçларăм. Тин хĕвел кĕчĕ манăн вăрттăнлăх чатăрне. «Эсĕ кулнине миçе çул курманччĕ-ха, халĕ ай-яй, йăлкăшса кăна çÿрет», — теме пуçларĕ тантăшăм та. Ăна эп каламан-ха хамăр хушăри вăрттăнлăх çинчен.

— Ан шарлăр, — хĕрарăма çурăмĕнчен, купарчинчен ачашласа хы-ытă чуптурĕ Вася-Василек. — Чĕлхе вăл... вăрăм.

— Такам килсе кĕрĕ, — вăтаннă пек пулса вăрт уйрăлчĕ Марина. — Телефон чĕнет ав сире.

Карсаков алă сулчĕ те Маринăна чÿрече умне çавăтса пычĕ:

— Куратăр-и, пÿрт вырăнĕнче, сарай хыçĕнче çĕре мĕнле тарăн чавнă.

— Аха, пире иксĕмĕре турă пӳрнĕ вырăн.

— Авă çав тимĕр-бетон кӳлеписем кĕрсе выртаççĕ кĕçех унта. Çирĕплетсе якататпăр та...

— Кирпĕч купалама тытăнатпăр. Çапла-и?

— Пӳрт пулать. Пы-ы-ысăк, вунă хутлă пӳрт.

Ассăн сывласа илчĕ те Марина:

— Çуралса ӳснĕ вырăн туртать. Пĕрмаях, виличченех пуль, — терĕ. — Киле кĕрсе тухас, сире курас тесех килтĕм. Ятарласа. Улмуççи мĕнле сыхланса юлнă-ха тата? Ниçта пĕр йывăç çук. Калăр-ха, Вася-Василек? Эсир пĕлетĕрех ĕнтĕ.

Карсаков вара ăна улмуççи историйĕ пирки каласа пачĕ.

— Ой мĕнле ырă çын эсир, Вася-Василек! — сумкине сĕтел çине хурса мăйиран çатăрласа тытрĕ те чăп чуптурĕ, урисене хуçлатса силленчĕ.

Çавра кĕлеткерен çавăрса тытнă Вася-Василек хĕрарăмпа пĕрле çаврăнма пуçларĕ. Алăкран кĕрекен Манька крановщицăна та асăрхаймарĕç вĕсем, лешĕ алăка шалт! тутарнипе шартах сикрĕç. «Ой, такам!» — тесе Марина аллисене ячĕ, урайне анса тăчĕ, сĕтел патне çывхарса сумкине çавăрса тытрĕ.

— Такам курчĕ пире, — вăтанчăклăн пуçне пĕкрĕ хĕрарăм. — Халь лекет сире арăмунтан. Сас тухать. Çитереççĕ ун патне. Эп те çав, юрату вăрри, ăна сирĕн арăмунтан туртса илтĕм вĕт. Иксĕмĕр пĕрле аташнăранпах шутлатăп çав хĕрарăм çинчен. Ун умĕнче айăплă пек туятăп.

— Пуриншĕн те кулянсан, — тесе аллине ласт сулчĕ те прораб телефонпа калаçма пуçларĕ: — Ыран валлиех! Только ыран валли! Аллă тонна. Нимле вуннă та мар. Мĕн, хăлхуна цемент тулчĕ-им? Только мана анчах паратăн! Раствор пирки эп, лешин пирки мар. Эп сана кăтартăп, понимаешь, ыттисене те кирлине!.. Тăнла, итле мана. Сан валли эп вунă плитка шоколад илсе хунă. Ан кулян, коньякĕ те пур. Армянски. Пĕрремĕш рейс хыççăнах парса яратăп, леш, чĕчĕ тытакан шоферĕнчен. Пулать? Çырса хутăн? Юрать. Точка. Сыв пул. — Ывăç тупанĕсене сăтăрса сĕтеле шап! тутарчĕ те ура çине тăчĕ. — Май çук апла ĕçлемесен. РБУ та, кирпĕч завочĕсем те хам алăра. РБУ вăл — растворпа бетон узелĕ. Стройка шоколачĕ кăларать.

Диспетчерӗсем пулӑшаççӗ-ха пока. Килӗшӳ çирӗп. Бартер. Унсӑрӑн план та, укçа та çук. Мӗн панипе çырлахса меммеленсе ларсан стройкӑра выçса вилен, çӗтӗк йӗмпе çӳрен. Авӑ электриксем çитрӗç. Крана ток кирлӗ. Çыхӑнтармалла. Вӗсемпе калаçмалла. Ӑçта çӑвана кайса кӗчӗши ку крановщица? Килме каланӑччӗ.

Хӑй кунта чӑрмантарнине сиснӗ Марина кайма хатӗрленчӗ. Мӗн туса ларать-ха вӑл çак вакун-пӳртре çынсене пӑхтарса.

— Эпӗ каятӑп халӗ, — терӗ вара прораба куçран ыйтуллӑн пӑхса. — Культура министерствинче пулмалла, хамӑр училищӗне кӗрсе тухас, музыка театрӗнче калаçмалли пур...

— Мӗн тӑвӑн, ӗçех пӗтерет. Тӑваттӑра пирӗн сменӑсем улшӑнаççӗ, ун хыççӑн ирӗкленетӗп. Ӑçта тӗл пулӑпӑр?

— Тӗп универмаг умӗнче. Пиллӗкре, — теме ӗлкӗрчӗ çеç Марина, алӑкра электриксем текен арçын ушкӑнӗ курӑнчӗ.

— О-о, салам, Карсак! Каллех сан кранусене чун кӗртмелле. Хатӗр-и сирӗн? — аллине тӑсрӗ дипломат тытнӑ арçын.

— Ман яланах хатӗр, — пӗчӗк пӳлӗм еннелле пуçне пӑрса кӑтартрӗ прораб. — Халех яратӑр-и е ӗç вӗçленӗ хыççӑн?

— Сан хатӗррине пӗлсех килтӗмӗр-ха. Малтан ӗçне тӑвар. Унтан тин çӑвӑпӑр.

Карсаков вӗсемпе тулалла васкарӗ. Марина урам еннелле асӑрханса утать, килӗ вырӑнӗнче чарӑнса тӑчӗ, канав урлӑ хывнӑ хӑма кӗпер урлӑ аран-аран каçрӗ.

— Маньк-кӑ?! — таврари пӗтӗм шава хупласа янӑрарӗ Карсак сасси.

Шоферсемпе тӗрткелешсе тӑракан крановщица васкамасӑр çывхарчӗ, унтан тутине камитле чалӑштарса аяккалла кайса пыракан Марина Ларина еннелле пуçӗпе сӗлтсе, йӑкӑр-йӑкӑр утса аллисемпе вӗçнӗ пек туса кӑтартрӗ.

— Ӑçта явкаланса çӳрен эсӗ? — ятлаçма хӑтланчӗ прораб.

— Эс ху тата штаб-хваттерӳнте мӗн якӑлти каруселӗ çавӑран...

Прорабпа крановщицӑн хӗрӳ калаçӑвӗ çакӑнпа вӗçленчӗ.

Паçăр алăк уçса пăхаканĕ Манька пулнине Василий Николаевич ăнланчĕ.

Вăхăт иртни сисĕнмерĕ те. Смена пĕтсен ăна Манька çынсем умĕнчех кăтăкласа хăвараканччĕ. Вăл тимĕр картлашка тăрăх аннине пăхсах тăчĕ Карсаков. Манька кранне алсипе çатлаттарчĕ те чӳрече енне сиввĕн пăхса хĕрарăмсен йăла вакункки патнелле таплаттарчĕ, ура тĕлне пулнă консерв банкине тапса сирпĕтрĕ. Банка электрика пырса çапăнчĕ. Лешĕ Манькăна хăваласа кайрĕ. Карсаков телефонпа арăмне пĕлтерчĕ: кĕçĕр вĕсем çĕрĕпех ĕçлеççĕ, план хăваламалла.

Марина универмаг патĕнче кĕтсе тăрать. Карсаков чечек çыххипе пырать. Чечекне вăл хăйсен стройкипе хирĕç магазин умне чăмăртаннă пасарта туянчĕ. «Салют» юратăвне асăнмалăх парне илсе парас шухăш çуралчĕ. Шала кĕчĕç, япаласем пăхса çӳрерĕç. Марина кĕрĕк тăхăнса юрăхлипе юрăхлă маррине виçрĕ. Кăшт вăрăмрах пек.

— Хамăр патра химиксен ытларах пулакан-ха, суйлăпăр, туянăпăр, — терĕ чаплă кĕрĕке уйрăлаймасăр ăмсанса.

Ылтăн-кĕмĕл, ахах-мерчен сутакан çĕре çитсен Карсаков чăтаймарĕ:

— Суйлăр мĕн кирлине, — терĕ.

— Укçу çитмесен? Йĕмсĕр тăратса хăваратăп вĕт... — шӳтленĕ май куçне мăч хупрĕ Марина.

Карсаков хăлхаран пăшăлтатрĕ:

— Сирĕн умăрта чухăна тăрса юлсан мана килĕшет.

Хĕрарăм ăна хулпуççийĕпе тĕртрĕ те кĕленче айĕнчи йăлтăркка таварсене ăмсануллăн пăхса тухрĕ.

— Ак çак кевер чуллă мăй çыххи, икĕ куçлă çĕрĕ, çитет, — тĕллесе кăтартрĕ вăл çинçе пӳрнипе.

Карсаков таварсен хакне тата миçе тенкĕ укçа пуррине ăсра шутласа тухрĕ те «аха-аха, бриллиант, аха-аха, ылтăн» сăмахсене мăкăртатса кĕсьерен укçа ывăçласа кăларчĕ. Укçасăр нихçан та çӳремест вăл. Арăмне ĕç укçине тата преми пĕр пайне парать те ыттине тимĕр ешчĕке пăрахать. Сулахаялла янă стройматериал (ытлашши яланах юлать, ăна нихăçан та никам та стройплощадкăран каялла леçсе пани пулман, е сутса ĕçсе янă, е укçа тунă) пулăшать тата.

— Юрĕ, — терĕ çунатланнă кавалер. — Тӳлетпĕр те...

Алли чĕтрерĕ унăн куçа йăмăхтаракан якатнă алмаз ка-

тăкне вĕри ӳт çумне перĕнтернĕ май. Сулахай аллинчи вăтам пӳрнине ылтăн çĕрĕ тăхăнтартнă вăхăтра Марина кĕлетки чĕтренсе илчĕ. Çĕрĕри хаклă чул куççем иккĕшĕн çине те ăшшăн пăхса кулчĕç. Марина çынсенчен именмесĕрех чăп тутарчĕ Вася-Василека.

— Мĕнле ырă тăвас тулĕк сире парнешĕн, Вася-Василек, сă-па-çи-пă.

«Пуян еркĕн тупнă ку майра. Çу-ук, мăйран кассан та ку упăшки мар. Тепри вăл еркĕнне юлашки укçине пама хатĕр. Асту, пире упăшкасем çапла çавăтса çӳреççĕ пуль лавккасем тăрăх. Ха, кушак аçилле пăхать. Лешĕ мĕнле явкаланать...»

Хĕрарăмсен калаçăвне иккĕшĕ те илтрĕç, анчах пĕри те ун пирки сăмах чĕнмерĕ. Марина парнешĕн хĕпĕртерĕ. Вася-Василек парнеленĕшĕн савăнчĕ. Ресторана кĕрсе апат çирĕç, кăштах коньяк тутанса пăхрĕç. Марина театра каясшăн, сирĕн вăхăт пур-и тет. Ирччен хăйпе кăна пулма палăртнине пĕлнĕ хĕрарăмăн чунĕ услам çу пекех ирĕлсе кайрĕ, пуçра кĕтнĕ тĕлпулу ытамĕ, юрату вылявĕ явăнма пуçларĕ.

— Опера-и, балет-и унта паян? Эп балет ытларах кăмăллатăп.

— Çук, «Песняры» ансамбль. Хăçантанпа ĕмĕтленетĕп. Куçпа курас килет вĕсене, калаçас килет вĕсемпе. Ытла аван юрлаççĕ.

Карсаков тем аса илнĕн кĕсйинчен блокнот кăларчĕ.

— «Песняры» терĕм-и-ха, акă вăл, визитка, ансамбль хуçи панăскер, — хулăн çут хут татăкне сĕнчĕ Василий Николаевич. — Паллашатпăр пĕрле.

— Ăçтан ку сирĕн? Хăçан панăскер? Килессе паян çеç килнĕ-ха вĕсем. Сире концерт кăтартма ĕлкĕреймен...

— Ĕлкĕрнĕ çав, ĕлкĕрнĕ, Славутичра. Атом электростанцине ĕçлеттерекенсен хулине турăмăр-çке эпир. Инкек хыççăн çĕнĕ хула лартрăмăр. Пĕтĕм çĕршывĕпе. «Славутич» кинотеатра патшалăх комиссийĕн аллине панă хыççăн Украинăна пынă кӳршĕсем, шурă вырăссем, строительсене чысларĕç, «Салютра» хăвăр пире кĕвĕ-юрă парнеленĕ пек кĕрлеттерчĕç вĕсем те. Вăт çавăн чухне алă тытма тӳр килчĕ шур вырăссене. Кĕçĕр, кĕçĕр вара... Атя васкавлăрах.

Троллейбусра Марина кантăкран пăхса пычĕ, пуçра тем явăнчĕ.

— Çитрĕмĕр, тухмалла, — тесе Вася-Василек ăна сулахай аллинчен туртать.

Ыйхăри пек тĕлĕкри туйăмран хăтăлнă Марина Ларина театра хаваспах пырса кĕчĕ. Хăюллă прораб ăна хыçалти алăкран сцена патнелле илсе пычĕ. Хăйсен ĕçĕпе ăшталанакансем хушшинче вăл мăйăхлă, капăр тумланнă сарăрах чипер арçынпа калаçма пуçларĕ. Кĕç иккĕшĕ те пĕр-пĕрне ыталаса илчĕç, хулпуççийĕсенчен шап-шап тутарчĕç. Ансамбль пуçлăхне Карсаков хăйĕн «хĕрĕпе» паллаштарчĕ. Концерт пуçлама вăхăт çитсе пырать, хăна сехет çине пăхать. Вĕсем кайран калаçăпăр тесе залаваскарĕç, вырăн тупса ларчĕç.

Шур вырăссен кĕвви-юрри Анлă Атăл çыранĕнче, Чăваш çĕршывĕнче янăрать. Марина кĕвĕри уйрăмлăхпа пĕрпеклĕх саманчĕсене, инструментсен янравлăхне, юрăçсен çĕкленӳлĕхне хăйне майлă тăнласа хак парать. Василий Николаевич кашни номер хыççăн ывăç тупанĕсем хĕрикчен çатлаттарать, хушăран ура çине сиксе тăрса «браво!» тесе кăшкăрать.

«Туслăх кăшăлĕ» юрă... Ăна Чернобыль инкекĕ хыççăн çĕнĕ хула лартма пулăшнă строительсене, вĕсен шутĕнче Василий Николаевич Карсаков прораба, вăл хăй те кунта, хисеплесе халаллатпăр тесе пĕлтерчĕ те ертсе пыраканĕ, зал ура çине тăрса алă çупрĕ.

Концерт вĕçленнĕ хыççăн чăвашсемпе шурă вырăссен туслăхне тĕлпулура паллă турĕç. Калаçу, ыталашу, шантару... Ансамбль хуçи строительсене ятарлă концерт пама пулчĕ. Карсаков такси чĕнсе илчĕ те, майрипе Мир урамне çитрĕç. Аслă урам çывăрать. Карсаков «хули» те шăплăхра. Иккĕмĕш смена килте ыйха туртать ĕнтĕ. Хуралçа çур литрлăх укçа тыттарчĕ те прораб (эрехне таксистсенчен вокзалта тупаççĕ) хĕрарăма хăйĕн штаб-хваттерне илсе кĕчĕ, чӳречене çăтă карчĕ.

Алă çумалли, çăвăнмалли, ăшăтмалли, шăлмалли, инкекрен сыхланмалли — пурте пур унăн. «Ресторанĕ» пĕчĕк пӳлĕмре. Ĕçмелли-çимелли хатĕрлеме Йăван Павлова хушса хăварнăччĕ. Туйăмлă ăслă çын вăл, ĕçре те вăйлă маçтăр, йăлара та. Тӳрĕ кăмăллă. Сутмасть. Пулăшма яланах

хатĕр. Шампански, эрмен коньякĕ, столичнăй, мадера, минерал шывĕ, пылак шыв, сервелат, балык, краб консерви, «чăх сĕчĕ» текен канфет, сигарет, шăрпăк... Пурне те шута илме пĕлнĕ-çке. Урайĕ тап-таса, хăть çарранах ут.

Хăйсене каçхи тирпей-тасалăха кĕртнĕ хыççăн вĕсем сисмесĕрех ыталанса тăчĕç. Шăплăхра пĕр-пĕрин чĕре таппине итлеççĕ. Марина чăнкă çыранран хăпарнă улăх чечекĕ ăшăнче. Чунĕ унăн Вася-Василекăн çăмлă кăкăрĕ айĕнче пытанмалла вылять...

Чĕркуççи айĕнчен тытса çĕклет те ăна Вася-Василек алă çума илсе каять, хăй те тасалса, хăнана «ресторана» чĕнет:

— Тархасшăн, хăна пулăр.

Чăн-чăн арçын тĕлне пулса чăн-чăн хĕрарăм туйăмне çеç курчĕ-ха Марина, чăн-чăн хĕрарăмах пулса çитеймен. Сывă ача ăшра çитĕнтерсе ашшĕне алран тыттарсассăнчĕ — çавăн чухне кăна вăл хăйне тĕнчери чăн-чăн хĕрарăм, этемлĕхе малалла тăсма пулăшакан чăн-чăн ама пулса ниçта кайса кĕрейми савăнĕччĕ. Юлашки тапхăрĕ мĕнле вĕçленĕ-ши тесе стаканра йăрăлтатакан пылак эрех хăмписене сăнарĕ Ларина. Валеркăна кăтартайман, хăй те курайман ывăлĕпе хĕрĕ ялан тĕлĕкре ун çумĕнче йăшăлтатаççĕ, чĕчĕ шыраççĕ, сассăр йĕреççĕ. Пĕри хăйне хывнă, тепри — упăшкине. Чĕпписене ачашланипех вăранса каять те вăл урăх куç хупаймасть.

— Ытла шухăша кайрăр, тем... Шăнмастăр-и? — тесе Карсак çара ӳт çине ăшă куртка уртса ячĕ.

— Канлĕхре, савăкра ярăнатăп эпĕ сирĕнпе, Вася-Василек, — ăшран тухакан сасă илтĕнет. — Анчах... вăхăтлăх çеç. Ирпе уйрăлса каятпăр та акă...

— Унччен вăхăт пур-ха, — ачашшăн чĕркуççийĕ çине хăпартса лартать вĕри кăмакана Карсак. — Ирччен ырлăх курар-ха...

— Эпĕ хама хам çунатлă туякан пултăм. Сирĕнпе вĕçес килет. Ан тартăр-ха чунăра чĕре патĕнчен. Ак çапла, çапла... Кăларса ярас килмест ăша кĕнĕ вута.

Хĕрарăма Карсаков шампань эрехĕ сĕнет.

— Çыврас килмест, айтăр сада, улмуççи айне, — чĕнет Марина. — Чуччу пулсанччĕ халь. Ярăнмалла хĕвел тухиччен.

— Чуччу-и? Ҫиччас майлаштаратпӑр ӑна. Пире вӑл, юсасси, мӗн...

Марина чӳречене уҫса ячӗ, диван пуҫӗ ҫине ӳпӗнсе улмуҫҫие сӑнама пуҫларӗ.

— Ах, ҫут ҫанталӑк вӑйӗ кӗртрӗр мана.

— Мана та. Шӑм-шак уҫӑлса кайрӗ. Кӑмӑл ҫӗкленчӗ. Уф! Вӑт пурнӑҫ та пурнӑҫ. — Карсаков тумланчӗ. Кивӗ креслӑна тытса пӑхрӗ, ешчӗкрен пӑяв туртса кӑларчӗ, вӗсене йӑтса улмуҫҫи патнеллеваскарӗ.

Марина тӑхӑнса майлашӑннӑ ҫӗре чуччу хатӗр те. Вася-Василек ӑна алӑ сулса чӗнет. Ҫемҫе креслӑна кӗрсе ларнӑ савнине Карсак майӗпен ярӑнтарма пуҫларӗ. Хӗрарӑм ҫара урисене тапса янӑ пек каялла-малалла суллать, ҫӑра ҫӳҫӗ сывлӑшра ҫӗклене-ҫӗклене варкӑшать.

— Мӗн-ши ку пирӗн, Вася-Василек?

— Юрату.

— Вӑхӑтлӑх канӑҫ ҫеҫ мар-ши? Пӗрле, пӗр ҫемьере марҫке эпир. Вӑрттӑн ҫеҫ савӑнатпӑр...

— Ҫут ҫанталӑк, тӗнче панӑ телей вӑл пирӗн.

— Чӑнах та, ҫапла пуль, Вася-Василек, — пуҫне каҫӑртрӗ Марина. — Ҫӑмӑл ача пулса...

— Мӗн?

— Ӑш хыпать.

Карсаков чуччу пӑявне хытӑрах сулласа хӑварчӗ те штабхваттерне кӗчӗ, унтан часах тулли сумкӑпа тухрӗ, тенкел ҫине ӗҫмелли-ҫимелли лартса тултарчӗ, Маринӑна черкке тыттарчӗ, хӑйӗнне ҫӗклерӗ те:

— Сирӗн киле, сирӗн йӑх тымарне асӑнса ӗҫер. Пире, ҫурт тӑвакансене, каҫарччӑр, яла тӗп тунӑшӑн айӑплисене хуҫлатса лартчӑр. Атьӑр, шӑварар улмуҫҫине.

Улмуҫҫи кутне эрех тумлатрӗҫ те тӗппипе ӗҫрӗҫ. Маринӑна вӑл пылак шыв ярса пачӗ.

— Шӑпа ҫулӗ пӗрлешрӗ пуль иксӗмӗрӗн Мир урамӗнче. Ҫут ҫанталӑк чӗрӗлнӗ вӑхӑтра туйӑмсем пӗр-пӗринпе ҫитсе ҫапӑнчӗҫ. Ах, ҫав «Салюта» кайман пулсанах...

— Турри ҫитернӗ пуль ҫав унта сире те, мана та... Кам шутланӑ-ха ӑна, ҫав тӗлпулӑва, пирӗншӗн историллӗ тӗлпулу пуласса, — каллех ярӑнтарма пуҫларӗ кӑштах ӳсӗрӗлнӗ хӗрарӑма Карсак. Хӑйсем ӑна ҫав паллӑ каҫ иккӗн ярӑнтарнине аса илчӗ, Валерка текен каччӑ сӑнарне куҫӗ

умĕнчен хăваларĕ, анчах лешĕ пăява аларан ярасшăн мар. Хăй çине Марина çаврăнса пăхсанах йĕрĕнчĕк сăнар йăлтăрт туса сӳнчĕ. Чĕлхи уçăлса кайнă хĕрарăм лирика туйăмĕпе юрланă пек калаçрĕ.

— Пирĕн ку чăн-чăн юратăвах пулсан, — хăлаçланса илчĕ вăл, — тавах сана, Турăçăм, тавах сана, уйăхăм, тавах сана, хĕвелĕм, тавах сире, Вася-Василекăм. Вĕçĕмсĕр уçлăх тытăмĕ вĕт эпир, пĕрле çыхăннăскерсем. Пире халь иксĕмĕре никам та, нимле вăй та уйăраймĕ, ĕненетĕп эпĕ ăшăма юрату йăва çавăрнине, туятăп вăл пĕвĕм-сийĕме хăварнă ăшă сийĕпе — хӳтлĕх сийĕпе витнине. Чăн-чăн юрату вăл тĕнче чĕрĕлĕвĕпе пĕрешкел. Мĕнпур чĕрчун, ӳсен-тăран вăраннă вăхăтра пирĕн чĕресем те вăранчĕç, лăпкă ыйхăран хăтăлчĕç. Тымартан вулă тăрăх чĕрĕ сĕткен йăрлаттарса хăпарнă пекех пирĕн ӳт-пӳ те туйăмпа тулчĕ, пит-куçа çак улмуççи пек чечеклентерчĕ. Çуллен килекен çу уйăхĕ чĕртсе, çеçке çуртарса, аталантарсах тăтăрччĕ пире. Çапла мар-и, Вася-Василек?

Çемçе ларкăчри хĕрарăм калаçнине итленĕ вăхăтра ун патне арăмĕ çитсе тăчĕ пек те, ăна вăл та вилĕмсĕр юрату çинчен хĕмленсех каласа пама пуçларĕ пек, хăйсен Çимĕкри туй кучченеçĕпе — юрату кукăлĕпе — сăйласшăн пек. Тĕнчери чăн-чăн юрату пирĕн, куратăн-и пĕтĕм çут çанталăк, мĕнпур тĕнче ешерекен симĕс йывăç-курăкпа ытамлать, сад-улăхра çурăлнă чечек кăшăлĕ тăхăнтартать, питкуçа имлĕ сĕткенпе çăвать тесе хăй çумнелле туртать пек.

Куçĕсене мăчлаттарса илчĕ те Карсак шухăш сĕмне çухатрĕ, пăява суллама чарăнмасăр малалла итлерĕ.

— Çапла мар-и, Вася-Василек? — тепĕр хут ыйтать Марина. — Эсир, мĕн, тĕлĕрсе кайман пуль те?

— Çук-ха, ним калама аптрарăм-çке сире. Çу уйăхĕ, май, çулталăкăн чи чĕрĕ, чи имлĕ уйăхĕ те çав... Нумаях тăсăлмасть-çке вăл. Ыттисен хыçне тăрса юлать. Манăçать... Тепĕр май çитсен те вăл урăх майлă, — терĕ вăл анасласа.

Ярăнма пăрахнă Марина çакна илтсен пӳрнине çыртса тем шухăшларĕ те:

— Ман тăсас килет çу уйăхне, манăçтарас килмест иксĕмĕр хушшинчи савăклăха. Çухатас марах нихăçан та ăна.

Карсаков каллех тӗлӗре пуҫларӗ. Каллех арӑмӗ чупса ҫитрӗ пек, мӗн туса тӑран эс кунта ҫак хӗрарӑмпа, а ну марш часрах киле, ачу кӗтет, эп кӗтеп, мӗн, ҫурхи кун сана ҫеҫ астарать-им, эп те чӗрӗ чун, авланиччен юрланӑ юрату юррисене мантӑн-им тесе ҫанӑран туртать пек. Куҫӗ уҫӑлса кайрӗ те, хӑйне Марина алӑран силлет иккен.

— Ан ҫывӑрӑр, итлӗр, — йӑл кулать хӑй. — Темле сив ҫанталӑк та пулӗ пурнӑҫра. Шӑнтар мар юратӑва, парар мар никама та, вӑрлаттарар мар...

— Арӑма та парар мар-и?

— Арӑму пирки калаҫу пымасть кунта. Унӑн юратӑвӗ — хӑйӗн, манӑн хамӑн. Сисетӗп эп, ҫук сирӗн юрату. Хӑнӑху ҫеҫ. Эсир ӑна юратсан мана савмастӑр та, суймастӑр та ӑна. Ултав сирӗн хушӑра. Ачапа ҫыхӑнтарнӑ та шӑпа иксӗре...

— Иксӗмӗре тата кам, мӗн ҫыхӑнтарчӗ-ши?

— Иксӗмӗре-и? «Салют» керменӗнчи куҫ вӑйӗ татӑлми ҫиппе явакларӗ, иксӗмӗр хушӑра ҫирӗп кӗпер хыврӗ. Улмуҫҫи хӑйӗн сӗткенӗпе яшлантарчӗ, чечекӗнчен ҫӗленӗ кӗпе тӑхӑнтартрӗ. Ҫавӑнпа пурнӑҫ ачашлӑхне, канлӗхне чӑннипех туйса илтӗмӗр. Унсӑрӑн мӗн тумалла ҫӗр ҫинче? Упӑшкапа тертленнӗ ҫулсем маншӑн вилӗм ҫулӗсем пулнӑ. Сирӗнпе ҫывӑхланнӑ самантсем маншӑн сӳнми чаплӑ ӗмӗрлӗх. Ӑнланман, вӑхӑтлӑх юратӑва ҫил-тӑвӑл вӗҫтерсе яратех, ӗмӗлкине ҫеҫ хӑварать. Чыслӑх, тивӗҫ, намӑс — ним те тытса усраймасть ӑна ҫынра. Чӗрене кӗрсе вырнаҫаймасть вӑл. Ирӗклӗ чӗре вара хӑйӗн чӑн-чӑн юратӑвӗшӗн макӑрать, вӑл хӑҫан та пулин ун алӑкӗнчен кӗрсе каясса кӗтет. Кӗрсенех, читлӗхне шалт хупса хурать те виличчен те кӑлармасть, вилсен те чунӗпе пӗрлех ҫӳрет. Манӑн та Валерка юратӑвӗ чӗрене кӗреймен, ман юрату валли унӑн хӗрӗвӗ те, сывлӑхӗ те, хастарлӑхӗ те ҫитмен. Мана сирӗн чӗрӳ ширанӑ, шӑпах ҫав ҫурхи ир шыраса тупнӑ. Сирӗн те чӗрӳ пушӑ пулнӑ, арӑмун чӗрийӗ унта кӗме пултарайман. Ҫавӑнпа эпӗ унта ҫӑмӑллӑнах, хаваслансах кӗрсе йӑва ҫавӑртӑм. Качча кайсан та упӑшкапа пурӑнман эпӗ. Сирӗнпе. Хӗрлӗхе те эсир ӑсатнӑ каҫ мар, шухӑш туйӑмӗнче сире тыттартӑм. Вӑл арҫын ӗҫне тунӑ чухне кашнинчех эпӗ хам ҫинче ӑна мар, сире куратtӑм, ӑна туймастӑм,

сире савăнтараттăм. Юратман арçынпа ача та тăвас килмест, юратнипе вуннă та çуратас килет. Юрату çеç хĕл сиввине те ирĕлтерет. Ман ăш-чикри пăра та ирĕлтерчĕ. Ой, нумай калаçрăм. Ярăнтарăр-ха тепре. Шурăмпуç та саралса пырать авă. Хĕвел хăпарать.

Улма йывăç авăна-авăна хăйăклатать. Çур чаршавĕ айĕнчи савăк хĕрарăм чун-чĕрийĕ юрла-юрла ярăнать.

## 4

Музыка хавалĕпе хăпартланса Марина Ларина пушă вăхăта çĕнĕ кĕвĕ шыраса ирттерчĕ. Ăнăçлисене çырса пычĕ, вĕсемпе хăйне çывăх музыкантсене, композиторсене паллаштарчĕ. Каласа, юрласа пăхрĕç.

Сăввине те, кĕввине те, юррине те хăех шăрантарчĕ. Хулари çурхи фестивале хутшăнчĕ. Чăвашрадиора музыка передачисене йĕркелесе пыракан кăмăллă чăваш Маринăн виçĕ юррине Шупашкара чĕнсех студире çырса илчĕ. Кайрĕ вара Ларина сасси саланса эфира. Ир те, каç та параççĕ пĕр-пĕр юррине. «Вăрланă юратăвне» акă паян, строительсен уявĕнче Василий Николаевич Карсаков прораб ячĕпе янраттарчĕç.

Иртенпех хăлхара çав кĕвĕ, сăмахĕсем чĕлхерен уйрăлмаççĕ: «Ăша кĕрсе мана вăратрăн...» Баян тытса та, пианино умне ларса та юрла-юрла илет:

Çуркуннепе çеçке эп çуртăм,
Улми пулинччĕ кĕп-кĕрен...

Кĕтет вăл Вася-Василека, алăкăн-тĕпелĕн утать, пулас концерт репетицине те каймарĕ, кухньăра ăшталанчĕ, мĕн кăна хатĕрлемерĕ пуль. Мĕнле кĕтсе илесси пирки шухăшларĕ. Эрне курман-çке, савнийĕ кĕçех хăй çумĕнче пуласса шанать. Шупашкартан «Волгăпа» леçсе хăварнăранпа та килсе курмарĕ вăл темшĕн. Чĕнсен те, тем пек кĕтсен те. Пит çирĕп кăмăлласкер тем. Е урăхларах шухăшлатьши, иккĕленет-ши?.. «Паян вăл пурпĕрех ман ытамра савăнать, туятăп килессе, килет, çитет ак хашкаса, çуллахи чечек çыххи йăтса...»

Алăк тăрринче кĕвĕ ташша ярсанах Марина унталла чупрĕ, ыйтмасăрах уçса ячĕ те... — йăрăмлă çутă костюм тăхăннă Вася-Василек капăркка хутпа чĕркенĕ чечек çыххи

тытса тăрать, сылтăм аллинче — дипломат. Хитре măйăхĕ айĕнчи тути кăшт чалăшраххăн кулать.

— Аван-и? Кĕме юрать-и?

Хыпăнса ӳкнĕ Марина ăна часрах шалалла туртрĕ, сĕннĕ çыхха тумбочка çине хучĕ те дипломатне илсе лартрĕ, вара măйĕнчен çакăнса тăранаймасăр чуптурĕ. Вася-Василек măйăхĕпе кăтăклантарса, ыталаса хĕрарăма пĕлми турĕ.

— Мĕнле килме пĕлтĕр... Туйрăм çав чуну ман паталлах туртать тесе. Уяв ячĕпе сире, чунăмçăм. Ой, мĕн алăк патĕнчех тытатăп эп хăнана. Иртĕр, акă пушмакĕсене хывса çакăнта лартăпăр та, пиншакне ман костюмпа юнашар çакатпăр та, ваннăйне кĕрсе çăвăнатпăр та... тӳрех аслă пӳлĕме — уяв сĕтелĕ хушшине.

Чĕвĕл чĕкеç пек чĕвĕлтетекен кил хуçи ытамĕнче Карсаков савăк тĕнчене кĕрсе ӳкрĕ. Ман унта сирĕн валли кучченеç, парне пурччĕ тесе вăл дипломатĕнчен шампань эрехĕ, канфетсем кăларчĕ, ахаль те пуян сĕтеле тата пуянлатрĕ. Марина чечексене майлаштарса вазăна лартрĕ, ăна валли вырăн тупса сĕтел варрине вырнаçтарчĕ.

— Килĕр-ха кунтарах, хам патарах, — чĕнчĕ хăна.

Кил хуçи ун умне йăпăрт çитсе тăчĕ.

— Куçусене хупăр, сулахай аллуна тăсăр.

Марина итлерĕ, чуптăвасса кĕтсе тутине чĕтретсе илчĕ. Карсаков дипломатĕнчен кăларнă ылтăн сулла хĕрарăм аллине тăхăнтартрĕ. Алă сулли çине пăхса илчĕ те Марина пĕчĕк ача пек сиккелесе ташласа ячĕ, каллех măйран çакăнчĕ, урисемпе арçынна явакласа илчĕ.

Хăна кĕтсе ывăннă сĕтел дивана кĕвĕçсе салхуланчĕ, арçын ури перĕннипе черккесем чăнкăртатрĕç. Тинех çаврăнса пăхрĕç юрату пылакĕпе тăранайманскерсем, унталла туртăнчĕç. Сĕтел тин лаштах сывласа ячĕ, вăрттăн măшăра хăй хушшине кĕртсе лартрĕ.

Эрех тутанса çырткаланă хыççăн Марина кĕлетки çине çӳхе, витĕр курăнакан халат уртса ячĕ.

— Ман пижама пур. Парас-и?

Тутине выляткаласа тăракан Вася-Василек пуçĕнче шухăш вĕлтлетсе илчĕ: «Упăшкин пуль-ха. Фу, вилнĕ çын япалине тăхăнмас».

— Эсир Валеркăн терĕр-им? Ан хăрăр, ун мар. Унăн юрамасть те сире. Ятарласа хăвăра валли туяннăскер.

Индире ҫĕленĕскер акă, — шифоньертан ҫыхă илсе пырса пачĕ Марина. — Ман кунта сирĕн валли майка та, труси те, кĕпе те, зонт та пур. Пурте кирлĕ пулаҫҫĕ хăвăр кунта чухне тетĕп-ҫке. Вăт мĕнле сирĕн несакуннăй хуҫайкку. Маттур-и?

— Пултаратăр, Марина, маншăн тăрăшатăр, — мухтаса ҫурăмĕнчен лăпкарĕ вăл ăна пижамăна тăхăннă май, ҫав хушăрах шухăшларĕ: «Арăмсем ҫапла пăхсан пире, никам та ютта юртас ҫук».

Ҫĕр каҫмах хăварасшăн ăна Марина, пĕрре читлĕхе хупнă упана ниепле те кăларасшăн мар. Карсакова вара килĕнче кĕтеҫҫĕ: арăмĕ, тăванĕсем. Строитель уявне ҫуллен пĕрле пухăнса палăртаҫҫĕ-ҫке вĕсем. Ҫирĕп тăчĕ вăл хăйĕн шухăшĕшĕн, читлĕхе ҫĕмĕрсе тухрĕ, ҫула тумланчĕ.

— Вася-Василек, итлĕр-ха мана?

— Калăр, мĕн калатăр? Тăрăшсах итлетĕп.

Марина пăлханса кайрĕ, ун пек чух унăн пичĕ пĕҫерме пуҫлать, куҫ хăрпăкĕ сиккелет, пуҫĕ ҫаврăнать. Тĕкĕр ҫинче хăйне тĕрĕслесе якатрĕ те, халат аркисемпе ҫара пĕҫҫисене хупларĕ, Вася-Василек хывса хунă пижамăна майласа хуҫлатрĕ, чĕтрекен сасăпа йĕре-йĕре калаҫрĕ:

— Таҫта ҫити тухса тарăттăмччĕ ҫак хваттертен. Тупасчĕ Шупашкарта улăштаракан. Пĕр пӳлĕмлипе те килĕшмелле. Хуйхă, тунсăх, куҫҫуль йăви вăл. Эсир ман пата килсе пурăнас ҫук. Ĕмĕтĕмре, шухăш вĕҫевĕнче кăна-ши эсир ман ҫумра, манпа пĕрле? Ытла та кĕске пирĕн хутшăну, ҫыхăну, йăпану вăхăчĕ. Пĕлетĕр-и, эпĕ сирĕнсĕрех, пĕчченех пĕр мă-ăнă ĕҫ тума шухăш тытнă.

— Мĕнле ĕҫ вăл? Музыкăра-и?

— Ăхă, музыкăра — иксĕмĕрĕн юрату музыкинче.

— Ҫĕнĕ юрă-и? Ой, мансах кайнă, паянхи юрă саламĕшĕн сире те тав туса чуптăватăп. Хавасланса, мухтанса, ĕмĕтленсе итлерĕм. Ҫав юрă хăвачĕ туртса килчĕ. Тата ҫĕннине ҫырнă-и?

— Ҫырнă ҫав, эсир пулăшнипе, тăрăшнипе тарласа ҫырнă. Ҫĕнĕ ҫулта премьера пулать.

— Вăт савăнăҫ. Мана чĕнетĕр пуль?

— Юрă ашшĕне те чĕнмесĕр вара?

— Ан култарăр-ха, юррăн ашшĕпе амăшĕ те пулать-им вара? Музыка теорине пĕлместĕп те, тем, ăнланмастăп.

— Пур çав Юрăн, пур пирĕн Юрăн ашшĕ те, амăшĕ те. Хам патарах, çывăхарах килĕр-ха, — Марина аркăсене уçрĕ те Вася-Василекăн пуçне пĕшкĕртсе хырăмĕ çумне хĕстерчĕ. — Итлĕр.

Карсаков хĕрарăм хырăмĕнче юрланă пек сасă илтрĕ — унашкал хăйĕн те чăрлатать-ха хушăран. Итленĕ май шалта кăлт-кăлт тапнăн туйăнчĕ.

— Илтрĕр-и мĕн те пулин?

— Пур унта темле музыка. Ура тапсах юрлаççĕ пек, тăпăртатсах. Пур юрă.

— Вăт мĕнле юрă-Юра пур унта ман, ашшĕне тапса систерекенни.

— Юра? Ача-и? — хумханса ӳкрĕ Вася-Василек. — Ай хырăм юлнă сирĕн?

— Ах, çапла вылясан та юлмасан, арçынпа хĕрарăм та мар эпир. Акă мĕнле мă-ăнă ĕç тума шутланă эпĕ — ача тума. Ывăл пуль тетĕп. Юра ятлă хурасшăн.

Вася-Василекăн сăнĕ малтанхинчен сисĕнмеллех улшăнчĕ, тӳрленсе тăчĕ, сассине хуçарах каларĕ:

— Шутланине пурнăçламаллах. Пултăр-и ача. Юра пултăр. Эп хирĕç мар. Арăмсăр пуçне тепĕр хĕрарăм манран мĕнле ача çуратнине те курас.

— Курни çеç мар-ха ăна, ӳстерес те пулать.

— Пулăшатăп. Укçа çук-им?

— Пулăшни те çителĕксĕр.

— Тата мĕн çитмест?

— Ашшĕ çитмест. Ачана ашшĕ юнашар кирлĕ.

— Авă епле. Тĕрĕсех, — ĕнсине кăтăрт-кăтăрт хыçса илчĕ Карсаков. — Ку вара ытла кăткăс ыйту.

— Хăратса пăрахрĕ-и? Эх, Вася-Василекăм, упаçăм, юратуçăм, хăвăр чăннипех упа пек вăйлă, чĕрӳ мулкачăнни пек хавшак. Эх, Карсак.

— Упа мар кунта арăслан та чĕтресе ӳкмелле кĕтмен çĕртен çамкаран çапнипе.

— Туятăп, ĕненетĕп сирĕн шухăш-кăмăлна та. Еркĕн ача çуратни, паллах, арçыншăн телей мар, ытлашши хумханупа пăтăрмах çеç. Пире юрату парнеленĕ çуркунне те асăмра кăна юлать пуль çав. Çурхи кун тĕнчене вăратса, чĕрене çĕнетсе юрлаттарать паллах. Киввине, иртнине хыçала хăварса çĕнĕ сĕткен ĕмме тытăнать мĕнпур чĕрĕлĕх.

Çын та, курăнман вăй таптарнипе, малтанхи юратăвне мансах çĕнĕ юрату шырать пулас. Çут çанталăкăн çав çаврăмне лексе çывăх çыннине те улталать, урăххи çумне çыпçăнать. Юттине курас, тутлăраххипе пылакланас тесе шухăшламан, ĕмĕтленмен арçынпа хĕрарăм çукрах пуль тĕнчере. Эпир те арăм, упăшка пур çинчех пĕр-пĕрин шухăшĕпе пурăнма пуçларăмăр, юрату вăйĕ туртнипе хамăра пĕрлештертĕмĕр. Çак телей хăш-пĕрисенни пек выляв çеç ан пултăрччĕ тесе кĕлтăватăп. Хăвăрт хĕртĕмĕр те, хăвăрт сивĕнер мар. Юрату пирĕн яланах çуркунне ашкăнтăр, çуллара ăшăнтăр, кĕркуннере куççуль ан юхтартăр, хĕллере шăнса ан лартăр. Халь кайăр. Урăх тытмастăп. Тавах парнÿшĕн, мана куççуль кÿллинчен туртса кăларнăшăн, чăн-чăн арçын пулса чăн-чăн хĕрарăм сăпкинче ярăнтарнăшăн.

## 5

Çавракa мăн пуçĕ Карсакăн тип-тикĕс ĕçлет-ха. Çĕнĕ стройка ăна самаях лăскать. Штаб-хваттерĕ хурт вĕлли пек сĕрлет. Пуш вырăнта кирпĕч стена хăпарать. Малышкин ăна кÿршине пулăшма хушрĕ. Стройтехникум пĕтернĕ пĕр шеремете мастера лартса шар курчĕç. Трест управляющийĕ Хайловпа иккĕшне те выговор шаплаттарнă. Çав тăлăх хĕрарăм çурт никĕсне йăнăш хывтарнă. Иртсе çÿренĕ чухнех асăрханăччĕ-ха Карсак шăйрăка, каларĕ мастера, лешĕ çын хуранне сăмсуна ан чик тесе чĕрре кĕчĕ те, Василий Николаевич алă сулчĕ. Мĕне кирлĕ, унăн — хăйĕн çурчĕ, хăйĕн позицийĕ. Халĕ унăнах тÿрлетмелле тута хĕретсе пăркаланса çÿрекен майран кăлтăкне. Никĕс вĕт вăл. Ун çинче миçе пин тонна чул, кирпĕч, тимĕр тата ытти япала выртать. Миçе çул тĕрĕс-тĕкел лармалла. Çурăлчĕ тĕк стена... Çавă чи хăрушши. Çавăнпа Карсак никĕс янă чухнехи пек нихăш вăхăтра та пит тĕплĕ, витĕмлĕ шухăшламасть. Нивелирĕпе палăртать, виçет, шутлать, чертежра кăтартнине хăй ăсĕпе танлаштарса çĕнĕрен-çĕнĕ вариант туса пăхать. Кам мĕнле ĕçленине, виçеллĕ-виçесĕр материал хунине тĕрĕслесе тăрать. Никĕс патĕнче чухне ун патне ан та пыр: калаçмасть, алă çеç сулать.

Юрать-ха хăй тăвакан çуртăн никĕсне хывса пĕтернĕччĕ. Кÿршĕре эрне чакаланчĕ. Хайлов ун патне пыма хăрать.

— Кантуртан нумай кăтарту паратăр эсир. Куçпа курмасăр вĕрентетĕр. Производство пайĕн пуçлăхне хуса кăларăр-ха пĕрре стройплощадкăна. Атту эпĕ ăна хам патра курманни виçĕ çул, — ятлаçмах пуçларĕ прораб.

— Линейнăй инженертан куçнăранпа, тем, хам та хăшнепĕрне мана пуçланă, — килĕшрĕ Малышкин унпа. — Çакăнта, линире, ĕç вучахĕнче чи кăткăсси, йывăрри, явапли. Вĕренмелли нумай сирĕнтен.

— Генподрядчик специалисчĕсене, пире, улталама йывăр, пурне те витĕр куратпăр, мĕншĕн тесен пур ĕçе те хушма подрядчиксемпе пĕрле тăватпăр. Никама та шанмастпăр.

Трестăн тĕп инженерĕ хăй килсе тĕрĕслерĕ вĕт Василий Николаевич юсанă никĕсе.

— Карсак алли пырса тĕкĕннĕ пулсан вара йĕркеллех пулма кирлĕ, — терĕ вăл Малышкина.

Хăй тем пĕлнĕ пек, çакăнта тем ыррине тунă пек эпир те эпир тесе çулланса çӳрерĕ Хайлов-хăлха. Мухтав сăмахĕ пурпĕрех Карсака çеç лекрĕ.

Çулла техникум ачисене Карсаков патне килсе ячĕç. Вĕреннĕ чухне хăй те практикăра пулса курнăскер, прораб, вĕсен кăмăл-туйăмне ăнланать. Кăшт та пулин укçа ĕçлесе илчĕр тесе вĕсене рабочи вырăнне йышăнма шутларĕ. Малышкин хирĕç мар, Хайлов çеç тем чакаланчĕ, çапах та прораб сĕнĕвĕпе кантурта килĕшрĕç. Кашни бригадăна виçшер ача çирĕплетрĕ вăл.

Малышкин отпуска кайнăччĕ, хăй вырăнне вăл тĕп инженера хăварнă. Хайлов телефонпа шăнкăртаттарса тăнран ячĕ. Пĕрмай канашлу та планерка ирттерет. Карсаков унта кайма пăрахрĕ. Мĕн пустуй хаклă вăхăта ирттерет-ха вăл темиçе сехет пакăлтатнине итлесе. Управлени пуçлăхĕн ĕçĕсене туса пыракан ăна приказ çырассипе хăратать.

Йăван Павлов пиллĕкмĕш хута хăпарса çитрĕ. Карсак вĕсем патĕнчен анчахрах анса штаб-хваттерне кĕчĕ, кĕç управленирен шăнкăравларĕç. Хайлов иккен. «Ниçта та ан кайăр, пыратăп», — тет. Çитрĕ.

— Сирĕн иккĕмĕш смена сахал ĕçлет, вуннăрах пăрахса каять. Мĕншĕн? Наряд хупнă чухне ма хушса çыратăр? Улталатăр! Крановщицăсем кирпĕч, раствор çĕклесе параççĕ те, прораба хӳре пĕтĕрсе кăтартаççĕ те, алю. Халĕ те ĕçлемест кран. Мĕншĕн? Павлов хăй вырăнне ачасене ĕçлет-

терет. Кирпӗч сутса эрех ӗҫетӗр... — ҫатӑлтатать те ҫатӑлтатать.

Манька крановщица Ваҫлей патне калаҫма аннӑччӗ те Хайлов килнине курсан Карсак ӑна «ресторана» питӗрсе илчӗ. Тӗп инженер мӗнле ҫӗмӗрӗлнине-ҫуйхашнине, хӑйсене пустуй ятласа айӑплама хатӗрленнине тата ыттине те йӑлтах хӑлхана чикнӗ кӑра хӗрарӑм.

Тӗп инженерпа прораб ятлаҫса тухса кайсан Манька ӑшӗ хыпнипе стаканри хӗрлӗ шӗвеке шап тутарчӗ. Пылак шыв пуль тенӗччӗ, коньяк пулчӗ. Пӗр вӑрӑм татӑк кӑлпассие ҫавӑрса тытрӗ те вӑл чӑмла-чӑмла Павлов патне чупрӗ, ҫитсе бригадира хӑй мӗн илтнине йӑлт каласа пачӗ. «Ҫиччас эпир ӑна юсатпӑр», — тесе иккӗшӗ пӑшӑлтатрӗҫ те, Манька кран патне васкарӗ. Кран чӑрнлатса-чӑнкӑртатса сасӑ пачӗ. Кӗҫех стропальщик кӑшкӑрса ячӗ: вира!

Аялта ӗҫлекенсене тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн Хайлов прораба пиллӗкмӗш хута чӗнчӗ.

— Эсир киличчен кӑна пултӑм эп унта. Шофер кӑшкӑрать ав. Тем тиесе килчӗҫ. Йышӑнмалла, — тесе уттарчӗ Карсак.

Кайран Иван Павлов каласа пачӗ ӑна мӗн пулнине. Хайлов-хӑлха хӑпарса ҫитнӗ ун патне. Вӗсем хӗрсех стена купалаҫҫӗ. Вӑрӑм чӗлхешӗн, куҫран тӳрӗ каланӑшӑн ҫав тери курайми пулса ҫитнӗччӗ ӗнтӗ вӑл чӑрсӑр бригадира. Практикант кирпӗч мӗнле хунине пӑхса тӑракан Павлова курать те тӳрех ярса илет ӑна. Павлов та хӗрсе каять, вӗсем сиртен лайӑх купалаҫҫӗ тет. Ҫухӑрашнӑ вӑхӑтра Манька вӗсем патне раствор ҫитерсе парать. Шӗвеке тӑкаҫҫӗ те... Курите ҫӗкленме пуҫлать. Вӑйлӑ Павлов тытать те перет Хайлова пуш куритене. Манька кранӑн вӑрӑм «хулне» хӑвӑртрах куҫарса уҫҫа илсе тухать, хӑпарнӑ таран хӑпартать, крана чарать те аяла анать, штаб-хваттере кӗрсе прораба юнать:

— Сана та тӑватӑп Хайлов-хӑлхана тунӑ пек.

— Мӗн турӑн эс ӑна? Амантмарӑн, вӗлермерӗн пуль те... Пӗтерен эс мана иртӗхсе кайнӑскер.

— Пӑх кантӑкран!

Прораб карра сирсе пӑхрӗ те куритере хӑлаҫланакан Хайлова курчӗ.

— Антармастӑн-и?

— Мĕн, халех антармалла-им сан умăнта? Ак ярсан çак мăлатукпа пĕрре... Мăшкăлласа тăрать. Сана та тăвапха пĕрре, лайăхах кăтартап вăя. Ха, чиперкке тупнă та вăл, пăркаланса утаканнине, — крановщица Марина пекрех пăркаланса утса кăтартрĕ. — Çампа ман пата пыма пăрахрăн? Эп кирлĕ мар-и халь? Эп йăлăхтартăм. Эп усал. Вăл — чиперкке. Кам сĕмпĕлтетсе выртатчĕ-ха эп сана çеç чунтан юрататăп, эп сансăр пурăнма пултараймастăп тесе ÿсĕрле. Халь чĕнсен те пырасшăн мар, тарса çÿрен. Кĕçĕр пыратни?! Ман санах ыталас килет. Журналне пар, кран ставать туни çинчен алă пусса хăварам. Кĕтеп сана.

— Кранпа пĕрле Хайлова парса хăваратăн ĕнтĕ, чăрсăр чун. Кĕрсе ĕç «ресторана» пĕр стакан. Лăплан. Унтан куç курĕ.

Манька крановщица «ресторантан» хĕрелсе тухрĕ, аш татăкки тытнă, пит тутлăн чăмлать.

— Антармастăп Хайлов-хăлхана. Накасани ăна пире пустуй тапăннăшăн. Эс те хăпараймастăн кран çине. Никам та. Допуск çук. Ĕçлеттерейместĕр. Пирĕн унта хамăрăн вăрттăнлăх пур. Лартăр ирччен хăлатла хăлаçланса. Тулта ăшă. Вилмест. Кил-ха кунтарах, — пуçа эрех пырса çапнипе пушшех хăюлланчĕ Манька, — чуптăвам. Вăт çапла, юрать халь. Ме уççине, хăвах уçса кĕрен.

Манька крановщицăна ăсатса янă хыççăн Карсак Маринăна аса илчĕ.

«Мĕншĕн çывăхрах мар-ши? Нимле Манька та кирлĕ марччĕ вара. Ĕç вăхăтĕнче те кĕрсе йăпанма пулатчĕ, киле те вăхăтра таврăнаттăмччĕ. Ах, юратапах пулмалла эпĕ ăна. Унашкал хĕрÿ хĕрарăм тĕлне пулман ку таранччен. Астарса, вутлантарса туртса илет те хăй çумне, ĕмет те ĕмет вăя... Ку Манькипе... выç хырăма тăварсăр шĕвĕ шÿрпепе суйнă пек... Ÿсĕрпе каять. Эх Марина, Марина. Йывăççу чĕрех. Улми ÿсет, тутă кĕрсе пырать. Хырăму та ÿсет. Аптрамалла. Ку Манька тата Хайлова сывлăша çакса хăварчĕ. Нимле те антарма çук халĕ ăна ирхи сменăччен. Арăм хунькассинчен таврăнмарĕ-ши?»

Тарăхни халь те иртсе кайман Павловăн, алăка уçсанах ыйтрĕ:

— Сан юлнă-и унта, чуна кантармалăх?

Бригадира пĕр стакан хаяррине ярса панă хыççăн вĕсем

штаб-хваттере питĕрсе тухрĕç. Смена вĕçленнĕ, строительсем килĕсене васкаççĕ. Вĕсен Хайлов шухăшĕ мар. Хăлат пек хăлаçлансан та, хăратса çухăрашсан та пулăшма пултараймарĕç ăна, пока! тесе алă сулса çеç хăварчĕç.

Такăрланă сукмакпа утасах килет çав. Юлашки хут, точка тесе чуна темле хытарсан та урасем Манька йĕрĕпех каяççĕ.

Тепĕр кунне ирхи сменăна килекенсемшĕн кулă. Куритерен аялалла пăхса тăракан мĕскĕне сывлăх сунаççĕ. Манькăна улăштаракан хĕрарăм прораб вĕрентнипе юри час ĕçлеттермерĕ крана.

Карсак чӳречерен сăнать. Акă кран чăнкăртатса сас пачĕ те, вăрăм хул вĕçĕнчи трос сӳтĕрĕлме пуçларĕ, курите çĕр çине тăрнст! анса ларчĕ. Куритерен аран-аран тухнă Хайлов-хăлха прораб пӳрчĕ енне пăхмасăр аслă урамалла танкăшрĕ. Çӳлти хутран ши-и! шăхăрни илтĕнчĕ. Кран вăрăммăн чăнкăртатрĕ.

Ахалех иртмерĕ ку пăтăрмах. Малышкин çук пирки Хайлов треста çитнĕ. Управляющи Карсакова чĕнтерчĕ, ăнлантарса пама ыйтрĕ. Пырса тĕпчес пулсан та тĕп инженер кранпа хăвăртрах анас тесе куритене хăй кĕрсе тăчĕ, ман кран ванчĕ, ĕçлеттереймерĕм тесе калама килĕшнĕччĕ Павловпа тата Манькăпа. Çав майлăрах пĕлтерчĕ вăл аслă пуçлăха. Лешĕ ăна ĕненнĕ пекех итлерĕ, анчах строительсем ку камите халăха ахальтен кăтартманнине, Хайлова тек тĕп инженерта тытма май çуккине ăнланчĕ. Вĕсем ун çăхавне сӳтсе явса та ывăннă ĕнтĕ.

Кăнтăртан канса таврăннă Малышкин отпускĕ вĕçленичченех ĕçе пырса кайрĕ, çула май çеç кĕрсе тухрĕ пулас. Ăна Хайлов макăрса кăтартма та ĕлкĕрнĕ. Управляющи те калаçса илнĕ унпа Хайлов пирки.

— Ну, шаймăксем, пултаратăр та — култаратăр та çав, — хăй те кулса ларать штаб-хваттерте. — Эсир вăл çынпа мĕн те пулин тăвасса эпĕ тахçанах кĕтнĕ. Лайăх пĕлеп сире. Юрĕ, вĕçсе курни те, юлашки хут стройплощадкăри мыскара та пăсмĕ ăна. Тек сире чăрмантармĕ. Тĕп инженер пулмасть урăх. Кирлĕ те мар вăл. Хамăрах пултаратпăр вĕт?

— Пултаратпăр, — шавласа илчĕç мастерсемпе бригадирсем. — Сире итлетпĕр эпир. Сирĕнпе ĕçлеме пулать.

— Эсир мана мар, Василий Николаевича ытларах итлĕр. Эпĕ вĕт сиртен мар, унран ыйтатăп.

— О-о! Карсакпа пурăнма пулать.

## 6

Пурăнмалли çурт пĕлĕтелле кармашса-хăпарса пычĕ. Хайлова урăх управление куçарнă, мастера лартнă. Карсак хăйĕн сăмахне тытрĕ-тытрех. Манька крановщица сукмакĕ çине сысна курăкĕ пусрĕ. Урса-тулхăрса çӳрет Васлейĕн кив савниййĕ.

Шупашкарта каçа юлнă Марина Ларина Мир урамĕпе çуранах анчĕ. Стройка лаптăкне тавраллах хăмапа картланă. Çаврăнса тепĕр енне тухрĕ те вăл вăхăтлăх сарнă бетон тротуарпа Карсакăн штаб-хваттерне çитрĕ. Хуçи вырăнтах пулас, телефонпа çухăрса калаçни тулах илтĕнет, такампа хытах ятлаçать. Хăна кĕрсен вăл шăпланчĕ, ăна хирĕç сиксе тухрĕ, хăвăрт-хăвăрт ыйтса пĕлчĕ, хырăмĕнчен шăлса пăхрĕ, апатланма сĕнчĕ. Халь эпĕ ирĕклĕ, арăмпа ачана хамăр яла, аттесем патне кăпăклă сĕт ĕçме кайса ятăм-ха, смена вĕçленсенех таксипе Çĕнĕ Шупашкаралла чашлаттаратпăр тесе «ресторанне» кĕртсе лартрĕ, каçхи апат çитерчĕ. Калаççан-калаççан Вася-Василек çемçе кресло çинчен аса илчĕ, ăна туххăмрах тухса çакрĕ, ярăнма Маринăна чĕнчĕ.

Ларкăча вырнаçнă Марина савниййĕ-упăшкиййĕ татса панă йăрăмлă улмана тутанса пăхрĕ. Ярăннă май вăл шухăшĕпе çĕтрĕ, хăйне тĕлĕкри пекех туя пуçларĕ.

Чуччу пăявне Вася-Василек мар, Валерка Янташов çавăрса тытнă пек, сулса ямассерен ун хырăмĕ еннелле хура аллине тăсать пек. Марина сивĕ алла сирсе ярать. Çемçе кресло вырăнне кимĕ пулса тăчĕ пек. Валерка кĕсмене хашкаса авăсать. Маринăна шавласа кăпăкланакан шыв сикки патнелле юхтарать. Умри хăрушлăха курнипе вăл упăшки аллинчи кĕсмене туртса илесшĕн. Валерка тăрук шăмă пулса тăрать те... скелет ăна ыталама пуçлать. Хăранипе вăл Вася-Василек! тесе Карсакăн аллине çатăрласа тытать, ярăнать-ярăнать те питĕ хуллен юрласа ярать:

> Анне, мана асапланса ма çуратрăн-ши?
> Атте, мана хавасланса ма юратрăн-ши?

Качча парса, анне, мана ма çухатрăн-ши?
Арçын пулса, атте, мана ма çăлмарăн-ши?

«Салют» керменĕнче савăннă, сад пахчинче чуччу ярăннă, Çĕнĕ Шупашкарта арăм пулнă каçхи пек çутă. Уйăхĕ улмуççи айне шапăртаттарсах тăкать кĕмĕл пĕрчисене. Штаб-хваттерте телефон чарăнмасăр шăнкăртатать. Рельссем тăрăх куçакан кран чăсмак хулĕпе кармакланса вăрăммăн чăнкăртатать.

Василий Николаевич прораб пӳртне чупса кĕчĕ. Чарăна пуçланă чуччуне урипе çĕре тапса ярăнтарса ячĕ те Марина Ларина уйăх çинелле пăхрĕ, кĕмĕл çăмхана хупласа вĕçсе анакан тăрхала плиткăна курчĕ. «Вира!» тесе улмуççи патнелле стропальщик чупать. Кран каçса кайса чăнкăртатать. Кабининчен Манька крановщицăн тăрмаланчăк пуçĕ курăнать. Карсак штаб-хваттер алăкĕнчен тухрĕ те... Хаплатнă сасă тĕнчене кисретсе ячĕ.

*1996, çу уйăхĕ*

# Чĕрĕлĕх тункатисем

Тĕлĕк тĕлех килет тени тĕрĕсех пуль çав. Эпĕ те пĕр каçхине сывлăшра çапкаланса вĕçетĕп пек. Çӳл тӳперен çĕмрен евĕр шăхăрса аннă самантра ман айра улăх кавирĕ чечекленсе сарăлчĕ, мана ытама илсе чĕрĕлĕх сывлăмĕпе ӳсĕртсе ячĕ. Асамлă аташура пурнăçри хĕрӳлĕх тапхăрĕ куç умне анлăн тухса выртрĕ.

Лăпкă океан та лăпкă маррине çĕрĕн инçет хĕвел тухăç енчи чуллă çыранне мĕнле хăватпа кисретнинченех пĕлетĕп-ха, унта çар хĕсметĕнче пулнă вăхăтранпах. Пурнăç та пирĕн Тĕнче океанĕнчен пĕртте кая мар кĕрлет иккен. Таçталла-таçталла çити курăнакан шыв анлăшĕнчи хумсем вĕçĕ-хĕррисĕр аташуллăн тăвăл çĕкленĕ пекех, этемлĕх те хăйĕн хумĕнче ишет, патшалăхсене пайланнă кашни халăх та хăйĕн çыранĕнче ырлăх шырать, хăватлă хумсен кăпăкĕнче ăс-тăнĕпе вĕçĕмсĕр пăтранать. Тинĕс шывĕ хăпарнă е чакса кайнă майлăн аталанса пыракан çĕршывăмăн черетлĕ хумĕ мана Элĕк ен вăрттăнлăхĕн çыранне çитсе çапрĕ, кун-çулăмăн çаранне симĕслетрĕ.

* * *

Çамрăклăх хĕрӳлĕхне ниçта хума çук. Ĕçĕме эпĕ часах йĕркелесе ятăм. Çывăх юлташсем тупрăм. Хĕр кулли те çуллахи хĕвел пекех ăшăтать. Çапах та тунсăх тĕтри куç умĕнчен сирĕлмест. Вăрнар пур енчен те хула майлăрахчĕ çав, вăхăта кирлĕ пек савăк ирттермелли вырăнĕсем те çителĕклехчĕ. Хырлăх вăрманĕ хăех мĕн тери техĕмлĕ. Элĕкре вара... чиркӳрен тунă Культура çурчĕсĕр пуçне урăх нимех те çук. Ялĕ витĕр курăнса ларать. Мунча пулсанччĕ хăть. Халăх валли тасалу-сиплев çурчĕ лартас вырăнне район пуçлăхĕсем пăспа хĕртĕнсе милĕкпе çапăнма Шупашкара чуптараççĕ. Мана вара Вăрнар мунчисем сиплĕхпе кĕтеççĕ. Кунта çуралса ӳснĕ çыншăн, паллах, хăйсен тăван Элĕкĕ те темрен хаклă пуль-ха та... — манăн чун-чĕре çумне

вăл ниепле те çывхараймасть-ха, мана хăйĕн ытамне ăшшăн çавăрса илеймест.

Çапла нушаланса пурăннă хушăра çиçĕм çиçнĕ пек сасартăк тем ялкăшса илчĕ, чĕре таппи çĕре кисретсе ячĕ. Çумри тĕтре сирĕлсе пынă май ман ума юмахри асамлă пике акăш ярăнса тухрĕ: кĕнеке лавккинче майралла çĕлетнĕ кăвак чечеклĕ çӳхе кĕске кĕпе, шĕвĕр пуçлă шурă пушмак тăхăннă, кăтралатнă çăра çӳçлĕ, çырă куç харшиллĕ, çĕмĕрт куçлă, çӳхерех туталлă хĕр, кĕç-вĕç куларах калаçма хатĕрленнĕн тулли çӳлĕксем çумĕнче хускалмасăр тăрать. Сисмелле мар иксĕмĕрĕн те куçсем йăлтăрт çиççе илчĕç те çийĕнчех аяккалла сиксе ӳкрĕç. Самантрах чĕрене сиктерекен вăй сиплесе кĕлеткене вĕрилентерчĕ. Сассăм та вăйсăррăн тухрĕ:

— Ырă кун пултăр.

— Тавах, сире те çавнах сунатăп. Мĕн каласшăн-ке?

— Эпĕ... мĕн... Мĕнле кĕнеке туянтăр?

— Акă «Салампи» суйласа илтĕм. Тахçанах вуласшăнччĕ те... Ниепле те вăхăт тупăнмасть. Мĕн çырать-ши пирĕн Артемьев? Хамăр ял ачи. Эсир, паллах, тахçанах вуланă пуль...

— Малтан, кĕнеке тухсанах. Чăваш хĕрарăмĕн чунĕ, ырă кăмăлĕ, сăн-сăпачĕ, тумĕ... — пурте пур унта. Сăнарлăхĕпе тыткăнлать, — тинех хал пырса кĕчĕ мана. — Тури Выларан пулас-ха апла эсир? Александр Спиридонович пыркаласа çӳрет-и яла?

Çакна илтнипе пикен яп-яка пичĕ йăл кулăпа илемленсе улшăнчĕ, вара шап-шурă шăлĕсене хитрен кăтартрĕ:

— Тури Выларан мар эпĕ, Мускавран, — терĕ. — Анне манăн Выла хĕрĕ пулнă. Элĕк каччине качча тухнă та... Эпĕ çак ялтах — Элĕкрех çуралнă. Асăрханă пуль вăрăм пĕвесене?

— Шыва та кĕнĕччĕ-ха пĕр пĕвинче, пулă та сĕрнĕччĕ. Çăпата пек карассем туртса кăлартăмăр.

— Анне Тури Выларан пулнă пирки чăваш классикне хамăрăн тетĕп-çке. Мĕн, çапах... элĕксене çӳле çĕкленĕ çын.

— Тĕрĕсех. Чăвашсем хушшинче çукрах пуль унашкал вăйлă писатель. Эпĕ нумай вулатăп та... Артемьевпа танлаштармалли, Александр Спиридоновичран маларах хумал-

ли çыравçă хальлĕхе курмастăп. Халăх чунĕ, çĕр сĕткенĕ çитменрех пек ыттисен... — темшĕн ку хĕре кăштах тĕпчес килсе кайрĕ манăн. — Тен, аçусем те сирĕн авалхи Элĕксен йăхĕнченех пуль-ха? — терĕм.

Вăл мана ăнланса илейменнипе хулпуççийĕсене çăмăллăн сиктерсе илчĕ те куçран чăр пăхрĕ:

— Мĕнле Элĕк йăхĕнчен тата? Каларăм-çке Элĕкре çуралнă тесе... Элĕк салинче. Йăх таврашне вара... çук, нимĕн те пĕлместĕп, асаттен ашшĕ-амăшĕ кам пулнине те. Такамсем... Шкулта истори вĕреннĕ чухне илтнине кăшт астăватăп. Неолит, бронза тапхăрĕсенче те этем çӳренĕ тет-и пирĕн таврара? Ку вăл пирĕн эрăчченхи иккĕмĕш пин çуллăхрах пулнă тенĕччĕ учитель. Кайран та кунта темле халăх йăхĕсем те пурăнни çинчен каланăччĕ вăл. Элĕк йăхĕ?..

Пуçарнă кăсăклă ыйтăва малалла аталантарса хĕре пулăшма шутларăм:

— Пирĕн ăн асаттесем Вăтам Атăл тăрăхне çиччĕмĕш-саккăрмĕш ĕмĕрсенче куçса килни паллă. Ак çакă сирĕн вырăнта, эппин, мари йăхĕсем йăшăлтатнă. Çĕнĕ çĕре, сĕм вăрмана пусмăртан тарса çитнĕ чăвашсем вуннăмĕш-вун иккĕмĕш ĕмĕрсенче вирьял ушкăнне пайланнă. Вĕсем ялсем çавăрнă. Ячĕсене ĕнтĕ... е хăйсен паттăрĕ, е паллă вырăн ячĕпе панă. Пĕлетĕр-и, вĕсен хушшинче Элĕк ятлă этем те пулнă.

— Ай ку чăннипех питĕ интереслĕ. Ма-ке ун çинчен эпĕ ку таранччен те пĕлмен?

— Мускавра пурăнаканскере сире кам калать пуль ун çинчен?

— Вăл хыпара эпĕ хам та кунта Элĕкре мар, Вăрнарта илтнĕччĕ.

— Камран-ке? — кĕнеке тусĕсем урăх килменнипе усă курса пире хăлха тăратсах итлекен сутуçă та çумарах пырса тăчĕ. — Каçарăр, ман та пĕлесчĕ кун пирки.

— Камран тетĕр-и? Вăрнарта пĕр паллă çын пурăнать. Кирилл Макарович Никишов текенскер. Кăлкан пек çӳçлĕ, юман кĕрешĕ пек патвар, юмахри пек чăн-чăн шур сухал. Сакăр вуннăсенче хăй. Революциччен тĕн семинарийĕнчен вĕренсе тухнăскер. Хăй вăхăтĕнче Трак енчи Мăн Шетмĕ чиркĕвĕн пупĕ те пулнă вăл. Вун саккăрмĕш çул-

тах Вăрнара куçса пынă та вăрман çумĕнче тымар янă. Вăйпитти çулĕсене яваплă ĕçсенче халăхшăн усăллă ирттернĕ. Ой, мĕн кăна пĕлмест пуль авалхи юмахçă. Нумай-нумай халап. Çырни темĕн чухлĕ унăн, пичетлени те...

— Никишов, Никишов?.. Çавах пулсан-ке, ара... шăпах пирĕн ялсем пулма кирлĕ вĕт вăл! — хытах тĕлĕнчĕ сутуçă. — Тăванĕсем — кӳршĕсемех. Ыр кăмăллă çынсем. Хăйне курман. Килсе çӳреме ерçĕвĕ те, сывлăхĕ те çитмест пуль, çулĕ те япăх, çывăх мар.

— Кирилл Макарович каласа панă тăрăх, тĕне кĕмен хăюллă Элĕк чăваш авланнă та тарăн çырма хĕрринче пӳрт лартнă, таврари вăрмана касса, тунката хăртса тырă ӳстернĕ, чăтлăхра упа, шăнкăртатса юхакан шывра пулă тытма юратнă. Упа çырми пур-çке сирĕн?

— Элĕк çумĕнчех вăл, — пĕлтерчĕ кĕнекеллĕ хĕр. — Пирĕнтен инçех те мар.

— Шăпах çавăнта çӳренĕ те вăл ухутана. Хăй пекех патвар вун икĕ ывăл çуратса ӳстернĕ вĕсем карчăкĕпе, пурне те авлантарнă, уйăрса кăларнă. Вĕсен ячĕпе вара çĕнĕ ялсем пуçланса кайнă: Хурăн ушкăнĕнчен — Изванка; Паварин ушкăнĕнчен — Уйкас; Мăша ушкăнĕнчен — Синер... Элĕк ялĕ те сарăлнă, тăварахра чиркӳ чанĕ çапма тытăнсан, вун саккăрмĕш ĕмĕр вĕçнелле, сала пулса тăнă, прихучĕ çирĕм тăвата яла сыпăнтарнă. Совет влаçĕ вăхăтĕнче Элĕкре вулăс кантурĕ уçнă, районсем тусан пуç хула ятне илнĕ вăл.

Çăвар карса итлекен пикесенчен чĕреме тыткăнлани маларах кулса ячĕ те:

— Тин пĕлтĕм иккен эпĕ хам ăçтан шăтса тухнине. Элĕк йăхĕнченех пулас. Çавăнпах пуль Элĕк сали маншăн Мускавран та мăнăрах, тăванрах, сĕткенлĕрех. Мĕн-ке, тĕрĕсех вĕт?

— Маншăн та çаплах, эпĕ те Элĕк ачин тăхăмĕ пулатăп, хăшин ушкăнĕнчен тулĕк — пĕлейместĕп. Тен, Сурăм ятлинчен. Ялĕ те пирĕн Сурăмвăрри — юхан шывăн икĕ çыранне çавăрнă. Шывне те ун чухне Сурăм чăваш ячĕпе хума пултарнă... — çапла калакаласа сутуçă кĕнеке туянма кĕнĕ çынсем патне васкарĕ, унтан тăрук каялла çаврăнса хушса хучĕ: — Вăрнара каяс-тăвас пулсан Кирилл Макарча ахметкассисенчен салам калăр. Вăл пĕлме кирлĕ Ахмет

камне. Ҫав этемрен пуҫланнӑ тет-и пирӗн вӑрӑм урам. Тен, ҫав Ахмет йӑхӗнченех эпир, вӗсем хӑйсем те... Э, мӗн лӗпӗртететӗп, пурпӗрех аслӑран та аслӑ асаттемӗр ачисем пулас-ха эпир — элӗксем. Каҫарӑр чӑрмантарнӑшӑн.

Ҫырӑ куҫ харши айӗнчен ман енне каллех ҫӗмӗрт куҫ сӑпайлӑн тинкернӗ-мӗн. Эпӗ те куҫӑма ҫивӗчлетрӗм. Хӗр манран ыйтрӗ:

— Эсир, тем, пирӗн енчи ҫын майлӑ мар пек, урӑхларах...

— Мӗн енӗпе-ке? — элӗкле персе ятӑм.

— Сӑн-пуҫпа та, чӗлхе-ҫӑварупа та, «ке» тени те элӗкле янӑрамасть, — ӑшшӑн кулса илчӗ вӑл. — Сире эпӗ пӗркун кинона кайсан сӑнанӑччӗ.

— Чӑнах-и? Мӗншӗн-ха сӑмах хушмарӑр тата ун чух?

— Хӗр хӑй каччӑпа сӗмсӗрленсе паллашни намӑсла пулать тесе шутларӑм — элӗксем, эпӗр, хамӑрла-юмартла та... Эпир чӑннипех камне Каховский профессор сӑмахӗсемпе те, Никишов ӑсчах халапӗпе те ӗнентерме тӑрӑшрӑр-ха, тавтапуҫ сире уншӑн. Вӑрттӑнлӑх мар пулсан хӑвӑр хӑш чӑтлӑхран шӑтса тухнине калаймӑр-ши?

— Мӗнех, паллашӑпӑр, — терӗм унран куҫа вӗҫертмесӗр. — Улатимӗр ятлӑскер эпӗ, хушаматӑм — Санаров. Вӑрнар тӑрӑхӗнчи Шурӑмпуҫ ялӗнчен. Сирӗн кӳршӗсемех. Ҫак анлӑ Сӑр вӑрманӗн чӑтлӑхӗнченех. Сирӗн Аслӑ, Мӑн Элӗкре ҫуркуннеренпех тӗп инженерта ӗҫлетӗп. «Сельхозтехникӑра». Эсир хӑвӑр тата мӗнле пуҫлӑх-куҫлӑх-ха?

— Пуҫлӑх?..— кӗске тӑхтав хыҫҫӑн хӗр куҫне ман куҫран тин вӗҫертсе каларӗ: — Мӗн, сирнешкел пысӑк пуҫлӑх мар ҫав эпӗ, музыка пуҫлӑхӗ кӑна. Тӗрӗссипе, консерваторире вӗренетӗп. Юлашки уйӑхсем ӗнтӗ. Мӗнех, паллашар — Алина Малина.

— Малина апла... Улина хӑмла ҫырли, тутлӑ пылак Улина... — ачашшӑн шӳтлес килчӗ манӑн.

Мана итленӗ май унӑн куҫ ытарлӑхӗ йӑлкӑшнипе, хӗретнӗ тути хӗррисем хӑмла ҫырли тутине сывлӑша сарчӗҫ-ши, ҫӑвара пылак техӗмӗ тулчӗ. Хӗре хам сисмесӗрех аллинчен тытрӑм.

— Мӗн-ке, эсир те кунта сӑлтавсӑр кӗмен пулӗ? Мӗнле кӗнеке шыратӑр-ке? — вӑл аллине ман вӑйлӑ аларан майӗпен, вӑтанчӑклӑн вӗҫертрӗ.

— Репин кирлӗччӗ-ха мана. Телее пула, тӗлӗнмелле, Игорь Грабарь академикӑн унӑн пултарулӑхӗ ҫинчен ҫырнӑ икӗ томлӑ пуххи те пур иккен ял лавккинчех. 1937 ҫултанпа 1963 ҫулччен кӑларман паха хайлав ҫӗнӗ кун ҫути курнӑ. Шупашкарта художниксем мӗн тери шыратчӗҫ ӑна. Элӗк вара тӗнче искусствин мулне халӑха валеҫекенӗ пулса тӑни сирӗн хака ҫӳле ҫӗклет. Чунӑм ӳнерҫӗсен пурнӑҫӗ еннелле питӗ туртӑнать-ҫке. Вӗсен вилӗмсӗр ӗҫӗсем тыткӑнлаҫҫӗ. «Атӑл ҫинчи бурлаксем» хӑйсемех мӗне тӑраҫҫӗ. Художник ҫав картинӑна малашлӑха курсах ӳкернӗ пулас.

— Малашлӑха курса?.. — тӗлӗннӗн ҫамкине картлантарчӗ Алина. — Эпӗ те ун пултарулӑхӗ ҫинчен кӑштах пӗлетӗп те... Ман атте те вилет сӑнарлӑ искусствӑна юратса. Килте пирӗн мӗн тӗрлӗ кӗнеке ҫуккӑ-ши искусство пирки? Репин вӗт ҫав картинӑра вырӑс халӑхӗн хӗн-хурлӑ пурнӑҫне сӑнарланӑ марччӗ-и-ке?

— Ҫапли ҫаплах-ха та... — терӗм эпӗ пӗр кӗнекине уҫса. — Акӑ вӗсем, «Атӑл лашисем», тулли баржӑна ушкӑнпа мекӗрленсе туртаҫҫӗ. Малалла ӳпӗннӗскерсен, анчах пуҫ усманскерсен, ҫӗтӗк-ҫатӑк тумланнӑскерсен сӑнарӗнче — йывӑрлӑха парӑнмасӑр чухӑнлӑха ҫӗнтересле талпӑнакан этем вӑй-хӑвачӗ ҫиҫсе тӑрать пек. Вун тӑххӑрмӗш ӗмӗрӗн вӗҫнелле ӳкернӗ ҫав картинӑри бурлаксем мана темшӗн-ҫке паянхи тертлӗ пурнӑҫа аса илтереҫҫӗ. Выҫӑллӑ-тутӑллӑ Раҫҫей халӑхӗ те пурпӗрех пуҫа усмасӑр ҫӗршыв киммине мекеҫленсе тӑваллах туртать вӗт, э? Репин ӳкерчӗкӗнчи кашни сӑнарта эпӗ хам паллакан-пӗлекен ҫывӑх ҫынна куратӑп.

— Ҫаплах пуль, ҫаплах пуль... сирӗн шухӑшпа, — терӗ те хӗр хыпӑнса ӳкрӗ. — Каҫарӑр та, киле васкамаллаччӗ. Сысна ашӗ шаритлемелле манӑн. Кӑмӑлӑр пулсан, пулӑшма пултаратӑр. Вӑхӑтӑр пулсан. Эпӗ... эпӗ — пӗчченех. Мӗн, сехӗрленсе ан ӳкӗр тӳрех киле чӗннӗшӗн.

Хӗр хӑюлӑхӗ мана хама та хӑюллантарчӗ. Каччӑшӑн ку япӑхах мар-ха. Кирлӗ кӗнекесене туяннӑ хыҫҫӑн йывӑрскерсене хул хушшине хӗстерсе вара эпӗ Алинӑпа тухса утрӑм. Ӗҫе ӗлкӗретӗп-ха. «Сельхозтехника» уйрӑмӗ инҫех мар.

Малинасен килӗ пӗве ҫумӗнчех. Ултӑ кӗтеслӗ, ҫутӑ хӗҫ тимӗр витнӗ ҫӗнӗ пӳрт, темиҫе тӗспе сӑрланӑ вырӑсла хапха. Ытти хуралтине чӗнтӗрлӗ картапа ҫыхӑнтарнӑ. Сарай хыҫӗнче — улма-ҫырла сачӗ. Пан улмиййӗ — шӑкӑрин.

Пӳрте кĕрсен стена çинчи мăнлатнă сăнӳкерчĕке курсанах Алинăн ашшĕ те, амăшĕ те кам пулнине пĕлтĕм: район пульницинчи тухтăрсем.

Эпĕ апат пĕçерме юратаканскер, кил хуçине пулăшмашкăн хавасах пултăм. Кухньăра иксĕмĕр çывăх çынлах ăшталанатпăр. Кăнтăрлахи апат хатĕр те ĕнтĕ. Алина мана сĕтел хушшине туртсах лартрĕ:

— Хăна пулсамăр. Ма-ке вăтанатăр? Аннесем пĕрресĕр килмеççĕ. Мĕн ĕçетĕр-ке?

«Хирĕçлесен — кӳренмелле, хирĕçлемесен — ĕçмелле», — тесе шухăшларăм та Алина буфетран сĕтел çине кăларса лартнă виçĕ кĕленчерен варринчине тĕллесе кăтартрăм.

— Эрменсенне — пилĕк çăлтăрлине.

Черккесене авалхи Элĕк чиркĕвĕн чан сассиллĕн кĕвĕлентерсе илнĕ майăн хаярлатнă иçĕм çырли сĕткенне вăл тутана-тутана ĕçрĕ. Ун хыççăн эпĕ те кăмăл туллин янклаттартăм...

— Каçхине кино курма шухăш çук-и? — хĕрĕн кăмăлне пĕлес килчĕ манăн.

— Эпĕ — ирĕк кайăк...

— Апла тăк саккăрта Культура çурчĕ умĕнче тирексем айĕнче кĕтетĕп.

Мĕншĕн эпир пит хăвăрт çывăхлантăмăр-ши? Сисĕнмен асамлă вăй иксĕмĕре те пĕр çыхха тĕвĕлесшĕн-ши?..

Кинона путлĕн курса ăнланасси те пулмарĕ, анчах... хĕрĕн сылтăм аллипе манăн сулахай алă сехет çура уйрăлмасăр çунчĕç.

Çурла уйăхĕн çурли анлă тӳпере çăлтăрсен вăййинче юрату уйне вырать. Алина мана хулран çавăтса пахчасем хыçĕнчи урапа çулĕ çине илсе тухрĕ. Инçех мар, Асамат ялĕ енче, комбайнсем çатăртатаççĕ, ухлата-ухлата илеççĕ. Тусан мăкăрлантарса грузовик кĕрлеттерсе иртрĕ. Кăçал эпир техникăна начар мар хатĕрлерĕмĕр. Вырмара ку таранччен комбайн ванни пулмарĕ-ха, малашне те инкек-синкек ан тухтăрччĕ.

Пĕчĕк алăкран сада кĕтĕмĕр. Алина лутра, тăпăлкка пӳрт умĕнчи кĕске сак çине ларса юрласа ячĕ:

Кам-ши, кам-ши юр юрларĕ
Çурхи ăшă каç?

Савнă тусăм, маншăн мар-ши
Кусусем çунаç?

Кăштах аташас килчĕ-ши — шухă шухăш-туйăмпа хавхаланнăскер, эпĕ те юрласах калаçрăм:

Савнă тусăм, маншăнах-çке
Куçусем çунаç.

— Тунсăх пуссан Мускавра тăван килшĕн суракан чĕреме сиплетĕп хамăр тепĕр ентешĕн Илле Тукташăн çак ăшă сăмахĕсемпе. Кĕввине те Григорий Хирбю ман валлиех çырнă пуль тетĕп вара. Мĕн-ке, пĕлесех килсен, мухтанса илем-ха.

— Питĕ, питĕ пĕлессĕм килет сирĕн вăрттăнлăх çинчен.

— «Кам-ши, кам-ши...» юрра Мускавра янраттарни куç умне тухса тăчĕ. Консерваторин Пысăк залĕ. Ларма вырăн çитмест. Чăваш музыкин, юррин ăстисем хăйсен маçтăрлăхне кăтартаççĕ. Мана та хутшăнтарчĕç унта. Юрласа пĕтернĕ хыççăн Хирбю мана саламларĕ, мухтарĕ, ыталаса чуптурĕ.

— Тутаранах мар-тăр?

— Тутаранах, Улатимĕр, ак çакăнтанах...

Чăтаймарăм, вăрттăн каç сĕмĕнче авкаланса тăракан хĕрӳ кĕлеткене ытама çавăрса илтĕм. Хăй те вăл асаплануллă чăтăмсăрлăх туйăмĕсене чараймасăр вĕри ӳт-пĕвĕпе туртăнса ман çумарах çыпçăнса каçăхсах чуптурĕ: тутаран, питрен, мăйран... Хăйĕн тивĕçне яланах пĕлсе ăнланакан сылтăм алă вара кĕпе тăрăх аялалла шуса анчĕ те...

Çан-çурăм вĕри мунчаран тарласа тухнă хыççăнхи пек çăмăлланса уçăлса кайнă хыççăн ĕшенмесĕр тӳпенелле ăнтăлакан çунатлă астармăшăма тепĕр хут канлĕн чуптуса илтĕм те:

— Тавтапуç çепĕç кĕввӳ-юррушăн тата вăрттăн парнӳшĕн, — терĕм.

— Ой, тем пекех тав хăвăра та мана чун канлĕхĕ парнеленĕшĕн, пирĕн те, хĕрарăмсен, хамăра вăхăчĕпе кирлĕ вăйлă туйăм пур-çке, пире те пурте кирлĕ çут çанталăк ытамĕнче, — мăйран вăрахчен ыталама пăрахаймарĕ Алина.

Акă ĕнтĕ Малинасен тутлă сачĕ те маншăн çамрăклăх çăтмахĕ пулса тăчĕ. Ĕçлес те, вĕçес те килет. Хĕвел анасса

çеç кĕтететĕп. Улах вăхăтне çĕрĕпе куç хупмасăр кĕскетнĕ май хĕвел ачисем чӳречене уçса шап-шурă çăка урайĕнче ташлама пуçличченех канлĕх сăпкинче сикетпĕр.

Ирхи çумăра хĕвел хăратать-ши — ялан вăл çĕр питне çуса тасатнă-тасатман аяккалла тарса çухалать, çĕр çийĕн симĕслĕхне, мĕнпур чĕрĕ чуна илем, техĕм парса хăварать. Асамачĕ çичĕ тĕслĕ чĕнтĕрлĕ кĕпер хывать авă. Эпир ыталанса çут çанталăк имне ăша хыватпăр.

— Хăватлă Асамат икĕ çырма шывне ĕçсе Элĕк ене илем парнелет, — чечеклĕ кĕпе ăшне пытанакан чăп-чăмăр кĕлеткене пăхса тăранаймасăр киленнĕ май çамрăклăх çулĕ çинче ăнсăртран тĕл пулнă çĕнĕ юратăвăма ăшă сăмахсемпе хавхалантарас тесех калаçрăм.

— Мĕн-ке, Улатимĕр, эсĕ мана каллех темле çунатлă сăмахсемпе тĕлĕнтересшĕн пуль-ха?

— Чăнах, аваллăх сĕмĕ пуç миминчех пăтранать, — эпĕ пикене çумарах туртрăм. — Асамат та этемех пулнă иккен.

— Элĕк ачиех, — пуçне кăкăрăм çине хучĕ.

Пите кăтăклантаракан кăтралатнă çӳçне шăла-шăла ăнлантаратăп:

— Асамачĕ, чăннипе, чăвашсемпе те çыхăнман вăл, таçтан аякран тутарсем арабсенчен илсе килнĕ ят, мăнаçлăха пĕлтерекенскер. Элĕкĕн те вун икĕ ывăлран пĕри Асамат ятлă пулнă пуль çав. Çав маттур чăвашранах пулса кайнă тесе ĕнентереççĕ-çке хăвăр таврашри ăсчахсем. Ун çинчен Никишов мучи те тăрăшсах тăнлантарнăччĕ мана. Çĕр çинче нумай халăх çынни Хĕвеле, Уйăха пуççапнă, хăйĕн телей çăлтăрне шыранă. Тĕнче çаврăмĕн çил-тăвăлĕнче вара эсир те, элĕксем, эпир те, вăрнарсем, чĕрĕ тымарланса юлнă.

— Эпир те, иксĕмĕр, халĕ çав тымара çĕнетесшĕн юрататпăр пуль. Хĕрарăм туйăмĕ вăранса вăйланнине сисекен пултăм, Улатимĕр-Тимĕр кăшăлăм... — Ман кăкăра ачашлакан Алина хĕвел çиекен Асамат кĕперне тартас мар тенĕн ытарлăн сăнать.

Пуçăмра манăн чылайранпах сăвă йĕркисем шăранатчĕç, чăтаймарăм — хăпартуллăн калама пуçларăм:

Парăнман Элĕк ачи нихçан,
Чĕлхине, ятне те çухатман,

Паттăр пулнă вăл ĕçре ялан,
Нихăçан тĕнче кулли пулман.
Вун-вун икĕ ывăлăн тавращĕ:
Сурăм, Синерпуç, Этмен, Тукташ...
Элĕк несĕлĕн мăн хурăнташĕ —
Пурте хамăр чи аван янташ,
Эпĕр Элĕк-паттăр ачисем.

— Эсир, Улатимĕр, ял хуçалăх инженерĕ кăна мар, этем чунĕн инженерĕ те иккен, поэтлах сăнарланă пирĕн тăрăха. Ĕненетĕр, эпир — Элĕк ачисем, — Алина ытамран вĕçерĕнчĕ те йăлттам кĕлеткине балерина çĕкленĕвĕллĕн явкалантарчĕ, мана та хăйĕн хĕрӳллĕ çеммине кĕртсе ячĕ.

Çуллахи тулăх та тутлă сад пире хăйĕн пылак тутипе савăнтарса симĕс тум ытамĕнче лăпкаса килентерет-ха — анчах... сад та хуçасăр мар: ашшĕ те тухать унта час-чах, амăшĕ те... Вара эпир тĕлпулу каçĕсене шкул садĕнче малалла тăсрăмăр. Ĕлĕкрех ку ешĕл лаптăкра чиркӳ прихучĕн масарĕ пулнă теççĕ.

Самана улшăнса, пăтранса пынă май чиркӳ хĕресĕпе чанне туртса антарнă хыççăн шкулта вĕренекен çамрăк элĕксем сăваплă вырăнта улма сачĕ лартса çитĕнтернĕ.

— Акă пирĕн улмуççи, класпа лартнă чун уççи... — Алина анис йывăççи тавра ташласа çаврăнчĕ, уçă çинçе сассипе хавассăн юрă пуçларĕ:

Авăнать, авăнать,
Улма йывăç авăнать.
Улми тулăх пулман пулсан
Авăнатчĕ-ши вăл?

Эпĕ ăна çăмăллăн çĕклесе хам тавра çавăратăп та урлăлла ӳсекен мăн турат çине улăхтарса лартатăп:

Савăнать, савăнать,
Манăн чунăм савăнать.
Эсĕ манпа пулман пулсан
Савăнатчĕ-ши вăл?

Улма йывăççисене аваллăхри салтаксем пек тавраллах тирексем хӳтĕлеççĕ. Тухăç енче, икĕ рет йывăç хушшинче — сукмак.

— Алина, пĕлетĕн-и çакă аллейăра миçе тирек ӳснине?
— Шутламан. Мĕн тума кирлĕ-ке ку?

— Пурнăç çулне палăртма. Çакăнта миçе йывăç, пирĕн юрату та, тен... пирĕн юрату та çавăн чухлех пурăнĕ.

— Шухăш вылявĕ кăна мар-и ку?

— Тен, ун пек те пулĕ. Çапах та... эпĕ — шутланă. Шăпах çĕр тирек кашлать унта...

— Нивушлĕ çавăн чухлех? Мĕн-ке... хам шутласах тухам-ха.

— Пĕрре-иккĕ-виççĕ... тăхăр вун тăххăр, çĕр! — Алина шутласа пĕтерчĕ те пĕчĕк ачалла сиккелесе илчĕ. — Чăнах та, çĕр тирек! Эй, тĕнче! Итле пире?! Çĕр çул пурăнать Улатимĕрпе Алинăн юратăвĕ!

Пире тăнласа пăшăлтатакан çӳллĕ йывăçсем — юрату хуралçисем — хушшипе вĕлтĕртеттерсе чупса кайнă савнийĕм хыççăн эпĕ те çĕкленӳллĕ ĕмĕтпе васкарăм.

Кам тăнласа курнă тирексем пупленине, алă çупнине, çавă туять, ăнланать вĕсен ытарлă сассине. Тирексен шăпăл-шăпăл кĕвви май Алина хушăран хушă пĕр-пĕр юрă ĕнĕрлекелесе илет. Ман çурăма та акă иртерех саралса тăкăнакан сарлака çулçăсем утиял вырăнне витме пуçларĕç. Кĕре хăваласа килекен шухă çил çаври çара пĕçсене çупăрлать, вĕри хушша кĕрсе кĕвĕçӳллĕн аташать.

Сисмерĕмĕр те, Алинăн каникулăн кĕске вăхăчĕ пăравус пек кăшкăртса ячĕ: çула тух! Пикене Вăрнар станцийĕнче васкавлă пуйăс çине лартса ятăм. Лартса ятăм та... чăтаймасăр шпалсем тăрăх хыççăн чупас килчĕ. Перрон çинче тутана хăмла çырли тути парнелесе хăварнă Элĕк хĕрĕ куç умĕнче кăна тăрса юлчĕ.

Пирĕн юрату çырупа çыру хушшине куçрĕ, хĕмленӳллĕ ăшă сăмах пуххине чĕре кăртлатнă пек кăртлаттарса пуйăс каллĕ-маллĕ кустарса çӳрерĕ. Майĕпенех акă çумăрлă кĕре шартлама сивĕ хăйĕн ытамне хупрĕ. Хĕллехи каникул та çитрĕ. Алина Элĕк хапхинчен çаплах кĕреймерĕ. Экзаменсем тытнă хыççăнах вăл консерватори ансамблĕпе Чехословакие, Венгрие гастроле тухса кайнă-мĕн. Хамăн та Мускава çитме пушă вăхăт тупăнмарĕ. Кĕçех мана Элĕк салинчен уйăрса Шупашкар хĕрĕсен вăйă картине хупрĕç. Çĕнĕ ĕç пуканне якатса ывăннă хыççăн Атăл хĕррине уçăлма-канма тухатăп. Çӳллĕ çыран хĕрринче мăшăрăн-мăшăрăн тăвалла-аталлла юхакан юрату йăшăлтатăвне сăнатăп-сăнатăп та чĕре хĕссе килнипе юхан шыв хĕрне чупса

анатăп, пите çуса уçăлатăп. Хамăн Юрату сăмсахĕ Атăл çыранĕнче мар, Элĕкри Упа çырми хĕрринчех пуль тесе тăнран каятăп. «Атăл» хăна çуртне мана тунсăх ăсатса ярать: ыталасах, кашни каç. Ирпе тин вăл уçнă чӳречерен тухса шăвăнать. Ĕç хуйха-суйха юратмасть — ăна уçă, тăнлă пуç, ăста, вăр-вар алă çеç кирлĕ. Ĕçре пурте манăçать.

Хĕрĕн шухăш-туйăмĕ хĕрĕх тĕрлĕ кăна мар, çĕр хĕрĕх тĕрлĕ те пулма пултарать иккен. Эпĕ, ухмаххи, ăна-кăна чухламалăх пиçсе çитеймен курăнать. Манăн юратăвăм пĕр мана кăна йăпатман çав. Алинăн Мускавра каччи пулнă. Эпĕ вара савăклашмалли черетлĕ вăйлă йĕкĕт вырăнĕнче çеç шутланнă пуль. Миçемĕшĕ-ши? Кун пирки хăйĕнчен те, юратуран та ыйтаймăн. Çавă тулли çу каçĕсенче вăл мана хăй консерваторирен вĕренсе тухнă хыççăн ирттерекен сывпуллашу концертне Чайковский ячĕллĕ Пысăк зала чĕнетĕп тесе питĕ шантарнăччĕ. Эпĕ çав вăхăта чăтăмсăррăн кĕтрĕм. Рояль умĕнче мăнаçлăн ларса Тукташпа Хирбюн тĕнчене сарăлнă сăвви-юррине чаплăн янраттаракан Элĕк хĕрне каçса кайса итлес, вăл чăваш ятне илем хумĕнче çӳллĕ шая çĕклеме пултарнишĕн савăнса хăпартланас килетчĕ. Анчах... ĕмĕтленни кăлăхах пулчĕ. Диплом илнĕилмен Алина Палестинăна тухса вĕçнĕ, араб ачисене музыка вăрттăнлăхне алла илме вĕрентмешкĕн васканă. Кĕр мăнтăрĕпе туллин кăнтăралла вĕçекен, ют енчен хамăр тăрăхри çуркуннене ушкăнпа кĕтсе илме васкакан кайăксен сассинче пуçа пăтрата-пăтрата уйăрса илеттĕм пулас хĕрӳ туйăм калаçăвне, юрату кĕввине.

Çĕр çул мар, пĕр çул та пурăнаймарĕ пирĕн юрату. Алинăн чĕринче пытанса юлнă-ши çав юратăвăн пĕр ылтăн пĕрчийĕ те пулин тесе шанăç шыраттăм. Ăш-чикĕм час лăпланаймарĕ, хушăран хушă Элĕк çăтмахĕнчи асамлăха асаплăн аса илтерсех тăчĕ. «Атăл» хăна çуртĕнчен хăçан хамăн хваттере куçнине те аса илме пăрахнă пуль, пурнăçăм çулĕ çине таса чунлă шанчăклă хĕр — тепĕр Элĕк хĕрĕ — чупса тухнине çеç куç умĕнчен çухатмастăп. Унпа пĕрлешсе ачапчаллă та, ачасен туйне туса мăнуксемлĕ те пултăмăр. Ĕçлеме те пăрахман-ха. Акă паян хамăн ĕçпе Элĕке каятăп. Çул çинче машинăра сехечĕпех çав тапхăр тата çавăн чухнехи вăхăт парнеленĕ Алина Малина пуçра, асран кайма, куç умĕнчен çухалма пĕлмерĕ. Çур çĕр иртнĕ

хыççăнхи тĕлĕк тата... Теме сиснĕ пекех-çке чĕрем хушăран тăвалла хăпаракан пăравус ураписен сасси пек кăрттăк-кăрттăк! туса илет.

Канашлу ирттернĕ хыççăн савăнăçлă апатчен пĕччен уçăлса çӳрес килчĕ. Пĕве çумĕнче сарăлса ларакан администраци çуртĕнчен тухса шкул сачĕ еннелле уттартăм. Хĕвел пуçа ăшалать. Кăнтăр енчи пек вĕри сывлăш ăша тулать, тар кĕлеткене касать. Астăватăп, тахçан ку ешĕл лаптăка тимĕр карта тытса çавăрнăччĕ. Халĕ — яри уçă, ирĕклĕх. «Кану паркĕ» тенине пĕлтерекен хăма татăкки курăнать. Сукмакĕсене асфальт сарнă. Çеремне шăрăх çулласа шуратнă. Пĕлеймерĕм, урам енчи ватă тирексене темшĕн каснă, мăн тункатисен кутĕнче хунав ешерет. Парк варринче — салтаксен паттăрлăхне асра тытса лартнă илемлех мар палăк. Сылтăм енчи тирекĕсем мăнаçлах-ха. Эпĕ вĕсен хушшипе ним çинчен те тарăннăн шухăшламасăрах хуллен утса кайрăм. Çамрăк чухнехи аса килчĕ-ши, ăнланаймарăм, йывăççене сасăпах шутласа пыратăп-иç. Тăхăр вун саккăра çитертĕм. Малалла... икĕ тунката курăнать. Икĕ тирекне каснă апла. Кам-ши? Мĕншĕн-ши?

Аллея леш пуçĕнче — тăпăлкка чул çурт. Уçă чӳречерен Родион Щедринăн сывлăшалла сарăлакан çунатлă кĕввийĕ ытла та çепĕççĕн ытамларĕ чĕреме, пăчă çуртра кунтăкланма пуçланă пуçа уçăлтарса ячĕ, çан-çурăма хытарчĕ, кĕлеткене тӳрлетрĕ, кăмăла çĕклерĕ, куçа чариех уçса ячĕ. «Элĕк салинчи 1-мĕш ача сачĕ» тесе çырнă çурт алăкĕ çине.

Кĕвĕ тăруках чарăнчĕ те, алăкран тăпăлкка хĕрарăмпа пĕчĕк хĕр ача тухрĕç, мана хирĕçех утса килеççĕ. Тĕлĕннипе шаках хытрăм: кăвак чеченлĕ кĕске çӳхе кĕпе, шап-шурă пушмак, кăтралатнă хулăн çӳç, кĕрен куç харши, ун айĕнчи çĕмĕрт куç... Уçăрах кăкăрĕ çинче икĕ чĕреллĕ ылтăн кулон йăлкăшать.

— Алина?! — сисмесĕрех кăшкăрса ятăм та ачана хăратсах пăрахрăм.

— Улатимĕр! — ватта пусма пуçланă хĕрарăм ачана аллинчен вĕçертсех мана ыталаса илчĕ, чуптума пикенчĕ.

— Дедульăна каласа парап-ха, — тесе ачи хăяккăн пăрăнса тăчĕ.

— Кала, кала, уншăн эпĕ сана шăкалат туянса паратăп, —

пуҫӗнчен шӑлчӗ ӑна хӗрарӑм. — Маншан халӗ пурпӗрех. Ах... чӗрем...

«Пуканене» варрине хупса эпир тирек сукмакӗпе урам еннелле утрӑмӑр.

— Шутла-ха, Алина, ҫакӑнта халӗ миҫе йывӑҫ?

— Чӑнах та, шутлас-ха, миҫе юлнӑ-ши, атту кунти тирексене кассах пӗтерме пуҫларӗҫ.

Тротуар патне ҫитсен вӑл хуйхӑллӑн каларӗ:

— Тӑхӑр вун саккӑр ҫеҫ... Мӗн-ке, икӗ тунката...

— Иксӗмӗр мар-ши вӗсем? Икӗ тунката... Юрату садне ешерме чӑрмантарнӑ хӑрӑк йывӑҫ тункатисем. Пирӗн шкул класӗн, иксӗмӗрӗн улмуҫҫине те масар ҫӑтнӑ. Юратуне те... — кӑкӑр пӳлӗнсе ларчӗ.

Йӗме пуҫланӑ Малина сулӑнса кайрӗ. Хӗр ачи те нӗшӗклерӗ. Эпӗ хӗрарӑма ӳкесрен ярса тытрӑм, ачипе иккӗшне те ҫупӑрларӑм.

— Каҫар мана, Улатимӗр. Сутрӑм сана юрату пасарӗнче. Мӗн тери айӑпа кӗтӗм. Малтанах пӗлтерейменрӗм, кайран аванмарлантӑм, вӑтантӑм. Каччӑсен те унашкал йӑпану сахал мар пулать пуль терӗм те... Упӑшкам ман, Патрис Лумумба ячӗллӗ халӑхсен туслӑхӗн университечӗ йӑвалаcа кӑларнӑ революционер, хӑйсен ӗмӗрӗпе тӑсӑлакан вӑрҫинче ирӗклӗхшӗн ҫапӑҫса пӗтрӗ. Унран кӑтра пуҫ ҫуратман. Раҫҫее таврӑнсан Чулхулана суйласа илтӗм, оперӑпа балет театрӗнче ӗҫлерӗм пенсие тухичченех.

— Шупашкара чун туртмарӗ-им?

— Чӗннӗччӗ мана унта тахҫан, хамӑрӑн Элӗк ачиех — Борис Марков. Чунӑм та тӑван енех туртатчӗ те... Сана тӗл пуласран хӑрарӑм. Чулхулара чӑваш нумай. Ман валли хамӑр Элӗк чӗппиех тупӑнчӗ. Хӑй лайӑх ҫын, манӑн малтанхи йӑнӑшсене каҫарчӗ. Хӗрарӑмӑн чыслӑхне пурпӗрех икӗ хутчен уҫаймастӑн», — терӗ те юратнӑ пек пулсах килӗшрӗ манпа пурӑнма. Хӗрарӑма юраканскер пулчӗ. Халӗ упӑшкам хӑйӗн ашшӗ-амӑшӗн тӗп килне ҫу каҫма илсе килчӗ. Кӗҫех хулана каятпӑр. Икӗ ача ӳстертӗмӗр. Ку — кӗҫӗн мӑнукӑм. Ача садӗнче вӑхӑтлӑха ӗҫлетӗп, музыкӑпа чуна кантаратӑп. Акӑ тата паян эсӗ тепӗр нота хушса патӑн. Эх-ха-хай, пурнӑҫа ӑна... Тек ӗнтӗ сана сысна ашӗ ӑшалама хӑнана чӗнеймӗп — упӑшкам кӗвӗҫӗ. Чӑвашӑн унӑн кӗвӗҫӗвӗ кӗҫӗ пек кӗҫӗтсех тӑрать мар-и-ке? Халӗ манӑн

чĕреме шаритлесси кăна юлать. Ай-уй, мĕн-ке, мĕн тапăртатса тăратпăр-ке тункатасем хушшинче? Тунката мари-ке?

Хулран çавăрса тытнă хĕрарăм мана сивĕнеймен кĕлеткипе ăшăтса каялла талкăштарса илсе кайрĕ.

— Мĕн пулчĕ-ке, Алина? — тĕлĕнтĕм эпĕ.

— Нимĕн те пулман, Улатимĕр. Аса килчĕ те...

— Мĕн, хамăрăн çак садри çамрăклăх савăшĕ-и?

Мăнукĕнчен вăтанма мансах вăл мана питĕ туйăмлăн чуптуса илчĕ. Ӳчĕ пĕркеленнĕ пулин те чĕри сивĕнмен иккен. Куçа уçрăм та хамăр çине çăварне карса пăрахса кулакан хĕр ачана куртăм.

— Савăшу хĕрӳлĕхĕ те, нихăшĕ те манăçман. Иксĕмĕре майлă тĕлпулу пултарсассăнччĕ. Ай, ухмаха тухатăп пуль?.. Манăçми Элĕк каçĕсем куç умĕнчен вĕлтĕртетсе иртнипе чĕре кăтăкланать. Чăмărта-ха мана сывлăш питĕрĕнсе лариччен, куç курми пуличчен... Ай... Айта-ха часрах!.. Ачине кунтах хăварăпăр. Вылять вăл пĕчченех...

Садикри пуш пӳлĕме юрату кĕввипе тултарса лартнă хыççăн Алина пианино умне ларчĕ.

— Астăватăн-и эсĕ мана сăвă парнеленине? Элĕк сăввине? — терĕ.

Эпĕ унăн пуçламăшне аса илтертĕм:

— Çут тĕнче хăвачĕ Асамат...

— Хывнă мăн кĕпер пирĕн енне... — пĕчĕк ал тутрипе куçне шăлса типĕтнĕ май Алина сăмсине нăшăклаттаранăшăклаттара калаçрĕ. — Асамат пирĕн Упа çырми çăлкуçне тахçанах ĕмсе типĕтнĕ пуль тесе эпĕ Палестинăра нушаланаттăм. Чăнах та иккен, Асамат мăнаçлăхĕ кăна тăрса юлнă унта. Тата — Элĕк ачин юрри. Сан сăмахусене юрра хывнăччĕ эпĕ. Çавна итлеттерме чуптартăм та сана...

Юрă кĕввипе аташса кайнăскер эпĕ пианино калама пăрахнă çамрăклăхри юратуçăм ӳт-пĕвне çаралатма пуçланине те сисмен...

Ача садĕнчен çунатланса тухсан каллех аллейăпа утрăмăр. Выляса ывăннă хĕр ачи умра сиккелесе пырать.

— Элĕке килес умĕн манăн темшĕн-çке хĕр чухнехи çакă кĕпене чăматана пăрахас килет, сан ылтăн парнӳне кăкăр çине çакма манмастăп. Тен, тĕлĕкри пек те пулин ăнсăртран курайăп-ши сана тесе çак сукмакпа каллĕ-маллĕ утатăп. Ой,

манаймастăп çав уйăхлă, ăшă, сулхăнрах каççене... Ма-ке чараймарăм-ши ун чухне хĕрĕвĕме? Кашни хĕрарăмăнах астарса арçын çумне çывхарма ăнтăлтаракан туйăма пусараймарăм. Халĕ те... Сан куçу куçăма сăнăласанах... ӳт-пӳ вĕриленсе кайрĕ... Ах, унашкал хĕтĕртӳллĕ урăх пĕр арçынпа та пулман. Кĕлеткере тем йăшăлтатма пуçлать... Эй турă! Тинех чуна кантартăм, пусăрăнтартăм. Урăх сана те курайăп?..

— Калама пултараймастăп ун пирки. Çапах та чĕрӳне юрату çатми çинче ăшаласа нушаланиччен атя манпа ăшаланă сысна ашĕ çиме?

— Ăçта? Шупашкар ресторанне мар пуль те?

— Элĕк хупахне. Кĕтсе те ывăнчĕç пуль. Ĕçки-çикине мансăр пуçламаççĕ-çке.

Кану вăхăтне çапла шеллемерĕм. Ĕçсе-çисе, юрласа-ташласа чунăмăрсене уçрăмăр. Параппанлă кĕвве аслати кĕмсĕртетсе вăйлатрĕ. Ял еннелле шăвакан пушаннă пĕлĕтсем хушшипе асамлă кĕпер карăнчĕ. Алина çисе ярасла ман куçран пăхрĕ.

— Тавтапуç сана, Улатимĕр, юрату апачĕшĕн, — терĕ, вара мăнукне çавăтса анаталла утса кайрĕ. Иксĕмĕр хушăра карăннă юрату кĕперĕ те хĕвел шевлипе çухалса пынă пекех туйăнчĕ. Алина çаврăнса алă сулчĕ те, пирĕн куççем асаплăх хушшинче çĕнĕрен тĕл пулса йăлкăшрĕç...

Çула тухсан, парк çумĕпе иртнĕ чухне, мăшăр тунката курăнса кайрĕ. Тымартан шăтнă хунавсем симĕс çулçисемпе сулса мана Шупашкаралла Элĕк-Вăрнар кĕввипе ăсатрĕç.

*2012 çул*

# Тупмалли

Çумрах-ха эс, савниçĕм . . . . . . . . 3
Çĕр пики . . . . . . . . . . . . . . 69
Вăрланă юрату . . . . . . . . . . 216
Чĕрĕлĕх тункатисем . . . . . . . . 271

*Литературно-художественное издание*

**Кузьмин Владимир Прокопьевич**

**ÇУМРАХ-ХА ЭС, САВНИÇĔМ**

**ЛЮБОВЬ ЖИВА**

**Повести**

*На чувашском языке*

Редактор *В.Г. Кошкин*
Художник *И.Е. Калентьева*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *Е.Е. Фомина*
Корректор *Г.Е. Платонова*
Компьютерная верстка *Е.Л. Карпеевой*

16+ Информаци продукцийĕн палли (436 № ФЗ. 29.12.2010).
Знак информационной продукции
согласно ФЗ от 29.12.2010 г. №436-ФЗ.

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003. Подписано к печати 18.03.15. Формат 84x108 $^{1}/_{32}$. Бумага офсетная. Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 15,12. Уч.-изд. л. 14,75. Тираж 1000 экз. Заказ № К-3252. Изд. № 9.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Мининформполитики Чувашии,
428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ОАО «ИПК «Чувашия»,
428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.

180.–



ISBN 978-5-7670-2315-8

9 785767 023158

Чăваш
кĕнеке
издательстви